КС(чув)
Т33
34706-чув

Иван Тенюшев

# ВӖСЕМ ВИҪҪӖН ҪЕҪ ЮЛЧӖҪ



Национальная библиотека ЧР
4-034706

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К С(Чув)
Т 33

*Иван Тенюшев*

# ВĔСЕМ ВИÇÇĔН ÇЕÇ ЮЛЧĔÇ

РОМАН

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1994

84(2Рос=Чув)6-444я44
К 84.09(=Чув)6-444я44

ББК 84 Чув 7-4
Т 33

ПРОВЕРЕНО
20 10 13 СЕН 2017

**Тенюшев И. Я.**

Т 33 Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç: Роман.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1994. 336 с.

Тăван çĕр-шыв аслă вăрçи пулăмĕсем историре мĕн чухлĕ каярах та каярах тăрса юлаççĕ, çавăн чухлĕ ытларах та ытларах кăсăкланатпăр вĕсемпе. Ун чухнехи салтаксен паттăрлăхĕн пĕлтерĕшĕ паянхи тата малашнехи пурнăçшăн ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Çав вăрçă умĕнхи пурнăça, чăваш халăх ывăлĕсем ытти халăх çыннисемпе пĕрле тăшмана хирĕç паттăрла çапăçнине çырса кăтартнă ку произведенире. Ҫирек камшăн та — телей çăлтăрĕ тухнă-и е тухман-и уншăн, салтак-и е офицер-и вăл, айăппа е айăпсăрах тĕрмене çакланнă-и — çуралса ӳснĕ çĕр-шыв пĕрре кăна. Унран хакли урăх нимĕн те пулма пултараймасть. Çак шухăш романра чи тарăн йĕр хăварнă.

ББК 84 Чув 7-4

34706 чув

Т $\frac{4702710201-29}{М 136 /03/-94}$ 72—94

ISBN 5-7670-0649-0 © Чăваш кĕнеке издательстви, 1994 ç.

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

## *ҪАВАҪАРЧĂН ПУРНĂҪĔ ТУЛЕҪ-И?*

# ПĂШАТАН ТАВРАШ

## «Эпир паян пыл ҫимен...»



Пăлхавăшни тĕлнелле ҫуркунне хĕле ҫĕнтерчĕ те, ҫут ҫанталăк унчченхи тумне хывса ҫĕннипе — ĕлкеннипе ылмаштарма тытăнчĕ. Тарават хĕвел хăйĕн тивĕҫне пĕр ӳркенмесĕр пурнăҫа кĕртет. Вăл тăрăшнипех ĕнтĕ юр шывĕ урам тăрăх шăнкăртатать, варсемпе ҫырмасенче пăрпа та сĕлкĕшпе хутăш кĕрлесе юхать. Шăнкăртам ҫырма пăрĕ вырăнăн-вырăнăн каплана-каплана йăлтах кайса пĕтрĕ, шыв пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех хухма тытăнчĕ. Ҫырман тайлăк ҫыранĕнче сап-сарă чечексем шăтса тухрĕҫ. Авăспа шĕшкĕ тин тухнă хур чĕпписене аса илтерекен кăпăшка та черчен кăчкă ҫурчĕҫ. Пыл хурчĕсемпе тĕкĕлтурасене илĕртме хăва ҫинче те чечексем тухнă. Йăрăс пӳллĕ патвар тополь ҫилĕмлĕ ҫепĕҫ ҫулҫăсем сарать.

Хура кураксем ир-ирех вăранаҫҫĕ те ҫутă куна хулăн сассисемпе саламлаҫҫĕ. Ĕшнере шăнкăрчсем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла юрă хыҫҫăн юрă шăрантараҫҫĕ, ичăк-ичăк! чăк-чăк-чăк! ичăк-ичăк! чăк-чăк-чăк! тесе шăхăраҫҫĕ. Тăрна карти уйсем урлă ҫурҫĕреллеваскать.

Тахçан вашмăк мар пулнă Пӳле улăхне пырса тухсан юмахри асамлă тĕнчене çакланнăн туйăнать. Кунта пуян çут çанталăкăн пур тĕрлĕ илемĕ те туллин çиçсе тăрать. Пыл шăршиллĕ сывлăш çав тери ырă, сывласа тăранмалла мар уçă.

Никĕсленнĕренпе виç çĕр çул ытла хăйĕн йышне хунаса ӳстерекен ял та каллех çамрăкланчĕ, çурхи кунсен ырлăхĕпе пуянланчĕ. Пожедановсен урам енчи виçĕ чӳречипе кăнтăралла пăхса ларакан тăпăл-тăпăл çурчĕ çурхи кунсенче уйрăмах Шăнкăртам айлăмĕнчи ирĕклĕхелле туртăннăн туйăнать. Çав ирĕклĕх çине тĕмсĕлсе пăхма ăна нимĕн те чăрмантармасть. Çурт-йĕрĕн хĕвел тухăç енне лартса ӳстернĕ улмуççисем, çĕмĕртсемпе пилешсем, пĕр хурăнпа пĕр хыр, кил-çурта илем кӳнипе пĕрлех, хăйсем те турачĕсемпе ирĕкелле, кăнтăр еннелле ăнтăлаççĕ. Сарăлса ӳснĕ капăр йывăççем хуçисене çеç мар, пĕрне-пĕри те ырлăхпа телей сунаççĕ тейĕн.

Çак кил-çурта килсе кĕрсен кӳршĕ-аршă хăйĕнче темĕнле лайăх туйăм çуралнине сисет. Мĕнлерех ят памалла-ши ăна? Ырă кăмăл темелле-ши? Тараватлăх тесен тĕрĕсрех-ши? Кил йытти Улайкка хапха-алăк сыхлассине хăйĕн тивĕçĕ тесе шутламасть, çитменнине, хăй паллакан кашни çынпа туслашма хатĕр. Картишĕнчи ула пăрăва счетоводăн ывăл ачи Люнькка час-часах çăкăр чĕллипе хăналать те, вĕсем иккĕшĕ килĕштереççĕ. Çиллине самаях карăнтаракан ĕне кил хуçи мăшăрĕпе Сахвит аппапа пĕр чĕлхе тупнă. Пӳртри çăра шыв йăлтах ун аллипе тухать-çке-ха. Путексем пӳрт урайĕнче те, картишĕнче те пĕчĕк Зойăпа тата Пăнчукпа пĕрле тĕпĕртетеççĕ.

Колхоз правленийĕнчен таврăнакан ашшĕне пĕтĕм çемье ăшшăн кĕтсе илет. Ашшĕпе амăшĕн те, вĕсене кура ачисен те килен-каян валли ырă сăмах та, тараватлăх та тупăнать. Кунашкал çемьене килсе çӳреме те кăмăллă. Унран та ытларах килен-каян хăй те кăмăлĕпе çемçелнĕ пек пулать, унăн чун-чĕринче кăшт та пулин ырă туйăм çуралать. Мĕн калама: ху аван та, çын та аван, ху усал та, çын та усал.

Паян Сахвит аппа урайне кăчăр куракĕпе тап-таса çуса тасатнă, урай хăмисем сап-сарă курăнаççĕ. Кăмакаран сысна какайĕпе пĕçернĕ шаркку шăрши тухнă. Амăшĕ ачисене кĕлетри пĕчĕкçĕ чĕресрен пĕрер кашăк пек пыл катса кĕрсе çитерчĕ.

— Тулĕк пыл çинине аçăра ан калăр. Пĕлсен мана та, сире те лекет. Кукамăр киличчен пыла тĕкĕнме хушман вăл,— асăрхаттарчĕ амăшĕ.

Пӳрт-ҫурта тирпейленӗ, ачасен кӑмӑлне тупнӑ, упӑшки килнӗ ҫӗре апат хатӗр. Сахвит аппа куҫкӗски умне пырса ҫырӑ ҫӳҫне турать, унтан ҫӑм ҫиппи арлама ларать. Йӗки тикӗссӗн кӑлтӑртатнӑ май юратнӑ юррине тӑсса ярать.

Пуҫтарас тӑк пуҫтарас
Лайӑх ҫырла,
Уҫланкӑра, уҫланкӑра
Ыррӑн ӳснине,
Хӗвелпелен, хӗвелпелен
Пиҫсе ҫитнине.
Туянас тӑк туянас
Лайӑх каччӑ,
Вӑйӑ хыҫҫӑн, вӑйӑ хыҫҫӑн
Асатаканне,
Чун-чӗререн, чун-чӗререн
Юратаканне.
Туянас тӑк туянас
Лайӑх лаша,
Ҫула тухсан, ҫула тухсан
Ҫул тытаканне,
Яла кӗрсен, яла кӗрсен
Пуҫ ухаканне.
Туянас тӑк туянас
Ырӑ мӑшӑр,
Хӑнара чух, хӑнара чух
Юрлаканнине,
Ура хуҫса, ура хуҫса
Ташлаканнине.
Ӳстерес тӗк ӳстерес
Лайӑх вӑрман,
Мӑйӑр татма, мӑйӑр татма
Чӗнекеннине,
Ҫӗмӗртпелен, ҫӗмӗртпелен
Сӑйлаканнине.
Ӳстерес тӗк ӳстерес
Ача-пӑча,
Ял хушшинче, ял хушшинче
Ят яманнине,
Чунне парса, чунне парса
Ӗҫлекеннине.

Чи кӗҫӗнни, Пӑнчук ятли, амӑшне пуринчен те ытларах юрататъ, ҫавӑнпа яланах ун майлӑ пулать. Ашшӗ правленирен кӑнтӑрлахи апата килсенех Пӑнчук тӳрех ӑна мӑйӗнчен пырса уртӑнчӗ, тутине чӗлхипе ҫулакаласа хӑйсем килте мӗн туманни ҫинчен ӗнентермелле евитлерӗ:

— Атте, эпир паян пыл ҫимен. Анне пире пыл ҫитермерӗ.

Ҫак ҫӑмахсене илтсен ик тетӗшӗ тӑнках хытса каяҫҫӗ. Ашшӗпе амӑшӗ хӑвӑрт пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илеҫҫӗ, пӑхса илеҫҫӗ те ахӑлтатсах кулса яраҫҫӗ. Ача-пӑча айванлӑхӗ

ун чухне Яков Мироновичпа София Александровнăна култарчĕ кăна. Пăнчук вара ашшĕ-амăшĕ мĕн пирки ахăлтатнине ăнланаймасăрах юлчĕ. Хăш-пĕр чухне хăвăн тăрлавсăр хăтланăвна аса илетĕн те сасăпах çапла калатăн: «Эх, ытарайми атте-анне! Хамăрăн айванлăхпа нумай хăварнă пулĕ сирĕн кăмăлăра, çапах ан ятлăр, пирĕн йăнăшсене йывăра ан илĕр».

Ачисем пыл çини ашшĕ кăмăлне пачах хуçман иккен.

— Ну ăслă та иккен пирĕн Пăнчук. Ай, ăслă! Ай, маттур! — маччӑна перĕнесле утьăкка сиктерет вăл пĕчĕкскере. Унтан арăмĕ умне пырса тăрать, сылтăм аллипе хура çӳçне пĕрмай якатать. Ку вара хăй çав тери телейлине пĕлтерет иккен. Арăмне кула-кулах çапла калать:

— Маттурлăхĕпе ашшĕ те ывăлĕсенчен юлсах каймасть пулмалла. Çавăншăн пире пурсăмăра та кăнтăрлахи апат çитерместĕн-и?

Телейлĕ çемье шăкăл-шăкăл калаçса техĕмлĕн вĕри апат çиет. Ĕçе тухса каяс умĕн ашшĕ вăталăх ывăлне Миккуле ĕç парса хăварать:

— Тепрер сехетрен мачча çинчен пилеш илсе ан. Пурне те сăйла таминпа — витаминпа.

...Миккуль паçăртанпах уçă кантăкран пахчаналла пăхса ларать. Карта кĕтессинчи вăрăм шалçа тăррине çакнă шăнкăрч йăви илĕртет ун куçне. Ĕçчен мăшăр шăнкăрч чĕпписемшĕн епле тăрăшнине сăнама, савăк та илемлĕ юррисене итлеме тем тери ырă.

Сасартăк çывăхри йывăç çине таçтан хăяматран пакăлти чакак вĕçсе килчĕ. Шăнкăрчсен паха юрри татăлчĕ. Иккĕшĕ те сехĕрленӳллĕн чăр-р та чăр-р тăваççĕ. Чӳрече умĕнчи ача чĕнмен хăнана чăмăрĕпе юнама та ĕлкĕреймерĕ, лешĕ шăнкăрч йăви патнех вĕçсе пычĕ те шалтан пĕр чĕппине чĕрнипе çаклатса кăларасшăн пулчĕ. Ашшĕпе амăшĕ çакна чăтса тăраймарĕç, ирсĕр хураха хыçалтан тапăнчĕç, анчах чакак вĕсене иккĕшне те çăмăллăнах сиресире пăрчĕ. Хăй çаплах хăрах урипе йăвара тăрмашрĕ, пӳртри ача тарăхса кăшкăрнине илтменçи турĕ. Миккуль чӳречерен сиксе тухнă хушăра пĕр пысăк ушкăн шăнкăрч вăр-р вĕçсе килчĕ те хураха унтан та кунтан сăхма тытăнчĕ. Лешĕ ниçта кайса кĕреймест: пĕрре унталла, тепре кунталла пăрăнать. Туслă шăнкăрчсенчен аран тарса хăтăлчĕ. Пĕр шухăш-кăмăллă юрă ăстисем тăван йăвана, унти ӳссе çитĕнес ăрăва çăлса хăварчĕç-хăварчĕçех.

Пахчари ывăлĕ хыçне тахăш вăхăтра амăшĕ пырса тăнă.

— Ы-ы, çĕр çăтман чакакĕ! Çăткăнскер пĕрмай харап

тăвасшăн. Юрать-ха шăнкăрчсем ырă çемьери пек пĕр-пĕрне пулăшаççĕ,— пăшăлтатрĕ унăн тути.

...Çанталăк ăшă. Хĕвел хĕртсе пăхать. Чӳрече умĕнче мăшăр кăвак кăвакарчăн кăлтăртатать. Пĕри теприн тĕкне якатать. Савса ыталашнăн кăкăра кăкăр перĕнеççĕ. Ырă сасăпа кăвиклетсе пĕр-пĕрин тавра çаврăнкалаççĕ, ĕмĕрлĕхех килĕштернине палăртаççĕ. Ытла та сăпайлă çак вĕçен кайăксем. Яланах тап-таса та йăлтăркка. Кирек хăçан та ырă кăмăллă та савăк. Пурнăçĕ те тӳлек вĕсен. Мирлĕ те килĕштерсе пурăннăран хуйхă-суйхă мĕнне пĕртте пĕлмеççĕ тейĕн.

Пурнăçа ăнкари-ăнкарми Миккуль пĕчĕкçĕ ывăçĕпе вĕсене тырă сапса парать. Ачана хăнăхнăскерсем пачах ютшăнмаççĕ. Çăкăр тĕпренчĕкĕсене ала тупанĕнченех çиме хатĕр.

Миккуль хăех тунă шăхличне шăхăртма айккинелле пăрăнчĕ. Çав хушăра кăвакарчăн ушкăнĕ патне ула кушак Мăрăлкка йăпшăнса пычĕ. Çурăмне мăкăртса пăхса тăчĕ-тăчĕ те сасартăк ялт сикрĕ çывăхри кăлтăртик çинелле. Пăр-р! вĕçсе çĕкленчĕç харăсах вĕçен кайăксем. Кушак-сунарçă нихăшне те чĕрнисемпе çаклатса ĕлкĕреймерĕ. Пĕр те пĕр шутласан кăвакарчăнăн тӳлек пурнăçĕ питĕ хăвăрт пăсăлма пултарать иккен. Çын пурнăçĕ унашкал хивреленес çук. Чăнах та-ши?

## Вăл комиссар пулать

Халĕ Миккуль пысăкланнă ĕнтĕ. Пĕчĕккĕ чухне ăна ашшĕ хăех сăран атă çĕлесе панăччĕ. Пӳрнеске пекскер унпа урай тăрăх путишле те кулăшла таплаттарса çӳретчĕ, ăнланма çук чĕлхепе хĕпĕртӳллĕн тем пакăлтататчĕ. Тен, мĕн каласшăннине хăй те пĕлсех кайман, анчах ытти ача-сем пекех сăнама пултарнă, çитĕннисем пек тума тăрăшнă. Вăл курнă: амăшĕ ун умне тăрать те тутисене тек-текех сиктерет, çăварĕнчен вара тĕрлĕ сасă сике-сике тухать. Вĕсенчен пĕрисем Миккуле килĕшеççĕ, теприсем темшĕн ун кăмăлне хуçаççĕ. Килĕшекеннисем амăшĕн туйăмĕпе ăшăтнисем пулнă ахăр. Юратнине тата ачашланине палăр-такан сăмахсене амăшĕ ывăлĕшĕн хĕрхенсе тăман. Ун çăварĕнчен кăмăла килмен сасăсем, ахăртнех, ашкăнчăк ывăлне çемçентерехшĕн пăскăртнă чухне тухнă. Амăшĕ мĕн каланине Миккуль ăнлансах çитереймен, çапах хăйне хăçан ачашланине, хăçан хăтăрнине тĕшмĕртнĕ-тĕшмĕрт-нех. Ӳснĕçемĕн уйрăм сăмахсене уçăмлăн калама хăнăхрĕ.

«Анне», «атте», «пар», «ил» сăмахсем хыççăн такамран илтсе «ак ку» теме вĕренчĕ. Кÿршĕ-аршă килсен Миккуль пÿрнипе ун çине тĕллетчĕ те сăлтавсăр-мĕнсĕр «ак ку» тесе хуратчĕ.

Пĕррехинче район центрĕнчен Миккуль амăшĕн аппăшĕ Агриппина Александровна Лена ятлă хĕрачипе хăнана килчĕ. Лара-тăра пĕлменскере капăр тум тăхăнтарнă, мăшăр кĕске çивĕтне хĕп-хĕрлĕ хăюпа явса çыхнă. Лена пÿрте кĕнĕ-кĕмен Миккуль ăна хирĕç урлă ураллă упа çури пек лап-лап пусса утса пычĕ те пÿрнипе кăкăрĕнчен тĕксе çапла пĕлтерчĕ: «Ак ку!»

Хĕрачана Миккуль килĕшрĕ-и, килĕшмерĕ-и, пĕлме çук, пĕчĕкçеççĕ йăлтăр-йăлтăр атти çине вара питĕ хăвăрт куç хыврĕ. Питне тăруках çивĕтĕнчи хăю тĕсĕ çапрĕ.

— Хăй пĕчĕкçеççĕ, çапах атăпа... Анне, мана та çавăн пек лайăх атă туянса парччĕ...

Хĕрачине амăшĕ чееленерех хуравларĕ:

— Эсĕ малтан кала-ха: çак ача ÿссен кам пулать? Вара, тен, сан валли те атă туянăпăр.

Хĕрача хурав пама аптăраса тăмарĕ, ыйтăва çийĕнчех татса пачĕ: «Вăл-и? Ко-о-мис-сар пулать!»

Ырă пуласлăх çинчен пĕлтерни пурне те килĕшрĕ. София Александровна сенкер куçне тутлă ĕмĕтсемпе çутăлтарса йăл та йăл кулчĕ.

...Анаткасра Павел Петрович Петров учитель пурĕ миçе ача вĕрентсе кăларнине шутласа та пĕтереймĕн. Миккуль Пожеданова вăл пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче чиперех вĕрентрĕ, виççĕмĕш класра вара колхоз счетовочĕн ачипе йăлтах аптăраса çитрĕ. Ара, мĕн шутламаллине учитель класс доски çине çырса пĕтернĕ çĕре ачан шутлавĕ те хатĕр. Хайхискер аллине тăратать, кăшкăрса та ярать:

— Павăл Петровчă, манăнне тĕрĕслĕр-ха, эп шутларăм...

Ытти предметсемпе те çавах. Хайне кура мар тавçăруллă. Ун шутлавĕ хатĕр-ха, анчах вĕрентекенĕн тĕрĕслемешкĕн вăхăчĕ çук: стена тепĕр енчи иккĕмĕш класа параллеллĕ вĕрентме каймалла. Хайхи ача хулĕсене сиктеркелесе ларать-ларать те ытти партăсем хушшине куçать, юлташĕсене задача шутлама чăрмантарать.

Пăшатан Миккулĕ кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче Шăши Печчине (Мышов Петра ĕнтĕ) чышса йăвантарса ячĕ те, çав лутраскерĕн сăмсинчен юн юхса тухрĕ. Печча килĕнчен тетĕшне Кирука чĕнсе килчĕ. Кăлăхах. Миккуле тупайăн-и вара! Вăл тĕп сак айне пытаннă. Пĕлекенсем

пур — пĕри те шарламасть. Кирукăн счетовод ывăлне хăлхинчен пăрмасăрах таврăнма тиврĕ. Павел Петрович апатран килнине курсанах Петр Мышов ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ.

— Мĕн пулчĕ?— ыйтать вĕрентекен.

— Вăн Пăшатан сăмсаран çапрĕ...

Миккуль хăйĕнчен ыйтасса кĕтсе тăмасть, тӳррине тӳрех калать:

— Эпĕ ăна сăмсаран çапман, чышса йăвантартăм çеç... Хăй тата пирĕн касри Клачука мĕншĕн кутран тапрĕ?

Павел Петрович айăпа кĕнĕ Миккуле ура çине тăратрĕ те аллинчен тытрĕ: «Айта пĕрле!» Çавăн чухнехи пек Миккуль нихçан та ниçта та вăйлă хăраман. Вăл хăйне ашшĕ патне колхоз правленине илсе каять ĕнтĕ вĕрентекен тесе шутларĕ. Намăс-çке-ха. Çапах турткалашмарĕ. Павел Петрович апла тума шутламан иккен. Вăл айăпа кĕнĕ ачана тăваттăмĕш класа ертсе кĕчĕ те Константин Димитриевич Кудрявцев вĕрентекене кĕскен çеç хушрĕ:

— Çак ача сирĕн класра вĕренсе пăхтăр-ха...

Айтурух! Тăваттăмĕшĕнчисем пачах пĕлмен-курман задачăсем шутлаççĕ. Йĕр туртаççĕ, йĕр тăррине те, аяла та хисеп паллисем çыраççĕ, унтан гем хăтланаççĕ. Ачасене пĕрин хыççăн тепĕрне доска патне чĕне-чĕне кăларать вĕрентекен. Миккуль чĕтре ларать — хăйне доска патне чĕнесрен хăрать. Вăт ăçта намăс курма пулать! Ашшĕ ĕçрен таврăнасса аранах кĕтсе илчĕ Миккуль, каçпа çĕнĕ задачăсен тупсăмне ăнлантарса пама ыйтрĕ.

— Мĕн тата? Павел Петрович пĕрмаях мухтатчĕ-çке... Вĕренме пăрахрăн-им?

Ашшĕ урăх ыйтса тăмарĕ, яланхи ваксене хушассипе кăларассин правилисене, пĕтĕмĕшле знаменатель епле тупмаллине каласа кăтартрĕ. Хăнăхмашкăн уйрăм тĕслĕхсем шутлаттарчĕ. Тепĕр кун Миккуль тăваттăмĕш класра пĕр вĕçĕм алă тăратса ларчĕ: хăйĕнчен ыйтма е доска патне кăларма хистерĕ. Мĕнех калăн, кĕске вăхăтрах вĕренӳре тăваттăмĕшсемпе пĕрле чиперех ĕлкĕрсе пыракан пулчĕ. Пуçламăш шкултан виçĕ çултах вĕренсе тухсан кӳршĕ ялти тулли мар вăтам шкула çӳреме пуçларĕ. Çакна пĕлсен ашшĕ те тĕлĕнчĕ: «Вăт наруд! Вăт вĕтĕ халăх!»

Миккуль шкул библиотекинчен В. И. Краснов-Асли çырнă «Шуррисемпе çапăçни» кĕнеке илсе вуларĕ. Хăйне килĕшнĕрен ку кĕнекене ашшĕне те вулаттарчĕ. Самай вăхăт иртсен вулама юратакан ача лавккара çав авторăн «Вутра» ятлă çĕнĕ кĕнекине курать, ăна хыпалансах туянать.

— Атте, вуласам, Краснов-Асли ҫӗнӗ произведени ҫырнӑ,— хӑй вуличченех ашшӗне савӑнсах парать Миккуль паха кӗнекене. Анчах ашшӗ темиҫе страница вуласанах ӑна каялла пачӗ:

— Ку пачах ҫӗнӗ мар...

— Епле апла? Кӑҫал кӑларнӑ-ҫке?

— Кӑҫалне кӑҫал, анчах «Шуррисемпе ҫапӑҫниех». Ячӗ ҫеҫ урӑх.

Ҫавӑн хыҫҫӑн ку кӗнекене ашшӗ те, Миккуль те урӑх тытмарӗҫ.

Яков Миронович Пожедановӑн вӑталӑх ывӑлӗ пуласлӑхӗ пирки чӗри тӗпӗнче хӑйне уйрӑм ӗмӗтсем упраннӑ. Ҫут тӗнчере вӑл нимрен ытла ҫут ҫанталӑка юратнӑ. Пинпин вӑрттӑнлӑх пытарса тӑракан вӑрмана кӗрсен Пӑшатан Яккӑвӗн унтан тухасси те килмен. Ҫурхи кун чӑпар куккук авӑтнине сехечӗ-сехечӗпе те итлеме хатӗр пулнӑ. Хӑй аллипе йывӑҫ лартасси, ӑна тимлӗн пӑхса ӳстересси Яккӑва тем тери килӗшнӗ. Вӑл тӑрӑшсах хӯхӗм сад ҫитӗнтернӗ, урам енчи решетке карта хӗррипе ҫӗмӗрт, хурӑн лартса ӳстернӗ. Ҫут ҫанталӑка каҫса кайсах юратнӑ пулин те, унпа ҫыхӑннӑ ӗҫ суйласа илеймен: шут ӗҫне тытӑнма тивнӗ. Тымар яраймасӑр юлнӑ ӗмӗтне ывӑлӗ пурнӑҫласса тахҫантанпах шанса пурӑнатчӗ Яков Миронович. Вӑрман хуҫалӑх техникумне вӗренме кӗрӗ, ятарлӑ пӗлӳллӗ специалист пулса тӑрӗ тесе ӗмӗтленетчӗ. Тулли мар вӑтам шкултан вӗренсе тухсан хӑй валли юравлӑ вӗренӳ заведенийӗ вӑрах суйламарӗ Миккуль: ҫурла уйӑхӗн вӗҫӗнче вӑл савӑнсах Патӑрьелӗнчи педагогика училищине вӗренме кӗни ҫинчен пӗлтерчӗ. Ку хыпар паллӑ сӑлтавсемпе Яков Мироновича савӑнтармарӗ, ҫапах ывӑлне педучилищӗре вӗренме чармарӗ. Ҫитменнине амӑшӗ те Миккуль майлӑ пулчӗ. «Юрӗ-ҫке, учитель ӗҫӗ те сумлӑ»,— тупрӗ упӑшкине лӑплантармалли сӑмахсем.

Тӳррипе каласан Яков Миронович кӑмӑлӗпе питӗ лӑпкӑ та кунӗ ҫын, килтисемпе те, кӳршӗ-аршӑпа та тулӑксӑр харкашмасть, ятлаҫмасть. Кӑмӑла хуҫакан сӑмахсем унран арӑмӗ те, ывӑлӗ те илтмен. Вӑл мӗн хушни ҫемьере хивре сӑмахсӑрах чипер пурнӑҫланать. Чӑннипех те ырӑ ҫын Пӑшатан Яккӑвӗ, анчах ывӑлӗ ашшӗ кӑмӑлне пӗле тӑркач урӑх ҫӗре вӗренме кӗрсен унӑн чунӗнче те пӗр вӑхӑтлӑха сивӗ тӑм ӳкнӗ пек пулчӗ, ҫапах ку туйӑм вӑраха пымарӗ.

Кӗтнӗ пекех, Миккуль тӑрӑшса вӗренчӗ, пысӑклатнӑ стипенди илсе тӑма тивӗҫлӗ пулчӗ. Район центрӗнчен тӑван ялне канмалли куна таврӑннӑ чухне стипенди шучӗпе

кучченеҫ: шап-шурӑ ҫавракa кулач, хӗвел ҫаврӑнӑш халви — туянса таврӑнать. Хут-кӑранташпа учебниксем туянма та ҫитет стипенди укҫи.

## Хӗр ҫавӑрма ансат мар

Педучилище библиотеки питӗ пуян. «Эх, ҫакӑнти кӗнекесене пӗтӗмпех вуласа тухасчӗ те вара чӑн-чӑн ҫын пулӑттӑм!» — теплерен пырса кӗчӗ Миккуль пуҫне шухӑш. Ӗмӗтне пурнӑҫлама Г. П. Данилевский произведенийӗсенчен пуҫларӗ. Вӑл ҫырса пичетлени библиотекӑра 24 том. Миккуль тӑваттӑмӗшне тавӑрса пачӗ те пиллӗкмӗшне ҫыртарса илчӗ.

— Ӑна вуласан нумай та юлмасть: вунтӑхӑр том ҫеҫ,— хихиклетсе илчӗ Вера библиотекарь.

Верӑпа Миккуль Хлебниковсен ҫуртӗнче уйрӑм пӳлӗмсенче хваттерте пурӑнаҫҫӗ. Уроксем хыҫҫӑн ҫап-ҫамрӑк каччӑ хваттерне кайма тухнӑ чухне Верӑпа тепӗр хӗр аялти хутри коридорта библиотека алӑкне хирӗҫ тӑратчӗҫ. Миккуль вӗсем тӗлӗнче чарӑнмарӗ, салам каларӗ те коридор тӑрӑх малалла утрӗ. Палланӑ-палламан хӗрсемпе калаҫсах каймасть Анаткас каччи.

Вера ӗҫрен таврӑнсанах Миккуль патне чупса пычӗ.

— Пӗлетӗн-и, мӗн каларӗ сан пирки Нина Слесарева? «Темшӗн-ҫке питӗ юрататӑп ҫак каччӑна. Вӑл ман ҫине ҫаврӑнса та пӑхмасть»,— терӗ. Тупата. Ӗненместӗн-и вара? Тупата туршӑн ҫапла каларӗ.

Библиотека пӳлӗмӗ умӗнче Верӑпа пӗрле тӑраканни Слесарева пулнине пӗлетчӗ-ха Миккуль, анчах ятне халиччен илтменччӗ. Урӑх группӑран вӗт. Пурне те ӑҫтан пӗлсе пӗтерӗн? Библиотекарь мӗн каланине Миккуль кулса кӑна ирттерчӗ. Часах ун ҫинчен манса та кайрӗ.

Ҫӗнӗ Конституци тӑрӑх, кӗркунне ҫӗршывӑн Аслӑ Советне пӗрремӗш хут депутатсем суйлаҫҫӗ. Миккуль Пожедановпа Нина Слесаревӑна пӗр урамри суйлавҫӑсен агитаторӗсем пулма уйӑрнӑ. Тӑхтав вӑхӑтӗнче Миккуль Нинӑсен класне кӗчӗ те ӑна пӗрле пыма сӗнчӗ. Икӗ ҫамрӑкӑн йӑлтӑркка куҫӗсем ҫавӑн чухне пуҫласа тӗл пулчӗҫ. Хӗр, тӑван ялӗнчен, Ҫӑкалӑхран, тинрех ҫуран килсе ҫитнӗскер, парта хушшинче сарӑ ҫӳҫне тураса ларать. Мӑшӑр сенкер куҫӗ ӑшшӑн пӑхать унӑн.

— Коля-Николай, куратӑн-и, тулта сивӗ ҫумӑр ҫӑвать. Ӗшенӗ-тарланӑ хыҫҫӑн шӑнса пӑсӑлмӑп-и?

— Чӑнах та, мӗншӗн ҫак ҫанталӑкра илсе каймалла-

ха сан чипер хӗре хӑвпа пӗрле?— хутшӑнчӗ калаҫӑва тантӑшӗ Шура Гусева. Ҫу хӗр Миккульпе пӗр ялтан, Анаткасран.— Тепӗр чухне вӑл хавaслансах пырӗ...

Хӑйпе пӗрле пыма килӗшменшӗн мар, кӑмӑла килекене ятпа мӗнле чӗнмеллине те пӗлменшӗн тарӑхса кайрӗ ун чухне каччӑ. «Коля мар, Миккуль тесе чӗнеҫҫӗ мана. Ҫавна та пӗлмест, хӑй вара Вера урлӑ юрату сӑмахӗсем калать. Нивушлӗ эс кӑна хитре?..»—тӗвӗленчӗ шухӑш ун пуҫӗнче.

Каярахпа икӗ группа пӗрле К. В. Ивановӑн «Нарспи» поэми тӑрӑх спектакль лартма хатӗрленчӗҫ, ҫине-ҫинех репетицисем турӗҫ. Нина Слесарева тӗп роле вылярӗ — Нарспи пулчӗ. Миккуле ирӗксӗрлесех Сетнер турӗҫ.

Каччӑ репетицисем вӑхӑтӗнче Ҫӑкалӑх хӗрӗ ҫинчен нумай ҫӗннине пӗлчӗ. Вӑл вӑтам шкул директорӗн хӗрӗ иккен, группӑра ыттисенчен уйрӑларах тӑрать. Такама та кӑмӑла килмелли ҫутӑ сӑнӗпе те сарӑ ҫӳҫӗпе ҫеҫ мар. Ятуллӑ тумланнипе кӑна мар. Нимрен те ытларах чун ӑшӑлӑхӗпе. Тантӑшӗсемпе кирек хӑҫан та пӗр чӗлхе тупма пултарнипе.

«Нарспи» спектакле лартни пӗтӗм педучилищӗн пысӑк уявӗ пулчӗ. Вӑл вӗҫленсен вӗренекенсемпе вӗрентекенсем иккӗмӗш хутри залран йышлӑн кӗпӗрленсе тухрӗҫ, урам сарлакӑшпех ретӗн-ретӗн карталанса пыраҫҫӗ. Нина Слесарева маларахри ретре. Ун ҫумӗнче педучилище бухгалтерӗ — авланас каччӑ — Борис Седойкин, вӗр-ҫӗнӗ сӑрӑ костюмпа. Вӑл хӗре спектакльте ӑста вылянӑшӑн мухтать, шурӑ кӑпӑш аллинчен ярса тытма та хатӗр — лешӗ темшӗн-ҫке айккинелле туртӑнать. Сасартӑк Нина хӑйсен ретӗнчен татӑлса юлчӗ те Миккуль ҫумнелле йӑпшӑнчӗ.

— Коля, лайӑх вылярӑн тесе мана пурте мухтаҫҫӗ. Эсӗ ма нимӗн те шарламастӑн?— пӑшӑлтатрӗ хӗр каччӑ хӑлхинчен.— Санран та пӗрер сӑмах илтес килет...

— Шел, эпӗ нимех те калаймастӑп... Ирӗк паратӑр пулсан ҫакна йышӑнатӑп: пӗр енчен, мана пӗрмай хамӑн роле вылямa тивнӗрен пуҫ ҫӗклеме те вӑхӑт пулмарӗ; тепӗр енчен, эсир чӑн-чӑн артистка пекех вылянӑран пӑхма та питӗ имeнтӗм...

Слесарева каччӑ ҫине тинкерсе пӑхса илчӗ: шӳтлет-ши е тӑрӑхлать-ши? Тен, чӑнласах калать?

— Коля, пӗр вӑрттӑнлӑх пӗлтерем-и? Сире кура эпӗ те Данилевскипе чирлесе кайрӑм.

— Епле апла?

— Пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне виҫӗ роман вуласа тухрӑм: «Мирович», «Княжна Тараканова», «Сожженная Москва»...

— Килĕшрĕç-и вара романĕсем?

— Авторĕ Григорий Петрович сюжета шутсăр кăсăк тăвать...

— Татах аса илтеретĕп: эпĕ Коля мар, Миккуль. Ку пĕр енчен. Тепĕр енчен, ман шутпа, ку романсене вулаканĕ те шутсăр кăсăк,— кулса ячĕ каччă. Нина пичĕ нар пек хĕрелсе кайрĕ. Хĕр çап-çутă куçĕпе тилмĕрӳллĕн пăхнине асăрхасан каччă хăйне урăх ят панăшăн тарăхасси самантрах çухалчĕ. Нинăна ăшă-ăшă сăмахсем калама хатĕрччĕ вăл, Шура Гусева ăна пӳлчĕ хучĕ:

— Нина, ан йăпшăн, ан йăпшăн эпĕ юратакан каччă çумне. Эпир пĕр ялтан,— касса татрĕ çавскер хĕрпе каччăна çыхăнтарма пуçланă курăнми çипсене. Шура яланхи пекех пичĕпе хĕремесленсе, аллисемпе хăлаçланса калаçрĕ.

Нина пĕрре Шура çине, тепре Миккуль çине пăхса илчĕ те йăпăрт тăрса юлчĕ хыçаларахри рете.

Миккуль пĕр кунхине Нинăна кинона чĕнчĕ. Хĕр ун çине çаврăнса та пăхмарĕ.

— Санăн Шура пур, унпа пĕрле кай...— тупрĕ вăл каччăран пăрăнмалли сăлтав.

Тепĕр эрне иртрĕ — ак телей!— хĕр хăй ăна кинона чĕнчĕ. Миккуль сеанс тăршшĕпех экран çине мар, хĕр çине тăранайми пăхса ларчĕ. Анчах ку телей вăраха пымарĕ. Калинкке умĕнче уйрăлас умĕн каччă хăй çумне сĕртĕннĕ хĕрĕн чăп-чăмăркка кăкăрне ячĕ тытрĕ — кĕске турталлă пике ним каламасăр калинккерен кĕрсе тарчĕ, çавăн хыççăн каччăпа тĕл пуласран вĕçĕмсĕрех пăрăнма тăрăшрĕ.

Тĕрĕсех калаççĕ: инкек ура айĕнченех сиксе тухать. Район центрĕнчен тăван ялне таврăнуçăн Миккуль хура кĕркунне сивĕ çумăрпа шапарчĕ те кĕтмен çĕртен йывăр чирлесе ӳкрĕ. Больницăран кăларсан пĕр-ик уйăх килĕнче пурăнма хушрĕç. Шурса кайнă Миккуль яла таврăнас шутпа хваттерĕнче япалисене кутамккана пуçтаратчĕ. Çав вăхăтра пачах кĕтмен çын — халиччен кунта ура ярса пусман Нина Слесарева — пычĕ кĕчĕ. Хăйне тĕксĕм сăн çапнă, куçĕ айĕсем путса кĕнĕ. Мĕншĕн апла-ши? Çакна Миккуль ниепле те ăнланаймарĕ. Хĕрĕн те ăнланайми ыйтусем çук мар-мĕн.

— Епле каплалла пулса тухрĕ-ха? Мĕн тума шутлатăн? Чкаловскинчи больницăна кайса пăхмастăн-и? Тен, унта пулăшĕç...— вĕрин пăшăлтатрĕ Нина.

Чирли Миккуль, анчах хуйхăрнипе Нинăн та çамки вут пек çунса тăрать.

— Ман пирки ан пăшăрханăр...— тӳрленсе тăрса çирĕппĕн каларĕ Миккуль. Унтан юлашки сăмахне урăхлатрĕ.— Ан пăшăрхан. Килте вĕренкелĕп. Мĕнле те пулин малаллах тапаланăп... эсĕ те пулăшсан...

— Мана хăвпа пĕрле тесе шутла,— куçне мăч-мăч тутарчĕ Нина.— Вĕренсе тухсан санпа пĕрле тăван ялна учителе пыратăп...

Хĕр каллех каччă çывăхне йăпшăнчĕ, çап-çаврака кăкăрĕпе ун çумне çăтă-çăтă сĕртĕнчĕ. Хальхинче Миккулĕн ашкăнас кăмăл пĕр чĕптĕм те пулмарĕ. Хĕрпе каччă пĕрпĕрин аллине хыттăн чăмăртаса уйрăлчĕç. «Мана хăвпа пĕрле тесе шутла»,— çул тăршшĕпех янăраса пычĕç каччă хăлхинче хĕр каланă сăмахсем.

Ку хура кĕркунне Миккуль сывлăхĕшĕн тем тери хура пулчĕ. Йывăр кунсенче ăна педучилище пики унчченхи кӳрентерӳшĕн сасартăк каçарни, чун-чĕрипех уншăн хуйхăрни Миккуле тĕлĕнтерчĕ çеç мар, самаях вăй та пачĕ. Ăна Нина никамран та илемлĕреххĕн, кăмăллăраххăн туйăнма пуçларĕ.

Ăмăр çанталăк хыççăн хĕвеллĕ çутă кун килет. Кăштахран Миккуль пуçĕ тĕлĕнчи хура пĕлĕтсем те сирĕле пуçларĕç. Больницăна тепре кайсан тухтăр ăна малалла вĕренме юрани çинчен пĕлтерчĕ. Амăшĕ ывăлне Патăрьелне ăсатмашкăн юр-вар хатĕрлеме пикенчĕ.

Миккуль педучилищĕне таврăнни пуринчен ытла Нинăна хĕпĕртеттерчĕ.

— Ай, маттур эс! Сан пек маттурри урăх çуках!— кăшкăрса ячĕ вăл пĕтĕм çамрăк чунĕпе савăнса. Мĕн пур класс умĕнче каччăна питĕнчен чап! чап! чуп турĕ.

— Тепĕр спектакль лартатпăр, пире каллех ăста выляксем кирлĕ,— пурин умĕнче те систерчĕ хĕр Миккуле. Пĕр класрисем ăнкараймасăр юлчĕç: хĕр спектакльте выляма пултараканни таврăннăран хĕп-хĕпĕртĕк-ши е чăнласах юратнăран-ши?

Çук, пĕлмест Миккуль хĕр чĕрине пăхăнтарма, çавăнпа уншăн юрату вăхăтăн-вăхăтăн ырату кăна пулса тăрать. Тепĕр тесен хĕр çавăрма пĕртте ансат мар. Юлашки вăхăтра Нина унпа çӳрекен пулнăччĕ ĕнтĕ, Осоавиахимăн Ачча вăрманĕнчи лагерĕнче çар ĕçне вĕреннĕ чухне кĕтмен пăтăрмах сикрĕ тухрĕ. Нина столовăй патĕнчи постра тăратчĕ, Миккуль — разводящий.

— Стой! Кам унта?— кăшкăрса ыйтрĕ хĕр çĕнĕ смена пырсан.

— Смена!— хуравларĕ разводящий.

— Разводящий, ман пата, ыттисем вырăнтах тăраççĕ!—

тесе каламаллаччĕ Нинăн малалла, анчах вăл разводящий сăмаха маннă кайнă. Смена кĕтет, анчах постри çаплах нимĕн те шарламасть.

— Ну, мĕн эсĕ, Слесарева?— васкатрĕ ăна разводящий. Вара постри хĕр текех аптраса тăмарĕ, татăклăн çапла хушрĕ:

— Извозчик, ман пата, ыттисем вырăнтах тăраççĕ!

Çĕнĕ смена ахăлтатсах кулса ячĕ. Çак мыскара çинчен ирпе «Çиçĕм» листокăн кулăш кĕтессинче çырса кăларчĕç. Çавăншăн каллех Миккуль айăпа кĕрсе юлчĕ. Нина татах унран пăрăнакан пулса тăчĕ. Эсир кирек мĕн шутлăр та, тĕрĕсех çав: хĕр çавăрасси пĕртте çăмăл мар.

Вĕренсе ăс илнĕ чухнехинчен, ăслăлăх чулне кăшланă вăхăтран телейлĕрех кунсем тем тесен те урăх пулма пултараймаççĕ. Вĕренме те, илемлĕ литература вулама та, курнăçусене кайма та вăхăт тупăнатчĕ. Анчах виçĕ вĕренӳ çулĕ ытла та хăвăрт иртсе кайрĕ.

Педучилищĕрен вĕренсе тухсан Пожеданова та, Слесаревăна та Анаткасри пуçламăш шкула, пĕрне — пĕрремĕш класрисене, тепĕрне — иккĕмĕш класрисене вĕрентме ячĕç. Нина Лаврентьевна çав çулхинех Шупашкарти педагогика институтне заочнăй йĕркепе вĕренме кĕчĕ. Ҫаччине пĕрле пыма чĕнчĕ — лешĕ килĕшмерĕ, малтан ĕçе хăнăхмаллине печĕ. Хĕр вара Миккультен сивĕннĕ пек пулчĕ. Унпа шкулта тăхтавсем вăхăтĕнче кăна сăмах ылмаштарса илет. Шкултан таврăнсанах контроль ĕçĕсем çырма ларать, зачетсемпе экзаменсене хатĕрленет.

Ачасем юратакан учитель пулма та ансат мар иккен. Урок вăхăтĕнчех класс вĕлле пекех сĕрлесе каясси те пулкалать. Арçын ачасем пĕр-пĕринпе харкашкаласа та илеççĕ. Чăрсăртараххи юлташне учитель умĕнчех çупкă туянтарма та именсе тăмасть. Вăн Нина Мукина класра чи лутри те чи пĕчĕкки, пурпĕр учительпе тавлашма пăхать. Тепĕр тесен шкул пуçлăхĕн Павел Петровичăн урокĕсенче те ачасем хăйсене шавлă тытаççĕ, çавăнпа ăна кăшкăрарах вĕрентме тивет. Алăк уçă чухне унăн сасси юнашар урамри ял ĕçтăвкомне те илтĕнет.

Шкул пуçлăхĕ Николай Яковлевича тăваттăмĕш класрисене Жюль Вернăн «Грант капитан ачисем» кĕнекине вуласа пама ыйтрĕ. Ҫĕнеки чăвашла çукран унта мĕн çырнине уроксем хыççăн эрнене яхăн хăй пĕлнĕ пек калакала кăтартрĕ, вырăнăн-вырăнăн вырăсла вуласа пачĕ. Çамрăк учителе малтанхи кун тăваттăмĕш класрисем кăна итлерĕç, иккĕмĕш кун вара уроксем вĕçленсенех ачасем класа вырăн çитми пырса тулчĕç. Виççĕмĕш кун иккĕмĕш-

сем вěренекен пысăк класа куçса ларма тиврě. Каярахпа Çемен Элкер, Трубина Мархви произведенийěсене итлеме те ачасем йышлăн пухăнчěç. Итлекенсем хушшинче хăй вěрентекен пěрремěш класрисем те пурри Николай Яковлевича уйрăмах савăнтарчě.

Çамрăклах баян калама хăнăхни, педучилищěре Тайбинский преподаватель пулас учительсене сěрме купăс калама вěрентни Николай Яковлевича питě выранлă пулчě.

— Пуш уйăхěнче районта шкул ачисен художество пултарулăхěн смотрне иртterme палăртнă. Çав смотра пирěн шкул мěнпе хутшăнě-ши?— ыйту лартрě учительсен канашлăвěнче Павел Петрович. Çавăн хыççăн шкулта ку енěпе хěрÿ ěç тапранса кайрě. Николай Яковлевич ятарласа «Пурнăç сукмакěсем» композици çырса хатěрлерě, унта пайтах юрă-сăвă тата ташă кěртрě. Хор, ташă тата декламаци кружокěсен занятийěсене тăтăшах ирттерчěç. Николай Яковлевич аллинчи сěрме купăс çěнěрен çěнě кěвěсем янăратрě. Çÿллě пÿллě çамрăк учительница К. И. Миловидова ачасемпе пěрле смотр валли костюмсем хатěрлерě.

Хěрсе кайсах смотра хатěрленнě кунсенче юрланă та ташланă май Павел Петрович сасси тахăш вăхăтра ял ěçтăвкомрисене илтěнме пăрахрě. Нина Мукинан та учительпе тавлашма хăюлăх çитейми пулчě, вăл цыганка ташшине ăстарах та ăстарах ташлама вěренчě. Классенчи чикěсěр шавлă уроксем майěпен-майěпенех манăçа юлчěç.

Шкул пуçлăхě хушнăран Николай Яковлевич смотр умěн ял клубěнче «Пурнăç сукмакěсем» литература, музыкăпа ташă композицийě лартса пачě. Ун чухне Люнькка Свеклов — хут купăс, Николай Яковлевич хăй — сěрме купăс каларěç. Залра ларакансем сăвăсемпе юрăсене, кашни ташша хапăл туса кěтсе илчěç. Композици текстне тăваттăмěш класри Татьяна Коновалова пěр-пěр артисткăран кая мар вуларě. Нумай вырăнсене пăхмасăр калама вěреннě вăл. Халăх тăвăллăн алă çупса композицие лартакана темиçе хут сцена çине чěнсе кăларчě. «Пěчěк акăшсен ташшине» тата «Вěлле хурчě» юрра тепěр хут итлесшěн пулчěç. Халиччен кунашкал чыс курманнипе вăтаннăран-и, вăрăм çул утса тухнă пекех ывăннăран-ши, Николай Яковлевич малалла программа тăрăх хут купăспа пурте ташлассине пěлтерчě те хăвăрт килне тухса шăвăнчě. Вăл салтăнса утиял айне чăмма та хатěрччě ěнтě, сисмен хушăра пÿрте Павел Петрович хăй кěрсе тăчě.

— Ну, маттур, ай, маттур, ял курманнине кăтартрăн... Анчах халь сăмах ун çинчен мар! Мěн мур тума çил пек

тухса тартăн эс? Çамрăксем санпа пĕрле ташласшăн. Турткалашса ан тăр: айта халех клуба!

Пуçлăх сăмахне Николай Яковлевичăн итлемеллех пулчĕ: унăн клуба таврăнса баян калама та, ташлама та тиврĕ.

Учителе тухнă Миккуль ĕçне-хĕлне никамран та ытларах ашшĕ сăнанă, ашшĕ тишкернĕ. Ял клубĕнчи концертра та мĕн пуçласа вĕçне çитиччене ларнă вăл. Тепĕр ирхине Миккуле амăшĕ умĕнчех çапла каларĕ:

— Вăрман хуралçи капăр вăрманта çӳрет, çак пуянлăха пысăклатма тăрăшать. Учитель ачасем хушшинче кĕрмешет, вĕсен ăс-хакăлĕпе пултарулăхне аталантарассишĕн тăрмашать. Иккĕшĕ те кирлĕ ĕç тăваççĕ иккен... Вăт ме сана...

Ашшĕ сăмахĕсен пĕлтерĕшне Миккуль хăвăрт тĕшмĕртрĕ.

— Қаçар, атте, хăлăхсăр ывăлна: эс ĕмĕтленнĕ ĕçе суйласа илеймерĕм. Ман шутпа, кăмăлланă ĕç пахарах çимĕç кӳрет. Ан ятла мана учителе тухнăшăн,— ашшĕ умĕнче пуçне пĕкрĕ хайхи «хытă хăлхаллă» ывăл.

— Эй, мĕн каласмалли унта! Хăвна пĕтĕм ял мухтать те... Аçу хыççăн кайсан вăрмантан çут хĕвел курма та тухаймăн,— аллине лаш сулчĕ амăшĕ.

— Ан ятлăр мана, ан ятлăр...— тепĕр хут каларĕ ывăлĕ. Вăл ашшĕпе амăшĕ çине ăшшăн пăхса тăчĕ-тăчĕ те пичĕ çинчи ырă кулăпах шкула ачисем патне тухса кайрĕ.

Ку тăрăхри шкулсен художество пултарулăх смотрне кӳршĕ ялти вăтам шкулта ирттерчĕç. Унта Анаткасри пуçламăш шкул ачисене Н. Я. Пожедановпа Қ. И. Миловидова илсе кайрĕç. Смотр ирттерме кунти вăтам шкула районти çут ĕç пайĕн пуçлăхĕ хăй килнĕ. Анаткас ачисем ют шкулта хăйсене хăюсăртарах тытрĕç, Николай Яковлевич çумĕнчен пĕртте хăпмарĕç. «Пурнăç сукмакĕсем» композици ăнăçасси пирки ачасенчен кая мар пăшăрханакан Николай Яковлевич та пĕрмаях вĕсемпе пĕрле пулма тăрăшрĕ. Тăванĕсем патне кĕрсе тухас тесе ачасенчен пăрăннă Клавдия Ивановнăна хăй ăшĕнче ятласа та илчĕ вăл.

Анаткас ачисен пултарулăхне смотр комиссийĕ ырларĕ. Районти çут ĕç пайĕн пуçлăхĕ те Н. Я. Пожеданова хавхалантармалли ăшă сăмахсем каларĕ. Çуллахи отпуск хыççăн çамрăк учителе вăл çут ĕç пайне чĕнтерчĕ.

— Эсир смотра творчествăлла хатĕрленни, пĕрмай ачасем хушшинче пулни пире килĕшрĕ. Пĕлтĕмĕр: уроксене те тимлĕ хатĕрленсе ирттеретĕр иккен. Хăвăр ялта пуçла-



Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького
34706 чв

мăш шкултан тулли мар вăтам шкул тунине куратăр ĕнтĕ. Паянтан пуçласа эсир çав шкулта чăваш чĕлхипе литератури преподавателĕ пулатăр,— хирĕçлеме юрами сасăпа пĕлтерчĕ çут ĕç пайĕн пуçлăхĕ.

Часах Николай Яковлевич та, Нина Лаврентьевна пекех, Шупашкарти педагогика институтĕнче заочнăй йĕркепе вĕренме пуçларĕ.

## Чĕмпĕр çути Анаткасра

Тăван çĕршыв аслă вăрçи умĕнхи вăтăрмĕш çулсем. Еплерех пулнă-ши ун чухне Анаткас? Икĕ тӳп-тӳрĕ вăрăм урам: çӳлти кас, аялти кас. Ялăн кай енче, Ялав çырми леш енче, хăрах кас. Мал енче, Киремет çырмипе юнашар, колхозăн выльăх-чĕрлĕх ферми, леререх — малти вăрман. Кунта шурă хурăнсем йăрăс пĕвĕсемпе куçа илĕртеççĕ. Ялăн кăнтăр енче шăнкăр-шăнкăр юхакан Шăнкăртам тăршшĕпе лăс вăрман аякка-аякка тăсăлать, сухăр шăрши саракан хырсем, анаткассем пек каласан яхтăсем, çӳлелле кармашаççĕ.

Сывлăшĕ вара, ах, сывлăшĕ! Кăкăра уçать, кăмăла çĕклет. Антăхса кайсах сывлатăн. Ялтан çурçĕрелле Пӳле çырми урлах анлă уй-хир. Пилĕк пӳрне евĕр Бишбармак çырми те, Чăкăрчек сăрчĕ те Анаткасăнах. Ямшăк çырми тăрăхĕ вара Тутар Сăкăчĕн. Пӳлере тăрна куçĕ пек тăрă çăл тапса тăрать. Ах, мĕнешкел уçса ярать кăкăра шăрăх чухне ун сулхăн шывĕ!

Çу кунĕсем хăвăрт иртсе кайрĕç. Ял урамĕсене уй енчен васкамасăр, хыпаланмасăр авăн уйăхĕ килсе кĕчĕ. Кунсем çаплах тӳлек-ха, сывлăш ытармалла мар таса. Çил лĕм те çук, йывăççем çинчен çулçă пурпĕр тăкăнать.

Кĕркуннен хăйĕн ытарайми илемĕ. Ун чухне урамри пилеш хĕп-хĕрлĕ шăрçа çакать, пӳрт умĕнчи пахчара йăрăс пӳллĕ хĕвелçаврăнăш сап-сарă пурçăн тутăр çыхать. Самăрланса çитнипе именнĕрен садсенче пан улми хĕрелме пуçлать. Витнĕ йĕтемре вара вĕçĕмсĕрех молотилка кĕрлет. Тырра çапса тирпейлерĕç те çĕр улми кăларчĕç. Кĕçех вăхăт хура кĕре сулăнчĕ. Лăпкă та шухăшлă кĕр кунĕсенче хĕрупраç чĕрине вут хыпать тейĕн. Вăл хĕр сăрине хатĕрленет, кĕр мăнтăрĕпе туй хыççăн туй пуласса кĕтет.

...Колхоз счетовочĕн паян канмалли кун. Арăмĕ вара ир-ирех ĕçе тухса кайрĕ. Мефодий Волков бригади малти вăрман енче шыва хутнă кантăра кăларса купалать.

Счетовод — Пăшатан таврашĕ. Ял çинче Уçăп Яккăвĕ

шутланать. Правление ĕçпе пыраканнисем Якку Мирунчă текелеççĕ. Тăван ашшĕ Мирун вăрăм ĕмĕрлĕ пулайман. Вăл вилсен Якку амăшĕ Уçăппа пĕрлешнĕ. Тăван ашшĕ ячĕ хут çинче тата куç умĕнче калама сыхланса юлнă, ял хушшинче вара çĕнĕ кил хуçи ячĕ хисепре.

Уçăп — ватă енне сулăннă арçын, çамрăкранпах кĕтӳçре çӳрет. Хăйне сăпайлă та лăпкă тытать, эрехпе сăмакунран яланах пăрăнать, сăра сĕнсен те ĕçмест. Ун вырăнне шуçăм килнĕ чухне тăрса мĕн хĕвел аниччен уçă сывлăшра кĕтӳ кĕтет, хĕвелпе хĕртĕнет. Çавăнпа çирĕп те сывлăхĕ.

Якку тăван ашшĕне те, Уçăпа та хывман. Май килнĕ чухне эрехне те тĕртсе ямасть, сăрине те тиркемест. Килĕнче пĕччен юлнă май вăл нӳхрепрен пĕр кăкшăм сăра ăсса килсе лартнăччĕ кăна, район центрĕнчен Чкаловскинчен хăна — арăмĕн аппăшĕ килсе çитрĕ.

— Епле килме пĕлтĕр, хисеплĕ хунякамăм Агриппина Александровна! Епле çитрĕр? — чунтанах хĕпĕртерĕ Яков Миронович. Вăл хаклă хăна аллине тытса чăмăртарĕ, тумтирне хывма пулăшрĕ.

Қаçук аппа хăйĕн кĕрӳшне питĕ кăмăллать. Яков Миронович мăшăрĕпе Сахвитпе килĕштерсе пурăнать, ялта — ятлă вырăнта, тăван-пĕтеншĕн чунне парать, килен-каян хăна умне мĕн кирлине-пуррине йăлтах кăларса хурать. Шӳтлеме питĕ юрататать. Қаçук аппа Анаткаса иртнинче килсен Сахвит кăнтăр тĕлĕнче кăшт кăтăш пулнăччĕ. Шăп çав вăхăтра Якку кăнтăрлахи апата килчĕ çитрĕ. Арăмĕ çывăрнă çĕре кравать патне пырса тăчĕ те яра пачĕ куккукла. Сахвичĕ вăрансан ăна ыйту хыççăн ыйту пачĕ:

— Арăм, мĕнле тĕлĕк куртăн? Вăрманта çӳремерĕн-и, куккук авăтнине илтмерĕн-и?

Пĕрремĕш хут курсан Қаçук аппана вырăс майри тесе шутлатăн. Вăл сарă çӳçне майралла кĕске кастарнă, ăна хыçалалла туранă та çутă тура лартнă. Ик хăлхи тĕлĕнчи çӳç пайăркисем хуçи утнă чухне вĕл-вĕл вĕçсе пыраççĕ. Тумланасса та вăл вырăсла тумланса çӳрет. Сăнĕпе вырăс майри пекех илемлĕ. Пĕвĕпе çӳллĕ, яштака. Яланах çутăлса тăракан сăн-пичĕ кăшт тăрхаларах, типшĕмрех. Хăмăр куçĕ ăшшăн та куларах пăхать. Қаçук аппа хăй ĕмĕрĕнче нушине те, хурлăхне те сахал мар тӳснĕ пулин те, сăнĕпе, кĕлеткипе çулне кура мар çамрăк курăнать. Упăшки чирлесе вилнĕ. Тăлăха юлнă ывăлĕпе хĕрне ӳстерсе çын тăвас тесе Қаçук аппа текех качча тухма шутламан, хăйне кăмăлласа мăшăрланма сĕнекенсенчен пĕр иккĕленмесĕр айккинелле пăрăннă.

Ҫасук аппа Чкаловскинче больницăра ĕҫлет. Йăмăкĕн Сахвитĕн упăшки район центрне пымассерен ун патне кĕрет. Малтан колхоз хваттерĕн картишĕнче йăрне тăварать, ун умне апат хурать, унтан тӳрех арăмĕн аппăшĕ патне уттарать, ăна Анаткас кучченеҫне парать. Пĕлтĕр пукрав умĕн счетовод Чкаловскине ирех вĕҫтерсе ҫитрĕ, апла пулин те Ҫасук аппа амбулатори алăкĕ умне ҫитме ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Кĕрӳшне курсан хваттерне каялла таврăнма шут тытрĕ. «Ҫул ҫинче ĕнтĕркерĕр пулĕ, пĕрер чашăк чей ĕҫтерем»,— терĕ вăл яланхи хапăллăхпа. Ак хайхи! Хваттер алăкне уҫсанах тĕтĕм палкаса тухать. Кĕрӳшĕ пӳрте вирхĕнсе кĕрет, каланкăран кăвар ӳкнипе тивсе кайнă урайне сӳнтерме пикенет, ҫулăма асса кайма памасть. Ҫавăнтанпа Ҫасук аппа Анаткасри кĕрӳшне уйрăмах хисеплет. «Сана ун чухне пирĕн киле ырă пирĕшти илсе пынă пуль»,— тет. Хăй турă хăватне мар, эмел вăйне ĕненет, пирĕшти сăмаха пурпĕр кăмăллать.

Кĕрӳшĕ Агриппина Александровна Анаткаса епле килсе ҫитнине тĕпчет:

— Ҫуранах-и? Мĕншĕн правление шăнкăравламарăр? Выезднойпа пырса илеттĕм...

— Мыслимо ли ун пек тума?— хывса хурать куҫлăхне чӳрече янаххи ҫине Агриппина Александровна.— Теплерен пĕрре утса та пăхас килет-ҫке-ха. Шутсăр ĕҫ нумай больницăра. Главврач пулнă май кĕрӳ ман ĕҫе кăшт ҫăмăллатасса кĕтсеттĕм. Аҫта унта... Сирĕн опыт богатăй теейрет Лексантăр Лексантăрч. Мĕн тумалла пулсан та тӳрех мана хушать.

— Ҫыншăн тăрăшатăр-ха эсир, хăвăрăн сывлăхăр еплерех? Пурнăҫ кустăрми тикĕсех пырать-и?

— Сывлăх вопщĕм хамăртан килет, Яков Миронович. Пурнăҫ пирки тем каламалла ĕнтĕ. Лена Хусанти пединститутран вĕренсе килчĕ те, унран ним усси те пулмарĕ. Качча кайса расхута ҫеҫ кĕртрĕ. Щукинаран Григорьева пулчĕ тăчĕ те главврач хваттерне пурăнма куҫрĕ. Патăрьелĕнчи педагогика училищине вырăс чĕлхипе литератури вĕрентме ҫӳрет. Халь Аккилина йăмăкăмпа иксĕмĕрех тăрса юлтăмăр. Юрать-шĕ, главврач хваттерĕ юнашарах. Курас килсенех пĕр-пĕрин патне чупса ҫаҫатпăр.

Агриппина Александровна каласа панă тăрăх, Хусанти авиаци институтĕнчен вĕренсе тухнă ывăлĕ Николай Васильевич, ҫав хуларах конструкторта ĕҫлекенскер, Энтепене куккăш патне самолетпа килсе кайнă. «Кзыл-Тан» колхоз кӳлли ҫумĕнчи улăха анса ларнă та, унтан тутарсем конструктора Энтепене йăйăр кӳлсех леҫнĕ-мĕн.

Ҫасук аппапа кĕрӳшĕ шăкăл-шăкăл калаҫаҫҫĕ, иртнине аса илеҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах кил хуҫи сĕтел ҫине чĕнтĕрлĕ ҫитти сарчĕ. Юр-вар, кăкшăмпа сăра, пĕр пулштух лавкка эрехĕ кăларса лартрĕ. Арăмĕ пĕҫернĕ пукрав кукăльне те касса хума манмарĕ.

— Хир-хир урлă каҫса ҫăварăр та типрĕ пулĕ, хырăмăр та выҫнах ĕнтĕ. Килĕр-ха, сĕтел хушшине ларăр.

Кил хуҫи черккесене эрех, куркасене сăра тултарать. Ҫул ҫинче ывăнни ирттĕр тесе хăна пӳрнеске пек черккене нумай тархаслаттармасăрах ӳпĕнтерчĕ. Эрех-сăрапа явăҫманран кăшт ĕҫни те пуҫне кайса тиврĕ, пĕтĕм ҫан-ҫурăмне лăштăрах ячĕ. Ҫутти чĕлхе чаракĕсене иккĕшĕнне те вĕҫертрĕ пулас.

— Агриппина Александровна, эсир Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ тесеччĕ Сахвит. Чăнахах-и?

— Вĕреннĕччĕ, анчах вĕренсе пĕтереймерĕм мар-и... Ҫамрăклăх айван ҫав... Качча тухрăм та, упăшкапа пĕрле куҫса кайма тиврĕ. Покранимĕр Иван Яковлевич Яковлева хальхи пекех астăватăп.

Агриппина Александровна ҫав ăнланмаллах мар сăмаха час-часах калать. «По крайней мере» вырăнне-ши?

— Май мар пысăк ҫăлтăр пулнă вăл чăвашсемшĕн. Унăн ҫути Чĕмпĕртен Анаткаса та ҫитнĕ. Вăт ҫапла!— чĕлхине чаплаттарса илет Яков Миронович.

— Нивушлĕ?— куҫ харшине ҫĕклет Агриппина Александровна.

— Чăнах ҫав. Хальхи ҫамрăксем Терентий Мартынова пачах пĕлмеҫҫĕ. Ачаранах вĕренме май мар тăрăшнă вăл, Сăкăтри земски училищине сакăр ҫухрăма ҫӳренĕ. Ҫитĕнсен салтак службине ăна Чĕмпĕре илсе кайнă. Кунта вăл Яковлевпа паллашма май тупнă, унăн шкулне кайсах тăнă. Салтакран таврăннă чухне Иван Яковлевич ăна чăвашла кĕнекесем парса ярать, ялта ачасене хутла вĕрентессине пуҫарма сĕнет. Паха вăрлăх лайăх тăпра ҫине ӳкет. Анаткаса таврăнсанах Терентий Мартынов ачасене хăйĕн килĕнче пĕр тӳлевсĕр вĕрентме тытăнать. Ҫавăн хыҫҫăн Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ Яковлев тăрăшнипе ялта шкул уҫаҫҫĕ, Терентий Мартынов унта вĕрентме пуҫлать. Ҫакă иртнĕ ĕмĕрти тăхăр вуннăмĕш ҫулсенче пулнă. Вăт ҫапла!

— Сăмах май каласан,— тăсать сăмахне малалла Яков Миронович,— Чĕмпĕр ҫути ҫитиччен Анаткасра вуламаҫырма пĕлекенсене хăрах алăри пӳрнесемпех шутласа кăларма пулнă. Архивра ҫакăн пек документ сыхланса юлнă...

Яков Миронович шкапран илсе хӑнана сарӑхса кайнӑ хут листи пачӗ. Агриппина Александровна унта акӑ мӗн вуласа пӗлчӗ:

«1905 çулхи ака уйӑхӗн 7-мӗшӗнче эпир Котелов штабс-капитан распискине илтӗмӗр. Çакӑн çинчен ӗнентерсе алӑ пусатпӑр. Анаткасри хресченсен обществин уполномоченнӑйӗсем Еремей Васильев тата Алексей Мартынов. Хӑйӗншӗн те, Васильев хутла пӗлменрен уншӑн та Алексей Мартынов алӑ пусать.

Вулӑс старшини Лапшин».

— Ку документӑн историйӗ çапла,— васкамасӑр ӑнлантарать Яков Миронович.— 1905 çулта хӗлле ялти хресченсем чиркӳ тӑвас ыйтупа Чӗмпӗре Яковлев патне каяççӗ, проект тутарма ӑна 35 тенкӗ укçа парса хӑвараççӗ. Чиркӳ проектне туса хатӗрлеме Котелов штабс-капитан килӗшет. Иван Яковлевич ӑна анаткассен укçине тӳлет, распискине Пӑва уездӗнчи Тӑмпаел вулӑсӗ урлӑ ярса парать. Анаткассем çав документа алӑ пусса илме хут пӗлекен тупаймасӑр аптранӑ. Кунти хресченсем, Еремей Васильев пекех, пӗр саспалли те палламан.

— Çав Яковлев турра ӗненнӗ пулса тухать. Мыслимо ли, мӗне кирлӗ пулнӑ-ши ӑна çакӑ?— ик аллине ик айккинелле сарать Агриппина Александровна.

— Кирлӗ пулнӑ теççӗ.— Тӗрӗс каларӑм-ши тесе шухӑшланӑн Яков Миронович пӗр вӑхӑт нимӗн те шарламасть. Унтан асӑрхануллӑн юравлӑ сӑмахсем тупаймасӑр тертленсе шухӑшне малалла калать.— Яковлев... пирӗн халӑха... чӑвашсене Христос тӗнне... вырӑс тӗнне йышӑнтарасшӑн пулнӑ. Ун шучӗпе çакӑ чӑвашсене вырӑссемпе çирӗпрех туслашма, чӑваш халӑхне вырӑс халӑхӗн культурине йышӑнма май панӑ. Хӑй вӑхӑчӗшӗн ку аптраман та пулӗ. Май мар лайӑх тееймӗн, ытлашши тиркени те вырӑнлах мар. «Вырӑс халӑхӗн хурлӑхӗпе савӑнӑçӗ — чӑвашсен хурлӑхӗпе савӑнӑçӗ, унӑн пуласлӑхӗ — вӗсен пуласлӑхӗ, унӑн телейӗ — вӗсен телейӗ»,— тенӗ Иван Яковлевич.

Шухӑшӗн йӗрне тӗрӗслеме Яков Миронович кӑштах тӑхтаса тӑрать, унтан сӑмахне малалла тӑсать:

— Патша саманинче хресчене пурнӑç тем тӗрлӗ те хӗснӗ. Тепӗр чухне ялтан куç курми тухса тарас килнӗ. Хӗн-асапран мӑнастир туса хӑтӑлас шухӑш Çтаппан Пахомова ялти пуп В. И. Румянцев патне илсе каять, пупӗ ӑна Чӗмпӗре Никандр архиерей патне ярать. Темиçе хут та çитет Пахомов архиерей патне, анчах сӳтӗк Никандр хӑнк та тумасть. Çтаппанпа тепӗр виçӗ хресчен вӑрман хӗрринче пысӑк мар çурт лартса унта пӗр вӑхӑт пурӑнса

та пăхаççĕ, анчах мăнастир пурпĕр уçаймаççĕ. Турă çуртĕнче хӳтлĕх тупма ĕмĕтленнисен пӳртĕнче каярахпа вăрман хуралçи вăрлăхлăх йĕкел типĕтет.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнисем Анаткасра пĕрре çеç мар. Сăмахран, Меркурий Волков унта вĕреннĕ. Вăл граждан вăрçине хутшăнса Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă. И. Я. Яковлев хăй «Вăрçă тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ» кĕнекере Закускинсен пĕр ывăлĕ чăваш шкулĕнче вĕреннине, унтан вăл хăй ирĕкĕпе пĕрремĕш тĕнче вăрçине тухса кайнине асăннă. Иван Яковлевич «Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсен шăпи çинчен» произведенире анаткассене ырăпа асăннă.

Яков Миронович сăмахне çапла вĕçлет те хăнаран хăй ыйтса тĕпчеме тытăнать:

— Агриппина Александровна, эсир Яковлева хăвăр куçпах курнă тесе каларăр. Мĕнлерех сынччĕ вăл?

— Хм... Епле курмасăр пултăр-ха... Покранимĕр пире вăл логикăпа тата педагогикăпа вĕрентетчĕ. Çӳллĕччĕ, тĕреклĕччĕ, кĕрнеклĕччĕ. Чăн-чăн улăпахчĕ. Кĕлеткипе çеç мар, ĕçĕ-хĕлĕпе те. Хура тройкăпа е çав тĕслех сюртукпа çӳретчĕ. Хулăн туйине хăйĕнчен хăвармастчĕ. Çӳçĕ ун чухнех кăвакарнăччĕ ĕнтĕ. Пĕррехинче пире — хĕрсене — çапла каланине астăватăп: «Эсир хăвăра лăпкă тытăр, сăпайлă пулăр. Этак-так, сире халăх хисеплемелле пултăр». Çав вăхăтра хăйĕн куçĕ кулатчĕ, пирĕн çине ăшшăн та кăмăллăн пăхатчĕ.

Иккĕленмелли çук: анаткассем çутталла туртăннине, ырă пурнăç çинчен ĕмĕтленнине аслă педагог Яковлев витĕр курса тăнă, май килнĕ таран пулăшма тăрăшнă, анчах патшан шанчăклă тарçисем унăнне те çулне пĕрмаях пӳлсе пынă. Совет влаçĕ çулĕсенче кăна халăх пурнăçĕ самайланчĕ. Халĕ Çтаппан Пахомова чĕртсе тăратас пулсан вăл çакна курĕччĕ: унăн несĕлĕнчи Александр Прокопьевич Пахомов ялта çеç мар, районта та сумлă çын пулса тăчĕ. Астăватăп, яш чухне Саня купăс ăста калатчĕ, трактор çине те кăмăлĕ туртнипе ларчĕ.

> Ирсерен ял хыçĕнче
> Трактор суха сухалать.
> Кулленхи ĕç хыçĕнчен
> Савни купăсне калать.

Ку такмак шăпах ун çинчен темелле. Александр Прокопьевич «Çăлтăр» колхозра пултаруллă механизаторсем вĕрентсе çитĕнтерме тăрăшать. Кивĕ саманара пахомовсем пурнăçран тарса пытанма шутланă пулсан, хальхисем хăйсен шăпине хăйсем татса памалла тăвасшăн.

Кĕрекерен тухсан Агриппина Александровна стена çумĕнче тĕлĕнмелле ӳкерчĕк асăрхарĕ: çăра туратлă йывăç тесен — йывăç мар, лăсăллă утмăл турат мар-ши — апла та калаймăн. Хăна ӳкерчĕк патне пырса тăчĕ.

— Яхтă пекрех,— терĕ Агриппина Александровна.

Яхтăн вулли çине — Турай, унран тухакан икĕ туратран пĕрин çине — Упи, тепри çине Сарпаттăр тесе çырнă. Çав икĕ туратран вара нумай-нумай турат хунаса кайнă.

Çӳлти пĕр турат çинче кĕрӳшĕн ятне шыраса тупрĕ Агриппина Александровна. Тăрăшса тунă тирпейлĕ пысăк ӳкерчĕк мĕне пĕлтерни çинчен хăна кил хуçинчен хăйĕнчен ыйтрĕ.

— Вăт наруд, тем те пĕлесшĕн. Кунта пирĕн ял Анаткас сыпăкран сыпăка епле хунаса пынине кăтартнă,— хавхалансах ăнлантарчĕ Яков Миронович.— Кашни турат çинче арçын ячĕ. Çемье çумне çемье, ратне çумне ратне хушăнса пынине арçынсем тăрăх сăнама лайăхрах. Аяларахри туратсем хушшинче хуçăккисем те курăнкалаççĕ. Ку ĕнтĕ хăшĕсем хăйĕнчен хунав хăварайманнине кăтартать. Тĕлĕнмелли çук: патша самани йывăртан çынсем çемйи-çемйипе, ратни-ратнипе пăчланнă.

Шăкăл-шăкăл калаçакан Яков Мироновичпа унăн хăнине урамран сасартăк юрă илтĕнсе кайрĕ:

Пит илемлĕ кĕрхи пилешсем
Хĕрлĕ тĕслĕ шăрça çакнăран.
Пит телейлĕ çитĕннĕ хĕрсем
Каччисем чĕререн савнăран.

Яков Миронович ваштах сиксе тăчĕ, урам енчи чӳрече умне пычĕ.

— Паян хĕрсен уяв-çке,— сиктерсе илчĕ вăл çăра куç харшине.— Пĕрре камит кăтартам-и сире, Агриппина Александровна? Атьăр хĕр сăри кайса куратпăр...

## ПИЛЕШ ПИÇСЕН

### Хĕрсен кĕрхи уявĕ

Хĕр сăри — кĕр мăнтăрĕн уявĕ, хĕрупраçăн тыр-пул, çĕр улми, пахча çимĕç пухса кĕртнĕ хыççăнхи йăпанăвĕ. Ăна пукравпа пĕрле ирттереççĕ. Çав кун ваттисем пукрав кукли пĕçереççĕ, çамрăксем хĕр сăри ĕçеççĕ. Тепĕр тесен

ĕçeççĕ тени тĕрĕсех те мар. Ку ăнланмалла та ĕнтĕ: яшкĕрĕме эрех-сăра мар, вăйă-кулă та юрă-ташă кирлĕ. Эппин, кĕрхи уяв тăваççĕ тейĕпĕр. Унта хутшăнакансем малтан юрăхлă çурт тупаççĕ, хуçине мĕн чухлĕ тӳлесси пирки калаçса татăлаççĕ. Вăрмана хăрăк турат пуçтарма каяççĕ. Пукрав ăшши пуçтарма каятпăр теççĕ хăйсем. Унтан кашниех хăй килĕнчен салат тата хăмла илсе пырать. Хĕрсем пурте пĕрле сăра тăваççĕ, кукăль пĕçереççĕ. Пукрав ăшшине кукăль ăшне хурса хăвартăмăр теççĕ. Хĕр сăрине пухăнмалли çурт урайне, саксене кăчăр курăкĕпе çуса тасатаççĕ, çуллахи кирĕк-тусана хăвармарăмăр теççĕ.

Кăçал хĕр сăрине Татюк аппа патĕнче лартаççĕ. Яков Мироновичпа Агриппина Александровна унта хăвăрт çитсе алăк хыçне хĕсĕнсе ларма ĕлкĕрчĕç те ĕнтĕ. Пӳрте хĕрсенчен чи малтан Кĕтерук-чиперук — ялĕçтăвкомĕнче секретарьте ĕçлекенни — кĕчĕ. Хĕр алăк урати урлă каçрĕ — пӳрте çурхи хĕвел пайăрки килсе ӳкнĕн туйăнчĕ. Яштака та çӳллĕ Кĕтерук кĕнĕ-кĕменех пуçне мăнаçлăн каçăртрĕ те пурте илтмелле сăвăлама тытăнчĕ:

Утма çулпа утма лайăх,
Хĕр сăрине килме лайăх.
Пĕччен мар эп, эртелпе —
Хĕрсемпе-тантăшсемпе.

Татюк аппа пуç сĕлтсе тăрать, хăюллăрах пулма хистет. Çакна кура Кĕтерук пурне те алă сулать:

— Кĕрĕрех, хĕрсем, кĕрĕр,— тет вăл тантăшĕсене çирĕппĕн.

— Иртĕр, хĕрсем, иртĕр тĕпелелле,—сĕнет Татюк аппа.

Хĕрсем карталаннă хур кайăксем пек пĕрин хыççăн тепри кĕреççĕ. Вĕсен пĕтĕм карти кĕрсе тăчĕ — пĕтĕм пӳрт ăш-чикĕ çуталса кайрĕ. Кашниех савăк кăмăллă. Кил хуçине, алăк патĕнчи икĕ ватта тараватлăн сывлăх сунаççĕ, алă параççĕ:

— Салам Татюк аппана! Аван-и, майра аппа, Якку тете?

Хĕрсемпе пĕрле икĕ каччă пур. Пĕри — Санькка, тепри — Ваççили. Иккĕшĕн те çара кайма ят тухнă. Яланхи йăлапа хĕрсем салтака ăсатас умĕн савнă каччисемпе юлашки хут пĕрле сăйланаççĕ. Унсăр пуçне вĕсем хĕрсен уявне пăтăрмахран-мĕнрен сыхлама та кирлĕ. Хĕр сăриçке, çавăнпа ыттисене йыхрав паман. Каччăсен сăмсине ăшаланă кăмпан ырă шăрши кăтăклать. Сĕтел çине кĕр илемĕпе ырлăхĕ — йӳçĕтнĕ хăярпа купăста, хĕп-хĕрлĕ панулми турилкки-турилккипе тухса ларчĕç. Кĕтерук-чиперук

кунта асли пулмалла. Вăл хăнасене пурне те кĕрекене вырнаçтарчĕ. Ваççили çеç алăк патĕнче тем мĕшĕлтетет.

— Ĕçре хăв вут пек, кунта кĕтсе илме çук. Çăварна хăвар та сĕтел хушшине çиме лар,— хăтăрса тăкрĕ ăна Кĕтерук.

Халĕ ĕнтĕ сĕтел хушшине пурте шăкăрин кĕрсе ларнă. Хаваслă уява пуçличчен, юрлама-ташлама тытăниччен тăван яла никĕсленĕ Юманпа Чĕкеçе — Шăнкăртам хĕррине куçса килсен Турайпа Севкке пулса тăнăскерсене — пуç тайса хисеплемелле, хăйсенни пек таса юрату ялти яшкĕрĕме пӳрме тархасламалла.

Кĕтерук йăрстин ура çине тăрать:

Чĕкеçпелен Юмана
Эп чĕнетĕп хăнана.
Килĕр, курăр хĕрсене,
Телей кӳрĕр вĕсене.
Юман паттăр — асатте,
Харсăр Чĕкеç — асанне,
Кĕрекене килĕрех,
Килĕштерӳ пиллĕрех.
Ту çинчен шерпет юхать,
Çăка чĕресе тулать,
Сăрт çинчен сим пыл юхать,
Çавра тирĕке тулать.
Шерпет сире паратпăр,
Юсман хамăр чăмлатпăр.
Айăп ан тăвăр пире.
Пуç таятпăр ак сире.

Кĕтерук урайне чĕркуçленсе ларать те виçĕ хутчен пуç çапать, сĕтел хушшинчисем ура çине тăраççĕ те виçĕ хутчен пуç таяççĕ. Çакăн хыççăн хăнасем шерпет сыпса юсман çиеççĕ. Шерпечĕ — пыл шывĕ, юсманĕ — тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ вĕтĕ пашалу. Сĕтел хушшинче çамрăксем пĕрнепĕри çимĕçсем сĕнме те, сăйлама та манмаççĕ.

Кăмпа кукăлĕпе сăра астивесси патне те черет çитет. Кĕтерук каллех ура çине тăрать те счетовод еннелле çаврăнать:

— Ваттисенчен сăмах сана парар пуль, Якку Мирунчă. Сăмах илемне кӳме пултараканччĕ эсĕ.

— Эпĕ курма çеç килтĕм, мансăрах ĕç кăларăр,— хирĕçлеме пăхрĕ счетовод. Хистесех ыйтнăран кĕреке курки сăмахне пурпĕр ăна калама тиврĕ.

— Этсемри, çу каçа уйра кăткă пек кĕрмешрĕмĕр. Мĕн акнине-лартнине чиперех пухса кĕртрĕмĕр. Хура кĕр çитрĕ. Ха! Кĕрекере эпир кăткăран та йышлăрах!— шӳтлесе илчĕ вăл. Унтан хавхаланса кайрĕ.— Çапла шутлатăп: камăн

чĕри Анаткасшăн, хамăрăн ялпа районшăн, Тăван çĕр-шывшăн тапать, çав чăннипех телейлĕ. Акă мĕншĕн ĕçер: яшкĕрĕм тĕреклентĕр, вăй хуштăр. Ял капăрлантăр, колхозăмăр вăйлăлантăр, пуянлантăр, Тăван çĕр-шыв хăватлантăр!

— Клачук, сан черет. Сассу сар кайăк сасси пек, чĕлхӳ хура чĕкеçĕнни пек. Айта, яра пар.

— Паян иртенпех пит çăмарти кĕçĕтет,— тытăнчĕ калама Клачук.— Ку вăл çынран вăтанасса тесçĕ. Кирлĕ сăмах калама пĕлмесĕр сирĕн умăрта вăтанмалла килсе тухрĕ. Пирĕн кас хĕрĕсем ĕçченех мар мухтама, начарах та мар хурлама. Хам сывлăшăм хам ăшăмра чухне, чĕрем мотор пекех ĕçленĕ чухне манăн чĕлхе-çăварăм суя калаçас çук...

Хĕр тата тем каласшăнччĕ, ăна Ваççили пӳлчĕ:

— Эсĕ, Клачук, планета çуратса панă чăх пекех кăтиклетĕн. Чăххи çăмарта кăна тунă-иç. Эпĕ çапла сунатăп: туй хыççăн туй пултăр, анчах пурте харăсах качча ан тухăр. Килес çул хĕр сăри кампа ĕçĕпĕр?

Сăмах парасса кĕтмесĕр ура çине Санькка тăрать:

— Эпĕ çак пушă турилкке çине пăхрăм-пăхрăм та, сулахай алă тупанĕ кĕçĕте пуçларĕ. Мĕне пĕлтерет-ши: укçа кĕрессе-ши е каясса-и?

— Каясса! Каясса!— кăшкăрса ячĕç хĕрсем.

— Эппин халех турилкке çине пилĕк тенкĕ хуратăп!— пулчĕ йĕкĕт хуравĕ. Ун хыççăн Ваççилипе счетовод та укçа пырса хучĕç. Хĕрсем те турилккене пуянлатрĕç. Паллă: çакă пĕтĕмпех Татюк аппана хваттер укçи тӳлеме каять.

— Кивĕ çине çĕнĕ çитсе тăтăр, пĕр ĕмĕт тепĕрне çураттăр. Савăшса та ыр сунса ĕçер, алă тытса та чуп туса уйрăлмалла пултăр!— илтрĕç çамрăксем Татюк аппан курка умĕнхи сăмахне.

Сăра курки хĕвеле май аларан алла куçса пычĕ.

— Тав сана! Тав сана та! Сав мана! Сав мана та!— илтĕнет çине-çинех.

Хĕрсем курка çумне тутисене кăна перĕнтерчĕç, сăрапа чĕлхи вĕçĕсене çеç йĕпетрĕç.

— Тантăшăмсем, сире мĕн пулнă — шăлăрсене шарт çыртнă?— илтĕнчĕ Кĕтерукăн уçă сасси. Унтан вăл Клачука айăкран кăлт тĕкрĕ те пăшăлтатса çапла сĕнчĕ:— Эс-и, эп-и, иксĕмĕртен пĕри юрă пуçламалла.

— Епле? Çук, урăхла тăватпăр. Е эсĕ юрă пуçар, эпĕ итлесе тăрам, е эпĕ çăварăнтан пăхăп, эсĕ юрă пуçараканĕ пул...— хуравларĕ лешĕ.

— Каснă-лартнă шапăлкка эс!— тарăхам пекки турĕ

Кĕтерук. Ҫлачук та аптрасах ӳкмерĕ, тавăрса каламаллине ҫийĕнчех тупрĕ:

— Эп шапăлкка пулсан, эсĕ хăв вара чисти шапăлккасен патши...

Анаткассен хăна юррине хитре сасăпа пĕчченех пуҫларĕ Кĕтерук, ыттисем вара харăсах хутшăнчĕҫ:

Сирĕн сĕтел ҫинче шур ҫăмарта,
Чут-чут шуратмасăр ҫиеттĕм.
Татюк аппа патне ай килсессĕн
Чут-чут юрламасăр каяттăм.

Хура чĕкеҫ ларнă ҫирĕк ҫине,
Ик ҫунатне янă ирĕке.
Ятарласа савса килнĕ чухне
Ярам кăмăлăма ирĕке.

Вăхăт хура кĕре ай сулăнчĕ,
Хура сăсар йĕрне йĕрлес мар.
Ĕнтĕ эпир ҫирĕмĕр, ĕҫрĕмĕр,
Атте-анне ятне ярас мар.

Уҫланкă-уҫланкă хĕрлĕ ҫырли —
Ҫавăнпа илемлĕ вăрмансем.
Ҫак хуҫанăн сăйĕ, ĕҫки-ҫики —
Ватă хуртăн симлĕ пылĕсем.

Юрра ахаль юрламаҫҫĕ, уншăн хăмла йӳҫҫипе сăйлаҫҫĕ. Тăм курка калех вăрăм ҫула тухать.

## Такмак калама кам ăста?

Пуҫласса Ҫлачук пуҫларĕ. Сăнĕ хитре унăн, тумĕ шукăль. Кĕрен пурҫăн кĕпи аркине хĕвел ҫаврăнăш ҫеҫки тĕслĕ шараҫ тытнă. Пиҫнĕ чие тĕслĕ шерепеллĕ пиҫиххийĕ ҫĕре ҫитиех усăнать. Пуҫĕнчи тутăрĕ йăм-хĕрлĕ. Чăлхи хĕрлĕхен тăрри тĕслĕ, пушмакĕ хĕрлĕ хăва хуппинчен ҫĕленĕ пек. Мăйĕнче ярăм-ярăм ҫут шăрҫа. Пичĕ вара писевсĕрех вут пек ҫунса тăрать: супăньпе мар, Киремет сăртĕнче хĕвелпе пиҫнĕ ҫĕр ҫырли сĕткенĕпе ҫуса пурăнать тейĕн. Куҫĕ тата, куҫĕ... Ҫаҫхи вут пек чăл та чăл ҫунать. Тӳпери ҫăлтăр пĕр айккинче тăтăр. Такмак калăнă чухне ик хулне вăльт-вальт сиктерсе илет:

Семьсот, восемьсот,
Эпир хамăр высший сорт,
Такăнмасăр ӳкместпĕр,
Ватăлмасăр вилместпĕр.

Темшĕн-ҫке ку тантăшĕсене килĕшмерĕ. Хветуҫҫа та ун ҫине сиввĕн пăхса илчĕ.

— Эсӗ чăваш-и, вырăс-и? Мӗн-ма хутăш тӗветӗн?— сăмахӗпе çапса хуçрӗ вăл тантăшне. Тепӗртакран хăй йăрт тӳрленсе тăчӗ, çепӗç сасăпа юрласа ячӗ:

Хӗмлен, хӗвел, çиç, уйăх,
Эпир хамăр чаплă йăх.
Чун каниччен ӗçлетпӗр,
Канмашкăн та пӗлетпӗр.

Мана, çамрăк янавара, Клачукпа Хветуççа такмакӗсем пӗрешкелех килӗшрӗç. Иккӗшӗн такмакӗнче те тарăн шухăш. Ман шутпа, Анаткас хӗрӗсем хăйсене шӳтлесе кăна «высший сорта» хураççӗ. Вӗсем ытти ял хӗрӗсем пекех: такăнсассăн — ӳкеççӗ, ватăлсассăн — вилеççӗ. Çакăнпа пӗрлех ӗçчен пикесем чаплă йăхран, чун канăçне пархатарлă ӗçре тупакансен йăхӗнчен тухнине ӗненме те май пур. Çавăн чухнехи хӗрсемпе йӗкӗтсем, вӗсен ачисемпе мăнукӗсем каярахпа пӗрлешӳллӗ ӗçре пӗтӗм республика пӗлмелле чапа тухрӗç. Пыр та калаç çакăн хыççăн Клачукпа, Хветуççапа! Чăнах та чаплă йăхран тухнă вӗсем.

Такмакласси малалла пырать. Клачука пӗр ларнă урапа çинчен тăрукках антараймăн. Вăл хăйӗннех перет:

Манăн савни чирленӗ
Воспалени легкипе.
Воспалени легкипе мар,
Московски водкипе.

— Пӗр латтисӗр такмакланăшăн чӗлхӳ вӗçне шӗпӗн тухтăрах!— каллех хăтăрса илчӗ Хветуççа хайхи Клачука.— Акă мӗнле юрламалла:

Анаткассен кӗпер çук,
Каçса çӳрекен те çук.
Анаткассен ачисене
Качча пыракан та çук.

Тахăш вăхăтра Хветуççа умне Санькка çитрӗ тăчӗ, хӗре хăвăрт хурав пачӗ:

Анаткассен кӗпер пур,
Каçса çӳрекен те пур.
Анаткассен ачисене
Качча тухакан та пур.

Йӗкӗт Анаткас хӗрӗсене хурласса кӗтнӗччӗ Хветуççа, качча урăх шухăшлă иккен. Тӳррипе калаçан, кăмăллать пирӗн Хветуççа тăн-тăн кӗлеткеллӗ Саньккана. Хӗр чунӗ уншăн çунать, ăна качча каясшăн ăвăнать, çакна пурпӗр

кăтартмасть. «Каччи питĕ маттур, унпа çăкăр çиме пулать»,— шутлать хĕр хăй ăшĕнче. Сасăпа вăл нимĕн те каламасть, апла пулин те Санькка унран хăпмасть. Хветуççан пĕвĕ çинçе, сăнĕ хитре, пичĕ çинче çепĕç кулă вылять. Пăхса тăранаймăн. Чӳрече умне лартас чечек пекех. Хĕрĕн утмăл турат тĕслĕ кăвак куçĕ, пĕкĕ пек авăнчăк куç харшийĕ Санькка чĕрине кăрт сиктереççĕ. Кам шутланă-ха çак черченкĕ чечек Тăван çĕр-шыва фашистсем тапăнсан фронта тухса кайнă арçын вырăнĕнче хăюллăнах трактор рульне тытасса, районта паллă трактористка пулса тăрасса! «Тăшмана çĕнтерĕпĕр те хĕвел пекех çаврăнса таврăнăпăр»,— тенĕччĕ Санькка. Нихçан та суйса курман савнă хĕрне çак йĕкĕт, хальхинче вара хăй сăмахне тытайман: хаяр вăрçăран каялла таврăнайман. Анаткассем яланхиллех савăнччăр, юрлаччăр та ташлаччăр тесе çапăçу хирĕнче пуç хунă.

Хĕрсем хушшинче пĕр Нинук çеç пусăрăнчăк. Çийĕнчи кĕпипе саппунĕ киввисемех. Çивĕтне темле тĕссĕр хăюпа явтарса çыхса лартнă. Юрламасть те, ташламасть те. Мĕншĕнне калама йывăр. Уй-хир бригадинчи ĕçĕ ăнса пырать-ха унăн, чĕринчи çепĕç туйăмĕсене вара кĕрхи тăм тиврĕ. Хĕр чунĕн асамлă хĕлĕхĕсене янăраттарма тытăннăччĕ Пăнчук Краснов — хамăр ялăн пиçнĕ палан пек хĕп-хĕрлĕ питлĕ чипер йĕкĕчĕ. Ахальтен мар Краснов хушаматлă. Ашшĕ те, шăллĕсем те палан питлĕ. Пĕр шăллĕн пичĕ çинче чечче шатри йĕрĕсем юлнă, çав шатрасем те палан тĕслех. Пăнчук Патăрьелĕнчи педучилищĕрен вĕренсе тухрĕ, халĕ кӳршĕ ялта учительте ĕçлет. Каç-каç урама сайра тухать. Тухсан та Русак кассинелле мар, ялăн тепĕр вĕçнелле — Ялав çырми еннелле — çул тытать. Те шерпет сапса хунă унта. Çакă выртрĕ те ĕнтĕ йывăр чул пулса хĕрĕн чунĕ çине. Такмак калама хутшăнтарас тесе Санькка пĕрре мар ун умне пырса пăхрĕ, анчах кăлăхах.

Нинукпа юнашар Хветуççа пырса тăчĕ, тантăшĕпе вăрахах пăшăл-пăшăл пуплерĕ. Унтан тем аса илсе-ши, Нинука шăппăн-шăппăн пысăк вăрттăнлăх пĕлтерчĕ. Лешĕн пичĕ сасартăк çутăлса кайрĕ, тантăшĕсемпе пĕрле савăккăн юрлама та, ташлама та пуçларĕ.

— Эс Нинука паçăр мĕн каларăн? — ыйтрĕ каярахпа кулараххăн Кĕтерук Хветуççаран.

— Пăнчукран салам каларăм, вăл хĕр сăри курма килессине пĕлтертĕм...

— Кĕтсех тăр: килет кунта Пăнчук... Шăнкăртам тепĕр май юхма пуçласан. Çапах эс питĕ маттур, Хветуççа,— мухтаса илчĕ ăна Кĕтерук.

Агриппина Александровна çамрăксем çине тăранайми пăхать. Яков Мироновичăн та кăмăлĕ яри уçăлса кайнă. Тепĕр тесен вăл пăсăк кăмăлпа салху çӳренине ял çыннисем курман пулмалла. Яланах савăк калаçать, пĕрмай шӳтлет. Вăл пултарман ĕç те çук. Тĕслĕхрен, хăех балалайка ăсталать. Сутма мар, килте калама. Пит ăста пăнтăртаттарать ăна. Хĕр сăринче вăйăçă пулма счетовод ывăлĕ — Пăшатан Миккулĕ килĕшнĕччĕ. Район центрне шкул ĕçĕпе кайнăскер тем сăлтавпа килсе çитеймерĕ. Хĕрсем Яков Мироновича хăйне балалайка тыттарчĕç. Саньkка вара чĕркуççийĕ çине кăмака питлĕхĕ хучĕ, Санюк— Александра — икĕ йывăç кашăк илчĕ. Асăрхаттарса хăварам: пирĕн касра икĕ Санюк — пĕри йĕкĕт, тепри хĕр. Вĕсене пĕр-пĕринчен Александр тата Александра ятсем хушнипе уйăраççĕ.

Ташă кĕвви янăраса каять. Урай варрине чи малтан çăмăл ал-ураллă Лича хăюллăн тухать, янкăс сасăпа пĕр çаврăм такмак калать:

Анаткассем юрлаççĕ,
Анаткассем ташлаççĕ.
Ирĕк парăр савăнма,
Чуна уçса кăтартма.

Тăпăр-тăпăр ташласа пĕр ункă тунă Лича вырăнне Хветуççа ярăнса тухать:

Эпир юрă юрласан,
Эпир ташă ташласан
Хаяр куçпа ан пăхăр,
Сивĕ сăмах ан калăр.

Кĕрнеклĕ Кĕтерук вăтанчăк Лисук çине пăхса илет, куçне чеен хĕсет те ташă такмакĕ хайласа хурать:

Атя, Лисук, яра пар,
Ярапине мана пар.
Иккĕн пĕрле савăнар,
Шур акăш пек ярăнар.

Анаткас пики кĕвĕ çеммипе шыв пек тикĕс юхать. Вăрăм кĕпе аркийĕ вăр-вăр туса пырать. Тантăшĕ умĕнче пĕрлĕхен питлĕ Лисукăн парăмра юлмалла-и вара? Çук, вăл та Кĕтерукран катăк мар. Ик аллине пилĕк тĕлне тытать, пуçне каçăртать те такмакпа тавăрать:

Урай хăми — сар хăма,
Хуçас çук ăна хăна.
Яш вăхăт пĕрре кăна,
Ирттерес лайăх ăна.

Энтӳк тете хӗрӗ — яштака пӳллӗ Клавди — сасси хӑйсен пысӑк садӗнчи сар кайӑкӑнни пекех. Акӑ еплерех такмаклать вӑл:

Якку тунӑ пӑнтӑртик —
Ҫилӗм сӗрнӗ хӑнтӑртик.
Урасене куҫтарать,
Урай тӑрӑх шуҫтарать.

Энтри Елисси тӑн-тӑн кӗлеткеллӗ, кӑмӑлӗ ҫирӗп, чунӗ хурамасем патӗнчи ҫӑл шывӗ пек таса. Пичӗ те ҫутӑччӗ, анчах кӑҫал ӑна хуратут пусрӗ. Халӗ пит ҫӑмарти ҫинче пӑчӑ-пӑчӑ хура. Ун такмакӗ хӑйне майлӑ:

Тапар-и те сикер-и,
Уратине хуҫар-и!
Эпир тепре килнӗ ҫӗре
Ҫӗнӗ туса хуччӑр-и!

Юрӑ-ташӑ хӗрнӗҫемӗн хӗрсе пырать. Хӗрсен ҫӑмӑл урисем урай хӑми тӑрӑх хӑвӑрт-хӑвӑрт шуса кӑткӑс тӗрӗсем тӗрленине сӑнаса ӗлкӗрме кансӗр. Вӗсем ташланӑ чухнех такмак хайлаççӗ, балалайка калакана хӑйсем пӗлнӗ пек ҫепӗççӗн юрласа астараççӗ:

Ух, ух, тепри тух.
Ҫамрӑк вӑйӑмӑр, ан хух!
Ан ывӑнччӑр хӗлӗхсем,
Татах ташласшӑн хӗрсем.
Балалайка пӑнтӑр-пӑнтӑр.
Леш кас хӗрсем мӑнтӑр-мӑнтӑр.
Мӑнтӑр ҫеҫ мар, лапсӑркка,
Пулнӑ-пӗтнӗ ват кӑркка.

Вӑйӑҫӑ кӑмӑлӗ лайӑххине кура балалайка хӗлӗхӗсем хӑйсемех савӑкрах та савӑкрах тӗнкӗлтетнӗн туйӑнаççӗ. Вӗсем кӑларакан асамлӑ сасӑсем чӑм тара ӳкичченех ташлама хистеççӗ. Савӑннӑ хушӑрах хӗрсем пӗрне-пӗри йӗплесе те илеççӗ:

Тӗнкӗлти те тӗнкӗлти,
Пирӗн Верук сӗнкӗлти:
Тӑранаймасть ташласа,
Сывлать ӗнтӗ хашкаса.

Хӗрсем хӗрсе юрланӑ-ташланӑ вӑхӑтра пӳрте кӗтӳҫӗ Якку шӑвӑнса кӗнӗ те сак вӗҫне хӗсӗнсе ларнӑ. Вӑл симӗс накидкӑпа, брезент атӑпа. Тӳррипе каласан ялта ӑна урӑх тумпа никам та курман. Тумне улӑштармасть, арӑмӗсене вара ылмаштарсах тӑрать. Пӗрисене хӑй хӑваласа кӑла-

рать, теприсем хăйсем тухса тараççĕ. Якку капла пăхма лайăх çын, ăшĕ-чикки вара теплелле. Тӳррине тӳрех калар: Татюк аппа патне Якку халиччен ура ярса пусман, хальхинче вара ăна тахăш тухатмăш тем тума астарса килнĕ, те хĕр пăхма, те курка ӳпĕнтерме — пĕлме çук. Кĕтӳ тапăрта чухнех вăл ял лавккине махорка туянма килсеччĕ, çавăнтах çуттине стаканĕпех ӳплентерсеччĕ. Унтанпа ялтан тухаймасть-ха. Пулăшма илнĕ ача кĕтĕве çитерсе çӳрет пулинех.

Çĕнĕ хăнана асăрхасанах Кĕтерук Ваççилие куç хĕсрĕ, мĕн тумаллине лешĕ ăнланманран шăппăнраххăн çапла хушрĕ:

— Курка пар та ăсатса яр.

Виç-тăватă хĕр пĕр кĕтесре пăшăл пăтти пĕçерсе илчĕç, куркине самантрах пушатнă Якку патне çывхарчĕç. Пĕри такмаклама тытăнчĕ:

Кĕтӳç Якку пит вăр-вар:
Пĕлтĕр явма пуçланă
Аршăн тăршшĕ пушшине
Кăçал явса пĕтернĕ.

Такмакне каларĕ те тантăшĕсем çине именчĕклĕн пăхса илчĕ хĕр. Ан айăплăр, яка тухмарĕ терĕ ахăр. Тепри вара урăххи çинчен пĕлтерчĕ:

Ял витĕр Хусан çулĕ,
Йăнăшрăм — хусах çулĕ.
Тĕрĕсрех: улах çулĕ.
Кунĕн-çĕрĕн ыйхă çук.
Вată юман хуйхăрать
Турачĕсем хăрнăшăн.
Пирĕн Якку хуйхăрать
Хĕрсем качча пыманшăн.

— Тăктăмал çын чунне ан хускатăр-ха, хĕрсем!— тархасланçи пулать чĕнмен хăна. Çакă вара хĕрсене пушшех хĕтĕртет:

Якку, Якку, якатмăш,
Ялти ятлă тухатмăш,
Сехре пăкки хăпартмăш,
Хĕрсен чунне йăпатмăш.
Вун икĕ хут авланчĕ,
Вун икĕ хут уйрăлчĕ.
Евчĕ ярать таврана
Анаткасри тăмана.

Çапла, кирлĕ чухне хĕрсен такмакĕ çапмаллипех çапса хуçать. «Ун пек çынпа çыхланиччен çыхланманни»,— шутлать хăй ăшĕнче Яков Миронович çав кĕтӳçĕ çинчен,

анчах лешӗ йӗп ҫинчи пек ларнине курать те хӗрсен шӳчӗ ытла чӗрре ан кӗтӗр тесе хӑй такмаклама тытӑнать:

Эс те Якку, эп те Якку,
Ятӑмӑрсем пӗрешкел.
Эп тунмастӑп, эс те ан тун:
Иксӗмӗр те теветкел.

Ӑҫта унта хӗрсене ӳкӗте кӗртме! Ҫаллех хӑйсенне малалла тӑсаҫҫӗ:

Ни молоко, ни турӑх,
Ни качака, ни сурӑх.
Пӗр арӑма уйӑрсан,
Эрнерен тата урӑх.

Тарӑхтарма йӗк шыракан хӗрсене Яков Миронович каллех чарать, такмак шухӑшне урӑх енне пӑрать:

Якку ятли эс те пур,
Якку ятли эп те пур.
Эс те маттур, эп те маттур,
Пиртен маттур тата пур.

Яккӑва Якку куҫ шуррине кӑна кӑтартрӗ. «Тӑм ҫамкаллӑ мар-ха, неччӑ мана йӑпатма»,— тесшӗнччӗ пулас, анчах мӑк-мак тукаларӗ те алӑкран хӑвӑрт тухса шӑвӑнчӗ. Ҫӗнтерӳпе савӑнса такмакҫӑсем алӑ ҫупса юлчӗҫ.

Хӗр сӑри юрри-ташши таҫта ҫитиех илтӗнет. Ҫӑсӑкланакан кӳршӗ-аршӑ Татюк аппа пӳрчӗ умне пыра-пыра тӑрать. Ача-пӑча кармашса чӳречерен пӑхать. Ват енне сулӑннӑ Лӑриван тетепе унӑн мӑшӑрӗ ҫынсем хыҫне пырса тӑчӗҫ. Ҫакна асӑрхасан пӳртри хӗрсем услам ҫу пек ҫемҫе чӗлхепе тунсӑх такмакӗсем калама пуҫларӗҫ:

Сӑртра ҫырла пиҫсессӗн
Тухӑпӑр-ха пуҫтарма.
Ҫартан Аркаш килсессӗн
Тӑрӑшӑпӑр ҫавӑрма.
Пурҫӑн пек сарӑ ҫӳҫе
Тураман куп иртмерӗ.
Эс аякра пулсан та,
Асӑнман кун иртмерӗ.
Манӑн пиншак кӗсйинчен
Тӗкӗр ҫути курӑнать.
Аркаш ҫинчен шутласан,
Сӑнӗ куҫа курӑнать.
Шӑпчӑк юрлать улӑхра,
Сасси килет сад тӑрӑх.
Савнӑ тусран салтакран
Салам килет хут тӑрӑх.
Ҫыру ҫыртӑм, ҫыру ҫыртӑм,

Хутăм хурăн тăррине.
Сарă кайăк, почта пулса
Пар Аркади аллине.

Хĕрсем татах такмакларĕç. Куç тулли Аркадие никама та памастпăр тесе шантарчĕç. Пÿртре мĕн каласа юрлани урама та янках илтĕнет. Лăриван тетепе унăн мăшăрĕ чарса чарăнми куççульне çынсем асăрхамасла шăла тăраççĕ. Ывăлĕ салтакран таврăнасса, киле кин кĕртессе вĕсем иккĕшĕ те тем тери кĕтеççĕ. Çимĕк кун вăййа тухнă хĕрсем тимĕрçĕ пралукĕ тĕлĕнче чарăнса юрланине карчăкпа старик çывăха пырсах итлерĕç. «Кусем хĕр пăхма тухнă ĕнтĕ»,— ырă сунса пăшăлтатрĕ ун чухне кÿршĕ-аршă. Вăйă карти Лăриван тетепе унăн мăшăрне хăйсем çамрăк чухнехине аса илтернĕччĕ, кăмăлĕсене тем тери çемçетнĕччĕ.

Пÿртре ташă çĕнĕ вăйпа тапранать.

Эй, ÿстĕрех купăста
Саркаланса, сарăлса.
Ташламашкăн хам ăста
Ура тапса, савăнса.

Вăр та вăр çаврăнать Урине, курса та ĕлкĕрме çук ун урине. Вĕттĕн-вĕттĕн пускалать, пăр çинчи пекех çăмăлçăмăл ярăнать. Çав вăхăтра чĕвен тăрса чÿречерен пăхакансем патне пырса çитрĕ сарлака хул-çурăмлă, çÿллĕ Иван. Лешĕ, Иван-пăван, упапа пĕр тăван текенни. Çавскер ĕнтĕ Урине хыççăн ун мĕлки пек утăм юлмасăр çÿрет, пĕрмай ун таврашĕнче явкаланать, хĕре хăй майлă çавăрма ĕмĕтленет. Урине темшĕн урăх еннелле ĕрĕхет. «Пăван пек ан çулăхнă пул ман çума!»— пахча урлă чĕлхепе пат касайса татать вăл каччă ăнтăлăвне. Çывăх тăванĕпе пĕрле Мускава ĕçлеме кайса Урине унта çулталӑк ытла пурăнчĕ, хуларан тем тĕрлĕ çи-пуç туянса килчĕ. Малти вăрман çумĕнче ыраш вырнă чухне хĕрарăмсене ик аркăллă чăваш кĕпи айĕнчен тăхăннă чĕнтĕрлĕ хитре сороччине кăтартнă. Çавна çĕмел тăвакан Иван-пăван сăнаса тăнă иккен. Сикет тухать вара пĕр камит. Тăратса лартнă кĕлтесен сулхăнĕнче кăнтăр апачĕ хыççăн Урине тĕлĕрет каять. Темле майпа шăвăнса çитет çак тĕле çĕмел ăсти. Нумай шутласа тăмасть — ярать тытать хĕре хĕвелпе хĕрнĕ уринчен. Тĕлĕнмелле: епле хăйнă-ши халиччен арçын алли тĕкĕнмен пирĕштие унашкал кÿрентерме? Хĕр те парăмра юлман: тапнă янă сĕмсĕре шухă тихалла.

Вырмара мĕн пулни çинчен Иван никама та пĕр сăмах та шарламан. Урине те инкĕшне çеç вăрттăн каласа панă. «Никама та ан пĕлтер»,— тенĕ. Анчах ваттисем ахальтен

каламан çав: сăмах хĕрĕх шăл хушшинчен тухсан чăнахах хĕрĕх яла сарăлать иккен. Вырмари камит çинчен Русак касси хĕрĕсем хушшинче пĕлменни те çук. Çĕмел ăстине чӳрече умĕнче асăрхасанах вĕсем харăссăн юрласа ячĕç:

Пĕчĕкçеççĕ Уринен
Янă тытпă урине.
Эх, туяннă янахран
Хĕр урине тытакан.

Хăйĕнчен хăй вăтанакан йăваш кăмăллă Иван вăрт çаврăнчĕ те уттара пачĕ вăрăм чĕлхесенчен аяккалла. Сăмах май каласан çакă ун чухне Уринене пĕртте пăшăрхантармарĕ. Хĕр çаплах ун çине куç хӳрипе кăна пăхать, хăй яхăнне пачах ямасть. Вырмара кӳрентернĕрен ĕнтĕ. Каярахпа, Тăван çĕр-шыва нимĕç фашисчĕсенчен хӳтĕленĕ чухне, вăтанчăк Иван паттăрлăх кăтартнине, çакăншăн ăна награда панине пĕлсен Уринен мăнаçлăхĕ ирхи тĕтре пекех сирĕлсе кайрĕ: каччăн адресне шăллĕ урлă пĕлсе ун патне хăй çыру ячĕ, конверта ăшă сăмахсемпе пĕрле малти вăрман çумĕнчи уйра татнă пĕчĕкçеççĕ хитре чечек чикме те ăс çитерчĕ.

Савнийĕнчен Çерукран хăпаймасть кӳршĕри Ваççили. Хĕр ăçта, йĕкĕчĕ те унта. Паян та пĕрмаях юнашар. Пытарса тăрар мар, пурнăç çулĕ ытла та сакăлтаклă пулчĕ Ваççилипе унăн шăллĕн Санюкăн — Александрăн. Чирпе вăрах асапланнă упăшки Кĕçтентин çĕре кĕрсен çемье тилхепине арăмĕ çирĕп тытаймарĕ: ывăлĕсем иккĕшĕ те урам тăрăх çил хăвалама пуçларĕç. Хĕрарăм пуçăн килçурта тирпейлеме ансат пулмарĕ Алтӳк аппана. Кĕçтентин çуртне унпа пĕр тăван Мĕтри хăйĕн ĕçчен çемйипе куçса килчĕ. Çавăн хыççăн Ваççилипе шăллĕн пурнăçĕ йăлтах урăхланчĕ. «Çитет сире Русак тăрăх шапа таканласа çӳреме»,— тет вĕсене тетĕшĕ. Ывăлĕ Йăмăльтӳк, авланма васкаман тăлпан каччă, колхозра ударника тухнă. Унпа пĕрле халĕ Ваççилипе Санюк та ир-ирех, кăвак çутăллах, плуг кӳлсе акана каяççĕ, жнейкăпа тырă выраççĕ. Мĕтри тете хастарланнă тăлăх çамрăксене тăван ывăлĕнчен те лайăхрах тумлантарчĕ. Нимĕнле ĕçрен те пăрăнманран вĕсене бригадир та хисеплет ĕнтĕ.

— Эс, Ваççили, утă леççе Йĕпреçрен тин таврăнтăн, ывăнтăн пулĕ? — ыйтать йĕкĕтрен бригадир.

— Валлахи ывăнман. Тӳрех кала, Мефоди тете, мĕн тумалла?

— Тырă выракансене пĕр пичĕке шыв леççе памалла та, никама тупаймастăп: пурте хирте...

— Валлахи халех каятăп. Никама та ан шыра.

Калать те, тăвать те. Вăл кĕçех чăхăмçă Дубинăна кӳлет, мĕншĕн тесен ку лаша ăна çеç итлет. Урапа çине пысăк пичĕке лартать. Тепĕр сехетрен тимĕрçĕ çил арманĕ патĕнчи ыраш пуссинче ăшша пиçнĕ колхозниксем çăл шывĕ ĕçеççĕ, Валлахие тав тăваççĕ. Ку вăл Ваççилин хут çине çырман ячĕ. Чăваш ачи çак сăмаха кӳршĕ ялти пĕр тутартан илтнĕ те ăна пĕрехмай калать. Çапла çуралнă йĕкĕтĕн иккĕмĕш ячĕ. Тутар сăмахĕ, «чăнах, çаплах» тенине пĕлтерет иккен.

Çерук вара йĕкĕте çепĕççĕн Вася тесе чĕнет. Акă вăл, тулли кĕлетки çине ик аркăллă сарă сатин кĕпе тăхăнса тĕрĕллĕ саппун çакнăскер, акăш пек ярăнса-ярăнса урай варрине тухать. Хăйĕн сарлакарах пичĕ хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайнă, именереххĕн такмакласа ташлама тытăнать:

Çĕвĕç хаччи пит çивĕч
Хура тăла касмашкăн.
Манăн савни пит чее
Ют хĕрпеле каймашкăн.

Сарă хыçлă çунине
Кама сутрăн, кала-ха!
Савни, мана пăрахсан
Кама саван, кала-ха!

Çав самантрах такмакласа ташлакан Çерук умне Ваççили сиксе тухать. Ун çийĕнче хура пустав шăлавар, Çерукăнни тĕслĕ сарă сатин кĕпине шăлавар ăшне чикнĕ, çутă тăхаллă пиçиххине салтакла туртса çыхнă. Пичĕпе ĕнси хĕвелпе-çилпе пиçсе хуралнăран вăл пушшех те кĕрнеклĕ курăнать. Çемĕ май урисем хăйсемех тăпăр-тăпăр тăваççĕ, чĕлхи хĕре такмакпа хуравлать:

Хăçан куртăн куккука
Кантăк çине ларнине?
Хăçан куртăн эс мана
Ют хĕрпеле кайнине?

Çерук тавра йĕкĕт тем тери ăста ташласа çаврăнать, аллине хĕр хулĕ çине хума туртăнать, анчах лешĕ йĕкĕте хăй çывăхне ямасть, такмак шухăшне кăна урăх еннерех пăрса хурать:

Ан ман, акăш, йăвуна
Ăшă çĕре кайсан та.
Тусăм, ан ман эс мана
Урăх хĕре савсан та.

Ваççили каллех хăйĕн юратăвĕ çирĕппине ĕнентерессшĕн:

Çырма тĕпне анмастăп,
Çырма шывне ăсмастăп.
Эп ютпа çӳреместĕп,
Эпĕ сана манмастăп.
Ярапаллă тутăра
Хыçалтан çыхма аван.
Сан пек хӳхĕм хĕрпеле
Пĕрле çӳреме аван.

Çерук кăмăлĕ çемçелнĕ пек пулать. Çакă вара Йĕкĕте хăй патнерех çывхарма май панинчен те, унăн çĕнĕ такмакĕсенчен те курăнать:

Мĕншĕн-ши вăл çуркунне
Хĕрӳ хĕвел пăхать-ши?
Мĕншĕн-ши вăл çамрăк чун
Юратушăн çунать-ши?
Çупкăн-çупкăн çĕр çырли,
Татса пĕтерес те çук.
Эх, юратнă савни, сана
Курса тăранас та çук.

Ваççили те тусĕ чĕрине витермелли такмак хăвăрт тупать:

Пăхрăм эп пĕлĕт çине,
Унтан пăхрăм хам çине.
Шухăшларăм сан çинчен,
Сана юратни çинчен.

Ваççилипе Çерук куçĕсем пĕр-пĕрин çине илĕртӳллĕн тĕмсĕлсе пăхаççĕ. Хĕрпе Йĕкĕт тинех алла-аллăн тытăнса ташлама пуçлаççĕ, иккĕш харăс пĕр такмак калаççĕ:

Сарă кайăк йăвине
Çăхан тустарас çук-ха.
Пĕрне-пĕри юратсан
Эпир сивĕнес çук-ха.
Çаранлăха çул хыврăм
Çулла тухса çӳреме.
Савни, сана тус турăм
Ĕмĕр пĕрле пурăнма.

Йĕкĕтпе хĕр ăста юрлани-ташлани пурне те килĕшрĕ. Балалайкине пăнтăртаттарнă май колхоз счетовочĕ пĕр хăнăхнă сăмахĕсене çине-çинех калать: «Вăт наруд! Вăт тĕнче!»

Йĕкĕтпе хĕр «ансамбль» умне пуç тайма пырсан, Агриппина Александровна васкасах ури çине тăчĕ. Хăй хĕпхĕпĕрчĕк.

— Курăр-халĕ, асăрхăр-ха! Оказывается, эсир каснăлартнă артистсем иккен. Вăт кур вĕсене: дуэт юрларĕç, чăн-чăн дуэт! Покранимĕр ун пеккине театрта кăна илтме

пулать тесеччӗ, Анаткасрах пултаруллисем пур иккен. Ирӗк парӑр, юратса чуп тӑвам сире ват пуҫӑмпа!

Больница майри хӗрелсе кайнӑ йӗкӗтпе хӗре пичӗсенчен чап! чап! чуп турӗ.

— Саççимех начар мар-ха вӗсем, аптрамаççӗ,— текелерӗç çав хушӑра тантӑшӗсем. Агриппина Александровна хӑй вырӑнне кайса ларасшӑн пулчӗ.

— Майра аппана хӑйне ташлаттарар-ха!— кӑшкӑрса ячӗç хӗрсем. Çавӑнтах пӑшӑлтатса пӗр-пӗрне çапла пӗлтерчӗç:— Якку Мирунчӑ арӑмӗпе пӗр тӑван вӑл. София Александровна ӑна Қаçук аппа тесе чӗнет.

Агриппина Александровна ни унталла, ни кунталла.

— А мескер, пултараймасран хӑратӑр-им?— хӗтӗртет ӑна Ваççили.— Валлахи, ташша ӑста эсир.

— Пӗрре ташласа савӑнтарӑр-ха, Агриппина Александровна,— сӗнет хунякамне счетовод.

— Эх, нивушлӗ ташлама маннӑ-ши?—иккӗлененçи пулать Қаçук аппа. Йӑлтӑр-йӑлтӑр куçлӑхне хывса аллине тытать. Йӑрст тӳрленсе тӑрать те урисене пӗрин хыççӑн тепӗрне вылянтарса урай тӑрӑх хӑяккӑн-хӑяккӑн шуса каять. Аллисем, аллисем мӗн тумаççӗ пулӗ! Чавсаран хуçлатнӑскерсем пӗрре кӑкӑр тӗлӗнче, тепре çурӑм хыçӗнче вӗлтлетеççӗ, куçа илӗртекен асамлӑ паллӑсем çыраççӗ сывлӑшра. Лӑпкӑ хумсем çинчи шурӑ акӑш ишнӗ пек юхать Қаçук аппа.

Кӗрӳшӗ кӗçех ури çине сиксе тӑчӗ, балалайка вара ташӑ кӗввине унчченхинчен те уçӑмлӑраххӑн, илемлӗреххӗн янӑратрӗ. Хӗрсем пурте ункӑланса тӑнӑ, харӑс-харӑс алӑ çупаççӗ, ташлакана хавхалантарма такмак хыççӑн такмак шӑрантараççӗ:

Ташлать ӗнтӗ, ташлать ӗнтӗ,
Пӗвӗ хумханать ӗнтӗ.
Ташланине пӑхса тӑрса
Чупӑм хумханать ӗнтӗ.
И лӑс хурӑн, лӑс хурӑн,
Лӑсӗпеле илемлӗ.
Пирӗн майра аппамӑр
Ташшипеле илемлӗ.
Қаçук аппа ташланинчен
Сар кайӑк та вӑтанать.
Турат çинчен сиксе анса
Çулçӑ айне пытанать.

Агриппина Александровна та такмак калама ӳркенмерӗ:

Яш-кӗрӗмӗ куç тулли,
Кӗрекийӗ тӑп-тулли.
Çавна майӑн йыт пулли
Пулса тӑтӑм — ан ятлӑр.

Анаткассен хӗрӗсем —
Уйри сарӑ чечексем.
Хитре иккен ташшисем,
Шӑнкӑрав пек сассисем.

## Миккуль аллинче баян

Хӗр сӑрине пухӑннисем ватӑ ҫын ташшине алӑ ҫупса ырланӑ чухне урамран хаваслӑн кӑшкӑрни илтӗнчӗ:

— Вӑйӑҫӑ килет! Вӑйӑҫӑ!

Ваҫҫилипе Санькка тата Кӗтерук ӑна кӗтсе илме тухрӗҫ. Часах пӳрте тӗрленӗ ҫухавиллӗ шап-шурӑ кӗпе, йӑм хура шӑлавар тӑхӑннӑ йӗкӗт кӗрсе тӑрать. Сӑнӗ ҫутӑ, кӑмӑлӗ уҫӑ. Аллинче баян. Ку вӑл колхоз счетовочӗн Яков Миронович Пожедановӑн вӑталӑх ывӑлӗ Миккуль. Хӗрсемпе каччӑсене вӑл пуҫ сӗлтсе саламларӗ, ашшӗне сӑпайлӑн пуҫ тайрӗ, Қаҫук аппӑшӗ патне пырса алӑ тытрӗ. Миккуле тӳрех кӗрекене лартаҫҫӗ, пӗр пӗчӗк черкке ҫуттине тыттараҫҫӗ, куркапа сӑра параҫҫӗ. Хӗр сӑрине пухӑннисене вӑл тепре ӑшӑ куҫпа пӑхса ҫаврӑнать, саламласа ырӑ сунать. Аллинче пӗрер минут пек тытнӑ хыҫҫӑн черккине сӗтел ҫине лартать.

— Қаҫарӑр, хӗрсем, эрех ӗҫме вӗренеймерӗм-ха. Сӑри вара шутсӑр лайӑх сирӗн.

Сӑрине те хӑй тутанса кӑна пӑхрӗ. Ҫук, пули-пулми купӑсҫӑ пек вӑйӑҫа ҫӳремест Миккуль. Пушӑрах чухне кӑна клуба кайкалать, баянӗпе пурне те савӑнтарать. Русак касси хӗрӗсемшӗн те кӑвак хуппи уҫӑлчӗ: Миккуль хӗр сӑрине килчӗ. Чӑн ӗнтӗ, район центрӗнче тытӑнса тӑмалла пулнӑран кунта вӑхӑтра ҫитеймерӗ, ҫапах яш-кӗрӗм ан ӳпкелетӗр ӗнтӗ. Акӑ вӑл сетел хушшинчен пахча енчи вӑрӑм сак варрине куҫса ларать, нумай-нумай ӗнчӗллӗ баянне алла тытать. Пӳрнисем темиҫе сасӑ кӑларса ҫав ӗнчӗсем тӑрӑх хӑвӑрт-хӑвӑрт чупса ирттеҫҫӗ. Баянист юрӑ пуҫламалли ӗнчӗне тупать те— ҫавӑнтах ҫепӗҫ кӗвӗ шӑранса тухать. Хӗрсем хаваспах харӑс юрласа яраҫҫӗ.

Пирӗн урам анаталла,
Шуса анать пӗр ҫуна;
Эп урампа иртнӗ чухне
Йӗрсе юлать хӗр ача.

Тӗлӗнмелле лайӑх та янравлӑ ҫак юрӑ. Ана пурте пӗлеҫҫӗ. Қашниех хавхаланса юрлать. Тарӑн шухӑшлӑ юрӑ кирек кама та ассӑн сывлаттарать, асаилӳсемпе ӗмӗтсем ҫуратать, ҫамрӑклӑх тунсӑхне вӑратать. Унӑн кӗввине

Федор Павлов йёркеленине яш-кёрём пёлсех каймасть. Вăл чăннипех халăх юрри пулса тăнă.

Вăйăçă баяна юрлаттарать те, калаçтарать те. Салхуллăн та пăхтарать, ахăлтатса та култарать. Хёлёхлё пăнтăр-пăнтăрне счетовод паçăрах кăмака хыçне кайса çакнă. Санькка па Санюк-Александра та «музыка инструменчёсене» хăйсене тивёçлё вырăна хунă. Пўртре тепёр юрă пуçарчёç. Баян сассипе пёрле вăл чуна пырса тивмелле шăранать.

Баянист ташă кёвви калама тапратсан урай варрине Кёteruka тёртсе кăлараççё. Хёр тархаслаттарса тăмасть. Пуçне мăнаçлăн çёклет, кăкăрне каçăртса хурать, урай тăрăх юмахри пирёшти евёр çăмăллăн ярăнма тытăнать. Хур акăшла юхса-юхса пыруçăн хулёсене сиктере-сиктере илет, алли пўрнисем тухатмалла хитре вăйă выляççё. Куçёпе пёрре сулахаялла, тепре сылтăмалла тинкерет. Унăн пётём кёлетки ташлать: пилёкё авăна-авăна илет, урисем темле кăткăс çур ункăсем тăваççё. Пăхсан-пăхсан çак пике ташăшăн кăна çуралнă пекех туйăнса каять.

Тёрёссипе, пурнăç Кёterука йўççине тем тёрлё те тутантарнă. Марье аппăшёпе тата Элекçей шăллёпе пёрле вăл çамрăклах тăлăха тăрса юлнă. Тăлăх-турат пурнăçё ай-ай тăварлă: куççулёпе пит çăвать, кёпе çаннипе тар шăлать. Мёскёнсен кăмака йăтăнса анать. Вёсем шип-шип тухса тулнă урисемпе картишёнче тăм çăраççё, кирпёч çапаççё, кăмака тутараççё. Ярăнса ўснё вăхăтра Кёteruk колхозăн чăх-чăх ферминче ёçлеме тытăнать. Ик-виç çул каялла имшер те черченкёччё Кёteruk. Шёшкё хупăрланăран хёвел çути курайман çамрăк юман пекех çинçешкеччё. Вăхăт çитсен юман та шёшкё пусмăрёнчен хăтăлать, çўлерех кармашать, сарăлса ўсме тытăнать. Кёterукăн та çавăн пек вăхăт çитнё ахăр. Кўршё-аршă куçё умёнчех унăн кёлетки ўт хушса тёрекленчё, сăнё-пичё чиперленчё, хура çивёчё хулăнланчё. Хайхи хёрупраçăн яштака кёлеткине нёр кёчё. Кёвентепе шыв йăтсан урампа ярăнса кăна пырать. Тантăшёсемпе каçпа вăййа тухсан еплерех утать вăл ухăнса! Çакна пёр куç çеç мар сăнать. Хёр сăринче те вăл мёнле ташланине пурте ăмсанса пăхрёç.

Баянист умёнче Санькка. Пёр-ик хут вăл урай тавра урисемпе тăпăртаттарса ташласа çаврăнать, унтан акробат пек авкаланма, хуçкаланма тытăнать, чёркуçленсе ларать те çăмха пек кусса пынă май ик аллине пёрре пёççи айён, тепре çурăм хыçёнче çаптарать, черетлентерсе ури тупанёнчен те кăкăрё тёлёнчен шартлаттарать. Мён чухлё хаваслăхпа савăнăç, хастарлăхпа паттăрлăх унăн ташшинче!

Хĕрсем Санькка валли те тивĕçлĕ такмак тупрĕç:

Çаксем ĕнтĕ машинăсем
Вырса çыхаканнисем!
Çаксем ĕнтĕ пирĕн ялăн
Пултаруллă ачисем!

Санькка хыççăн мăкăнь питлĕ Ульха-тупăлха тухрĕ. Вăл хăвăрт-хăвăрт тăпăртатать, ури çĕре тивни те курăнмасть. Пăрчăкан евĕр йăпăр-йăпăр чупса ташланăран, çав тери çăмăллăн вăр та вар çаврăннăран, шукăль тумланнăран вăл Татюк аппан пысăк мар çуртне ăнсăртран килсе лекнĕ вут кайăк пек туйăнса кайрĕ. Такмакне те ку хĕр ĕрĕхнĕ урхамах хăвăртлăхĕпе калать:

Курăк епле шăтать-ши,
Çави епле витет-ши?
Хĕр сăрине килменнийĕн
Чунĕ епле чăтать-ши?
Вăйçăн алă пўрнисем
Вылянарах параççĕ.
Çавăнпа та вăйăçăна
Юратарах параççĕ.
Ай-хай хавас хĕр сăри,
Çулне иккĕ килинччĕ.
Вăйçă маттур, куртăр-и,
Ывăнмасăр калинччĕ.

Ĕмĕртен пыракан йăлапа вăйăçă ташлакансем çине пĕртте пăхмасть, хăлхи вара лайăх илтет.

Баянне çаплах ташă кĕвви калаттарса вăл такмакпа хуравлать:

Урам хушши тикĕс мар,
Тикĕслекен эпир мар.
Хĕрсем хăйсем ывăнмасан
Ывăнакан эпир мар.

Хĕрсем пĕрин хыççăн тепри ташлаççĕ. Вăйăçă çамкине пăрçа пек шултăра тар пĕрчисем тапса тухнă. Сĕт пек шурă питлĕ Шура ун тарне тĕрленĕ ал тутрипе шăла тăрать. Вăйăçă тепĕр енчи Лисук та ал тутрине хатĕрех тытать, анчах ăна Шура пĕр самантлăха та вăйăçă патне ямасть.

Хĕр сăринче кăтартрĕç те ĕнтĕ Русак касси хĕрĕсемпе каччисем хăйсемех юрă-сăвă хайлама пултарнине. Авалтан килекен йăла-йĕрке тăрăх тивĕçлĕ юрăсемпе такмаксене чун-чĕререн хĕпĕртесе юрласан тата уйрăмшарăн та, мăшăрăн-мăшăрăн та савăнса ташласан Ваççилин янкăс сасси янăраса каять:

— Санькка сăвă каласшăн!

Анаткас сăвăçĕ тархаслаттарса тăмарĕ. Малтан хавасլăн çапла пĕлтерчĕ:

— Пĕлтĕр хуçнă çăпатине кăçал туса пĕтертĕм. Иртнĕ уйăхра çырма пуçланă сăвва паян вĕçне çитертĕм.

Пĕвĕпе çӳллĕ мар вăл. Маяковский пек пулас тесе табуретка çине хăпарса тăчĕ. Сылтăм аллине çĕклерĕ те сассине хулăн кăларма тăрăшса сăвă калама тытăнчĕ.

**Каласамччĕ, ан вăтан!**

Шăпланайрĕ шухă шывлă
Шăнкăр-шăнкăр Шăнкăртам.
Шăпăрт пулчĕ ыйхă пуснăн
Пĕкĕри йĕс шăнкăрав.

Уйрăмах пĕр хĕр салхуллă
Йышĕ пысăк ушкăнта.
Мĕншĕн-ха апла пуç усрăн?
Каласамччĕ, ан вăтан!

Салтака каять пĕр каччă —
Асатаççĕ станцăна.
— Сыв çӳре, мана ан манччĕ,—
Пăшăлтатрĕ хĕр ăна.

Каччă хуравларĕ шăппăн:
— Шухăшпа пустуй ан юс.
Пурăнах, ĕçле эс лăпкăн,
Шанчăк çунатне ан ус.

Сирĕлех, хевтесĕр тунсăх,
Ан хĕстер хĕр чĕрине.
Асатмашкăн йышлăн тухнă
Тăвансем мăн çул çине.

Уйрăлайрĕ кил-йышран.
Кил енне тинкерчĕ каччă —
Ял çине пăхрĕ те каччă —
Сывпуллашрĕ ял-йышпа.

Куç хĕсет кĕтме хистенĕн:
— Хĕрĕм, тусăм, сывă юл!
Пуç тайса калать хисеплĕн:
— Тăван ялăм, сывă пул!

Мунчара пытанса çырнă сăввине Санькка тăсараххăн, юрлараххăн каларĕ. Сассинче хăй именни те палăрса тăчĕ. Çапах сăвă пурне те килĕшрĕ.

— Япăх мар шереметĕн сăвви,— мухтарĕ пĕри.

— Хăй çинчен çырнă. Часах унăн та салтака каймалла пулать,— астутарчĕ тепри.

— Пирĕн Санькка лайăх сăвăçах пулать-ха. Тулĕк пĕвĕ

кансĕрлет: алăк хăлăпĕ таран кăна,— шӳтлерĕ виççĕмĕшĕ. Шел пулин те, вăл чăн-чăн пророкла калаймарĕ. Фронтра пуç хума тивнĕрен Санькканa Парнас тăвĕ çине çӳле хăпарма пӳрмен.

— Çерук,— кăлт тĕкрĕ ăна Кĕтерук.— Сăвăçа маххă ан пар. Хăв хайланине юрласа кăтартах. Ну, Çерук, ну, вăтанук, ан пăркалан, ан кутăнлан...

Ваççилие çара ăсатма хатĕрленсе Çерук ятарласа юрă хайланине тантăшĕсем лайăх пĕлеççĕ, çавăнпа ĕнтĕ ăна юрă юрласа пама çине тăрсах хистеççĕ. Эх, пĕрре çеç илтесчĕ сирĕн пĕве çитнĕ хĕрĕн ытарайми çепĕç сассине! Чăн ĕнтĕ, малтанхи çаврăм именчĕкреххĕн, черченкĕреххĕн чĕтренчĕ. Унтан хĕр сасси çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленчĕ, вăй илнĕçемĕн вăй хушрĕ. Пӳртре тăвăртан юрă картишне юхса тухрĕ. Кĕçех тантăшĕсем хушса юрламаллине астуса юлса Çерукпа пĕрле кĕмĕл сасăсемпе тăсса ячĕç те, юрă урама вирхĕнсе тухрĕ. Вăйăçă кĕвве баян чĕлĕхĕсем çинче тупсан Çерук юрри çĕнĕ вăйпа янăрама тытăнчĕ. Хĕр хайланă юрă пурне те килĕшрĕ.

**Нимрен те хаклăрах**

Кантăк умĕнчи шап-шурă хурăн
Пĕр-пĕччен юлнишĕн кулянать.
Пушă, тусăм, иксĕмĕрĕн вырăн,
Эс çуккишĕн чунăм хурланать.

Ывăнсассăн, алă усăнсассăн,
Хĕсĕнсессĕн кăкăр тунсăхпа,
Янăрать ял çийĕн уçă сассăм,
Аша пусаратăп юрăпа.

Çĕр-шыва сыхла, савниçĕм, тимлĕ,
Шанчăклă тăр эсĕ хуралта.
Салтака епле-ха аса илмĕн,
Çук, манмаççĕ сан ятна ялта.

Вăхăт урапи шăвать ӳркевлĕн,
Ерипен иртет куп хыççăн кун.
Пĕр сана кĕтетĕп, тусăм, эпĕ,
Пĕр санпа телейлĕ манăн чун.

Асăнмалăх ал тутри парсаччĕ,
Ан çухат ăна, куç пек упра.
Ĕмĕр юратма тупа тусаччĕ,
Çак тупа çутаттăр çăлтăрла.

Çĕр çинче çурхи шыв-шур хăватлă,
Юрату унран та вăйлăрах.
Ан пăрах мана, манми хăлатăм,
Çакă вăл нимрен те хаклăрах.

Юрӑ вӗҫленчӗ. Пӳрт пӗр саманта шӑпах пулчӗ. Ҫерук ӑшри кӑмӑл-туйӑмне юрӑпа чӗрене тивмелле каласа пани пурне те тӗлӗнтерчӗ. Ӗҫех малтан пӗри, унтан пурте харӑсах алӑ ҫупса ячӗҫ.

— Шуҫӑм ҫути килнӗ чухнехи сар кайӑк пек шӑрантартӑн,— мухтарӗ тантӑшне Клачук.

— Вӑт сана ме, вӑт юрӑ...— ырларӗ Агриппина Александровна та.— Еплеччӗ-ха аҫӑр ячӗ? Серафима Степановна, пуҫлӑр-ха ҫӗнӗрен, пурте пулӑшатпӑр.

Район центрӗнчен килнӗ хӑна ыйтнипе хитре юрӑ тепӗр хут шӑранчӗ. Хальхинче те вӑл кашнинех килӗшрӗ, пурин чӗрине те тыткӑна илчӗ. Ҫерука ҫамрӑк юн вӗренӗ чухнехи ҫутӑ ӗмӗт хавхалантарать. Ӗмӗтлӗ ҫынран телейли ҫӗр ҫинче урӑх ҫуках. Ҫавӑнпа Ҫерук ял тӑрӑх ҫӑмӑллӑн утса ҫӳрет, таврана янравлӑ куллипе илемлетет.

— Чун-чӗре илемӗ мӗнре-ши?— пӑшӑлтатать вӑл ҫывӑхрисем илтмеллех.

— Паллах, юрлама-ташлама пӗлнинче,— шӳтлереххӗн хуравлать Клачук.

— Каларӑн та...— кӗтмен ҫӗртен хирӗҫлет ӑна Ваҫҫили.— Ман шутпа, чӑн-чӑн илем мӗн каласа юрланинче, мӗне палӑртса ташланинче.

Вӗсем хӗрсех тавлашма тытӑннӑччӗ, юрать-ха Кӗтерук вӑхӑтра асӑрхаттарчӗ:

— Астӑвӑр, тытӑҫса ан кайӑр.

Тус-тӑванӗсенчен, ял-йышран уйрӑлса аякка тухса каясси ҫинчен Ваҫҫилин шухӑшласах килмест, анчах ҫак вӑхӑт ҫывӑхарса ҫитнӗ ӗнтӗ. Ҫара тухса кайнӑ чухне Ҫерука мӗн каласа хӑвармаллине те шутласа хунӑ вӑл. «Пилӗкне туртса ҫых, ӑсна хытӑ тыт. Ҫартан таврӑнсанах мӑшӑрланӑпӑр»,— тейӗ. Халӗ юрӑ парнеленӗ хӗре хуравлама Ваҫҫилие сӗнесси нихӑшӗн пуҫне те пырса кӗмерӗ. Санькка тем каласшӑнччӗ те, ӑна Хветуҫҫа чӗнсе илчӗ. Ваҫҫили хӑех вӑйӑҫӑ умне пырса тӑчӗ. Пӳрнисене хускаткаласа темле кӗвӗ ӗнерттерчӗ. Унтан янӑравлӑ сассипе ял-йыш илтмен юрӑ пуҫарчӗ.

**Юх малалла эс, Шӑнкӑртам!**

Хӗп-хӗрлӗн анчӗ те хӗвелӗ,
Тӗтре ҫӗкленчӗ чикӗре.
Вӑрман хӗрри хура мӗлкеллӗ,
Юман ӑш вӗҫнӗн тинкерет.

Хырла Сӗвенеллеваскатӑр,
Юх малалла эс, Шӑнкӑртам!
Чипер пике ан тунсӑхлатӑр,
Каччийӗ халӗ хуралта.

Мăн юхан шыв ав ывăнмасăр
Çĕр-шывăн чиккине çăвать.
Ирне-каçне вăл уямасăр
Янравлă кĕвĕсем хывать.

Хырла Сĕвенеллеваскатăр,
Юх малалла эс, Шăнкăртам!
Атте-анне, ан пăшăрханăр:
Ниçта та ямăпăр ята.

Юхан шывпа пĕрле хастарлă
Салтак тăрать постра каçпа.
Тӳлеклĕх, лăпкăлăх каварлă,
Итле, тăнла, сăна куçпа.

Хырла Сĕвенелле васкатăр,
Юх малалла эс, Шăнкăртам!
Çуралнă ялăм лăпкăн кантăр,
Сан ывăлу халь хуралта.

Пусать-ха тунсăх ирĕн-каçăн,
Шутламăп пурпĕр пуç усма.
Ак çитĕ вăхăт, эп те калăп:
Анне, салат хыв туй тума.

Сĕве мăн Атăла васкатăр,
Юхах эс, Атăл, тинĕсе!
Çĕр-шывăм капăçлăн сывлатăр,
Ăна сыхлаççĕ паттăрсем.

Ваççили юрри Çерукăннинчен нимĕнпе те кая мар. Вăйăçă Миккуль кирек мĕнле кĕвве те питĕ хăвăрт ăша хывса баянпа калама пултарнăран юрă татах та хӳхĕмрех тухрĕ.

— Сăмахĕсем камăн-ши?

Тахăшĕ çапла ыйтсан пирĕн Санькка хĕрсем хыçне вăшт пытанчĕ.

— Ана Шуçăм Санькки хăй сăвăланă. Çерук юррин сăмахĕсем те унăнах. Пирĕн Русак кассинче пĕр поэт çеç,— илтĕнчĕ хурав.

— Кам кĕвĕленĕ?— пĕлесшĕн пулчĕ Агриппина Александровна.

— Анаткасăн чаплă композиторĕ Василий Константинович Валлахи,— театрти пекех мăнаçлăн, кашни сăмахне уйрăммăн та уçăмлăн, васкамасăр каласа хуравларĕ каллех çав сасă.

Ним ăнланайманнипе Агриппина Александровна алли лăштах усăнчĕ. Икĕ куçĕ мăч-мăч тăвать. Валлахи хĕрсем хыçне пытанчĕ.

— Нивушлĕ юрă авторĕ Ваççили?— тинех тĕшмĕртсе

илчӗ Агриппина Александровна.— Ҫирек мӗн калӑр, ӑна консерваторие вӗренме ямалла.

— Пирӗн консерватори ялтах, Ҫаҫук аппа,— сӑмах хушрӗ Санькка.— Дирижерӗ те пур: юратнӑ бригадир Мефодий Волков. Аҫта сӗнет — унта каятпӑр, ӑҫта хушать— унта васкатпӑр. Сухалаттарать те, актарать те, выртарать те...

— Тӗлӗнтерчӗ мана Анаткас яш-кӗрӗмӗ, савӑнтарчӗ... Акӑ ӑҫта иккен чӑн-чӑн талантсем. Ирӗк парӑрччӗ, эпӗ те юратнӑ юррӑма юрласа кӑтартам,— хавхаланса кайрӗ Агриппина Александровна.

— Синьора парнелет ҫӗнӗ юрӑ!— чӗтретсе илчӗ пӳртри сывлӑша Санькка сасси.

— Шӑп, Ҫаҫук аппа юрлать,— илтӗнчӗ унтан та кунтан. Пӳрт шӑна вӗҫни илтӗнмелле шӑпланчӗ. Ларма-тӑма пӗлмен Ҫлачук та пӗр кӗтеселле лӑпчӑнчӗ.

**Хӑнара**

Садра шӑпчӑк юрласан
Савӑнмӗ-ши сад хуҫи?
Эп ҫакӑнта юрласан
Савӑнмӗ-ши кил хуҫи?

Пусма вӗҫне чул хурсан
Утса кӗме кӑмӑллӑ.
Тӑван пире чармасан
Юрлама та кӑмӑллӑ.

Куккук, сана лайӑх-и
Ҫӳлте вӗҫсе ҫӳреме?
Тӑван, сана лайӑх-и
Эпир килсе ҫӳрени?

Ялӑр ҫулӗ — аслӑ ҫул,
Тӑршшипелен шурӑ чул.
Сар чечек — пӗр айккинче,
Ҫӗр ҫырлийӗ — тепринче.

Тӑван патне килсессӗн,
Савӑк ӗҫсе-ҫисессӗн
Сар чечек пек сарӑлтӑм,
Ҫӗр ҫырли пек хӗрелтӗм.

Ҫӗмӗрт шап-шур ҫурӑлать,
Тухас килмест айӗнчен.
Тӑван пире чыс тӑвать,
Ҫаяс килмест килӗнчен.

Ай, тӑвансем, ял-йышсем,
Ылтӑнӑмсем, кӗмӗлсем!
Пурте пӗрле савӑнар,
Килӗштерсе пурӑнар!

Илемлĕ те уçă Kaçук аппа сасси. Юрă вĕçленсен çамрăксем пурте шăпăл-шăпăл алă çупса ячĕç.

— Сăмахĕсем камăн? Кĕввине кам хывнă?— кăсăкланса ыйтрĕ Ваççили. Ку вăл халăх юрри-кĕвви пулнине унсăрах пĕлет-ха. Шӳчĕ унăн çапларах тухрĕ ахăр. Çапах Яков Миронович пĕр кулмасăр, çирĕппĕн çапла хуравларĕ:

— Сăмахĕсене те, кĕввине те Щукина Агриппина Александровна хывнă. Энтепери Вĕçкĕн Кăркка Элексантăр хĕрĕ.

Хĕр сăри сĕрленĕ вăхăтра чӳрече умĕнчи çынсем хыçне счетовод мăшăрĕ Сахвит аппа килнĕ тăнă. София Александровна пĕвĕпе Kaçук аппăшĕнчен пĕчĕкрех, кĕлеткипе вара хулăнрах, çирĕпрех. Кăшт типшĕмрех илемлĕ пичĕ пĕрмаях тенĕ пек ăшă туйăмпа йăлтăрать. Хăмăр куçĕ çын çине кăмăллăн пăхать. Ку хĕрарăм ытлашши сăмах ваклама юратмасть. Калаçасса вара сасă хăпартмасăр,васкамасăр калаçать. Хăйпе пуплекене пӳлмест, такăнтармасть. Чĕлхипе касса татас йăла çук унăн. Хăш-пĕр шухăшне тӳрĕрен мар, систерсе калать. Кирлĕ-кирлĕ мара пĕлесшĕн ăнтăлмасть. Вăрăм чĕлхеллисенчен илтнĕ сăмах унра хăйĕнчех юлать. «Çын çинчен сăмах ан вылятăр, хăвăр ăшăрта тытăр»,— ăс парать ачисене.

София Александровна сăнарĕ тулли пултăр тесен унăн тепĕр уйрăмлăхне палăртса хăварни кирлĕ: вăл хăйне питĕ тӳлек тытать. Çав тери лăпкă пулнăран тепĕр чухне упăшки ăна пачах асăрхамасть: те пур вăл пӳртре, те çук. Тăвата ывăлĕпе хĕрне хăй пек пулма хăнăхтарать. Киленкаян ку килти лăпкăлăхпа шăплăхран питĕ тĕлĕнет. Тепĕр çемьере ача-пăча тем тери шухă ӳсет, аташать, пӳрт ăшчиккине айăн-çийĕн çавăрттарать. Кил-çурт кĕрлесе çеç тăрать. София Александровна çемйишĕн унашкалли ют. Ачисене тӳрĕ кăмăллă ӳстересшĕн, çавăнпа суяпа ултавран яланах пăрăнать.

Счетовод арăмĕ — Русак кассинчи ĕçчен хĕрарăмсен шутĕнче. Бригадăри пĕр ĕçрен те юлмасть. Вăл çурлапа тырă епле вырнине пăхса тăранаймастăн. Хăмăла кашни пӳрни хушшине туп-тулли тултарать те, ик-виç ывăçран пĕр кĕлте пулать. Тырă вырса пĕтернĕ çĕре хăйĕн пӳрнисем сурма пуçлаççĕ, шыçса каяççĕ, хастар хĕрарăм пурпĕр ыратнине палăртмасть. Колхоз ĕçне чĕнмен чухне килçуртра е картишĕнче кăштăртетет. Хĕрарăм валли куçа курăнман ĕç кунта тем чухлех.

Чӳрече умĕнче ытти çынсем хушшинче Сахвит аппа тăнине пӳртре ташлакансенчен тахăшĕ асăрханă-мĕн. Кĕтерук-чиперук Ульха-тупăлхана тем калать те, иккĕшĕ

ыталанса чӳрече патне пыраççӗ. Кунта вӑрт çаврӑнаççӗ те янкӑс сасӑпа юрласа яраççӗ:

**Астумасӑр каларӑм**

Йӑран-йӑран купӑста,
Йӑран хушши аякра.
Юрлар-и те ташлар-и,
Сахвит аппа аякра.

Якку тете пӗрехмай
Шут шӑрçине шутарать.
Инкесене юратма
Тӗлӗнмелле пултарать.

Ах, тетеçӗм, астуман,
Астумасӑр каларӑм.
Астунӑ та пулсассӑн
Каламан та пулӑттӑм.

Унтан хӗрсем пӗрне-пӗри чеен куç хӗссе илеççӗ:

Сахвит аппа ан пӗлтӗр,
Ун хӑлхине ан кӗтӗр.
Каçук аппа, ан шарла,
Йӑмӑкна эс ан кала.

Яков Миронович хӗрсене ним калама аптӑрарӗ. Ялан хиллех: «Вӑт наруд! Вӑт тӗнче!» — текелет. Паллах, çав такмаксене Сахвит аппа та илтрӗ, анчах куланçи кӑна турӗ. Русак касси хӗрӗсен тӑрӑхласси паян тухнӑ йӑла мар. Вӗсен çивӗч ӑсӗ, пултарулӑхӗ ӑна халӗ те тӗлӗнтермеллипех тӗлӗнтерчӗç.

## Ёнтӗ пире ӑсатӑр...

Хӗрсем каясси çинчен сӑмах тапратсан, картишӗнче кӗрмешнӗ Татюк аппа васкасах пӳрте кӗчӗ. Алӑк уçӑлсанах хӗрсем кил хуçине хирӗç кӗшӗлтетсе пыраççӗ, ӑна ӑшӑ-ырӑ сӑмахсем калаççӗ, йӗтем çинчи çерçисем пекех чӗвӗлтетеççӗ.

— Эх, аппамӑр, ан ятла ёнтӗ пире. Çирӗмӗр, ӗçрӗмӗр, савӑнтӑмӑр. Пысӑк хӑна пултӑмӑр.

Татюк аппана пӗри те тепри алӑ парать, пӳрт-çурта тирпейлемешкӗн ыран ирех килме пулать. Кӗтерук кил хуçине мӑйӗнчен ыталаса хӑй çумне чӑмӑртать. Татюк аппан мӑшӑр куçӗ пур еннелле те ӑшӑ туйӑм сапать, тути пӗрмаях кӑмӑллӑ сӑмахсем калать:

— Шĕкĕр турра, шĕкĕр турра! Пирĕн касра куç тулли хĕрсем ӳсеççĕ иккен. Пире, ваттисене, йăпатнăшăн, савăнтарнăшăн тавах. Ĕмĕр-ĕмĕр пехил сире, çамрăксем! Ялана çакăн пек юрласа та ташласа, савăнса та килĕштерсе пурăнмалла пултăр!..

Хĕрсем кайма пуçтарăнаççĕ: тарланă пичĕсене ал тутрипе шăлса типĕтеççĕ, пуçри тутăрĕсене туртарах çыхаççĕ.

— Кил, кил теме кăмăллă, кай, кай теме йăла çук. Эппин хамăр пĕлмелле, пирĕн киле çитмелле,— теççĕ вĕсем.

— Тăхтăр-ха, хĕрсем, хам алăпа çул курки ĕçтермесĕр пĕрне те ямастăп,— чарчĕ пурне те кил хуçи. Хăй тĕпелелле иртрĕ.

Кĕтерук хăнасене каллех кĕрекене вырнаçтарса лартрĕ. Татюк аппа вĕсене çул курки ĕçтерет.

— Çитни пулĕ, çитменни пулĕ — çак курка çитертĕр,— тет вăл. Хăй пурне те ретпе ĕçтерсе пырать, пĕрне те сиктерсе хăвармасть.

— Çăкăр-тăвара спаççипĕ, хăвăр пырса курăр,— хуравлать пĕр хĕрĕ. Тепри сăра куркине шалтти ĕçсе парать, çавăнтах такмакласа хурать:

Курка тĕпĕ — çут ылтăн,
Татюк аппа — пин ылтăн.

— Курка çине курка ан тийĕр-ха, алăкран тухайми тăватăр,— йăл кулса шап-шурă шăлĕсене кăтартать Клавди.

— Ентĕ ан ятлăр, лайăх пăхаймарăм,— пăшăрханать кил хуçи.

— Нумай та пĕтĕ, сахал та çитĕ. Ан пăшăрхан, Татюк аппа,— лăплантараççĕ ăна хĕрсем.— Сывлăхлă пул, телей кур, юр-варсăр ан пурăн.

Пурне те ĕçтерсе тухсан Татюк аппа куркине сăра тултарать те калать:

— Русак касси хĕрĕсем! Сире пурне те çул курки тиврĕ-и? Кама тивмен, ман пата килĕр, алăра курка пур.

Хĕрсем тиврĕ! тиврĕ! теççĕ. Часах вĕсем алăк патне пырса кĕпĕрленеççĕ, тав юрри пуçараççĕ:

**Шур тутăрна сулса юл**

Пурçăн тутăр пуç тулли,
Унăн çӳçи мăй тулли.
Кил хуçийĕ куç тулли,
Кĕрекийĕ тăп-тулли.

Татюк аппа тарават
Савса пăхан хĕвел пек.

Унӑн ырӑ кӑмӑлӗ
Катса ҫиес сар ҫу пек.

Сивӗ ҫумӑр ҫунӑ чух
Ҫарамасӑн ан тухӑр.
Эпир тухса кайнӑ чух
Ҫул куркисӗр ан ярӑр.

Ентӗ пире ӑсатӑр,
Алӑк уҫса кӑларӑр.
Татюк аппа, сывӑ пул,
Шур тутӑрна сулса юл.

Кӑмӑлупа ҫирӗп пул.
Еҫ те ҫи, савӑн та кул.
Ӗмӗр кур эс пархатар.
Халӗ пире алӑ пар.

Ҫамрӑксен хӑтланӑвӗ урамра чӳрече умӗнче пӑхса-итлесе тӑракансене питӗ килӗшнӗ. «Хальхи яш-кӗрӗм пирӗн вӑхӑтри мар ҫав, акӑш-макӑш пултаруллӑ. Юрри-ташши сӗре илемлӗ, вӑййи-кулли хаваслӑ»,— пуплерӗҫ вӗсем. «Ҫерукӗ тата, Ҫерукӗ... Такмака ун пек лайӑх пӗлекенни ялта сайра»,— мухтарӗҫ ватӑсем.

Чӳрече умӗнчисем хушшинче Александр Воробьев та пур. Ана курсанах куҫ умне ҫакӑн пек ӳкерчӗк тухса тӑрать: чиркӳ умӗнче хӗрсем вӑйӑ калаҫҫӗ. Вӑйӑ картине юлташӗсемпе пӗрле пӗр ҫӳллӗ йӗкӗт пырса тӑрать. Кӑкӑрӗ сарлака, алли-ури тӗреклӗ, тапсан тӑва ҫӗмӗрес пек. Хӑй Мускав милиционерӗн формипе: шап-шурӑ кительпе, кӑвак галифепе. Кителӗн тӳмисем ҫап-ҫутӑ. Хул урлӑ портупея.

— Ара, ку Ҫекке Элексантӑрӗ вӗт? Хӑҫан таврӑннӑ-ши тӗп хуларан?— пӑшӑл-пӑшӑл турӗҫ хӗрсен тутисем. Чӗрисем кӑлт та кӑлт тапаҫҫӗ.

Элексантӑр шӑллӗне Миккуле паллама та ҫук: тетӗшӗ туянса килнӗ шап-шурӑ костюм тӑхӑннӑ та хӑй ҫулхисемпе тек-текех унталла-кунталла хӗвӗшет. Юлташӗсем унран пӗр утӑм та юлмаҫҫӗ.

Шурӑ кительпе кӑвак галифе ун чухне пайтах хӗрупраҫа канӑҫсӑрлатнӑччӗ, анчах нихӑшӗ те Элексантӑр чӗрине хускатаймарӗ. Ана кӳршӗ ял хӗрӗ Елисса хӑйӗн аллинче тытнӑ-мӗн. Паянхи яш-кӗрӗм йӑпанӑвӗ Элексантӑр тетене те килӗшнӗ. Вӑл Юман тете еннелле ҫаврӑнать те яланхи пекех лӑпкӑн каласа хурать:

— Паян клуба концерта кайма та кирлӗ мар. Кунтах лайӑх итлерӗмӗр.

Ҫав вӑхӑтра хӗрсем хапхаран тухрӗҫ — пурте пуҫ тай-

рĕç, çăкăр-тăваршăн тепĕр хут тав турĕç. Унтан алăран алă тытăнса пĕр рете тăчĕç.

— Пӳртре маххă памарăмăр. Халĕ ĕнтĕ урам тăрăх юрăпа утар — çӳлтикассем сăхланччăр,— йăл кулчĕ Кĕтерук. Тантăшĕпе килĕшнине пĕлтерсе хĕрсем пуç сулчĕç те урам тăрăх хур акăш карти пек малалла кайрĕç. Вĕсем хыçĕнчен йĕкĕтсем те хускалчĕç. Яш-кĕрĕм анаткассен хĕр сăри юррине янăратса ячĕ.

**Кĕрхи пилешсем**

Пит илемлĕ кĕрхи пилешсем
Хĕрлĕ тĕслĕ шăрçа çакнăран.
Пит телейлĕ çитĕннĕ хĕрсем
Каччисем чĕререн савнăран.

Ӳсет çĕмĕрт, çеçке вăл çурать,
Çулçине хурт çиет — хур пулать.
Хĕрача çитĕнет, хĕр пулать,
Савнă тусĕ илмест — хур пулать.

Урамри хурăнсен кăтрине
Варкăш çил çупăрлать, якатать.
Каласамччĕ мана тӳррине:
Чуну санăн кама юрататъ?

Вăрман витĕр утса тухнă чух
Шĕшкĕ тĕмĕ юлать авăнса.
Хĕр сăри йăлине тунă чух
Çӳрет тусăм пĕрле савăнса.

Сап-сар çулçă тăкать хурама,
Шурă хурăн пăхать ăмсанса.
Эпир тухнă пурте юрлама,
Йĕкĕтсем пăхчăрах сăнаса.

Эх, çав паха юрă хăвачĕ! Чĕренех пырса тивет, кăмăла çĕклет, пĕтĕм чуна савăнтарать. Юрă чун уççи çеç те мар, шанчăклă тус та. Хĕрсен янкăс юрри баянăн пуян сассипе пĕрле татах та илĕртӳллĕрех, çепĕçрех илтĕнет, илемлĕн янăраса таçта çитиех саланать. Русак кассине шăнăçаймасăр вăл Шăнкăртам урлă вирхĕнсе каçать, вăрмана ян каять. Шухăшлă юрра тĕлĕрекен хырсем те ыйхă сирсех тăнлаççĕ.

## ЧУН ЧУЛ МАР

## Йёпе çине сапа

Çул хыççăн çул иртсе пынă. Қатари тĕп хулара патшалăх тилхепи В. И. Ленин аллинчен И. В. Сталин аллине куçнă. Л. Д. Троцкий, С. С. Қаменев, Г. В. Зиновьев ячĕсем пĕр вăхăт ялкăшса тăнă та ӳкен çăлтăр пек хăвăрт çухалнă. Кремльте çĕр çинчи турă умĕнче Л. М. Қаганович, В. М. Молотов, А. А. Андреев, А. А. Жданов тата вĕсен йышши ытти йăпăлтисем упаленме тытăннă. Халăхран ыйтмасăрах вĕсем çĕнĕ саккунсем кăларнă, постановлени хыççăн постановлени йышăннă. Çав саккунсемпе постановленисен сулăм вăйĕ аякри ялсене те çитмесĕр юлман. Анаткасра илем кӳрсе мăнаçлăн ларакан чиркĕве хупнă. Темиçе çул хăлтăраса ларнă хыççăн унран çилхи витĕр çил вĕрекен шкул çурчĕ пекскер туса хунă. Витĕр куракан Сталин хресченшĕн тăрăшнипе хавхаланса Анаткасра та тыррине шăпăрпа шăлсах таçта хăямата ăсатакан пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркеленĕ. Çил арманĕсем хевтесĕрленсе пĕрин хыççăн тепри тӳннĕ. Çĕрле те куç хупман Хырлапа Шăнкăртам хухнăçемĕн хухса пынă. Пӳлери çăлкуçсем типнĕ. Шăнкăртамăн сылтăм çыранĕнчи хуçасăр хурамасен турачĕсене путек милĕкĕ валли касса кайнă та, шакла пуçлă мĕскĕнсем хăйсен хӳттинчи çăра курăк çине сулхăн ӳкерейми пулнă.

Қатари тĕп хулара мĕн пулса иртни Анаткасри Пăшатан Яккăвне те тĕкĕнмесĕр хăварман. Унран та ытларах тутлийӳççине самаях тутантарнă. Фронтра шуррисемпе çапăçса амансан вăл тăван ялне таврăнать. Кунта ăна чухăнсен комитечĕн — комбед — председателĕ туса хураççĕ. Қаярахпа вăл ялта çĕре пĕрле сухаламалли-акмалли юлташлăхсем (ТОЗсем) йĕркелет.

Кĕçех ялти пурнăça çĕнĕлле йĕркелеме пулăшакан та тупăнать: тахăш хулара ĕçлесе пурăннă Ваççук Лявăçки — Леонтий Васильевич Васильев — пĕтĕм çемйипе, çав шутра каланкă сарлакăш майрипе, яла таврăнать. Хăйсем пурте паха çи-пуç тăхăннă. Лявăçкан хыçалти аркисене уйăрса çĕленĕ йăм хура çĕнĕ пальто. Хуларан таврăннă çынна çав пальтопа курсан кӳршĕри Çерук аппа тĕлĕннĕрен çат! тутарчĕ аллипе пĕççинчен:

— Ку пальто харрин хыçĕ халех çурăк та, унпа ял хушшинче мĕнле çӳрĕн?

Лявăçка ял хушшинче «хыçĕ çурăк» пальтопах çӳрерĕ, пĕр ТОЗра асли те пулса пăхрĕ.

Пăшатан Яккăвĕ Шăхрантан юлташлăхсем валли турттарса килнĕ вĕр-çĕнĕ плугсенчен пĕрне урама Ваççук тете пӳрчĕ умне пырса лартсан, çав тери тĕлĕннипе Çерук аппан çăварĕ курак вĕçсе кĕмеллех карăлать. Хальхинче вăл ик аллипе ик пĕççинченех çатлаттарать:

— Ку ака пуçăн тимĕрĕ куçкĕски пек çутă та, ăна тăпрапа епле варалăн-ха?

Ялти хресченсене пурнăç çулĕ çĕре пĕрле сухаламалли-акмалли юлташлăхсенчен коллективлă хуçалăх патне илсе çитерчĕ. Колхоза 18 хуçалăх çырăнчĕ. Унăн председателĕ пулма Палля Микулине суйларĕç. Мĕншĕн ăна? Мĕншĕн тесен вăл ялта чи чухăнни. Çӳлти касра пралук хĕрринче шăнкăрч йăви пек пĕчĕкçĕ пӳртре урама тухсах çӳремен арăмĕпе пĕрле пурăнать. Тепĕр тесен пурăнни-мĕнĕ ячĕ кăна. Туберкулез анăратса çитернипе кунĕн-çĕрĕн кăмака çинче йăраланать. Колхоз счетовочĕ Пăшатан Яккăвĕ пĕр-пĕр хут çине алă пустарма килсен кăна председатель кăмака çинчен йăраланса анать. Палля Микули кăмака çинчен пачах анайми пулсан председателе Ваççук Лявăçкине суйларĕç.

Кивĕ урапана çĕнĕ ут кӳлсен халичченхи хăлтăр-халтăр кустăрмасем те хăвăртраххăн кăлтăр-кăлтăр çаврăнма тытăнчĕç. Якку тинех çăмăллăн сывласа ячĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕ ăнăçлăраххăн пулса пыма тытăнчĕ.

Яков Миронович колхоз правленийĕнче шут шăрçийĕсене хаваслăраххăн шуçтаракан пулчĕ. Çывăх çыннисене ывăлĕн Пăнчукăн мыскарине анекдот евĕр шӳтлĕреххĕн кала-кала кăтартать. Пылак çимĕç тутанса пăхнăн тутине чăплаттарать те итлекене тепĕр хут аса илтерет:

— Эпир паян пыл çимен...

Тем тери килĕшет хăйне çапла калани.

Шăнкăртам çыранĕ ишĕлнипе пулнă айлăма Русак лапамĕ, ялăн кунти урамне Русак касси теççĕ. Ăçтан тупнă ку ята — пĕлме йывăр, мĕншĕн тесен вăл асаттесен аслашшĕсенченех килет. Русак касси тĕлĕнче ишĕлекен хура тăпраллă çырана Шăнкăртам тем тери шала çисе кĕнĕ. Нимĕнпе те çирĕплетменрен çыран йăшса арканнă. Русак сарăлсах, тарăнлансах пынă. Сахрун кĕтӳçĕ пысăк мар çуртне урăх вырăна куçарса лартрĕ. Виркка аппан улăм витнĕ пĕчĕкçĕ çурчĕ çыраналла тӳнме пултарать. Пĕр те пĕр шухăшласан, пĕтĕм ял Русакалла шуса анассăн туйăнать. Ишĕлнĕ вырăн лаптăкĕ ял çыннисен куçĕ умĕнчех икĕ-виçĕ теçеттине çитрĕ. Çулсерен кунта çурхи шыв кĕрсе тулать. Вăл типсенех юшкăн тăпри çине тем тĕрлĕ курăк тапса тухать, çын çӳллĕш ытла ӳссе каять. Çуркунне

сĕвек çыранта ача-пăча темле курăкăн шап-шурă пылак тымарне кăлара-кăлара çиет. Ку тымара ачасем çеç мар, хăйне йышши шултăра мулкачсем — русаксем — те килĕштереççĕ иккен. Çавăнпа иленнĕ те ĕнтĕ çак лапама. Ачасем вĕсене ухăран сăнăпа персе е серепепе тыткаланă, анчах вăрăм хăлхасем вĕсен аллине сайра çакланнă. «Вот где блаженствуют русаки!» — тĕлĕннĕ яла килнĕ мишавай. Вăл сунар пăшалне çине-çинех кĕрĕслеттерме пуçласан лапамри тутлă тымар мулкачсене илĕртме пăрахнă. Синкерлĕ тар тĕтĕмĕн шăрши вĕсене çаврăнса пăхми тартнă. Русак касси ят çавăн чухне çирĕпленнĕ имĕш.

Якку çурчĕн чӳречинчен Русак лапамĕ ал тупанĕ çинчи пекех курăнать. Вăл Русак кассинче пурăнать. Сылтăмри кӳрши — колхоза кĕме васкаман ватă старик Лăриван Русаков. Ана мишавай русак тытма хăйпе пĕрле сунара илсе çӳренĕ пулать. Çакна унăн хушамачĕ çирĕплетет.

Пĕр кил урлă леререх Кузнецовсен йышлă çемйи пурăнать. Кĕркури Кузнецовăн тăвată ывăл: Тяпук, Гриша, Миша тата Георгий. Аслисем виççĕшĕ те ашшĕнчен çӳллĕ. Георгий кăна — кĕçĕнни, асси — лутрарах. Пĕри тепринчен хастар. Ĕç тесен ури тупанĕ айĕнче вут çунать тейĕн. Ашшĕ вĕсене пралукра, хăйсен пахчипе юнашар, тимĕрçĕ лаççи лартса пачĕ. Унта ир пуçласа каçчен пĕр чарăнми хĕрӳллĕ ĕç пырать. Кузнецовсем кӳршĕ-аршăн çурли-çавине туптаççĕ, кустăрмасем шинăлаççĕ, тимĕртен килçуртра кирлĕ ăпăр-тапăр ăсталаççĕ. Пахчара, Лăриван Русаков енче, самаях пысăк сад ӳстерчĕç. Пăхăсăн, чухăн çемье ĕнеллĕ, лашаллă пулса тăчĕ.

Курать ашшĕ: тăвată ывăлне тимĕрçĕ лаççи тăвăр. Ывăлĕсем асăрхаççĕ: ашшĕ тимĕр пăрçа пулса тăчĕ. Катăк пĕр пуса та енчĕке ярать. Тимĕрçĕ лаççи лартас умĕн те ашшĕ çавнашкал хыт кукара тухнăччĕ. Халĕ тата мĕн тума шутлать-ши? Çакă çимĕкре, Кĕркури хăй патне тăванĕсемпе хурăнташĕсене хăнана пуçтарсан, паллă пулчĕ. Хăнасене пыллă сăрапа та кĕрчемепе сăйласан, лешсен пуçĕсем хĕрсе çитсен Кĕркури хăй çил арманĕ лартма шутлани çинчен пĕлтерчĕ.

— Ывăлсене ĕç çитмест. Тимĕрçĕ лаççинче пĕр мăлатука тăваттăн харăс ярса тытаççĕ. Тытмалли аври пĕрре кăна. Мĕн касать — манит çитменни касать. Кам мĕнпе пултарать — пулăшăр. Сывлăх пулсан — чиперех тавăрса парăп.

Вĕçкĕнтерехсем кĕсьери пур пек укçине çавăн чухнех сĕтел çине кăлара-кăлара хучĕç. Теприсем, туллирех енчĕклисем, кивçен илни çинчен расписка çыртарса çимĕк

хыççăн пачĕç. Çекке Миккулĕ кăна хăй патне кайса ыйтсан та кивçен укçа пама килĕшмерĕ: çăм тапмалли машина кӳрсе килме шутлать иккен.

Çил арманĕ лартасси вăрман касса турттарассинчен пуçланчĕ. Ашшĕпе тăвата ывăлĕ авалхи лашмансенчен кая мар ĕçлерĕç. Хăйсемех касрĕç, турттарчĕç, ялтан пĕр çухрăмри ани çинче, çӳллĕ вырăнта, ултă кĕтеслĕ пура турĕç. Вал валли кĕреш турттарса тухма уйрăмах йывăр пулчĕ. Çакна тума çуна çулĕ ӳкессе кĕтме тиврĕ. Виçĕ çуна çине хунă кĕреше ултă лашапа кварталтан чиперех турттарса тухрĕç. Кĕпер тăвайккинчен хăпарнă чухне пичеврисем чăхăмларĕç те, пуйăс пек вăрăм лав сулăнка çапрĕ. Утсем пурте тăп чарăнчĕç, кĕреш каялла, Шăнкăртамалла, шума тапратрĕ. Юрать-ха Георгий кайри çуна тупанĕсем айне чаркăч вырăнне кӳсек чикме ăс çитерчĕ. Йывăртан та йывăр лава тăвалла тапратма утсем вăй çитереймерĕç, вĕсене çынсем мĕн пур вăйпа пулăшрĕç. Утсем пĕр кана малалла талпăнса пыраççĕ те сывлăш çавăрма чарăнса тăраççĕ. Акăш-макăш вăрăм лав тăвайккинчен хăпарса çитиччен çынсене пайтах мекеçленме тиврĕ.

Кĕркури Кузнецов фуфайкине йӳле янă, çамки тăрăх шăпăр-шăпăр тар юхать. Кĕреше арман вырăнне илсе çитериччен тилхепине пурпĕр аллинчен вĕçертмерĕ вăл. Чутлама та савалама майлă пултăр тесе кĕреше çунасем çинчен кӳсексем тăрăх çӳллĕ урлашкасем çине кустарса хăпартрĕç. Унтан кăпăка ӳкнĕ утсене тăварса хуçисене тавăрса пачĕç. Кĕркури малтан хаклашнă пекех турĕ: кĕреш турттарса килнĕ кашни лаша пуçне виçшер пăт сĕлĕ виççе пачĕ. Унччен тар шăпăртаттарнăскер, вăл кĕлетĕнче шăнса чĕтреме тытăнчĕ.

Тепĕр кунне Кĕркури вырăн çинчен йывăрпа тăчĕ. Лаша кӳлсе тухтăр патне каясси çинчен шутламалли те çук: тимĕрçĕ лаççинче тăваткал вăрăм пăрăх тумалла, çав пăрăха арман чулне шăтарса вырнаçтармалла. Унăн çӳл вĕçĕ вал веррине тирĕнмелле. Ĕç хыççăн ĕç тупăнсах пычĕ. Арман тăвата çуначĕпе хăлаçланма пуçласан юлнă йывăçран ялти пӳрт çумне тепĕр пысăк мар пура мăкласа хăпартрĕç. Ку вăхăт тĕлне Кĕркури тухса çӳреймн пулса çитрĕ.

— Туберкулез санăн,— диагноз лартрĕ тухтăр.— Сипленмелле пулать...

Хавшаса çитнĕ Кĕркури валли больницăра сипленме вырăн тупăнмарĕ. Тухтăр ăна эмелсем çырса пачĕ, анчах çав эмелсем пулăшни пĕртте сисĕнмерĕ.

...Партячейка пухăвĕ сĕм çĕрлечченех пычĕ. Тавлашу

ялти кулаксен списокĕ пирки. Кузнецов Кĕркури кулак-и е вăтам хресчен çеç-ши?

«По-моему, кунта иккĕленӳ валли вырăн çук. Тимĕрçĕ лаççи, çил арманĕ, шатрун çурт, пысăк сад ялта тата камăн пур? Что ни говори, Кĕркури — ял сĕлĕхĕ. Ун мулĕн вĕçне-хĕрне те тупаймăн. Арманта — кашни пăтавкка пуçне пĕр кĕреçе çăнăх, тимĕрçĕ лаççинче — сунтал çине çапмассерен пĕрер тенкĕ. Кĕмсĕрт — пĕр кĕреçе. Çап — пĕр тенкĕ. Эппин кулак вăл. Настоящи кулак», — çапла шутлать вулав çурчĕн пуçлăхĕ Нина Агафоновна. Ялта унăн хĕр чухнехи хушаматне лайăххăн пĕлмеççĕ, Дьяконова тесе шутлаççĕ. Чакак хӳри çинче илсе килнĕ хыпар тăрăх, вăл Пăва хулинчи ăçтиçук хĕрĕ. Анаткасри Никандр Хаяркин киномеханик унта пасара кайнă та çак майрана тĕл пулнă, унăн писевпе хĕретнĕ тути çине куç илмесĕр тинкернĕ. Те ăна Никандр чăннипех килĕштернĕ, те майри унран юласшăн пулман — Нина Анаткас кинĕ пулса тăрать. Чăвашла лайăххăн вĕренсе çитеймерĕ-ха, сăмаха вырăсла-чăвашла çăрать, çапах вăл мĕн каласшăн пулнине пурте ăнланаççĕ. Анаткас çыннисен шăпине татса парасси хăйĕн тивĕçĕ тесе шутлать Нина Агафоновна.

Партячейка секретарĕн Яков Мироновичăн шухăшĕсем вара унăннипе пĕре килмеççĕ. Пĕре килмеççĕ кăна мар, пĕлĕтпе çĕр пекех уйрăлса тăраççĕ.

— Унăн-кунăн шухăшласа пăхар-ха, юлташсем. Кузнецовсен килĕнче пилĕк вăйпитти арçын. Пиллĕкĕшĕ те хастар. Тем тума та ĕлкĕреççĕ. Тăвата ывăл авланса тăвата киле уйрăлса тухсан арманпа тимĕрçĕ лаççинчен татăк-кĕсĕк кăна юлать. Вĕсем нихçан та тарçă тавраш тытман, çын вăйĕпе усă курман. Хăйсем ĕçчен. Ĕçчен пулнăшăнах кулак туса хума юрамасть çынна.

Яков Миронович каланипе чылайăшĕ килĕшрĕç. Кузнецов Кĕркурие кулаксен списокĕнчен кăларса пăрахма йышăнчĕ партячейка. Ерми Лявкки пирки те тавлашу вăраха пычĕ. Сăлтавĕ пĕрре: унăн та çил арманĕ паян-ыран хута каймалла. Авăртма пуçламалла туса çитерме кĕсье тĕпĕ якални чăрмантарать. Ĕнине пасара кайса сутса ячĕ — пурпĕр платниксене тӳлесе татаймарĕ. Лешсем ĕçе вĕçлемесĕр пăрахса кайрĕç.

— Эсир пĕлме тивĕçлĕ, Нина Агафоновна, Еремеев Леонтий Николаевич граждан вăрçинче Парамоново патĕнче шуррисене хирĕç сирĕн çĕнĕ хурăнташпа Александр Изосимовичпа юнашар тăрса çапăçнă. Аманасса та пĕр çапăçурах аманнă. Пурте куратпăр: Александр Изосимовичăн алли-ури шĕкĕр, кăкăрĕ çинче орден çиçет. Леонтий

Николаевичăн награда тавраш çук. Çитменнине тата сылтăм ури те çук. Ăна госпитальте татма тивнĕ. Хăрах урапа пит аякка сикеймĕн. Апла-тăк ăна кулаксен шутне кĕртни йăнăш пулать. Ман шутпа, колхозăн ку армана хăйĕн аллине илмелле, ăна туса çитерсе хута ямалла, Леонтий Николаевича унта мельнике лартмалла.

Ерми Лявкки пирки Нина Агафоновнăсăр пуçне сиксех тавлашакансем пулмарĕç. Çапла вара, кулаксен списокĕнче тăхăр хушаматран çиччĕ çеç тăрса юлчĕ.

Ял Канаш ĕçтăвкомĕнче уйăх ытла ĕнтĕ секретарь çук. Кĕтерук Хадарова районтан килсе çӳрекен уполномоченнăя качча кайрĕ те, ун вырăнне халĕ никама тупса лартаймаççĕ. Сахал çав ялта хут пĕлекен! Яков Миронович партячейкăн çав пухăвĕнчех ял Канаш секретарĕ пулма Лăриван ывăлне — çул çитнĕ каччăна Аркадий Русакова çирĕплетмешкĕн сĕнчĕ. Çак сĕнӳпе пурте килĕшрĕç. Хăйĕн кӳршине Аркадие колхоз счетовочĕ майĕпен-майĕпенех ĕçе хăнăхтарса пычĕ, ĕç хучĕсем çырма вĕрентрĕ, ыйтусене район центрĕнче татса пама учрежденисене хăйпе пĕрле илсе çӳрерĕ.

Партячейка секретарĕн ĕçĕ-хĕлĕнчи ырă çанталăк кĕтмен çĕртен пăсăлса кайрĕ. Акă Аркадипе иккĕш районти канашлуран таврăнаççĕ. Ял вĕçĕнчи Еремеев Лявккан авăртса курман арманĕ патĕнче темиçе çын тăрать. Вĕсем хушшинче район уполномоченнăйĕ, лешĕ, Кĕтерук упăшки, пур. Ушкăнтан пĕр çын çул çине чупса тухрĕ.

— Яков Миронович, сире чарăнма ыйтаççĕ. Райкома такам çăхав ярса панă та, çавна тĕрĕслеме килнĕ,— систерчĕ вăл.

Счетовод тилхепене Аркадие тыттарчĕ, ăйăра ут картишĕнче тăварма хушрĕ.

— Эпир кунта Еремеевран çакна пĕлтĕмĕр: вăл платниксене тара тытса ĕçлеттернĕ иккен. Эппин, хăй пайтишĕн урăх çын вăйĕпе усă курнă. Эсĕ вара, Пожеданов юлташ, ăна кулак тесе шутламастăн!— счетовод çитнĕ-çитменех ун çине тăрăнчĕ уполномоченнăй, ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Макар Максимович Маслов, виçĕ «М» текенни, Анаткасри чи чипер хĕре Кĕтерука качча илекенни.

— Сирĕн шутпа апла та, пирĕн шутпа урăхла çав, уполномоченнăй юлташ,— çирĕппĕн хуравларĕ партячейка секретарĕ.— Эсир ăна кулак тетĕр, эпир вара чи малтан вăл Совет влаçĕшĕн, çĕнĕ пурнăçшăн юн тăкнă çын пулнине куратпăр.

Уполномоченнăй çăхав тĕрĕсленĕ хушăра Аркадий Русаков — хĕрсем ăмсанса пăхмалла каччă — ут картишне

пахчасем хыҫӗнчен тӳрӗ ҫулпа мар, Ялав ҫырми урлӑ каҫса ҫӳлти урампа кайма шут тытрӗ. Вӑл ҫӳлти касри Клавдие юрататъ, ӑна Клава тесе чӗнет. Вӗсен юратӑвӗ ҫинчен ялта такмак та ҫӳрет ӗнтӗ:

Интереснӑ балалайка,
Сарӑ сӑрпа сӑрланӑ.
Интереснӑ, инхоз ачи
Колхоз хӗрне явӑҫнӑ.

Клавди — пысӑк куҫлӑ хитре хӗр. Тен, ӑна тӗл пулма май килӗ Аркадие. Хӳхӗм тӑрантас ҫинче хӑй пӗччеңех ларса пынине кӑтартас шутпа-и, вӑл урхамаха уттарса кӑна пычӗ. Кӗпер патнелле аnаталла аннӑ чухне вара тилхепене ҫирӗп тытаймарӗ—ӑйӑр чупма пикенчӗ. Кӗпер урлӑ каҫса тӑвалла хӑпарма тытӑнсан, хӑрах ури тӗнӗле перӗнчӗ пулас та, шарт тапса сикрӗ, халӗ ӗнтӗ ут ури кашнинчех тӗнӗле лексе ҫатлатрӗ. Чарайми ӗрӗхсе кайрӗ ҫавскер. Малта урам урлах чӗпӗллӗ хурсен ушкӑнӗсем. Сулахайра пура тума хатӗрленӗ пӗренесем. Пӗрене купи умӗнче чарӑнӗ-ха тесе каччӑ тилхепене сулахаялла туртрӗ. Анчах Амӑрткайӑк чарӑнма шутламарӗ, шарт сиккипе пынӑ ҫӗртенех пӗрене купи ҫине сикрӗ. Тӑрантас турти шартах хуҫӑлса кайрӗ, чӗтрене ернӗ Аркадий ҫамкипе ларкӑч ҫирӗплӗхне кӑн-кӑвак мӑкӑль сиксе тухмаллах тӗрӗслесе илчӗ.

Ҫапла пулса иртнӗ хыҫҫӑн ял Канаш секретарӗ колхоз счетовочӗпе тӗл пуласран пӗрмай пӑрӑнса ҫӳрерӗ. Айӑра ура ҫине тӑратас тесе мӗн кӑна тумарӗҫ! Темле эмел те ӗҫтерчӗ выльӑх фельдшерӗ, урхамаха тилхепепе каштаран ҫыхса тӑратса пӑхрӗҫ. Сахвит аппа малти вӑрмана кайса пӗр вартан кашкӑр тымарӗ татса килчӗ. Тӗмӗн-тӗмӗн ӳсекен ҫак курӑк, суккӑр вӗлтӗрен евӗрлӗскер, хӑйӗнче асамлӑ хӑват пытарать. Сахвит аппа ӑна тӳсе, турӑхпа юрса йӗкехӳресене парсаччӗ — кил картинчи ҫав хурахсем пӗтӗмпех вилсе пӗтрӗҫ. Халӗ вӑл кашкӑр тымарне тӳсе Амӑрткайӑкӑн хуртланнӑ суранӗсем ҫине сапрӗ. Хурчӗсем пӗтрӗҫ, анчах ӑйӑр пурпӗр вӑй илеймерӗ, хӑвӑрт чупакан урисем ҫине урӑх тӑраймарӗ, тӑрнанни пек вӑрӑм мӑйне илемлӗн каҫӑртаймарӗ.

Амӑрткайӑк вилсенех Якку хӑй ирӗкӗпе колхоза унӑн хакне тӳлерӗ. Ҫӑмӑл пулмарӗ счетовода ҫакна тума. Унӑн килӗнче каҫсерен патефон сасси илтӗнсе тӑратчӗ. Пружинине ачисем тӑрӑшсах ҫавӑратчӗҫ. Хаклӑ тӑракан тӗлӗнтермӗш шутланнӑ патефон ҫав ҫулсенче. Ӑна итлеме кӳршӗсем ватти-вӗтти таранах пухӑнатчӗҫ.

— Astăvăr, пружинине ан татăр, пружинине ан татăр,— асăрхаттарсах тăратчĕ ачисене счетовод арăмĕ Сахвит аппа.

Ялта пĕрре патефонне те, велосипедне те счетовод хăй Юхма пасарне кайса сутрĕ. Шурă хырăмлă хура ĕнепе унăн хĕл каçнă ула пăрушĕн те счетовод кил картийĕпе сывпуллашмалла пулса тухрĕ.

Шел, ăйăр хакне хăй ирĕкĕпе тӳлени те пулăшаймарĕ Якку тетене. Ахальтен каламаççĕ çав: ир такăнсан каçчен.

Район уполномоченнăйĕ яла тепре килсен Еремеев Лявккан туса пĕтермен çил арманне хуçинчен туртса илсе колхоза памалла турĕç. Сăмах май каласан, ăна колхоз та ĕçе кĕртеймерĕ. Тем çӳллĕшскер çилпе ним уссăр хăлтăртатса ларсан-ларсан пĕр тӳлек кун пĕтĕм ял илтмелле кĕмсĕртетсе ишĕлчĕ анчĕ. Лявккана хăйне, Пожеданов сĕннĕ пек, мелнике лартма мар, колхоза йышăнма та килĕшмерĕç. Уйрăмах Нина Агафоновна хирĕç тăчĕ. «Çил арманĕ тытакансем — пурте пĕр вăрманти кашкăрсем»,— хăйĕннех печĕ ӳкĕте кĕмен хĕрарăм. Ял çине урăхла хавха та сарăлчĕ: Лявкка хăй айăплă, Нина упăшкин тетĕшне орден тивĕçлипе паман тесе персе янă имĕш.

Кузнецов Кĕркурин мĕн пур пурлăхĕн, çав шутра çил арманĕпе тимĕрçĕ лаççин, малашнехи хуçи колхоз правленийĕ пулмалла тесе пĕлтерчĕç. Арчисенче мĕн пуррине, чăланĕнчи тум-тир таврашне, выльăх-чĕрлĕхне торги туса сутрĕç. Çемьери пĕртен-пĕр хĕрарăм, тăвата ывăл амăшĕ, сывлăхран хавшаса çитнĕ Васса аппа çав кунсенче çĕре кĕчĕ. Унăн ывăлĕсене шатрун çуртран хăваласа кăларчĕç, сывлана-сывламан выртакан чирлĕ ашшĕ валли мунчара вырăн тупрĕç. Кĕçех Кузнецовсен шатрун çуртĕнче ликбез шкулĕ ĕçлеме пуçларĕ. Ят кăтартмасăр çырнă çăхава тĕрĕслесси, ун тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăнасси çапла вĕçленчĕ.

Ялти кулаксене, вĕсене хӳтĕлекенсене кăкласси çакăнпа пĕтмерĕ-ха. «Красная Чувашия» хаçатра «Партячейка секретарĕ — сăтăрçă» корреспонденци пичетленсе тухрĕ. Унта правлени счетовочĕ Пожеданов ял хуçалăх артелĕн ăратлă ăйăрĕпе ӳсĕрле ĕрĕхтерсех катаччи чупни, çавна пула ăйăр ӳксе вилни çинчен каланă. Хаçатра кайри урисем çине тăнă ăйăр ӳкерчĕкĕ те пур.

Çавăн хыççăн тапранса кайрĕ вара асар-писер. Яла каллех ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Маслов килчĕ те, партячейка пухăвне пуçтарчĕç, хаçатра çапăнса тухнă корреспонденцие сӳтсе яврĕç. Малтан калаçу ял Канаш секретарĕ пирки çеç пычĕ. Ку калаçăва райком инструк-

торĕ чарчĕ. Ара, Аркадий ешĕл-ха, ун пирки мĕн калаçмалли. Партячейка секретарĕ çинчен калаçăва вулав çурчĕн пуçлăхĕ Нина Агафоновна пуçарчĕ, ăна çĕртине-çӳлтине хăвармасăр ятларĕ. Унтан тӳрех райком инструкторĕ сăмах илчĕ.

— Райкомра çапла шутлаççĕ: Пожеданов пирĕн шанăçа тивĕçлĕ çын мар. Вăл партячейка секретарĕнче те, правлени счетоводĕнче тек ĕçлеме пултараймасть. Кунсăр пуçне, унашкал çынсенчен партие тасатма хушать çулпуçăмăр Сталин...

Инструктор сăмахĕсем Пожедановшăн кăна мар, ыттисемшĕн те уяр кун аçа çапнă пекех пулчĕç.

Пухурисем çăварĕсене шыв сыпрĕç темелле. Пĕр вăхăт пурте шăпăрт ларчĕç. Сасăлас умĕн Кучеров конюх хăвăрт ура çине тăчĕ:

— Эккей! Тупрăр паян пуплемелли! Ну, юрĕ. Мĕн лăпăртатни — мур патне... Пожеданова эпир пилĕк пӳрне пек пĕлетпĕр-çке! Чухăн кĕтӳçĕ ывăлĕ. Комбед председателĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха чăмăртаканнисенчен пĕри. Амăрткайăка вăл ĕрĕхтермен. Айăр ӳкнĕшĕн вăл айăплă мар. Пожеданова партирен кăларма сăлтав çук, кăлăхах шырама та кирлĕ мар...

Кучеров йывăр лава тăвалла туртса хăпаракан ут пек пĕтĕм кĕлеткипе туртăнса йывăррăн сывласа илчĕ те ларчĕ. Коммунистсем пурте ун çине тĕлĕнсе те ырласа пăхаççĕ. Çӳлтен кăтарту панипе пурăнма хăнăхнăран Кучеров райком инструкторне хирĕçлени пĕрисене ытла хăюллă хăтлану пек туйăнчĕ, теприсене çакă питĕ килĕшрĕ.

— Пожеданов айăпне эпĕ çакăнта куратăп: колхоз йăйăрне уйрăм хуçалăхпа пурăнакан каччă аллине памалла пулман унăн. Çакăншăн ăна выговор парас, йăйăр хакне ял Канаш секретарĕпе иккĕш пĕрле тӳлесе татчăр,— сĕнчĕ тепĕр коммунисчĕ.

— Пĕлместĕн-и вара: Яков Миронович Амăрткайăк хакне хăй пĕчченех тӳлесе татнă...— ăнлантарса пачĕ колхоз председателĕ Ваççук Лявăçки.

Юлашкинчен Пожеданова сăмах пачĕç.

Çын чунĕ чул мар çав. Тĕрĕсмарлăха чăтма уйрăмах йывăр. Вăл çĕçĕпе каснинчен те вăйлăрах ыраттарать. Пуç çурăлса каясла хĕсет. Тарăхнипе пĕтĕм тĕнче илтмелле кăшкăрса ярас, таса чуна уçса кăтартас килет. Çук, апла тумарĕ Яков Миронович. Чĕри кăкăрĕнчен сиксе тухасла тапнине тата тăнлавра юн тымарĕ халь-халь татăлса каясла тăлтлатнине пăхмасăр вăл ерипен ура çине тăчĕ, тӳлек сасăпа кĕскен çеç çапла каларĕ:

— Ман чӗрере ял-йышӑма тав сӑмахӗсӗр пуҫне нимӗн те ҫук. Темиҫе ҫул партячейкӑна ертсе пыма, счетоводра ӗҫлеме шантӑр. Тӗрӗс ятлатӑр: Амӑрткайӑкпа лайӑх мар пулса тухрӗ. Ятлани ҫеҫ сахал, тивӗҫлипе явап тыттарӑр, анчах тархаслатӑп: партирен ан кӑларӑр. Ку вӑл хӑрах алла касса татнипе пӗрех пулӗччӗ.

Пожеданова партирен кӑларас енӗпе райкомрисем хушнине инструктор пурнӑҫа кӗртеймерӗ. Ку сӗнӳ майлӑ Хаяркинсем кӑна виҫҫӗн — Никандр Изосимовичпа Александр Изосимович тата Нина Агафоновна — алӑ тӑратрӗҫ, ыттисем хирӗҫ пулчӗҫ. Партячейка секретарӗнчен тата правлени счетоводӗнчен кӑларасси пирки сасӑланӑ чухне камитлерех пулса тухрӗ. Малтан Хаяркинсем кӑна алӑ ҫӗкленӗччӗ. Райком инструкторӗ хаяр сӑнпа пӑхса илсен ирӗксӗртен тенӗ пек ыттисем те аллисене тӑратрӗҫ.

Якку пухуран питӗ пусӑрӑнчӑк таврӑнчӗ. Ури айӗнчен сиксе тухнӑ инкек ҫинчен килӗнче нимӗн те шарламарӗ. Хӑй хуйхӑрни те ҫитӗ. Мӑшӑрне Сахвите хуйхӑртас мар. Районтисем ыйтӑва тӗрӗс татса парасса, тивӗҫлӗ сӑлтав ҫук ҫӗртен хӑйне айӑпламасса шанчӗ.

Ҫӗрле Якку ҫывӑрса каяймасӑр асапланчӗ. Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑха ура ҫине тӑратма мӗн чухлӗ вӑй хунӑ вӑл! Сталинӑн «Ҫитӗнӳсем пуҫа ҫаврӑнса яни» статйи пичетленсе тухсан унта 69 хуҫалӑхран 18 ҫеҫ тӑрса юлчӗ. Ялта ун чухне ҫакӑн пек такмак сарӑлнӑччӗ:

Пӑшатан портфельне
Шӑши каснӑ.
Ҫавӑнпа та колхоз
Тума пӑрахнӑ.

Ҫине тӑрса ӗҫлени колхоза тепӗр хут ҫирӗплетме май пачӗ. Тӗпрен илсен ҫакӑншӑн Пожедановпа Васильев пӗрле тӑрӑшрӗҫ. Халӗ акӑ Пожедановӑн колхозра ӗҫлеме тивӗҫ ҫук пулать. Партячейка ҫапла йышӑнчӗ пулин те, Якку шанчӑкне ҫухатмарӗ.

## Ӗмӗтсен ӗмӗрӗ кӗскелчӗ

Акӑ ВКП(б) райкомӗн бюровне каяс кун та ҫитрӗ. Яков Мироновича ҫул тӑршшӗпех пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх нушисем шухӑшлаттарчӗҫ. Пӗри ҫитмест те тепри тупӑнмасть. Пӗри катӑк та тепри ҫурӑк. Шухӑшӗ аранах урӑх еннелле пӑрӑнчӗ: нумаях та пулмасть хунякамӗпе пӗрле курнӑ хӗр сӑри асне килчӗ. Тӑван ял «солисчӗсемпе бале-

ринисем» чунтан савӑнса юрлани-ташлани ҫаплах куҫӗ уменчех. Вӗсем тавлашанҫи пулчӗҫ, кулам пек те хурлам пек турӗҫ, тӑрӑхлассипе те аптӑрамарӗҫ. Ахальтен мар хӑйсем те ҫапла такмакларӗҫ:

Ай-хай чунҫӑм хӗр сӑри
Вӑййа-кулла юратать.

Тӑван ял юрри-ташши чунне уҫса ҫунатлантарсах ячӗ ӑна ҫавӑн чухне. Унччен тӑнламан-пӗлмен юрӑ-сӑвӑ илтсе хӗпӗртерӗ. Мӗн ку, спектакль-и? Ҫук, ҫамрӑксен пуян ӑс-хакӑлӗ, пӗр-пӗрне ырӑ сунни. Яш-кӗрӗмӗн юррисенче, сӑвви-такмакӗсенче, вӑййи-ташшинче мӗн кӗҫӗнтен пухнӑ ӑс, иксӗлми ӑшӑ кӑмӑл, ытарайми ҫепӗҫ туйӑмсем палӑрчӗҫ. Ҫавӑнпа килӗшрӗҫ вӗсем Яков Мироновича, ҫавӑнпа асӗнче юлчӗҫ. Тӑван ял юрри-кӗвви уншӑн ахах-мерченрен те хаклӑ. Юрлама-ташлама юратаҫҫӗ Шӑнкӑртам тӑрӑхӗнче. Юратаҫҫӗ ҫеҫ мар, тӗлӗнмелле ӑста. Ҫӑкӑр пулсан юрӑ та пулать, ташӑ та ҫуралать.

Юрлакан Анаткас хӑй ҫуратса ҫунат панӑ юрӑсемпе такмаксене — авалхисене те, темиҫе теҫетке ҫул каяллисене те — асрах тытать, вӗсене халӑх уявӗсенче те, кӗрекере те шӑрантарать. Киввисене юсать, ҫӗнетет, ҫӗннисене хайлать, шутласа кӑларать. Хальхи сӑмах ӑстисем, пултаруллӑ юрӑҫсем хӑйсен ашшӗсемпе амӑшӗсен, тетӗшӗсемпе аппӑшӗсен чун туртӑмӗсене малалла тӑсаҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунне епле палӑртнинех асилер тата. Ялти ҫамрӑксем учительсемпе пӗрле спектакль лартрӗҫ, ун хыҫҫӑн концерт пачӗҫ. «Пултаратпӑр — тухатпӑр, пултарас ҫук — тухас ҫук»,— такмакларӗҫ ун чухне хӑйсем ҫинчен концерт паракансем.

Счетоводӑн шухӑш ҫӑмхи малаллах тӑсӑлса пычӗ.

Ҫапла, Анаткасра ӑста такмакҫӑсем, пултаруллӑ юрӑҫсем, маттур ташлакансем ҫук мар. Вӗсен пултарулӑхне аталантарма, чун туртӑмӗн ҫунатне пӗтӗм анлӑшӗпе сарса яма кирлӗ таран пулӑшатпӑр-ши? Кӗтерукпа Ҫерук, Ваҫҫилипе Санькка пек юрӑ-ташӑ ӑстисем вӗрентсе ҫитӗнтерессишӗн мӗншӗн тӑрӑшмастпӑр-ха? Сцена ҫине тухма пултаракансен йышне ӳстерсех пырасчӗ, халӑх пултарулӑхӗн таса ҫӑлкуҫӗ иксӗлми тапса тӑтӑрччӗ.

Ҫи те пулмасан, пыр та пулмасан ҫырлана кӑна каййӑттӑм тенӗ ӗлӗк пӗри. Пире вара капӑр тумланни те сахал, тутӑ пулни те ҫитмест. Пурнӑҫ пур енчен те илемлӗ пулмалла, ӑна юрӑ-ташӑпа, сӑвӑ-такмакпа эрешлемелле. Кам пуҫарса пымалла ялта ку ӗҫе? Паллах, вулав ҫурчӗ. Эппин, Нина Агафоновна Хаяркинӑпа хӑйӗнпе канашласа

пăхмалла. Килĕшмĕ-ши вăл вулав çурчĕ çумĕнче фольклор ансамблĕ йĕркелеме? Ана пĕр-пĕр «Нухрат» е «Мерчен» ят пама пулĕччĕ. Ку ансамбль авалхи юрра-кĕвве, халăх сăмахлăхне чун кĕрттĕр. Хĕр сăрине те манса ан кайтăр. Ана çулсеренех ирттермелле тăвасчĕ. Хальхи çĕнĕ юрăсене те шăрантармаллах. Ахă, ансамбле ертсе пыма пултаракан çын кирлĕ. Аçтан тупма пулать-ши? Çакăн пирки партячейка секретарĕн райкомра калаçса пăхмалла. Ана колхоз шучĕпе тӳлесе тăма та пулать.

Яков Миронович шухăшĕ каллех урăххи çине куçрĕ. Шкул тавра çамрăк улмуççисем лартрĕç. Шкул директорĕ ăçтан тупнă-ши лартмалли хунавсем? Колхоза та сад тем тери кирлĕ. Патăрьелĕнчи улма-çырла питомникне кĕрсе курмаллах: унта мĕнле хунавсем пур-ши? Вăн Анат Туçара хур ферми никĕслеççĕ. Пирĕн те шыв-шур çук мар. Ку яла та çитсе пăхасчĕ.

Шухăш хыççăн шухăш, ĕмĕт хыççăн ĕмĕт.

Анчах унашкал ĕмĕтсен ĕмĕрĕ кĕске пулчĕ çав. ВКП(б) райкомĕн бюровĕ вĕсене çил хывăха сапаланă пекех вĕçтерсе ячĕ. Партячейка йышăнăвĕпе çырлахмарĕ бюро, çĕнĕ пунктсем хушса çырчĕ.

«ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн нарăспа пуш уйăхĕсенчи Пленумĕ хыççăн Пожеданов ялти парторганизаци халăх тăшманĕсемпе кĕрешес, сăтăр тăвассине чарса лартас енĕпе çине тăрса ĕçлессине йĕркелеме пултараймарĕ. Юлашки вăхăтра политикăлла тимлĕхе çухатрĕ. Халиччен уйрăм хуçалăхпа пурăнаканăн ывăлне ял Канаш ĕçтăвкомĕн секретарьне лартнă. Унтан та ытларах Пожеданов хăй халăха сăтăр тăвас çул çине тăнă. Унăн айăпĕпе пĕрлешӳллĕ хуçалăх пĕртен-пĕр ăратлă ăйăрсăр тăрса юлмалла пулса тухнă. Çак сăлтавсемпе Анаткасри партячейка йышăнăвне улăштару кĕртес, Я. М. Пожеданова парти ретĕнчен кăларас».

Яков Миронович район центрне колхозăн Канаша каякан грузовикĕпе ларса килнĕччĕ. Машина каялла çаврăнса килессе кĕтсе тăмарĕ вăл, тăван ялне хир çулĕпе çуранах тухса утрĕ. Яков Миронович — вăтам пу-силлĕ арçын. Халĕ вара, ВКП(б) райкомĕн бюровĕ хыççăн, ытла та пусăрăнчăк кăмăлпа утнăран-и, лутра пек курăнать. Хыткан кĕлетки типшĕмленсех ларнă. Куçĕ кăна çав-çавах çутă, çӳçĕ çеç çаплах тĕм хура. Хăй çине вăл симĕс гимнастеркăпа галифе тăхăннă, пуçĕ çине çавăн тĕслех карттус лартнă. Граждан вăрçи вăхăтĕнче çар тумне хăнăхнă та ку таранччен çав тумран уйрăлаймасть.

Унăн чунĕ кӳтсе çитнĕ, чĕри ыратать. «Этем чунĕпе

ырӑ, кӑмӑлӗпе ҫепӗҫ»,— ӑнлантаратчӗ ӑна чиркӳпе прихут шкулӗн ватӑ учителӗ Пантелеймон Яковлевич Румянцев. Кӑлӑхах апла шутланӑ иккен. Йӑнӑшнӑ вӑл. Этем чунчӗринче лайӑххине, ырламаллине ҫеҫ шырани тӗрӗс теме ҫук. Чӑн ӗнтӗ, ыррине вӑл нумай тӑвать, ҫавӑнпа пӗрлех унран тепӗр майлине те кӗтме пулать. Хӑш туртӑм ҫиеле тухасси — лайӑххи патнелле-и е начарри патне — ачаранах чӗре тӗпне хунӑ никӗсрен килет. Тӗрӗсрех каласан, хӑш еннелле туртӑнасси — этемӗн ирӗкӗ.

Мӗн-ха вӑл ирӗклӗх? Мӗнпе ҫиеҫҫӗ ӑна? Вӑтӑр саккӑра ситнӗ арҫын ӑна мӗнпе ҫинине пӗлсе ҫитмеллех пек ӗнтӗ. Ирӗклӗх мӗнне пушкарать те пулӗ, анчах пур-ши унӑн ҫак тивӗҫ — ӑнлансах ҫитереймест-ха.

Йывӑр шухӑшсене сирсе ярасла Яков Миронович алне сулчӗ те малалла сӗнкӗлтетрӗ. Вӑл Тимӗрлене ҫитнӗ тӗле кун каҫ енне сулӑнчӗ. Темиҫе теҫетке ҫул каялла кунта ҫулсӑллӑ ката — вӑрман кашланӑ. Халӗ унта-кунта кӑна уйрӑм тӗмсем тӑрса юлнӑ. Ҫӳлте, тӗмсем тӗлӗнче, хурасӑрӑ ҫунатлӑ мӑнттай караппӑл вӗҫет. Вӑл хурчӑкаран чылай пысӑк. Ик ҫунатне аршӑна яхӑнах сарнӑ та вӗсене пӗртте сиктермест темелле. Ярӑнать-ярӑнать те аялалла туртӑнать. Унтан каллех ҫӳлелле чу! хӑпарса каять. Чылаях пысӑк ункӑ туса пӗрре пӑхса саврӑнчӗ, унтан тепӗр пысӑкрах сӑнавлӑ ункӑ турӗ, Яков Миронович пӑхса пынӑ хушӑрах ҫунатлӑ сунарҫӑ виҫҫӗмӗш вӑрӑм ҫаврӑма тухрӗ. Мулкача е ытти чӗр чуна ҫивӗч чӗрнисемпе ҫаклатасшӑн ахӑр. Тен, ӑна ку вӑхӑтра нихӑш чӗр чун та илӗртмест. Тен, вӑл кӑмӑлӗ туртнипе Тимӗрле патши пек ярӑнса ҫӳрет. Ҫӳлте-ҫӳлте вӗҫет хӑватлӑ вӗҫен кайӑк. Нимӗн те шиклентермест ӑна, никам умӗнче те сехӗрленмест вӑл. Вӑт ку чӑнах та Тимӗрле патши! Вӑт ку чӑннипех ирӗклӗ кайӑк!

«Эх, пуласчӗ манӑн та ҫакӑн пек ирӗклӗх!»— тӗвӗленчӗ хӑйне хӑех ҫунатлӑ шухӑш ҫунатсӑр Яков Миронович пусӗнче.

Ҫапла, Тимӗрле тӗлӗнче ункӑ хыҫҫӑн ункӑ тӑвакан караппӑлӑн ирӗклӗх пурах. Ӑна партячейкӑра та сӳтсе явмаҫҫӗ, района та чӗнмеҫҫӗ, хӑйсен йӑхӗн чыслӑ йышӗнчен кӑларса пӑрахас хӑрушлӑх та сехӗрлентермест ӑна. «Ирӗклӗх вӑл — апла е капла тума кирлине пӗлсе тӑни»,— вуланӑччӗ Яков Миронович пӗр кӗнекере. Караппӑл ав хӑйне мӗн кирлине лайӑхах пӗлсе тӑрать. Хӑҫан, ӑҫта тата мӗн тумаллине хӑй татса парать. Тепӗр чухне кӑмӑлне килменнине те тума тивет. Тӗслӗхрен, пӗсехе пушши ӑна япӑх ҫанталӑкра та сунара хӑваласа кӑларать. Пӗлет: унсӑрӑн

юрамасть. Мĕн тесен те караппăл ирĕклĕх ырлăхĕпе туллин усă курать.

Этем пурнăçĕнче çаплах теме çук çав. Уйрăм хуçалăхпа пурăнакан çын ывăлне Аркадий Русакова ял Канаш секретарьне лартма партячейка секретарĕ Пожеданов урăх никам та çукран сĕнчĕ. Эппин, çапла тума кирлине пĕлсе тунă. Секретарьте пĕр çулталăк чиперех ĕçленĕ, каччăн ури айĕнчен инкек сиксе тухсан Хаяркинсем çамрăк Русаков мĕнле çемьерен пулнине, ăна явапла ĕçе кам сĕннипе лартнине «сенĕк вĕçне» лартрĕç, ялав вырăнне вĕçтерме тытăнчĕç.

Тепĕр тĕслĕх илсе пăхар. Колхоз правленийĕ вăрлăх, утсем, ут тавраш̆е тата сухапуç-сӳре кăна пĕрлештерме йышăннăччĕ. Район центрĕнчен шартлама сивĕре кубанкăпа тухса хăлхине тăм илтернĕ уполномоченнăй килсен хĕрарăмсем йĕре-йĕрех ĕне-вăкăра та, кайăк-кĕшĕке те пĕр кил картине хăваласа пуçтарчĕç. Вăт ме сана! Вăт ирĕклĕх! Юрать-ха тăрантарманнипе, шăварманнипе мĕскĕннĕн мĕкĕрекен ĕне выльăха инкесем уполномоченнăй ялтан кайсанах килĕсене тавăрчĕç, кайăк-кĕшĕк шăпи вара урăхла пулса тухрĕ. Чăхсем те, хурсем те хăйсене хупнă кил картинчен каялла тухаймарĕç. Çил-тăмантан хӳтлĕх тупаймасăр вĕççĕр-хĕрсĕр кăтикленĕ, кикаклатнă выçă пакарталлă йыш пĕри юлми вилсе пĕтрĕ.

Вăт сана ирĕклĕх!..

Ĕнерхине, маларахри вăхăтрине Яков Миронович лайăхах ăнланать-ха. Сăмахран, хресченсем коллективлă хуçалăха пĕрлешнине, ун шучĕпе, ырламаллах. Паллă: уйрăм хресчен трактор мар, плуг та туянаймасть. Пĕр çемьери пек килĕштерсе ĕçлекен пысăк йышра çын кăмăлĕ çĕкленет. Хăйне туй каччи пек те туй хĕрĕ пек туйнăран унăн ĕçĕ-хĕлĕ те ăнса пырать. Шăнкăртам кунне-çĕрне пĕлмесĕр çав çынсем хушшипех юхса выртать, анчах халĕ ĕнтĕ ун тăрăх урăх шыв юхать. Юхан шыв çумĕнчи Анаткас та яланхи вырăнĕнчех, анчах кунти çынсен пурнăçĕ самаях улшăнчĕ ĕнтĕ. Анчах ырра-ши е хурлăха?

Патшалăха тырă парса татсан, МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тӳлесен колхоз пӳлминче тырă кĕреçепе ăсма мар, шăпăрпа шăлмалăх та юлмасть-çке-ха. Ав колхозăн малтанхи председателĕ Палля Микули хăй ĕмĕрĕнче тăраниччен çăкăр çисе курмасăрах вилсе кайрĕ. Çĕнĕ председателĕн Лявăçкан «хыçĕ çурăк» пальти самаях хăшканса шупкаланчĕ ĕнтĕ, çĕннине туянма укçи-тенки çулленех япăлтăк. Рядовой колхозниксем пирки каламалли те çук. Ĕçкунĕсем тăрăх илни кушак тăранмалăх кăна. Юрать-ха

колхозниксен килсерен пахча пур. Вăт кунта вĕсем чăнах та пикенсех вăй хураççĕ. Колхоз хиренче те туй каччи пек, туй хĕрĕ пек ĕçлеççĕ тени тĕрĕсех мар-и çав? Пайти çук ĕç ăçтан илĕрттĕр-ха!.. Шăлать те шăлать патшалăх колхоз пӳлмине. Аçта хăямата чикет-ши çавăн чухлĕ тырра? Колхозник выçă тăрса юлнине пĕлет-ши е пĕлмест те-ши Сталин? Çук пуль çав, пачах пĕлмест пуль.

Çапла, ĕнерхине ăнланма пулать-ха, анчах паянхин тупсăмне тупма йывăртарах. Малашлăх çинчен шухăшласан Яков Миронович шухăшсен уçăмлăхне тупаймасть те кĕл тума тытăнать. Çук, вăл турра ĕненмест, анчах та ваттисене кура сайра хутра хăйне евĕр кĕл тăвать, раскалĕнчен хăйне хĕрхенме тархаслать:

— Эй, тивлетсĕр раскалăм! Парсам пире чăтăмлăх, парнелесем тӳсĕмлĕх! Сыхла усал-тĕселтен, тискер чунлă çынсенчен! Мана кирлĕ халь вăй-хал тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме, кĕрешӳре çĕнтерме! Çирĕп сывлăх ан хĕрхен, хĕпĕртетĕр чун-чĕре! Аминь!

Кăштах чарăнса кĕл тунă хыççăн Яков Миронович çав çулпах малалла, Ямшăк çырми еннелле, утать. Тимĕрле тĕлĕнче явăнакан караппăл вара маршрутне тăруках улăштарчĕ: аялалла тĕмсем хыçне чул пекех вирхĕнсе вĕçсе анчĕ те куçран пач çухалчĕ. Яков Мироновичăн йывăр шухăшĕсем кăна килне çитичченех пусĕнчен тухмарĕç. Ялти кун-çулăн хуйхăллă-суйхăллă ӳкерчĕкĕсем пĕрмаях куçĕ умĕнче тăчĕç.

Хăйне партирен кăларнипе Пожедановăн чун-чĕри ниепле те килĕшесшĕн пулмарĕ. Шупашкара ВКП(б) обкомне кайса пăхрĕ — унта ун хутне кĕрекен тупăнмарĕ. Мускава пĕрин хыççăн тепĕрне икĕ çыру çырчĕ — çакă та усă кӳмерĕ. Тĕрĕслĕх шыраса юлашкинчен Мускава Сталина хăйне телеграмма ячĕ, анчах кăлăхах. Партирен кăларнă çын телеграмми адресат аллине çитнĕ-и, çитмен-и— çакна пĕлеймесĕрех юлчĕ Яков Миронович. Сталин пулăшасса тем тери пысăк шанăçпа кĕтрĕ вăл, пĕрех кĕтсе илеймерĕ. Майĕпен-майĕпенех ку шанчăк та сӳнчĕ. Çавна май унăн ăс-хакăлĕнче аслă çулпуç пирки темле иккĕленӳ çуралчĕ. Яков Миронович çынсене шанми пулчĕ, тĕрĕслĕх тупма çукки ăна калама çук тарăхтарчĕ. Çак тарăхăва ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Маслов — лешĕ, виçĕ «М» текенни — çунакан вут çине краççын сапнă пекех вăйлатса ячĕ.

— Çăхавсем çырса самай тăрмашрăр ĕнтĕ. Çырман вырăн хăвармарăр. Ленина мавзолейри адресĕпе çырмалли çеç юлчĕ санăн. Тен, çырса çитет ĕнтĕ? Хуравне пур-

пĕр кашнинчех мана çыртараççĕ,— кулса кăтартрĕ вăл пирус тĕтĕмĕпе сарăхнă шăлĕсене.

— Эпĕ ку таранччен никам çинчен те çăхав çырман, çырма та шутламан. Çырасси те паллă мар. Хăйне хăй хӳтĕлемелли тивĕç кирек камăн та пур. Сирĕн вăт ултавлă хуравсем çырма чăнах та чарăнмалла,— татăклăн каларĕ хăй шухăшне Пожеданов.

— Каласасса калаçăр та, виçине пĕлĕрсемĕр ĕнтĕ. Арман хуçине, леш уксаха, хӳтĕлерĕр-и? Хӳтĕлерĕр. Кузнецовсенчен çил арманĕ, тимĕрçĕ лаççи, шатрун çурт туртса илме кам чăрмантарчĕ? Каллех эсир. Колхозăн ăратлă ăйăрĕ кам айăпĕпе ӳкрĕ? Татах сирĕннипе. Ытти-хытти пирки каламăп. Мĕн калани те çителĕклĕ ĕнтĕ. Çапла, кăлăхах çăхавсем çыратăр. Сталин патне те çырмалла пулман. Хăвăр таса мар чухне çулпуçа мĕншĕн чăрмантарас?

Çакăн пек ăс пачĕ Маслов хăй патне чĕнтернĕ Пожеданова. Яла таврăннă чухне ун пуçĕнчен пĕр шухăш туха пĕлмерĕ: малалла мĕн килсе тухĕ-ши?

Йĕпе çине сапа тенĕ пек ун пурнăç çулне инкек хыççăн синкек картларĕ.

Пожеданов чĕрине йĕппе чикнĕ пек ыраттараканни ăна çемйипех колхозран кăларни пулчĕ. Мĕн тесен те Яков Миронович колхозăн хреснашшĕ вырăнĕнче пулнă вĕт-ха! Ăна ура çине тăратма сахал мар вăй хунă! Халĕ ак — пĕрлешӳллĕ хуçалăха текех ура ярса пуснă ан пул! Кĕштек пек ана та уйăрмарĕç, кĕсрепе тихана тавăрма та шутламарĕç. Халь-халь йĕрсе ярасла кăмăлпа Яков Миронович çуркунне уйрăм хуçалăхпа пурăнакансем ана уйăрнă çĕре кайрĕ. Çĕр çинче чун-чĕреллĕ çынсем пĕтмен иккен. «Ял активистне анасăр хăвармастпăр!» — терĕ пĕри тăрăхлараххăн. Чăнах та, ăна Чăкăрчекре çул хĕррипе салтак пиçиххийĕ сарлакăш ана касса пачĕç. Çур анине виçĕ пăт сĕлĕлле çӳлти касри Лява хăла кĕсрипе чĕрмелекелесе пачĕ — унта акма ясмăк вăрлăхĕ тупăнчĕ, анан тепĕр пайне Яков Миронович çемйин кĕреçепе чавма тиврĕ — кунта вара вир акма май килчĕ. Вире çум куракран тасатма йывăрах пулмарĕ: Саратов таврашĕнчен вырăпа аптăранисем килсе çитрĕç, вĕсем пулăшрĕç. Чĕнмен çĕртенех çум çумлама Санюк аппа та тухрĕ. Ванюк тете хăй ерçеймест — колхозра конюхра ĕçлет, çапах çум çумлакансем патне вăл та лашапа килсе кайрĕ — пĕр лакăм çăл шывĕ парса хăварчĕ.

Çу варринче Яков Миронович çемйин пурнăçĕ хĕсĕнмеллипех хĕсĕнсе çитрĕ. Чи кансĕрри — шăл айне хумалли пĕтсе çитни. Вĕçе-вĕç сыпăнтарма шултăра пĕренесенчен

тунӑ кӗлете сутса ярас шухӑш та пуҫра мӗлкӗшетчӗ ӗнтӗ, картишӗнчи йӑрансем ҫинче малтан сухан, унтан редиспа хӑяр ӗлкӗрчӗҫ. Турра шӗкӗр: арӑмӗ Сахвит ҫукран пур тума ҫав тери ӑста. Сӗтел ҫине серте е пултӑран яшки пӗҫерсе лартать, турӑхпа юрса парать. Ҫӑшкар ути кукли те аптӑрасах каймасть. Сертепе ҫӑмарта хӑпартни ҫисе тӑранмалла мар, анчах сӗтел ҫине темшӗн-ҫке сайра тухать.

## Ҫын хӑрушӑрах-и, кашкӑр-и?

Ҫын пурнӑҫӗ виҫе тараси ҫинчи пекех вылянать. Йывӑрӑш пӗр енне кӑшт ытларах хурсанах пӗр чашӑкӗ аялалла сулӑнать, тепри ҫӳлелле вирхӗнет. Урӑхла каласан шайлашу тени куҫ умӗнчех ҫухалать. Яков Миронович пурнӑҫӗнче те шайлашу пӗтнӗ ҫавнашкал тапхӑр килсе тухрӗ. Виҫе тарасин хӑрах енне йывӑр ҫӑк тиемеллипех тиерӗҫ: ӗҫрен хӑтарчӗҫ, партирен кӑларчӗҫ, колхозран пӗтӗм ҫемйипех хӳтерчӗҫ, ывӑлне Мируна педучилищӗре вӗренме чарчӗҫ. Яков Миронович шучӗпе, ҫак инкексенчен йывӑртараххи нимӗн те пулма пултараймасть. Эппин, мӗншӗн пурӑнмалла, епле пурӑнмалла? Пурӑнма май та ҫук, усси те ҫук. Чуна эсреле парасси кӑна юлнӑ. Яков Миронович ун чухне хӑйне татах та йывӑртарах тӗрӗслевсем витӗр тухма тивессине пӗлмен-ха.

Пӑтрашуллӑ синкер кунсенче Пожедановсен хӗрт-сурчӗ ним хӗрхенӳсӗр вилӗм кӳрекен эсрелтен чеерех пулчӗ ахӑр: пӗр телейлӗ кун Шӑмалак дачин объездчикне Толмачева, ҫӳллӗ те тӑлпан вырӑса, кил хуҫи патне ертсе килчӗ.

«Виҫҫӗмӗш обход хуралҫи чылайранпа ӗнтӗ больницӑра выртать. ТБЗ теҫҫӗ тухтӑрсем. Чахотка эппин. Значӑт, вӑрман хуралҫи кирлӗ. Пирӗн лесничи сана сӗнсе пӑхма хушрӗ...»— терӗ Толмачев.

Ҫак сӗнӗве Яков Миронович пӗлӗтрен татӑлса аннӑ телей вырӑннех хучӗ. Ҫав кунах лесничествӑна кайрӗ, ҫӗнӗ ӗҫе кӳлӗнчӗ. Чи малтанах квартал юписене тӗрӗслесе тухрӗ, ҫӗрӗшнисене ҫӗннисемпе улӑштарчӗ, ӑҫти ӗшнере хӑш йывӑҫ лартса ӳстермеллине палӑртрӗ, обходри кварталсен карттине тума пикенчӗ.

Пӗр кунхине урамра Яков Мироновича сакӑр теҫетке енне сулӑннӑ Краҫук аппа тӗл пулчӗ, сывлӑх ҫинчен ыйтса пӗлсенех пӑшӑрханса пӑшӑлтатма тытӑнчӗ:

— Куратӑп, кашкӑрла хӑтланать хӑшӗ-пӗри пирӗн ялта. Урса кайнӑ выҫӑ кашкӑрла... Тур каҫартӑр ӗнтӗ выҫтахсене... Ялта чаракан ҫук вӗсене. Районтисем кирек мӗн

тума та ирĕк панă. Эппин, тур папай та çăварлăхлаймĕ. Унăн та каçармалли кăна юлать.

Типшĕм аллине кăмăлсăрла лăш сулчĕ Краçук аппа, Яков Миронович тавăрса мĕн каласса кĕтмесĕрех тĕнкĕл-тĕнкĕл малалла утса кайрĕ. Унтан чарăнчĕ те çаврăнса тăрса ырă канаш пачĕ:

— Эс, Якку, ан васка! Лăпкă пул! Çил тепĕр май та çаврăнма пултарать...

Краçук аппа сăмахĕсем Яков Мироновича шухăша ячĕç-ячĕçех. Çапла, çил-тăвăл çӳллĕ хумсем авăснă вăхăтра кимĕ çине ларма хыпаланманни те пăсмĕ. Тепĕр тесен çав ăслă карчăк кашкăрсем пирки калани те тĕрĕсех. Пур-ха çав пирĕн хушăрах тискер кашкăрла пурăнакансем. Унашкалли мĕн тума юрани-юраманнине шута илме пăрахать, хăйне епле тытассин чиккисем виçесĕр сарăлса каяççĕ. Киревсĕрле хăтланакана аça çапмасть, çĕр çăтмасть иккен, вăл ыттисем хушшинче ним мар пурăнать. Унтан та ытларах, çынсем хушшинче ним пулман пекех ахăлтатса çӳрет. Çук, ахăлтатмасть. йĕрĕнмелле ихĕлтетет.

Нина Агафоновна Хаяркина-Дьяконова — çав-çавах вулав çурчĕн пуçлăхĕ. Халĕ тата ялти партячейка секретарĕ. Вăл тăрăшуллăн ертсе пынипе ĕçсĕр аптăранисем кунти купăста пахчинче пĕр вĕçĕмсĕр качака хăвалаççĕ—доминолла выляççĕ. Çат та çат тутараççĕ. Вылякансен тăвată çынлă экипажĕнче Нина Агафоновнăна хăйне те курма пулать.

— Ничева, качака рангне çĕкленес телейпе эсир те савăнăр-ха пĕрре...— ахăлтатсах кулать вара выляса яракансенчен.

* * *

Таврари ялсенче пĕр мăшăр кашкăр — Хурайккапа Сăркка çинчен калаçкалаççĕ. Хурайкка — аçи, Сăркка— ами. Иккĕшĕ яланах пĕрле çӳреççĕ имĕш. Вăрман хуралçи Пожеданов ку мăшăра пĕрле курман. Пĕррехинче тĕм хура кашкăр курнăччĕ вăл. Тен, çавскер Хурайкка пулнă. Ун чухне Яков Миронович «Осоавиахим» колхоза вăхăтлăха усă курмашкăн триер ыйтма кайнăччĕ. Икĕ ял хушшипе çуран пыруçăн каç пулчĕ. Пăхать — вăрман енчен пĕр пы-ы-сăк йытă лăпăстатса килет. Çак йытă çул варрине тухса ларчĕ те куçĕсем вутăн-хĕмĕн çуталса кайрĕç. «Ара, кашкăр вĕт ку!»— чутах кăшкăрса ямарĕ Яков Миронович. Çав самантрах тăп чарăнчĕ. Çурăмĕ çине тар тапса тухрĕ, çӳçĕ шăрт пек тăрса кайрĕ. Мĕн тумалла? Алăра

нимĕн те çук. «Каялла кайсан е пăрăнса иртме хăтлансан ку хăрать тесе хама тапăнĕ. Эппин, çултан пăрăнма кирлĕ мар»,— вĕлтлетрĕ шухăш пуçĕнче. Яков Миронович икĕ чăмăрне кăкăр тĕлĕнче пĕрле тытрĕ те кашкăр еннелле утса кайрĕ. Çук, кашкăр çынна хирĕç виксе ӳкмерĕ, ик ури çинчен лӳпперрĕн тăчĕ те пĕр аллă хăлаçра каллех çул çине ларчĕ. «Ахă, эсĕ те хăратăн иккен! Каллех сан енне-ле талпăнса пыратăп!»— хальхинче хăюллăраххăн çулпах утрĕ Яков Миронович. Хăй патне çын çывăхара пуçласан кашкăр харлатса илчĕ, шăлĕсене шатăртаттарма тытăнчĕ. Çав вăхăтра ял енчен юланут килмен пулсан çынпа кашкăр хушшинчи тавлашу хăçанччен тăсăлатчĕ-ши... Ут хытăран хытă тулхăрать. Хайхи кашкăр васкамасăр тăчĕ, Яков Миронович тавра карта туса вăрманалла сулланчĕ.

— Кашкăр! Кашкăр!— кăшкăрчĕ Яков Миронович утпа килен çынна. Лешĕ, ӳсĕрскер, утне чарса тăмарĕ.

— Вăхăт çук ман кашкăрпа пуплеме! Васкатăп!— терĕ вăл. Утне чĕлпĕрпе çатлаттарчĕ те куçран хăвăрт çухалчĕ.

Яков Миронович та кашкăр çул çине тепре тухасса кĕтсе тăмарĕ. Çулсăр-мĕнсĕр ял еннелле чупрĕ. Шăнкăртам урлă атăпа шыва шампăртаттарса каçрĕ те яла вирхĕнсе кĕчĕ. Кайран пĕлчĕ вăл: кашкăр нихçан та хăйĕн çулне татма памасть, унран пăрăнса иртме тăрăшмалла.

Шутламан ун чухне Якку хăйне кашкăр-кашамансене хӳтĕлеме тивессе. Пурнăçра апла та, капла та пулать иккен. Вăрман хуралçинче ĕçлеме тытăнсан чи аякри квартала тĕрĕслеме кайрĕ. Сасартăк çывăхрах пăшал сасси илтĕнчĕ. Çӳллĕ çăка тăрринчен çăхан кранклатса çĕкленчĕ. Пăхать вăрман хуралçи: Никандр Хаяркин тем айланать. Тӳнме пуçланă юман айĕнчи кашкăр йăвинчен вăл виçĕ çура туртса кăларнă иккен, вĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне миххе ячĕ. Миххине çурăм хыçне хурса чиперех утса каятчĕ пулĕ, сăрă кашкăр хăй еннелле вирхĕнсе килнине курах кайрĕ. Пĕр самант тăхтамасăр пăшалне ун çине тĕллерĕ. Пересси печĕ, уринчен кăна лектерчĕ. Кашкăр юн юхтарса темиçе метр лăпăс-лăпăс чупса кайрĕ те ик уран ларчĕ. Халĕ Никандр тепĕр кĕпçипе тĕллерĕ, анчах персе яма ĕлкĕреймерĕ. Яков Миронович хыçалтан пырса ун пăшалне ярса тытрĕ те туртса илчĕ.

— Мĕн хăтланатăн эсĕ? Амипе аçи умĕнчех çурисене илсе каясшăн-и? Ав хури çывхарать...

Вăрман хуралçи кашкăр çурисене янă миххе хăй аллине илчĕ. Çав хушăра икĕ кашкăр — шăпах Хурайккапа Сăркка — Якку çине ик енчен виксе ларма та хатĕрччĕ, вăл çурасене михĕрен кăларса йăва еннелле хăваланине

курсан тăхтаса тăчĕç. Хăйшĕн пысăк хăрушлăх тухса тăнине Яков Миронович тӳрех ăнланчĕ: çитменнине, тăрлавсăр çурасем хăйсен йăвине кĕме пĕртте васкамаççĕ. Вĕсем вăрман хуралçипе выляма та хатĕр. Нӳрĕ сăмсисемпе унăн урине пыра-пыра перĕнеççĕ.

— Айта кунтан хăвăртрах. Айта, айта!— чĕнчĕ вăл Никандра йытă çурилле пăйкăшакан кашкăр çурисенчен аяккалла пăрăннă май.

Вăрман хуралçи ăна-кăна питех пушкарман сунарçăна мĕншĕн кашкăр çурисене тивме юраманни çинчен çул тăршшĕпе ăнлантарчĕ. Вăл пĕлнĕ тăрăх, кашкăрсен ниçта çырмасăр çирĕпленнĕ саккун пур иккен: хăйсем пурăнакан ял çывăхĕнчи выльăх-чĕрлĕхе тивмеççĕ. Кам та пулин çурисене тĕкĕнсен кашкăрсем çак саккуна пăхăнми пулаççĕ, тарăхса урнă пекех хаярланаççĕ. Хăйсене хунама, çамрăк ăрăва ӳссе çитĕнтерме чăрмантаракана тавăрмаллипех тавăраççĕ. Вăрман хуралçи çакăн çинчен каланине Никандр хăлхине чикмерĕ. Хăйне сунарта чăрмантарнăшăн Яккăва тем тери çилленчĕ. Тупăннă кашкăрсен хутне кĕрекен! Пур çĕре те сăмсине чикет!

Темиçе кунран Яков Миронович тайлăк юман айĕнчи йăвана тепĕр хут кайса пăхрĕ: кунта кашкăр шăрши те юлман. Эппин, Хурайккапа Сăркка çурисене урăх вырăна, этем алли тĕкĕнеймин çĕнĕ йăвана, куçарнă.

Хăвалăх вăрман урлă, Хырла хĕрринче. Тӳп-тӳрĕ прачакпа кайсан — виç километртан ытла мар. Прачак ик енĕпе те çӳллĕ капмар хырсем. Çурма çулти тăвайккине çитсен вăрман хĕрри палăри-палăрми тĕтреленме пуçлать. Вăрмантан тухсан сулахайра — таса уй, сылтăмра — хăвалăх. Çулçăллă лутра вăрман, тĕрĕссипе каласан ячĕпе кăна хăвалăх. Кунта хăва — карçинкка çыхмалли — Хырла хĕррипе кăна, темиçе теçеттин лаптăкра çĕмĕрт, шĕшкĕ тата палан хунаса кайнă. Çывăх ялсенчи халăха хăвалăх çулсерен пысăк ырлăх кӳрет. Вăхăт çитсен ял çыннисем ушкăнăн-ушкăнăн килсе кунта çĕмĕрт, хăмла, мăйăр тата палан татаççĕ. Вăрман ырлăхĕ пурин валли те çитет.

Çӳллĕ кĕлеткеллĕ типшĕм Краçук аппа çуллахи шăрăхра кĕске аркăллă кĕрĕкне тавăрса тăхăнаканччĕ. Мăйăра кайсан кĕрĕкне хăй пек тăхăннăскере курах каять. Çавскер мăйăра шатăрт-шатăрт тутарса çиет. Краçук аппа чĕнет-чĕнет ăна, лешĕ пĕр сăмах та шарламасть. Ват çынна хисепе хума пĕлмен янавара мăйăр хутаççипе пуç урлă тăсса илесси патнех çитнĕччĕ, çăмламас хăямат уласа яра парать: вăл çын мар, упа иккен. Краçук аппа хăй татнă мăйăра хутаççипех пăрахса хăварса тарнă вара.

* * *

Пăшатан Миккулĕ хăвалăха ачаранах çӳренĕ. Йывăçсем пĕр тӳлевсĕр паракан çимĕçе хутаçĕ-хутаçĕпе йăтнă. Унран та ытларах вăл çитĕннисемпе пĕрле Хырлана пулла çӳреме юратнă. Хырла тăрăхĕнче, уйрăмах хăвалăх çумĕнче, авăрсем нумай. Çав авăрсенче пулă лăк тулли. Шывĕ вара сулхăн та тарăн, тачка кĕлеткеллĕ ишме пĕлмен Çтеттин тете пĕррехинче авăра путмах тытăннăччĕ, çипçинçе хăва хулли çăлчĕ.

Пĕррехинче, пулă сĕрекенсем чикарккă мăкăрлантарнă хушăра, Миккуль Хырлан сылтăм чăнкă çыранне — Патирек енчине — хăпарса курма шутларĕ. Хăпарса çитрĕ кăна — тĕлĕнсех кайрĕ: юман пĕренесем сарса тунă тем пысăкăш урай тухса тăчĕ ар çын ача куçĕ умне. Тахçанхиех пулма кирлĕ: пĕренисем çĕрĕшнĕ, пуринчен нимĕн те юлман темелле.

— Çтеттин тете, ку мĕн — касамат-и, вите-и? — çыран тепĕр енченех кăшкăрса ыйтрĕ Миккуль.— Кам тунă ăна?

Çтеттин тете Хырла тепĕр енче авалхи çурт-йĕр юлашкисем пурри çинчен такамран илтнĕ-ха, анчах вĕсене хăй куçĕпе курма тĕл килмен.

— Хăйĕнчен ыйт. Хăй пĕлме тивĕç,— хуравларĕ вăл Миккуле. Қалаçу çакăнпа вĕçленчĕ. Пулăçсем хăйсен ĕçне малалла тăсрĕç.

Миккульпе Санькка, пĕр çулхи шкул ачисем, вăрăм патаксемпе шыва пăтратаççĕ, пулла çитĕннисем юхăма хирĕç сĕтĕрекен сĕреке еннелле хăвалаççĕ. Сĕрекине çыран хĕррине сĕрсе кăларсан вĕт-шакăр пулла шыва каялла чăмтараççĕ, ӳтлĕреххисене витрене яраççĕ. Сĕрекене ытларах ырашпăтри, çĕлен пулă, уланкă çакланаççĕ. Тепле-рен çăрттан е шӳпке пулă тытăнсан пулăçсем савăннипе кăшкăрсах яраççĕ. Çавăн пек шултра пулăсене Миккульпе Санькканa тытса пăхма та чармастчĕç, анчах çак телей вăраха пымарĕ. Пĕррехинче йăпăлкка çăрттан Санькка аллинчен тепле вĕçерĕнчĕ те чăма пачĕ шыва — пулăçсем ун хӳрине кăна курса юлчĕç. Çавăнтанпа шултра пулла ачасен аллине памарĕç. Валеçнĕ чухне те ку йышши пулă вĕсене питех çакланмарĕ.

Валеçессе киле çитеспе вăрман хĕрринчи çерем çинче валеçеççĕ. Витресене ӳплентереççĕ те эртелпе тытнă мĕн пур пулла икĕ ретпе купан-купан хурса тухаççĕ. Пĕрремĕш рет — çитĕннисем валли, унта шултри çаталтатать. Иккĕмĕш рет — пулăшу ĕçĕсем тăвакан ачасем валли, кунта пуллисем те вĕтĕрех, куписем те пĕчĕкрех. Ун выранне

хавхалантаракан ӑшӑ сӑмах никама та мар, вӗсене, пулӑ тытма пулӑшакансене.

— Ачасем пулӑшмасан пӗр пулӑ та тытаяс ҫук. Вӗсене те пайсӑр хӑварас мар,— сӗлтет аллине ӗшеннӗ Юман тете.

— Тытнинчен ытла вӗҫертеҫҫӗ-ха мурсем, урисем хушшинченех шӳпкесене тартаҫҫӗ,— хӑйне хӑй ӗненми сасӑпа мӑкӑртатса илет пулла купан-купан хуракан Ҫтеттин тете.

— Хырлара пулӑ тытмалӑх та, тартмалӑх та пур. Пире те ҫитет, ыттисем валли те юлать. Ачасем валли те пӗрер шепреххи хур,— тепре ӳркевлӗн сӗлтет аллине Юман тете.

Пулӑҫсем шутӗнче ҫитӗннисем иккӗн, ачасем тӑваттӑн. Иккӗшӗ пулла хӑвалаҫҫӗ, тепӗр иккӗшӗ пулӑ витрисене йӑтса ҫӳреҫҫӗ. Қама хӑш тӳпе ҫакланассине тепӗр еннелле пӑхтарса тӑратнӑ ача татса парать. Хӑш купа лекессине ачасем чӑтӑмсӑртарах кӗтнине чухлать Ҫтеттин тете.

— Пулӑшакансене чыс тӑвар — малтан вӗсенне валеҫер. Лявук, кайса тӑр-ха леререх, вӑрман ҫинелле тинкер,— хушать вӑл ҫирӗп сасӑпа.— Қу кама?

— Қама пултӑр — э... э... Пӑшатана!

Ҫтеттин тете пӳрнине тӗлленӗ купана Миккуль туххӑмрах хутаҫа пуҫтарса хурать.

— Қу кама?

— Қама-кама... Паллӑ: хама.

Ыттисене те ҫапла пӗрер купа лекет.

* * *

Ҫанталӑк кӗр енне сулӑнсан Яков Миронович атмапа карас пулӑ тытма ҫӳрет. Хӑвалӑхрах Қарас ҫырми пур. Пӑр кайса шыв хухсан вӑл Хырларан татӑлса тӑрать, ҫурхи шыв кайнӑ чухне вара унӑн юппи пулать. Сӗверен юхӑма хирӗҫ килекен карас вӑлча сапма тӳлекрех вырӑн шыраса ҫуркунне ҫак юппа нумай кӗрсе юлать. Ҫу каҫа кунта пулӑ чылай ӳт хушать.

Пулла ансат майпа нумай тытма ӗмӗтленекенсем те пур иккен ялта. Қӗр кунӗ икӗ Хаяркин — Никандрпа Сантӑр — иккӗшӗ ик лавпа Қарас ҫырми вӗҫне, вӑл ҫуркунне Хырлапа сыпӑнакан тӗле, ҫитсе чарӑнаҫҫӗ, ик ҫырма хушшинчи тӑпрана унталла та кунталла сирпӗтме тытӑнаҫҫӗ, сӗреке караҫҫӗ те ҫырма шывне Хырланалла юхтараҫҫӗ. Икӗ ҫӗр чаван кунӗпе кӗрмешсен карас типпе тӑрса юлать. Қаҫ пуличчен икӗ лава пулӑпа тӑп-тулли тултараҫҫӗ те ялалла ҫул тытаҫҫӗ. Икӗ лава кӗменни юшкӑн

ҫинчех вырτса юлать. Часах таврана ҫӗрӗк пулӑ шӑрши сарӑлать. Яков Мироновичӑн карас ҫырмине пулла ҫӳрессн ҫапла пӗтет.

— Кашкӑрла хӑтланнӑ-ҫке эсир: ҫут ҫанталӑка калама ҫук пысӑк сиен кӳнӗ...— ӳпкелеме пӑхрӗ вӑл Сантӑра. Лешӗ сивӗ куҫпа кӑна пӑхса илчӗ:

— Тен, вӑрман хуралҫин хӑшне-пӗрне асӑрхамасан та юрать... Ху ял кулакӗсен хӳтӗлевҫи пулнине мантӑн-им?

Колхоз правленийӗ выльӑх-чӗрлӗх ферми тавра ҫатан карта тытса ҫавӑрма шутларӗ. Правлени председателӗ кирлӗ чухлӗ турат е сайралатмалли вӗтлӗх йывӑҫ касма лесничествӑра ордер ҫыртарса илме шутланӑччӗ, унӑн ҫак шухӑшне ҫӗнӗ счетовод самантрах сирсе ячӗ:

— Мӗн унта кайса ҫӳремелли пур! Хӑвалӑхра касас та турттарас...

Правлени ларӑвӗнче ӑна хирӗҫлеме никам та хӑймарӗ. Сантӑр Хаяркин бригадир хӑва касса турттарма тепӗр кунах лав хыҫҫӑн лав кӑларса ячӗ. Пуртӑ хӑвапа пӗрле ҫӗмӗртпе палана та, пилеше те хӗрхенменнине курсан, вӑрман хуралҫи чунӗ тӑвӑлса килчӗ. Вӑл тулли лавсене пурне те тытса чарчӗ.

— Кам ирӗк панӑ сире ҫут ҫанталӑк ырлӑхне пӗтерме? Ордер пур-и? Ҫук пулсан — халех пушатӑр. Унсӑрӑн акт ҫыратӑп...

Пушаттарчӗ-пушаттарчех вӗт. Инкек ҫинчен ҫийӗнчех лесничие пӗлтерчӗ.

— Тӗрӗс тӑватӑр, Яков Миронович. Хаяркинсене ирӗк парсан Карас ҫырмине мар, Хырлана хӑйне те типпе хӑварӗҫ. Хӑвалӑха пӗтерме ан пар,— хушрӗ лесничий.

Вӑрман хуралҫи тухса кайнӑ-кайман лесничие РКП(б) райкомӗнчен шӑнкӑравларӗҫ.

— Эс мӗн унта пӗрлешӳллӗ хуҫалӑха ӳсме чӑрмантаратӑн?— тулхӑрсах ятласа тӑкрӗ ӑна инструктор текенскер.— Ку вӑл халӑх тӑшманӗ пек хӑтланни пулать. Хӑва касса турттарма тек ан чар анаткассене, вӗсен ферма хуҫалӑхне йӗркене кӗртмелле.

Телефонпа ҫакӑн пек шӑнкӑрав пулни ҫинчен вӑрман хуралҫине хыпар час ҫитеймерӗ. Хӑвалӑха суккӑрла касса пӗтерме юраманни, ку вӑл халӑха хирӗҫле ӗҫ пулни ҫинчен Яков Миронович колхоз председателӗпе Ваҫҫук Лявӑҫкипе ятарласа кӗрсе калаҫрӗ. Вӗсен калаҫӑвӗ вӑраха пычӗ. Вӗсем мӗн калаҫнине юнашар пӳлӗмре сӗнӗ счетовод Никандр Хаяркин итлесе ларнӑ пулмалла. Яков Миронович тухса кайма тӑнӑччӗ ӗнтӗ, председатель пӳлӗмне Хаяркин тем тери хаярланса пырса кӗчӗ.

— Тăхтăр-ха, Пожеданов юлташ, эсир пире ферма таврa çатан карта авма ма чаратăр вара? Колхоза, коллективизацие хирĕç пыратăр-им? Колхоза сиен кӳни — халăхшăн тăшманла ĕç туни. Çакна ма ăнланасшăн мар?

— Кирлĕ тĕк çатан карта тытăрах,— пӳлчĕ çатăлтатса кайнă Хаяркина вăрман хуралçи.— Анчах хăвине касма лесничествăра билет çыртарса илĕр. Ылтăн пек хаклă хăвалăха тулăксăр ан пĕтерĕр. А колхоз пирки, коллективизаци пирки кунта пĕр сăмах та асăнмарăм. Пĕлессĕрех килет пулсан ялти пĕрлешӳллĕ хуçалăх эп хутшăнмасăр, эп тертленмесĕр йĕркеленмен. Çавна та асра тытăр...

Яков Миронович шучĕпе, пĕрлешӳллĕ хуçалăх хресченсене вак-тĕвек анана сухапуçпе тăрмалассинчен индустри никĕсĕ çине куçарма май парать, çĕр ĕçне çĕнĕлĕхсем кĕртме çул уçать.

— Сăмах та çук, колхоз çулĕ çинче тумхахсем пур-ха, анчах халĕ сăмах ун çинчен мар...— хушса хучĕ Яков Миронович хăй калани çумне, вăрт çаврăнчĕ те колхоз правленийĕнчен тухса кайрĕ.

Çак калаçу хыççăн тепĕр кунах район центрне Пожеданов халăх тăшманĕ пулни çинчен хыпар çитнĕ. «Ыйтăн — пĕлеймĕн, ырăн — тупаймăн»,— çырса хунă çăхав вĕçне. «Тĕрĕслĕхшĕн çунакан анаткассем» тесе алă пуснă. Ун хыççăн çакса вĕлермелли такан тата пăвмалли йăлмак ӳкерсе хунă.

Ку çăхав çинчен Пожеданов халлĕхе пачах пĕлмерĕ-ха. Тепĕр кун прачакпа каллех тиевлĕ лавсем пынине курсан унăн чун-чĕри çав тери тарăхса кайрĕ.

— Чарăнăр! Халех лавсене пушатнă пултăр!— кăшкăрса ячĕ вăл.

Лавсем чарăнасса чарăнчĕç, анчах тиеве никăшĕ те пушатма шутламарĕ. Яков Мироновичăн çилли капланса килчĕ. Вăл малти лав çинчен пуртă илчĕ те тиеве çыхнă вĕрене касса ваклама тытăнчĕ. Çав вăхăтра таçтан, кайри лав енчен, Никандр Хаяркин чупса çитрĕ.

— Мĕн пăхса тăратăр? Ма иртĕнтеретĕр ăна?— хар-р кăшкăрса ячĕ вăл çитнĕ-çитменех.

Хăй çавăнтах хыçалтан пырса вăрман хуралçине сылтăм алă çивчĕшпе ыйхă артерийĕ урлă вăрă-хурахла çатлаттарчĕ. Яков Миронович çав самантрах тĕшĕрĕлсе анчĕ. Тăна кĕрсе тăма хăтлансан Никандрпа Сантăр ăна чăтлăхалла сĕтĕрсе кĕчĕç те хыр çумне вĕренпе темиçе çĕртен хытă-хытă çыхса хучĕç. Унтан Яккăва чышкисем ыратичченех тӳпкерĕç, хырăмĕнчен аттисемпе тапрĕç. Пуçĕнчен

атӑ кӗллипе тапсан юн палкаса тухрӗ. Вӗсем ҫине сиксе ларасла хаяррӑн вӗрекен Улайккана пуҫӗнчен кӳсекпе ҫапрӗҫ те, йытӑ унтах выртса юлчӗ.

— Тинех кӑнаҫҫӗ. Ампӑ путсӗрсене. Хуҫине те, йыттине те ҫӗрле кашкӑр ҫурса кайтӑрах,— ҫынсем илтмелле мар хӑйӑлтатрӗ Никандр.

Каҫхи сунара тухнӑ ҫӗлен васкамасӑр шуса ҫывӑхарнине курсан тыткӑнри ҫыннӑн чунӗ сӳ! туса кайрӗ. Ку туйӑм вӑраха пымарӗ. Ҫӗлен пуҫӗ ҫинче икӗ сарӑ пӑнчӑ асӑрхарӗ Яков Миронович. Эппин, ку наркӑмӑшлӑ хура ҫӗлен мар, хурӑн пуҫлӑ ҫӗлен текенни, ҫынна сиен кӳменни. Чӑнах та, вӑл ҫынран та, йытӑ виллинчен те асӑрхануллӑн пӑрӑнса иртрӗ.

Ҫӗрле тавралӑх сулхӑнлансан Яков Миронович шӑмшакӗ чӑтмалла мар сурма пуҫларӗ. Ун пичӗ тӑрӑх кӑткӑсем чупаҫҫӗ. Вӗсене шӑлса пӑрахасшӑнччӗ — темиҫе ҫӗртен ӳт касмалла пӑчӑртаса ҫыхнӑран ик алӑран пӗрне те хускатма ҫук. Кӑткӑ шала кӗрсе ан кайтӑр тесе вӑл куҫне хупрӗ, вӗрентен хӑтӑлас пӗртен-пӗр ӗмӗтпе пӗтӗм вӑйран туртӑнкаларӗ те каллех тӑнне ҫухатрӗ.

* * *

Ҫав каҫхине Ҫтеттин ҫывӑрса каяймасӑр асапланчӗ. Мӗн турӗҫ-ши икӗ кашкӑр — Никандрпа Сантӑр — чӑтлӑхра Яккӑва? Ӑна Никандр ҫапса йӑвантарнине те, чӑтлӑхалла сӗтӗрсе кайнине те, харлатса вӗрекен йытӑ тӑруках шӑпланнине те вӑл хӑй курчӗ, хӑй илтрӗ. Тен, Яккху килне таврӑнайман та, унтах выртса юлнӑ. Мӑшӑрӗ Сахвит патне кайса пӑхмаллах ӗнтӗ Ҫтеттинӗн, анчах темшӗн тӑрса тумланас килмест. Яккху инкеке лекнине ытти лавҫӑсем те курнах, хӑшӗ те пулин Сахвите систермеллех. Ҫтеттинсӗр пуҫне те ҫакна тума тивӗҫлисем пур. Хӑйне ҫапла шухӑшласа лӑплантарасшӑн вӑл. Чун-чӗри вара пурпӗр лӑпланмасть, ыйхи те таҫта хӑямата тарать. Ку ӑнланмалла ӗнтӗ. Пӗлет Ҫтеттин: кам та пулин урӑххи Сахвите кӗрсе систересссе шанни кӑлӑхах. Ун пек туни Хаяркинсене хирӗҫ кайни пулать. Ҫапла тума ялта кам хӑйӗ? Яккху хӑятчӗ, анчах ӑна ав мӗн туса хучӗҫ. Шухӑш ҫӑмхи сӳтӗлет те сӳтӗлет. Куҫ умне Яккупа пӗрле пулла ҫӳрени тухса тӑрать. Мӗнех вара — пулнӑ, пулнӑ та иртнӗ. Унтан ӑна тырӑ выракансем патне уя шыв турттарнишӗн лартса памалли пилӗк ӗҫкунне бригадир ҫухатни, ӑна Пӑшатан Яккӑвӗ счетовод тупма пулӑшни аса килет. Тул ҫутӑласпа вӑртах сиксе тӑрать вырӑн ҫинчен Ҫтеттин. Хӑпӑл-хапӑл

тумланать те счетовод пулнӑ ҫын килне васкаса каять.

Якку ку вӑхӑт тӗлне килне аран-аран ҫитсе ӳкнӗ. Хӑйне кӑткӑсем ҫисе ярасран хӑтӑласси юмахри пек пулса тухнӑ. Вӑл питне темле ӑшӑ йӑпӑлтак япала перӗннипе тепре тӑна кӗнӗ. Пӑхать: унӑн пичӗ тӑрӑх чупакан кӑткӑсене Улайкка ҫула-ҫула пӑрахать. Хуҫи йытта пуҫӗнчен лӑпкаса ачашласшӑнччӗ — алли хускалмарӗ. Тинкеререх пӑхрӗ Улайкка ҫине — ку пачах йытӑ мар. Ҫук, йытӑ мар, кашкӑр.

— Хурайкка, эсӗ-и ку? — сасӑпах йӗрсе ячӗ Якку. — Ҫурса пӑрах мана, хӑтар асаплӑ вилӗмрен. Ыйтатӑп, тархаслатӑп...

Вӑл Хурайккана пуҫӗнчен лӑпкаса илесшӗнччӗ, алли каллех итлемерӗ. Ҫав хушӑра Хурайкка хыҫӗнчех Сӑркка ларнине курах кайрӗ Якку.

Хурайкка пуҫӗнче иртнӗ кунсен ҫути тепӗр хут тухса тӑрать. Пӗр тӑсланкӑ этем кашкӑр ҫурисене йӑваран михӗпе йӑтса тухать, тепри, тӗреклӗ сарлака кӗлеткелли, ҫав тӑсланкӑран миххе туртса илет те хӑйне тӗртсе ярать, ҫурасене каялла йӑвана кӗртсе хурать. Мӗнле пулӑшмалла ырӑ кӑмӑллӑ ку этеме? Сӑркка ав вырӑнтан та хускалмасть. Кач! тутарать ӑна шӑлӗпе хулӗнчен, пуҫӗпе сарлака ҫамкинчен таплаттарать. Лешӗ пурпӗр вырӑнтан тапранмасть. Мӑшӑрӗ ҫавӑн пек хӑтланнине хӑнӑхнӑ пулмалла.

Хурайкка ҫын патӗнчен каялла чакса кайри урисем ҫине ларать, Улайкка вилли ҫине тӗтреллӗ куҫпа пӑхать те мӗскӗннӗн улама тытӑнать. У! У! У-а! У-а! — такама тархаслать ахрӑм ҫӗрлехи вӑрманта. Кашкӑр уланине илтсен Хырла леш енчи ялта темиҫе йытӑ кӑшласа ярасла харӑс вӗрме тытӑнать. Мӑшӑрӗ ҫине Сӑркка ялкӑшакан куҫпа ырламанла пӑхса илет, пӑхса илет те тытӑнать ҫынна сыхпӑ вӗрене кӑшлама. Сӗвемӗн-сӗвемӗн сӳс кӑларать. Хурайкка тепӗр енчен пырса тӑрать. Вӑл та вӗрентен сӳс тума пикенет. Ҫынсем сӳсрен вӗрен тунӑ, унпа хӑйсем пек ҫыннах ҫыхса лартнӑ. Ик кашкӑр тепӗр майлӑ ӗҫ тӑваҫҫӗ: вӗрентен сӳс тӑваҫҫӗ, инкеке лекнӗ ҫынна пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Якку кӑльт та хускалмасть, хыр ҫумӗнче вилнӗ пекех выртать. Куҫӗ кӑна чӑл-чӑл ҫунать. Унра пурнӑҫ хӗмленнине кашкӑрсене ҫакӑ систерет. Вӗрин сывлакан Сӑркка асӑрхамасла шӑлӗпе ӳте лектерсен Якку чӑтаймарӗ, кӑшкӑрса ячӗ. Ҫав самантрах кашкӑрсем иккӗшӗ те каялла чакса ларчӗҫ. Айӑпа кӗнӗ Сӑркка ҫивӗч шӑлӗпе аҫапа хулӗнчен тепре качлаттарса илчӗ. Хӑраса чӗтрене ернӗ Якку татах тӑнне ҫухатрӗ.

Тул çутăласпа Якку куçĕ яриех уçăлчĕ. Кашкăрсем курăнмаççĕ. Йывăççем хушшинче тĕтре каркаланать. Шăмшак йĕппе чикнĕ пек ыратать. «Ыраттăрах, ку вăл эпĕ чĕрĕ иккенне пĕлтерет»,— лăплантарать хăйне хăй Якку. Пĕр кăткă сăмса шăтăкне кĕресшĕн. Карт туртрĕ Якку лăнчăрах туйăнакан сулахай аллине. Çат! турĕ вĕрен кĕтмен çĕртен. Шĕвĕр пўрни сĕмсĕр кăткăна шăлчĕ пăрахрĕ. Халĕ ĕнтĕ Якку кĕсйине алă чикме пултарчĕ, унтан хăй çава татăкĕнчен ăсталанă пекĕ туртса кăларчĕ, унпа вĕрене хăшик-хăшик сывласах каса-каса татрĕ. Темиçе минутран ахлата-ахлата ура çине тăчĕ.

— Эй, Хурайккапа Сăркка! Чун-чĕререн тав сире!— икĕ аллине те çўлелле çĕклерĕ Якку. Тем пек тинкерсе пăхсан та ăслă янаварсем ăна курăнмарĕç, анчах вĕсем иккĕшĕ те çывăхрах ларчĕç, палланă ырă çын тайкаланса утнине куç илми сăнарĕç, ăна вăрман хĕррине çитичченех ăсатса ячĕç.

Якку сĕнкĕлтетсе килне çитсен вăрманти тискер пулăм çинчен пĕлтерме арăмĕпе аслă ывăлне — лесничествăна, Çтеттине — район центрне прокурор патне ячĕ. Хăйне темиçе эрне вырăнпах выртма тиврĕ.

Следстви питĕ вăраха тăсăлчĕ. Çав хушăра Пăшатан Яккăвĕн пĕртен-пĕр свидетельне Воробьев Çтеттине ăсран тайăлнă тесе хулари темле больницăна ăсатрĕç. Ытти свидетельсем судра курмана-пĕлмене печĕç. Вĕçне-хĕрне тупайман Хитров судья юлашкинчен çапла каларĕ:

— Тĕрĕссине пĕлме май килмерĕ: вăрман хуралçи Пожеданов хăйне хыр çумне хăех çыхса хунă-ши е унпа туслă кашкăрсем çыхса пиевленĕ те хăйсемех салтса янă-ши? Çавсемех çыхнă пулсан, салтса янине пăхмасăр, вĕсем айăплă. Хаяркинсене айăплама пултараймасть суд, мĕншĕн тесен вĕсен айăпне тўсеккеннисĕр пуçне никам та çирĕплетмерĕ.

Çапла вара вăрман хуралçине тискеррĕн хĕнени, ăна йывăç çумне çыхса асаплантарни Хаяркинсемшĕн шиклемсе çўренипех иртсе кайрĕ.

Сывлăхĕ самайлансанах Якку лесничий патне кайрĕ. Михаил Петрович ăна çав тери ăшшăн кĕтсе илчĕ. Вăрманта мĕн пулни, суд епле иртни çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлчĕ. Унтан çирĕп сасăпа çапла пĕлтерчĕ:

— Пожеданов юлташ, эсир вăрман хуралĕнче тăрăшса ĕçленине лесничество пысăка хурса хаклать. Сире укçан премии памалла тунă. Ăна кассăра паянах илме пултаратăр. Вăрманпромхоз директорĕн приказĕпе Толмачева объездчик вырăнĕнчен аслă мастера куçарнă. Паянтан

пуçласа сире объездчика лартатăп. Хăвăр обхода Киргизова парăр. Вăл сирĕн объездра пулать.

Лесничий çĕнĕ объездчик аллине хыттăн чăмăртарĕ, ăнăçлă ĕçлеме сунчĕ.

Якку объездчик преми укçи çумне Сахвит арчинче пухăннине хушса чи малтан пĕр кĕсре туянчĕ. Мĕн тесен те обхода çуранах пăхса çаврăнма пулать, объездра вара ултă обход, ăна пăхма çын ури сахал, ут ури кирлĕ. Вĕçкĕн ăйăр мар, ĕç лаши — тĕреклĕ кĕсре туянса Якку питĕ тĕрĕс турĕ. Объездчика çĕр уйăрса пачĕç — ăна сухаларĕ те тырă акрĕ. Ĕшнере утă чылай çулса хатĕрлерĕ.

Икĕ-виçĕ уйăхран объездăн пысăк масштаблă карттине туса хатĕрлерĕ. Аçта санрубка тумаллине, хăш кварталсенче хырпа чăрăш, хăш кварталсенче юман лартса ӳстермеллине палăртрĕ. Лесничествăна канашлăва чĕнсен çав карттăна унта кăтартрĕ. Соснин лесничий ăна чылайччен пăхса ларчĕ. Унтан пӳрнисемпе сĕтеле тăкăртаттарса илчĕ те кулараххăн çапла каларĕ:

— Иккĕленмелли çук, тĕплĕ ӳкернĕ карттăна, анчах виçĕ кăлтăк тупăнчĕ. Хаяркинсем хăвалăха пуртан çук тунине нимĕнпе те палăртман. Вăрман хуралçине хăш хыр çумне çыхса лартнине те кăтартман. Тата ку карттă тăрăх прокуратурăпа суд бюрократĕсем ăçтарах ларнине пĕлме май килмест.

Лесничий тĕпчевлĕн пăхса илчĕ карттă ӳкерекен çине. Апăрша объездчикăн сулахай куçĕ тăлт та тăлт сикет, мăйĕ тĕлĕнче пĕр вăрăм шăнăр кăлт та кăлт туртăна-туртăна илет.

— Ну, юрĕ. Ку карттăна лесничество валли тепĕр экземпляр туса парăрччĕ. Лайăх куçарса ӳкерсен путевкăпа санаторие сиплеме ярăпăр,— вĕçлерĕ хăй сăмахне лесничий.

Каласса kаларĕ вăл, анчах хăйĕн сăмахне çийĕнчех пурнăçа кĕртеймерĕ. Чиперех шуса пыракан пурнăç кимми ӳппĕн-теппĕн çаврăнса кайрĕ. Шупашкара «тĕрĕслĕхшĕн çунакан анаткассем» çырнă çăхав пырса çитет. «Ыйтăн — пĕлеймĕн, шырăн — тупаймăн»,— çырса хунă унăн вĕçне. Çавăнтах çакса вĕлермелли такан тата пăвмалли йăлмак ӳкерсе хунă. Анонимлă çăхав Яков Миронович Пожеданов объездчика та, Михаил Петрович Соснин лесничие те халăх тăшманĕсем тесе çирĕплетет. Çакă вара вĕсене иккĕшне те тĕрмене тытса хупма май парать.

Яков Миронович тĕшмĕше ĕненекен çын мар, çапах унăн та хăйне евĕр ĕненӳсем пур иккен. Акă вăл лупас хыçне тем вăрăмăш хулăн кашта тĕрентерсе тăратнă. Ну-

майранпа тăнаран ку кашта кăмпаланса çĕрĕшме те пÿç-ланă ĕнтĕ. Мĕншĕн уссăр кăнтарса тăратмалла ăна? Çурмалла кассан — аслăк çине хума юрать. Çурса вакласан — вутă чылаях тухать. Педучилищĕрен канмалли куна яла таврăнсан Мирун çак каштана усса кÿме шут тытрĕ. Ăна хÿме çумне йăвантарчĕ те сарайне ал пăчăки илме кĕчĕ. Ывăлĕ мĕн кĕрмешнине пĕлме çав вăхăтра амăшĕ пÿртрен васкаса тухрĕ.

— Эс мĕн тăватăн кунта? Хă, ку каштана халех хăй вырăнне тăратса хур. Аçу пĕлсен ăна тĕкĕнекене ырă каламасть...

Амăшĕ каланинчен иртмерĕ Мирун, хайхи кашта каллех хăй вырăнне йышăнчĕ, тăррипе тÿпенелле тинкерчĕ. Тăрлавсăрла хăтланнă ывăл пĕр сăмах та каламарĕ. Çывăхне пырса амăшне куçĕнчен кăна пăхрĕ. Çапла ăнлантарчĕ амăшĕ:

— Ку вăл аçун телей кашти. Вăл хăй вырăнĕнче тăрсан аçун пурнăçĕ ăнса пырать, мĕн тăвас тени пурнăçа кĕрет. Ăна кам та пулин тÿнтерсен — çемье пурнăçĕ каялла каймa пуçлать. Çапла шутлать аçу.

Ун пек шутлать пулсан — шутлатăрах. Мирун ку каштана урăх пырса тĕкĕнмерĕ.

— Эх, ывăлăм, — хаш сывласа илчĕ амăшĕ, — çав аçу каштине пырса тĕкĕнме шуйттан хĕтĕртнĕ пулĕ сана. Иккек çине синкек пулать ак...

## Тĕлĕнмелле тĕлĕк

Кĕрхи тĕтреллĕ сивĕ ир Матреев кабинетне милиционерпа пĕрле пачах кĕтмен çын — Мĕтри Кĕтерукĕ пырса кĕчĕ. Лешĕ — тăван ялта ĕçтăвком секретарĕнче ĕçлени, парти райкомĕн инструкторне Маслова качча тухни. Халĕ вăл район центрĕнче библиотекарь.

Çулсем шăваççĕ, анчах Екатерина Димитриевна чиперлĕхĕ иксĕлни курăнсах каймасть-ха. Вăл çаплах кăмăллă сăн-питлĕ, тăп-тăп кĕлеткеллĕ. Çут çапталăк хĕвелсĕр, тавралăх йывăççăр, улăх-çаран чечексĕр илемлĕ теме çук. Çамрăк хĕрарăма вара çутă сăпа йăлтăркка куç илем кÿреççĕ.

— Сывлăх сунатăп, Санькка тете. Чĕнмен çĕре килме лайăх мар та, сирĕн пата чĕнсе килсен те ыррине кĕтме çук-тăр, — шăкăрин шап-шурă шăлĕсене кăтартрĕ Кĕтерук.

Санькка тетĕшĕ сĕтел хушшинчен тăчĕ, хăй хисеплекен çамрăк хĕрарăма алă пачĕ, сĕтел çумĕнчи хыçлă пукан çине

çавăтса пырса лартрĕ, милиционера пуç сулса тухма хушрĕ. Пуçлăхăн ку хĕрарăма хисепе хумаллах ĕнтĕ: пĕр енчен — тăван ялтан, тепĕр енчен — парти райкомĕнче ĕçлекенĕн мăшăрĕ.

Матреев çемçе кресло çине лайăххăн вырнаçса ларма та ĕлкĕрейменччĕ, сĕтел çинчи телефон шăнкăртатрĕ. Сулахай аллипе телефон трубкине хăлхи çывăхĕнче тытнă вăхăтра сылтăммипе хăвăрт-хăвăрт тем çырса пычĕ, çав хушăрах Кĕтерукпа та калаçма хăтланчĕ.

— Яла кайкалатăн-и? Çĕнĕ хыпарсем çук-и? Мăшăрăр Макар Максимович епле пурăнать?— килнĕ хĕрарăма ыйту хыççăн ыйту пачĕ вăл, хăй çаплах телефонпа такам вĕрентсе каланине итлерĕ.

Çук, Кĕтерук пачах кӳренмерĕ. Ăна-кăна курнăскер ăнланать эппин: пысăк пуçлăхăн пĕр пуçлă кăна мар, икĕ-виçĕ пуçлă пулмалла. Аллисен шутне ӳстерни те пăсмасть: ик аллипе — тус аллине чăмăртатăр, тепĕр ик аллипе тăшмана мăйран пăвтăр. Ларсан-ларсан Кĕтерук пурпĕр тӳсĕмлĕхне çухатрĕ, çамкаранах пенĕ пек тӳрремĕн çапла ыйтрĕ:

— Пăшатан Яккăвне мĕншĕн тытса хупнă эсир?

Ку ыйту вара Александр Михайловичшăн уяр çанталăкри аслати пекех пулчĕ.

— Кама? Яков Мироновича-и?— тăруках пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе илчĕ Матреев.— Хăçан? Кам?

— Пĕлмене персе ан ларăр, Санькка тете. Пĕтĕм ял калаçать. Ман упăшка хăлхине те кĕнĕ ĕнтĕ. Хăвăр хуптарнă — хăвăрах пĕлмене перетĕр...

Çук, Пожеданова тытса хупни çинчен Матреев чăннипех те пĕлмест иккен. Вăл Шупашкара икĕ эрнелĕхе кайнăччĕ, унтан ĕнер каçпа кăна таврăнчĕ. Мĕн çĕнни пуррине-çуккине заместителĕ пĕлтермеллеччĕ — вăл виçĕм кун Çĕрпӳ хулине кайнă та таврăнайман-ха. Матреев хăй патне следователе чĕнтерчĕ. Вăл тачка кĕлеткеллĕ вăйпитти арçын.

— Пожеданов-и? Халлĕхе КПЗра-ха,— пуçлăх ыйтăвне хуравларĕ хулăн сасăпа следователь.— Следстви пуçарнă. Иккĕленмелли çук: чăн-чăн халăх тăшманĕ вăл...

— Кам? Пожеданов-и?— ури çине сиксе тăчĕ Кĕтерук. Тĕлĕннĕрен унăн пысăк куçĕ чарăлсах кайнă.— Кам та кам халăх тăшманĕ пулма та пултарать, анчах Пожеданов — ик аллăма касса татăр — ун пек çын мар. Ăна та «халăх тăшманĕ» тусан эсир хамăр ял мар вара, Санькка тете...

Патшалăхăн шалти ĕçĕсене туса пыракансем çине Кĕ-

теруk тинкерсе пăхса илчĕ: пĕри ак, хамăр ял пулин те, тарам пысăк пуçлăх, ураланайман пăру кăна — ялта выляса-кулса пĕрле ӳснĕ юлташне тытса хупнине те пĕлмест, шăнкăравлă ачалăхĕпе чечеклĕ çамрăклăхне манса кайнă пулинех; тепри — следователĕ — пăхма çын пекех, чунĕпе вара кашкăртан та тискер ахăр.

Хай çамрăк хĕрарăм пĕрре Санькка тетĕшĕ, тепре следователь çине сиввĕн пăхса илчĕ, вăрт çаврăнчĕ те сывпуллашмасăрах тухса кайрĕ. Пуçлăхăн çамки тарăн картсемпе пĕркеленчĕ, пичĕ çине тар тумламĕсем тапса тухрĕç. Следователĕн сивлек куçĕ вара мăч та тумарĕ.

— Кам пулчĕ ку кăра хĕрарăм? Виçĕ «М» минтерĕ мар-ши?

— Çавă. Стало быть, Маслов Макар Максимович... мăшăрĕ. Эсир, çав Масловпа иксĕр, çинçе ураллă медсестра енĕпе пуçаналлă марччĕ-и çав?

Пуçлăх тĕлсĕр-йĕрсĕр тăрăхланине асăрхаманçи пулчĕ следователь. «Çав райкомрисем патне те алă çитеретĕп-ха пĕрре. Подумаешь, инструктор...»— амаланчĕ шухăш пуçĕнче. Сасăпа çапла каларĕ:

— «Красная Чувашия» хаçатăн ĕнерхи номерне вуларăр-и? Ухсай Яккăвĕ халăх тăшманĕ пулни çинчен çырнă унта. Ăна та хамăр пата чĕнмелле пулчĕ. Халĕ КПЗра икĕ Якку, пĕр Михаля. Виççĕн виççĕнех... Мĕн тесен те кичемех мар... Кăнтăрлаччен пĕр Яккăвне ăшталантарăпăр, кăнтăрларан вара — тепĕрне...

— Яков Гаврилович педучилищĕре чиперех вĕрентетчĕ-çке. «Халăхăн ылтăн кĕнекине» вĕçлеме ĕлкĕреймерĕ те пулĕ-ха, эсир вара ăна халăх тăшманĕ тума ĕлкĕрнĕ те иккен. Стало быть, ăна ытла вăрах çырнăшăн айăплатăр?

Следователь сисĕнкĕсĕртереххĕн пуçлăх пичĕ çине пăхса илчĕ те, калас сăмахĕ çав самантрах пырне ларчĕ тейĕн, тăруках шăпланчĕ. Уçăмлăнах паллă: пуçлăх такампа кăмăлсăр, ăна темскер килĕшмест. Ним калама аптранăран следователь хăй пӳлĕмне кайма ирĕк ыйтрĕ.

— Кайăрах... Ĕç кунĕ вĕçĕнче допрос протоколĕсене мана кăтартăр,— тарăхуллăн сулчĕ аллине Матреев. Унтан следователе хăех тăхтама хушрĕ.— Виççĕмĕш Михаля терĕр. Вăл кам вара?

— Халăх тăшманне Пожеданова хӳтĕлекен лесничий— Михаил Петрович Соснин...

Пожеданова допроса чĕниччен следователь пайтах вăхăт куçне сиктермесĕр сĕтел çинелле пăхса ларчĕ. Ун пирки çынсем кирек мĕн шутлаччăр, мĕскĕнленме, хăрама хăнăхман вăл, халĕ те хăрамасть, малашне те хăрас çук. Çапла,

нихăçан та, никамран та, нимĕнрен те. Çав вăхăтрах пуç-лăха юрама тăрăшмаллине те лайăх ăнланать. Халăх тăш-манĕсене тăрă шыв çине кăларассишĕн, вĕсен çулне карт-лассишĕн тем тери тăрăшать ĕнтĕ вăл, пуçлăх унпа пурпĕр кăмăлсăр. Пурпĕр тулхăрать. Эппин, хăй çинчен çăхав кĕт-сех тăтăр...

* * *

Следователь хушнипе Яккăва ик хул айĕнчен чĕнпе çыхрĕç те каштаран çакрĕç. Ятарласа тунă кашта çӳллех те мар, анчах çакнă çын ури урайне перĕнмест.

— Хăв айăпна йышăнни çинчен допрос протоколĕ çине алă пусма килĕшсен сана халех вĕçертĕç!— асăрхаттарчĕ следователь.

Пуçĕ янăрама пуçланăран Яккăва унăн сăмахĕсем таçта пĕр-ик çухрăмра каланăн илтĕнчĕç. Тепĕр самант-ран вăл тăнсăрлăхăн тĕпсĕр авăрне анса кайрĕ.

Матреев изолятора кĕрсен икĕ милиционер Пожеданов пуçĕ çине курка хыççăн курка сивĕ шыв сапнине курчĕ. Куçне уçсан Якку пĕр ялта пĕрле выляса-кулса ӳснĕ çын-на — Матри Саньккине — палларĕ те ăшĕнче тĕлĕннĕ пек, хĕпĕртенĕ пек пулчĕ, сасăпа вара нимĕн те каламарĕ. Следователь кăшт айккинелле пăрăнсанах тути çапла пă-шăлтатрĕ:

— Санькка тусăм, кунта Соснин лесничий асапланать. Пултарсан — пулăшсам...

Матреев пичĕ çинче пĕр шăнăр та сикмерĕ. Вăл тӳрех допрос тума пуçăнчĕ:

— Сирĕн хăвăр айăпа пĕр пăркаланмасăр йышăнмалла. Калăпăр, Еремеев кулака тăрă шыв çине кăларма чарса тăнине мĕншĕн тунмалла-ха?

— Çук, кулак мар Еремеев,— хĕрсе кайрĕ Пожеданов. Хăй мĕншĕн çапла шутланине йĕрки-йĕркипе каласа парчĕ.

— Сан шутпа, тимĕрçĕ лаççипе çил арманĕ тытакан, шатрун çуртра рехетленсе пурăнакан Кузнецов та кулак мар апла?

— Çапла, кулак мар.

Матреев каллех Пожеданова хăй шухăшне лăпкăн та тĕплĕн калама ирĕк парчĕ. Ялта Хаяркинсем хуçаланни çин-чен те каламасăр хăвармарĕ айăпланакан.

— Пожеданов шăпине татса парассине хăвăртлатас пулать. Ăна малалла допрос тăвассине хам çине илетĕп,— пĕлтерчĕ следователе Матреев.

Вăл сăран йĕнĕрен пистолет кăларчĕ те пĕр ал тупанĕ

çинчен тепри çине хуркаларĕ. Мĕне пĕлтерчĕ çакă — Пожеданов ăнланмарĕ. Те унпа следователе юнарĕ, те айăпланакана хӳтĕлеме хатĕррине систерчĕ.

Çак допрос хыççăн Пожеданова асаплантарасси пĕтрĕ. Чĕнпе çыхса çактаракан следователь пурпĕр ун куçĕ умĕнчен каймарĕ. Ăçтан тупăнаççĕ-ха çавăн пек чунсăр çынсем? Аслисем хушнипе тискерленеççĕ-ши? Тискер приказа пурнăçа кĕртни ху та тискере тухнине пĕлтерет-çке. Çакăн пирки пачах шутламаççĕ-ши? Юрист пулса вĕсем приказпа мар, хăйсен ирĕкĕпе ĕçлеççĕ вĕт-ха. Шалушăн, пысăка тухассишĕн. Эппин, вĕсем хăйсемшĕн тăрăшаççĕ. Çак тĕллевпе таса чунлă çынна темле пылчăкпа та варалама хатĕр.

Çак шухăшсем сирĕлччĕр тесе, Якку кĕл тума тытăнчĕ:

— Эй, тивлетсĕр раскалăм! Парсам пире чăтăмлăх, парнелесем тӳсĕмлĕх!

* * *

Вăл кунхине Патăрьелĕнчи педучилищĕре вĕренекенсемпе вĕрентекенсен пĕрлехи шавлă пухăвĕ пулчĕ. Унта Ухсай Яккăвĕ сăвăç халăх тăшманĕ пулни çинчен «Красная Чувашия» хаçатра пичетленнĕ корреспонденцие вуласа пачĕç. Училище директорĕ В. А. Соколов алă пуснă приказпа та паллаштарчĕç: халăх тăшманĕ пулса тăнă сăвăça ĕçрен хăтармалла.

— Халăха хирĕçле мĕн тунă вара вăл? — кăшкăрса ячĕç хыçалти ретрен.

Ку ыйту çине училище директорĕ хăй те уçăмлă хурав параймарĕ, хаçатра çырни çине йăвантарчĕ.

Унтан училищĕре тепĕр халăх тăшманĕн ывăлне Мирон Яковлевич Пожеданова училищĕре вĕренме чарасси пирки приказ тухрĕ. Ку вара Анаткас ачишĕн çӳлтен пĕлĕт йăтăнса аннă пекех пулчĕ. Юрать-ха Миккуль шăпи унашкал пулса тухмарĕ. Чирленĕрен çав вăхăтра килĕнче пурăнатчĕ те — ăна тĕкĕнмерĕç.

...Кӳпшек сăн-питлĕ следователь Ухсай Яккăвĕнчен ыйтса тĕпчессине лăпкăн, сасă хăпартмасăр пуçларĕ.

— Эсĕ рифмăлама пĕлни пире паллă. Çакăнпа пĕрлех тӳрĕ кăмăллă та пулсам. Хăв халăх тăшманĕ пулнине йышăн та — ĕçĕ те пĕтрĕ...

Яков Гаврилович — çирĕм улттăри вăйпитти арçын — тăруках ури çине сиксе тăчĕ. Куçĕ вутла çунать. Пичĕ хĕп-хĕрлĕ.

— Ҫам та кам мана халăх тăшманĕ тесе калама хăять, ҫавă нимĕр е кĕсел пулать,— кăтартрĕ чышкине Сăвăҫ.

— Ан ҫапкалан, лар. Эсĕ Белебей районĕнчи Слакпуҫĕнчен вĕт. Кĕҫтентин Иванов та ҫавăнтанах. Ку юрĕ-ха. Анчах эсĕ «Нарспи» авторне ҫул уҫса панă Иван Яковлевич Яковлева ҫăрана юрайман уҫă вырăнне кăна хуратăн. Тĕрĕс мар-и? «К. В. Ивановăн пичетленмен произведенийĕсем» статьяна эсĕ ҫырнă пулĕ-ҫке? Акă ик ҫул каялла «Трактор» альманахра пичетленнĕ. Вулатпăр: «Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекенсем шкулти йĕркене хирĕҫ тăрса пăлханма пуҫланă. Чăваш хушшинче миссионерла политикăна илсе пыракан И. Я. Яковлев тата унăн майлисем, чăваш хура халăхне революци юхăмĕнчен пăрса ярас текенсем, Чĕмпĕрте вĕренекенсене ӳкĕтлесе те пăхнă, анчах революци сывлăшĕпе ҫунатланнă вĕренекенсем хăйсен пăлхануллă шухăшĕсенчен пăрăнман. Миссионерсен шкулĕ чăрсăр пăлхавҫăсене пурне те шкултан хăваласа янă. Ҫавăн пирки 17 ҫулхи Кĕҫтентин Иванов та килне таврăннă». Ҫам туса хунă эсĕ чăваш халăхне ҫутта кăларассишĕн вăй хунă Яковлева? Миссионер. Урăх никам та мар.

Сăвăҫ пĕр сăмах та шарламарĕ, следователь малалла мĕн калассине кĕтрĕ.

— Иван Яковлевича таптани альманахра пулчĕ тейĕпĕр. «Чăваш хресченĕ» хаҫата тытса пăхар. М. Данилов (Чалдун) ҫырнă калавсем пирки эсĕ мĕнлерех шутлатăн-ха?

«Ҫак пĕчĕк кĕнеке Данилов ҫырулăх ăсталăхĕнче пĕрпĕр ҫивĕчрех ялкортан та аялти пусăмра тăнине кăтартать». Акă тепĕр ҫынна — паллă чăваш писательне атă кĕлли айне турăн. Николай Иванович Шелепие (Полоруссова) хисеплетĕн-и? «Чăваш хресченĕ» хаҫатрах ун пирки ҫапла ҫыратăн: «Шелепи тутар литературин «кит-пуллисене» тĕрĕсех суйласа илеймен. Ҫалавсене аван куҫарнă, поэзие вара ăнăҫлах куҫарайман...»

Сăвăҫ каллех ура ҫине сиксе тăчĕ:

— Халăх умне эпĕ ахаль сеҫ тухмастăп, пĕтĕм чуна ним юлмиччен кăларса хуратăп. Лайăххине ырлатăп, начаррине хурлатăп...

— Эккей, ĕненмеллех пулаймарĕ-и-ха? Хусанкай «Сунталра» уҫă ҫыру пичетлет. «Чăваш хресченĕ» хаҫатра эсĕ темиҫе ҫынна пĕрле ăна «тăшман пуҫ ҫĕклени» тесе хаклатăн. Ҫала-ха, Ухсай, тӳррипе, сан шутпа, чăвашсем хушшинче ырă ҫын пур-и е вуҫех ҫук-и? Хаҫат-журналта миҫе ҫынна ирсĕр уру айне турăн ĕнтĕ? Ăнланмалла-ҫке:

халăх тăшманĕ кăна çавăн пек ирсĕр хăтланма пултарать...

Сăвăç каллех ури çине сиксе тăчĕ, следователь сăмси умĕнчех чышкипе сĕтеле тăрăслаттарчĕ:

— Епле апла: эсир юлташла критикăна та тăшманла тапăну вырăнне хурасшăн-и?

Следователь хуравлас вырăнне умĕнчи кнопка çине пусрĕ. Икĕ милиционер кĕчĕç те сăвăçа самантрах йывăр пукан çумне çыхса лартрĕç, кабинетран каялла тухмарĕç.

— Ҫапла, тен, хăвна кунĕрех тытма пултарăн. Хăлăхсăрсене шуйттан вăй парасса парать, анчах турă чарать. Чĕр нуша санпа калаçасси, чăваш сăвăçĕ. Хăть пĕр ыйтăва тĕрĕс хуравла-ха: эсĕ коллективизаци майлă-и е хирĕç-и?

Хăйне çыхса лартнипе тарăхнă сăвăç пуçне те çĕклемерĕ.

— Хирĕç çав, хирĕç... Сăвăласа çырнă фельетонра «Траль» колхозри турă лаша мĕн пирки тарăхать-ха? Ҫолхозсенче конюхсем мĕн пур фуража вăрласа пĕтернĕ пирки. Эппин, колхоза кĕме те кирлĕ мар... Унта вăрă çинче вăрă...

Сăвăç пуçĕ çине ыйту хыççăн ыйту тăкăнчĕ. Ульяновскри педучилищĕрен Патăрьелĕнчине мĕн тĕллевпе куçса килтĕн? Кунта кама хăв майлă çавăрма ĕлкĕртĕн? Чăваш буржуалла националисчĕсенчен камсемпе туслă? Ҫампа-кампа вăрттăн каварлашрăн?

Сăвăç пуканĕ-мĕнĕпех тăма хăтланчĕ. Ана хăвăрт урайне çапса ӳкерчĕç. Малалла допрос айăпа йышăнса протокол çине алă пусма хистесси, çапасси те чышасси, тапасси те таптасси пулса тăчĕ. Ҫапса та амантса тăнсăрлатнă сăвăçа вилнĕ тесе çĕрле Аслă Пăла хĕррине кайса пăрахрĕç.

...Вĕренме чарнă Мирунăн Патăрьелĕнче урăх ним тумалли те çук. Тул çутăлнă-çутăлман Анаткаса тухса утма шутлать, анчах халĕ пачах ыйхă килмест. Кĕçĕр пĕр чĕптĕм те куç хупман. Аслă Пăла хĕрринчи урамра ват старикпе карчăк патĕнче хваттерте пурăнакан Мирун пӳртрен шăппăн-шăппăн тухрĕ те шупка уйăх çутинче сукмак тăрăх юхан шыв еннелле утрĕ.

Мируна пурнăç шăпи шухăшлаттарать. Халăх тăшманĕсем шырасси педагогика училищине те çитсе перĕнчĕ иккен. Мĕн тери лайăх вĕрентетчĕ чăваш чĕлхипе литература преподавателĕ Яков Гаврилович Ухсай. Вĕренме кĕмелли экзамена та вăл тыттарнăччĕ. Ытти предметсемпе экзамен билет тăрăх панăччĕ, чăваш чĕлхипе вара экзамен урăхла пулчĕ. Яков Гаврилович вĕренме кĕрекен малтан-

хи пилĕк ачана партăсем хушшине лартрĕ те кашнинех уйрăм предложени каласа ҫыртарчĕ, ăна пур енчен анализ тума хушрĕ. Мирун предложени тĕсне те, тĕп членĕсемпе кĕҫĕн членсене те тĕрĕс кăтартрĕ.

— Аҫу мĕн ятлă? Ăҫта ĕҫлет? — ыйтрĕ юлашкинчен экзаменатор.

Ашшĕ ҫинчен вăтанчăклăн каласа панă чухне икĕ Якку тĕрмере тĕл пуласси Мирун пуҫне пырса кĕме пултарайманах.

Уйăх ҫутинче малта юхан шыв йăлтăр курăнса кайрĕ. Унччен те пулмарĕ — Мирун тăпах чарăнчĕ: ҫын йынăшать пек. Хăюланса ҫывăхарсан курах кайрĕ: хăмăр кĕпепе кăвак костюм вĕҫҫĕнех арҫын тăнсăр выртать. Тинкерсе пăхсан палласа та илчĕ: ара, ку Яков Гаврилович Ухсайҫке! Ача хăвăрт хваттер хуҫи патне чупрĕ. Старикпе пĕрле сăвăҫа пӳрте йăтса кĕчĕҫ, утиялпа витсе вырттарчĕҫ. Тăна кĕрсен старик ăна лашапа Йĕпреҫе леҫрĕ, унта пуйăспа Улатăра лартса ячĕ.

— Ан пăшăрхан: мана унта мăшăрăм Надя Чебадина хирĕҫ тухса кĕтсе илет...— шантарчĕ старике сăвăҫ. Хирĕҫ тухакан пулман, ăнăҫсăр хĕрарăм инкеке лекнĕ сăвăҫпа пурăнма та килĕшмен. Палламан ҫынсем ăна чугун ҫул ҫинче аманнă тесе Гаврилов хушаматпа больницăна вырнаҫтараҫҫĕ. Хусанкая тытса хупни ҫинчен пĕлсен Ухсай палатăран тухса тарать те Иван Трофимович Григорьев художник патĕнче пытанса пурăнать. Каллех НКВД аллине лекес хăрушлăх тухса тăрсан Ухсай Мускаври тусĕсем патне тарать, лешсем вара ăна решетке шутлассинчен ҫăлса хăвараҫҫĕ-хăвараҫҫех.

* * *

Матреев ҫĕрле тĕлĕнмелле тĕлĕк курать. Канмалли куна яланхи пекех тăван ялне таврăннă, хăйпе пĕрле хăнана районăн ӗҫтăвком председательне Герасимова илсе кайнă. Килĕнче сăйланă хыҫҫăн хăнана ялти хĕрсен улахне кăтартма шутларĕ. Герасимовăн куҫĕ-пуҫĕ витĕрех мар та, каҫпа урампа пынă чухне темиҫе хутчен те такăнчĕ. Улахра каччăсем те пур иккен. Вĕсене Матреев «Казбек» пирус турттарчĕ. Хĕрсем юрă пуҫлама та хатĕрччĕ ĕнтĕ, улах пӳртне пачах кĕтмен ҫĕртен ялти чи хаяр карчăк — Краҫук аппа пычĕ кĕчĕ.

— Эс, Санькка, кунта-и? Санпа курса калаҫма ятарласа килтĕм. Эс ҫав пирĕн счетовода мĕншĕн хуптартăн? Пĕлтĕрхишĕн ĕҫ кунĕ укҫи илмеллеччĕ. Ҫав укҫана халĕ

правленире никам çырса паракан çук, а манăн çĕвĕçе тӳлес пулать.

Матреев мăк-мак турĕ, ним калама аптăрарĕ. Унтан тепĕр пирус мăкăрлантарса ячĕ те тӳрре тухма хăтланчĕ:

— Эп мар ăна... Пачах эп мар...

— Тӳррине кала: кăларатăн-и эс ăна тĕрмерен е çук-и?

— Чăнах та, намăс вĕт сире, Александр Михайлович, айăпсăр çынна хупса хутăр,— чăлт сурчĕ сурчăкне пĕр çӳллĕ те тăп-тăп каччă, Матреев пирусне туртаканскер.

— Намăс сана, Санькка,— урине тăрст тапрĕ Краçук аппа.— Эс пĕртте хăвăн аçу Михаля пек мар...

— Хăв Киремет çырми тĕлĕнчи авăра тем çӳллĕш çырантан пуç хĕрлĕ чăматтăн...— сиксе тăчĕ леш пирус мăкăрлантаракан каччă. Пирусне урайне печĕ те аттипе пусса лапчăтрĕ.

— Тӳррине кала: кăларатăн-и ăна тĕрмерен е унтах çĕртетĕн-и?— хаяррăн ыйтрĕç каччăсем пурте пĕрле.

— Якку тете ыран Анаткаса таврăнать-и е çук-и?— сехĕрлентермелле кăшкăрса ура çине пурте харăсах тăчĕç хĕрсем.

Вĕсем Санькка тетĕш çине урнă кашкăрла сиксе ӳкменни кăна. Ку калаçу мĕнпе пĕтетчĕ-ши — калама йывăр. Юрать-ха Матреев, мунчари пек тарласа кайнăскер, усал ыйхăран вăранчĕ.

* * *

Ирпе ĕçе кайсан та сехĕрлентерӳллĕ тĕлĕк Матреев куçĕ умĕнчех мĕкĕлтетрĕ. Чылайччен шухăша путса ларчĕ пуçлăх. Чăнах та, ытла кăткăс хальхи самана. Тĕпрен илсен Совет влаçне хапăл туса кĕтсе илтĕмĕр темелле. Унăн тĕп тĕллевĕсене халăх ырларĕ, ăна сыхласа хăварассишĕн сахал мар юн та тăкрĕ. Çул хыççăн çул иртсе пырать, анчах пур чухне те тĕрĕс çулпа утатпăр-ши? Пирĕн урхамахăмăр йăнăш çулпа юртмасть-ши? Мĕншĕн пĕрмай сулăнка çапăнатпăр: е сулахаялла, е сылтăмалла? Çакă, паллах, пире пурсăмăра та пăшăрхантарать те, кулянтарать те.

Эпир — Совет влаçĕн чиновникĕсем — çӳлтисем, аслисем мĕн хушнине тума хăнăхса кайрăмăр. Пĕр енчен, аслисем мĕн хушнине тăвасси хăвăн пуçна ватасси мар, ансатрах, çăмăлрах. Тепĕр енчен, аслисем пек мар, урăхларах шутлама май та çук: самантрах пуççăр тăрса юлма пулать. Эппин, тĕрĕс калаççĕ-и-ха çӳлтисем тесе шухăшласа пăхма хăйнă ан пул,

Çaплалла пурăнатпăр — шикленсе те сехĕрленсе. Тĕрĕс тăватпăр-ши? Капла ыррине кĕтме пулать-ши? Пылаккине йӳççинчен, çемçине хыттинчен уйăрса илме пĕлни кашнинех кирлĕ-çке. Лайăххине ырлама, начаррине тиркеме ашшĕ-амăшĕ ачисене мĕн пĕчĕкрен вĕрентет. Унран та ытларах пурнăçра тĕрĕслĕхе суяран уйăрса илме пĕлни кирлĕ.

Чăн ĕнтĕ, пĕр сăмахсăр пăхăнуллă пурнăç тĕрĕсмарлăха хирĕç тăрассинчен нумай хăтлăрах, рехетленсе ларма та пулать. Анчах чăнлăх хамăр тăрăшсан кăна çĕнтерет-çке. Çавăн пек пултăр тесен кашниннех хăйĕн пуçĕпе шухăшлама вĕренмелле. Çапли çапла, анчах пурнăçра ун пек пулаймасть çав.

Матреев стена çумĕнчи сехет çине пăхса илет. Кабинет хуçин пăтрашуллă та шиклентерӳллĕ шухăшĕсене сехет пачах асăрхамасть, яланхиллех лăпкăн шаккать. Хӳхĕм кĕрен арча ăшĕнчи пурнăç пĕрмаях лăпкă, кирек хăçан та тӳлек. Вăт этем те çакăн пек тулашри шăв-шав кĕрейми арчара пурăнмалла пулсанччĕ!..

Çын чĕри сехет мар çав. Хăйне хăй хисеплекен çынна кирек епле тĕрĕсмарлăх та пăшăрхантаратех. Тăван ялĕнчи Кузнецовсене кулаксен списокне кĕртни Матреева тем тери тарăхтарнăччĕ. Вĕсене çав списокран кăларассишĕн апла та, капла та тăрăшрĕ, райком секретарĕпе те калаçса пăхрĕ — усси пачах пулмарĕ. Юлашкинчен Матреев та алă сулчĕ. Халĕ авă вĕсен арманĕ авăрмасăр хăлтăртатса ларать. Шатрун çуртне ликбеза панă. Кулаксен шутне лекнĕ çемье сад варринчи хура мунчара пурăнать. Кĕркури тете арăмĕ, Васса аппа, йывăр ĕçпе вăхăтсăр хуçăлнă типшĕм хĕрарăм, мунча умĕнчи сак çинче кĕнчеле арласа ларнă май тухи-тухми сасăпа мĕскĕннĕн юрă ĕнĕрлетчĕ:

Аçтан тухрĕ-ши ай çавра çил
Улăх утине салатма?
Аçтан тухрĕ-ши ай çак саккун
Пур пурнăçа салатма?

Çемье пуçĕ Кĕркури Кузнецов, çил арманĕ лартнă чухне шăнса пăсăлнăскер, тĕтĕмлĕ-сĕрĕмлĕ мунчара вăрах пурăнаймарĕ, ывăлĕсене алă усмасăр пурăнма хушса хăварчĕ. Упăшки вилсен Васса аппан апат пачах анми пулчĕ. Темиçе эрнерен ăна та сĕрĕм кăларакан мунчаран уçă сывлăша кăларса упăшкипе юнашар çĕнĕ масарта ĕмĕрлĕх канлĕ вырăн пама тиврĕ.

Матреевăн шухăшĕ каллех малтанхи йĕр çине пырса тухать. Мĕн кирлĕ совет çыннисенчен çӳлтисене? Шухăш-

сăрлăх, тĕллевсĕрлĕх, идейăсăрлăх. Çынсен çавăн пек пахалăхсем пур çĕрте кăна пуçлăхсем лăпкă та канлĕ пурăнма пултараççĕ. Тепĕр тесен кунта тĕлĕнмелли нимĕн те çук: влаçа хăйсен аллинче тытса тăракансене историн кирек хăш тапхăрĕнче те шухăшлавçăсемпе ăсчахсем, умри тĕллевсене пурнăçа кĕртессишĕн теветкелленсе кĕрешекенсем, самана пулăмĕсене чăнлăхран пăрăнмасăр тишкерекенсем ăша вĕçтернĕ те шиклентернĕ çеç мар, хăратмаллипех хăратнă, тепĕр чухне тата сехре те хăпартнă. Эй, мĕн кăлăх пуçа ватмалли: обществăн çӳлерехри картлаçĕ çинчи пуçлăхран кĕçĕнреххи, аяларах картлаç çинчи, ăсларах пулни кама килĕштĕр ĕнтĕ...

Идеологи пирки те пуç ватма пачах кирлĕ мар. Мĕн пур халăхпа пĕрле пĕтĕм тĕнче куçĕ умĕнче социализм, коммунизм тăватпăр вĕт. Кунта нимĕн шырамалли те çук. Марксла Энгельс, Ленинпа Сталин ку çула уйăх пек те хĕвел пек çутатса тăраççĕ. Пурнăçăн кăткăс ыйтăвĕсене татса паракансем сансăрах пулнă, халĕ те пур, малашне те тупăнĕç. Эппин, шухăшна пуçунтан хăвăртрах кăларса пер, хуйху-суйхуна чĕрӳнтен татăклăн сирсе яр, шырама, тăрмашма вуçех кирлĕ мар. Паллă-çке: саншăн çулпуç хăй шухăшлать.

Анчах çӳлтисене çеç шанса пĕр вĕçĕмех шухăшламасăр-уямасăр, хакламасăр-тиркешмесĕр пурăнсан — мĕн патне пырса тухăпăр? Ĕçшĕн хыпса çунакан Кузнецовсен пурлăхне туртса илтĕмĕр тейĕпĕр. Ан тив: çын юнне ĕмекен эрешменсемех пулчăр. Усси вара катăк пуртă тăршшĕ. Арманĕ авăрма пăрахрĕ, тимĕрçĕ лаççи хупăнчĕ. Тяпукĕ, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Кĕркурин чи хастар аслă ывăлĕ, ялтан тухса кайрĕ. Пĕр-ик эрне каялла Матреев ăна Шупашкарта пĕр сумлă организацин гаражĕнче курсаччĕ — инçе çула ăсатнă май пĕр шофера тĕтĕрлентеретчĕ: «Мотри, иртнинчи пек, мотора вĕрилентерсе ан яр. Тормоза та упрас пулать».

Георгийĕ çамрăк-ха, Мишине вара ашшĕ тунă тимĕрçĕ лаççинче мĕншĕн ĕçлеттерес мар? Чунĕ унăн та ĕçшĕн çунать пулĕ, сунтал умĕнче ĕçлеме хăнăхнă алли кĕçĕтсех тăрать ĕнтĕ.

Çук, тăрлавсăрла пурăнма юрамастех. Ав Мирун Яккăвĕ Кузнецовсене кулаксен списокĕнчен кăларас тесе тĕрĕсех тăрăшнăччĕ, анчах ĕç тухмарĕ унăн. Халь хăй тĕрмере ларать. Ачаран пĕрле ӳснĕ çын. Çырлана-кăмпана пĕрле çӳренĕ.

Хăйĕнчен икĕ-виçĕ çул кĕçĕнрех арçын ачасен эшкерне Кĕркури Кузнецов ертсе çӳретчĕ. Шăнкăртамăн хĕвеле

хирĕçри çеремлĕ сĕвек çыранĕнче çĕр çырли ытти çĕртинчен маларах пиçетчĕ. Çавăнта ертсе каятчĕ Кĕркури Русак кассинчи юха сăмсаллă пĕчĕкçеççĕ арçын ачасене. Вăл ыттисенчен икĕ-виçĕ çул аслăрахчĕ те, пурте ун куçĕнчен пăхатчĕç, пурте ăна итлетчĕç.

— Ертсе килнĕшĕн малтанхи икĕ çырли мана тивĕçлĕ,— хистесех ыйтатчĕ Кĕркури кашни ачаранах. Ху тупнă тутлă çырлана алăран вĕçертес килмест те — анчах мĕн тăвăн, итлесех пулать, унсăрăн тепринче ертӳçĕ ушкăнне лекеймесĕр юлатăн. Хырла хĕррине çĕмĕрт е мăйăр татма кайсан та, кăмпана çӳренĕ чухне те çаплах тăватчĕ Кĕркури: кашнинех пирвайхи ывăç хуп-хура çĕмĕртпе е сапсарă мăйăрпа, малтанхи икĕ паха кăмпапа куланай тӳлеттеретчĕ.

Çук, куланай пурте тӳленĕ тени тĕрĕсех мар. Матри Санькки пĕр çырла та татса паман ертӳçĕне, кăмпине те пĕтĕмпех хăй кунтăкне хунă. Ачи ытла та пăравуртан тата вăр-вартан унран ыйтма хăяйман пулмалла Кĕркури.

Ӳсерех парсан Русак касси ачисем Шăнкăртамăн Киремет çырминчен анатарахри авăрне шыва кĕме çӳрерĕç. Шыв унта самаях тарăнччĕ, ишсе çӳремелĕх те пурччĕ. Çуллахи шăрăх кунсенче кунта ишсе-чăмса мĕн тери савăнман пуль! Санькка авăрăн пĕр вĕçĕнче чăмса тепĕр вĕçнех тухма пултаратчĕ. Шывра чăмпăлтатсан-чăмпăлтатсан, ашкăнсан-ашкăнсан ачасем вăрман енчи çӳллĕ çырана тухатчĕç. Çыран хĕрринех хăвăрт чупса пыратчĕç те тӳп-тӳрĕ кĕлеткепе çӳлтенех шыва сикетчĕç. Çав çӳллĕшĕнчен шыва пуç хĕрлĕ чăмаканни — кам тетĕр?— хăрушлăх мĕнне пĕлмен Матри Санькkиччĕ. Ун хыççăн пуç хĕрлĕ Куçма сикетчĕ. Кĕркури те шыва çӳллĕ çырантан сикме хăраса тăман, анчах пуç хĕрлĕ мар, тӳрĕ кĕлеткепе кăна. Якку вара тантăшĕсен теветкел хăтланăвĕсене ырласа та мухтаса тăратчĕ:

— Вăт ку ачасем! Вăт ку маттурсем!

Хăй вара никам та инкеке лекменнине курса чи кайран сикетчĕ. Курнă вăл: кунта хăрушлăх çук мар. Çыранпа шыв хушши икĕ чалăша яхăн. Тивĕçлĕ сулăмпа сикмесен шыва мар, çыран хĕрринчи тăм çине те лаплатма пулать.

Астăвать-ха Матреев: граждан вăрçинчен аманса таврăнсан Якку чухăнсен комитечĕ пуçĕнче тăчĕ, каярахпа Ваççук Лявăçкипе пĕрле ялта пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркелеме пикенчĕ. Унăн председателĕ пулма пĕрремĕш пухурах Палля Микулине — Николай Арланова суйларĕç. Районтан килни хăй хушрĕ. Шăнкăрч йăви пек пĕчĕккĕ

пӳрчӗ кӗç-вӗç тӳнесле тайăлнăран-ши? Ахăртнех, çавăнпа. Урăх енпе уйрăмлăх курăнмастчӗ унăн. Паллах, Арланов хушамат ăçтан тухнине шутламасан. Кӳршӗ-аршипе вăл арлан пекех хăрлатса пурăнатчӗ. Тен, çакăншăн çеç те мар, лутакаран çавнашкал ята тивӗçлӗ пулнă. Çав кунсенче хăрăлти Микула саççимех чирлесе кайрӗ, ăшă кăмака çинех хăпарса выртрӗ те ури çине урăх тăраймарӗ. Пӗрлешӳллӗ хуçалăх вара ура çине тăчӗ-тăчех. Чăн ӗнтӗ, çакăншăн ял Канаш председательне Матреева, правлени счетоводне Пожеданова сахал мар вăй хума тиврӗ.

* * *

Допрос темиçе эрнене-уйăха пычӗ. Пожедановпа Соснин куппа çӗр шутне те çухатрӗç ӗнтӗ. Çапах тем тăршшӗ вăрăм вӗренӗн те вӗçӗ тухатех. Лесничество çыннисен кирпӗч шутласси те кӗтмен çӗртен вӗçленчӗ. Иккӗшне те тӗрмерен ирӗке кăларчӗç. Вӗсене суд умне тăратма айăп тупăнмарӗ-ши е тупма тăрăшмарӗç-и — татăклăн калама йывăр.

...Çын ăшне тавăрса пăхма кӗрек çанни мар теççӗ чăвашсем. Ку чăнах та çапла. Ют çын чунӗ — тӗпсӗр тӗттӗмлӗх, уйрăмах патшалăх хӗсметӗнче ӗçлекен çыннăн. Унта мӗн пуррине ансатах пӗлеймӗн. Пӗр те пӗр шутласан Пожедановпа Соснина тӗрмерен кăларса яни Матреевшăн алăка хуллен уçса хупни çеç пулман. Ун чухне вăл пӳрнине çеç мар, пуçне те хӗстерсе хума пултарнă. Анланмалла: ача чухнехи тусӗшӗн теветкелленнӗ ӗнтӗ вăл.

Хамăрьял хутне кӗни Матреева хăйне хăрушлăх умне кăларса тăратрӗ. Çакă тепӗр кунах паллă пулчӗ. Парти райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Хромов, сарлака янахлă çатăркка, ăна телефонпа хăй патне пыма чӗнчӗ. Паллах ӗнтӗ, ку ырра мар. Ытти чухне Хромов НКВД уйрăмне пӗр-пӗр ыйтăва сӳтсе явма канашлама хăй килекенччӗ, халӗ акă райкома пыма йыхравлать. «Пожедановпа Соснин пирки пулсан мӗн те пулин суйма тивет»,— шут тытрӗ Матреев райкомалла утнă май.

Хромов, чăнах та, çав ыйтупа пăскăртма тытăнчӗ.

— Эсир Пожеданова кăларса янă теççӗ. Тӗрӗсех-и? Мӗнле сăлтавпа? «Красная Чувашия» ун пирки тӗрӗсех çырнăччӗ-çке. Халăх тăшманӗ пулсан та хамăрьяла çăласах терӗн апла?

Матреевăн çутă сăнӗ çумăр умӗнхи çанталăк пек палăрмаллах тӗксӗмленчӗ, тӗттӗмленчӗ. Анчах ку пӗр-ик саманта кăна пычӗ, хăйне часах алла илчӗ вăл.

— Пожеданов пирки йăнăшнă эсир, Хромов юлташ,— куçран пăхре Матреев пĕрремĕш секретаре.— Шупашкартан Калашников хăй шăнкăравларĕ: сире те, мана та ĕнселерĕ. Çукран пур тăватăр тесе ятлаçрĕ...

Хромов çийĕнчех Калашниковпа çыхăнасшăн пулчĕ, анчах ĕç тухмарĕ унăн. Пĕлет Матреев: Калашников Шупашкарта çук, пĕр уйăх канма Гагра хулине тухса кайнă. Çавăнпа хăюллăн ун çине йăвантарчĕ те ĕнтĕ Матреев.

Пайтах вăхăт иртсен Хромов «хамăрьяла» тепре аса илчĕ. Ун чухне Пожеданов Шăмăршă вăрманпромхозĕнче ĕçлетчĕ ĕнтĕ. Халăх тăшманĕ урăх района куçнăран хальхинче алă кăна сулчĕ. Çитменнине тата ку вăхăт тĕлне Матреевпа хирĕçсе кăмăлĕ те сĕврĕлнĕччĕ ĕнтĕ унăн.

* * *

Ирĕке тухсан Соснин тӳрех хăй ĕçленĕ лесничествăна çул тытрĕ. Унти хваттерте ăна хăйĕн çемйи кĕтет. Пăшатан Яккăвĕ çула кăнтăрла сулăнсан тухрĕ. Пуçĕнче йывăр шухăшсем капланнăран-и, тĕрмере çинĕ-çимен ларса вăйĕхалĕ иксĕлнĕрен-и, йывăр шăпа халтан янăран-и, вăл лăппи-лаппи пускаласа кăна утрĕ. Çул хыттинчен пăрăнмасан хуллен те пулин малаллах тапаланатăн. Ура сĕлкĕше лексен кĕлетке сулăнсах каять. Якку вара хăйне хăй ятласа илет.

— Вăт пăру! Çын пек утма та пултараймастăн ĕнтĕ...

Сăран atăллă урине туртса кăларнă шăтăка çийĕнчех çурхи шыв тулать. Юрать-ха атти тиркемеллех мар: шыв ямасть, анчах урана пурпĕр сулхăн çапнă.

Çуркунне çитни, çут çанталăк чĕрĕлсе çĕнелни пур çĕрте те сисĕнет. Тавралăх кунсерен улшăнса пырать. Юр çул хыттинче, сăртсем хыçĕнчи тайлăмсенче тата чăрăшсен йĕплĕ турачĕсем хӳттинче кăна тăрса юлнă. Сывлăш уйрăмах таса та уçă.

Каç енне сулăнсан çул хытти те, çуна йĕрĕсем тĕлĕнчи сĕлкĕш юр та чĕлтĕр пăрпа витĕнчĕç.

«Çăттăл-çаттăл! Çăттăл-çаттăл!»— пырса кĕчĕ Якку хăлхине çурма çула çитсен хир варринче темле шиклентерӳллĕ сасă. Вăл пуçне çĕклесе пăхрĕ те хăй мĕн курнине хăй ĕненмерĕ: инçех те мар, ик çĕр—виç çĕр хăлаçра, çул еннелле пилĕк пысăк йытă лăпăстатса пырать. Малти иккĕшĕ — самаях пысăккисем — хура тата сăрă, ыттисем пурте сăрă. Çул çинчи халран кайнă çын малтисене пачах кăсăклантармасть темелле, кайрисем виççĕшĕ те пуçĕсене Якку еннелле пăрнă. Хăйсем пурте тукмак хӳреллĕ.

«Ара, кашкăрсем вĕт кусем!» — тинех тавçăрса илчĕ Якку. Вăл тăпах чарăнчĕ. Ун çулĕ урлă каçса кашкăрсем çултан инçех те мар карталанса ларчĕç. Тукмак хӳресем, ахăртнех, Пăла тăрăхĕнчи ялсенче пĕрер выльăх туртса çурнă та тутă хырăмпа вăрмана хăйсен йăвине таврăнаççĕ пулмалла. Анчах вĕсем мĕншĕн чарăнчĕç-ха?

Çурма çултан каялла таврăнма шутламарĕ Якку. Çанçурăмĕ сӳленине пăхмасăр малалла тапранчĕ. Вăл кашкăрсем ларакан вырăнпа танлашсан сăрри, хĕрринче лараканни, тăрса çын еннелле темиçе утăм турĕ, анчах ăна хури малти хулĕнчен çыртса хăвăрт хăй выраннех лартрĕ. Якку кашкăрсене тинех палласа илчĕ.

— Эй, Хурайкка, Сăркка, сирĕн çамрăк ăрăвăр! Салам сире пурсăра та! Салам! — хаваслăн кăшкăрса ячĕ вăл.— Пĕлетĕп: эсир мана тĕкĕнес çук!

Кашкăрсем çынна нимĕн те хуравламарĕç, пĕр сас-чĕв те кăлармарĕç. Якку пĕр шиксĕр малалла утрĕ. «Ирĕклĕ чунсем эсир: шут тытрăр — пĕр-пĕр аякри яла çул тытатăр. Хырăмăрсене тăрантрăр — каялла таврăнатăр»,— ăмсанчĕ тискер чĕр чунсен шăпине вăл. Тепĕр минутранах ун пуçне урăх шухăшсем пырса кĕчĕç: «Ирĕкĕ-мĕнĕ... Выçă хырăм хăвалать-ха вĕсене. Ялта сăрă вăр-хураха сенĕкпуртă кĕтет, вăрманта ун чĕрине сунарçă пули халь-халь тирĕнме пултарать. Ирĕклĕх çук сирĕн те, кашкăрсем».

Хăйĕн шăпи пур çĕртен те хӳтерекен кашкăрсен шăпине пĕрешкелех туйăнчĕ Яккăва. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха сăтăр тăвас тесе унăн пĕртен-пĕр ăратлă ăйăрне счетовод юриех вĕлерни çинчен «Красная Чувашия» хаçатра кам çырса кăларнă-ха? «Тĕрĕслĕхшĕн çунакан анаткассем». Камсем вĕсем? Пĕлмесĕр калани çылăха кĕни çеç. Анчах Нина Агафоновна мĕншĕн Яккăва счетоводран кăларасшăн çав териех хыпса çунчĕ-ха? Мĕншĕн тесен колхоз счетоводне хăйĕн упăшкине лартма шут тытнă. Чăн ĕнтĕ, «ни йĕтĕн, ни кантăр» шут ĕçне упăте вулама пĕлнĕ чухлĕ те ăнкармасть, ун вырăнне киномеханикра нумай çӳренĕ, халăха тем тĕрлĕ фильм та кăтартнă...

Райкомрисемпе НКВД уйрăмĕнчисем Пожеданов айăпне анлăнрах, масштаблăрах пăхса хакласшăн пулчĕç: уйрăм хуçалăхпа пурăнакан çын ывăлне ял Канаш секретарьне лартни политикăлла суккăрлăх пулать иккен. Унпа пĕрле район центрне ĕçпе кайни сăтăрла ĕçсене пĕрле тумашкăн каварлашма кирлĕ пулнă-мĕн. Ăратлă ăйăра счетоводпа секретарь иккĕш каварлашса кăнтнă. Хромовпа Маслов тата вĕсен хӳрешкисем татах та тарăнрах пăхма пĕлеççĕ иккен. Халăхшăн, унăн ырлăхĕшĕн тунă пархатар-

лă ĕçе тепĕр май çаварса хураççĕ те мĕлке енĕпе кăтартаççĕ. Çапла майпа ырă çынранах халăх тăшманĕ туса хураççĕ. Хăвалăха касса тĕп тума чарни мĕн пулать? Мĕн пултăр: çут çанталăк ырлăхне хўтĕлени мар, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме чăрмантарни ку. Çынсене вăрманти уçланкăсене йывăç лартма илсе тухни тата? Иккĕленмелли çук: ниме юрăхсăр хăтлану. Вăрман пирĕн ĕмĕре унсăр та çитет. Кунсăр пуçне çынсене колхоз производствинче вăй хурассинчен пăрма пачах юрамасть.

Йывăр шухăша путнă Якку хир варринче курнă кашкăрсем хăйне хисеплĕ хурал пек ăсатса янине яла çитиччен те асăрхамарĕ. Ерми Лявкки лартнă арман тĕлĕнче çул варринех çур ункă туса ларчĕç те аран утакан çынна сасчў кăлармасăр, тимлĕн пăхса ăсатрĕç. Çамрăк сăрккасем хăй инкекрен хăтарнă çурасем-ши? Нивушлĕ кашкăрсем шухăшлама пĕлеççĕ? Ун пирки мĕн те пулин çирĕплетсе калама йывăр, анчах январсен ăс-хакăлĕнче хăйсем пурнăçра курнă ўкерчĕксем ку е леш лару-тăрура çĕнĕрен туха-туха тăраççĕ пулмалла. Çапла шутларĕ Якку хăйне кашкăрсем ăсатса яни пирки. Çакăн çинчен кама та пулин каласа пар — пĕр сăмахне те ĕненмест. Якку вара кунашкаллине икĕ хут курчĕ ĕнтĕ.

Мĕншĕн-ха ку çемьери кашкăрсем пурте сăрă, аçи вара тĕм хура? Пĕлекенсем ăна хуçи пăрахнă йытă тесе шутлаççĕ. Çын килĕнче пурăннăскер питĕ тавçăруллă, çемйине инкек-синкекрен епле сыхламаллине те пушкарать. Анчах хўри мĕншĕн йыттăнни пек кукăр мар, кашкăрăнни пекех усăк-ши? Мур пĕлет-и: тен, Хурайкка кашкăр йăхĕнчен... «Хăш йăхранни мур патне! Хăйсене ырă тăвакана асра тытма пултарни тĕлĕнтерет... Пархатарлă чунсем. Хăшпĕр çын çак кашкăрсенчен нумай хăрушрах...» — шухăш хыççăн шухăш çуралчĕ Якку пуçĕнче.

Кур-ха, вăл тĕрмере ларнă хушăра Анаткас нимĕн чухлĕ те улшăнман. Чиркĕвĕн сăрри кайма пуçланă тăрри çаплах пĕлĕтелле кармашать. Ялăн икĕ вăрăм урамĕ яланхиллех малти вăрман еннелле тăсăлать. Шăнкăртам леш енчи хыр вăрманĕ Анаткасăн хĕвел анăçĕнчи вĕçĕнче яланхиллех ялтан тарарах тăрать, тепĕр вĕçĕнче вара, савса тăран каччăпа хĕр пекех, юхан шыв çыранĕ çумне йăпшăннă. Мĕн пурри пĕтĕмпех халиччен хи пек. Темиçе эрнепе уйăх тăван яла курмасăр тўсрĕ Якку. Хăçан та пулин таврăнасса та ĕненми пулнăччĕ ĕнтĕ. Таврăнма пўрнĕ иккен. Çўлти урампа Закускинсен тĕлне çитсен вĕсен кил-çуртне паллаймарĕ. Крыльцине çĕнетнĕ. Çи виттийĕ тăрринче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Алăк тăрринчи хăма çы-

рăвне те çĕнетнĕ. ШКМ—Колхоз çамрăкĕсен шкулĕ тесе çырнăччĕ ун çине. Халĕ ялав тĕсĕпех урăхла çырса хунă: «НСШ. Тулли мар вăтам шкул». Кулак туса, Çĕпĕре ăсатнă Микуç çурчĕпе унăн çăм тапакан арманĕ вырăнĕнче ишĕлнĕ кăмакапа кăмрăк купи кăна тăрса юлнă. Ку вăл Микуçăн аслă ывăлĕ темиçе кунлăха килсе кайнă хыççăн пулнă. «Вăт ял!— терĕ Якку.— Вăт улшăнман те сана!»

Килĕнче арăмĕпе калаçсан ял пурнăçĕ ӳппĕн-теппĕн çаврăнса кайнинчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ. Шкулăн çĕнĕ директорне района чĕнеççĕ те, вăл утă купи çинчи йĕп пекех пăч çухалать. Халĕ шкулта вырăс чĕлхи вĕрентме çын тупаймаççĕ. Грамматикăпа кӳртĕм сăмахсене вĕреннĕ чухне директор доска çине пĕр пуплев çыртарнă: «Эппин, ялти хресченсем пурте тенĕ пекех колхоза кĕнĕ». Ку пуплеве тишкернĕ хыççăн директор ачасене хăйсене тĕслĕхсем шыраттарнă. «Ман шутпа, ун пек хăтланма юрамасть»,— тенĕ пĕр ачи. Запятой ăçта лартасси пирки тавлашса кайнăран ку предложение те доска çине çырма тивнĕ. Ачасем урокра запятой ыйтăвне чиперех татса панă, районтисем вара директор умне урăхла ыйту лартнă: «Епле апла, хресченсем колхоза кĕни кирлĕ мар хăтлану эппин?»

— Епле апла? Кам ун пек шутлать?— ыйтăва хирĕç ыйту панă директор.

— Шкулта доска çине ху çапла çыртарнă...— сĕтеле тăрст çапнă районтисем. Кӳртĕм сăмахсене урокра епле вĕренни çинчен çут ĕç пайне Анаткасри шкул ачин ашшĕ— «тĕрĕслĕхшĕн çунакан коммунист»— çырса пĕлтернĕ. Ак мĕнле пулса тăнă иккен халăх тăшманĕ хайхи директор.

* * *

Чун чул мар теççĕ. Тĕрĕсех иккен. Ӳт-пӳ ыратнине чăтма йывăр. Чун ыратнине чăтма унран та йывăртарах. Тĕрмере чухне те, тĕрмерен таврăнсан та Пожеданов чунĕ чулпа хĕснĕ пек чăтайми ыратрĕ. Хăйне ним айăп çук çĕртен нехек кăтартнăран ниçта лара-тăра пĕлмерĕ, нимĕнле канлĕх тупаймарĕ. Чун канăçне Якку лупас айĕнче ик кустăрмаллă таратайка ăсталарĕ. Кĕтмен çĕртен ун килне вăрман хуралçи Киргизов килсе кĕчĕ, Яккăвăн ыран ирех вăрманпромхоз дирекцине пырса çитмеллине пĕлтерчĕ.

Вăрманпромхоза Якку хăйпе пĕрле çĕнĕ таратайка çине кĕçĕн ывăлне — шкул çулне çитмен Пăнчука — лартса кайрĕ. Хăнăхнă вăрман çулĕпе кĕсре çăрхалать те çăрхалать. Хуçи тĕрмере чухне вăл хăмласа панă та, халĕ

тихи — Чиперкке — амăшĕнчен шит те юлмасть. Çул çинче чарăнса тăмалли тупăнсанах Чиперкке турта айĕнчен амăшĕн чĕччи патне пуçне чикет. Çанталăк шăрăх пулсан та кĕсрепе тихине шăна-пăван питех аптăратмарĕ.

Пожеданов вăрманпромхоза вăхăтра çитрĕ, директор патне Пăнчука та илсе кĕчĕ. Тĕлĕнсех кайрĕ ача кабинета кĕрсен. Çакăн тăршшĕ вăрăм сĕтел те пулать иккен. Çитменнине тата акăш-макăш пысăк мăлатук евĕрлĕ. Ăна симĕс пустав çиттипе витнĕ. Пĕр енче вунă пукан, тепĕр енче те вунă пукан. Пăнчук кĕçех шутласа та кăларчĕ: ку сĕтел хушшине харăсах çирĕм çын ларма пултарать. Çакна çеç пĕлеймерĕ: çынсем пысăк йышпа кунта мĕншĕн пуçтарăнаççĕ-ши — апата-и е урăх тĕллевпе? Нивушлĕ директор çемйи çавăн пек пысăк?

Вăрманпромхоз директорĕ Леснов хастарлă объездчик пулнă Пожеданова сĕтел хушшинчен тухса алă пачĕ. Сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлсен тепĕр еннелле пăхса ларакан çын çурăмĕ çинелле пӳрнипе тĕллерĕ.

— Паллашăр: ку манăн чи шанчăклă заместитель.

Çурăмпа ларакан Соснин лесничие Пожеданов кабинета кĕрсенех палларĕ, ăна татах та пысăкрах ĕç шанса панине директор сăмахĕнчен пĕлчĕ. Вăл Михаил Петровича пысăкрах вырăна тухнă ятпа чун-чĕререн саламласа ăшă сăмахсем каласшăнччĕ. Лешĕ хăй вăртах сиксе тăчĕ те çав самантрах Пожеданов еннелле ыткăнчĕ. Пĕрле ĕçленĕ икĕ çын пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç, ним шарламасăр савăнăçлăн та телейлĕн пĕр-пĕрне куçран пăхса тăчĕç. Мĕнех калăн: пĕр шухăшлă, таса чĕреллĕ çынсем пĕрнепĕри сăмахсăрах ăнланаççĕ.

— Михаил Петровича пысăк хисепе хунăшăн, директор юлташ, сире чун-чĕререн тав тума ирĕк парăрччĕ. Ман шутпа, вăрман хуçалăхĕ ĕçне ун пек лайăх пĕлекене тупма ансат мар. Унтан та ытларах чăн-чăн çын вăл, чăн-чăн совет çынни.

Хăйĕн лесничийĕ çинчен Пожеданов мĕн каланине директор ăшшăн кулса итлерĕ, унтан чеереххĕн çапла ыйтрĕ:

— Эсир вăн, Яков Миронович, хăвăрăн пуçлăхăр пирки шутлатăр, уншăн савăнатăр. Пирĕн халь эсир хăвăр пирки мĕн шутланине пĕлесчĕ.

— Тĕрĕссипе каласан эпĕ ун пирки çул тăршшĕпех шутласа килтĕм,— пытарса тăмарĕ Пожеданов.— Ман валли пĕр-пĕр обход тупăнмĕ-ши сирĕн?

— Обход-и е объезд-и? Тен, сире лесничество кирлĕ?

Пожеданов директор çине ыйтуллăн пăхса илчĕ.

— Эсир шӳтлетĕр пулĕ?

— Ҫашни шӳтрех тӗрӗслӗх тӳпи пур. Паллах, эсир лесничествӑсӑрах пурӑнма пултаратӑр, пире акӑ лесничи питӗ кирлӗ. Соснин юлташа урӑх ӗҫ шанса патӑмӑрҫке-ха.

Пожеданов халӗ директор ҫине куҫранах тӗллесе пӑхрӗ. Пӗр вӑхӑт шухӑшласан тӳрех ҫапла персе ячӗ:

— Халӑх тӑшманӗсем валли ӑшӑ йӑва ҫавӑрать тесе хӑвӑра айӑпламӗҫ-и?

Каласӑва Соснин хутшӑнчӗ:

— Ун пирки шухӑшласа пӑхрӑмӑр. Питех хӗсме пуҫласан виҫҫӗмӗр те Куйбышев облаҫне тӗп вӑрманпромхоза куҫса кайӑпӑр. Николай Михайловича унта куҫма йыхравлаҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан хӑвӑр килӗшни кирлӗ. Ыранах лесничи ӗҫне пуҫӑнмалла пулать.

— НКВД уйрӑмӗнчен Матреев шӑнкӑравларӗ. Сирӗн пирки иккӗленсе тӑмалла мар терӗ,— йӑл кулчӗ директор.

Пожеданова урӑх чун кӗчӗ темелле. Пит ҫӑмартисем хӗрелсе кайрӗҫ. Куҫӗ ялкӑшса ҫунать. Вӑл хӑй килӗшнине пилӗк таран тайӑлса ҫирӗп сасӑпа пӗлтерчӗ.

— Акӑ мӗн, юлташсем,— ӑшшӑн каларӗ Николай Михайлович,— ҫакна асра тытӑр: хӑватлӑ ӑмӑрткайӑк та тепӗр чухне нишлӗ чӑхран аяларах ӳкет, анчах чӑхха ӑмӑрткайӑк ҫӳллӗшне пӗрре хӑпарса пӑхма та пӳрмен. Ӳкнӗ ӑмӑрткайӑка ҫунат сарма пулӑшассине хамӑн тивӗҫӗм тесе шутлатӑп.

Чун чӑнах та чул мар. Усал сӑмах ӑна ыраттарать, ырӑ сӑмах савӑнтарать. Николай Михайловичӑн ҫӗнӗ лесничи ывӑлӗ валли те ӑшӑ кӑмӑл тупӑнчӗ. Сӗтел ещӗкӗнчен кӑларса ӑна сӑрӑ кӑранташӗсен коробкине тыттарчӗ.

— Аҫу пек, вӑрман карттисем тума вӗрен. Лесничие тух!

* * *

Вӑрманпромхоз дирекцийӗнчи калаҫу ҫинчен Анаткасри Хаяркинсем пӗлмесӗрех юлчӗҫ, унсӑрӑн кӗвӗҫнипе те тарӑхнипе хӑмпӑ пек ҫурӑлсах кайнӑ пулӗччӗҫ. Тепӗр тесен мӗн чухлӗ явсан та вӗренӗн вӗҫӗ тухатех. Никандр Хаяркин счетоводра ларассин вӗҫне вӑрах кӗтмелле пулмарӗ.

— Вунӑ ҫул ытла ларнӑ кунта Мирун Яккӑвӗ, вуннӑн майне-шывне тупмалла мар арпаштарнӑ,— ҫапла каласа пуҫӑнчӗ вӑл счетовод ӗҫне. Халиччене киномеханикре ҫӳремеллеччӗ унӑн. Юрать-ха Хаяркина Хаяркинсем пулӑшрӗҫ: Пожеданова кӑларса ҫапрӗҫ те ун вырӑнне лартрӗҫ. Шут ӗҫӗпе нихӑҫан та ҫыхӑнса курман ҫын колхоз правле-

нийӗнчи тупӑшпа тӑкакӑн хулӑн кӗнекисен вӑрттӑнлӑхне ӑнкарса ҫитерне-ши е ҫук-ши — татса калама йывӑр, хӑй пысӑк тупӑш илмелли ҫула вара хӑвӑрт шыраса тупнӑ.

Горький хулинчен пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх валли полуторка туянса килсен малтан тӳлени ҫитменнипе правлени тата икӗ пин тенкӗ хушса илни паллӑ пулчӗ. Ҫакна Ҫтеттин Воробьев тупса палӑртрӗ. Больницӑран таврӑнсан вӑл Канашра шофера вӗренсе тухрӗ. Горькинчен ҫӗнӗ грузовик рульне вӑл тытса килчӗ. Машина хакне те лайӑх пӗлет. Никандр Хаяркин вара темшӗн-ҫке патшалӑх хакӗнчен нумай ытларах тӳлет. Документ ҫине чиперех алӑ пуснӑ, пичет те ҫапнӑ, ҫапах иккӗлентерет. Ҫакӑн ҫинчен вӑл Пӑшатан Яккӑвне систерчӗ. Якку документа ревизи комисси председателӗпе пӗрле кайса пӑхрӗ.

— Тӑхта, ку пичетӗн саспаллийӗсем ытла чалӑш-чӗлӗш-ҫке. Картошкӑран тунӑ пичет мар-ши? — тӗлӗнчӗ Пӑшатан Яккӑвӗ. Прокуратурӑран тӗрӗслеме килнӗ тӗле ку документ тупӑнмалла мар ҫухални вара ял ҫыннисене нурне те тӗлӗнтерчӗ.

— Пулман правленире ун пек документ...— аллисене сарчӗ Никандр Хаяркин. Ревкомисси колхоз кассинче икӗ пин тенкӗ ҫитменнине палӑртсан счетовод пӗлмене печӗ. Ҫав кунсенче «Хӗлхем» стена хаҫачӗн черетлӗ номерӗнче ҫапла ҫырса кӑларчӗҫ:

Хаяркин Никандр —
Ни йӗтӗн, ни кантӑр.
Тытрӑмӑр ӑна, вӑрра,
Хӑтӑлаймӗ, ан хӑра.

Дебет, кредит — хут ҫинче,
Сальдо юлать кӗсйинче.
Полуторка туянна —
Шӑп икӗ пин ҫаклатнӑ.

Никандрӑн колхоз кассине икӗ пин тенкӗ хывмаллах пулчӗ. Шут ӗҫне «арпаштаракан» Мирун Яккӑвӗ счетоводра вунӑ ҫул ларнӑ, хӑй валли тупӑш шыракан Хаяркин Никандр ку вырӑнта вунӑ уйӑх та лараймарӗ. Ҫак вӑхӑт тӗлне Лӑриван Русаков та колхоза кӗчӗ. Ял Канаш секретарӗ пулнӑ Аркадий Русакова колхоз счетоводне куҫарчӗҫ.

Партячейка пухӑвӗ Хаяркин Никандра ҫирӗп выговор пама, счетоводран киномеханика куҫарма йышӑнчӗ. РКП(б) райкомӗн бюрсвӗ ӑна колхоз мулне ҫаратас ҫул ҫине тӑнӑшӑн, шут ӗҫне япӑхтарса янӑшӑн партирен кӑларчӗ. Хӑй чӑнах та ни кантӑр, ни йӗтӗн пулнине туйса илчӗ-ши, урӑх сӑлтавпа-ши, Хаяркинӑн пуҫӗ ҫаврӑнсах

кайрĕ. Бюро хыççăн район центрĕнчи вăртахĕ патĕнче вăл чылайччен кулянса ларчĕ. Ассăн сывламассерен черкке ўплентерчĕ.

Килне таврăнма çула тĕттĕм пулсан тин тухрĕ. Атăл кĕсрене чăпăркка кирлĕ мар, вăл сарлакан пусса юртать, çавăнпа ăна çак ята панă. Никандр лашине тата хытăрах чупма хистет. Хăйĕн ўсĕр пуçĕ усăнать, куçĕ умĕнче тĕтре явăнать. Хир варринче вăрман енчен килекен икĕ кашкăр «Атăл» çулне пўлесшĕн пулчĕç, анчах харсăр кĕсре çакна ăнкарчĕ, вĕсем чупса тухас тĕлтен маларах иртсе кайрĕ. Кашкăрсем юлма шутламарĕç. Çунана хăваласа çитрĕç, сăрри кĕсрепе юнашарах яртлатать, хури те çунапа юнашарах. «Ара, кусем Хурайккапа Сăркка вĕт!»— хăрушă çиçĕмле вĕлтлетсе илчĕ тавçăру Никандр пуçĕнче. Вăл тăруках урăлнă пек пулса кайрĕ. Тилхепене çирĕп тытса Никандр ури çине тăчĕ. Хурайккапа Сăркка паçăрах тавçăрса илнĕ: вĕсен çурисене миххе чиксе илсе кайма хăтланаканни шăпах çак çын ĕнтĕ. Çавăнпа иккĕшĕн те куçĕсем хаяррăн çунаççĕ.

Паллах, тутă кашкăрсем ăна мар, çуна çинче тăрса пыракана хăваланине пушкарма пултарайман «Атăл». Çăткăнсенчен вăл хăй тарса хăтăласшăн. Çавăнпа çулпа çĕмрен пек вирхĕнсе пырать. Акă сулăнкăра çуна пĕр енчен тепĕр енне çапăнчĕ те, Никандр лав çинчен улăм кĕлти пек ўксе юлчĕ.

Çав тери хăранăран тăнне çухатнă çын патне малтан Хурайкка çывхарчĕ, унтан тепĕр енчен Сăркка пырса ларчĕ. Иккĕшне те сăмсана çуракан эрех шăрши йĕрĕнтерет иккен. Çын пуçне пăрчĕ те хăсма тытăнчĕ. Хурайкка хăсăк шăршине чăтаймарĕ, çаврăнчĕ те уттара пачĕ çулпа. Сăркка та унран юлмарĕ. Хурайкка кĕлеткипе пысăкрах, çамкипе сарлакарах. Çапах вăл Сăрккана пĕр хирĕçлемесĕр пăхăнать. Çапла кашкăр çемйинче: ами аçине шым мар итлеттерет.

Шап-шурă кăпăка ўкнĕ Атăл ут картишне чиперех çитрĕ. Çул çине тăр пĕччен выртса юлнă Никандр тăна час кĕреймерĕ. Тăна кĕрсен те хăй мĕншĕн кунта выртнине тăруках аса илеймерĕ. Алли-урине, питне тăм илтернĕскер, вăл яла тул çутăласпа кăна çитрĕ.

* * *

Купăс савăк кĕвĕсем çеç мар, тем тери хурлăхлине те калать çав. Çынсен шăпине апла та, капла та татса пама пултарнă Матреев çинчен мĕн каламаллине вĕçне çитерме

тем тесен те хĕпĕртеттерекен нотăсем мар, салхуллисем кирлĕ. «Пысăка тухма пултарчĕ. Ырă кăмăллă, таса чунлă çын»,— калаçатчĕç пĕр иккĕленмесĕр анаткассем ун çинчен. Чăнах та, ăна ĕçлеме Шупашкара куçарнăччĕ ĕнтĕ, анчах çав çулхинех, çурла уйăхĕнче, ĕççи вăхăтĕнче, аллине револьвер йĕнни çине асăрхаттаруллăн хунă милиционер умĕнче Матреев Юхма пасарĕ çулĕпе ялалла сĕнкĕлтетсе утнине курчĕç тырă выракансем. Унăн куçĕ шалалла путса кĕнĕ, янахĕ шĕвĕрленнĕ, кĕлеткинче шăммипе тирĕ кăна юлнă. «Ма капла? Мĕн пулнă-ши?»— тĕлĕнчĕ ун чухне ял-йыш, хăйĕнчен ыйтса пĕлесшĕнччĕ, анчах милиционер пĕр çынна та ун яхăнне ямарĕ, никампа та калаçтармарĕ.

Александр Михайлович çĕрĕпех чăлăм куç хупмасăр арăмĕпе, ачисемпе тăранайми пуплерĕ.

— Эпĕ ку пурнăçра çакна ăнлантăм: çиле хирĕç сурмалла мар — хăвăн çинех сирпĕнет,— хуллен те шухăшлăн пăшăлтатрĕ вăл арăмне хăлхинчен.— Пуçлăха хирĕç пĕр сăмах та каламалла мар, хăвна каялла пырса вăркăнать. Вăл хурана шурă тесен, санăн та шурă тесе ĕнентермелле. Вăл шуррине хура тĕслĕ курсан, хирĕçлеме ан та шутла. Ăнланмастни? Эппин, асли хушсан çук япалана пур темелле, пуррине çук темелле. Хăвăн ĕмĕрне вĕçне çитиех пурăнса ирттерме шутлатăн пулсан патшалăх тĕллевĕсем пирки шухăшласа пуçна ан ват. Ку вăл сан ĕç мар.

Ырă ут та такăнать, ырă çын та йăнăшать. Александр Михайлович инкеке лекессе лекрĕ, анчах ĕçĕ-хĕлĕнче йĕп вĕçĕ чухлĕ те йăнăш туман. Çавăнпа ӳкĕнме те, каçару ыйтма та йӳтĕм çук унăн.

— Тĕрĕслĕх тупма Иосиф Виссарионовича хăйне çыру ятăм. Шанчăк ун çинче кăна...— каларĕ вăл хăйне хăй ĕненмен сасăпа.— Ĕмĕр тĕлĕкри пек иртсе кайрĕ. Телей пулсан, теплерен чĕрĕ юлсан тăван ялта пурăнма ĕмĕтленетĕп. Ĕмĕре ял-йышпа пĕрле ĕмĕрлесчĕ. Эсĕ, Ульяна, питех ан кулян. Çут тĕнчерен уйрăлса кайма шутламастăп-ха. Анчах мĕнле пулĕ ĕнтĕ...

— Э-э-й, çырлахах турă!— çине-çинех сăхсăхать Ульяна аппа. Чĕри пачах лăпкă мар. Ах, пĕрре те вырăнта мар. Пичĕ-куçĕ вут пек пĕçерет, хуть те çĕр тĕпне сик. Вăл пуçĕнчи тутăрне хăрах аллипе пĕрмай тӳрлетет, ун айĕнчен тухса кайнă çӳç пайăркисене пуçтарать.

Александр Михайловичăн çӳллĕ çамкине сирсе сирĕлми йывăр шухăшсем пĕркелентереççĕ. Юрать-ха мăшăрĕ пулипулми хĕрарăм мар. Ăна шанма пулать. Унпа тем çинчен те шанса калаçма юрать. Упăшки халиччен те унпа калаç-

са ăшне пусаратчĕ, йывăр вăхăтра унпа пуплесе чунне уçатчĕ. Тепĕр тесен, тĕлĕнмелле ĕçчен хĕрарăм ун мăшăрĕ Ульяна: юр кайсанах хысна панă хваттертен тăван ялĕнчи килне таврăнать, çу каçа пахчинче те садра кĕрмешет. Хура кĕр çитсен, ĕç-пуç тирпейлесен каллех упăшки патне хысна хваттерне таврăнать. Апла-и, капла-и, ку мăшăр пĕр çăвартан сурать, тем тери килĕштерсе пурăнать.

Ульяна аппа чĕркуçленсе ларать те чун-чĕрипе хĕвеллĕ кун пек илемлĕ, кăмăлĕпе ытармалла мар лайăх упăшкишĕн турра кĕлтума пуçлать:

— Эй, турă, турă ывăлĕ Иисус Христос, хăвăн чăн таса аннӳ кĕлтунипе, мĕнпур сăваплă çынсем кĕлтунипе ман Санькkана хĕрхенсем, епле пулсан та ăна çăлсам! Эй, ырă турă, ĕненсем мана: этем нумай та, ман Санькка пек çын чăннипех сахал.

Тăван килĕнче çĕр каçнă хыççăн, ир-ирех, хĕвел тухнă-тухманах, милиционер Матреева килнĕ çулпах каялла илсе кайрĕ. Кĕтӳ хăвалама тухнă инкесем ним ăнланмасăр ăна хĕрхенӳллĕн пăхса ăсатрĕç. Алă сулаканни алă сулчĕ, пуç таяканни пуç тайрĕ. Мĕн те пулин калама милиционертан шикленчĕç.

Укăлчаран тухсан Александр Михайлович тăван ялĕ çине урăх нихçан курмасла тăранаймн пăхса тăчĕ. Куçĕ тĕтреленчĕ, сулахай енчи тăнлавĕ пĕр тĕлтен кăлт-кăлт сиксе илчĕ. Тăн-тăн милиционер самăр чышкипе çурăмĕнчен кӳплеттерсен кăна мĕскĕн чăваш эрленсе те шăпине ылханса тусанлă çулпа малалла тапранчĕ.

Аçта илсе кайнă ристана — паллă мар. Çавăн хыççăн чипер этемех пĕр хыпарсăр çухалчĕ. Кайран-кайран, темиçе çултан, мăшăрĕ — хуйхăрса хыр хăйӳи пек типсе кайнă Ульяна аппа — аслă ывăлне вăрттăн-хĕрттĕн çапла каласа панă: аçу Комири Ухта поселокĕнчи лагерьтен пĕр ристана — «халăх тăшманне»— ĕçне тепĕр хут тĕрĕслемешкĕн каялла кӳнĕ, çавскер элеке пула айăпланнине тĕп-тĕрĕс палăртнă та ирĕке кăларнă. Çакăншăн хăй ристан пулса тăнă.

— Хĕрĕх виççĕри аçу халĕ те пысăк вырăнтах ĕçлемеллеччĕ, ăна персе вĕлерме нимĕнле айăп та пулман. Юрать-ха Шупашкарти пĕр пуçлăх, чи асли ĕнтĕ, яваплăха хăй çине илнĕ: аçуна тăван ялне килсе сывпуллашма ирĕк панă,— кăмăлĕ хуçăлнипе ассăн сывланă Ульяна аппа, унтан ĕсĕклесех йĕрсе янă.

Хăрăк тимĕре тутăх çисе ярать, хавшак чĕрене хуйхă кăшлать. Яштака та кĕрнек пӳ-силлĕ Ульяна аппан та

ниепле сĕврĕлми йывăр хуйхăпа пичĕ-куçĕ типсе хытнă йĕтем пек пĕркеленчĕ, çӳçĕ юр тĕслĕ пулса тăчĕ, кĕлетки пĕкĕ евĕр пĕкĕрĕлчĕ.

Ватти ватăлать, каялла тайăлать. Çамрăкки çитĕнет, шав малалла талпăнать. Анаткас вара çаплах хăй вырăнĕнче ларать. Ял çыннисем ватта курсан — тете теççĕ, çамрăка тĕл пулсан — шăллăм теççĕ. Çын вилет те çук пулать. Апла-ши? Аплах та мар. Çын вилсен те ячĕ юлать. Этем тивĕçĕпе чысне çӳлте тытнă вашават кăмăллă Александр Михайлович Матреева — Михаля ывăлне, Матри Санькки текеннине — ялта паян кунччченех асра тытаççĕ, чун-чĕрере упраççĕ. Çынна çынлăхшăн авалтанах чысланă. Ылтăн çумне тутăх çыпăçмасть тенешкел таса чуна нимĕн те варалаймасть иккен.

## ТĔП ХУЛАНА ХӲТĔЛЕНИ

### «Эпĕ япăхраххине кĕтнĕччĕ...»

1941 çулхи кĕр кунĕсем. Фашистсен армади, урăхла каласан, тĕрлĕ йышши çарсен пысăк пĕрлешĕвĕ, «Тайфун» операцие вĕçне çитерессишĕн шăл çыртса тапаçланать. Тайфун — тинĕсри çил-тăвăл. Адольф Гитлер шучĕпе, унăн хăватлă армадин те тĕл пулан хуласемпе ялсене ним шелсĕр аркатса та çĕмĕрсе, ватса та çунтарса, Хĕрлĕ Çара пачах хĕрхенмесĕр ӳппĕн-теппĕн çавăрса çапса та пĕтерсе çав çил-тăвăл хăвăртлăхĕпе малалла вирхĕнмелле, Совет Союзĕн тĕп хулине Мускава çитсе кĕмелле. Çавăн пек «Тайфун» операцийĕн тĕп тĕллевĕ.

Киров урамĕнчи çĕр айĕнчи çуртра вырнаçнă Ставкăна тăшман наступленийĕ çинчен хăрушла хыпарсем пĕр вĕçĕмсĕр килсе тăраççĕ. Генштаб начальникĕ Борис Шапошников маршал лайăх курать: Гитлер армади акăш-макăш вăйлă хĕç-пăшалланнă. Ку енĕпе Хĕрлĕ Çар ун яхăнне те пыраймасть. Фашистсен танксем пĕрре çурă хут, тупăсемпе минометсем икĕ хут нумайрах. Самолетсем миçе хут нумайраххине тĕрĕссĕн шутласа та кăлараймăн: кашни салтак хыççăн уйрăммăн хăвалама та çитет. Ахальтен мар ĕнтĕ тăшман Вязьма патĕнче чăн-чăн тамăк хуранĕ тума пултарчĕ.

Вязьма гитлеровецсен аллине куçать. Хĕвеланăç фрончĕн тата Резерв фрончĕн тăвată çарĕ калама çук пысăк хуран хĕскĕчне лексе вутри пек ăшаланать. Кунта коман-

довани йăнăшне пула совет салтакĕсем пинĕ-пинĕпе вилсе выртса юлаççĕ, анчах пичет вара çавăн пирки пĕр сăмах та шарламасть.

Анлă тĕнче те тепĕр чухне хĕсĕк теççĕ. Пĕтĕм тĕнче пирки татса калама йывăр, анчах ахаль куçпа çеç мар, бинокльпе те виççе илейми сарăлса ларакан Мускав çав кунсенче хăшĕ-пĕришĕн чăннипех те тăвăрланчĕ. СССР Верховнăй Совет Президиумне, çĕр-шыв правительствине — Халăх Комиссарĕсен Советне васкавлăн эвакуацилеççĕ. Тĕрлĕ учрежденисемпе организацисем пĕрин хыççăн тепри мĕнле май килчĕ — çапла Куйбышевалла тухса шăвăнаççĕ. Вĕсен ĕç пульсĕ йĕркеллĕ таптăр тесен тӳлек лару-тăру кирлĕ иккен.

Çăл куç тапса тухнă çĕрте шыв яланах таса. Ку вăл кирек ăçта та çапла. Урăхла пулма та пултараймасть. Çĕр-шывра чи таса çăл куç, ырлăх-пурлăх кӳрсе тăран иксĕлми çăл — аслăран та аслă, ăслăран та ăслă çулпуç. Ун сăмахĕсем пирки пĕр чĕптĕм те иккĕленмесĕр çапла каламалла: вăл мĕн калани — чи тĕрĕсси. Аслă аттемĕр нихçан та йăнăшман, халĕ те тем тери кăткăс ыйтусене тĕрĕс татса парать. Çивчĕ ăсĕпе, малашнехине витĕр курса тăнипе ӳлĕм те çапла пуласса шантарать. Çирĕплетекен тĕслĕхсем шырамашкăн инçе кайса çӳреме кирлех те мар. Гитлер Совет Союзĕ çине тапăнассине Сталин пачах ĕненместчĕ, провокаци серепине лекесрен сыхланма, хĕтĕртӳллĕ хăтланусенчен асăрханма хистетчĕ. Ултавлă фюрерăн çарĕ июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шыва вăрă-хурахла пырса кĕнине пачах та шутламалла мар. Мĕншĕнни паллă. Ку вăл мĕн пур халăхсен çутă хĕвелĕ çинче те хура пăнчăсем пуррине мар, пачах урăххине — каппайчăк фюрер ăсран тайăлнине яр-уççăн кăтартать.

Çĕр-шывăн тĕп хулинчи нумай-нумай учрежденипе организаци мĕн пирки пĕр-пĕр урăх хулана мар, Атăл хĕрринчи Куйбышева куçса кайнă-ши? Тĕп командующи тавçăруллăн хăй хушнă. Каярахпа тăшман Атăл хĕрринчех ларакан кăшт кăнтăрарахри Сталинград патнех çитессĕ пĕлме вара çулпуç пĕр-пĕр тăрлавсăр юмăç мар-çке, малашне мĕн килсе тухассине карт тăрăх та пăхмасть, çăлтăрсем епле мĕлтлетни тăрăх та шутламасть. Юратьха Паулюс фельдмаршал Куйбышевра мар, Сталинградра Хĕрлĕ Çар аллине тыткăна лекме шутланă.

Иосиф Сталин хăйĕн дачинчен Кремле яланхиллех кăнтăрла тĕлне килсе çитнĕччĕ кăна, нимрен малтан Тĕп командующи ставки валли Куйбышевра çурт хатĕрри çинчен пĕлтерчĕç.

Тĕп командующи чунĕ тăруках тулашса кайрĕ. Хăй патне чĕннисене пĕри юлмиччен хаяррăн ятласа тăкрĕ.

— Тĕп командующи ставки Мускаврa юлать...— шач! çапрĕ вăл симĕс пустав сарнă сĕтеле сулахай аллипе. «Герцоговина Флор» пирусне сӳтсе чĕлĕмне ырă шăршăллă табак васкамасăр тултарчĕ, çаплах ерипен ăна чĕртрĕ. Унтан Ставкăра ятарлă подразделение ертсе пыма уйăрнă генералпа çыхăнчĕ.

— Вăт кунта мана Куйбышева куçса кайма хистеççĕ. Унта Ставка валли бункер пур-и е çук-и? Епле апла: Адольфăн пур, Сталинăн çук? Проект хатĕрлĕр те ĕçе пуçăнăр. 30—40 метр тарăнăшĕнче пин çын вырнаçмалăх пултăр. Хăш пуçĕнчен, хăш вĕçĕнчен пуçламаллине чухламастăр-и? Мĕн чухламалла марри... Мускаври метрострой инженерĕсемпе канашлăр. Проектне вĕсем туса паччăр.

Оперативлă сводкăна итленĕ хыççăн Сталин каллех паçăр каланă сăмахсене аса илчĕ:

— Адольфăн пур, Сталинăн çук. Епле апла? Тахçанах хатĕрлемелле пулнă. Ялан кая юлса тытăнаççĕ çар инженерĕсем. Пысăк чышкăпа тăнлавран тăрăслаттарсан тин тăна кĕреççĕ.

Бункер пирки шухăш хăйĕн пуçне те паян çеç пырса кĕни, ун пирки кирлĕ кăтарту хăй те кая юлса пани пирки çапах нимĕн те шарламарĕ.

Тепĕр кунне ăна Тĕп командующи пуйăсĕ станцăра хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕç. Сых ятне! Иосиф Виссарионович ăçталла та пулин кайма шут тытатех пулсан...

— Эсир каллех Куйбышев çинчен аса илтересшĕн-и?— шутсăр тĕлĕнчĕ Тĕп командующи.— Ниçта та каймастăп. Мускава тăлăха хăвармастăп,— татăклăн хушса хучĕ вăл.

Ун çывăхĕнчисем пĕлеççĕ: халăхăн çулпуçне никам та хирĕçлеме хăяймасть, анчах юлашки вăхăтра вара вăл хăйне хăй хирĕçлекен пулчĕ.

Пĕр пытарусăр каласан Сталин та Мускавран каясшăн пулнă иккен. Çул-йĕр халăх комиссарĕ Лазарь Каганович Горький чугун çулĕ çинче Рогож-Симонов тупикĕнче ятарлă пуйăс янтăланă. Сталин çĕрле Кремльтен çав пуйăс патне çул тытрĕ. Кантăкĕсене тĕплĕн хупланă вагона çитнĕçитменех кĕрсе лармарĕ, платформа тăрăх пуйăс çумĕпе ун-кун каллĕ-маллĕ кумрĕ. Ăна арăш-пирĕш шухăшсем асаплантарчĕç. «Мĕнле-ха капла? Эпĕ те кайсан çав йĕксĕксем Мускав хулине тăшмана параççех. Адольф кунта парад ирттерес ĕмĕтне пурнăçлатех вара»,— хăрушла шухăшсем капланчĕç сивĕпе ĕнтĕркеме пуçланă Тĕп коман-

дующи пуçӗнче. Пӗр кӗтмен çӗртен вӑл вӑрт çаврӑнчӗ каялла. Çавӑнтах хӑйӗн хуралӗн пуçлӑхне тӗлӗнтерекен хыпар каларӗ:

— Пурте Кремле таврӑнатпӑр.

Куçса кайма ӗлкӗреймен руководительсене пурне те кӑнтӑрла вун икӗ сехетре Сталин хӑй патне чӗнтерчӗ.

— Ну, ӗçсем еплерех Мускаврa?

Нихӑшӗ те сӑмах хушмарӗ. Çулпуç çуммисем хӑмла шалчисем пек шанк хытса тӑсӑлса тӑчӗç. Сталин вӗсен умӗнче утса çӳрерӗ. Тӑрсан-тӑрсан пӗри тӳсеймерӗ, мӗн курнине-илтнине йӑлтах акса-тӑкса пачӗ.

Ку вӑл авиаци промышленноçӗн халӑх комиссарӗ Алексей Шахурин пулчӗ. Сталин ун сӑмахне итлесе пӗтермесӗрех пӗтӗмлетӳ турӗ:

— Ну, юрӗ. Эпӗ япӑхраххине кӗтнӗччӗ...

Кӑнтӑрларан вара хулара трамвайсем çӳреме пуçларӗç. Метро станцийӗсен хапхисем яриех уçӑлчӗç. Магазинсемпе булочнӑйсене те çӗнӗрен чун кӗчӗ.

«Центр» ушкӑнӗнчи çарсен командующийӗ фон Бок генерал-фельдмаршал Смоленск çывӑхӗнчи, Катыньри, штабӗнче çӗнӗ приказ кӗтет. Берлинран нимле приказ та килмерӗ, ун вырӑнне тип çӗр çарӗсен тӗп командующийӗ Вальтер фон Браухич генерал-фельдмаршал хӑй самолетпа килсе çитрӗ. Куçа-куçӑн вӑрах калаçса ларчӗç вӗсем.

— Куратӑп: ку таврара вырӑссен пире чарма пултаракан вӑй çук. Пирӗн мухтавлӑ танксем тӑхтаса тӑмасӑр Мускаваллa çул тытчӑр,— пӗтӗмлетрӗ калаçӑва тип çӗр çарӗсен тӗп командующийӗ. Вӑл паянхи кунӑн хивре ыйтӑвне çапла татса пани фон Бока та килӗшрӗ. Ук хыççӑн вара хӑйсем çав тери ӑслӑ пулнипе хӗпӗртесе генерал-фельдмаршалсем иккӗшӗ те вырӑс шнапсне янклаттарчӗç те янклаттарчӗç. Ку янклаттару юпа уйӑхӗн 7-мӗшӗнче пулчӗ. Гитлер чӑтӑмсӑррӑн хистенипе фон Бок тепӗр кун танк çарӗсен 3-мӗшпе 4-мӗш ушкӑнӗсене Мускав хулине хупӑрласа илме приказ парать.

Çук, унашкалли пуласса Сталин пачах чухламан темӗ çук. Юпа уйӑхӗн 6-мӗшӗнче каçпа вӑл Ленинград фрончӗн командующине Георгий Жуков арми генералне шӑнкӑравлать:

— Мускав çывӑхӗнче лару-тӑру кӑткӑсланчӗ. Уйрӑмах Хӗвел анӑç фронтӗнче... Мускава вӗçсе килӗр,— приказ пачӗ Тӗп командующи.

Тӑван çӗр-шывӑн тӗп хулине вӗçсе килсен арми генералӗ тӳрех Сталин патне кӗчӗ.

— Акă курăр,— пуçне сĕлтрĕ Сталин карттă еннелле,— лару-тăру çав тери йывăрланчĕ. Халех унта тухса кайăр, ăçта мĕнлереххине тĕплĕн пĕлĕр те ман пата шăнкăравлăр. Кăнтăрла-и, çĕрле-и, уяса тăмасăр...

Тепрер кунран Сталин хăйне «Красная звезда» хаçат редакторĕпе Д. И. Ортенбергпа çыхăнтарма хушрĕ.

— Акă мĕн, генерал, сирĕн Жуков сăн ӳкерчĕкĕ пур-и? Мĕнле Жуковăн тетĕр-и? Эсир ытла та тавçăрусăр. Сăмах, иккĕленме кирлĕ мар, Георгий Константинович çинчен пырать. Ытти Жуковсем хальхи лару-тăрура ман кача пӳрнене те тăмаççĕ. Ха, мĕне кирлĕ тесе ыйтатăр тата. Тавçăрусăр кăна мар, тăрлавсăр та иккен эсир. Пĕлччĕр Мускава хӳтĕлекенсем хăйсемпе кам командăланине... Тăшман та сехĕрлентĕр хăй кампа çапăçнине пĕлсе...

— Эсир хушнă пекех пулать, Аслă Тĕп командующи,— шантарчĕ хаçат редакторĕ.

Телефон трубкине хурсан редактор пĕр вăхăт пач хускалмасăр ларчĕ. «Ку шухăш патне Сталин хăех пырса тухнă-ши е ăна кам та пулин ăс панă-ши?— хăйĕнчен хăй ыйтрĕ вăл.— Георгий Константинович чăнах та пултаруллă çар пуçĕ пулса тăчĕ вĕт. Ун çурăмĕ хыçĕнче Халхин-Гол, Ельня. Ленинградри лару-тăрăва та вăл тăнăçлатрĕ... Эппин вăрçăн чи йывăр, чи кăткăс задачисене те ăнăçлă татса пама пултарать. Тен, Мускава та тăшман аллинче хур курма памĕ...»

Пĕр вăхăтра лару-тăру питĕ йывăрланать. Фашистсен çарĕсен Мускава çитме хăш-пĕр тĕлте аллă километр е унран та сахалрах юлать. Юпа уйăхĕн юлашки вунă кунлăхĕнче, ăмăр çанталăкра хĕвелĕн çутă пайăркисем ăнсăртран пĕлĕтсем хушшинчен туха-туха курăннă пек, Генштаба ырă хыпарсем те пырса çитеççĕ... Курскран хĕвел анăçнерех, Львов çывăхĕнче, 13-мĕш арми тăшман хупăрлавĕнчен хăтăлса тухать. Винтовкăсем тытнă 10 пин çын, 11 тупă мĕн тесен те пĕчĕкçĕ вăй мар. Тулăран кăнтăр-хĕвел анăçнерех, Белев патнелле — 50-мĕш арми, Орелпа Курск хушшинчи Поныри станцийĕ çывăхне — Брянск фрончĕн 3-мĕш армийĕ тăшман хупăрлавĕнчен çăлăнса пырса çитеççĕ. Хĕвел анăç фронтне Инçетри Хĕвел тухăçĕнчен, Вăтам Азирен çĕнĕ дивизисем килеççĕ. Çил континентран, хĕвел тухăç енчен вĕрме пуçлать. Мускавшăн хăрушлăх каштах иксĕлет.

Мускав çар округĕн командующийĕ П. А. Артемьев генерал-лейтенант чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче çĕрле Тĕп командующие фронт хыпарĕсемпе паллаштарать. Сасартăк унран Сталин çапла ыйтать:

— Павел, сирĕн шухăш еплерех: Октябрь 24 çул тултарнă ятпа парад ирттеретĕр-и е çук-и?

Генерал-лейтенант хăйне çавăн пек ыйту парасса пачах кĕтмен. Парад çинчен шухăшлама-и-ха! Çитменнине тата ăна кампа ирттермелле: танксем гарнизонта пачах çук, артиллери çапăçу хирĕнче. Çуран çарпа кăна парад пулмастех.

Хăйĕн иккĕленӳллĕ шухăшĕсене сасăпа каласа пама ирĕк памасть генерал-лейтенанта Тĕп командующи, сывлăша алă лаппипе касайса татать:

— Хатĕрленĕр. Чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче парад ирттеретпĕр.

«Вилĕмсĕрлĕх парачĕ» ятпа кĕрсе юлчĕ вăл Тăван çĕр-шыв историне. Ку парадра Яков Миронович Пожеданов та пулчĕ. Кунĕ самаях сивĕччĕ, салтак çĕлĕкĕн хăлхине усманран çил пит-куçа хытах чĕпĕтетчĕ. Пĕтĕм Хĕрлĕ площадь, Мускав юхан шывĕ кĕперĕнчен Истори музейĕ таранах, çарсемпе тулнă. Шăп сакăр сехетре Спасски башньăран Оборона халăх комиссарĕн заместителĕ С. В. Буденный ут утланса тухать, П. А. Артемьев рапортне йышăнать те çарсене саламласа çӳрет. Унтан Сталин сăмах калать.

Тупă лафечĕ çинче ларса пыракан Пожеданов Ленин мавзолейĕ трибуни çинче И. В. Сталина, С. В. Буденнăя, А. И. Микояна курма ĕлкĕрчĕ. Пар лашапа чуптарса иртнĕ май трибуна çинче тата кам-кам тăнине чăваш салтакĕ лайăххăн тĕшмĕртеймерĕ. Парад хыççăн Пожедановсен чаçне тӳрех малти линире позици йышăнма тиврĕ. Тăван ывăлĕ Миккуль те Мускава хӳтĕлесе çапăçнине аншĕ ун чухне пĕлмен-ха. Мăшăрне София Александровнăна хăй чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре парадра пулни çинчен кĕскен çеç çырса пĕлтерчĕ. «Кунашкал ларутăрура парад ирттерни вырăнсăр пек туйăннăччĕ малтан. Каярахпа ăнкартăм: çав парад ман чĕрере те темле шанчăк çуратрĕ»,— çак сăмахсемпе вĕçленĕччĕ вăл хăйĕн çырăвне.

## Хыçăмăрта Мускав!

Фронтра лару-тăру çавнашкал кару пулса тăрасса кĕтменччĕ Яков Пожеданов сержант. Тăшман Совет çĕршывĕ çине ăнсăртран тапăнас пулсан Хĕрлĕ Çар икĕ-виçĕ хут пысăкрах вăйпа хирĕç вăрса çапассине, çапăçусем чикĕ

леш енче пулассине пĕр саслăн ĕнентеретчĕ çĕр-шыври мĕн пур хаçат-журнал. Чăннипе пачах урăхла пулса тухрĕ — тăшманăн броньăпа хурçă хӳттинчи тилĕрсе кайнă кĕтĕвĕсем авалхи шурă чуллă Мускав урамĕсене пырса кĕресшĕн.

Нимĕç фашисчĕсен командованийĕ тĕп хулана тытса илессине вăрçăра татăклă ăнăçу тăвассипе, пĕтĕм çĕр-шыва чĕркуççи çине тăратассипе çыхăнтарать. Ку тĕллеве «Центр» çарĕсен ушкăнĕ пурнăçа кĕртмелле. Анчах Гитлерăн Мускава вăрçăн малтанхи эрнисенчех хыпса çăтас ĕмĕчĕ путланса ларать. Çакна кура фюрер командованийĕ Мускав сулăмĕнчи çарĕсене авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче вăхăтлăха оборонăна куçма приказ парать, «Тайфун» ятпа пысăк наступлени планне туса хатĕрлет. Фашистсем хăйсен танксем, авиаци, танксене пĕтермелли тата зенит артиллерийĕ, моторпа усă куракан вăйсем уйрăмах нумай пулни çине шанаççĕ. Чăнах та, фашистла Германин çар техники шутпа кăна мар, пахалăх енĕпе те малта. Совет танкĕсемпе самолечĕсенчен çурри ытла кивĕ конструкциллĕ.

Марш подразделенийĕнчи Пожеданов çакна курать: тăван халăх тĕп хулана тăшмана пама шутламасть. Мускав çыннисем кĕреçе те лум тытнă, нумай çĕрте тăшман танкĕсене чармалли шăтăксем алтаççĕ. Халăх ополченийĕн дивизийĕсем пĕрин хыççăн тепри, вун икке çитичченех, хаярланса чăмăртанаççĕ, тăшмана хирĕç тухаççĕ.

«Тайфун» планĕ тăрăх нимĕç фашисчĕсен çарĕсем Брянск тата Вязьма еннелле наступлени пуçлаççĕ. Хĕрлĕ Çар, халăх ополченийĕн дивизийĕсем паттăрла хирĕç тăчĕç пулин те, тăшман оборонăна татса кĕчĕ-кĕчех. Хирĕçле пыра-пыра çапни фюрер çарĕсене такăнтарасса такăнтарчĕ, анчах вĕсен наступленине чарса лартаймарĕ. Юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнче Спас-Деменскпа Киров, 5-мĕшĕнче — Юхнов гитлеровецсен аллине куçрĕç. Тăшман Вязьма патне пырса тухрĕ, пирĕн нумай-нумай çара хупăрласа илчĕ. Юнлă çапăçусем юпа уйăхĕн 13-мĕшĕчченех пычĕç. Вут хуранне лекнĕ пирĕн çарсем тăшманăн 28 дивизине тăлласа тăчĕç. Совет çарĕсен пĕр пайĕ хупăрлавран хăтăлса тухма пултарчĕ, тепĕр пайĕ тăшман тылне тăрса юлчĕ, партизансен кĕрешĕвне хутшăнчĕ.

Пожеданов сержант марш подразделенийĕпе пĕр дивизие пырса хушăнчĕ те иккĕмĕш кунах Вязьма тамăкне çакланчĕ. Кунти вăрçă аçтахи дивизие хăвăрт тураса тăкрĕ, пырне лартмасăрах çăтса ячĕ. Çав аçтахаран хăй епле хăтăлнине сержант тĕлĕкри пек çеç астăвать. Вилнисем

хушшинче контузие пула тăнсăр выртса юлни кăна çăлăнма май панă иккен ăна. Вăй-халтан кайнăскер çĕрле хамăрăннисем патне пĕр-пĕччен шуса тухма пултарчĕ.

Хĕвел анăç тата Резерв фрончĕсен çарĕсене Вязьма çывăхĕнче хупăрласа илнĕ хыççăн Мускавалла талпăнакан тăшмана чарас вăйсем палăрмаллах иксĕлчĕç. Васкасах çарсен çĕнĕ ушкăнне йĕркелемелле, çирĕп оборона туса хумалла. Ку оборонăра Можайск линийĕ тĕп вырăн йышăнмалла. Юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче Хĕвел анăç фрончĕн командующийĕ пулма арми генералне Г. К. Жукова çирĕплетеççĕ.

Хĕвел анăç фрончĕ оборонин тăрăхĕнче тăшманăн «Центр» текен çарĕсен ушкăнĕн тĕп вăйĕсем наступлени пуçлаççĕ. Тамăкран хăтăлса тухнă Пожеданов сержант халĕ тăшман танкĕсене пĕтерекен полкра. Ку полк Можайск çывăхĕнчех фашистсен çулне картласа хурать.

Сивĕ хура кĕркунне. Уй тăрăх çилпе юлашки шĕлтĕр-шĕлтĕр çулçăсем вĕçеççĕ. Полк нӳрлĕ çĕре чавса окопсем тăвать. Вичкĕн çил шинель витĕр касса вĕрет. Унран салтаксене тарăн окоп çăлать. Старшина, кая юлса та пулин, каçхи вĕри апат илсе килсе çитерчĕ. Ун хыççăн батарея каллех окопсене тарăнлатма пикенчĕ. Çур çĕр иртсен артиллеристсем тупăсем çумĕнчех тĕлĕркелесе илчĕç.

Пожеданов ăс-хакăлĕ çаплах Вязьма тамăкĕ тыткăнĕнчен ниепле те тухаймасть-ха. Куç умĕнче пĕрмаях вилĕм те вилĕм, вилĕм те вилĕм.

Сержант сехете яхăн кăна кăтăш пулса илчĕ. Кунта епле çывăрăн-ха: шăв-шав та кĕрлев çĕрле те хăлхаран каймасть. Пожеданова куçне уçсанах йывăр шухăшсен ниепле сӳтĕлсе пĕтмен çиппи яваласа илет. Ку шухăшсем вилĕмпе вилĕмсĕрлĕх çинчен. Пĕлет сержант: вилĕмрен хăтăлма пултаракан çын çук. Çĕр чăмăрĕ çинче кирек кама та пĕр шăпа пӳрнĕ — хăçан та пулин ăна вилĕм кĕтет: рядовой салтака та, çӳлерехри ранг çинчен ĕмĕтленекен офицера та, лампаслă шăлаварпа çӳрекен генерала та... Вилĕмрен хăрушăрах тăшман нихçан та пулман, паян кун та çук, ӳлĕмрен те пулмасть. Чĕрĕ чухне ку вăрă-хурахсене хирĕç тăма пулать, вилĕм тыткăнне лексен — никама та нимĕнле те хирĕç тăраймастăн.

Вилĕм Пожедановшăн çеç мар, пуриншĕн те сăмахпа калайми пысăк инкек. Унăн вĕçертми аллине çакланнă çывăх çын шăпи пире чун-чĕререн кулянтарать, хуйхăртать, тепĕр чухне макăртать те. Вăн батарейăри тепĕр тупă наводчикĕнчен Борис Смирновран ĕмĕрлĕхех уйрăл-

ма тиврĕ. «Çăкăра çисе ятăм, тăвар юлчĕ. Тăвара çисе пĕтерме кивçен çăкăр пар-ха»,— шӳтлесе çӳретчĕ вăл батарейăра. Тăлпан та кĕрнеклĕскер юман кĕреш пек курăнатчĕ. Ăна урăх курас çук ĕнтĕ. Çĕнĕ позици йышăннă чухне унăн пурнăçне анкă-минкĕ пуля татрĕ. Ăна карабинсенчен виçĕ хут залп парса пысăк чыспа пытарнă чухне вара куççульпе тĕтреленмен куç юлмарĕ. Батарея командирĕ Илья Александрович Степанов аслă лейтенант та куçне алă лаппин тӳртĕн енĕпе çынсем асăрхамасла темиçе хут шăла-шăла илчĕ.

Çакă тĕлĕнтерет: вилĕм сехечĕ тем тери сехĕрлентерсен те ун пирки шухăш пуçа хăш чухне кăна пырса кĕрет. Пырса кĕрсен вара — çĕклейми пысăк чул катрамĕ пекех ытла та йывăр. Пуç тĕлне йăтăнса аннă вилĕмрен ниепле те хăтăлма çуккине пĕлнĕрен-и е урăх сăлтавпа? Татăклă сехет çитсен эсрел хăйĕн тутăхнă юнлă çавине сан еннелле те сулса яратех. Эппин, сăлтавне урăххинче шырамалла. Ахăртнех, этемĕн вилĕм пирки шухăшламасан та ĕмĕр тăршшĕпех урăх хуйхă-суйхă нумай: ку сахал та леш çитмест, ăна тумалла та кăна юсамалла, уншăн тăрăшмалла та куншăн тимлемелле. Иккĕленмелли çук: пĕр шухăшсăр пурăнма, ĕмĕре пĕр хуйхă-суйхăсăр ирттерме çакă çутă тĕнчере никама та май килмест.

Сержантăн шухăш çăмхи çаплах малалла сӳтĕлет: çук, вăл-ку çинчен шутламалла та мар. Пирĕнтен нихăшĕ те кунта вилме килмен. Пурте çапăçма, тăван çĕре-шыва чĕнмесĕр килсе таптакан çичĕ ютсенчен тасатма килнĕ. Якку хĕрĕх виçĕ çулта çеç-ха. Вăйпитти арçыннăн пурăнмалла та пурăнмалла-ха. Тен, Сахвит улттăмĕшне те çуратса парĕ. Çук, никамăн та вилес килмест. Вилсен те пурте мар вилеççĕ. Çапах та... хăшĕ-пĕри ыранхи куна кĕтсе илеймĕ, паянхи кун хăшĕ-пĕришĕн юлашки пулма пултарать. Çапах та... вăрçă вăрçах. Çапăçу çухатусăр пулмасть. Пуç мимине пăралакан шухăш пырса кĕрет-кĕретех: «Нивушлĕ çутă куна урăх кураймăп? Нивушлĕ çутă хĕвел маншăн урăх тухмĕ?»

Çапах та... шанчăка çухатма юрамасть. Шан, ĕнен, Якку: эсĕ чĕрĕ юлатăн, Анаткаса чиперех таврăнатăн, лесничествăра саншăн ĕç мăй таран...

Тупă расчечĕн командирĕ Пожеданов хăйне йăлăхтарса çитернĕ шухăшсене пуçĕнчен татăклăн кăларса пăрахать те шăн çĕре кĕреçепе вăй хурса сирпĕнтерме пикенет.

Мускав юхан шывĕ хĕрринчи Можайска пысăк хула теме çук, район центрĕ кăна. Стратеги тĕлĕшĕнчен вăл·

пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑчӗ. Ку хулашӑн ҫапӑҫусем юпа уйӑхӗн 12-мӗшӗнче пуҫланчӗҫ. Минск — Бородино ялӗ хушшинчи шоссе ҫулне 32-мӗш стрелковӑй дивизи хӳтӗлерӗ. Ку дивизин паттӑрлӑхӗпе пӗрле унӑн командирӗн В. И. Полосухин полковникӑн ячӗ те чапа кӗрсе юлчӗ. Пожедановсен танксене пӗтермелли полкӗ шӑпах ҫак дивизире.

Ирпе фашистсен самолечӗсем ҫӑхансем пек капланса килчӗҫ, пӗрин хыҫҫӑн тепри аялалла чу анаҫҫӗ те бомбӑсем тӑкаҫҫӗ. Йӑтӑнать те йӑтӑнать бомба. Самолет ҫинчен ӳкекен бомба хӑрушла шӑхӑрнинчен тискертерех сасӑ урӑх ҫук та пулӗ. Пӗтӗм чуна сехӗрлентерет.

«Эй, турӑ, ҫӑлсам! Ҫакӑнта вилсе выртма ан пар!» — хӑй ӑшӗнче кӗл тӑвать сержант окопран пуҫне кӑлармасӑр. Ӗҫенет-ши вӑл турра — калама йывӑр. Ҫӑтмаха лекессине шанса леш тӗнчене лекме вара пачах та васкамасть вӑл. Унта, пӗлӗт ҫинче, ҫӑтмах та, тамӑк та ҫуккине лайӑхах пӗлет. Пурах пулсан — темиҫе пин хут пин ҫул хушшинче пӗри-пӗри килсе каласа памасӑр чӑтаймастчех ӗнтӗ. Анчах унтан таврӑнни пулман ҫав, пуласса кӗтмелли те ҫук.

Шутсӑр нумай бомба тӑкӑннӑ хыҫҫӑн хӑйсен полкӗнчен мӗн те пулин юлнине пӗлме Пожеданов сержант окопран пуҫне кӑларнӑччӗ кӑна, ҫывӑхрах тем ӳксе ҫурӑлчӗ, унтан кантӑка ҫӗҫӗ ҫивчӗшӗпе хӑшканӑ чухнехи пек сӳлеттерекен шӑхӑру хӑлхана кӗчӗ. Ҫавӑн пек вӑл мина: малтан хӑй килсе ӳкет, унтан тин аҫтахалла шӑхӑрни илтӗнет. Кӗҫех снарядсемпе минӑсем унта та кунта лаплата-лаплата ӳкрӗҫ. Эппин, артиллери тапӑнӑвӗ пуҫланчӗ. Пӗр те пӗр снарячӗ хӑйсен окопӗ ҫине тӗлех ӳкессӗн туйӑнать Пожеданова. Пуҫ ҫине шӑн тӑпра сирпӗнет. Пур енче те ҫурӑлупа сирпӗтӳ юписем ҫӗкленнӗ. Снаряд лекнӗрен ҫывӑхри пӗртен-пӗр хурӑн касса янӑ пек тӳнчӗ те окопа чутах хупласа хумарӗ. Окопран сылтӑмри, ҫул хӗрринчи ҫунса кӑмрӑкланнӑ хыртан элес-мелес юпа кӑна тӑрса юлчӗ: турачӗсем йӑлтах тенӗ пек хуҫӑлса пӗтрӗҫ, снаряд ванчӑкӗсем ун хуппине пӗр хӗрхенӳсӗр вистерӗҫ.

Йӗри-тавра ҫын вилли. Пур енчен те аманнисем йынӑшни илтӗнет. Батарейӑн юнашар окопри туппи ҫине снаряд килсе ӳкнӗ те ӑна чӑл-пар салатнӑ. Сылтӑм флангри тепӗр туппине пуҫ хӗрлӗ ҫавӑрса ҫапнӑ. Ак ӑҫта иккен вутлӑ тамӑк текенни! Пӗтӗм усал-тӗсел пин-пин карланкӑпа чӑрсмн ахӑрашнӑн, пӗтӗм ҫӗр чӗвен тӑрса тулашнӑн туйӑнчӗ ҫав вӑхӑтра кирек кама та.

Тамӑк ахӑрӑвӗ лӑпланса та ҫитейменччӗ, сержант хӑлхине мотор кӗрлевӗ пырса кӗчӗ. Вӑл тӳрленсе тӑчӗ те

курах кайрĕ: кай енчен танксен колоннисем киле параççĕ.

— Тупăсем патне! — илтĕнчĕ батарея командирĕн яланхи пекех тӳлек сасси.

— Тупă патне! — команда пачĕ Пожеданов хăйĕн расчетне.

Авăрлаканнипе снарядсем йăтаканĕ хăйсен вырăнне хăвăрт пырса тăчĕç. Туппа тĕллеттерекенни — наводчик ĕнтĕ — тем чул кăшкăрса чĕнсен те тупăнмарĕ — вилнех пулмалла. Ун вырăнне Пожедановăн хăйĕн тăма тиврĕ. Туппа тĕрĕс тĕллеттерме сержант расчетри ытти боецсене те вĕрентнĕччĕ, çапах халĕ ун вырăнне хăй йышăнчĕ. Батарея командирĕ Степанов аслă лейтенант хăйпе юнашар пырса тăрсан Пожеданов хĕпĕртенĕ пек те пулчĕ: мĕн тесен те пĕрле шанчăклăрах.

— Батарейăри тăвата тупăран иккĕшĕ юрăхсăра тухнă. Танксене хирĕç пирĕн икĕ тупăпа çапăçма тивет. Ку танксемпе Гудериан Мускава парăнтарасшăн, çавăнпа вĕсене кирек епле пулсан та чармаллах! — паллаштарчĕ лару-тăрупа батарея командирĕ.

Бинокле аллинчен ямасăр аслă лейтенант тăшман танкĕсене шутлама тытăнчĕ. Вун ултта çитсен шутлама пăрахрĕ. Курчĕ: пĕтĕмпе икĕ теçеткене те çитет. Танксем çывхарнăçемĕн çывхараççĕ. Аякĕсем çинче эрешмене аса илтерекен свастика паллисем курăнакан пулчĕç.

Танксем çине чи малтан сулахай тата сылтăм флангри пĕрремĕшпе виççĕмĕш батарейăсем пеме пуçларĕç. Те лектерейместĕ, те шăтмалла мар броньăран тунă — пĕр танкĕ те чарăнмарĕ, нихăшĕ те ланкса лармарĕ. Снарядсем харама кайни кăна. Тăхта, ку мĕн? Сержант та, аслă лейтенант та пĕр вăхăтра курах кайрĕç: малти танк, хăюллăн малалла талпăнса пыраканскер, анранă сурăхла пĕр вырăнта çаврăнма тытăнчĕ. Унран пăрăнса иртсе ытти танксем малаллах шурĕç, полк батарейисем çине снаряд хыççăн снаряд вăркăнтарчĕç.

— Авăрла! — илтĕнчĕ чăтăмсăррăн кĕтнĕ команда.

Пĕр снаряд тухса вирхĕнет, тепри, виççĕмĕшĕ... Виççĕмĕшĕ тин тăшман танкне çулăм хыптарать. Тăваттăмĕшĕ танк башнине янах пăрнă пекех хыçалалла çавăрса лартать. Пĕрремĕшпе виççĕмĕш батарейăсем вут тивертнĕ темиçе танк тĕтĕм юписем йăсăрлантараççĕ.

Аслă лейтенант сасартăк пĕççине сулахай аллипе ярса тытрĕ, сылтăммипе биноклĕне вĕçертмесĕрех юр çинелле тĕшĕрĕлчĕ. Пожеданова та сулахай хулĕнчен тукмакпа çапнă пек пулчĕ. Вăл алли аманнине пăхса тăмарĕ, прицел çумнерех тĕршĕнчĕ. Тепрер персенех снарядсем

йӑтаканни тӑсӑлса ӳкрӗ те урӑх ҫӗкленеймерӗ. Авӑрлаканни хӑйшӗн те, уншӑн та тӑрӑшать. Тарланӑран шинельне те хывса пӑрахрӗ.

Сержантӑн сулахай ҫанни ӑшӗнчен юн йӑрӑлтатса юхса анчӗ: снаряд ванчӑкӗ хулпуҫҫине тирӗннӗ иккен. Кӗҫех ку инкекрен те хӑрушӑраххи паллӑ пулчӗ:

— Урӑх пӗр снаряд та ҫук...

Авӑрлаканни, йывӑр аманса халтан кайнӑскер, урӑх пӗр сӑмах та калаймарӗ.

Иккӗмӗш хут — хальхинче кӑкӑрӗнчен — аманнӑ сержант хӑйне кам илтессе пӗлмесӗрех хыттӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Чакма юрамасть, тӑвансем: хыҫӑмӑрта Мускав...

Ҫапах ун чӗнӗвне илтекенсем тупӑнчӗҫ-тупӑнчӗҫех. Юн нумай ҫухатнипе кӑн-кӑвак пулса кайнӑ Степанов аслӑ лейтенант ҫывӑхри окопран упалансе килчӗ. Снарядсем йӑтса тӑнӑ Медведев, пыршисем йӑтӑнса тухасран хӑрах аллипе хырӑмне пӑчӑртаса, тепӗр аллипе ҫунтаракан шӗвеклӗ граната тытса тупӑпа юнашар шуса пырса выртрӗ. Снаряд лексе юрӑхсӑра кӑлариччен сылтӑмри тупӑ наводчикӗ пулнӑ Надеждин та Пожеданов чӗнӗвне илтнӗ иккен. Унӑн пуҫне бинтланӑ, бинт витӗр юн сӑрхӑнса тухнӑ. Ҫапах вӑл та тупӑ ҫумнех шуса ҫитрӗ.

Тӑшман танкӗсен ҫулне вӗсем ҫунтаракан шӗвеклӗ гранатӑсемпе картларӗҫ. Тӑваттӑн икӗ танка ҫулӑм хыптарчӗҫ. Виҫҫӗмӗшӗ совет салтакӗсем ҫинелле пырать.

— Эх, танк бронине ҫӗмӗрекен чӑн-чӑн гранатӑсем пулсанччӗ ҫакӑнта...— йынӑшса илчӗ Надеждин.

— Ку, ҫунтаракан шӗвекли, ҫурӑлаканни ҫурӑлать, ҫурӑлманни ҫурӑлмасӑрах юлать ӗнтӗ,— пӑшӑрханчӗ Медведев.

Тӑшманӑн чӑрсӑр танкӗ пурпӗр малалла иртеймерӗ. Надеждин ҫунтаракан шӗвеклӗ гранатӑсемпе тӑшман танкӗ айне пулса ҫапӑҫу хирӗнчех выртса юлчӗ. Хӑйсене санбата турттарса кайнӑ чухне Пожеданов канӑҫ паман шухӑшне Степанов аслӑ лейтенанта каламасӑр чӑтаймарӗ-чӑтаймарех:

— Эпир, ваттисем, чӗрех юлӑпӑр-ха. Сухал шӑтайманнисем мӗн курӗҫ? Люнькка ывӑлӑм шӑпи хуйхӑртать. Аншӗ пекех артиллерист вӑл. Таҫта ӗнтӗ.

Илья Александрович — чӑваш. Ҫӑкалӑх ялӗнчен. Хӑй каланӑ тӑрӑх, вӑрҫӑччен «Шуҫӑм» колхоз председателӗнче ӗҫленӗ. Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх пуҫлӑхӗпе шут шӑрҫи ӑстин, паллах, калаҫмалли нумай. Можайска хӳтӗленӗ кунсенче пуплесе ларма вӑхӑт тупӑнмарӗ, пӗр госпитале лексен — тӑраничченех пуплеҫҫӗ ӗнтӗ.

Танксене пĕтермелли вĕсен полкĕ эрнене яхăнах тăшмана чарса тăчĕ, анчах тем тери вăйлăн хирĕç тăрсан та юпа уйăхĕн 18-мĕшĕнче Можайска памах тиврĕ. 5-мĕш çар паттăрла çапăçса çав уйăхăн 26—27 кунĕсенче Кубинкăран хĕвел анăçнерехре тата кăнтăр-хĕвел анăçнерехре тăшман наступленине путлантарчĕ. Юпа уйăхĕ вĕçнелле Хĕвел анăç фрончĕн çарĕсем тăшманăн малти ушкăнĕсене чыхăнтарса ячĕç, вĕсене Волоколамскран хĕвел тухăçнерех тата Нара, Ока юхан шывсем тăрăх малалла ирттермерĕç.

Мускавалла талпăнакан çичĕ ют вăйĕсене тăлласа лартас енĕпе фронтăн Можайск линийĕ тăрăхĕнчи паттăрла çапăçусем вăрçă историне пысăк пĕлтерĕшпе кĕрсе юлчĕç.

## Хĕр парни

Миккуль çу каçа Нинăшăн самаях тунсăхларĕ, вăл Çăкалăхран — тăван ялĕнчен — килессе тем тери кĕтрĕ. Йĕкĕт паян тинех хĕре кĕтсе илчĕ.

Çуртăн çивитти карнизĕ çинче, мачча чӳречи тĕлĕнче, икĕ шурă кăвакарчăн юнашар лараççĕ. Пăхса тăранайми хитре çак вĕçен кайăк. Кирек хăçан та таса, типтерлĕ. Кĕлетки хăш енчен пăхсан та килĕшӳллĕ. Йăлтăркка тĕклĕ çавра кăкăрĕ уйрăмах çепĕççĕн курăнать. Ку вĕçен кайăка кăмăлламан çын та çук пулĕ. Кăвакарчăн пек йăваш, кульăк чĕппи пек çылăхсăр теççĕ çынсем çинчен те.

Карниз çинчи мăшăр кăвакарчăн юрату хĕрӳлĕхĕпе йăпанать. Пĕр-пĕрне чуптуса илеççĕ, илемлĕ çуначĕсемпе ыталашаççĕ, ĕмĕр тăршшĕпех пĕрле пурăнма сăмах параççĕ. Пĕри тепĕрне тем çинчен каласа кăтартать, тепри ăна пысăк тимлĕхпе итлет. Пĕри тепĕрне темĕншĕн ӳпкелет, тепри çуначĕпе çатăлтатса хирĕçлет.

Икĕ шурă кăвакарчăн çеç мар карниз çинче кăвиклетеççĕ, каччăпа хĕр — Миккульпе Нина та — садра вăрăм тенкел çинче лараççĕ, тем çинчен ăшшăн-ăшшăн калаçаççĕ. Нина куçĕ кăвак кăвакарчăнăнни пекех тап-таса, икĕ кăкăрĕ шултра панулми пек чăмăркка. Ах, эсир тата унăн чунне пĕлсенччĕ! Çепĕç те ачаш, купăс чĕлĕхĕ евĕр кăшт сĕртĕнсенех тем тĕрлĕ те янăрама пултарать. Ку хĕр кăвакарчăн пекех ырă чунлă. Кăмăлĕ те ытармалла мар лайăх.

Сывпуллашса хваттерне каяс умĕн Нина сăнĕ тĕксĕмленчĕ.

— Лаврентий Васильевича фронта ăсатрăмăр...

— Аçуна-и?

— Аттене çав...— Унтан пысăк айăпа кĕнĕн çапла хушса хучĕ:— Анне килте нĕчченех тăрса юлчĕ...

Хĕр уйрăмах амăшĕшĕн кулянать. Йĕрсе яманни кăна.

— Эсĕ ăна хăв патна Анаткаса илсе кил,— сĕнет Миккуль.

— Қаларăм. Пырса та ан перĕн: кил пăрахса кунта килет-и-ха...— ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ Нина. Садран тухса вăл хваттерĕ еннелле хăвăрт утрĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ, ăна ачасем те, педагогсем те ялан хиллех тунсăхласа кĕтнĕ пулин те, вăрçа пула кичемреххĕн пуçланчĕ. Шкул коллективĕнчен икĕ учитель фронта тухса кайнă ĕнтĕ — вĕсен предмечĕсене ыттисене валеçсе пачĕç. Педагогсем çине тиев палăрмаллах ӳсрĕ. Ачасен те кăмăлĕ савăках мар: пĕри — ашшĕне, тепри тетĕшне çара ăсатнă.

Педагогика советĕнче ытти çулсенчи пекех пултарулăх кружокĕсем пирки калаçса татăлчĕç. Юрăпа ташă кружокне ертсе пыма каллех Николай Яковлевича хушрĕç. Нина Лаврентьевна учительсен драмкружокĕн ертӳçи пулма килĕшрĕ.

— Педучилищĕре вĕреннĕ чухне эпир К. В. Иванов произведенийĕ тăрăх «Нарспи» драма лартса панăччĕ. Спектакльте Коля — Пожеданов юлташ ĕнтĕ — Сетнер рольне вылянăччĕ...— тем пирки писев сĕрнĕ пекех хĕрелсе кайрĕ Нина Лаврентьевна.— Анаткасра та çавнах тепĕр хут лартмалла мар-и?

— Нина Лаврентьевна хăй Нарспи пулма килĕшет-и вара?— ыйтăва хирĕç ыйту пачĕç учительсем.

Шел, «Нарспи» драмăна ялта лартса пама май килмерĕ. Миккулĕн çара кайма ят тухрĕ. Тăвансемпе хурăнташсем салтака каякана вăрçăчченхи пекех хăйсен килĕсенче сăйласа ăсатаççĕ. Хреснашшĕ ăна хăйсем патне пыма ирех килсе чĕнчĕ. Кампа пĕрле çӳремелле-ши тесе пуç ватса ларнă вăхăтра Федор Никандрович килчĕ.

— Пыратăн-и манпа пĕрле хреснатте патне?— тӳрех ыйтрĕ упран Николай Яковлевич.

Лешĕ питех турткаланса тăмарĕ, килĕшрĕ. Ара, хирĕçлеме майĕ те çук: хунямăшĕ патне икерчĕ çиме мар каять вĕт.

Хреснашшĕн сад пысăк. Вăл панулми сĕткенĕнчен хăй йӳçĕтсе хатĕрленĕ эрехпе сăйларĕ. Çуттине те тутанкаларĕç. Сисĕнмеллех хĕрчĕç темелле.

Николай Яковлевич темле юрӑ та пӗлет, салтак юррине пачах тӗшмӗртмест.

— Федор Никандрович, калӑр-ха, тархасшӑн, эсир салтак юрри пӗлетӗр-и?— ыйтрӗ Николай Яковлевич урам тӑрӑх аслашшӗ патнелле утнӑ май.

— Мӗншӗн пӗлместӗп? Айта юрлар.

Иккӗш харӑс юрӑ пуҫарчӗҫ:

Апла тусан капла пулмӗ-ши?
Эп юрласан йӑнӑш пулмӗ-ши?

Пыраҫҫӗ-пыраҫҫӗ те каллех ҫак ҫаврӑма янӑратаҫҫӗ. Утсан-утсан урӑхларах юрлама пуҫларӗҫ:

Эп юрласан йӑнӑш пулмӗ-ши?
Апла тусан капла пулмӗ-ши?

— Эх, эси-ир, икӗ учитель, салтак юррине те пӗлместӗр,— хапха умӗнче кӗтсе илчӗ вӗсене аслашшӗ.— Эпир ҫапла юрлаттӑмӑр:

Яштак юман кашталӑх,
Яш ачасем салтаклӑх.

Аслашшӗ ӗнсине хыҫса илчӗ.

— Халӗ вара ҫапларах юрлама юрать:

Татас пулать чиенӗн ҫырлине.
Каяс пулать Гитлерӑн вӑрҫине.

Миккуле ӑсатма тӑванӗ-хурӑнташӗ, кӳршӗ-аршӑ йышлӑ пухӑнчӗ. Шкултан вара Федор Никандрович Беляевпа Александра Елизаровна Гусевӑсӑр пуҫне никам та ҫук. Кӗҫех Александра Елизаровна та таҫта кайса ҫухалчӗ. Урок ирттерме шкулалла чупрӗ ахӑр.

Сахвит аппан упӑшкипе пӗр ывӑлӗ фронтра ӗнтӗ. Мирун ҫар училищине вӗренме кӗнӗ.

— Эх, ачам, ачам! Санӑн та салтака каяс вӑхӑт ҫитрӗ. Зойӑпа та Пӑнчукпа виҫҫӗмӗрех епле пурӑнӑпӑр!..— йӗрсе ярасла кулянать амӑшӗ.

Миккуль кил-йышпа сывпуллашать. Ваттисем вӗрентнипе вӑл ҫӑкӑр сӑмси касса илет те ҫурмаран уйӑрать, ҫуррине ҫисе ярать, ҫуррине амӑшне парать. Кайран амӑшӗн ҫав ҫӑкӑра ывӑлӗн кӗсйинчен вӑрттӑн кӑларса илнӗ укҫапа пӗрле кӗлете ҫакмалла. Ачи чирлемесен — укҫи ҫуттипех выртать, чирлесен — хуралса каять. Вилес пулсан — ҫӑкӑр сӑмси те, укҫи те сулланма тапратаҫҫӗ тет. Ҫавӑн пек ҫӑкӑр сӑмсисем Сахвит аппа кӗлетре упӑшкинне

те, Люньканне те çакнă ĕнтĕ. Хурални-мĕнĕ те, суллан-ма пуçлани те курăнмасть-ха. Эппин, иккĕшĕ те сывă-чĕрĕ пулма кирлĕ.

Миккуле хапхаран куçне çыхса кăларасшăнччĕ — ку йăлана хисепе хума килĕшмерĕ вăл.

Шкул çырма леш енчи лапам вырăнта, кĕпер урлă каç-сан, Николай Яковлевич курах кайрĕ: пĕтĕм шкул класăн-класăн строя тăнă. Кашни класс умĕнче унăн руководи-телĕ. Мĕн курни Николай Яковлевич кăмăлне çемçетсех ячĕ. Шкулăн çĕнĕ директорĕ Ларионов каян салтака хирĕç утса пычĕ те çар çынни пек евитлерĕ:

— Хаклă Николай Яковлевич, сире çара ăсатма шкул коллективĕ хисеплĕ строя тăчĕ...

Вăл митинга уçрĕ те Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи çин-чен кĕске сăмах каларĕ. Учительсем те, Николай Яков-левич вĕрентнĕ ачасем те ăна фронтра паттăр пулма, киле çĕнтерӳпе тĕрĕс-тĕкел таврăнма сунчĕç.

— Халĕ пулас фронтовика сăмах паратпăр,— пĕлтерчĕ директор.

Николай Яковлевич малтан пĕтĕм строя çуталса кайнă куçĕпе пăхса çаврăнчĕ.

— Мана кунашкал пысăк хисеппе ăсатасса кĕтменччĕ. Тавтапуç сире, юлташăмсем, тусăмсем! Сильвестр Ларио-нович! Сире уйрăмах пысăк тав! Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ вăрçă вăхăтĕнче те ăнăçса пытăр! Шкул ачисене пурне те чун-чĕререн тав тăватăп, тăрăшарах вĕренме сунатăп!

Николай Яковлевич аллисене çĕклерĕ те пĕрле тытса чăмăртарĕ. Унтан директорпа юнашар строй умĕн утса тухрĕç. Кашни класпа пуç тайса сывпуллашрĕ, учитель-семпе пуринпе те алă тытса уйрăлчĕ. Александра Елиза-ровна вара ăна мăйĕнчен çакăнчĕ, тутинчен чуп турĕ.

Ăсатма кӳлнĕ лав тăвалла тапранчĕ. Николай Яковле-вичпа Нина Лаврентьевна ун хыçĕнчен юнашарах утрĕç.

— Акă сана асра тытса çӳремелĕх пĕчĕк парне!— кă-кăрĕ çумĕнчен кăларса пачĕ хĕр йĕкĕте йăлттам ал тутри. Ана вăл хăй тĕрленĕ, хĕррисене пурçăн çиппе чĕнтĕрленĕ.

— Ан çухат, хăвпа пĕрле каялла илсе таврăн!

Салтак ачи пама каякан Куçка Витти умĕнче хĕр вă-танса тăмарĕ: каччăна çепĕç аллисемпе ыталарĕ, виçĕ хут-чен чуп турĕ.

— Эс таврăннă çĕре çав хур амин мăйне тепĕр май пăрса лартатăпах е тĕкне пĕрчĕк хăварми тататăп...— шантарчĕ хĕр йĕкĕте кăмăлсăррăн та пăшăрхануллăн. Нина кама тарăхнине йĕкĕт çеç мар, кӳлнĕ çӳрен кĕсре те тĕшмĕртрĕ ахăр.

Хӗр куҫҫуль юхтарса ҫул варрине тӑрса юлчӗ, лав курӑнми пуличченех алӑ сулса тӑчӗ. Йӗкӗт тем тери ҫаврӑнса пӑхасшӑнччӗ, ҫапах апла тумарӗ — ваттисен йӑли хушмасть.

## Ашшӗ хыҫҫӑн ывӑлӗ

Тар шӑршине шӑршласа пӑхман салтак вӑрҫӑ ҫинчен мӗнех пӗлтӗр ӗнтӗ. Миккуль Пожеданов чунӗпе фронта кайма васкать, фюрер вӗслетсе янӑ ик уралла йытӑсемпе хӑвӑртрах вӑй виҫме ӗмӗтленет. Анчах ку ӗмӗте пурнӑҫласси кунран-кун кая юлса пычӗ. Малтан ӑна темиҫе чӑвашпа пӗрле Саранск хулинчи запас полкне ячӗҫ, вӗренӳ батальонӗнче ҫапӑҫу ӑслайӗсене хӑнӑхтарчӗҫ. Унта вӗренме вӑтам тата аслӑ пӗлӳ илнӗ ҫынсене суйласа илнӗччӗ. Тавҫӑруллисене, шанчӑк параканнисене. Яшсемпе пӗрле ҫулланнисем те пурччӗ. Вӗренӳ темиҫе уйӑха тӑсӑлмаллаччӗ.

Салтак шӑпи урӑхларах пулса тухрӗ. Учбатра вӗренекенсен пӗр пайне срокран чылай малтан приказпа кӗҫӗн командир ятне пачӗҫ. Ҫав ушкӑна Миккуль Пожеданов та лекрӗ — аслӑ сержант пулса тӑчӗ.

— Мускава ҫӑлма наступлени пуҫласса кӗтеҫҫӗ. Унта яраҫҫӗ пулинех...— калаҫкаларӗҫ юлташӗсем пӗр-пӗрин хушшинче.

Кӗҫӗн командирсен тӗшмӗртӗвӗ часах чӑна тухрӗ. Тӗлӗнмелли те ҫук: ҫав вӑхӑтра пӗтӗм тӗнче Мускав еннелле тӗмсӗлсе пӑхнӑ.

Историксем 1941—1942 ҫулсенче Мускавшӑн пынӑ ҫапӑҫусене икӗ тапхӑра уйӑраҫҫӗ. Пӗрремӗш тапхӑрта — 1941 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 30-мӗшӗпе раштавӑн 5-мӗшӗччен — икӗ уйӑх ытла тӗп хулана тӑшмантан хӳтӗлесе хӑвармалли ҫапӑҫусем пынӑ. Ку ҫапӑҫусене Юхма тӑрӑхӗнчи Анаткас чӑвашӗ Яков Миронович Пожеданов сержант та хутшӑннӑ. Иккӗмӗш тапхӑр вӑрахарах тӑсӑлнӑ — 1941 ҫулхи раштавӑн 5-мӗшӗнчен 1942 ҫулхи ака уйӑхӗн 20-мӗшӗччен. Тӑватӑ уйӑх ҫурра яхӑн. Ҫав хушӑра Хӗрлӗ Ҫар наступление куҫнӑ. Ку вӑхӑтри ҫапӑҫусене Яков Миронович хутшӑнман — Ҫурҫӗр Казахстанта Кокчетав хулинчи госпитальте сипленнӗ. Ун вырӑнне иккӗмӗш ывӑлӗ Николай Яковлевич аслӑ сержант Мускавшӑн хаяр ҫапӑҫусене ашшӗ пекех паттӑррӑн хутшӑннӑ.

Раштав уйӑхӗ пуҫламӑшӗнче, пите сивӗ чӗпӗтекен ирпе, шап-шурӑ пӑс кӑларакан пӑравус умлӑ-хыҫлах темиҫе хут

кăшкăртать, буферсем чăнкăр та чанкăр çапăнаççĕ, пуйăс малтан пуçласа вĕçне çитиех чĕтренсе илет. Туп-тулли эшелон Мускавра чарăнать. Маршевиксене тӳрех санпропускника, тĕрĕсрех каласан, мунчана илсе кайрĕç. Ун хыççăн тем пысăкăш çутă столовăйра апатлантарчĕç. Çул çинче икĕ талăк типĕ паекпа килнĕскерсене ку акăш-макăш лайăх пулчĕ. Тĕп хуламăр Мускав вар-хырăма çеç мар, кашнин чунне ăшăтрĕ темелле. Эппин, çĕр-шывăн тĕп хули хăй вырăнĕнчех. Эппин, вăл ывăлĕсене хисеплеме те пултарать.

Раштав уйăхĕн 4-мĕшĕнче çĕрле батальон çапăçава кĕмелли позицисем йышăнчĕ.

— Иккĕленмелли çук, тăшманăн Мускавалла талпăнас хăвачĕ сĕврĕлчĕ ĕнтĕ. Халĕ хамăрăн контрнаступлени пуçламалла. Кĕç-вĕç приказ парасса кĕтетпĕр. Иккĕленмелли çук, приказ пулатех,— пĕлтерчĕ пурне те комбат.

Вăл кĕске кĕрĕкпе, салтакăн çăлтăрлă çĕлĕкĕпе. Мăйĕнчен бинокль нихçан уйрăлми уртăннă. Çутă сăнне хуп-хура çăра мăйăхĕ кĕрнеклĕх кӳрет. Хăй вăл ним пирки те иккĕленмест, батальона та çаплах пулма хистет. Шел, вăтам çулсенчи çак патвар комбат хушамачĕ Миккуль асĕнче сыхланса юлаймарĕ.

Малта шоссе икĕ айккипе вырăс ялĕ. Батальон тĕллевĕ паллă: наступлени пуçласанах çав яла хăйĕн аллине çавăрса илмелле, чарăнса тăмасăр малалла талпăнмалла. Пухса пĕрлештернĕ темле артдивизион батальона пулăшма килсе çитрĕ. Тупăсене пехота окопĕсем хушшинех лартса тухрĕç. Приказĕ çаплалла пулнă ахăр. Артдивизионта ытларах таçта сыхланса юлнă гаубицăсем — 1908 çулхи тĕслĕхпе Тулăра кăларнисем. «Шăлсăр карчăксем» тесе кулаççĕ çав вĕсенчен.

Ак пуçларĕ хайхи артиллери тăшмана тустарма. Çĕр чĕтресе кăна тăрать. Гаубицăсен расчечĕсенче кадрта пулнă артиллеристсем. Вĕсем иккĕ-виççĕ персех тĕл лектереççĕ те, тăшман блиндажĕсемпе дзочĕсенчен турпас кăна тăрса юлать. Водокачкăн лаптак тăрринчен фашистсен пулемечĕ тăрăлтататчĕ. Шыв уçлапăскертен темиçе минутранах кирпĕч купи кăна пулса тăчĕ.

Тăшман ырă мара сисрĕ пулмалла: батальон позицийĕсем çине тупăсемпе миномесенчен урăм-сурăм пеме тапратрĕ. Телефон çыхăнăвĕ татăлчĕ. Йĕри-тавра шăхăрса та уласа тăрать, шартлатать те кĕрĕслетет. Тар шăрши сăмсана çурать. Юр тăпрапа хутăшрĕ.

Нимĕç танкĕсен моторĕсем кĕрлени хăлхана пырса кĕчĕ. Тикĕссĕн мар, уланă пекрех йăсласççĕ. Иккĕшне пуç хĕрлĕ,

«çăпатисемпе» çӳлелле тăратрĕç гаубицăсем. Виççĕмĕшĕ хускалми ланкса ларчĕ. Вăрах пурăнма пӳрмен свастикăллă танксем хыçĕнчен симĕс шинеллĕ гитлеровецсен речĕсем курăнса кайрĕç. Вĕсем çывăхарах çитсен команда янăраса кайрĕ:

— Огонь!

Стрелоксен ячейкисене тинех чун кĕчĕ: винтовкăсемпе карабинсенчен харăсах тĕллесе пеме пуçларĕç. Симĕс шинеллисене «максимпа» «дегтярь» та çулма тытăнчĕç. Малти ретрисем такăна-такăна ӳкрĕç те урăх тăраймарĕç. Тăшман эшкерĕ пăтрашăнса кайрĕ.

Лăпах çав хĕрӳллĕ вăхăтра «максим» сасартăк шăпланчĕ: пулеметчика пуля пырса тивнĕ. Пулемет станокĕ хыçне аслă сержант Пожеданов хăвăрт пырса выртрĕ.

— Акă сире, хăяматсем!— кăшкăрса ячĕ вăл, çавăнтах станоклă пулеметăн гашетки çине пусрĕ. Сехĕрленсе ӳкнĕ гитлеровецсем каялла чакма тытăнчĕç, анчах пурте мар ĕлкĕрчĕç: чылайăшĕн вилĕм кӳрекен тăхлан туянма тиврĕ.

Команда атакăна чĕнсен батальон окопсенчен ура кăшкăрса тухрĕ. Юратмаççĕ çичĕ ютсем алла-аллăн тытăнса çапăçма. Пĕтĕм эшкер васкасах шоссе çулĕн леш енне чакрĕ. Пирĕн батальон ăна унта та окопсем чавса çирĕплеме памарĕ.

— Аслă сержант, иккĕмĕш ротăна атакăна сан илсе каймалла пулать...— хушрĕ Пожеданова комбат.

Мĕн роти унта, унăн йышĕ пĕр взвод чухлĕ те юлман. Вилни çапăçу уйĕнчех выртать, аманни унтан тухма тапаланать. Рота командирĕ çамрăк лейтенант Чугунов Подольскри пехота училищинчен темиçе кун каялла кăна килнĕччĕ, халĕ аллисене ик еннелле сарнă, куçне чарнă, хускалми выртать. Батальонăн шоссе урлă каçмалла, фюрер янаварĕсене ял çывăхĕнчен инçех те мар кăвак пăрлă юхан шыв хĕрринелле хăваласа каймалла, унăн çӳллĕ çыранĕсенчен сиктермелле.

Паллах, ку юхан шыв хĕррине пурте мар çитĕç. Çапăçу çапăçăвах — çухатусăр пулмасть, анчах хăй унта çитеймессе пачах ĕненмерĕ Пожеданов. Çук, ăна вилĕм çĕнтереймĕ. Çук, ăна вилĕм тĕкĕнмесĕр иртĕ. Аслă сержант хушнипе рота миномечĕ çул леш енне темиçе мина кăларса ячĕ. Комбат пункчĕ енчен связист кабель катушки сӳтсе килет, шоссе еннелле васкать. Эппин, комбат та унталла куçма шутлать.

— Малалла, юлташсем!— кăшкăрчĕ те окопран тухрĕ аслă сержант.

Кĕске вăхăтăн чупа-чупа рота мăн çул патнелле çыв-

харчӗ. Икӗ енчи ротӑсем те унран юлмарӗҫ. Тӑшман тӳрӗрен тӗллесе лектересрен салтаксене ҫулӑн ҫӗкленерех тӑракан тӑпрасӗ сыхлать. Батальонтан мӗн юлни шоссе ҫулӗн ку енне пуҫтарӑнчӗ.

— Ман хыҫҫӑн! Атакӑна!

Ку командӑна комбат хӑй пачӗ. Ҫичӗ ют ҫыннисем таптаса хытарнӑ хуп-хура юр тӑрӑх вӑл малалла ыткӑнчӗ. Комбат командипе Пожеданов роти те, ытти ротӑсем те карах ҫӗкленчӗҫ. Ҫапӑҫу вӑраха пымарӗ. Шоссе леш енче икӗ батальон харӑсах тапранчӗҫ те, тӑшманӑн юхан шыв хӗррине ҫитиех чакма тиврӗ. Вӑл вӑхӑтлӑха кунта хӳтлӗх тупрӗ.

Ял пӗтӗмпех хамӑрӑннисен аллине куҫрӗ. Ҫапӑҫу шавӗпе хӑлхасӑрланнӑ, тӗтӗмпе чыхӑнакан салтаксемпе офицерсем ҫӗнтерӳпе хӗпӗртесе пӗр-пӗрне чун-чӗререн саламларӗҫ, тӑванла ыталашрӗҫ.

Батальона ҫапӑҫусенче питӗ йывӑр килчӗ. Пожеданов малти линире кунпа каҫ шутне те манчӗ ӗнтӗ. Тӑшман авиацийӗ пуҫ тӗлӗнчен пӗртте хӑпма пӗлмерӗ. Пирӗн истребительсемпе зениткӑсем чылайӑшне ҫӗрелле пуҫ хӗрлӗ чикелентерчӗҫ. Унашкаллисенчен хура тӗтӗм кӑна явӑнса юлчӗ тата кӗрӗслетсе ӳкни таҫта ҫитиех илтӗнчӗ. Пурпӗр сывлӑшра фашистсен хурчкисем хуҫа, мӗншӗн тесен пирӗн самолетсен шучӗ тӑшманӑннинчен нумай сахалрах.

Тӑр кӑнтӑрла пирӗн ҫар чаҫӗн позицийӗсем ҫине тӑшман бомбардировщикӗсем вӗҫсе килчӗҫ. Пулеметран тата винтовкӑсенчен пени вӗсене хӑратаймарӗ. Ҫав ҫӑхансем часть позицийӗсем тавра икӗ хут вӗҫсе ҫаврӑнчӗҫ — иккӗшӗнче те бомбӑсем тӑкрӗҫ. Юнашар ӳснӗ виҫӗ хыр тӑрринчи сӑнав пунктӗнчен ырӑ асаилӳ ҫеҫ тӑрса юлчӗ. Бомбардировщиксем виҫҫӗмӗш хут вӗҫсе ҫаврӑннӑ чухне вӗсен ҫуначӗсем айӗнчен пачах ӑнланмалла мар япаласем татӑлса анчӗҫ. Ай тур-тур, мӗн тери хӑрушла улаҫҫӗ! Сехре хӑпса тухрӗ. Ку япаласем бомба тавраш мар, пушӑ пичӗкесем иккен. Хӑратасшӑн ҫапла хӑтланаҫҫӗ ӗнтӗ.

Зенит тупписем унта-кунта кӑна перкелерӗҫ. Бомбардировщиксене хирӗҫ тӑма пирӗн пӗр истребитель те ҫӗкленмерӗ. Пур-ши вӗсем е ҫук-ши? Ҫуках пулсан ӑҫта кайса кӗнӗ? Пожеданов шучӗпе, Хӗрлӗ Ҫарӑн авиаци питех те вӑйлӑ пулмалла. Вӑрҫӑ умӗн сывлӑхлӑ яш-кӗрӗм летчик пуласси нчен пысӑкрах чыс ҫуках тесе шутлатчӗ. Ав Ҫаҫук аппа ывӑлӗ Николай Васильевич Щукин та Хусанта авиаконструктора вӗренчӗ. Миккулӗн иккӗмӗш учителӗ Константин Димитриевич Кудрявцев темле майпа Ҫачинӑри авиаци училищине вӗренме кӗме пултарнӑччӗ. Вӑл яла

курма килсен каласа панă тăрăх, çав училищĕрех Василий Сталинпа Тимур Фрунзе вĕреннĕ. Пĕр тăван Алексей, Степан тата Владимир Микоянсем те тӳпене çĕкленмелли çунатсене кунта туяннă.

— Эх, кунта тепĕр Талалихин кирлĕччĕ. Иккĕленмелли çук, вăл хурчкасене пуçтахланма памĕччĕ,— ассăн сывласа илчĕ комбат, тăшман бомбардировщикĕсем каллех вĕçсе килнине курсан.

— Кам вара вăл?— ыйтрĕ пĕри.

— Вуламан-и? Çар авиацийĕ шкулĕнчен вĕренсе тухнă, летчик-истребитель пулса тăнă. Виç çул каялла агрессивлă финсене ĕнселенĕ. Ку вăрçăра звено командирĕ, эскадрилья командирĕн заместителĕ...

— Пултăрах! Мĕнех вара?

— Вăт мĕнех сана! Хăйĕн самолечĕпе тăшман самолетне пырса тăрăнтарнă. Таранланă эппин. Çапла майпа тăшман бомбардировщикне çĕрле Мускав çине вĕçсе кĕме чарнă. Урăхла май пулман унăн...

— Халь эпир ăна тепĕр таран тума чĕнесшĕн-и?

— Çук çав... Килеймест. Чĕнсен те, йыхрав ярсан та унтан килеймеççĕ... Таран хыççăнхи çапăçусенче тăшманăн тата пилĕк самолетне тĕп тăвать. Подольск çывăхĕнчи сывлăшри çапăçу Виктор Васильевич Талалихиншăн юлашки пулать. Унта паттăрла пуç хурать...

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче тĕлĕнмелле пысăк паттăрлăх кăтартнине Пожеданов пĕрре кăна мар хăй куçĕпе курчĕ. Çакăн çинчен каярахпа, госпитальте выртнă чухне чылай çĕннине пĕлчĕ. Акă 1942 çулхи нарăс уйăхĕнче Старая Русса тĕлĕнче тăшман самолечĕсен пысăк ушкăнĕпе çапăçса Тимур Фрунзе — граждан вăрçинче чапа тухнă М. В. Фрунзен тăван ывăлĕ — паттăрла вилет. Паттăрĕсем пур-ха, анчах самолечĕсем те кирлĕ-çке-ха.

Тăнăç вăхăт килсе тухсанах Пожеданов вăрçă çинчен, Тăван çĕр-шыв пирки тарăн шухăша путать. Пĕр кас Шупашкара «Чăваш коммуни» хаçат редакцине «Манăн пурăнас килет» ятпа чылаях вăрăм çыру çырчĕ.

«Уй-хирсемпе вăрмансене сивĕ хĕл шурă çиттипе витрĕ. Кăнттаммăн ларакан йывăççем шурă тум тăхăнчĕç. Вăрманта нимĕн шухăшсăр савăнса юрлакан вĕçен кайăксен сасси илтĕнмест ĕнтĕ. Хамăр юратакан чăпар куккукăн сасси те çитес çуркуннесĕр илтĕнес çук.

Эпĕ çуркуннене, пĕтĕм çĕр-шыва илем кӳрекен çуркуннене, вăрçă шавĕ лăпланнă çуркуннене кĕтетĕп. Çавăн пек çуркунне — хĕлле-и, çулла-и — пурпĕрех çитет.

Манăн пурăнас килет! Манăн çут тĕнче илемĕпе савă-

нас килет. Тӳрем уй-хирлĕ Чăваш çĕр-шывĕнче пĕр ялта манăн юратнă тусăм пурăнать. Вăл мана çĕнтерӳпе таврăнасса кĕтет. Манăн хам çуралнă тăван кил-çуртра тăван атте-аннене йăпатса телейлĕ пурăнас килет. Манăн тăван çĕр-шыва татах та ытларах илем кӳрессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлессĕм килет.

Манăн çын пек пурăнас килет. Çавăнпа та тискер кайăк пулса кайнă фашиста вĕлермелле. Çавăнпа эпĕ пеме — винтовка, чикме — çивĕч хĕç тытрăм. Пирĕн телейлĕ пурнăçа ишĕлтерме хапсăнакан тăшмана вĕлермелле. Унсăрăн вăл пире вĕлерет. Эпĕ Тăван çĕр-шывăн мĕн пур ывăлĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç хаяр кĕрешĕве тухрăм. Çак кĕрешӳре эпĕ хамăн пурнăçа шеллемĕп, мĕншĕн тесен эпĕ Тăван çĕр-шывшăн, хамшăн çапăçатăп.

Çапăçу хирĕнче эпĕ хăрама пĕлместĕп. Мĕншĕн тесен хăравçă — вилет, унăн виличченех ячĕ çĕрет. Хăюлли — тăшмана çĕнтерет, хăюлли вилсен те унăн ячĕ çĕрмест, ĕмĕре юлать.

Манăн пурăнас килет! Анчах малтан тăшмана çапса аркатмалла. Тăшман аманнă тискер кайăк пек хăй хыççăн юнлă йĕрсем хăварать. Вăл тем тума та хатĕр пулса шăлне шатăртаттарать. Ана текех иртĕхме памалла мар, хăвăртрах пĕтермелле.

Пирĕн пурăнас килет! Апла пулсан пурте — фронтра та, тылра та — хăвăрăн мĕн пур вăйсене çĕнтерӳ туптанă çĕре парăр!»

Пожеданов çырăва тепĕр хут вуласа тухрĕ. Иккĕленсе тăчĕ-тăчĕ те ăна салтак почти урлă ячĕ. Вăл хаçатра пичетленни çинчен каярахпа госпитале ярса панă çыруран пĕлчĕ.

Мускава хăрушлăхран хăтарас тĕллевпе пуçланă наступлени ăнăçлă пулса пычĕ. Шартлама сивĕсене тата юртарăннине пăхмасăр Хĕрлĕ Çар ял хыççăн ял, хула хыççăн хула ирĕке кăларчĕ. Мускав çинелле талпăнмалли çарсен ушкăнĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкии нимĕç фашисчĕсен командованине пăшăрхантармаллипех пăшăрхантарать. Фюрер çакнашкал приказ парать: пĕр утăм та каялла чакмалла мар, кашни ялпа поселокран çакланмалла, юлашки салтакчен, юлашки патронпа гранатăччен хӳтĕленмелле. Çавнашкал хаяр приказ та усă кӳреймест. 1942 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Можайска штурмласа хăй аллине илет. Ну хăтланнă та вара ку хулара гитлеровецсем! Тыткăна лекнĕ совет салтакĕсем валли темиçе концлагерь тунă. Çак тĕллевпе турă çуртне — Никольски со-

бора та — хĕрхенсе тăман. Патриотсене хула халăхĕ умĕнче пере-пере пăрахнă, çака-çака вĕлернĕ.

Можайска илессишĕн пыракан штурма Николай Пожеданов та сайралса юлнă ротипе хутшăнчĕ. Çапла, ашшĕн ку хулана тăшман аллине парса хăвармалла пулчĕ, халĕ акă ăна ывăлĕ ирĕке кăларать. Шел, аслă сержант хула урамне кĕрсе кураймарĕ, ун çывăхĕнчи пĕр çапăçура сулахай пĕççи пĕçерсе кайрĕ, çăм атă ăшĕнче юн лачăлтатма пуçларĕ.

Мускава хӳтĕлесе хăварассишĕн тапраннă наступлени мĕнпе вĕçленнине, кунта вермахт планĕсем путланса ларнине аслă сержант Хусанти госпитальте пĕлчĕ. Ку вăл Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче Хĕрлĕ Çар тунă пĕрремĕш пысăк çĕнтерӳ пулчĕ. Уншăн аслă сержант пĕтĕм палатăпа пĕрле савăнчĕ. Çурăлакан пуля пĕçĕ шăммине сиенленĕрен ăна госпитальте хура кĕркуннечченех йăваланма тиврĕ. Çав хушăра кунта тăван йăмăкĕ Зоя тата Нина Лаврентьевна килсе кайрĕç. Сывалса çитсен хăйне те Хусантан Анаткаса çитсе курма пилĕк кун пачĕç. Чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче аслă сержант икĕ ентешĕпе пĕрле районти çар комиссариачĕ хушнă тăрăх Владимир хулине çул тытрĕ.

## *ИККĔМĔШ ПАЙĔ*
## *«ТЫЛРИ ЙĔКЕХУРЕСЕМ»*

### «ÇИЙĔПĔР ТЕ ÇЫВĂРĂПĂР...»

### Тăван тăвана курасшăнах çав

Владимир хулинче Даниловсен аслă тетĕшĕ Кĕçтенкки коммуналлă хуçалăхра темле пысăк вырăнта ĕçлет.

— Ну, мĕнле, малтан тетене кĕрсе курар-и е чаçе çитсе вырнаçар-и?— ыйтать Иван Данилович вагон урапісем тикĕссĕн кăлтăртатнă май тĕлĕрсе пыракан Петр Петровичран. Хуравне чылайран тин илтет:

— А мĕн? Çитмен вĕт-ха. Çул шучĕпе те, командăра та асли эсĕ. Эппин, асли пек пул: ыйтăва хăв татса пар.

— Тете патне кĕрес пулсан сире те, Николай Яковлевич, хамăртан хăвармастпăр. Çавăнпа эсир мĕнле канаш парассине те пĕлес килет.

Пожеданов пуçне ялт çĕклет, Иван Даниловича куçран тĕллесе пăхать. Пăхасса пăхать — хăй нимĕн те шарламасть. Анланать: тăванăн тăвана курас килетех ĕнтĕ.

— Манăн никамран ытла Кĕçтенкки ачисене курас килет. Розăпа Тимкка еплерех ӳсеççĕ-ши? Эпĕ вĕсене тăван яла пырса кайнăранпа та курман вĕт-ха,— пуçне аллипе тĕрелет Петр Петрович.

— Урăх курнăçма те пӳрнĕ, те пӳрмен. Фронта каймасăр юлмастпăр-çке-ха. Мур илсен илтĕр, тӳрех тете патне кĕретпĕр,— чылайччен шухăшласа пынă хыççăн татăклăн каласа хурать Иван Данилович.

Пуйăс хăвăртлăхне пысăклатать. Вагон урапісем шалт та шалт тума тытăнаççĕ. Командăри виçĕ чăваш чĕрине пăшăрхану туйăмĕ ярса илет.

— Канашра виçĕ талăк кăлăх лартăмăр. Чаçре пире кĕтеççĕ вĕт-ха,— иккĕленет пĕри.

— Тӳррипе калас тăк, пирĕн хăнана мар, фронта çитме васкамалла,— аса илтерет тепри.

— Вăхăтра çитмесен, мур илесшĕ, чаçре пĕçерккĕ те лекме пултарать,— ассăн сывласа илет виççĕмĕшĕ.— Юрĕ, тете патне чаçрен увольнительнăй илсе кайăпăр.

Çакăнпа виççĕшĕ те килĕшеççĕ. Владимир хулине пуйăс ирпе пилĕк сехетре çитсе чарăнчĕ.

— Чаçре халь подъем та туман-ха. Унччен Константин Данилович патне кĕрсе тухма та ĕлкĕрĕпĕр. Ĕçе халех тухса каймасть пулĕ-ха,— çирĕп сасăпа сĕнчĕ Иван Данилович.

Асли — кĕçĕнни çине, кĕçĕнни — асли çине пăхса илчĕç. Урăх каласса тăмарĕç, трамвайпа Константин Данилович пурăнакан урамалла çул тытрĕç. Вĕсене ыйхине сирсех ярайман инкĕшĕ уçса кĕртрĕ.

— Кĕçтенкки сывăрать-им-ха?— харăсах ыйтрĕç Даниловсем сывлăх сунса алă тытсанах.

— Сывăрать... Эрне каялла фронтран похоронка килчĕ. «Тăван çĕр-шывшăн çапăçура паттăрла пуçне хунă» тесе çырнă. Акă вулăр...

Инкĕшĕ ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ. Даниловсем иккĕшĕ те ларнă çĕртех хытса кайнă пек пулчĕç. Нихăшĕ те сăмах шарламарĕ, чĕрене ыраттармалла ĕсĕклекен инкĕшне йăпатма шутламарĕ. Паллă: çавнашкал пысăк хуйха йăпатнипе иртерме çук.

— Розăпа Тимкка ăçта тата?— пĕлесшĕн пулчĕ Иван Данилович чылайччен пусăрăнса ларнă хыççăн.

— Ах, ах, тăмсай вĕт эпĕ, паçăрах сăмавар лартмаллаччĕ... Ну, юрĕ, ĕçе кайиччен чей ĕçтерсе ĕлкĕретĕп-ха.

Инкĕш хыпалансах сăмавар чĕртсе ячĕ, примус çине сĕлĕ пăтти пĕçерме лартрĕ, каласа пĕтерейми сăмахсем пур пек, пĕрмай хыпăнса калаçрĕ.

— Розăпа Тимкка тăхлачăр ялĕнче. Эп ĕçре чухне унта кайса килме пултаратăр. Паян чаçе каясси çинчен ан та шутлăр. Чĕре вутсăр çунать — хуть эсир лăплантарса хăварăр. Механизациленĕ полк текенни сире кĕтсе илеймерĕ, виçĕмкунах фронта тухса кайрĕ. Духовой оркестрпа ăсатрĕç. Эппин, эсир халь тин вăр-вар пулни ниме те пĕлтермест...

Йĕпе çине сапа тенĕ пек, виçĕ чăваш пĕр хуйхăллă хыпар хыççăн тепĕрне пĕлчĕ. Çĕнĕ, механизациленĕ полк хăçан пуçтарăнать-ха?

Иван Данилович кутамккинчен сĕтел çине шăрттан, ытти кучченеççем кăларса хурать. Инкĕш чей ĕçсенех завода ĕçе каять, виçĕ чăваш тăхлач ялне çитсе курать. Розăпа Тимкка самаях çитĕннĕ, анчах ашшĕсĕр тăрса юлнăран иккĕшĕ те пусăрăнчăк кăмăллă.

Механизациленĕ запас полк штабне чăвашсем çар комиссариачĕн предписанийĕнче кăтартнă адреспа тепĕр кун ир-ирех шыраса тупрĕç. Полк валли граммофон пластин-

кисен завочĕн баракĕсене уйăрса панă иккен. Паянхи куна казармăсем пушă. Кунта пĕчĕк штаб кăна тăрса юлнă. Начальникĕ, çӳллех мар капитан, çар комиссариачĕн предписанийĕпе паллашрĕ те чакăр куçне чăвашсем çине тĕллерĕ:

— Сирĕнтен хăшĕ учитель? Ахă... Хăшĕ тракторист? Юрать. Халлĕхе казармăна кайăр. Дневальнăй, ăсатса яр.

## Эсир камсем?

Казармăра нарсем виçĕ хутлă. Виçĕ чăваш иккĕмĕш хутне хăпарса выртрĕç. Кутамккисене пуç айне хучĕç, çиелти тумпа витĕнем пек турĕç.

— Капла фронта часах çитетпĕр. Унта çитмесĕр ан вăратăр мана,— шӳтлерĕ Пожеданов. Вăл куçне хупса та ĕлкĕреймерĕ, казармăна штабран хайхи дневальнăй чупса килчĕ.

— Кам кунта Пошехонов?— çухăрса ячĕ вăл. Хăйне никам та хуравламаннине кура тарăхса кайрĕ:— Хăяматсем, фронта кайичченех кăнтăр-им?

— Мĕн кăлăхах çуйăхатăн? Пирĕн хушăмăрта Пошехонов çук, Пожеданов юрамасть-и?— сасă пачĕ Иван Данилович.

— Ну, хăшĕ сиртен учитель?

— Эпĕ учитель. Хăш класра урок ирттермелле?

— Урок... Урок... Сире штаб начальникĕ хăй патне тăхтаса тăмасăр пыма чĕнет.

Темиçе минутран Пожеданов капитан умне йăрст тӳрĕ тăсăлса тăчĕ, чĕннĕрен килни çинчен устав хушнă пек каласа пĕлтерчĕ. Çар çынни чĕлхипе доклад тума пĕлекен тăпăл-тăпăл тумланнă çамрăк учитель капитана килĕшрĕ пулас, унран кăсăкланараххăн çапла ыйтрĕ:

— Çар ĕçне ăçта вĕреннĕ эсир?

— Педагогика училищинче, Осоавиахим лагерĕнче, кĕске вăхăт хушши Саранскри запас полкра тата кăштах фронтра...

— Фронтра? Хăш фронтра?..

— Хĕрĕх пĕрмĕшĕнчи кĕркунне Мускава хӳтĕлеме тивнĕччĕ...

— Апла эппин... Айтăр манпа пĕрле!

Капитан Пожеданова хăйпе пĕрле штаб картишне илсе тухрĕ.

— Çак ушкăна строя тăратăр.

— Сире итлетĕп,— честь пачĕ капитана Пожеданов. Унтан ҫынсем еннелле ҫаврăнса тăчĕ:

— Слушай мою команду! В одну шеренгу становись! Равняйсь! Отставить! Вы чего выпятили живот? Убрать! Равняйсь! Смирно! По порядку номеров рассчитайсь!

Унтан строй утăмĕпе капитан патне пычĕ, честь пачĕ:

— Капитан юлташ, эсир хушнипе вун сакăр гвардеец строя тăчĕ!

— Здравствуйте, товарищи!

«Гвардеецсем» вара капитана кам мĕнле пĕлет, ҫапла хуравларĕҫ: «здрасть», «здравие желаю», «здравствуй»...

— Отставить!— янăраса кайрĕ каллех Пожеданов команди.— Ҫапла хуравламалла: «Здравия желаем, товарищ капитан!» А ну, пурте пĕрле тепĕр хут калатпăр: «Здравия желаем, товарищ капитан!»

Штаб начальникĕ командирпа та, «гвардеецсемпе» те кăмăллă юлчĕ.

— Эсир хирĕҫлетĕр-и, хирĕҫлеместĕр-и, ҫак сехетрен пуҫласа Пожеданов аслă сержант сирĕн командир пулать. Малашне сирĕн пурнăҫ шăпи унран килет.

Капитан ҫапла каларĕ те вăрт ҫаврăнса штаба кĕрсе кайрĕ, аслă сержанта палламан ҫынсемпе пĕчченех тăратса хăварчĕ. «Вольно!» команда парса Пожеданов строй умĕпе пĕр майлă та тепĕр майлă утса тухрĕ. Камсем кусем? Пурте пĕрешкел фуфайкăпа, ватка шăлаварпа, рабочи ботинкипе, ула-чăла кĕпепе. Командир стройри ҫынсем ҫине тинкерсе пăхать, стройрисем ҫамрăк командира сăнаҫҫĕ. Сасартăк ун пуҫĕнче тавҫăруллă шухăш вĕлтлетсе иртрĕ:

— Владимир тĕрминчен-и эсир?

— Ҫавăнтан. Урăх ăҫтан пулар?— ўркевлĕн хуравларĕҫ стройрисем.

— Зексем, уркăсем эпир...

— Аристансен эшкерĕ...

— Паянтан пуҫласа эсир гвардеецсем пулмасан та, салтаксем. Пурсăра та ҫар уставне хисеплеме тивет. Сирĕн хушаматăр мĕнле? Кудряшов. Кăтра ҫӳҫĕре казармăна кĕрсенех кастарăр. Сирĕн те хушаматăр пур-и? Бородов юлташ, сире сухалпа сывпуллашма тивет. Хĕрлĕ Ҫарта рядовой салтаксем те, генералсем те сухалсăрах аптрамаҫҫĕ. Ҫук, аҫу сухал хырса курманнине шута хумастпăр.

Пожеданов строя салатрĕ, пурне те хăй хыҫҫăн утма хушрĕ. Хура сăнлă йăрă салтак ун хыҫĕнченех пычĕ. «Ку цыган пулмалла»,— тĕшмĕртрĕ Пожеданов.

— Ыйтса пĕлме юрать-и, юлташ командир? Эсир вырăс

мар пулас, хăш халăх çынни? Фронтра пулман-и-ха?

Салтак вăрăмрах ярса пусрĕ, командирпа танлашрĕ те унпа юнашар утса пычĕ.

— Хушаматăр?— хуравлас вырăнне çирĕппĕн ыйтрĕ командир.

— Романухин эпĕ. Ятăм Алексă.

Командир салтаксем еннелле çаврăнчĕ.

— Вăт кунта Романухин юлташ эпĕ кам пулнипе кăсăкланать. Чăваш ачи эпĕ, юлташсем. Фронтра пулнă, анчах вăрах мар. Мана яланлăх командир тесе ан шутлăр. Паян эпĕ командир, ыран ман вырăна Романухина лартатпăр...

Хыçалти ретре калаçу урăххи çинчен пычĕ.

— Капитан ахалех ун пек каларĕ: пирĕн пурнăç шăпине малашне командир татса парать терĕ. Ман шутпа, хăйĕн пурнăç шăпи пиртен килме пултарать. Фронта каярха, унта уж курăпăр...

Ку Исиодор Поганников сасси пулчĕ. Кавĕрле Аничкин вара йĕрĕнереххĕн çапла каласа хучĕ:

— Хăйне сăпайлă тытма пĕлет. Интеллигент чĕппи пулĕ-ха. Çемçешке çеçке, виç кунлăх командир...

— Ман шутпа, чăваш ачи-пăчи шип-шип сăмса çеç-ха. Пĕр-пĕр хĕрпе çылăха кĕме те ĕлкĕреймен пулмалла. Куçĕ уяр çанталăкри тӳпе пекех таса. Нимĕн те курман вăл, курмасăрах вилме те пултарать.

Ку Григорий Легкоступов пулнине командир каярахпа пĕлчĕ. «Гвардеецсене» вăл казармăра нарсем çине вырнаçтарчĕ. Дневальнăй тăратасшăнччĕ — шухăша çийĕнчех пăрахăçларĕ. Нушине тĕрмере те пайтах курнă пулĕ-ха, май пур чухне канччăрах. Иккĕмĕш хутри нар çине хăпарса хăй те пуç урлах витĕнсе выртрĕ. Анчах вăрах «хуп турттарма» май килмерĕ ăна. Хайхи лара-тăра пĕлмен цыган Романухин вăратрĕ ăна.

— Сирĕнпе калаçмалли пур пирĕн,— аллине чĕри тĕлне тытрĕ цыган. Вăл мĕн калани ыйхăллă Пожеданов пуçне пачах кĕмест. Хăйне сăлтавсăр вăратрĕç тесе шутлать.

— Ан чăрмантарăр мана, кайран калаçатпăр. Халлĕхе çывăрăр, çывăрăр май пур чухне,— хăтăрса тăкать вăл Романухина.

— Çийĕпĕр те çывăрăпăр....—мăкăртатать Романухин.

— Ашарбыз да йыклырбыз...— хушса хурать Энвер Булатов тутар.

Романухинпа Булатов мĕн ĕрлени ыйхăллă Пожеданов пуçне пурпĕр кĕмерĕ. Иккĕшĕ те кăмăлсăррăн каялла çаврăнса каяççĕ. Хăйне пули-пулмишĕн чăрмантараççĕ тесе

шутласа Пожеданов тепӗр хут ыйха путать. Мӗн калӑн, ҫамрӑк чухне ыйхӑран тутли те ҫук.

Ҫур сехет иртрӗ-и, ытларах-и, цыган Пожеданова каллех вӑратрӗ.

— Ну, мӗн кирлӗ сана? Хӑлха чикки-и?— тарӑхса кайрӗ командир. Лешӗ ун ҫине тилмӗрсе пӑхнине тата ун хыҫӗнче тӑваттӑн тӑнине асӑрхасан сассине пусарчӗ:

— Калӑр.

— Хы-ырӑм пакӑртатать. Паян ҫӑвара пӗр хӗлхем те яман...— ҫаплах куҫӗнчен пӑхрӗ командира Романухин.

— Кам чарать вара сире ҫиме? Ҫийӗрех... А-а, паяна паек паман-и? Апат-ҫимӗҫ аттестачӗ пур-и сирӗн? Ҫук эппин.

Пожеданов нар ҫинчен хӑпӑл-хапӑл сиксе анчӗ, Иван Данилова командӑри салтаксен списокне тума хушрӗ; хӑй хӑвӑрт тумланса штаба чупса кайрӗ, унтан апат-ҫимӗҫ аттестачӗпе таврӑнчӗ.

— Гренадерсем, итлӗр ман командӑна! Пӗр шеренгӑна становись!— тӑсрӗ вӑл сылтӑм аллине. Пурте строя тӑрсан ҫапла пӗлтерчӗ:— Продпункта кайса 21 ҫын валли виҫӗ кунлӑх типӗ паек илмелле. Кама яратпӑр?

— Кама шанатпӑр темелле мар-и?— кӗтмен ҫӗртен илтӗнсе кайрӗ Иван Даниловӑн хулӑн сасси.— Пӗлнӗ-пӗлменнине ярсан пурсӑмӑр та выҫӑ лармалла пулмӗ-и?

Пурте ун еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗҫ. Пӑхасса пӑхрӗҫ — ӑна хирӗҫлекенни тупӑнмарӗ. Ҫынсем пӗр-пӗрне пӗлмеҫҫӗ, пӗри теприне шанмасть. Кӑштахран Даниловпа пӗр шухӑшли сасӑ пачӗ.

— Ман шутпа, хӑвӑрӑннисене ярсан шанчӑклӑрах пулать.

Ҫакна ытти чухне хӑйне чӗмсӗртерех тытакан, ҫав вӑхӑтрах кашкӑрла пӑхакан Исиодор Поганников сӗнет. Пожеданов пуҫӗнче пӗр шухӑш тепӗрне хӑвалать. Тӗрӗс калать Исиодор: продпункта Даниловсене ярсан панӑ продукт казармӑна пӗр мӑскалӗ[1] ҫухалми килет. Анчах командир педагогла шухӑшласа пӑхать. Апла тума юрӗ-ши? Командир хӑйӗн салтакӗсене шанманнине пӗлтермӗ-ши ку? Ыттисемшӗн явап тытасси чи малтанах вӗсене шанассине пӗлтерет. Иван Данилов ҫине те, Исиодор Поганников ҫине те командир куҫ хӳрипе сиввӗнреххӗн пӑхса илчӗ. Ячӗпех калас тӑк вӗсем иккӗшӗ те йӑнӑшаҫҫӗ. Мӗн тесен те урӑхла тумалла.

Командир ранжирпа тӑратнӑ стройӑн сылтӑм флангне пырса тӑчӗ:

---

[1] Мӑскал — вырӑсла: золотник. 4,26 г яхӑн.

— Сирӗн хушаматӑр мӗнлеччӗ?

— Артамонов, юлташ командир! Павел Артамонов...

Сулахай флангри, чи лутри, Илья Лилипутов пулчӗ.

— Артамонов тата Лилипутов! Продуктсем илме иксӗр каятӑр. Астӑвӑр: эпир тутӑ пуласси е выҫӑ ларасси иксӗртен килет. Ан манӑр: халӗ эпир пурте хамӑрӑннисем. Ахӑртнех, пирӗн фронта та пӗрлех каймалла пулать. Йывӑр амансан мана та ҫапӑҫу хирӗнчен сирӗнех йӑтса тухма тивет. Қайӑр, йӑпӑр-япӑр пулӑр.

Кунашкал вӑрӑм сӑмах командир салтаксем умӗнче пӗрремӗш хут каларӗ. Те шӑрӑхран, те явaплӑ приказ пама тивнӗрен ҫамки тарласа кайрӗ. Продуктсем хурса килме хутаҫсем тупса парсан ят тухнисем иккӗшӗ те продпункта тухса лапплатрӗҫ. Қаясса кайрӗҫ, анчах пӗртте йӑпӑр-япӑр пулмарӗҫ. Ик сехет те, виҫҫӗ те иртрӗ, вӗсем ҫаплах таврӑнмаҫҫӗ-ха. Продпункчӗ инҫех те мар, чугун ҫул вокзалӗ ҫумӗнче, казармӑран ик километрта кӑна. Ҫур сехет утмалӑх. Қалла-малла пӗр сехет пултӑр, унтан ытла мар.

Продпункта кайнисем вӑрах ҫӳрени пирки чӗлхипе чан ҫапма чи малтан Исиодор Поганников пуҫларӗ:

— Қӗтмелли ҫук вӗсене. Продуктсене пасарта сутса киккирикӗсене те хӗретнӗ пулӗ-ха. Халь вӗсене кунта вӗренпе сӗтӗрсе те илсе килейместӗн. Напрасно хӑвӑрӑннисене ямарӑр... Қаларӑм — итлемерӗр...

Ыттисем те пӑшӑрханни сисӗнет: пӗри те тепри кантӑкран пыра-пыра пӑхать. Пожеданов та лӑпкӑлӑхне ҫухатрӗ пулас: Иван Данилов патне час-час пырать, куҫӗнчен ыйтуллӑн пӑхса тӑрать-тӑрать те ним каламасӑр каялла ҫаврӑнса каять. Ун умне Исиодор Поганников тепре пырса тӑрсан вӑл вӑрт ҫаврӑнчӗ те штаба кайрӗ, унтан тӳрех продпункта шӑнкӑравларӗ.

— Ҫапла, сирӗн икӗ салтакӑр кунта. Продуктсем тинрех тиесе килчӗҫ. Халех парса яратпӑр,— пӗлтерчӗҫ продпунктрисем.

Пожеданов чӗри лӑштах пулчӗ. Икӗ салтак тулли хутаҫсемпе килсе ҫитсен командир продуктсенчен пӗр пек тӳпесем тума Қавӗрле Аничкинпа Степан Воробьева хушрӗ. Вӗсем пӗрчӗ таран пӗр пек хурса тухма тӑрӑшнине пӗтӗм команда сӑнать.

— Хатӗр!— пӗлтерчӗҫ вӗсем ҫур сехетрен.

Урайне сарнӑ ҫиттисем ҫине вӗсем кашни продукта уйрӑм рете тӳпен-тӳпен хурса тухнӑ. Сухари, вир кӗрпи концентрачӗ, сахӑр тата махорка тӳписем тӗлме-тӗл ларaҫҫӗ.

— Тăрăшмаллипех тăрăшнă эсир,— мухтаса илчĕ иккĕшне те командир. Лешсен пичĕсем çинче йăлтăр кулă палăрчĕ.— Ку тата мĕн?— сасартăк кăшкăрса ячĕ командир.

Сылтăм хĕрринчи ретре тӳпесем икĕ хут пысăк.

— Командир юлташ, ку тӳпесем сирĕн валли...— ăшшăн йăл кулчĕç типĕ паека пайлакансем.

— Мĕн-и?.. Ман хырăм иккĕ-им? Халех пĕрпеклетĕр. Çитменнине тата эпĕ халиччен çăвара чикаркка чикмен. Мана тивĕçлĕ махоркăна ыттисем çине пайласа ярăр.

Аничкинпа Воробьев пичĕсем çинчи йăл кулă çухалчĕ. Вĕсем лайăх тăвасшăнччĕ — урăхла пулса тухрĕ.

— Малтанах каларăм сире, итлемерĕр,— пырса чашкăрса кайрĕ Поганников. Ыттисем нимĕн те шарламарĕç, тӳпесене пĕрпеклетнине ырласа пăхса тăчĕç. Тепĕр минутран командир Степан Воробьева стена çумне, Энвер Булатова тӳпесем патне тăратрĕ.

— Кама? Кемге?—ыйтать Булатов.

— Хăвна, Энвер шăллăм,— хуравлать лешĕ.

— Ку кама?

— Тихон Бородова!

— Э, çук!— сиксе тăчĕ командир.— Сухалне хырман, паек лекмест.

— Сухалне хырма вăхăт çук унăн: картла выляса пушанаймасть,— ихĕлтетсе илчĕ тахăшĕ.

— Ку кама?

— Геннадий Кудряшова!

— Кудряшов тăхтатăр: çӳçне кастарман!— валеçĕве каллех хутшăнчĕ командир.— Поганников та тăхтатăр: сухалне хыриччен выçсах вилмест...

Паексăр тăрса юлас килмест иккен: Исиодор Поганников кăмăлсăррăн мăкăртата-мăкăртата сухалне хырма ларчĕ. Петр Данилов старшинаран çӳç касакан машинка кайса илчĕ те Геннадий Кудряшовăн пуçĕ çинчи илеме касса хĕрхене-хĕрхенех урайне тăкрĕ. Тихон Бородов вара командиртан тепрер куп сухалпа çӳреме ирĕк ыйтрĕ те, ун ыйтăвне тивĕçтерме тиврĕ.

## Пĕлмесен — вĕрентеççĕ, итлемесен — итлеттереççĕ

Тепĕр ирхине Пожеданов штабран килсен салтаксене мунча кĕме каясси çинчен пĕлтерчĕ. Ахальтен мар çапла тума шутларĕ çамрăк командир: хăйĕн салтакĕсен тумтирĕ

çинче пыйтă-шăрка темиçе хут та асăрхарĕ. Салтака пыйтланма юрать-и вара!.. Анчах мунча кĕме каясси хăшнепĕрне пачах хаваслантармарĕ.

— Ку сивĕрe мунча тăрăх çӳреме эпĕ ухмаха тухманха,— сасăпах каларĕ хăйĕн шухăшне урлăш-çӳллĕш пĕрешкел Поганников.

— Пирĕн командир мунча кĕме юратать пулас. Кайса кĕтĕрех. Ман унта çӳреме вăхăт çукрах!— Пурте илтмелле евитлерĕ вăрăм хура сухаллă Тихон Бородов. Унăн чăнах та хула мунчине сулланма вăхăт пачах çук: пĕр вĕçĕмсĕр картла вылять.

Мунчана кайма кăмăл туманнисем татах та тупăнчĕç.

Командир хутне кĕрекенни чи малтан Илья Лилипутов пулчĕ. Сăмахне вăл аякран пуçларĕ:

— Иисус Христос фарисейсене питлесе хăй вăхăтĕнче çапла каланă: «Эсир хăвăра хăвăр вĕрентекен вырăнне ан хурăр, мĕншĕн тесен сирĕн пĕртен-пĕр учитель Иисус Христос пур. Çĕр çинче никама та атте тесе ан калăр, мĕншĕн тесен сирĕн аçăр пĕрре кăна, вăл пĕлĕт çинче». Тĕрĕс каланă Иисус Христос. Пачах хирĕçлеместĕп. Анчах çĕр çинче те турăпа атте кирлĕ. Пирĕн туррăмăрпа аттемĕр хамăра уйăрса панă командир пултăр. Эпĕ ăна пăхăнатăп, ăна итлетĕп. Мунча кĕме те турткалашса тăмасăр каятăп.

Салтаксем мĕн калаçни командир хăлхине кĕмесĕр юлмарĕ. Кирек мĕн калаçчăр та, командирăн çирĕп пулмалла.

— Выходи строиться!— янăраса кайрĕ команда.

Исиодор Поганниковпа Тихон Бородов строя чи кайран пырса тăчĕç.

— Мĕншĕн кая юлтăр — ăнлантарăр!— çирĕппĕн ыйтрĕ вĕсенчен командир. Лешсем хуравламаннине кура командир сассине пушшех те хаярлатрĕ:— Черетсĕр пĕрер наряд сире, Поганников тата Бородов юлташсем. Ыран ирпе казарма урайне эсир çăватăр. Пурте çакна асра тытăр: эсир халь гражданкăра мар, Хĕрлĕ Çарта. Кунти йĕрке çакăн пек: пĕлместĕн пулсан — вĕрентеççĕ, итлеместĕн пулсан — итлеттереççĕ... Кам мунчана каймасть — виçĕ утăм мала тухăр...

Строй умне виççĕн тухса тăчĕç.

— Штаб пӳлĕмĕсен урайĕсене çума ĕç аллисем кирлĕ...

Командирăн çак сăмахĕсене илтсен стройран тухнисем хăйсен вырăнĕсене каялла кайса тăчĕç. Пĕтĕм йыш мунчаран чиперех çăвăнса тасалса килчĕ. Унта командир Тихон Бородова парикмахерскине тĕртсех кĕртрĕ те, унăн

кăпăш сухаленчен хĕрхене-хĕрхенех уйрăлма тиврĕ.

Кăҫ кӳлĕм штаб Пожеданова ҫакăн пек приказ пачĕ: хăйпе пĕрле 21 салтака Горькинчи запас стрелковăй дивизи штабне илсе ҫитермелле.

— Пуйăсра хăвăра йĕркеллĕ тытăр, салтак ятне ан ярăр,— асăрхаттарчĕ пурне те командир. Асăрхаттарасса асăрхаттарчĕ те ҫавăнтах ӳкĕнчĕ.

— Пирĕн ят каяс пекки кайса пĕтнĕ ĕнтĕ...— хăрăлтатрĕ хыҫалта Поганников.

Командир чĕрре кĕрес темерĕ. Пассажир пуйăсĕн вагонĕнче ҫĕрле командăри салтаксем пурте чиперех ҫывăрчĕҫ, ҫул тăршшĕпе те вăл-ку тавраш пулмарĕ.

## Макарав шлепки

Канавинăра пуйăс ҫинчен ансан Пожеданов хăйĕн командине Мускав вокзалĕ умĕнче строя виҫшерĕн юнашар тăратрĕ. Стройра ҫирĕмĕн, хăй ун умĕнче. Пĕрле хушсан шăпах Бородов юратакан «очко» пулать. Эппин, никама та ҫухатман, пурте вырăнтах.

— Автобуспа е трамвайпа каяр? Хăшĕ килĕшет? Ҫар чаҫĕ — ултă-ҫичĕ километрта...

Командир ыйтнине хирĕҫ «гвардеецсем» ҫывăрса тăранайман сасăпа пĕр шухăшлăн хуравларĕҫ:

— Хула курмалла ҫуран утар. Вагонта ытла пăчăхтарчĕ.

— Килĕшĕпĕр. Асăрхаттаратăп: эпĕ ирĕк памасăр стройран никам та тухмасть. Кудряшов, эс мĕн унта сăмсуна ҫав таранах чакалатăн? Пӳрнӳ хуҫăлĕ... Кăтра ҫӳҫне кастартăн пулин те, сан ҫине вăн хĕрсем епле пăхаҫҫĕ...

Стройрисем пурте кулса яраҫҫĕ. Бородов янтарь пек тĕм хура сухалне аллипе яланхилле якатса илесшĕн пулчĕ те, янахĕ ҫап-ҫара та яп-яка иккен.

— Ман хыҫҫăн шагом марш,— илтĕнчĕ команда.

Шинель тăхăнма ĕлкĕреймен йыш хула урамĕ тăрăх Ока юхан шывĕ еннелле шăкăл-шăкăл калаҫса утать.

— Урам сарлака кунта...

— Таҫта ҫакăнта автозавод пулма кирлĕ...

— Ҫапла, автозавод кунта, Канавинăра,— хутшăнать калаҫăва пурне те пĕлекен Виктор Кураков — «супăнь вăрри».— Ăна хута яма РКП(б) Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Серебряков ҫирĕммĕш ҫулсем варринче вăй хунă теҫҫĕ. Парти хушнипе вăл Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене каять, унта автомобильсем туса кăларас ĕҫ королĕпе

Генри Фордпа хăйĕнпе тĕл пулать. Леонид Петрович, ăслăскер, япшар калаçма пĕлнĕскер, автомобильсем тăвакан чаплă фирмăна никĕсленĕ капиталистпа-миллионерпа пĕр чĕлхе тупать. Иккĕшĕ Совет çĕр-шывне автомобильсем кăларма пулăшасси çинчен килĕшӳ çырса алă пусаççĕ. Горький хулинчи автозаводра малтанхи автомобильсене Форд панă запаслă пайсенчен пухса хатĕрлеççĕ...

— Леонид Петрович çинчен илтнĕ-ха... Халĕ ăçта вăл?

— Серебряков каярахпа çĕр-шыври автотранспорт ĕçне ертсе пырать, пассажирсемпе груз турттармалли çулсен тата автомобиль транспорчĕн тĕп управленийĕн начальникĕ пулса ĕçлет. Ун чухне те Горькинчи автозавода аталанма пĕрмай пулăшать. Питĕ лайăх сынччĕ теççĕ ăна пĕлекенсем. Граждан вăрçинче шуррисене хирĕç Сталинпа пĕрле çапăçнă, унăн соратникĕ пулса тăнă. Халь таçта хăямата кайса кĕчĕ...

— Пĕлмене хуратăн, персе вĕлернĕ вĕт ăна...— темле шалти савăнăçлă туйăмпа каласа хучĕ Исиодор Поганников.

Сăмах хыççăн сăмах. Пупленĕ май çул кĕскелсех пырать. Пысăк мар команда вăрăм кĕперпе Ока урлă каçрĕ. Маяковский урамĕ тĕлне çитсен çывăхрах Раштав чиркĕвĕ илемлĕн курăнса кайрĕ.

— Çакăн пек капăр кам тума пултарнă-ши?— çăварне карсах тĕлĕнсе пăхрĕ Кудряшов.

— Асăрхан: çăварна çав чиркӳ тăрринчи чана вĕçсе ан кĕтĕр,— тăрăхласа илчĕ Бородов, хăй те çийĕнчех витĕмлĕ хурав илтрĕ:

— Хăв вĕçсе ан кĕр, пыра ларса анса каяймасăр асапланăн.

Урамăн сулахай енче, хитре чиркӳ çумĕнче, пысăках мар лăпкă пасар.

— Командир юлташ, пилĕк минутлăха чарăнма ирĕк парăрччĕ. Барахолкăра çĕлĕк сутса пилотка туянма шутлатăп,— пĕр кулмасăр ыйтрĕ Романухин. Ыттисем те командир çине тилмĕрӳллĕн пăхаççĕ.

— Кăмăл пур тăк командăна чарăнма ирĕк паратăп. Вунă минутран пурте стройра пулмалла. Разойдись!

Салтаксем самантрах пасара кĕрсе кайрĕç, командир кăна çав вырăнтах юлчĕ. Виçĕ кунлăх паека «гренадерсенчен» хăшĕ-пĕри ĕнерех пĕтĕмпе çисе янине, вĕсен паяна ним те юлманнине пĕлнĕ пулсан Пожеданов кунта чарăнма тем тесен те килĕшместчех.

Апăр-тапăр пасарĕнче суту-илӳ йĕркеллех пырать-ха. Виç-тăватă хĕрарăм — çĕр улмипе купăста кукăлĕ, палан,

шур çырли, темиçе старик — кишĕрпе хĕрлĕ кăшман, стаканпа махорка сутаççĕ. Арçын ачасем туртакансене майсăр пысăк хакпа «Беломор» пирус сĕнеççĕ. Тăрхалла мăн пачкăна 100 пирус кĕрет. Пирусне штукăн та сутаççĕ. Пĕр инке сахăрпа йĕм ылмаштарасси пирки хаклашать... Алăранах примус та, керосинка та туянма пулать. Пĕр старик çар чаçне каякан арçынсене çĕр улми икерчисемпе тӳлевсĕрех хăналать.

Сахал мар халăх хĕвĕшет кунта. Ак япала! Тӳлек пасарта сасартăк ăнланмалла мар хăрушла пăлхану тапранчĕ. Пĕр енче кăшкăраççĕ, тепĕр енче шарт та шарт тутараççĕ. Унта та шăй-шай, кунта та нăй-най! Шăв-шав тапрансан çын ури çумĕнчех сăмсисемпе тăк-тăк сăхса çӳрекен кăвакарчăнсем çуначĕсене пăрăлтаттарса тăруках çӳлелле çĕкленчĕç. Çакна кура пасарпа юнашар чиркӳ тăрринчи чанасен лăпкă пурнăçĕнче те асар-писер тапранчĕ. Пасарти сехĕрленсе ӳкнĕ халăх кĕпĕрленсе унталла-кунталла чупма пуçларĕ.

Çак пăтрашуллă вăхăтра тытăнчĕç те ĕнтĕ командăри кăра кăмăллă хантарсем хăйсен хура ĕçне тума: вăрлаканни вăрлать, туртса илекенни туртса илет. Хăшĕнне вăрланă, кам тарать, мĕншĕн хăвалать — пыр, ăнланса пĕтер тамăкри пек пăтăрмах вăхăтĕнче!..

Пожедановăн апшур командине кĕпе-йĕм те, тумтир те, ытти тавар та илĕртмерĕ, вăл апат-çимĕç çине тăрăнчĕ. Пасарта кирек мĕнле тавара та укçа парса туянаççĕ, ăристансен командинчисем вара тавара хăйсен аллине çаклатмалли урăх майсемпе усă курчĕç. Ку майсен ячĕсем çапла пулчĕç: пĕçертесси, ыйтмасăр илсе тарасси, тăпăлтарасси т. ыт. те.

— Вăт çӳре çав мурсемпе пĕрле!— пĕççине шарт çапрĕ Иван Данилов пасартан таврăнсан. Хăй йăнăш тунине Пожеданов пасарта шăв-шав тапрансанах ăнланчĕ, анчах ним тума та пĕлмерĕ. Пасара кăшкăрса çĕнтерейместĕн.

Вунă минут иртсе кайрĕ — стройра вун тăххăрăн кăна. Вун ик минут та, вун пиллĕк те иртрĕ, «очкона» çаплах пĕрре çитмест.

— Кам çук?

— Цыган курăнмасть...

— Романухин-и?

— Çавă.

Икĕ Данилов, Воробьевпа Табаков пасар тавра шыраса çӳрени те пулăшмарĕ. Романухин çĕр çăтнă пекех çухалчĕ. Урамра вунă минут ырăнне çур сехет тапăртатса тăнă хыççăн малалла тапранма команда пулчĕ.

— Ҫирек мӗн тӑвӑр, пӗр ҫынна илсе ҫитереймерӗм,— доклад турӗ Пожеданов стрелковӑй дивизи штабӗнче.

— Йӗп мар, тупӑнӗ,— терӗҫ штабрисем командӑра камсем пулнине пӗлсен.

Ҫазармӑра ҫӗрле тарӑн ыйха путнӑччӗ ӗнтӗ Пожеданов, ӑна пӗри хулран тӗксе вӑратрӗ, сӑмси умнелле ҫур литр эрех тӑсрӗ. Командир куҫне уҫрӗ те тӗлӗнсех кайрӗ: Алексӑ Романухин тӑра парать.

— Командир юлташ, каҫарӑр, аташса юлтӑм. Тӑрӑр-ха, ҫылӑха каҫарттарма пӗрер сыпкӑм эрех ӗҫтерем...

Ҫук, эрехпе ҫыхланман халиччен Пожеданов, анчах темшӗн-ҫке унӑн чунӗ ҫак цыган патне туртать. Ҫитменнине тата вӑл мӗн пирки командӑран тӑрса юлнине те пӗлес килет. Ҫак икӗ сӑлтав чӑваша цыганпа юнашар ларма хистерӗ. Алексӑ тата такама вӑратасшӑнччӗ, Пожеданов сылтӑм аллипе унталла-кунталла сулса илчӗ те, лешӗ сӑмахсӑрах ӑнланчӗ.

Романухин ҫуршар стакан эрех тултарса лартрӗ, ҫерҫи пысӑкӑш купӑста кукӑлӗсем кӑларса хучӗ.

«Ӗҫмелле-ши унпа пӗрле е ӗҫмелле мар-ши?— тухса тӑчӗ командир умне халех татса памалли ыйту.— Ятламалла-и Романухина е тӑхтамалла? Пӗр енчен, командир хӑйӗн салтакӗпе пӗрле ӗҫсе ларни пачах та вырнаҫуллӑ мар. Тепӗр енчен, фронта пӗрле каймалли салтакран ютшӑнма та юрамасть».

— Сывлӑха пултӑр!— татӑклӑн стаканне ҫӗклерӗ Пожеданов, унтан ярса панӑ шӗвеке янклаттарса та хучӗ. Романухин та унран юлмарӗ, ҫыртмалли вырӑнне купӑста кукӑлӗ чӑмлама пикенчӗ.

Командирпа салтак хушшинче калаҫу майӗпен-майӗпенех ҫыхӑнма пуҫларӗ.

— Пытарса тӑмалли пулмасан каласам: кирпӗч шутлама мӗн пирки лекрӗн?

Алексӑ, эрехпе хӗрнӗскер, тухан хӗвел пекех хӗремесленсе кайрӗ.

— Мӗн пирки те мӗн пирки... Цыган утпа ҫӳреме юратнине пӗлместӗн-им вара? Эпӗ чӗлпӗр вӗҫне ҫеҫ тытса пыраттӑм. Вӑл чӑпар ута тӑхӑнтарнӑ йӗвен пулнӑ иккен. Ҫам пӗлнӗ-ха ӑна? Ҫам пӗлнӗ? Судра прокурор пысӑк айӑпа кӗнӗ тесе вунӑ ҫул пама ыйтрӗ, адвокат вара вӑрлакана айван ҫын пек кӑтартса пилӗк ҫулпа ҫырлахма хистерӗ. «Юлашкинчен айӑпланакана сӑмах паратӑп, эсӗ мӗн ыйтатӑн?»— тет судья. «Эпӗ-и?— терӗм.— Эпӗ нимӗн те ыйтмастӑп. Вӑн гражданин прокурор вунӑ ҫул ыйтать — парӑр ӑна. Гражданин адвокат пилӗк ҫул пама хистет — ун

валли те ан хĕрхенĕрччĕ. Мана вара ирĕке ярăр»,— терĕм.

— Анекдот калатăн,— иккĕленчĕ командир.

— Эй-эй, цыган пурнăçĕнче анекдот та, чăнни те юнашарах. Йĕппе çип пек.

Алекса стаканне каллех шĕвек ячĕ.

— Командир сывлăхĕшĕн пултăр!— каллех чанклаттарасшăн пулчĕ Романухин, анчах Пожеданов хăй валли тултарнă стакана айккинелле илсе лартрĕ.

— Алекса, кала тӳррине: пирĕнтен мĕн пирки тăрса юлтăн?

— Юрамасть.

— Мĕншĕн?

— Кирпĕч шутлама тепĕр хут каяс килмест.

Цыган çине чăваш тинкерсе те сăнаса пăхать. Иккĕшĕ те пĕр сăмах хушмасăр ларăççĕ. Калаçсан-калаçсан çакна пĕлет Пожеданов: хăпăл-хапăл çӳрекен цыган раштав чиркĕвĕ çумĕнчи пасарта пĕр старик аллинчен пустав тăрăхĕ туртса илет те хӳме урлă тепĕр урамалла сикет, кунтан Макарав ярмăкне çитиех ярăнтарать. Çакăнта сутать те ĕнтĕ пустав тăрăхне...

Эрех шăршине сиссе Пожедановпа Романухин ларнă çĕре Бражкин йăпшăнса пырать. Пожеданов пӳрнипе тĕллесе ăна юнашар ларма ирĕк парать.

— Макарав ярмăкне çитсе куртăм тетĕн эппин?— тăсать командир калаçăва малалла.— Эпĕ те илтнĕ ку ярмăк çинчен. «Макаравран килнĕ мулăм çук, турă панă телей пирте çук»,— тесе юрлаççĕ чăвашсем. Халăх хушшинче çакнашкал сăмах-юмах çӳрет. Пĕр чăваш хăйĕн тулăксăр ачине Макарав шлепки туянса килме пулать, анчах пуш алăпах таврăнать. «Шлепке илсе килтĕн-и?»—ыйтать ывăлĕ ашшĕнчен. Шлепке илсе килменшĕн тарăхнипе çиллине шăнараймасăр çавскер пĕр чĕрес сĕте тăкать ярать. «Тăхта, эп сана Макарав шлепки тăхăнтартам-ха»,— сиксе тăрать çăпата туса ларнă çĕртен ашшĕ. Тытăнать хайхи пушăтпа ăшалантарма ывăлне...

Аслă сержант çакна мĕншĕн каласа кăтартнине икĕ тус — Романухинпа Бражкин — пушкараймарĕç-ха. Командир тек ĕçме килĕшменрен пулштуха Романухинпа Бражкин иккĕшех пушатрĕç. Пожеданов аллине цыган хулпуççийĕ çине хучĕ:

— Акă мĕн, хаклă юлташăм, хăналанăшăн пысăк тав. Тулĕк асăрхан: сана та Макарав шлепки тăхăнтарма тивмĕ-ши? Халĕ иксĕр те марш çывăрма!

Аслă сержант хăй те иккĕмĕш хутри нар çине çывăрма кайрĕ.

Чиркӳ ҫумӗнчи пасарта кӗтмен ҫӗртен сиксе тухнӑ пӑтӑрмах Пожеданов куҫӗ умӗнчен чылайччен каймарӗ.

— Ниепле те ӑнланма пултараймастӑп: мӗне пула тапранчӗ-ха пасарти ҫав пӑтӑрмах?— ыйтрӗ вӑл каярахпа Табаковран.

— Мӗн ӑнланмалла марри пултӑр унта... Хӑвӑн йышунти маттурсем турӗҫ вӑл шӑв-шава! Ахальтен мар, паллах. Хӑйсен тӗллевӗсене пурнӑҫлама май пултӑр тесе...

Аслӑ сержант Табакова куҫран пӑхса илчӗ те нимӗн те шарламарӗ. Ҫам-кам кӗрет-ха маттуррисен шутне? Пулать-ши капкӑн лартма вӗсен ҫулӗ ҫине? Пӗрре-иккӗ ҫеҫ мар командӑра унашкаллисем. Эпиин, васкама юрамасть. Унсӑрӑн хӑв лартнӑ капкӑна хӑвах ҫакланма пултаратӑн.

## СИРӖН ЯЛТА ХӖР ПУР-И?

### Мӑк сӑрчӗ ҫинче

Вырӑсла — Моховые горы, чӑвашла — Мӑк сӑрчӗ Атӑл хӗрринче, Горький хулинчен инҫех те мар. Пехотӑн ҫакӑнти запас полкӗнче ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ эпир паллакан «гвардеецсем», хӑйсем каларӑш, «ӑристансен команди». Халӗ ӗнтӗ Пожеданов взвод командирӗ мар. Ҫавна май Поганников сӑвӑ пекскер хайланӑ:

Русский, мордва,<br>
Становись по два.<br>
Я — чуваш,<br>
Теперь уж<br>
Не командир ваш.

— А мӗн вара, помкомвзвода командир мар-им?— килӗшмерӗ унпа Романухин.— Пурте эпир хисеплетпӗр помкомвзводӑна — командӑшӑн, старшинана — баландӑшӑн...

Взвод командирӗ пулма Парамонов кӗҫӗн лейтенанта уйӑрнӑ, анчах вӑл взвода килсе курӑнмарӗ-ха.

Владимир хулинчен килнисем пурте пӗр взводра. Вӗсем 1887—1891 ҫулсенчи тӗслӗхпе туса кӑларнӑ вырӑс винтовки, Шпагинӑн пистолет-пулемечӗ (ППШ), Дегтяревӑн алӑ пулемечӗ, станоклӑ пулемет тата танксене пемелли пӑшал (ПТР) тытӑмне вӗренеҫҫӗ, ҫак хӗҫ-пӑшалтан пеме хӑнӑхаҫҫӗ.

Взвод хӗҫ-пӑшалпа усӑ курма тимлесех вӗренет-ха, тактика занятийӗсене вара ача вӑййи вырӑнне ҫеҫ хурать. Ну-

майăшĕ шутланă тăрăх, ку занятисем сенĕкпе çил хăвалани кăна, мĕншĕн тесен фронтра апла мар, пачах урăхла пулать.

Тĕпрен илсен занятисене аслă сержант Тарас Назаров ирттерет. Запас полкри кĕçĕн командирсен яланлăх йышĕнче тăрать теççĕ ун çинчен. Вăл Хĕрлĕ Çар ретĕнче пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ. Финн кампанийĕнче пулнă. Ку вăрçăра Мускава хӳтĕлесе çапăçнă. Унта аманса сывалнăранпа — çак запас полкра. Хăйĕн халĕ те тем ыратать, анчах ун çинчен никама та каламасть.

— Эпĕ санчаçе кайса килем-ха. Эсĕ наставлени тăрăх ППШ тытăмне вĕрент,— хушса хăварчĕ вăл паян Пожеданова.

Черетлĕ занятие вăрман хĕрринчи хыр айĕнче ирттереççĕ. Пысăк тунката çине плащ-накидка сарчĕç. Пистолет-пулемета ун çинче салатса пуçтараççĕ.

— Командир юлташ, пăхăр-ха: рота командирĕ такампа пĕрле килет,— асăрхаттарчĕ Алексă Романухин. Пожеданов çивчĕ хура куçлă цыган кăтартнă еннелле çаврăнса пăхрĕ те иккĕшне те палласа илчĕ: рота командирĕпе пĕрле запас полкăн командирĕ хăй киле парать.

— Взвод, встать! Смирно!— янăраса кайрĕ команда.— Юлташ полковник! Взвод пемелли хĕç-пăшал тытăмне вĕренет. Вырăнсăр сăлтавпа занятирен пăрăнакан çук. Доклад тăваканĕ Пожеданов аслă сержант.

Полковник салтаксене сывлăх сунчĕ, занятие малалла тăсма хушрĕ.

— Ăçта аслă сержант Назаров?— ыйтрĕ рота командирĕ. Пожеданов вăл ăçтине каларĕ.

Заняти малалла пырать. Павел Артамонов рядовой ППШ затворне чиперех пайăн-пайăн уйăрчĕ, анчах пĕрле пуçтараймарĕ. Геннадий Кудряшов та çакна тума пултараймарĕ.

— Лайăх итлĕр, затвора мĕнле салатса пуçтармаллине тепĕр хут каласа паратăп тата кăтартатăп,— хăюллăн ăнлантарма пикенчĕ Пожеданов. Ун хыççăн затвора çав салтаксенех пуçтарттарчĕ. Халĕ лешсем аслă сержант хушнине чиперех пурнăçларĕç.

— Занятие ирттерекенни гражданла профессипе камши?— шăппăн ыйтрĕ полковник рота командирĕнчен. Хуравне илтсен куçĕ чеен йăлтăраса илчĕ:— Юлташ Пожеданов, сиртен ыйтса пĕлме юрать-и?

— Тархасшăн, полковник юлташ, анчах виç ыйтуран ытла мар,— шӳтленçи пулчĕ Пожеданов.

— ППШ снайпер хĕç-пăшалĕ пулма пултарать-ши?

— Ку ыйтăва пирĕн взводри кашни салтаках хурав пама пĕлет,— хăй экзамен парасран пăрăнмалли май тупрĕ Пожеданов.— Рядовой Иван Данилов, калăр.

— Снайперсем оптика прицеллă винтовкăпа усă кураççĕ, мĕншĕн тесен ППШ 200 метр таран кăна тĕл лектерет.

Полковник взводри салтаксене тата Пожеданова хăйне ыйту хыççăн ыйту пачĕ. Вĕсен хуравĕсемпе офицерсем иккĕшĕ те кăмăллă юлчĕç, взвод фронта тухса кайма тăрăшсах хатĕрленнине курчĕç.

— Юлашкинчен тепĕр ыйту: Пожеданов юлташ, мĕнле шутлатăр: сире аслăрах звани пама вăхăт çитмен-ши?

— Тивĕçлĕ, тивĕçлĕ!— кăшкăрса ячĕ Алексă Романухин.

— Офицер званийĕ те пама юрать ăна,— ырларĕç полковник шухăшне Воробьевпа Даниловсем.

Кĕтмен çĕртен полковник калаçăва урăх йĕр çине куçарчĕ.

— Калăр тĕрĕссипе, кам сиртен утă çулса курнă?

Ку ĕçпе чылайăшĕ кĕрмешнĕ иккен.

— Акă мĕн: эпир рота командирĕпе канашласа пăхрăмăр: сирĕн взводăн полк валли утă çулса хатĕрлеме тивет. Ыран сирĕн Дубовка (Юманай) ялне тухса каймалла пулать. Кунтан 18 километртра. Пожеданов юлташ, хозчаçре ĕç хатĕрĕсем пирки канашлăр, ик эрнелĕх продуктсем илĕр. Сире утă çулакан взвод командирĕ пулма тивет. Çӳллĕрех картри звани парасси пирки те шухăшласа пăхăпăр. Утă чипер хатĕрлесе таврăнсан, тен, генерал та пулса тăрăр...

Çав кунах взвода тепĕр чăваш — Семен Кириллов кĕçĕн сержант хушăнчĕ. Вăрçăччен вăл Елчĕк районĕнче учительте ĕçленĕ. Сталинград патĕнчи пĕр çапăçура ури аманнă — уксахлать. Рота командирĕ сĕннипе Пожеданов ăна пĕрремĕш отделени командирĕ турĕ, вара иккĕмĕш отделени командирĕ пулма каçхи тĕрĕслӳре Никифор Табакова хуçрĕ.

— Кам ездовой пуласшăн?— куçĕпе пăхса çаврăнчĕ салтаксене Пожеданов. Килĕшекенни тупăнмарĕ.

— Кама обоз начальникне лартăпăр?— ыйтăва урăхлатрĕ командир.

— Тен, манăн виличчен пĕрре начальника тухмалла...— хăюсăррăн сасă пачĕ Филипп Коновалов.

Вăл тăван ялĕнчи колхозра нумай çул хушши конюхра ĕçленĕрен ку сĕнӳпе командир хăвăрт килĕшрĕ.

Коноваловпа Ястребов пĕр лав çине продуктсем тата ĕç

хатĕрĕсем тиерĕç, вĕренпе йĕри-тавра лайăх майлаштарса çыхрĕç.

— Ҫапла эсир Юманайне кăна мар, Мускава та çитме пултаратăр,— мухтарĕ вĕсене Семен Кириллов.

## Вăрманти тĕл пулу

Юманайне взвод çуран утрĕ. Пожеданов ирĕк панипе кĕçĕн сержант Кириллов ури ыратнăран кĕске вăхăта обоз начальникĕпе юнашар пыра-пыра ларать. Ҫӳрен ут урисемпе сулмаклăн яра-яра пусать. Салтаксем унран юлмасăр малалла талпăнаççĕ.

Ҫулçăллă вată вăрман. Ун урлă каçсан Юманай курăнмалла. Вăрăм çул салтаксене самаях ĕшентерчĕ пулас: икшер-виçшер çынлă ушкăнсен хӳри вăрăма тăсăлса кайрĕ.

— Аппа! Ăçта эсĕ?— илтĕнчĕ вăрмантан хĕр ача сасси.— Аппа-а! Мĕншĕн чĕнместĕн?

Хĕр ача мĕскĕннĕн йĕре пуçласан Пожедановпа Кураков, иккĕш тем çинчен кăсăкланса калаçса пыраканскерсем, çултан пăрăнчĕç те сасă еннелле утрĕç. Ют çынсене курсан хĕр ача пушшех хăраса кайрĕ, анчах сасартăк йĕме пăрахрĕ.

— Аппу мĕн ятлă сан?— ыйтрĕ çепĕççĕн Кураков. Виççĕри-тăваттăри хĕр ача тӳрех хуравламарĕ. Тен, ку арçынсене аппăшĕн ятне те шанса калама юрамасть. Лешсем ăшă кăмăлпа пăхнине ăнкарсан вара хĕр ача иккĕленме пăрахрĕ.

— Ман аппа Рита ятлă. Иксĕмĕр пĕрле çырла пуçтараттăмăр. Вăл çакăнталла кайрĕ те çухалчĕ...

— Санăн хăвăн яту пур-и?

— Пурри пур та, сире каламастăп...

Пожедановпа Кураков ун-кун пăхкаласа хĕр ача кăтартнă еннелле кайма тапранчĕç. Халĕ «Сире каламастăп» та вĕсенчен юлмарĕ. Шуранка питлĕ имшеркке хĕр Рита инçех те каяйман иккен: вăйсăрскер хĕвел питтинче тăнне çухатнă та çĕре тӳннĕ.

Кураков хĕр кофтин тӳмисене вĕçертрĕ; çурăм хыçне аллине чиксе лифчикне пушатрĕ.

— Пульс пур, эппин, чĕри тапать. Ҫăварĕнчен вĕри сывлăш палкаса тухать. «Солнечный удар» пулнă ахăр,— хăй пĕлнĕ пек диагноз лартрĕ вăл.

— Коновалов! Коновалов!— çине-çинех кăшкăрчĕ Пожеданов. Анчах ăна ахрăмсăр пуçне никам та хуравлама-

рĕ. Лав та, унпа пĕрле взвод та чылаях аякка кайма ĕлкĕрнĕ.

— Эсĕ хăш ял? Мĕн? Ял ятне те каламастăн-и?— тĕлĕненçи пулчĕ Пожеданов.

Хĕр ача тинкерӳллĕн пăхса тăчĕ-тăчĕ те йăваш кăмăллă арçынсем умĕнче вăрттăнлăхсене уçма шут тытрĕ:

— Эпир хамăр ялсем. Манăн ят — Юманай, ял ячĕ — Светлана...

Кунашкал ăнлантару тепĕр чухне ахăлтатса култарма та пултаратчĕ ахăр, Ритăна епле пулăшасси пирки шутлакан икĕ чăвашăн кулăш вырăнĕсене пĕртте кăтăклантармарĕ.

— Наçилкка тăвас та йăтса каяс ăна,— сĕнчĕ Пожеданов.

Вăрманта тĕрлĕ имлĕ курăк пуçтаракан Лилипутов хăйĕн командирĕ обоз пуçлăхне чĕнсе кăшкăрнине илтрĕ те кунта чупсах килчĕ.

— Тăхтăр-ха, тăнсăрри çине эпĕ хăрах куçпа пăхса илем...

Лилипутов хĕре пысăк мар флягăран кăштах тем ĕçтерчĕ, çав хушăра хăй тархаслакан сасăпа пĕрехмай çӳлти хăватсене кĕл турĕ.

— Эй, çӳлти турăсем, пирĕштисем! Таса хĕр Мария пек çылăхсăр чуна çырлахсамăр, ăна нимĕншĕн те ан айăплăр. Шанăр мана, ĕненĕр: çак сăпайлă хĕрĕн этемлĕх умĕнче пĕр çылăх та çук, вăл мулла хĕрĕ пек йăнăшса та курман. Малашне те çылăха кĕмĕ, ӳлĕмрен те йăнăш утăмсем тумĕ. Чăн калатăп, тупата. Ăна халех вăй парăр, вăй парăр та ура çине тăратăр!

Кĕçех Рита куçне чалт уçрĕ.

— Ай, ăçта эп? Эсир камсем?— вĕрин пăшăлтатрĕ тути. Хăйсем Юманайне çул тытнине, аппăшĕпе йăмăкĕ вĕсенчен ырă мар сăмах илтес çуккине систерчĕç арçынсем. Хуллен пупленĕ хушăра хĕрĕн кăвакарса кайнă тутине пиçи-пиçми çырла тĕсĕ çапрĕ, сенкер куçĕ чалтах уçăлса кайрĕ, пĕтĕм кĕлетки вăй илнĕ пек пулчĕ.

— Ах, ах, намăса çухатнă иккен эпĕ!— именсе кайрĕ хĕр, кăкăрĕ уçăлса кайнине асăрхаса. Вăл хăйне итлесех кайман пӳрнисемпе кофтине тӳмелемерĕ, унăн айккинчи кĕсйинчен тĕкĕр катăкĕ туртса кăларчĕ, анчах ун çине пăхмасăрах каялла чикрĕ.

— Çуркунне аппапа пĕрле кĕтӳ кĕтнĕ чухне шăнса пăсăлтăм та çаплах çын ретне кĕрейместĕп-ха.

Хăйне айăплакан сасăпа каларĕ çакна хĕр, итлекенĕсем вара пачах урăхла шутларĕç.

— Сире хамӑртан хӑвармастпӑр,— лӑплантарчӗ хӗре Кураков.

— Ан чӑрманӑр, эпир Светӑпа иксӗмӗр майӗпен хамӑрах киле ҫитетпӗр.

Кураков пулӑшнипе Рита ура ҫине тӑчӗ, анчах ҫав самантрах сулӑнса кайрӗ те каллех тӑнне ҫухатрӗ. Арҫынсем ӑна ӳкме памарӗҫ. Икӗ вӗрлӗке курӑкпа ҫыхса наҫилкка тӑвасси вӑраха пымарӗ. Хӗре ун ҫине вырттарса ҫар ҫыннисем асӑрхануллӑн ҫул ҫине тухрӗҫ. Ҫара уран пӗчӗк Света хыҫалтан пӗртте юлмасӑр мӗкӗлтетсе пычӗ. Ӑна Илья Лилипутов аллинчен ҫавӑтнӑ.

Хӑй вӑхӑтӗнче вӑл Владимир хулинчи чи чаплӑ ресторанта официантра ӗҫленӗ, чечеклӗ ывӑсне симӗс ҫулҫӑллӑ салатсемпе илемлетсе хаклӑ хӑнасем валли ҫимелли-ӗҫмелли ҫӗкленӗ. Илья кӑтра ҫӳҫлӗ, хуп-хура куҫлӑ. Унӑнни пек хура куҫ взводра Алексӑ Романухинӑн кӑна. Хула ҫыннисем ҫак ҫӳллех мар ятуллӑ официант тухатуҫӑ пулнине те пӗлнӗ. Унӑн хула тулашӗнчи симӗспе сӑрланӑ пысӑк мар йывӑҫ ҫуртне тӗрлӗ чирпе халтӑраса ҫитнӗ ваттисем кӑна мар, юратура шанчӑк ҫухатнӑ яш-кӗрӗм те пырапыра кӗнӗ. Тухатмӑшла тухатса сиплет, совет тухтӑрӗсене ӑслӑлӑх вӗрентнӗ пек сыватма чӑрмантарать тесе хупса хунӑ ӑна кирпӗч шутлама. Мӗншӗн? Ҫавӑншӑн. Мӗн илтрӗр, ҫавна каларӗҫ. Тухатнӑшӑн айӑплама та тивӗҫлӗ статья тупма пултарнӑ саккунҫӑсем уголовнӑй кодексра.

Ритӑна наҫилккапа йӑтса пыракансем канмашкӑн чарӑнсан Лилипутов хӗр ҫине тепре тӗсесе пӑхрӗ.

— Шӑнса пӑсӑлнӑ... Ӳпки шыҫма пуҫланӑ...— ӗненмесӗр тӑма нимӗнле иккӗленӳ те хӑвармасӑр палӑртрӗ вӑл инкекe лекнӗ хӗр чирне.

Йӑшӑл турӗ сивӗпе ӗнтӗркенӗ хӗр наҫҫилкка ҫинче, ҫирӗп сасӑллӑ ҫӳллех мар арҫынна куҫӗнчен пӑхрӗ, пӑхрӗ те куҫне асамлӑн пӑталаса хунӑ пек ун ҫинчен илеймерӗ.

— Сан ҫине хӗвел пӑхать, кӗҫех сана ӑшӑ пулать,— шантарчӗ хӗре Лилипутов тути.— Хӗвел пӑхать, ӑшӑтать, хӗр тутийӗ йӑл кулать. Чӗре ӑшӑпа тулать, юн хавасларах вылять...

Ырӑ сӑмахӑн тухатуллӑ витӗмлӗхӗ чӑннипех те пысӑк иккен. Ритӑн кӗл тӗслӗ пичӗ малтан шурса кайрӗ, кӗҫех ӑна юн тӗсӗ ҫапрӗ. Чӗри те шанчӑкларахххӑн тапма тытӑнчӗ, сӳсленнӗ ӳт-пӗвне вӑй кӗнӗ пек пулчӗ.

— Тӑма пулӑшӑр-ха,— илтӗнчӗ хӗр сасси.— Хам утса пӑхам-ха...

Малтанхи икӗ-виҫӗ утӑма сулӑна-сулӑна кайса турӗ Рита, унтан ҫирӗпрехххӗн те ҫирӗпрехххӗн утма пуҫларӗ.

Кураковпа Пожеданов пĕр-пĕрин çине ыйтуллăн та тĕлĕнереххĕн пăхса илчĕç. «Вăт пыр та калаç Лилипутовпа... Хĕре ура çине тăратма пултарчĕ!»— тĕвĕленчĕ шухăш Пожеданов пуçĕнче. Ана-кăна пур енчен те виçекен Кураков çакнашкал пĕтĕмлетӳ патне пырса тухрĕ: тĕллĕ-йĕрлĕ ăшă сăмах та асамлă эмел пулса тăрать иккен. Хăйсем мĕн шухăшланине иккĕшĕ те сасăпа каламарĕç. Пожеданов взвода хуса çитес шутпа утăмне хăвăртлатрĕ, ӳкесрен-мĕнрен сыхлама Кураков хĕрпе юнашар юлчĕ.

## Хăмла çырли йӳçекĕ

Взвод пĕр-ик километр малта. Пожедановпа Кураков çырла уçланкинче хĕр ача аппăшне шыранă чухне çулпа йăпăр кӳлнĕ лав чуптарса иртрĕ. Урапа çине хыçала çичĕ-сакăр ещĕк лартнă. Взводăн хыçалти ушкăнĕ айккинелле пăрăнса лава иртсе кайма çул пачĕ. Лав çинчи икĕ хĕр малта тиевлĕ лав пынине, салтаксем утнине курсан йăпăра тек хăваламарĕ, уттарса кăна пычĕ.

— Аçта каятăр, чиперккесем?— сăпса пекех çыпăçрĕ лав çумне Алексă Романухин.— Мана та лартăр-ха: ывăннипе чĕлхем пуплейми, хăлхам илтейми пулчĕ...

— Лав çинчи ещĕксенче мĕн иккенне пĕлетĕн-и?— цыган хăлхинчен каварлашнăн пăшăлтатрĕ Исиодор Поганников.— Кашни ещĕкрех 12 пулштух. Хăмла çырли эрехĕ.

— Кирлĕ мар. Эпĕ тĕвĕленĕ ĕнтĕ. Салтăнмалла мар. Взводнăйне текех кукăр алăллă пулмастăп тесе сăмах патăм,— пăрăнчĕ упран Алексей Романухин.

Çак хыпара Чĕмсĕрри Виталий Бражкина пĕлтерсен лешĕ кăркка пек хăпартланса кайрĕ. Пуçне çӳлтен аялалла сулса хăй килĕшнине пĕлтерчĕ.

— Хĕрсем, ыйтса пĕлме юрать-и сиртен? Эсир мĕнле шывпа çăвăнатăр? Çырла шывĕпе пулĕ, ӳтĕр çавăн тĕслĕ. Куçăр ма йăлтăркка тата? Аçăр-аннĕр çăлтăр çути парнеленĕрен ахăр,— пуç çавăрмалла хитре сăмахсем калать Алексă хĕрсене. Вăл хĕрсен ячĕсене те ыйтса пĕлчĕ ĕнтĕ: тилхепе тытни, тăрхалла питли, Римма Быстрова, колхозра аслă конюх вырăнĕнче; ун хыçĕнчи çап-çавракака питли Галя Торговцева, ялти лавкка сутуçи.

Галя пĕр вĕçĕмсĕр ахăлтатать, хуп-хура çӳçлĕ Алексă çинчен куç та илмест. Римма вара каччăсем çине пăхма ерçеймест: йăпăр çумне килсе çыпăçнă пăвана хирĕç вăрçă пуçарнă. Ана тилхепепе те хăвалать, чăпăркпапа та çапса

пăхать. Ут çумне пăван çыпăçнă, хĕр çумне каччă çулăхнă. Пĕри çыртать те тепĕр çĕре вĕçсе ларать, тепĕрне вара чуп тума мар, хĕрĕн çепĕç аллине тытса чăмăртама та ирĕк памаççĕ. Пăванне хăвалаççĕ, каччине чараççĕ.

Лав хыçĕнче пыракан Виталий Бражкина вара чаракан пулмарĕ. Вăл икĕ ещĕке пушатрĕ, виççĕмĕшне пуçăнчĕ. Пулштухсене пĕрин хыççăн тепĕрне ещĕкрен кăларать те Исиодора парать, лешĕ Митрофана тыттарать. Пĕр хутаç тултарса паллă тĕм ăшне лартса хăварчĕç ĕнтĕ. Виççĕмĕш ещĕк те пушанатчĕ, тепĕр хутаç та тулатчех. Взвод командирĕн сасси чылайранпа илтĕнменрен пăшăрханакан кĕçĕн сержант обоз лавĕ çинчен анчĕ, каярах юлса ещĕксем лартнă лав хыçĕнчен лăкăштатса утса пычĕ.

Айăр купарчи çине ларнă пăвана Римма ал тупанĕпе çапса вĕлерчĕ, Алексă хĕр çумĕнчен хăпрĕ. Ещĕксенчен хĕрлĕ эрех йăкăртакансем те куçран çухалчĕç.

Вырăна çитсен Пожеданов ялĕçтăвком председателĕпе Филимоновпа пĕрле салтаксене килсем тăрăх вырнаçтарчĕ, Лилипутова взвод валли вĕри апат хатĕрлеме хушрĕ. Вăрмана утă çулмалли уçланкăсене кайса пăхасшăнччĕ, лавкка сутуçипе аслă конюх чупса килчĕç, ялпоран тиесе килнĕ чухне хĕрлĕ эрех нумай çухални çинчен пĕлтерчĕç.

— Кăнтăрлахи тăмана пек çывăрса килтĕр-и е каччăсене пула пуçăра çухатрăр-и?— хăтăрса тăкрĕ вĕсене Филимонов, курпунтарах ватă старик.

Римма пытарса тăмарĕ.

— Çавсем тăманана çавăрчĕç — ак çакăн салтакĕсем... Икĕ ещĕк пуш-пушах, виççĕмĕшĕнче çурри кăна юлнă...

Взвод командирĕ хушнипе хĕрсем хăйсемех пĕр килтен Булатовпа Артамонова чĕнсе килчĕç. Пожеданов вĕсене мĕн пулса иртни çинчен каласа пачĕ.

— Вăт кĕшĕклĕр çак ĕçе... Айăплисем пирĕн взводра пулсан хамăрах суд тăвăпăр. Хăш тавар мĕн чухлĕ çухалнине тĕрĕс палăртассинчен пуçлăр. Йĕрлев епле вĕçленнине каçхи тĕрĕслӳ умĕн мана пĕлтеретĕр.

Филипп Коноваловпа Петр Данилов каçченех çава туптарĕç. Семен Кириллов отделенийĕ кĕреплесем, Никифор Табаков отделенийĕ виçĕ йӳплĕ вăрăм сенĕксем ăсталарĕç. Виктор Кураковпа Алексă Романухин кӳршĕ ялти лавккаран лапаткасем, тимĕр сенĕксем туянса килчĕç. Виталий Бражкин, Митрофан Ястребовпа Исиодор Поганников салтаксене кăна ĕçе хутшăнтарма май килмерĕ. Вĕсем пулла кайнă терĕç. Кӳршĕ ялтан таврăнсан Виктор Кураковпа Алексă Романухин çĕр çăтнă пекех таçта хăямата çухалчĕç.

Следовательсем — Энвер Булатовпа Павел Артамонов — хăйсен ĕçне нумаях малалла ярайман. Вĕсене мĕн тата мĕн чухлĕ, мĕн хаклăх çухалнине палăртса акт çырнипех çырлахма тивнĕ. Взводра кам та пулин хăмла çырли йӳçекĕпе сăйланнине асăрхаман.

Қаçхи тĕрĕслӳре çирĕм иккĕрен вун çиччĕшĕ кăна пулчĕç, пиллĕкĕшĕ ăçтине палăртма май килмерĕ. Виççĕшĕ пирки «пулăран таврăнман» терĕç. Иккĕшĕ ăçта кайни çинчен никам та нимĕн те пĕлмест.

Аллисене хыçалалла туртса çыхнă Виктор Қураковпа Алексă Романухина çĕрле виçĕ салтак хваттере кĕртсе тăратсан Пожеданов хăй куçне хăй ĕненмерĕ.

— Эрех вăрлаканĕсем çаксем, иккĕшĕ...— тытăнчăклă сасăпа евитлерĕ Митрофан Ястребов.

Виталий Бражкинпа Исиодор Поганников чĕлхисем хуçисене итлесшĕнех мар, урмăш калаçаççĕ, çапах юлташĕ каланине çирĕплетме вăй çитерчĕç. Виççĕн виççĕнех: вăрăсене тӳнккесе те илнĕ пулмалла. Лешсен пичĕсем тăртаннă, кăн-кăвак вырăнсем те курăнкалаççĕ. Анчах телĕнмелли те пур: вăррисем тăп-тăрă урă, вăрăсене тытаканнисенчен темиçе утăмранах хăмла çырли йӳçекĕн шăрши çапать, тепĕр тесен, вĕсем ӳсĕртен халех тӳнсе кайма та хатĕр.

— Эсир, мĕн, вăрăсене тытнă ятпа çыртмаллисĕр ĕçрĕрим? Вĕсен аллисене халех салтса янă пултăр. Çывăракан яла урăх хуйхатса çӳремĕпĕр. Пурте кунтах çывăрăр. Иргхине улттăра тăратпăр, çиччĕре ĕçе тухса каятпăр,— хирĕçлеме юрами сасăпа татăклăн приказ пачĕ взвод командирĕ.

Қаçхи тĕрĕслӳре пилĕк салтак мĕншĕн пулманнине Пожеданов кайран тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлчĕ. Виççĕшĕ хăмла çырли йӳçекĕпе сăйланма вăрмана çул тытнă-мĕн, Қураковпа Романухин вĕсене йĕрлесе хыçалтан пынă.

— Аллăрсене çĕклĕр, хăяматсем!— кăшкăрса янă чăтăмсăр Романухин, лешсем ĕçсе ларнă çĕре çитсенех.

Эрехшĕн антăхакансене те тăмран туман иккен, вĕсем ура çине тăнă-тăманах Романухина çĕре çапса ӳкернĕ. Виççĕн-виççĕнех-çке, Қуракова та парăнтармалли май тупнă. Аллисене иккĕшĕнне те çыхса хурсан сăмса урлă та паркаласа илнĕ, кутран та латлаттарнă. Поганниковĕ хăй çапман та, тапман та, çапла тума Ястребовпа Бражкина хĕтĕртнĕ.

## Уçланкăра çава сасси

Вырăс ялĕ Юманай пысăк мар. Вăрăмах тăсăлман икĕ урам. Тĕрĕссипе каласан икĕ урам та теме çук, урам çурă кăна: кăнтăр енчи, вăрман çумĕнчи, хăрах каслă: пĕр ретпе лартнă çуртсем кăнтăралла пăхаççĕ. Ăна Хăрахкас е Лавкка урамĕ теççĕ. Тепĕрне Мăшăркас ят панă.

Кăнтăр енче вăрман Хăрахкас çумĕнчех. Кунти вăрман — кăррипех юманлăх. Çуртсем çӳллĕ юмансем айне вырнаçнăн курăнаççĕ. Çавăнпа ял ячĕ те Юманай. Çурçĕр енче вăрман ялтан икĕ-виçĕ çухрăмра. Ку хутăш вăрман. Унта тĕрлĕ йывăç ӳсет. Ялпа хутăш вăрман хушшинче — колхоз улăхĕ, тыр-пул уйĕсем. Ялăн анат вĕçĕнче Çуткӳль кĕмĕл хумсемпе вылять. Кӳлĕрен лерелле юманлăх тата хутăш вăрман, пĕр-пĕринчен ютшăннă пек, пилĕк-ултă çухрăм таранах уйрăлса кайнă та, çав анлă тӳрем хушăка вара сухаламалли-акмалли уйсем йышăннă.

Салтаксем запас полк валли утă ялăн çурçĕр енче, хутăш вăрманти уçланкăсенче, çулаççĕ. Вăрманалла çул колхозăн тӳрем улăхĕ урлă пырать. Çул хĕрринчех пĕр çӳллĕ хăрăк юман ларать.

— Вăт тĕлĕнтермĕш! Вăт юман! Манер çук чĕрпĕнсе пĕтнĕ. Мĕнле тытамак ернĕ ăна?— ыйтрĕ Алексă Романухин хăйсене çул кăтартакан вăрман хуралçинчен.

— Э, кунта, шăллăм, çиçĕм вылять. Çу каçиччен çак тăлăха темиçе хут аçа çапать. Тивертсе яни те пулкалать.

— Мĕн мурне уйрăмах юмана аçа çапать-ха?— интересленчĕ пĕри.

— Кам пĕлет... Çӳллĕрен мар-ши? Пирĕн взводнăй — учитель, унран ыйтса пăхар,— сĕнчĕ тепри.

— Шантарсах калатăп, мана халиччен пĕрре те аçа çапман-ха. Çавăнпа манăн ку енĕпе опыт çукрах,— шӳтрен пуçларĕ Пожеданов.

«Çапасси çапман пулĕ те, асăрханмасан — кĕрĕслеттерме пултаратех. Турă та сыхласа ĕлкĕреймĕ»,— çапла шухăшласа илсе хĕрес хыврĕ хăй çине Исиодор Поганников. Унăн шухăшне Пожеданов илтсех тăчĕ тейĕн.

— Асăрханмасан — кĕрĕслеттерме те пултарать. Шкул учебникĕнче çапла çырнă: аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче шултра йывăçран 8—10 метр инçерех тăмалла. Ун пек чухне йывăçа аçа çапсан та çынна тивмест. Çиçĕм уйрăмах юманпа тиреке, хурамана час-час тапăнать. Мĕншĕн-ши? Сăлтавĕ вĕсен тымарĕсем питĕ тарăна кайнинче тесе шутлаççĕ...

Взводнăй мĕн калани Романухин хăлхине пачах кĕмерĕ. Вăл хыҫа тăрса юлнă инкеклĕ юман ҫине ҫаврăна-ҫаврăна пăхрĕ. Юрать-ха унăн тĕпĕ кутамас, унсăрăн тахҫанах тӳнне, йăванса кайнă пулĕччĕ.

Хуппи сĕвĕннĕ ҫак йывăҫăн йывăр шăпи Романухина хăйĕн урăм-сурăм пурнăҫне аса илтерчĕ. Тăр-пĕччен ларать шеремет юман улăх варринче. Ăна ҫут ҫанталăкăн асар-писер вăйĕсенчен хӳтĕлекенни нимĕн те ҫук. Пăсăк ҫанталăка та пĕччен тӳссе ирттерет. Алексă та ҫак юман пекех тăлăх, телейсĕр.

Тепĕр тесен унăн пурнăҫ ҫулĕ мĕн ҫамрăкранах тĕмескеллĕ, тумхахлă пулчĕ. Тăлăх Алексă шухă ӳснĕрен тапăр пуҫĕ ăна вун тăваттăрах авлантарма шут тытрĕ. Тапăрти ытти яшсене вун улттăра авлантараҫҫĕ пулсан, ҫакăнпа епле килĕшĕн-ха? Хĕрне вара евчĕсем урăх тапăртан илсе килеҫҫĕ. Хăшĕн качча кайма черет ҫитнĕ — ҫавна. Илес хĕре авланаканни туйĕнче тин курать. Цыгансен пурнăҫĕнчи ҫак авалхи йăла килĕшмерĕ Алексăна. Ун пуҫĕнче арăмлă пуласси мар, ырă ут туянасси. Вăхăтсăр ҫĕре кĕнĕ ашшĕнчен юлни ытла та ватăлса кайрĕ.

Ҫук, авланма килĕшмерĕ Алексă, тарчĕ тухса тапăртан. Шăвăҫҫă пулса ялсем тăрăх хăй тĕллĕн ҫӳрерĕ: витре тĕплерĕ, шăтнă чейниксене тăхлапа сапларĕ, хăйпăннă хăлăпсене ҫыпăҫтарчĕ. Пĕр пасар хĕрринчи урапа ҫумне кăкарнă тимĕр кăвак урхамаха курман пулсан татах ҫӳретчĕ-ха шăвăҫ ăстинче. Ҫав хур турĕ Алексăна. Урхамахĕ чисти картинка вĕт. Утланса пăхмасăр чăтма манер ҫук. Утланасса утланчĕ ăна Алексă, анчах — ҫап, вĕлер — вырăнтан тапратаймарĕ: хуҫине кăна итлеме хăнăхнă-мĕн ку урхамах.

«Ҫаҫарма тархаслатăп: эпĕ урхамаха утланса пăхма кăна шутланăччĕ. Хăвăр курсан та чăтаяс ҫук: вăл чăнах та чисти картинка...»— терĕ Романухин судра.

Судьяна ӳкĕте кĕртеймерĕ Романухин. Вырăнтан тапранман урхамахшăнах пилĕк ҫуллăха хупрĕҫ. Лайăхрах шухăшласа пăхсан ҫакна куратăн — ун пурнăҫĕ йăлтах ăнсăртлăхсемпе ҫыхăннă: кĕтмен ҫĕртен чутах авлантаратчĕҫ, сасартăк лаша вăрри пулса тăчĕ. Акă халь взводпа пĕрле утă ҫулмашкăн кайма тухнăскерĕн ăнсăртран тăван тапăра шыраса тупас килсе кайрĕ. Унта юлнă амăшĕпе шăллĕне курмасăр чун ниепле те чăтмасть. Ҫитменнине тата тăван тапăр ҫак таврарах, Горький хули ҫывăхĕнчех, пулма кирлĕ. Вăрмана кĕрсен Романухин самантлăха тесе вĕтлĕх тĕлне тăрса юлчĕ, ҫавине кунта тайăнтарса хучĕ те хăвăрт куҫран ҫухалчĕ.

Взвода каялла виçĕ кунран, утă çулакансем канса ларнă вăхăтра, килсе çитрĕ.

— Командир юлташ, рядовой Романухин хăй ирĕккĕн çӳресе таврăнчĕ. Кирек мĕнле наказани парсан та пач ӳпкелемесĕр йышăнатăп...

Пожедановăн куç харшийĕсем çӳлелле кăлт туртăнса илчĕç. Теветкел цыган пăш-пăш сывлать. Вăл таçта çӳресе ĕшенни каламасăрах паллă. Кăмăлĕ пусăрăнчăк. Пожеданов унăн салхуллă куçĕнчен пăхрĕ те сассине хăпартма шутламарĕ.

— Ларăр пирĕнпе, ăçта пулнине пурин умĕнче те каласа парăр.

— Ăçта пулнă, халĕ унта çук. Тăван тапăра шырарăм. Аннепе шăллăма нумай çул курманччĕ.

— Тупрăн-и? Куртăн-и?— ыйтрĕç темиçен харăс.

Романухин пуçне усрĕ, куçĕнчи йăлтăр çутă сӳннĕ пекех пулчĕ. Эппин тупайман. Салтаксем цыгантан урăх нимĕн те ыйтмарĕç, унпа интересленме те пăрахрĕç. Ĕçе пăрахса хăй ирĕкĕпе çӳренĕшĕн наказани парасси — командир тивĕçĕ. Кирек мĕн тутăр — ăна право панă.

Мĕнле наказани памаллине командир хăй те пĕлмест иккен. Тăван кил кашни салтакăнах пур. Нумайăшĕн килĕ инçех те мар. Пĕри те тепри тăван-пĕтенпе курнăçма хăй ирĕккĕн тухса вĕçтерсен взводра кам тăрса юлĕ? Çавнашкал ан пултăр тесен Романухина наказани памаллах. Тепĕр тесен, тапăрта ирĕклĕн ӳссе тĕрмере ларнă çын çарти дисциплинăна тăруках хăнăхса çитессе кĕтни те шыв çинче сенĕкпе çырни кăна. Кунсăр пуçне ырă тĕллев патне ырă мар майпа çитеймĕн. Педагогăн çакна пĕлмеллех. Çын тивĕçне таптанине ырлама çук. Командир чĕри çăрнă-çăрман чустаран ан пултăр, çын хуйхи-суйхине ăнланма пĕлтĕр.

Пожеданов пурин çине те тинкерӳллĕн пăхса çаврăнчĕ: мĕн тăвăпăр? «Ха, хăй тĕллĕн татса парасшăн мар. Взводран ыйтнине, унпа канашланине япăх теме çук»,— тĕвĕленчĕ шухăш салтаксен пуçĕнче. «Пирĕнпе канашланă пек хăтланать. Çăмăллăнах авторитетлă пуласшăн ĕнтĕ»,— шухăшласа илчĕ Исиодор Поганников. Сасăпа вара çапла каларĕ:

— Ман шутпа, Романухиншăн гауптвахта тунсăхланă...

Чĕмсĕррин сĕнĕвне ырлакан пулмарĕ. Романухин ун енне çаврăнса та пăхмарĕ иçмасса.

— Çави ăçта унăн?— пĕлесшĕн пулчĕç иккĕн-виççĕн харăсах. Командир та çавăн çинчен ыйтрĕ:

— Чăнах та, ăçта санăн çаву?

— Эп халех!— командира чыс пачӗ Романухин. Темиҫе минутран вӑл та ҫавапа хӑй каҫалӑкне тӑчӗ.

Икӗ отделени икӗ уҫланкӑра утӑ ҫулать. Ҫулакансем пӗрин хыҫҫӑн тепри хӑлаҫланаҫҫӗ. Пожеданов та взводпа пӗрле ҫава тытрӗ, сулмаклӑн ҫулма тытӑнчӗ. Малта отделени командирӗ Никифор Табаков, ун хыҫӗнче Павӑл Артамонов. Вӑл малтинчен те, кайринчен те сарлакарах кастарать ҫавипе, малтине таптасах пырать, иртсе те кайӗччӗ — май ҫук.

Взводнӑй умӗнче Исиодор Поганников. Вӑл хӑй умӗнчи Петр Даниловран чылаях кая тӑрса юлнӑ. Даниловне вара хӑйӗн мехелӗпе малалла ӳсӗмлӗрех талпӑнма мӗшӗлти Ястребов чӑрмантарать. Ещӗксенчен пулштух йӑкӑртнӑ чухне вӑл ӑмсанмалла вӑр-варлӑх кӑтартнӑччӗ, кунта вара, вӑрман уҫланкинче, ҫавнашкал правурлӑх унӑн пачах курӑнмасть.

Поганников ҫамки ҫине пӑрҫа пек шултӑра пӗрчӗллӗ тар тапса тухнӑ. Вӑл тарне аялтан тӑхӑнакан шурӑ пӳс кӗпе ҫаннипе шӑлса илет, пуҫ пӳрнипе пуса-пуса чӗлӗмне васкамасӑр махорка тултарать, кӑкӑрӗ туличчен тӗтӗм ҫӑтма тытӑнать. Ӗҫ ҫемми каллех пӑсӑлать, вичкӗн ҫавасен вӑштин-вӑштин сасси илтӗнми пулать. Аничкин вӑн иккӗмӗш ҫава хуҫрӗ. Курӑк хушшинчи тунката унӑн ҫави тӗлне темле майпа хӑех тӑрӑнса чанклаттарать. Булатов ҫава аврине ҫирӗп лартаймасӑр асапланать: ик-виҫ хут сулсанах пушанса каять. Кудряшов ҫавин тӗлӗнтерекен хӑйне евӗрлӗх пур: курӑка тӗпӗнчен мар, тӑрринчен касма пӑхать. Ҫавӑн пирки паккусӗнче курӑк тураса илмелӗх те ҫук, касӑлман курӑк вӗтлӗх пекех тӑрса юлать.

Пӗтӗмӗшле илсен ӗҫ ӑнӑҫса пырать теме ҫук. Икӗ кун ҫапла ӗҫлекелесен взводнӑй Табаковпа канашласа пӑхма шут тытрӗ:

— Никифор Андреевич, тӗрӗссине калас тӑк, пиртен хӑшӗ-пӗри ку таранччен пачах утӑ ҫулса курман. Ҫава аврине хӑш енчен тытмаллине те лайӑххӑн пӗлместпӗр. Пӑхса ҫаврӑнмастӑр-и кам мӗнлерех ҫулнине? Кашнине уйрӑммӑн вӗрентес меслет питӗ вырӑнлӑ пулассӑн туйӑнать.

Табаков васкамарӗ командира хурав пама. Калас сӑмаха пуҫ тавра виҫҫӗ ҫавӑрмасӑр персе ямасть. Ҫавӑншӑн хисепленӗ те ӑна тӑван ялти колхозниксем. Отчетпа суйлав пухӑвӗ пулмассерен каллех правлени председательне лартнӑ. Чыслӑхран кӑларчӗ ӑна колхозӑн оборона валли ӑсатмалли грузовик кустӑрмисем сарӑмсӑр ҫухални. Кам вӗсене улӑм ури айне кайса чикнӗ, ҫакна Табаков ниепле

те пушкараймасть. Ăна вара кустăрмасене юри пытарнă тесе тĕрмене хупса лартрĕç. Юрать-ха фронта кайма ăна хăй хистенипе срокчен кăларчĕç.

— Юлташ старшина, эсир мĕнле шутлатăр: утă çулса пĕтерсен те фронта лекейместпĕр-ши? Чунăм таса пулнине кăтартас килет,— чĕри тĕпĕнчи шухăшне каларĕ Табаков.— Значăт, Тăван çĕр-шыв умĕнче, халăх умĕнче çылăха кĕрес шухăш пулман ман, халĕ те çук, пуласси те курăнмасть.

Пожеданова старшина ятне пама тăратнине взводра пурте пĕлеççĕ, анчах приказ килмен-ха, салтаксем ăна пурпĕр çав званипе чĕнеççĕ. Темшĕн-çке çакă Пожеданова килĕшмест, анчах Табаков та ăна çавнашкалах чĕннине асăрхаманçи пулчĕ.

— Акă мĕн, Никифор Андреевич, фронта хăвăртрах каяс тесен утă çулассине кăшт хăвăртлатмалла пек, эппин, ăна урăхларах йĕркелемелле...

— Тĕрĕсех калатăр, юлташ старшина! Вăрман курăкĕ хытă. Эппин, ăна ирхи сывлăмпа, каçхи сулхăнпа çулмалла. Кăнтăрлахи шăрăхра пĕр виç сехет кансан та пăсмасть. Пĕрин хыççăн тепри çулнине, пĕри теприне кĕтнине ырлас килмест. Кашнинех уйрăм лаптăк виçсе парăр — ĕç хăвăртланĕ.

— Эппин, çаплах тăвăпăр. Халлĕхе эсир кам мĕнле çулнине пăхса çаврăнăр-ха.

— Итлетĕп, юлташ командир.

Табаков чыс пачĕ те çулакансем патнелле утрĕ.

— Эсĕ мĕн çаву çине ӳпĕннĕ? Тӳрĕ тăрса çул. Аллуна тăсарах сулса яр — сарлакарах кастарăн...— илтрĕ Пожеданов тепĕр самантранах унăн сассине. Эппин, Табаков взводнăй приказне пурнăçлама пуçăнчĕ.

Хĕвел чылай çӳле хăпарсан Пожеданов паккусри утта сенĕксемпе тавăрттарчĕ. Унтан, хăй каларăш, отделени командирĕсен пилĕк минутлăхне ирттерчĕ. Çавăн хыççăн отделени командирĕсем кашни çулакана уйрăм лаптăк уйăрса пачĕç. Çулнă чухне пĕр-пĕрне ура хурасси çакăнпа пĕтрĕ, ĕçри яваплăх та, шутпа пахалăх та палăрмаллах ӳсрĕ.

Ĕç хыççăн та, кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче те Петр Данилов тата Григорий Легкоступов тимĕрçĕ лаççи умĕнче вилсе хытнă пек ларакан кустăрмаллă трактор çумĕнче тек-текех кĕрмешрĕç. Трактор бригадин бригадирĕ ăна МТСа юсава леçме шутласаччĕ, пĕр кунхине тăр кăнтăрла кĕтмен-туман çĕртен çавскер сасартăк яла янăратса тата тĕлĕнтерсе хаваслăн кĕрлеме пуçлать. Çĕнĕрен чун кĕнĕ-

скерпе çав кунах пӗрин пахчинче çӗр улми йӑранӗсене кӑпкалатрӗç.

«Красный маяк» колхоз председателӗ, фронтран аманса таврӑннӑ Лепешкин, салтаксем шанчӑксӑр трактора юсаса хута янипе хӗпӗртенӗскер, взвод утӑ çулнӑ çӗре пычӗ, паккусри курӑка тыткаласа пӑхрӗ. Курӑк туни çӑтӑр-çатӑр хуçӑлакан пулнӑ. Ун шучӗпе, халех пуçтарса купалаттармалла.

— Ут кӗрепли пирӗн ахалех тӑрать, сирӗн урхамахӑр ӗç ыйтса кӗçенет. Кӳлӗр те пуçтарӑр, пуçтарӑр та купалӑр,— ӑс пачӗ вӑл Пожеданова.

Кӑнтӑрлахи кану хыççӑн икӗ уçланкӑра та лайӑх таптаса купаланӑ утӑ капанӗсем ӳсе-ӳсе ларчӗç.

## ПУРНӐÇ МАЛАЛЛА ЫРАТЬ

### Аллӑрсене çӗклӗр! Суд килет!

Сассем çӗтсе лариччен тавлашнӑ хыççӑн взводри салтаксен пухӑвӗ пӗрешкел шухӑш патне пырса тухрӗ.

— Суда парас вӗсене! Суд пӑхса тухтӑр...

— Зексен е уркӑсен взвочӗ ячӗпе!..— пыр тӗпне хыртарса кӑшкӑрать пӗри.

— Мӗншӗн ун пек? Пирӗн взводра тӗрмере ларса курманнисем те пур-çке. Эппин, утӑ çулакан взвод ячӗпе...

— Қапла юрать те пулӗ.

Пуху прокурор пулма Табакова çирӗплетрӗ. Айӑпланакансене хӳтӗлеме Иванов килӗшрӗ. Судья креслине Иван Данилов йышӑнмалла, заседательсем вырӑнӗнче Кириллов тата Булатов лармалла.

Суд ларӑвӗ каçхи апат хыççӑн клубра пулчӗ. Унта ял халӑхӗ те чылай пуçтарӑнчӗ. Айӑпланаканнисен тенкелӗ çинче Поганников, Ястребов тата Бражкин.

Малтан судьяпа заседательсем вырӑнӗнче кам-кам ларнине аса илтерчӗ Данилов.

— Шанатӑр-и пире паянхи ӗçе пӑхса тухма?— ыйтрӗ вӑл айӑпланакансенчен.

Поганников хӑвӑрт ура çине тӑчӗ.

— Суд йышӗнче икӗ чӑваш: Иван Данилов тата Семен Кириллов. Икӗ чӑваш — икӗ хурӑнташ. Вӗсенчен пӗрне йышӑнмастӑп...

Судьяпа заседательсем пӑшӑл-пӑшӑл туса илчӗç. Данилов пурте илтмелле çапла пӗлтерчӗ:

— Тивӗçлӗ сӑлтавсем çукран Поганников гражданин ыйтӑвне тивӗçтермесӗр хӑваратпӑр. Суд уголовнӑй ӗçе çак йышпах тӗрӗс пӑхса тухма пултарать. Кунсӑр пуçне судьяпа заседательсене пирӗн паттӑртан та паттӑр взводӑн аслӑ канашӗнче суйласа хӑварнӑ.

Чи малтан Табаков «прокурора» сӑмах пачӗç. Вӑл пурне те шута илнӗ иккен: преступлени хӑçан тата ӑçта тунине те, хӑшӗн айӑпӗ пысӑкраххине-пӗчӗкреххине те, айӑпланакансем маларах камсем пулнине те... Виççӗшӗ те пӗрер хут судпа айӑпланнӑ ӗнтӗ, иккӗшӗ — арлӑ-арӑмлӑ, пӗри авланман-ха. Вӑрлассине пуçараканӗ — Поганников. Тулли пулштухсене ещӗксенчен вӑл кӑлара-кӑлара илнӗ. Эппин, тӗп айӑп унра. Вӑрланӑ эрехе аларан алла Ястребовпа Бражкин йышӑннӑ. «Эппин, вӑрра пулӑшакансем пулса тӑнӑ».

Суд умне тӑратнӑ виçӗ çынна «прокурор» икӗ айӑплӑ ӗçшӗн явап тыттарасшӑн. Пӗрремӗшӗнчен, виççӗшне те коопераци пурлӑхне ушкӑнпа çаратнӑшӑн РСФСР Уголовнӑй кодексӗн 143-мӗш статйи тӑрӑх çирӗп наказани пама ыйтать. Ялпоран Юманайри лавккана тавар турттарса килекен лав çинчен айӑпланакансем Исиодор Поганников, Митрофан Ястребов тата Виталий Бражкин пурӗ 30 пулштух хӑмла çырли эрехӗ вӑрланӑ. Çак эрехӗн кашни пулштухӗ 2 тенкӗ те 10 пус тӑрать. Эппин, вӑрӑсем коопераци пурлӑхне пурӗ 63 тенкӗлӗх çаратнӑ. Вӗсем 5 пулштух эрех ӗçсе яма ӗлкӗрнӗ, 25 пулштухне лавккана тавӑрса панӑ. «Прокурор» аллинче çакна çирӗплетекен расписка пур. Вӑрӑсен лавкка умӗнчи парӑмӗ 10 тенкӗ те 50 пус юлнӑ.

Иккӗмӗшӗнчен, преступниксем хӑйсен йӗрӗпе пынӑ Виктор Кураковпа Алексӑ Романухин аллисене хыçалалла туртса çыхнӑ, иккӗшне те хӗненӗ. Следстви вӑхӑтӗнче хӑйсене ултавлӑ майпа тӳрре кӑларма, пӗр айӑпсӑр икӗ салтака вӑрӑсем туса хума хӑтланнӑ. Çакӑншӑн айӑплисене РСФСР Уголовнӑй кодексӗн 141 статйи тӑрӑх явап тыттармалла.

«Прокурор» сӑмах каланӑ хыççӑн суд айӑпланакансенчен хӑйсенчен ыйтса тӗпчеме тытӑнчӗ. Вӗсенчен пӗрне Поганникова взводра чӗмсӗр янавар теççӗ. Паллах, ахальтен мар: çынпа калаçмалли кашни сӑмаха укçалла илет тейӗн. Çулӗпе взводра чи ватти. Çавӑнпа хӑйне пысӑкраха хуртарасшӑн, хисеплеттересшӗн те. Юлташӗсене хӑй çинчен нихçан та нимӗн те каласа кӑтартмасть, пурпӗр пӗлеççӗ: ялти çӗрме пуян ывӑлӗ пулнӑ вӑл. Ашшӗ çӑм тапакан арман тата хупах тытса тӑнӑ. Хупахне хупсан, çӑм тапакан арманне тип çеç йӗркеленӗ пӗрлешӳллӗ хуçалӑх валли

туртса илсен вăл ашшĕпе пĕрле кĕрхи пĕр тĕттĕм каç ял Канаш председательне пăвса вĕлернĕ те мăн çул çинчи кĕпер айне кайса пăрахнă. Ун виллине малтан йытăсем, унтан НКВДра ĕçлекенсем эрнеренех тупнă. Кам вĕлернине пĕлейместчĕç те пулĕ — Исиодор ашшĕ пăвма усă курнă чăпар шарфне вилнин мăйĕнчен салтса илме астуман. Пулать вĕт çавнашкал пысăк йăнăш. Исиодор ашшĕне персе пăрахнă вара, ашшĕнчен кая мар айăплă ывăлĕ ак халичченех мăшлаттарса çӳрет-ха. Чĕринче вĕчĕ тытать пулас, хĕсĕк куçĕнче хаярлăх хĕлхемĕсем выляççĕ. Чеелĕхĕ унăн темиçе çын валли те çитет.

— Кăлăхах мана айăплатăр,— терĕ вăл суд умĕнче.— Ещĕкрен эрехе Кураковпа Романухин хушнипе кăлартăм. Эпĕ вĕсем шӳтлесе хăтланаççĕ тесе. Чăнласах вăрласса пĕлмен. Пĕлнĕ пулсан пырса та перĕнместĕм. Эппин, тĕп вăрăсем Кураковпа Романухин. Мана мар, вĕсене айăплăр.

Айăпланакансене судьяпа заседательсем те, прокурорпа адвокат та ыйту хыççăн ыйту параççĕ. Хуравсенче вара пăркалану, уçăмсăрлăх, кĕретĕнех суйни мăй таранах. Хăйсене хăйсем хирĕçлени те итлекенсене йăл култарать. Тӳреммĕн хурав парассинчен вĕсем аиккинелле пăрăнаççĕ. Çавна май ыйтусем хуравĕсенчен икĕ-виçĕ хут нумайрах.

Айăпланакансем виççĕшĕ те хăйсене эрех вăрланăшăн тата юлташĕсене хĕненĕшĕн айăпланипе пачах килĕшмерĕç. Эрех кĕленчисене вĕсем лав çинчен мыскара тăвасшăн та хĕрсен тимлĕхне тĕрĕслесшĕн кăна илнĕ. Лавкка сутуçипе аслă конюхăн çавнашкал тăмана пулма юрать-и вара!.. Çук, Романухинпа Куракова вĕсем пӳрнепе те тĕкĕнмен, çĕрлехи тĕттĕмре хăйсемех йывăç çумне пыра-пыра çапăннă, такăна-такăна ӳкнĕ, питне-куçне çавăнпа кăвакартса пĕтернĕ те ĕнтĕ. Шутласассăн урлă-пирлĕ вĕсене чышкă-маклашкăпа ăс вĕрентсе илни те питĕ кирлĕ: юлташĕсем çумне куршанак пек ан çыпăçчăр, улах çĕре ырă тĕллевпе кайнă çынсене никам хушмасăр кăлăхах ан чăрмантарччăр.

— Романухина тӳсекеннисен шутĕнчен халех кăларса пăрахăр. Ăна тăхтаса тăмасăр айăпланакансен тенкелĕ çине, пирĕнпе юнашар лартмалла,— евитлерĕ айăпланакансенчен пĕри — Исиодор Поганников.— Мĕншĕн-ши? Эпир эрех пулштухĕсене йăкăртнă вăхăтра вăл кăмăллă сăмахсемпе — леш комплимент текеннисемпе — хĕрсен пуçĕсене çавăрчĕ. Эппин, вĕсен тимлĕхне урăх çĕрелле пăрса пире пулăшакан пулса тăчĕ. Унсăр пуçне Романухин кӳнтелен пулма тивĕçлĕ мар. Паллах, мораль тĕлĕшĕнчен.

Кам пур пирĕн взводра самоволкăна каяканни? Романухин. Тăван тапăрне миçе кун шыраса çӳренĕ вăл!.. Çитмен вырăн хăварман. Взвод командирĕпе туслă та хăнк та тумасть...

— Суятăн намăса пĕлмесĕр! Командир ăна черетсĕр виçĕ наряд панă: курман-им цыган каçсерен кухньăра улма шуратнине?— тарăхнă сасăпа чарчĕ Поганникова взвод сучĕн председателĕ Иван Данилов. Хăй çавăнтах умĕнчи хут листи çине тем çырса хучĕ.

— Мана сăмах парăр-ха, гражданин судья,— чăтса тăраймарĕ Илья Лилипутов трибуна патнелле танкăшса.— Зек, урка ятпа хăшĕ-пĕри леш тĕнчене месерле кайса выртиччен пурăнасшăн ахăр. Апла лĕпĕртетнипе май килмест. Эхер çĕнĕлле пурăнма шут тытрăмăр пулсан, пирĕнтен кашниех çамки çине картса хутăр: кунта çур сăмах та суймалла мар. Хамăр взвод ятне пурин те çӳлте тытмалла, унпа кăвапа пек çыпçăнса лармалла пултăр...

Свидетельсем прокурор айăплани тĕрĕссине кăтартрĕç. Павел Артамонов каланинчен çакă паллă пулчĕ: эрех кĕленчисем тултарнă хутаç Ястребовăн та мар, Бражкинăн та мар, Поганников салтакăн. Вăрăсен харапне тӳсекен Галина Торговцева сутуçă лав хыçĕнче лутра та сарлака салтака курнă. Иккĕленмелли çук: ку вăл никам та мар, Исиодор Поганников ĕнтĕ. Унсăр пуçне, сутуçă мулкач пек катăк туталлă салтак ихĕрсе пынине асăрханă. Унашкал туталли взводра пĕрре çеç. Вăл та пулин Виталий Бражкин.

Илья Лилипутов свидетель витĕмлĕ сăмах каларĕ:

— Айăплă ĕç тунă кун Митрофан Ястребов взвод кухнине пырса çăкăр тата урăх мĕн те пулин пама ыйтрĕ. Эпĕ килĕшмерĕм. Каçхи апатра пурте пĕрле çиетĕр терĕм. Вĕсене ĕçнĕ чухне çыртмалли кирлĕ пулнă иккен. Çав кун каçхи апата пиллĕкĕн пымарĕç: виççĕшĕ эрех кӳпме кайнă, иккĕшĕ вĕсене хыçалтан йĕрлесе пынă...

Лилипутов ассăн сывласа илчĕ те сăмахне малалла тăсрĕ:

— Христос хăйĕн вĕренекенĕсене çапла каласа хăварнă: пĕрне-пĕри пăхăнар, пĕр-пĕрин урисене çăвар. Эпир вара мĕн хăтланатпăр? Хамăрăн йăмăкăн аллинчи çăкăр чĕллине туртса илетпĕр. Пиччĕшĕ фронтра çапăçнăран-и? Унăн йăмăкне тăванла хӳтĕлекен çукран-и?

Ял ĕçтăвком председателĕ ватă Филимонов халĕ, совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсем Тăван çĕр-шывшăн юн тăкса çапăçнă вăхăтра, тылри йĕкехӳресем вăрă-хурахла хăтланнине каçарма юраманни çинчен ĕнентерӳллĕ

сӑмахсем каларӗ, вӑрӑсен ӗҫне ҫар трибуналне пама ыйтрӗ.

— Тӗпрен илсен, ҫынсем преступлени ӳсӗр пуҫпа тӑваҫҫӗ, сыпкаласа хӗрӗнкеленеҫҫӗ те мулкачла паттӑрланса вӑрра каяҫҫӗ. Ҫайран мӗншӗн ҫапла турӑм-ши тесе ӳкӗнеҫҫӗ. Анчах чавса ҫывӑх та — ҫыртма ҫук ҫав. Кусен пачах урӑхла пулса тухнӑ: тӑр кӑнтӑрла тап-таса пуҫпа фронтри салтак йӑмӑкне ҫаратнӑ. Эсир намӑс-симӗсе пачах туйми пулнӑ-ши е питӗре кӗҫҫе ҫӗлесе янӑ-ши? Ан та вӑрлӑр — пӗрех лекетӗр...— ним сикми хаяр куҫпа пӑхса ятларӗ вӑрӑсене ял ӗҫтӑвком председателӗ.

— Ҫук, эпир вӑрӑсем мар,— судьяран ирӗк ыйтмасӑрах калама тытӑнчӗ Исиодор Поганников. Вӑл васкамасӑр, сӑмахсене тӑсса калаҫать.— Ещӗксене шӳтлесе кӑна пушатрӑмӑр... хӗрсен сыхӑлӑхне тӗрӗслеме ҫеҫ...

— Эсир ӗҫменех пулсан пилӗк пулштух эрехе ҫӗр ҫӑтнӑ-им вара?— ыйту памасӑр тӳсеймерӗ Табаков прокурор.

Иван Данилов судья Поганникова та, прокурора хӑйне те йӗркене пӑсса сӑмах калама юраманни ҫинчен ҫирӗппӗн асӑрхаттарчӗ.

Иван Иванович Иванов адвокат сӑмахне пуринчен те вӑрӑмрах каларӗ.

— Ҫам вӑл адвокат?— пуҫларӗ вӑл калама.— «Адвокатура» пулӑшу парас тенине пӗлтерет. Паллӑ ӗнтӗ, суд преступниксен ирсӗр ӗҫне тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Адвокат тӗллевӗ пачах урӑхла — вӑл май пур таран вӗсене хӳтӗлет. Малтанах ҫакна палӑртмалла: сӑмах калакансем айӑпсӑрлӑх презумпцине пачах хисепе хумаҫҫӗ. Ку вӑл акӑ мӗне пӗлтерет: суд йышӑнмасӑр никам та никама та айӑплӑ тесе калама пултараймасть. Кунта вара пӗри те тепри айӑплисем тата вӑрӑсем тесе ҫуйӑхать. Халлӗхе вӗсем преступниксем мар, суд умне тӑратнисем. Суд хыҫҫӑн курӑпӑр унта.

Хӑй мӗн тери ӑслӑ калама пултарнипе савӑннӑран адвокат малтан судьяпа заседательсем, унтан суд умне тӑратнисем ҫине ҫӗнтерӳллӗн пӑхса илчӗ, сӑмахне малалла тӑсрӗ:

— Влаҫрисем суд умне тӑратнисене апла та, капла та айӑплама пултарӗҫ-ха, анчах ҫакӑ кама мӗнле усӑ кӳрӗши? Поганникова тата ӑна пулӑшакансене кирпӗч шутлама тепӗр хут ярӑпӑр, хамӑрӑн тӑван полк валли утӑ ҫулаканӗ кам пулӗ? Икӗ чӑнлӑх куҫ умне тухса тӑрать: тепӗр хут кирпӗч шутлаттарас текенсем е хӑйсем ӑсран тайӑлнӑ, е вӗсем пире, Тӑван ҫӗр-шывӑн харсӑр ывӑлӗсене, ухмаха ернисем вырӑнне хураҫҫӗ. Юлашки шухӑш тӗрӗс-

реххĕн туйăнать. Чи юлашки шухăш тухса тăрать: хăй халăхне хăй ухмаха хураканăн хăйĕн пуç тӳпи шăтăк мар-ши?

Адвокат каллех пуçне çĕклерĕ, суда килнисем çине çĕнĕ çăлтăр тупнă астроном пек пăхса илчĕ.

— Эпĕ суд ларăвне тепĕр вăхăта хăварма ыйтатăп. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен «прокурор» суд умне тăратнисем айăплине ĕнентерӳллĕн кăтартса параймарĕ. Суд умне тăратнисем пĕсехе хĕриччен хăмла çырли йӳçекĕ мехленине никам та курман. Тӳсекенсем шутĕнчи Кураковпа Романухин свидетель пулма пултараймаççĕ. Çитменнине тата вĕсене иккĕшне хĕненине те куракан пулман. Хăвăрах ăнланатăр, пилĕк пушă пулштуха свидетельсем теме çук. Свидетельсем пулсан кăна вăрттăнни çиеле тухма пултарать. Тепĕр хут калатăп: ĕçе пăхса тухассине тепĕр ларăва хăвармалла. Тен, ун чухне суд умне тăратнисем хăйсен айăпне хăйсемех йышăнĕç.

Айăпланакансенчен Виталий Бражкин ĕçессине те ырана хăвармасть, айăпне йышăнассине те тепĕр вăхăта хăварма килĕшмерĕ. Вăл ура çине тăчĕ те кĕлеткипе Галя Торговцева еннелле çаврăнчĕ:

— Қаçар, Галя, айăплă эпĕ сан умăнта...

Судья приговор вулама пуçласшăнччĕ. Çав вăхăтра Галина Торговцева продавщица ура çине тăчĕ.

— Тăхтăр-ха кăштах, тăхтăр...— çĕр çырли пек хĕрелсе кайрĕ хĕр.— Сăмахăм вырăнлă пулĕ-и, çук-и, хамăрăн шухăша калас килет. Кунта ав вăрăсене гауптвахтăна хупма сĕнчĕç-ха. Тĕрĕс-ши çакă? Пикенсе утă çулас вырăнне вĕсем пĕр-пĕр сарайра ларĕç...

— Сарайĕ ураланса тарасран хурал та тăратма тивĕ...

— Ана хăвăр пĕлĕр ĕнтĕ... Эпир, Юманай çыннисем, айăплама та, хĕрхенме те пултаратпăр. Ку çаплах тейĕпĕр. Усăллă айăплама май çук-ши? Тĕслĕхрен, яла та, хăвăра та кинобудка кирлĕ. Унсăр пушар хуралĕ кино кăтартма ирĕк памасть. Строительство материалĕсем — кирпĕч те, цемент та — пур. Айăпа кĕнисем гауптвахтăра лариччен кинобудка туса памĕç-и? Вара Юманай вĕсен айăпне вуçех каçарма та пултарĕччĕ...

— Галина-малина,— хыçалти тенкел çинчен сиксе тăчĕ Романухин,— ăслă сăмах каланăшăн сана чуп туса илме те хатĕр... Эпĕ... эпир...

Судья Иван Данилов хатĕрленĕ приговора вуламасăрах кресло çине вырнаçса ларчĕ. Пăшăл-пăшăл калаçса илчĕ вăл заседательсемпе. Унтан виççĕшĕ те харăсах тăчĕç те пӳрте кĕрсе кайрĕç. Темиçе минутран вĕсем тухни курăнчĕ.

— Ура çине тăрăр, хăяматсем! Аллăрсене çĕклĕр! Суд килет!— кăшкăрса пĕлтерчĕ взвод сучĕн секретарĕ Кудряшов.

Судья кунта пухăннисене куçĕпе пăхса çаврăнчĕ те приговор вулама тытăнчĕ:

— Хĕрлĕ Çарăн Юманайра утă çулакан взвочĕ ячĕпе... салтаксем пĕр саслăн суйланă тĕрĕсрен те тĕрĕс суд, Данилов судьяран тата Кирилловпа Булатов заседательсенчен тăраканскер, уголовнăй ĕçе Кудряшов секретарь пулнипе пăхса тухса, Табаков прокурорăн айăпласа каланă сăмахне, Артамонов, Коновалов, Лилипутов тата Торговцева свидетельсене, Иванов адвоката итленĕ хыççăн айăпланакансене тӳрре кăларма çуккине курса, çапла йышăнчĕ:

1. Табаков «прокурор» халăх судĕнче пăхса тухмалли уголовнăй ĕç пуçарма хистенипе пĕр процент чухлĕ те килĕшес мар.

2. Кооперацн пурлăхне çаратнăшăн, юлташĕсене хĕненĕшĕн тата элекленĕшĕн, çавăн пек ирсĕрлĕхсемпе совет салтакĕн чысне янăшăн Исиодор Поганников, Митрофан Ястребов тата Виталий Бражкин рядовойсен ĕçне çар трибуналĕ пăхса тухса наказани памалла. Анчах боецсем фронтра, кунта утă çулакансем тем тери кирлине асра тытса тата айăпа кĕнисем таса чĕрепе ӳкĕнессине шута илсе пĕррелĕхе взвод сучĕпех çырлахас.

3. Айăпа кĕнисен утă çулнă вăхăтра е канмалли кун клуб çумне кирпĕч кинобудка хăвăрт туса лартмалла. Пĕрремĕш фильм умĕн ялти пĕтĕм халăхран каçару ыйтмалла. Ĕçсе янă эрехшĕн ял лавккине 10 тенкĕ те 50 пус укçа тӳлемелле.

4. Взвод чысне вараланă асăннă салтаксем, çавăн пекех ыттисем те уголовнăй йĕркепе явап тыттармалли преступленисем çакăн хыççăн татах тусан взвод судĕнче пăхса тухмасăр тӳрех çар трибуналне парас.

Клуба пухăннă халăх суд приговорне ура çине тăрса итлерĕ. Взводри пыр ярăннипе аптракан салтаксем çул çинче мĕн хăтланнине ял халăхĕ йĕпрен пĕрене тăвакан пăшăл-пăшăл сăмахсем урлă мар пĕлчĕ — витĕр кăтартакан тĕкĕр çинчи пек хăй курчĕ. Унсăрăн ялта хăмла çырли йӳçекĕ пирки темле сăмах та çӳретчĕ, взводри кашни салтак çине шанми куçпа пăхма тытăннăччĕ. Кирпĕч шутланă çĕрте панă тумтире хывса салтак шинелĕ тăхăннăранпа вăхăт пайтах иртрĕ. Вĕсем инçех те мар хулара кирпĕч шутлани çинчен юманайсем те пĕлеççĕ ĕнтĕ. «Эх, хăйсем ăристан пулнине аса илтермелли пăтăрмахсем

текех тумасанччĕ! Тĕрмере мĕн чăтса ирттернине хуть вăхăтлăха пуçран кăларса пăрахсанччĕ! Çакă мĕн тери лайăх пулĕччĕ»,— шутларĕ хăй ăшĕнче Пожеданов.

Темиçе кунран ял ĕçтăвком комиссийĕ эрех вăррисем туса лартнă кинобудкăна «юрăхлă» тесе йышăнчĕ, пушар инспекцийĕ клубра кино кăтартма тинех ирĕк пачĕ. Қаçпа ял çыннисем салтаксемпе пĕрле «Волга, Волга...» кинофильм курчĕç. Суд йышăннă тăрăх, виçĕ салтак хăйсене хăмла çырли йўçекĕ ааштарни пирки ял çыннисем умĕнче ўкĕнмеллеччĕ. Строительсем хăйсем çакна аса илесшĕн пулмарĕç, суд председателĕпе командир та пĕтĕмĕшле савăнăçа пăрăçлама шутламарĕç ахăр. Ана-кăна ним те шарламарĕç.

## Юрату пурах-ши е çук-ши?

Юманай çумĕнчи Çуткўль хăйĕн авалтан килекен пурнăç йĕркине улăштарни асăрханмасть: кăнтăрла яланхи пекех тап-таса шыв тĕкĕрне хĕвел пайăркисем йăлтăртаттараççĕ, каçсерен ун кĕмĕл хумĕсене шупка уйăх çепĕç çутăпа ачашлать. Кўлĕпе юнашар ларакан вырăс ялĕн пурнăçĕ вара вăрçă пуçланнăранпа чылай улшăнчĕ. Халĕ кунта хаваслă юрă-ташă илтĕнмест, ĕçкĕ-çикĕ тумаççĕ. Яш-кĕрĕм каçпа урама тухма пăрахрĕ. Каччăсене фронта ăсатнă пулсан кампа юрлăн, кампа ташлăн? Чĕрене çурсах яракан синкер хут — похоронка — пĕр кил хыççăн тепĕрне килет.

Мăк сăрчĕ çинчен пĕр взвод салтак килсен яла урăхларах чун кĕнĕ пек пулчĕ. Кунĕпе ĕçлесе ĕшеннĕ пулин те, çамрăк салтаксем çывăрма выртас умĕн пўрт ум пахчи тĕлĕнчи тенкелсем çине туха-туха лараççĕ. Пăхăсăн, вĕсем патне темиçе хĕр пырса та тăрать. Салтаксене кичемлĕхрен хăтарма ахăр.

Лепеховсен паварĕ çумĕнчи чие йывăççи айне те кĕçĕр пĕр ушкăн пуçтарăнса ларнă. Взвод ĕçĕ-хĕлĕ, фронтри лару-тăру, ялти пурнăç хыпарĕсене шĕкĕлчесси чи малтан Алевтинăна йăлăхтарчĕ пулмалла. Тăрна пек вăрăм мăйне тата кăштах тăсрĕ те каçхи урама акă мĕн пĕлтерчĕ вăл:

Полюбила лейтенанта,
А майор мне говорит:
У меня ремни пошире,
Босоножки можно шить.

Хуратут пуснӑран чӗкеҫ ҫӑмарти пек питлӗ Маруся татах та ҫивӗчреххине ҫавӑрттарса хучӗ:

Оторвали, оторвали,
Оторвали у парня.
Вы не думайте чего —
От жилетки рукава.

Чӑх-чӗп ферминче ӗҫлекен Ленӑна та, лавкка сутуҫине Гальӑна та унашкал такмаксем пӗртте килӗшмерӗҫ.

Вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ Катя Соловьева Ҫӗпӗрти аппӑшӗ патне хӑнана кайса килнӗ, унта ак мӗнле такмак вӗреннӗ:

Милый, че? Милый, че?
Милый сердишься на че?
Али люди че сказали,
Али сам надумал че?

— Шӑпланӑр-ха, хӗрсем. Пӗрре Витюк рядовоя калаҫтарар-ха. Купӑсӗ ун юрату кӗввисене лайӑх шӑрантарать, купӑсҫӑ хӑй ун пирки мӗн шутлать-ши?— пуҫне Виктор еннелле пӑрчӗ Мальвина.

— Ҫакна ав Рита та пӗлесшӗн,— куҫ хӗсрӗ Галя.

Именчӗк Маргарита ун сӑмахне илтмӗш пулчӗ. Пичӗ кӑна пӗрлӗхенле хӗрелсе кайрӗ. Хӑй пӗтӗм кӗлеткипе тенкел ҫине йӑпшӑнараххӑн ларчӗ.

— Ку ыйтупа авторитетлӑ калаҫма опыт ҫук ҫав ман,— Маргарита ҫине шикленерех пӑхса илчӗ Виктор. Малалла калама ирӗк парсам терӗ пуль.— Эпӗ институтра вӗреннӗ чухне пулчӗ-ха ку. Лекци вӗҫӗнче пӗр студентка философи наукисен докторне пӗр ҫыхӑнусӑр-мӗнсӗр кӗтмен-туман ыйту пачӗ:

— Василь Васильевич, каласамӑр тӳррипе, юрату чӑннипех пур-и ҫут тӗнчере е ӑна ытахальтен ҫеҫ шутласа кӑларнӑ-и?

— Эсир Венера Платоноваччӗ вӗт-ха. Малтан хӑвӑр каламӑр-и: сирӗн кунашкал ыйту мӗн пирки сиксе тухрӗ?— ыйтӑва хирӗҫ ыйтупа хуравларӗ профессор.

— Сӑлтавӗ-и? Сӑлтавӗ паллӑ. Акӑ хамӑрӑн академи группинчи студентсенех илер. Ӗнер пӗр студенткӑпа кинона кайнӑ, паян теприне театра чӗнеҫҫӗ. Юрату ҫапла пулать-и?

Василий Васильевич ик аллине ик еннелле сарчӗ, мӑкмӑк тукаларӗ те аллисене кӑкӑрӗ тӗлне тытрӗ.

— Э-э, сирӗнне пӗлсех ҫитерейместӗп-ха... Эпир ҫамрӑк чухне, пытармасӑрах калатӑп, юрату пурччӗ. Еплешшӗ вӗриччӗ тата...

Аудиторири йыш ахӑлтатсах кулса ячӗ, унтан алӑ ҫупма тытӑнчӗ.

Пӗр хускатнӑ ыйтӑва профессор тӑхтаса тӑмасӑрах малалла тишкерчӗ:

— Эсир, хальхи Джульеттӑсем, хӑвӑра канашсем сӗнме ирӗк парӑр-ха: чун-чӗререн юратмастӑр пулсан, нихӑш Ромеона та ан чуп тутарӑр. Вил — ан чуп тутар. Чунтан юратакан каччӑ хӗрпе ӳт-пӳ енчен ҫывӑхланма мӑшӑрланиччен шутламасть те, хистемест те. Хӑвӑра ҫирӗп тытӑр, хӗрсем. Ҫакӑншӑн сире кайран пысӑк хисепе хурӗҫ, вӗриреххӗн юратӗҫ.

Чие йывӑҫҫи айӗнчисем пӗр вӑхӑт шӑпах ларчӗҫ. Кашниех профессор калани мӗн тери вырнаҫуллине чамаларӗ ахӑр. Шӑплӑха хӑюланса Маргарита пӑсрӗ:

— Чее эсӗ, Витюк. Питӗ чее. Эпир юрату пирки институт профессорӗ мар, эсӗ хӑв мӗн шутланине пӗлесшӗнччӗ.

— Иккӗленме кирлӗ мар: ашшӗпе ывӑлӗн ҫеҫ мар, вӗрентекенпе вӗренекенӗн те шухӑшӗсем пӗре килеҫҫӗ...— илтрӗҫ хӗрсем. Ҫав вӑхӑтра каччӑн вӗри алли хӗр аллине ыттисем сисмесле ҫепӗҫҫӗн-ҫепӗҫҫӗн сӗртӗнсе илчӗ.

— Тавтапуҫ, чӑваш каччи, ырӑ сӑмахушӑн...— чап! чуп турӗ ӑна питӗнчен Галя. Ҫавӑнтах айӑпа кӗнӗн Маргарита ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ.

...Утӑ ҫулакан салтаксем кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн икӗ сехет кӑтӑш пулса илеҫҫӗ. Взвод командирӗ Пожеданов кӑнтӑрла ҫывӑрма хӑнӑхман та пӳртри сӗтел хушшинче кӗнеке вуласа ларать. Вуласан-вуласан кӗнекине айккинелле илсе хучӗ, асанлӳсен тарӑн путлӑхне чӑмрӗ. Тӑван Анаткас куҫ умӗнчен каймасть. Ҫуралса ӳснӗ ял, мӗн ачаран пӗлсе тӑнӑ вырӑнсем кирек камшӑн та калама ҫук хаклӑ, чуна тем тери ҫывӑх. Тӑван ялпа, уй-вӑрманпа, хӑв вӗреннӗ тата вӗрентнӗ шкулпа каллех сывпуллашма тиврӗ Пожеданова. Нумай вӑхӑтлӑха-и е яланлӑхах? Мӗн пӳрнӗши ӑна шӑпа?

Аслӑ сержант чӳречерен пӑхса илет. Картишӗнче кӑвак кӑвакарчӑнсен ҫемйи кӑлтӑртатать. Лилипутов вӗсене сӗтел ҫинчен шӑлса пухнӑ ҫӑкӑр тӗпренчӗкӗсем сапса панӑ. Ытла та тӳлек ку кӑвиксен пурнӑҫ. Юратма та пӗлеҫҫӗ, чуп туса та илеҫҫӗ. Вӗсен пурнӑҫӗ чӑнах та тӳлек-ши? Пӗр те пӗр шутласан ӗненме йывӑр. Чипер пурӑнакан ялтах мӗн кӑна пулса иртмест! Кӑвакарчӑнсен йышӗнче те ҫавах ахӑр. Пысӑкрах тӗпекли ав урине амантнӑ. Теприн сулахай ҫуначӗ кӗскелсе юлнӑ, пӗрер вӑрӑм тӗкӗ тӑпӑлса ӳкнӗ пулас. Ӑҫта тӑпӑлнӑ-ши? Элес-мелес хурчӑка тапӑнман-ши ӑна?

Виççĕмĕш хăйне лăпкăрах, сăпайлăрах тытать. Йăлтăр-йăлтăр тĕкĕ калама çук хӳхĕм. Чăннипех те хитре çак çамрăк кульăк! Ахальтен мар ĕнтĕ вăл ялти чипер учительницăна Нина Лаврентьевнăна аса илтерет. Кам телейне ӳснĕ-ши çав пике? Куçĕ сенкер. Пожеданов алли хут çине тинкерсе пăхакан мăшăр сенкер куç, пĕкĕ пек çавра-ка куç харши ӳкерет. Çамки çӳллĕ. Ун çинче пĕр пĕрĕм-чĕк те çук-ха. Пĕрре те çук — ан та пултăр. Хут çине çӳллĕ çамка, ун хыççăн тӳрĕ сăмса тĕрленеççĕ. Хĕрĕн сылтăм пит çăмартийĕ çинчи тур паллине те манмасть Пожеданов. Тутлă шухăшсемпе, çутă ĕмĕтсемпе йăпаннă чухне вăл яланах çак хĕр сăнне ӳкерет.

Миккуль ялта Шурăпа пĕрле выляса, кулса ӳснĕ. Хĕр ача тантăшĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман. Пĕчĕккĕ чухне кам тараканни, хăшĕ хăвалаканни, кам пытанаканни, хăшĕ шыраканни пулмаллине ытла та ăста шутласа кăларатчĕ. Шутлав сăмахĕсене тем тĕрлине те пĕлетчĕ. Миккуль тĕлĕнетчĕ: ăçтан ун чухлĕ шутлав астăвать-ши? Хăйне вара пĕрмаях тараканни те пытанаканни пулмалла тухатчĕ. Шкулта та, педучилищĕре те пĕр класра вĕренчĕç. Çитĕнсе çитсен Миккуль çумне сухăр пек çыпçăнакан пулса тăчĕ. Анчах чĕрене вăйпа итлеттерейместĕн. Каччăна чунĕ Александра Елизаровна мар, Нина Лаврентьевна еннелле туртать. Пурах çав кăмăл туртни, чун-чĕре савни! Эппин, юрату та пур.

Аслă сержант сумкинчен хутпа кăранташ кăларать те савнă хĕре çыру çырма пикенет. Чи ăшă сăмахсемпе, таса та çутă туйăмсемпе.

...Хаçатсем Юманай çынни Матвей Илларионович Лепехов паттăрлăхĕ çинчен хыпар илсе килчĕç. Çурçĕр-хĕвел анăç фронтĕнчи пĕр çапăçура вăл гитлеровецсен виçĕ танкне гранатăсемпе аркатнă, çакăншăн ăна Совет Союзĕн Геройĕ (вилнĕ хыççăн) ятне панă. Яла полковник — облаçри çар комиссарĕ — килчĕ, клуба пухăннă халăх умĕнче Таисия Петровна Лепеховăна упăшкин наградине — Ленин орденĕ тата «Ылтăн çăлтăр» медаль пачĕ.

Вăрçăра пуç хунă паттăрăн мăшăрĕ упăшкин наградине чĕтрекен аллисемпе тытрĕ, ăна чуп турĕ. Упăшки çинчен, тискер вăрçă çинчен пĕр-ик сăмах та пулин каласшăнччĕ, пултараймарĕ — чунĕ кӳтсе кайрĕ, пуçне чиксе йĕрсе ячĕ. Пысăк çухату чуна чăтмалла мар ыраттарса пăчăртать.

— Чăтăм çук... Куççуль чарăнайми юхать...— аран илтĕнчĕ унăн сасси. Çав самантрах ун патне куççульпе тĕтреленнĕ куçсемпе тăван хĕрĕсем Лена, Рита тата Света чупса пычĕç, амăшне йывăр хуйхăран сыхласа виççĕшĕ

виçĕ енчен тăчĕç. Асăрхарĕç: амăшĕн урисем те хăйĕн мар пек, пĕртте итлесшĕн мар. Пожедановпа Кураков куляна-кан хĕрарăма сцена çинчен тăванла çавăтса анчĕç, малти рете хăйсемпе юнашар лартрĕç.

Мĕн каланă пулĕччĕ-ши Таисия Петровна чун-чĕререн хурланса йĕрсе яман пулсан? Паллах, упăшки çинчен. Кĕреш пек тăн-тăн кĕлеткеллĕччĕ вăл. Вăйлăччĕ, лаша таканне ним те мар аватчĕ. Кĕрĕс-мерĕсе кирек хăçан та хăй йăтатчĕ, чи йывăр ĕçе хăй çине илетчĕ. Лара-тăра пĕл-мен вĕри чĕреллĕ çынччĕ. Пĕрмаях васкатчĕ, яланах хыпа-ланатчĕ. Бригада уйĕнчи тулла вăхăтра вырса çапмалла, сĕлле те тăкăнма памалла мар. Çуралнă кун тĕлне амăшĕн Лена валли хитре платье çĕлемелле, Ритăпа Света валли çĕнĕ пушмак кирлĕ. Лавккана паха кофтăсем кӳрсе килнĕ. Пĕрне амăшĕ валли суйласа илесчĕ. Çапла, бригада ĕçĕ-хĕлĕшĕн хыпса çуннипе пĕрлех çемйишĕн те тăрăшнă. Канăçсăр чунлăскер хăй пурнăçĕн тăршшĕпех лайăххишĕн тăрăшнă, малалла ăнтăлнă. Ăçта васканă-ши?

Ялта тăракан взвод ячĕпе клубра Кураков салтака та сăмах калаттарчĕç.

— Гитлеровецсем пирĕн тарпа шăварăннă уйсене çап-лах таптаççĕ-ха. Хуласене аркатаççĕ, ялсене кĕле çавă-раççĕ,— васкамасăр, пурте илтмелле каларĕ вăл.— Сĕм-суккăрла хăтланаççĕ вĕсем. Суккăрланасси ансат, куракан пулма йывăр. Куç сипленсе уçăласси вăраха пырать. Мускав çывăхĕнче тăшмана хăлха чикки патăмăр. Ста-линград патĕнче ăна ĕнсинченех çапрăмăр, куçĕ-пуçĕнчен вут-хĕм сирпĕтрĕмĕр. Пĕтĕм халăхпа тăна кĕртетпĕрех ăна.

Салтакăн хĕрӳллĕ сăмахне пурте тимлĕн итлеççĕ. Вăл мĕн калани кашнин чĕрине пырса тивет. Куççульне шăлса типĕтнĕ Рита тăнчах хытса кайрĕ тейĕн, салтак çине куç илми пăхать.

— Çичĕ ютран килнĕ вăрă-хураха эпир чун-чĕререн ыл-ханатпăр. Фашистсене каçармастпăрах. Вĕсене тивĕçлĕ тавăру кĕтет. Унран нимĕнле те хăтăлаймĕç. Ку ял çынни Лепехов паттăрлăхĕ пире те фронтра тăшмана хирĕç çĕн-терӳченех çапăçма хавхалантартăр! Пуçăра çӳлерех çĕк-лĕр, упăшкăрсене фронта ăсатнă инкесем! Куçăра шăлса типĕтĕр, çывăх çынсене çухатнисем! Вăрçа кайнă тусăр-сене май пур таран пулăшма тăрăшăр, хĕрсем!

Кураков мĕн каланине Таисия Петровна тăнларĕ те, тăнламарĕ те. Ăна калама çук пысăк çухату чун-чĕререн кулянтарать, чĕрине çĕçĕпе чикнĕ пек ыраттарать. Таисия Петровнăшăн çакă çутă тĕнчере Матвей Илларионович пек

хакли, чунне çывăххи урăх пулман. Ķăкăрĕнчен юлашки сывлăш тухичченех асра тытĕ ăна. Юратнă çын ĕмĕрлĕхех мăшăрĕ чĕрине кĕрсе юлчĕ, çутă сăнарĕ пĕрмаях ун куçĕ умĕнче тăрĕ. Ķăмăл туртни, таса туслăх, вĕри юрату пĕрлештернĕччĕ çав икĕ чуна. Мăшăр кăвакарчăн пек килĕштерсе те савăшса пурăнчĕç иккĕшĕ. Шел, кĕске пулчĕ вĕсен пĕрлехи пурнăçĕ!

## Туслăх оркестрĕ

Салтаксем каçхи апат хыççăн урама тухнă та чикарккă мăкăрлантарса калаçса тăраççĕ.

— Мĕн тăватăр эсир пирĕн ялта, атьсемĕр?— куç тĕлне çĕклерĕ аллине иртсе пыракан карчăк. Ана виççĕн харăс хурав пачĕç:

— Ķурмастăн-им: хăйăр аллатпăр, кĕл авăсатпăр...

— Фронтра ыттисем çапăçчăр, пире кунта утă çулни те юрĕ...

— Ķун ирттĕр те çĕр иртгĕр тесе тăрăшатпăр... Çутă куна каç туса пурăнатпăр...

Ķураков вата çын умне пырса пуç тайрĕ, взвод вăрманта мĕн тĕллевпе утă çулнине сăпайлăн ăнлантарса пачĕ.

— Ан ятла ĕнтĕ, асанне, ман юлташсене, утă çулса полка таврăнсанах вĕсен те фронта каймалла пулать...

— Ненай... ненай... Унашкаллисене фронта яраççĕ-ши?.. Чĕлхисем ытла вăрăм...— иккĕленчĕ карчăк. Ķайма тапраннăскер чарăнчĕ те йĕплерехщĕн хушса хучĕ:— Тылри йĕкехӳресем пулĕ-ха...

«Ял халăхĕ валли взводăн пĕр-пĕр ĕç тумалла. Ырăпа аса илмелли хăварасчĕ...»— шухăшларĕ çав вăхăтра карчăкпа салтаксем хушшинчи перкелешĕве итлесе тăнă Пожеданов.— Анчах мĕнле ĕç?»

Пăлтăрта паçăртанпах Лена тем кĕрмешет. Пăрчкан пек çивĕч хĕр вăл. Пĕчĕкрех пит-куçлă, хуп-хура çӳçлĕ. Унăн та куçĕ Ритăнни пекех сенкер. Чăлана тирпей кӳнĕ май хăй илтĕни-илтĕнми сасăпа хурлăхлă юрă юрлать:

Çĕмĕрт çеçкийĕ
Мĕншĕн шурă-ши?
Ах, хĕрĕн чĕри
Мĕншĕн çунать-ши?

Чăлан алăкĕ яриех уçă. Унти сĕтел çинче патефон тата хут купăс курăнаççĕ. Ăшшĕ фронта тухса кайнăранпа вĕсене тĕкĕнекен çук. Уçă алăкран Пожеданов кăсăкланса

пăхнине асăрхасан, Лена чăлантан купăс йăтса тухрĕ те ыйтмасăр-тумасăр командира алăран тыттарчĕ:

— Куратăп: вăйăçă эсир. Ан турткалашăр: халех пĕр-пĕр кĕвĕ каласа кăтартăр.

— Каламасан мĕн пулать? Гауптвахтăна лартмастăр пулĕ те?

Командир купăса мĕнле тытнинченех хăй йăнăшманнине курчĕ хĕр: тĕрĕслес тĕллевпе каччă пӳрнисем чĕлĕхсем тăрăх хăвăрттăн чупса тухрĕç.

— Хромка мар, вырăс стройлă,— палăртрĕ Пожеданов.

Вырăс стройлă икĕ ретлĕ купăс, двухрядка текенни, сасăран пуянрах.

Вăйăçă кулараххăн пăхнăран купăс пĕр-пĕр ташă кĕвви тапăртаттарма пуçласса кĕтнĕччĕ Лена. Апла пулмарĕ: «Там, вдали за рекой...» хӳхĕм вырăс юрри тăсăмлăн янăрама пуçларĕ. Шăпах Лена ашшĕ юратнă юрă. Ана час-часах купăспа шăрантаратчĕ. Лена çакна ăнланаймарĕ: Пожеданов купăс хуçи юррине пĕлсех суйласа илчĕ-ши е ку кăмăла килекен ăнсăртлăх-ши? Пĕр ăнсăртлăх хыççăн тепри сиксе тухрĕ: купăс сассине илтсе вăйăçă умне цыган Алексă Романухин пырса тăчĕ те тӳрех юрлама пуçларĕ:

Там, вдали за рекой,
Засверкали огни,
В небе ясном заря догорала,
Сотня юных бойцов
Из буденновских войск
На разведку в поля поскакала.

Сасси уçă, юрă сăмахĕсене те пĕлет. Лена чăтса тăраймарĕ, унпа юнашар пырса тăчĕ, цыганпа пĕрле юрлама тытăнчĕ. Ай, мĕн тери хитре янăрарĕ вара юрă — ашшĕ юратнă ырă юрă!

— Йăнăшмарăм: эсир чăнах та лайăх купăсçă-мĕн...— пуç тайрĕ аккомпаниатора Лена юрă вĕçленсен. Унтан мухтанараххăн çапла хушса хучĕ:— Пирĕн çемьере пурте музыкăна юратаççĕ. Рита баяна ăста калаçтарать, эпĕ гитара пăнтăртаттаратăп. Атте сирĕн аллăртине — икĕ ретлине — чун кĕртетчĕ...

Пожедановăн çăра куç харшийĕ тăлтах çӳлелле çĕкленчĕ.

— Музыка инструменчĕсемпе туслисем ялта камсем пур?

Пур иккен: Катя Соловьевăпа Лукерья Тараканова балалайка хĕлĕхĕсене итлеттерме пĕлеççĕ, Галина Торговцеван сасси сар кайăкăнни пек.

— Музыка енӗпе пултаруллисем пирӗн взводра та пур. Қалăпăр, Виктор Қураков пек ăста баяниста шыраса та тупаймăн. Эс, Алексă, мӗнпе туслă? Гитарăпа марччӗ-и? Ахă, питӗ лайăх. Легкоступов пӗҫҫине хӗрарăмла шарт та шарт ҫапма юратать. Эппин, ăста параппанҫă пулма пултарать...

— Эсир, мӗн, юлташ аслă сержант, утă ҫулакансен оркестрӗ йӗркелеме шутламастăр пулӗ те?

— Мӗншӗн обязательнă утă ҫулакансен оркестрӗ?— хирӗҫлерӗ салтака Лена.— Пирешкеллисене те йышăнатăр пулсан «Туслăх оркестрӗ» тесе ят парăпăр...

Хӗр сӗнни взвод командирӗ пуҫарăвӗпе чăна ҫаврăнчӗ. Ҫав каҫах оркестрантсем саккăрăн вулав ҫуртне репетицие пухăнчӗҫ. Оркестра ертсе пыма Пожеданова хăйне хушрӗҫ.

Тепӗр эрнерен каҫпа клубра «Ырă тӗлпулусен каҫӗ» ирттерчӗҫ. Малтан «Туслăх оркестрӗ» темиҫе кӗвӗ каларӗ. Итлекенсене «Светит месяц» кӗвӗ уйрăмах килӗшрӗ. Залрисем «бис» кăшкăрса ăна виҫӗ хут калаттарчӗҫ. Ял ҫыннисене оркестр танго, кадриль, падеспань каласа хӗпӗртеттерчӗ. Хӗрсен ушкăнӗ «Катюша» тата «Ох, ты сердце, сердце девичье» юрăсемпе ҫамрăк чӗресене сиплӗ им кӳчӗ, такмаксем ăста каларӗҫ, «Яблочко» тата «Цыганочка» ташăсене ташларӗҫ.

Сцена ҫине Алексă Романухин, Елена Лепеховăпа Катя Соловьева тухрӗҫ. Вӗсем «Там, вдали за рекой...» юрра чăн-чăн артистсем пек кăмăла килмелле янăратрӗҫ.

— Халӗ пирӗн командир хăй хывнă чăваш юррине юрласа парать, «Аш хыпса ҫунать»— «Неутешная тоска»,— пӗлтерчӗ концерта ертсе пыраканӗ Иван Иванович Иванов, кубланă Иван е виҫӗ степеньлӗ Иван текенни. Ҫавăн хыҫҫăнах юрă ятне тӳрлетсе куҫарчӗ:— «Душевная тоска». Купăспа хăех калать.

**Аш хыпса ҫунать**

Улăхра чечек пит нумай,
Пахчари мăкăне ҫитес ҫук.
Ялсерен ай хӗрсем пит нумай,
Хамăр савнă туса ҫитес ҫук.

Сарă кайăк чӗппи пулăттăм,
Ларса карлăк ҫине юрлăттăм.
Тусăма каҫсерен курăттăм,
Ашăмри шухăша калăттăм.

Ентӗ ҫил ҫаврăнать, ҫаврăнать,
Хуҫăлассăн йăмра авăнать.

Ентĕ пуç усăнать, усăнать,
Шухăшпа вĕçсĕрех пăтранать.

Юлташ, çитĕ, тек ан калаçтар,
Хурланать чун, ăш хыпса çунать.
Тусăмçăм, ăшăма ан çунтар,
Сан патна вĕçĕттĕм — çук çунат.

Çумăр шывĕ килсе каплансан
Валак тăрăх сиксе юхать-çке.
Çумри тус сив сăмах каласан
Ирĕксĕрех кăмăл юлать-çке.

Карас куçĕ тулать çĕн пылпа,
Ăна мĕншĕн çиме тутлă-ши?
Пуплесессĕн савни кăмăлпа,
Унпа мĕншĕн ларма лайăх-ши?

Купăсăм, хут купăс, ан шăплан,
Каласам кăмăллă кĕвĕсем.
Тусăмçăм, чĕкеçĕм, ан хурлан,
Пирĕншĕн те килĕç çут кунсем.

Пожеданов шухăша ямалла, паха ĕмĕтсем çуратмалла юрларĕ. Чăваш кĕвви, çепĕç чĕлхе пурне те килĕшрĕç.

— Куçарăр. Вырăсла ăнлантарăр! — илтĕнчĕ залран. Юрă сăмахĕсене Кураков мĕн пултарнă таран куçарса парсан Пожеданова çав юррах тепре юрлаттарчĕç. Пĕр хĕр, такмак ăста калаканни, ăна чечек çыххи тыттарчĕ.

— Эсир цыган юрланине илтнĕ-и, илтмен-и? — Алексă Романухин сцена çине йăм хĕрлĕ хăю çыхса капăрлатнă гитарăпа тухрĕ. Пуçне çĕклерĕ, такама курасла куçне мăччаналла тĕллерĕ. Пĕр çаврăм асамлă кĕвĕ малтан хĕлĕхсем янăратрĕç, унтан гитарист хăй те юрласа ячĕ. Юманай вара унăн юррине хапăл туса тăнларĕ.

**Хӳхĕм хĕр куçĕ хура**

Уйра ырă ут çӳрет —
Шăпа пӳрнĕ хамăра.
Пĕр чатăрта хĕр ӳсет,
Илем кӳрет тапăра.

Атте лаши, пĕлетĕр,
Шав малалла талпăнать.
Тапăр хĕрĕ — хура хĕр
Шурăмпуçпе вăранать.

Ух, шух, лаша шух,
Лаша шух мар, хамăр шух.
Атте ятне ярас мар!
Тапăр чысне варлас мар!

Пирĕн хĕрсем тилĕрни
Амăш чарсан чарăнĕ.
Каччăсенĕн шухлăхĕ
Ашшĕ чарсан чарăнĕ.

Эх, мĕн тери мулаххай,
Хăрах хăлхи сулахай.
Çапах тăтăр пуç çинчех,
Эп пулам çын шутĕнчех.

Савăнсассăн сăн кĕрет,
Юрласассăн юн вĕрет.
Юрататăп эп хĕре,
Уп пекки чăн та пĕрре.

Хам çĕленĕ мулаххай
Пулчĕ тăчĕ пуç ăшши.
Цыган хĕрĕ ӳснĕ май
Пулчĕ тăчĕ чун ăшши.

Чĕрене пырса тивмелле юрланăшăн Алексă Романухин та чечек çыххине тивĕçлĕ пулчĕ. Цыган юрри Галина Торговцевăна уйрăмах килĕшнĕ. Юрлакана чечек вăл пачĕ.

«Ырă тĕлпулу каçĕ» хыççăн «Там, вдали за рекой...» юрă ялта унта та, кунта та янăрарĕ. Ăна пĕтĕм Юманай юрларĕ темелле. Пĕр репетици хыççăн Елена Лепехова вулав çурчĕ пуçлăхĕнчен вăтанараххăн çапла ыйтрĕ:

— Çак юрра атте питĕ юрататчĕ. Пĕлме çук-ши: ăçтан тупăннă ку юрă, кам хайланă-ши ăна?

Паха юрра Катя хăй те юратать иккен, анчах ун историне пачах пĕлмест. Васкасах Мускава, Писательсен союзне, ыйтуллă çыру яма тиврĕ. Унтан килнĕ хурава вара Катя тепĕр «Ырă тĕлпулу каçĕнче» пурте илтмелле вуласа пачĕ.

Юрă сăмахĕсене те, кĕввине те пĕр çынах — Николай Мартынович Кооль хайланă иккен. Вăл Новгород кĕпĕрнинче Волок ятлă хуторта чухăн хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ. Ашшĕ — эстонец, амăшĕ — вырăс. 1924 çулта Николай Кооль Хĕрлĕ Çарта службăра тăнă. Вĕсен чаçĕ Мускавра Ходынка уйĕнче вырнаçса тăнă. Служба йĕркеллех пынă, анчах инкек: стройра юрлама ырă юрă çук. Çавăн чухне хайлать те Кооль халĕ пурте кăмăллакан юрра. Унăн никĕсне Çĕпĕрти авалхи «Лишь только в Сибири займется заря...» юрра хурать. Кĕçех çĕнĕлле хайланă юрă пулса тăрать.

— Хальхи вăхăтра автор фронтра çапăçать...— пĕлтерчĕ юлашкинчен Катя.

Юманайсем вара Николай Мартыновича тав туса тата сывлăх сунса ăшă çыру çырса ячĕç.

«Туслăх оркестрĕ» клуб çумĕнчи урам тăваткалĕнче кун сиктерсе тенĕ пек кăмăла çĕклекен кĕвĕсем каларĕ. «Амур хумĕсем» салтаксемпе пĕрле ял хĕрĕсене ярăнтараççĕ. Авалхи кĕвĕсем ваттисене те ташă картине тăратаççĕ. «Пĕчĕк акăшсен ташши» вара ватти-вĕтти таранах ырăнтан хускатать.

Клуб çумĕнчи урам тăваткалĕнче «Туслăх оркестрĕ» кĕввисемпе яш-йыш хуйха-суйха мансах мĕн тери хӳхĕм ташланине нимĕнпе те танлаштараймăн. Кирек мĕн калăр та, унашкаллине тăрнасен туйĕнче çеç курма пулать. Вĕсенчен чылайăшĕ кунти шурлăхлă улах ырăнсенче тăрса юлать. Тул çутăласпа карталанса тăраççĕ те хӳхĕм туй пуçлаççĕ. Вăрăм уралласкерсем, çынсем пекех, карта варринче мăшăрăн-мăшăрăн ташлаççĕ. Тем тĕрлĕ хускану та тума пĕлеççĕ: сике-сике илеççĕ, авкаланаççĕ, хуçкаланаççĕ, мăйĕсене пĕрре малалла тăсаççĕ, тепре çӳлерех те çӳлерех çĕклеççĕ. Вĕсен кашни хусканăвĕнче çулăмлă юрату палăрса тăрать. Çакăн пек туя пĕрре курсан, тепре те курас килет.

Ял Совет ĕçтăвкомĕпе тата колхоз правленийĕпе калаçса татăлнă тăрăх, оркестр каçпа сакăр сехет çурăра калама пуçлать те тăхăр сехет çурăра шăпах пулать. Çапла ĕнтĕ, унпа салтаксем те, ял-йыш та пĕр сехет кăна йăпанаççĕ. «Ырă тĕлпулу каçĕсене» те шăмат кун кăна ирттереççĕ. Ним те тăваймăн: вăрçă вăхăчĕ — йывăр вăхăт. Çитменнине тата, кирек мĕнĕн те юравлă чикки пур.

Килĕшрĕ-ши кама та пулин «Туслăх оркестрĕн» пултарулăхĕ, «Ырă тĕлпулу каçĕсем»? Калама йывăр. Ун пирки шутлама вăхăт çукрах. Çапах колхоз правленийĕ хушнипе Юманай урамĕ тăрăшшĕ пĕçернĕ çырла кукли çинчен каласа хăвармаллах. Ăна колхоз председателĕ Лепешкин хăй пĕтĕм халăх умĕнче Пожеданова парĕ:

— Сирĕн оркестрантсене — пирĕн «Красный маяк» колхозран,— терĕ вăл сума суса, пуç тайса.

Мĕнех калăн! Колхозăн тутлă кукăлĕ оркестрантсене пурне те килĕшрĕ.

Тупăсем калаçнă чухне музăсем чĕмсĕр тенĕ авалтан. Çакна Пожеданов та илтмен мар, анчах Юманайра ку сăмахсене хисепе хума шутламарĕ. «Туслăх оркестрне» хăй йĕркелерĕ, «Ырă тĕлпулу каçĕсем» ирттерме те хăех хушрĕ. Çапла туса, тен, йăнăшман та. Салтаксем çар уставĕн йĕркисене пăсма пăрахрĕç тесен те йăнăшах пулмĕ. Колхоз председателĕ çирĕплетсех калакă тăрăх, вилнĕ хут çине-çинех илекен ял-йыша та чун кĕнĕ пек пулчĕ.

## Айтăр пĕрле мунчана...

Салтаксем утă çулма вырсарни кун та тухаканччĕ, паян вара тур мучи вĕсене канмалли кун туса пачĕ: ир-ирех çумăр тăкма тытăнчĕ. Легкоступов Юманайне килнĕренпех пĕлĕт Атăл енчен кăвакарасса, кĕрлеттерсе çумăр тухасса кĕтетчĕ. Унăн ĕмĕчĕ тинех тулчĕ. Взвод командирĕ аслă сержант мунча кунĕ ирттерме приказ пачĕ.

— Мана шанатăр-и мунча хутма?— пырса тăчĕ отделени командирĕ умне Иван Данилов.— Пулăшакан-и? Пĕчченех те аптрамастăп...

Вăл кĕçех Лукерья Тараканова мунчин кăмакине чĕртсе те ячĕ, асамçăлла сăмахсем калама та манмарĕ:

Çу çисе килтĕм —
Çу пек çемçе пул.
Пыл çисе килтĕм —
Пыл пек тутă пул.

Асатте пек, асанне пек,
Ватă çăка пек
Сарăлса та савăнса
Çăвăнмалла пултăр!

Часах пахчари, лупас хыçĕнчи ытти мунчасенчен те çăра тĕтĕм палкаса тухма тытăнчĕ. Темиçе салтак вăрмана кайса милĕк хуçса килчĕç. Взвод поварĕ Илья Лилипутов мунча хыççăн ĕçме сулхăн квас пурне те çитмеллех туса хатĕрлерĕ. Мĕнрен тунă — пĕр турă çеç пĕлет. Малтан кухньăран — Лепеховсен паварĕнчен ĕнтĕ — ăнланмалла мар ĕнĕкпе çунăк шăрши урам урлах сарăлнăччĕ, çăкăр хыттине тĕллевсĕр-мĕнсĕр çунтараççĕ пулĕ тесе шутланăччĕ кӳршĕ-аршă. Çăкăр хыттипе темле тинкĕлеренех япăх мар квас тума пулнине чухлайман вĕсем. Тепĕр тесен çук чухне йытпулли те те пулă шучĕпех каять.

— Мунча пулнă, кайма юрать!— çитрĕ хыпар кăнтăрла иртсен. Таса кĕпе-йĕм тытнă салтаксем шăкăл-шăкăл калаçса мунча кĕме каяççĕ.

Гриша Легкоступов «Туслăх оркестрĕ» репетицийĕнчен çаплах килеймерĕ-ха, анчах Иванпа Петр Даниловсем ăна кĕтсе тăма шутламарĕç: ăшши кăлăхах ан сивĕнтĕр. Мунча кочегарĕ Иван Данилович милĕк пĕçерме тесе хăпăл-хапăл унта кайрĕ те ĕнтĕ.

— Лукерья Порфирьевна, айтăр пĕрле мунчана. Çемçе милĕкпе çапса ярăп,— шӳтлереххĕн сĕнчĕ Петр Петрович çурт хуçине, оркестр репетицийĕнчен тин çеç килсе çитнĕскере.

— Тавтапуçах! Хăвăр пĕлетĕр, мана мунча кĕртекен сирĕнсĕрех пур,— сарăхса кайнă вĕтĕ шăлĕсене кăтартрĕ Лукерья. Юманайне салтаксем килнĕренпе ку хĕрарăм вĕсене шур тăм тĕслĕ порошокпа тăрăшсах тăрмалать-ха— пурпĕр усси курăнмасть. Порошокпа мар, кирпĕчпе хăшкасан та тăруках тасатаймăн пĕр сарăхнă шăла.

Петр Петрович картишне тухсанах Лукерья çав енчи кантăка яри уçрĕ.

— Эй, Петĕр Петĕрĕ, ăшши тутлă пултăр! Эс ман Гришăна милĕкпе лайăхрах çап-ха — çĕрле ытла тарлать. Милĕк аврипе те чышса ил — куçĕ унталла-кунталла ан вылянтăр...

Петр Петрович пĕр-ик утăм кăна ярса пусма ĕлкĕрнĕччĕ — Лукерья турама пуçланă çӳçне-пуçне лапăстаттарса пӳртĕнчен хăвăрт чупса тухрĕ.

— Эс асту унта, ăшшине перекетле, Гриша валли те хăвар. Эпĕ халех ăна чĕнме чупатăп. Оркестрне чăл-пар салатса ятатăп! Гриша пурпĕр манпа мар, Катеринăпа ташласа тарăхтарать...

Петр Петрович салтăннă тĕле кӳршĕ çуртран Табаковпа Коновалов та, фронтри лару-тăру çинчен хĕрсех пуплекенскерсем, мунча кĕме килчĕç. Мунчана шала кĕрсен Петр Петрович сăхсăхрĕ те кĕл тума пикенчĕ.

— Мунчи кĕленче, милĕкĕ пурçăн, чулĕ мерчен; ăшши шерпет пек пултăр; тутли шала, йӳççи тула пултăр!

Унтан йӳççине-сĕрĕмне уçнă алăкран кăларса ярас шутпа ĕнтĕ ăшши пама тытăнчĕ, мăшăр милĕке чул çинче вĕрилерĕ, чăвашсен авалхи йăлипе такмаклама та манмарĕ:

Чаш-чаш-чаш! Чаш-чаш-чаш!
Тĕтĕм-сĕрĕм, ан аташ!
Усал шăршă сирĕлтĕр,
Милĕк шăрши сисĕнтĕр.
Шăрши пул чечек шăрши,
Тути — сарă пыл тути.
Им пултăр, сим пултăр —
Ăш-чике ырă пултăр.
Чаш-чаш-чаш! Чаш-чаш-чаш!
Ан пулсам ытла ачаш!
Сапатăп шерпетпелен,
Çапăнмашкăн хатĕрлен!
Виçĕ пуслăх çапăнсан
Çичĕ пуслăх сăн кĕтĕр.
Ватти куртăр — мухтатăр,
Яшши пăхтăр — ăмсантăр.

Аллинчи милĕке Петр Петрович чул çине лăстăр-лăстăр силлерĕ, унтан пуçне лапка еннелле сулчĕ.

— Семафор уçă, кам малтан?

— Петр Петрович, малтан хăвăр кăтартăр епле çапăнмаллине! Хăвăр...— хĕтĕртрĕç ăна юлташĕсем.

Хастар чăваш тархаслаттаракан йышши мар, урайĕнче тăнă çĕртех çапăнма тытăнчĕ. Такмакне хăй малалла калать:

Çат-çат милĕк, çат милĕк,
Çемĕçтер ман шăм-шака.
Авкалантăр ман пилĕк,
Ăшши пар тепĕр курка.
Тарпа пĕрле чир-чĕре
Хăваласа кăларар.
Сарăпсăр таптăр чĕре,
Ана сиплĕ вăй парар.
Çат-çат-çат! Çат-çат-çат!
Çулçă ӳте сыпăçать.
Çат та çат, çат та çат!
Милĕке тав ту, каçан.

Петр Петрович лапка çине хăпарса ларать. Унта тата вĕрирех, çапăнма та хивререх. Такмакĕ çаплах пĕтмен-ха:

Нишлĕлĕх — лапка айне,
Ырлăх-сывлăх — хам çине.
Милĕк патăр çирĕплĕх,
Сывлăх пултăр ĕмĕрлĕх.
Çат-çат-çат! Çат-çат-çат!
Çулçă ӳте сыпăçать.
Çат та çат, çат та çат!
Милĕке тав ту, каçан.

Хĕрсе кайса çапăннă май Петр Петрович асăрхаймарĕ: тахăш вăхăтра мунчана Легкоступов килсе кĕнĕ.

— Мунча ăшши тутлă пултăр!— илтĕнчĕ хĕрарăмăнни пек çинçе сасси.

— Эс калашле пултăр!— яланхилле хулăн сасăпа хуравларĕ Табаков.

Нумай шухăшласа тăмарĕ çăмăлçах Легкоступов, хăйне хăех команда пачĕ:

— Огонь!

Çав самантрах чул çине пĕр алтăр вĕри шыв чашлаттарчĕ. Мунча чулĕ хашкакан пăравус пекех маччаналла пăс юпи вирхĕнтерчĕ.

— Ай, сывлăш пӳлĕнчĕ...— вĕрие чăтаймасăр сиксе анчĕ лапка çинчен Петр Петрович. Çара пакартан мунча пăлтăрне сиксе тухрĕ. Ак тамаша! Кунта Лукерья тăра парать. Ик аллипе ик енчен пилĕкне тытнă.

— Сын рыбака ходит çара пакка!— ихĕлтетсе илчĕ çавскер, унтан пачах васкамасăр пăлтăртан тухса кайрĕ. Гришине мунчана ăсатма килнĕ пулинех.

— Аннӳ ҫуратса янӑ тумпа чипер хӗрарӑма кӑлӑхах вӑтантаратӑн!— тӑрӑхларӗҫ Петр Петровича юлташӗсем вӑл хӑварт каялла кӗрсен.

Май килнӗ пек чухне Легкоступова та чӗлхе вӗҫне килнӗ сӑмахсене каламасӑр тӳсеймерӗҫ, тӑрӑхласа та йӗплесе илчӗҫ:

— Ну, каласа пар пытармасӑр, епле пырать сан инке-арӑмпа юратуллӑ-савӑшлӑ пурнӑҫ?

— Юманайри Дульсинейӑн ытла самӑртан пуҫӗпе мӑйӗ пӗрлешсех кайнӑ та, ыталашнӑ чух кансӗрлемест-и?

— Чӗн-ха ӑна пӗрре ҫырлана, ҫырла пӗтсен — ҫырмана...

— Инке-арӑм хӑй те ҫырла пек, ҫырла пек те сим пыл пек.

Легкоступов юлташӗсем йӗкӗлтенине хӑлхине те чикмерӗ.

Унӑн ӗмӗчӗ пӗрре кӑна: Лукерьйӑпа йӑнӑшас марччӗ хӑть. Пӗлет: йӑнӑшма нумаях та кирлӗ мар. Гриша йӗкӗт чухне Пӑлакипе те, Аньӑпа та туслӑччӗ. Хӑшне качча илесси пирки пайтах вӑхӑт шухӑшласа ҫӳренӗ. Чӑнах та аптрамалла: ун шучӗпе, Пӑлаки хӑюллӑ та пултаруллӑ. Ял-йыш урӑхла хаклатчӗ: пуҫтах хӗр вӑл, ниҫта пырса кӗме те вӑтанса тӑмасть, пӑван пек сӗкӗнет. Кӗреш пек тӑн-тӑн хӗрупраҫ сӑмакуна хӑйӗнчен кая мар лӗрӗплеттернине курсан Гриша ӑна качча илес шухӑша пӑрахӑҫларӗ. Малтикасри кутамас Аньӑпа пӗрлешрӗ те, ҫемье шӑкӑл-шӑкӑл килӗштерсе пурӑнма тытӑнчӗ. Ҫакӑ Пӑлакие уртарсах ячӗ темелле. Пӗр кунхине вӑл хӑйсем тӗлӗнчен иртсе пыракан Гришӑна, чӳречерен шаккаса, хӑйсем патне чӗнсе кӗртрӗ. Ӗлӗкхи тусне кукӑль-икерчӗпе, сӑра-эрехпе сӑйларӗ, хӑй ниҫта кайса кӗрейми тунсӑхлани ҫинчен каларӗ.

Гриша малтанхи тусӗ патӗнчен тул ҫутӑласпа кӑна тухса кайрӗ. Тепӗр эрнерен Пӑлаки патне яланлӑхах куҫса килчӗ. Шел, яланлӑхах тени вӑраха пымарӗ. Упӑшки Пӑлакие уйӑхранах йӑлӑхтарса ҫитерчӗ. Пӗр кунхине тытӑҫса та илчӗҫ. Чӑркӑш хӗрарӑм йӗтӗрпе Гриша пит-куҫне йӑлт кӑвакартса пӗтерчӗ. Упӑшка хӗнерӗ тесе милицие кайрӗ. Картишӗнче кӗрмешекен Гришӑна милиционер ҫав кунах аллинчен яп! ярса тытрӗ. Тӗрмене хупмашкӑн лартса кайма килнӗ иккен. Ку милиционер, Макаров хушаматлӑскер, Гриша пулӑра чухне Пӑлаки патне хӑнана кӗрсе ҫӳрени ҫинчен сӑмах-юмах ялта илтӗнкелетчӗ-ха. Упӑшкине хупса лартсан арӑмӗ патне кирек хӑш вӑхӑтра та алӑк уҫӑ пулать. Ҫак шухӑш вӗлтӗренпе вӗтӗленӗ пек пырса кӗчӗ Гриша пуҫне.

— Çул çинче туртмалăх лупасхыçтрест махоркине илсе тухма ирĕк парăрччĕ...— тархасласа ыйтать çавскер.

Пӳрте кĕрсен мĕскĕн упăшка вилес шутпа хлорофос ĕçет те хăсма тапратать. Милиционера хăй патне яхăна та ямасть, айккинелле тĕртет. Тухтăрсем Легкоступова вилĕмрен çăлса хăвараççĕ, судьясем ăна вилĕмрен çăлăннă ятпа тепĕр виçĕ çул тĕрмере лармалла тăваççĕ. Легкоступов пурнăçĕн пĕтĕм мыскари те çакă кăна. Халь акă çăмăллăн хăпарса ларчĕ вăл мунча лапки çине, кăштахран тăсăлса та выртрĕ.

— Гриша, пĕрре ислетсе пăхам-и çан-çурăмна милĕкпе?— сĕнчĕ Петр Петрович.

Гриша лапка çинче лайăххăн тарлама çеç шутланăччĕ, анчах юлташĕ ăна хăй çапса яма хатĕррине пĕлсен килĕшсе пуçне сулчĕ:

— Яра пар!

Ну, çатлаттармаллипех çатлаттарчĕ вара ăна Петр Петрович, пĕçертмеллипех пĕçертрĕ. Таçтан сăмахне тупать, çапăнни усса килтĕрччĕ тесе такмаклать те такмаклать:

Сарăлмалли сарăлтăр,<br>
Пĕрĕнмелли пĕрĕнтĕр.<br>
Хăрăклăхран хăтартăр,<br>
Çемçелĕхе çĕптертĕр.

Çук, кун пек ырлăха Легкоступов ниçта та курман. Лапка çинче ăшталанчăкла пĕрехмай енчен енне çаврăнкалать, эхлеткелесе рехетленет. Чăн ĕнтĕ, тарлаттарасса ăна Лукерья та тарлаттарать-ха, кунта вара ырă шăршăллă милĕк тарпа пĕрле, çан-çурăмри пĕтĕм усал-тĕселе хăваласа кăларать-мĕн. Арçын кăмăлне тупассипе лӳппер Лукерья та аптрасах каймасть, милĕк вара сăмахпа калайми канлĕх кӳрет. Вĕри мунчара чул çинче пĕçертнĕ милĕкпе çапăннă чух Лукерья пурлăхĕ-ырлăхĕ пĕр айккинче тăтăр. Çитменнине тата вăл хĕрарăм ытла та çаврăнăçусăр. Кăнттам çав, кăнттамрах.

Петĕр çаплах Гришăна милĕкпе «ачашлать», такмакне хăйĕн тăван чĕлхипех калать:

Сарăлмалли сарăлтăр,<br>
Пĕрĕнмелли пĕрĕнтĕр.<br>
Хытмаллийĕ шак хыттăр.<br>
Çемçелмелли çемĕçтĕр.<br>
Мунча, мунча, мул килет,<br>
Урам тулли туй килет.<br>
Тутлă-çке мунча ăшши,<br>
Лукерья пекех вĕри.

Легкоступов сасартӑк лапка ҫинчен хаярланса сикрӗ анчӗ.

— Ҫитет сана, тек ан тӗкӗннӗ пул ман Лукерьйӑна! Ан тӗкӗн, ан сӗкӗн!—ҫиллессӗн кӑшкӑрса ячӗ вӑл, хутранситрен Петр Петровича хӑйӗн савнийӗ ҫумне хушса кӗвӗҫекенскер.— Ӗҫ пултӑр, лӳппер пултӑр, эпӗ ӑна пӗрех юрататӑп, пӗрех саватӑп. Мӗн тери вӑл самӑркка, ӳчӗ епле кӑпӑшка!.. Балалайка никамран та ӑстарах калать...

— Тата каҫсерен ҫав тери хытӑ ыталать, хӑй ҫумнелле чӑмӑртать,— Легкоступов сассипех малалла тӑсма хӑтланчӗ инке-арӑма сӑнарласа кӑтартассине Коновалов.

Лукерйи вӑн пачах ҫылӑхсӑр пулас. Мунча пӑлтӑрӗнче ун чӑнкӑл-чӑнкӑл сасси илтӗнсе те кайрӗ:

— Гриша, ӑшу хыпрӗ пуль. Пӗр кӑкшӑм квас илсе килтӗм. Тухсамччӗ...

Ҫын чунӗ кӗрӗк ҫанни мар, тавӑрса пӑхма ҫук: ку теветкел хӗрарӑм те вӗрипе ӑш хыпнӑ арҫынна чӑнласах пулӑшасшӑн, те ӑна амӑшӗ парнеленӗ тумпа курасси килет. Ҫакна пӗр турӑ кӑна пӗлет. Легкоступовӗ вара чунне ҫывӑх хӗрарӑма темшӗн-ҫке хурав пама шутламарӗ, шайккари шывпа ҫурӗ те ҫурӗ пуҫне.

— Тухмастӑнах-им? Мӗн, ман каялла йӑтса каяс-им? Ыттисем тухчӑр эппин...

Ҫук, ӑш хыпнӑ чухне салтак йӑлӑнтарса тӑмасть. Кӳршӗ ҫуртра пурӑнаканнисем иккӗшӗ те ҫаплипех тухаҫҫӗ тӑраҫҫӗ Лукерья Порфирьевна умне. Вӗсен те ӑш хыпнӑҫке-ха! Вӑтантараканнине апӑршасем ал лаппипе хуплакаланӑ, йӑл кулакан хӗрарӑм ҫав еннелле пурпӗр вӑрттӑн та пулин пӑхса илет-илетех.

Ҫук ҫав, май килмерӗ вӗсене квас тутанса пӑхма. Тем пирки тулхӑрса кайнӑ Легкоступов мунчаран сасартӑк вӑркӑнса тухса иккӗшне ик еннелле сирсе ячӗ, хӗрарӑм аллинчи кӑкшӑма ҫапрӗ те ӳкерчӗ. Пӑр-р ванса кайрӗ кӗвӗҫ мӗнне пачах пӗлмен кӑкшӑм, урайне тӑкӑннӑ квасран вара пысӑках мар кӳлленчӗк пулса тӑчӗ. Лукерья йӗтем ҫинчи юпа пекех хытса кайрӗ.

— Эс мӗн? Кашни арҫыннах ҫара пакартан курас тетӗн-им?

Урса кайнӑ Гриша инке-арӑма тӑна кӗртес шутпа мунча юпи ҫинчен чӗн пиҫиххи илме кармашнине асӑрхасан Лукерья йӑпӑртах тухса шӑвӑнчӗ. Мӗн тытӑнса тӑмалли! Гришӑна вӑл апла та, капла та пӗрре кӑна мар курма ӗлкӗрнӗ ӗнтӗ.

...Мунчаран таврӑнакансене Лукерья ним пулман пекех тарават кӗтсе илчӗ, Гришӑна — сӗлкӗ, Петӗре пит-

шăлли тыттарчĕ. Сĕтеле чĕнтĕрлĕ çиттипе витнĕ, ун çине чечеклĕ графинпа сăмакун тултарса лартнă.

Мĕнрен юхтараççĕ-ши Юманайра сăмакун? Ку вăрттăнлăха Лукерья вĕри çатма çулаттарсан та калас çук. Ĕçтересех тесен — калама та кирлĕ мар. Лукерья Порфирьевнăн, кирек мĕн калăр та, Петр Петровичпа Григорий Михайловича чыс тусах ĕçтермелле, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсем юсанă трактора сăнаса пăхмалăх никамăнне те мар, унăн пахчинчи çĕр улми йăранĕсем хушшине культиваторпа кăпкалатрĕç.

— Ну, мĕнле, лайăх çăвăнтăр-и?— тĕпчет стакансене сăмакун тултаракан Лукерья. Тарланă питне тăрăшсах шăлнă май ăна Петр Петрович хуравлать:

— Мунча питĕ вĕри, ăшши питĕ хӳхĕм, ялĕпе кĕрсен те çитмелле. Халь эсир, чиперккесем, çылăхăрсене çуса тасатма кайăр. Гриша çурăмне милĕкпе эпĕ ислетрĕм, сирĕнне вара вăл пырса çупăрлĕ...

— Хĕвел кăкшăмран тухас пулсан-и?— иккĕленчĕ Лукерья Порфирьевна.— Хĕрарăм умне вăл çара пакартан тăма вăтанать-иç...

— Пырать, пырать,— çаплах ĕнентересшĕн пулчĕ мунча хуçине салтак. Тулĕк эсир тытăнса ан тăрăр...

— Э, çук... Эпĕ мунча вĕрине юратмастăп, каярахпа кайăп-ха. Малтан сирĕнпе пĕрле ларса хам юхтарнă шĕвекĕн тути-масине пĕлес пулать...

## ВĂТ САНА ХĔР ПĔРЧИ

### Хăюсăр каччăн хăюллă сăмахĕ

Пĕр каçхине клубра «Туслăх оркестрĕн» концерчĕ умĕн Кураков рядовой салтаксемпе ял халăхĕ валли Египетри фараонсен пирамидисем çинчен питĕ лайăх лекци вуларĕ. Вăл анлă пĕлӳллине взводра унчченех асăрханă-ха, халĕ вара тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Ыйтусем те нумай пачĕç ăна.

Оркестр концерчĕ хыççăн сĕтел çинчи баян патне Павел Артамонов рядовой пырса тăчĕ.

— Мĕн, интересленетĕр-им?— ыйтрĕ унран Катя Соловьева, тавçăруллăн ăна баян тыттарчĕ. Салтак малтан баян мĕншĕн ун аллине лекнине ăнланмана печĕ, унтан тутисем кулса ячĕç, баянĕ вара «Амур хумĕсене» çепĕççĕн чӳхентере пуçларĕ.

— Сирĕнпе вальс ташлама юрамĕ-ши?

Кураков умĕнче капăр тумланнă çап-çамрăк Маргарита пуçне тайса тăра парать. Оркестрпа пĕрле купăс калана чухне Кураков ку хĕр çакăн пек чиперрине пачах асăрхаман. Тен, ун çине сăнарах пăхма та шутламан. Халĕ акă шалтах тĕлĕнтерчĕ: каснă-лартнă юмахри пике. Сăнĕ таса та çутă. Сулахай пит çăмарти çинче пĕчĕкçĕ шĕпĕн. Пит илемне вăл пачах пăсмасть. Унăн куçĕ çиçет, тути кулать.

Кам умĕнче мĕнле те, хĕрсем умĕнче Виктор яланах вăтанать. Маргаритăран вăл пушшех именсе кайрĕ. Хĕр хăй алă тăсман пулсан иккĕш юнашар тăрса ташласси пулмастчĕ ахăр. Вăйăçă умне тăрса ташлакансем хушшинче вĕсенчен телейлĕреххи те пулмарĕ. Ытти ташăсене те вĕсем иккĕш пĕрле ташларĕç. Урай тăрăх акăш евĕр çăмăллăн та сăпайлăн юхакан мăшăр çине ял-йыш ăмсанса пăхрĕ, пĕр-пĕрне куçран ăшшăн тинкернĕ икĕ çамрăк ташши ваттисене килĕшрĕ. Таисия Петровна вара куçне ал тутрипе çынсем курмасла шăлса илчĕ. «Вăт сана хĕр пĕрчи! Пĕр шăтса тухнă чечек ӳсетех çав»,— тĕвĕленчĕ пуçĕнче шухăш.

Виктор хăйне нихçан та çакăн пек хавасла туйман. Маргарита вара хăйне хăй те ăнланмасть: хĕрĕн çепĕç чунне салтак гимнастерки асамлă вăйпа хăй патнелле туртать.

— Тавтапуç сире, Виктор Герасимович, пĕрле ташласа савăнтарнăшăн. Тен, киле те пĕрлех таврăнăпăр?

Клубран пĕрле тухрĕç, урам тăрăх юнашар утрĕç. Виктор хĕрсемпе çӳремен мар, анчах пĕр-пĕр кăмăллана хĕрпе алла-аллăн тытăнса утма, ăна килне ăсатса яма нихçан та тĕл килмен. Çитменнине тата, Викторăн ку таранччен куç хывни те пулман, хĕрупраç пирки шухăшлама вăхăчĕ те тупăнман. Хăйĕнчен чылаях çамрăк Маргаритăпа пуплеме те именет вăл. Çавăнпа калаçу асанне çăмхи пек тикĕссĕн сӳтĕлсе пырать теме çук. Юрать-ха ун çиппине хĕр хăй аллине илчĕ.

— Виктор Герасимович, сиртен ыйтса пĕлме юрĕ-ши? Хăвăр юратакан хĕре эсир хăш çăлтăра парнеленĕ пулăттăр?

Хĕрĕн кăткăс ыйтăвĕ салтака ним тупса хуравлайми турĕ. Маргарита ахăлтатсах кулса ячĕ:

— Юрĕ. Хĕре парнелемелли çăлтăра каччă палăртма ĕлкĕреймен тейĕпĕр. Калăр-ха тӳррипе: хăвăр валли куçласа хунă çăлтăр пур-и е çук-и?

Сăмах мĕн çинчен пынине ăнкарсан Виктор таçтан

хăюлăх тупрé-тупрех: вăйлă аллипе хěре йăтса вăр-вăр çавăрчě те хăйпе юнашар тăратрě.

— Пайăрласа калас тăк, манăн чи çутă çăлтăр эсир пулмăр-ши?— чăр-р пăхрě каччă хěр çине.— Қаçарăр та, телей вырăннех хурăттăм...

Маргарита нимěн те шарламарě, каччăна вăрахчен куçран тěсесе пăхрě. Хăйěн хитре сăнě татах та илемленсе çуталса кайрě.

— Хăюсăр каччă хăюллă сăмахсем калама та пěлет иккен..— Виктора çурăмěнчен лăпкаса илчě Маргарита. Çакă пулчě хěр хуравě.

— Ай, Витюк,—ассăн сывларě Рита,—ку вăрçăн вěçě пулě-ши е çук-ши?

— Эпě пророк мар çав. Ун пирки Мишель Нострадамус мěн çырнине вулама тěл килнěччě Мускавра вěреннě чухне...

— Қам вара вăл?

— Нострадамус — француз тухтăрě, бакалавр тата наукăсен докторě...

Қалама юраман сăмах персе янине ăнкарчě те хăвăрт шăлне çыртрě Виктор. Хěр тинкерсе пăхнăран ăна лăплантарма васкарě.

— Вăл пророка тěкěнмесěрех хăварар. Унсăрăн чышкăмаклашкă лекме пултарать...

— Эппин, сан манран пытармалли сăмах та пур иккен. Ěнен çавăн хыççăн савнă тус тенине... Ан пытар: мěн калать Мишель Нострадамус çак вăрçă пирки?

— Мěн каланă та мěн каланă... Адольф Гитлера Қавказ çынни Иосиф Сталин çěнтерет тенě. Урăх нимěн те ан ыйт манран...

— Қилěшетěп, килěшетěп... Малашне çак хапха юпинчен ыйтăп,— шантарсах каларě хěр. Хăй мěн каланине тепěр самантранах манса кайрě. Тути пăшăрхануллăн пăшăлтатма тытăнчě:— Тепрер капанлăх утă çулсан сире фронта ăсатаççě-им?

— Қу паллă мар-ха. Çакна пěлетпěр: темиçе кунран пире Мăк сăртне таврăнма тивет.

— Мана та пěрле илсе кайăр, эпě сиртен пěр утăм та юлмастăп.

Қаçхи тěттěмре хăй питне хěр пичě çумне çывхартсах тинкерсе пăхрě Виктор. Пурпěр пушкартаймарě: хěр шӳтлет-и е чăннине калать-и? Çакна курчě: Маргарита çаплах таравват кулать, аллине ун хулě çине хурать. Питěнчен чуп туса илес шухăш та пырса кěчě каччă пуçне, анчах хăяймарě.

— Хăв çинчен каласа парччĕ мĕн те пулин,— ыйтрĕ хĕр.

— Малтан эс хăв каласа пар,— сĕнчĕ каччă.

Маргаритăн каласа памалли çукпа пĕрех: вăтам шкултан кăçал вĕренсе тухнă, халлĕхе аппăшне чăх-чĕп ферминче пулăшать. Вăрçă чарăнсан ял хуçалăх институтне вĕренме кĕресшĕн.

— Мĕншĕн «вăрçă чарăнсан»? Вĕренме кĕме кăçалах май пур-çке...— хăй шухăшне сасăпах каласа ячĕ Виктор.

— Колхозра ĕç-пуç йывăрпа пынă чухне ялтан епле тухса кайăн-ха? Аннене те, Ленăпа Светăна та пăрахса хăварас килмест.

Маргарита кашни сăмахнех ырă ăспа никĕсленине пĕрмаях туять каччă. Тезис — аргумент... Тезис — аргумент... Хĕр каллех каччăна хăй çинчен каласа пама хистет.

— Сирĕн ав паха ĕмĕт пур — малалла вĕренме шутлатăр. Ман ĕмĕтсем каснă пекех татăлчĕç темелле. Çавăнпа вĕсем çинчен калаçса чĕрене ыраттармăпăр.

Хĕр каччă çине шухăшлă куçпа пăхрĕ. «Взводрисем пурте уголовниксем теççĕ. Сирĕн пек çынна та унта хупма пултарнă-ши?»— ыйтасшăнччĕ Маргарита, чĕринчи ырă туйăм çак ыйтăва сасăпа калама чарчĕ.

Мĕн каласа панă пулĕччĕ-ши Кураков Юманайри çак таса чунлă чĕкеçе? Ашшĕ — тухтăр, амăшĕ фельдшерица пулнăран сывлăхлă ӳсни çинчен-и? Ватă учитель Пантелеймон Яковлевич Волков шкул ачисене тăван ачисем пек юратни çинчен каласа пама юрать вăт.

Вăтам шкулта та, педагогика институтĕнче те Кураков тăрăшса вĕренчĕ. Институтра уйрăмах палăрнисем шутĕнче хĕрлĕ диплом илме тивĕç пулчĕ. Вĕренсе тухнă çулах Мускавра СССР историйĕ кафедрин аспиранчĕ пулса тăчĕ. Кандидат экзаменĕсен минимумне чипер пурнăçларĕ, виçĕ çултан диссертацин пĕтĕмĕшле вариантне кафедрăна тăратрĕ. Диссертаци вĕçĕнчи «Пĕтĕмлетсе каланине» вуласан ăслăлăх руководителĕ ватă профессор Ф. В. Катковский общежитие аспирант патне çĕрле чупса пычĕ.

— Мĕн туса хунă эсĕ? Мĕн туса хунă? Миçе экземпляр пичетлерĕн? Вулама кама-кама патăн? Тăвата çынна тетĕн? Тен, Калмыкова та пана? Вăт санпа! Вăт санпа! Пĕтертĕн, пĕтертĕн!

Хыпăнса ӳкнĕ профессор урăх ним те каламарĕ, каялла тухса кайрĕ. Калмыковĕ вуласа пĕтерейменe печĕ пулин те, унран диссертаци текстне вăхăтлăха тесе профессор хăйпе пĕрле илсе кайрĕ. Çав текста тата икĕ коллегинчен илсе тухрĕ. Тăваттăмĕш экземпляр ун аллине çакланаймарĕ.

Ку хваттертисем те вилнӗ пек ҫывӑраҫҫӗ, те илтмӗше переҫҫӗ — уҫса кӗртмерӗҫ.

Кураков истори наукисен кандидачӗ пулма «диссертаци» «Ҫӗршывра ял хуҫалӑхне коллективизациленин ырлӑхӗсем» темӑпа ҫырнӑ. Унӑн сыпӑкӗсене виҫҫӗшне те кафедра ларӑвӗсенче сӳтсе явса ырланӑ. «Пӗтӗмлетсе каланине» кӑна никама кӑтартмасӑрах пичетлерӗ. Унта каланӑ тӑрӑх, ҫапла пулса тухать: И. В. Сталин «Ҫитӗнӳсем пуҫа ҫаврӑнса яни» статйине чееленсе ҫырнӑ имӗш. Хресченсене пӗрлешӳллӗ хуҫалӑха ирӗксӗрлесе кӗртни те, вӑтам хресчене кулак вырӑнне хуни те, ҫавнашкал ытти йӑнӑшсем те ҫӳлтен хистенипе пулнӑ. Ҫав йӑнӑшсемшӗн Сталин вырӑнти руководительсене айӑплать, хӑй вара пурне те пӗлсе-курса тӑракан, ыттисен йӑнӑшӗсене тӳрлетекен сӑваплӑ Турӑ пулса юлать.

Ҫак пӗтӗмлетӳ хӑратса ӳкернӗ те Ф. В. Катковский профессора. Кунашкал пӗтӗмлетӳпе аспирант ҫеҫ мар, унӑн ӑслӑлӑх руководителӗ те хӑвӑрт «халӑх тӑшманӗ» пулса тӑма пултарать-ҫке-ха.

Аспиранта тата ӑна ӑслӑлӑх енӗпе ертсе пыракана халӑх тӑшманӗ пулма пӳрмен-мӗн. Тепӗр кун Кураков таврӑннӑ ҫӗре унӑн пӳлӗмӗнче ухтару пырать. Комендант складӗнчен ҫухалнӑ пӗр ещӗк супӑне ун пӳлӗмӗнче тупнӑ — милиционер пунеттейсемпе пӗрле акт ҫырать. Вӑт сана ме! Кураков супӑнь вӑрлама мар, ҫыннӑнне шӑрпӑк пӗрчи те илсе курман. Анчах Куракова вӑрӑ туса ҫав кунах тӗрмене хупса лартрӗҫ.

— Тен, ку ун телейне? Халӑх тӑшманӗ туса хурсан — персе пӑрахатчӗҫ е ӗмӗрлӗхех Ҫӗпӗре яратчӗҫ,— яланхи пекех тарӑн шухӑшлӑ пӗтӗмлетӳ турӗ сумлӑ профессор Ф. В. Катковский.

«Юрать-ха ман инкексем ҫинчен Маргарита пӗлмест. Пӗлсен — ман енне ҫаврӑнса та пӑхас ҫук»,— шухӑшларӗ хӑй ӑшӗнче Кураков. Пирӗшти пек сӑваплӑ чун нимӗн те пӗлменни качча́на пысӑк телей пек туйӑнчӗ. Анчах вӑл йӑнӑшнӑ иккен. Хапха тӗлӗнче уйрӑлас умӗн аллисене вӗҫертме васкамарӗҫ.

— Сирӗн ӗмӗтӗрсем пурнӑҫа кӗрессе шанатӑп. Эсир наука кандидачӗ пулатӑрах,— персе ячӗ хӗр качча пачах кӗтмен сӑмахсене. — Эсир диссертаци хӳтӗлеймесен, ик аллӑма та касса татма паратӑп...

Каччӑ ҫан-ҫурӑмӗ вӗри мунчари пек пӗҫерсе кайрӗ: нивушлӗ пӗлет? Виктор унран ыйтса пӗлме шутланӑччӗ те, хӗр ирӗк памарӗ: аллипе тавҫӑруллӑн каччӑ ҫӑварне хупларӗ.

— Фронта кайсан пĕр çыру та пулин ярсамăр, Виктор Герасимович!— вĕри сывлăш кăларса пăшăлтатрĕ хĕр. Унăн куçĕнчен вĕри тумламсем йăрăлтатса юхса анчĕç. Хĕр ĕсĕклесех йĕрсе ячĕ те килне хăвăрт чупса кĕчĕ. Урамра тăр пĕччен тăрса юлнă салтак ирхи шурăмпуç яланхи пекех хитрен çуталса килнине чылайччен пăхса тăчĕ, шухăшĕ вара тарса кĕнĕ хĕр таврах çӳрерĕ: «Ирхи шурăмпуçсен никамран малтан Маргаритăна çутă телейпе савăнтарасчĕ. Вăт ку лайăх пулĕччĕ!»

## Асамçă е юмăç?

— Чипер хĕр ача, юмăç пăхса ярам-и, гороскоппа интересленместĕр-и?— чарчĕ шыв ăсса кĕрекен Маргаритăна Лилипутов повар.

— Мĕн вара гороскоп?— ыйтăва хирĕç ыйтупа хуравларĕ хĕр ача.— А-а, илтсеттĕм, юмăç пăхмалли-и?

— Кампа туслашмаллине каласа параканни. Эсир çемьеллĕ пулма çамрăк-ха, анчах пĕлни чăрмантармасть. Калăр-ха, эсир хăш уйăхра çуралнă?

— Кирлех-и ку? Калăпăр, кăрлач уйăхĕнче...

— Хăш кунĕнче?

— Уйăх пуçламăшĕнче тейĕпĕр... Раштав сиввинче.

— Эппин, Козерог — Ту качаки çăлтăр ушкăнĕ — айĕнче çуралнă. Сире кампа туслашсан аванрах-ши? Гороскоп кăтартнă тăрăх Водолей — Шыв тăкан, Йĕкĕреш, Арăслан, Стрелец-ухăçă ушкăнĕсен айĕнче çуралнисемпе туслă пулмалла сирĕн.

Маргарита чеен кулкаларĕ, пĕкĕ евĕр авăнчăк илемлĕ куç харшийĕ çамки çинелле çĕкленчĕ. Унтан Виктор кăрлачăн 19-мĕшĕнче, тĕне кĕртнĕ кун, çуралнине астуса илчĕ те кулса ячĕ:

— Каччи те Ту качаки çăлтăр ушкăнĕ айĕнче çуралнă пулсан?

— Мĕнех вара, урăх ушкăн çăлтăр айĕнче çуралнă хĕр шырама тивет каччăн...

— Акă ăна урăх ушкăнта çурални...— ик пӳрне хушшинчен виççĕмĕшне кăларчĕ хĕр. Чĕлхине япăш кăларса кăтартрĕ те хăвăрт пӳрте кĕрсе кайрĕ.

Маргарита çав кунах Лилипутов патне хăй пычĕ.

— Сан гороскопунта тĕне кĕртнĕ кун çуралнисем пирки мĕн каланă?

«Э, тавçăратпăр эс кам пирки пĕлесшĕннине»,—вĕлтлетрĕ шухăш ăрăмçă пуçĕнче. Вăл сĕтел сунтăхĕнчен тĕр-

лĕ тĕспе ўкернĕ гороскоп схемине тата ăнлантарса çырнисене туртса кăларчĕ.

— Çакăнта мĕн çырни пĕтĕмпех тĕрĕс,— якатрĕ вăл алă лаппипе самаях кивĕ гороскопăн лутăрканнă листисене.— Чăн ĕнтĕ, тĕне кĕртнĕ кун çуралнисем пирки ятарласа калани çук. Ун вырăнне Ту качаки çăлтăрĕсем айĕнче çуралнă йĕкĕтсене тĕплĕн çырса кăтартнă. Акă итле. Вĕсем пысăк пĕлўллĕ, ăслăлăх енĕпе ăнăçлă ĕçлеме пултараççĕ, малашне мĕн пуласса пĕлсе тăраççĕ. Хăйсене тыткалас енĕпе çирĕп те тўсĕмлĕ. Ун пек çын ĕçе юрататъ. Çитĕнў е ўсĕм тусан тем тери хавхаланса каять.

Хĕрĕн пичĕ-куçĕ ытла çуталса кайнăран-и, урăх сăлтавпа-и, Лилипутов шерпет çине пăрăç сапса пăхма шутларĕ:

— Тепĕр чухне калама çук чăкраш, кутăн, ним каласа та ўкĕте кĕмеççĕ. Ытла та мăнкăмăллă, чапа питĕ юрататъ. Унашкалли мăнкăмăллăхне тата чапшăн çуннине пула пĕччен те тăрса юлма пултаратъ.

— Суять сан гороскопу. Пер ăна шăпăр шăтăкне,— хăй кăмăлсăрланнине пытараймарĕ Маргарита, çакăн хыççăн вăл повар сĕтелĕнчи гороскоп çинчен тек пĕрре те аса илмерĕ, ăрăмçи хăй те хĕрĕн пулас упăшки çинчен юмлама сĕнмерĕ.

Пĕр те пĕр шутласан тĕлĕнмелле: лутра та çинçешке, типшĕм те хытанка арçын хăйĕнче ăнланмалла мар вăйхăват пытарса тăратъ.

Юманайра Лилипутов çинчен ырă сăмах чи малтан сараканĕ, ахăртнех, Лукерья Порфирьевна пулчĕ. Ун патне Маргарита Лепехова сĕннипе ятарласа килсен хăй мĕнпе асапланнине пĕр пытармасăр каларĕ:

— Сулахай хул ыратни тертлентерет. Ай! темесĕр хулпуççие хускатма та çук...

— Кофта тўмисене вĕçерт-ха: куçпа курам, алăпа хыпаласа пăхам...

— Эс тата ыттине те хыпалас тейĕн. Пултарсан унсăрах сипле... Кăтартмастăп та, тыттармастăп та...

— Эппин, хăв каланă пек пултăр,— килĕшрĕ Лилипутов ўкĕте кĕмен хĕрарăмпа. Хăй çавăнтах кăпăш та вĕри аллине ун хулĕ çине хучĕ, тепĕр самантран ĕнси хыçĕнчен хулпуççийĕ тĕлне чикрĕ.

— Ай, тамаша! Сан кунта кĕреçепе хырмалăхах тăвар ларса тулнă!— тем тери тĕлĕннĕ пек пулчĕ Лилипутов.— Ну, юрĕ! Кĕреçепех хырмăпăр. Вăрмана кай та хыр сухăрĕ илсе кил. Ăна типĕт, çăнăх пек вĕтет, панулми уксусĕпе хутăштар. Çав хутăша çемçе тутăрпа çых та каçпа ырата-

кан вырӑна хур. Тепре качча каймалла пуличченех юсанать... Чӑн калатӑп, тупата,— шантарчӗ сиплевҫӗ Лукерья Порфирьевнӑна.

Виҫ-тӑватӑ кунран вӑл Лилипутов патне тепре килчӗ. Хӑй сенкер ҫинче шурӑ чечеклӗ вӗр ҫӗнӗ кофта тӑхӑннӑ.

— Хӑв кӗрӗс-мерӗс, сӑмаху вара тӗп-тӗрӗс. Асамҫӑ пуль эс... Ман ыратни иртсе кайрӗ вӗт...

Йӑл-йӑл кулакан хӗрарӑм сиплевҫӗне пӗр пулштух эрех тыттарчӗ, укҫа пама тӑчӗ — лешӗ йышӑнмарӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Лилипутов патне канаш ыйтма пӗри те тепри килчӗ. Каҫса кайса ӳсӗрекен ватӑ старике Филимонова сивӗ шыв ӗҫме чарчӗ, йӗтӗн вӑррине вӗретсе ӗҫме хушрӗ. Чӗрепе аптракан Таисия Петровнӑна тӑватӑ кун умлӑ-хыҫлӑ катӑркас чечекне вӗретсе ӗҫме сӗнчӗ.

Кам кӑна килмерӗ пулӗ Лилипутов патне Юманайра! Кашнин валли унӑн ӑшӑ сӑмах тупӑнчӗ, кашнинех чир-чӗр епле пуҫланнине ӑнлантарчӗ. Пӳре чирӗпе, сӑмахран, шӑнса пӑсӑлнӑран аптраҫҫӗ, сывлӑш пӳлӗнни ывӑннӑ хыҫҫӑн сивӗ шӗвек ӗҫнипе ҫыхӑннӑ, суран пӳрленсе тӑни унти тасамарлӑхран килет... Вӑл сывмарлӑхран епле хӑтӑлмаллине тухтӑртан та лайӑхрах пӗлет, ҫавӑнпа ырӑ сӗнӳсем парать.

Ик-виҫ эрнерен Лукерья Порфирьевна сиплевҫӗ патне тепре килчӗ, хӑйне хӗсӗрлӗхрен хӑтарма тархасларӗ.

— Ватлӑх кунра мана кам пӑхӗ? Хуть Гришӑран пӗр ывӑл ҫуратасчӗ...

Хальхинче сиплевҫӗ нимӗнле канаш та памарӗ, сӑлтавне ҫеҫ ӑнлантарчӗ:

— Ар пурнӑҫне ҫамрӑклах иленмелле марччӗ... Ҫакна шута илнӗ пулсан пӗрре те, иккӗ те ҫурататтӑнччӗ... Чӑн калатӑп, тупата...

Маргарита Лепехова пуринчен те ытларах хисеплет Илья Лилипутова. Вӑрмантан хӑй урипе утса таврӑнма вӑй панишӗн ҫеҫ мар, Кураковпа хӗр хушшинчи юрату телей кӳрессе ӗнентернӗрен. Лилипутовра ӑнланма ҫук асамлӑ вӑй пытарӑнса тӑнӑн туйӑнать Маргаритӑна. Ҫав вӑя ӑҫтан илет-ши пултаруллӑ ҫын? Ҫакна хӑйӗнчен ыйтса пӗлме шутларӗ хӗр.

— Илья тете, кала тӳррипе, сан хӑвату ӑҫтан тупӑнать?

Хӗр куҫӗнчен чӑр-р пӑхрӗ Лилипутов. Чӑнах та, ку ыйту ҫине тӑруках хурав параймӑн. Хӑйне ытти ҫынсемпе пӗр шая лартсан — сиплевҫӗне те юмӑҫа кам ӗненӗ, кам хисепе хурӗ? Эппин, унӑн ҫӳлерехри картра тӑмалла. Ҫавӑн чухне кӑна унӑн ӗҫ-хӗлӗ витӗмлӗрех пулӗ, ытларах усӑ кӳрӗ.

— Рита, эс чӑнласах пӗлесшӗн-и е ытахальтен ҫеҫ ыйтатӑн?— ыйтӑва хирӗҫ ыйтупа хуравларӗ Лилипутов.— Чӑнласах пулсан пытарса тӑрам мар: манӑн вӑйӑм-хӑватӑм Ҫӳлти Патшалӑхпа ҫыхӑннӑ. Витӗр курса тӑмалли ӑстӑн мана Аслӑ Турӑ хӑй парать. Ун пирки Иаков ҫырӑвӗнче ҫапла каланӑ: «Ҫӳлтен килсе тӑракан ӑс-хакӑл чи малтанах ҫӑлкуҫ пек тап-таса, унсӑр пуҫне килӗштерӳллӗ те ҫураҫуллӑ, сӑпайлӑ та ырӑ кӑмӑллӑ, пӗр ултавсӑр та тӗрӗс».

«Кам вӑл Иаков?»— тесе ыйтасшӑнччӗ Маргарита, хӑюлӑхӗ ҫитеймерӗ. Лилипутов вӑй-хӑватпа ӑс-тӑн Ҫӳлти Патшалӑхран илсе тӑнине вӑл ӗненчӗ те, ӗненмерӗ те. Ӑсчахсем хамӑр пек ҫынсем хушшинчех пулаҫҫӗ-ҫке-ха. Маргаритӑшӑн лутака Лилипутов та ҫывӑх ҫын пулса тӑчӗ. Хӑй каланӑ тӑрӑх, Владимир хулинче ӑна тӑван амӑшӗ кӗтет. Пурнӑҫ ҫулӗ кукӑр-макӑр пулнӑран авланма ӗлкӗреймен вӑл, ҫапах та кунта, Юманайра, Григорий Легкоступов пек, хӗрарӑмсем ҫумне ҫулӑхмасть. Маргаритӑна хӑйӗнпе тан ҫын вырӑнне хурса, унпа яланах сӑпайлӑн пуплет.

— Илье пичче, калӑр-ха пӗр пытармасӑр, тухату вӑйне ӑҫтан илетӗр эсир?— ыйтрӗ каллех унран Маргарита.

Тинкерсе пӑхрӗ ун ҫине Лилипутов. Хӗр пачах та шӳтлеменнине курса ӑнлантарма пикенчӗ:

— Пытарам мар, эсир шутланӑ пек, эпӗ асамҫӑ та мар, тухатмӑш та мар. Ҫапах тухатма пултаратӑп эпӗ. Тӗслӗхрен, эсир Кураков пек ӑслӑ каччӑна юратма пӑрахаймастӑрах. Ку тухатмасӑрах паллӑ...

— Эсир ялан шӳтлессипе... Мӗнпе тухататӑр эсир — манӑн ҫавна пӗлес килет,— пӳлчӗ асамҫӑна ҫап-ҫамрӑк хӗр.

— Мӗнпе-мӗнпе... Паллах, сӑмахпа. Тухату вӑйӗ кирек хӑҫан та уҫӑмлӑ тӗллевпе каланӑ сӑмахра. Ырринче е усаллинче. Хӑш сӑмаха каламаллине тухатмӑшсен ӗмӗртен килекен опычӗ вӗрентет, пуҫри пӗлӗвӗ пулӑшать. Анне каланӑ тӑрӑх, ман асатте чирлисене тӗрлӗ курӑкпа сиплекен юмӑҫ пулнӑ. Атте эмелпе сиплекен фельдшера вӗренсе тухнӑ, пӗрремӗш тӗнче вӑрҫи вӑхӑтӗнче лазарет ҫине снаряд ӳкнипе вилсе выртнӑ. Мӗн калама, ун чухне эпӗ сӗтел айне ҫуран ҫӳрекен макӑра ача кӑна пулнӑ. Анне упӑшкисӗрех пӑхса ӳстернӗ вара мана.

Илья хӗре малалла ҫапла ӑнлантарчӗ:

— Сиплемелли меслетӗмсем иккӗ ҫеҫ. Ҫӳлти хӑватсем пулӑшнипе ҫын сываласса шантаратӑп. Ку вӑл этем организмӗн мӗнпур вӑй-халне пурнӑҫшӑн кӗрешме чӗнет. Ку пӗрремӗшӗ. Чир-чӗре ҫӗнтерме ҫут ҫанталӑк ырлӑхӗсемпе

пулăшкалатăп. Çакă иккĕмĕш меслет. Урăх вăрттăнлăх çук ман ĕçĕм-хĕлĕмре.

Паллă ĕнтĕ, кашни юмăç, кашни асамçă тĕлĕнтерекен ĕçсем тума пултармалла. Унсăрăн вăл асамçă пулнине кам ĕнентĕр-ха! Тĕлĕнтермĕшсем тумасан та, чирлисене сиплеме пĕлмелле. Нимрен ытла ун юмлас пултарулăх пулмалла. Илья Лилипутов пророк вара малашне мĕн пулассине тĕлĕк тăрăх каласа пама уйрăмах ăста. Таисия Петровна вăн тĕлĕкре пӳртне кăвакарчăн вĕçсе кĕнине курнă. «Халь-халь çыру илетĕр ак!»— уçса пачĕ ку тĕлĕк пĕлтерĕшне Лилипутов. Мĕнех калăн: вăл пророкла калани чăнах та пурнăçа кĕчĕ — фронтри хресна ашшĕнчен виçкĕтеслĕх илчĕ, вăл чĕрĕ-сывах пулнине, ял-йыш хушнă пекех вирлĕн çапăçнине пĕлчĕ. Чăн ĕнтĕ, Таисия Петровна хăй урăххине кĕтетчĕ: хăйĕн Матвейĕ çинчен мĕн те пулин çĕннине, чĕри патне пыраканнине пĕлесшĕнччĕ, çапах ку çыру та чун-чĕрере ăшă туйăм çуратать. Рита тĕлĕкĕнче ашшĕне курнă. Иккĕленмелли çук: вилнĕ çынна тĕлĕкре курсан — çумăр пуласса. Илья тете каланă пекех пулчĕ: тепĕр кунах çумăр витререн тăкнă пек çуса лӳшкетрĕ. Çавăнпа взвод утă çулма каяймарĕ, колхозăн витнĕ йĕтемĕ айĕнче РГД-42 граната тытăмне вĕренчĕ, унпа усă курмалли хăнăхтарусем турĕ. Қаçпа вара оркестрта выляккансем яланхи пекех клуба пуçтарăнчĕç, çĕнĕ кĕвĕсем калама вĕренчĕç.

Пожедановпа Қураков хушшинче асамçă пирки чăн-чăн диспут пулса иртрĕ.

— Итле-ха, çак «Правда» хаçатра «Медиксем асăрхаттараççĕ» ятпа пичетленнĕ çырăва вуласа тухайрăн-и? Унăн авторĕсем — медицина наукисен докторĕсем, профессорсем, академиксем...— аларан тыттарасшăн пулчĕ Қураков командира хаçатăн çĕнĕ номерне. Лешĕ йышăнмарĕ, тĕртсе кăна ячĕ.

— Мĕн çинчен, кам çинчен çырнă вара унта?

— Пирĕн Лилипутов çинчен...

— Чăнах-и?

— Чăнаххи-мĕнĕ. Паллах, ăна ятпа асăнман. Тухатмăшсемпе юмăççсем, асамçăсем вăрçă вăхăтĕнче ытла та ĕрчесе кайрĕç. Хăйсен медицина пĕлĕвĕ çук, халăха сипленçи тăваççĕ. Усă кӳрес вырăнне сиен кӳреççĕ. Аргументласа каламасăрах паллă: вĕсенчен нихăшĕ те ятарлă вăтам е аслă пĕлӳ илмен.

— Итле-ха, Виктор Герасимович, утна йăнăш çулпа ан юрттар: пирĕн Лилипутов юмăç та, тухатмăш та мар, вăл халăх сиплевçи. Çак тĕллевпе тĕрлĕ курăкпа, нумай-нумай

тымарпа усӑ курать. Мул пухас тесе мар, таса кӑмӑлпа пулӑшас тесе. Ҫынсенчен пӗр пус та илмест. Эппин, ӑна Уголовнӑй Кодексӑн статйипе айӑпламалла та пулман. Ҫакна та ӑнланаймастӑн пуль...

Кӑштах чӗнмесӗр ларсан шухӑшне тарӑнлатма шутларӗ:

— Илья — лайӑх ҫын, кӑмӑлӗ ырӑ, ӑсӗ те ҫителӗклех. Турра шанма ӳкӗтлет, ҫав вӑхӑтрах сиплев меслечӗсемпе усӑ курать.

Ҫапла хакларӗ Лилипутовӑн тӑрӑшулӑхне Пожеданов. Паллӑ: командиртан ӑслӑ калаймӑн.

## Сивӗ уйрӑлу

...Пӗр уйӑха яхӑнах утӑ ҫулчӗ взвод Юманай ҫумӗнчи вӑрманта, уҫланкӑсемпе ӗшнесенче. Ҫав хушӑра Викторпа Маргарита юратӑвӗ вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса пычӗ. Запас полка таврӑнассине ырана хӑварни Виктора Юманай пикипе тепре тӗл пулма май пачӗ. Аларан алӑ тытса ҫӑлтӑрсем сӳнме пуҫличченех юнашар ҫӳрерӗҫ вӗсем.

— Тӗл пулайӑпӑр-ши эпир тепре хӑҫан та пулин?— ҫине-ҫинех ассӑн сывларӗ Маргарита.

— Иккӗленесси — ҫӑва патне! Хӑҫан та пулин мар, вӑрҫӑ хыҫҫӑнах...

— Тӗл пулайӑпӑр-ши эпир вӑрҫӑ хыҫҫӑн?— каллех ыйтать Маргарита. Хӗрӗн мӑшӑр куҫӗ каччӑ ҫине тилмӗрӳллӗн пӑхать.

— Ну, ну... Пӗлетӗн-и, ку ыйтӑва тепӗр май ҫавӑрмалла, эппин, урӑхларах лартмалла: пулайӑпӑр-ши эпир вӑрҫӑ хыҫҫӑн? Хамӑр пулатпӑр пулсан пирӗн юрату та ҫӗнӗ вӑйпа ҫулӑмланӗ. Паллах, хӑв унччен качча сиксе тухмасан...

— Мӗн? Эс мӗн — манран кулас тетӗн-и? Кам вырӑнне хуратӑн эс мана?— тарӑхмаллипех тарӑхса кайрӗ Маргарита.— Вӑн эс хӑв вӑрҫӑ хыҫҫӑн та вӑрҫӑ хыҫҫӑн тетӗн... Сан шутупа, юрату вӑхӑтлӑх туйӑм кӑна: малтан тӑшмана ҫӗнтермелле, унтан юрату патне те ал ҫитерӗпӗр...

— Ну, ну... Кунашкал калама епле пӗлтӗн-ши? Сан сӑмаххусемпе пачах килӗшместӗп. Пӗлсе тӑр: юрату кирек мӗнле вӑхӑтра та кирлӗ. Халь вара эпир пӗр-пӗрне юратмасӑрах пӗрле ҫӳретпӗр-им-ха?

Хӑй сӑмахӗсемшӗн хӑй вӑтаннӑ пек пулса кайрӗ Маргарита, пӗтӗм йӑрӑс ҫамрӑк кӗлеткипе хӑйне чӑннипех те савакан Виктор ҫумнелле тӗршӗнчӗ. Вӑйпитти каччӑ хӗре

хăй çумне чăмăртарĕ, çунса тăран питĕнчен те, пĕçертекен тутинчен те темиçе хут чуп турĕ. Çавна май пĕтĕм кĕлеткипе вĕриленсе кайрĕ, темĕнле астаруллă шухă туйăмсем вăранчĕç, хĕр çумне çывăхарах та çывăхарах çыпçăнас килчĕ.

Хĕрĕн те чĕри хăвăртраххăн тапма пуçларĕ, ӳт-пĕвĕ тĕлĕнтермелле вăйлă сăрăлтату туйăмĕпе чăмăртанчĕ. Мăшăр вăрăм çивĕчĕ каччă çурăмĕ хыçнелле усăнчĕ, нăкă кăкăрĕн чăмăрккисемпе ун сарлака кăкăрне перĕнчĕ.

— Эх, Витюк, хăв манран сакăр çул аслă, пурпĕр лайăххăн чуп тума та вĕренеймен. Ак çапла чуп тăваççĕ ăна...

Хĕр хăюллăнах каччă мăйĕнчен уртăнчĕ, куçне хупрĕ, анчах тутапа тута пĕрлешеймерĕç — лаштăрах усăнчĕç хĕр аллисем пачах кĕтмен çĕртен. «Ай-ай, мĕн тăватăп-ха эпĕ? Сăпайлă хĕр, сӳнми юратăва шанакан хĕр хăйне çапла тытмалла-и?» — çак шухăш çиçĕмле хăвăртлăхпа пырса тирчĕ Маргарита пуç мимине. Ӳт-пĕвĕнчи пăхăнтаруллă ырă сăрăлтату самантрах сирĕлсе кайрĕ. Каччă ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ те каялла чакса тăчĕ Маргарита. Юрать-ха хĕр чунĕн хавшаклăхне, кăмăлĕн çемçелĕхне кӳлĕ хĕрринчи лăпăс-лăпăс юман кăна курчĕ. Çак юман çумне пĕрре кăна мар таянса тăнă ĕнтĕ нкĕ çамрăк.

— Каçар, Витюк. Халиччен пĕлменччĕ: сан çумăнта çухалса кайма та пулать иккен, — именчĕклĕн те айăплăн пăшăлтатрĕ хĕр тути. «Хамран хам тĕлĕнетĕп: манăн пĕр ăна кăна юратас килет, пĕр унăн çеç пулас килет. Мана урăххи никам та кирлĕ мар. Пулайăпăр-ши вăрçă хыççăн? Чăнах та, Витюк, чун юратнă Витюк вăрçă хирĕнче пуç хурас пулсан?» — шухăшларĕ хĕр хăй ăшĕнче, сасăпа вара татăклăн çапла каларĕ:

— Эсĕ манпа пĕрлешмесен е... пĕрлешеймесен, эпĕ никама та качча каймастăп!

Ăшăн çунакан куçпа тĕмсĕлсе пăхрĕ Виктор хĕр çине. «Апла каламаççĕ, апла каламаççĕ...» — тесшĕнччĕ вăл, анчах чĕлхи ним калама та çаврăнмарĕ. «Ĕненетĕп: çак айван ку таранччен хĕрпе-хĕрарăмпа ӳт-пӳ енчен çывăхланса курманах ĕнтĕ. Шăпи мĕнле-тĕр те, леш тĕнчене те унсăрах ăсанма пултарать вĕт», — тыткăна илчĕ хĕр чĕрине каллех канăçсăр шухăш.

Маргарита сасартăк каччă çумне çыпçăнчĕ, пĕтĕм чунне парса татах ун мăйĕнчен çепĕççĕн уртăнчĕ те хирĕçлеме юрами сасăпа çирĕппĕн çапла хушрĕ:

— Халĕ ху чуп ту мана, Витюкăм! Эпĕ санăн, санăн... Мĕн тăвас тенĕ, çавна тума пултаратăн...

Каччă тархаслаттарса тăмарĕ, хĕре каллех питĕнчен те, тутинчен те чуп тума пикенчĕ, ирĕклĕнех уйрăлнă хĕр пĕççи хушшине хăрах урине тĕртрĕ. Çав хушăра хĕр чĕтрекен аллипе хăй çийĕнчи тумĕнчен пĕрне çĕклеме, тепĕрне антарма, тайăлнăçемĕн тайăлма тытăнчĕ те, каччă урине вĕри çĕртен хăвăрт каялла туртса илчĕ. «Чун-кăмăлăрта мĕн пуррине пĕлместĕп, анчах тархасласах ыйтатăп: хĕр ятне ан ярăр»,— тенĕччĕ ăна пĕррехинче Таисия Петровна, пике амăшĕ. Хăлхинче Василий Васильевич профессор ăс вĕрентсе калани янăраса кайрĕ. Çав икĕ çын сăмахĕсем аса килнĕрен-ши, урăх сăлтавпа-и, хăйĕнчен тĕксех ячĕ Виктор вĕрин çыпçăнакан хĕре.

Çакă вара Маргаритăна пĕртте килĕшмерĕ. «Пысăк вĕреннĕскер тиркет ахăр пирешкеллине»,— тесе тутине тăсрĕ мăнтарăн хĕр пĕрчи. Салтак шăпипе малалла çул тытас каччăран тул çутăласпа хăйсен хапхи умĕнче сивĕреххĕн уйрăлса юлчĕ.

Взвод Юманайран тухса кайсан ял лăпланса пусăрăннă пекех пулчĕ. Юманлăх кăна çулçисене тăлăххăн шĕлтĕртеттерчĕ, Çуткӳль çеç хумĕсене тупсăхлăн шĕпĕлтеттерчĕ. «Туслăх оркестрĕн» чуна çывăх кĕввисем текех илтĕнмерĕç ĕнтĕ, «Ырă тĕлпулу каçĕсем» те манăçа тухрĕç. Çĕнĕ пĕлĕшсемпе тата туссемпе пуплесе чуна лăплантарасси çыру вĕçне тăрса юлчĕ.

## Полкри хуçалăх взвочĕ

Йăсласа тăракан çумăр витĕр каç кӳлĕм Юманайне батальон штабĕнчен юланутпа связной килсе çитрĕ.

— Сирĕн взвода марш роти йышне кĕртнĕ. Халех Мăк сăртне пымалла,— пĕлтерчĕ вăл комбатăн çирĕп приказне.

Кунĕпе ĕçлесе ĕшеннĕ салтаксем çине аслă сержант хĕрхенӳллĕн пăхса илчĕ. Вĕсен тумĕ те йĕп-йĕпех. Çумăр витĕрех вăрманта каштасем касрĕç, утта çил тăпăлтарасран вĕсене капансем тавра тăратса тухрĕç. Çынна çын вырăнне хурас пулсан кăштах типĕнме тата сывлăш çавăрма ирĕк памалла взвода. Унсăрăн чирлесси те пулĕ, фронта мар, Мăк сăртне те çитеймĕн.

Пожеданов взвода тул çутăлнă вăхăтра çула илсе тухрĕ. Мăк сăртне кăнтăрла тĕлне çитрĕç. Вăрăм çула пĕр канмасăр утса тухнă салтаксен батальон штабĕ умĕнчи плацра тӳрех строя тăмалла пулчĕ. Штаб начальникĕ никам çине те мар, Пожеданов çине тăрăнчĕ:

— Каçхинех кунта çитмелле пулнă, эсир пур — халь

тин мĕшĕлтетсе çитрĕр. Маршрисем эшелонта ĕнтĕ!— çухăрашрĕ вăл ятлаçуллă сăмахсемпе. Тарăхнипе унăн пичĕ кăна мар, сулахай пит çăмартийĕ çинчи шĕпĕнĕ те хĕрелсе кайнă. Комбат килнине курсан штаб начальникĕ тинех çăварĕнчен кăпăк сирпĕтме пăрахрĕ, взвод Юманайран килсе çитни çинчен комбата устав хушнă пек чыс парса пĕлтерчĕ. Комбат тӳрех строй еннелле çаврăнса тăчĕ:

— Сывлăх сунатăп сире, маттурсем! Полк командирĕ Юманайра хастарлă ĕçленĕшĕн пурсăра та тав тума хушрĕ, паян канма тата мунча кĕме ирĕк пачĕ. Аслă сержант Пожеданов, полк командирĕ сире уйрăммăн тав тăвать. Тата çакна калама хушрĕ: вăл сире старшина званийĕ панă ятпа хĕрӳллĕн саламлать.

Инçе çула хăвăрт утса тухса салтаксем самаях ĕшеннĕччĕ, штаб начальникĕ çил-тăвăл çавăрттарнă чухне пуçĕсене çĕрелле пĕкнĕччĕ. Комбат сăмахĕсене илтсен вĕсене çанталăк урăхланнă пекех туйăнчĕ. Питсем çинче йăлтăр çутă палăрма пуçларĕ.

— Комбат юлташ, мана пĕр сĕнӳ пама юрамĕ-ши?— çĕклерĕ аллине Алексă Романухин. Ирĕк илсен сăмахне малалла тăсрĕ:— Полк командирĕ пирĕн аслă сержанта тепĕр пусăм çӳлерех çĕкленине, паллах, эпир пурте ырлатпăр, анчах калăр-ха ăна: пире те манса ан хăвартăр. Хăшне офицера кăлартăр, хăшне генерал тутăр. Тĕслĕхрен, генерал званийĕ мана та пăсас çук...

Взвод ахăл-ахăл кулса ячĕ. Çынсен ыйăнни те иртсе кайрĕ темелле. Халь вĕсем штаб начальникĕ еннелле çаврăнса та пăхмаççĕ.

— Ăнлантăм,— куллине куç хăрпăкĕсем айне пытарчĕ комбат.— Сире лейтенанта е тӳрех генерала кăларасси пирки взвод командирĕ хăй шухăшласа пăхĕ. Халлĕхе унăн аллине чăмăртаса сывлăх сунма ирĕк парăрччĕ мана...

Владимир тĕрминчен килнисен взвочĕ марш ротине тепĕр кун та, эрнерен те, уйăхран та çакланаймарĕ. Запас полкăн санчаçĕ ытла та хĕсĕкре-мĕн. Ун валли взводăн пысăк çĕр пӳрт тумалла килсе тухрĕ. Унтан Юманайран утă турттарчĕ. Çавăн хыççăн взводри салтаксем каллех вăрман касакансем тата строительсем пулса тăчĕç: ырă сухăр шăршиллĕ пĕренесенчен столовăй çурчĕ тата тĕрлĕ служба валли хуралтăсем, такам валли хваттерсем тăватăва лартрĕç.

Сисмесĕрех кĕр те, хĕл те иртсе кайрĕ. Çав хушăра Юманайран Романухин патне — Галя продавщица, Легко-

ступов патне — сурăх пăхакан Лукерья ик-виç хут та киле-киле кайрĕç. Кураков патне кăна Маргарита килессикаясси çук. Те Таисия Петровна чарать, те хĕрĕн сывлăхĕ каллех хавшанă. Пожеданов старшина хăйĕн ентешĕ камшăн тунсăхланине курмасть мар, анчах лешĕ чун тунсăхĕ, чĕре ыратăвĕ пирки пачах нимĕн те шарламасть. Ыйтас пулсан вăл Виктора Юманайне пĕрер кунлăха кайса килме чармастчех. Çук, ыйтмасть. Эппин, унта кайса çӳрени вырăнлă мар тесе шутлать.

Пĕррехинче Пожеданов полк комиссарне Юманайри «Туслăх оркестрĕ» çинчен каласа пачĕ.

— Шухăшласа пăхăр-ха: унти оркестрантсем Мăк сăртне килме килĕшмĕç-и? Машина ярсах лартса килĕттĕмĕр. Батальонсенче пĕрер концерт парсан та тем пекехчĕ,— сĕнчĕ комиссар.

Килĕшрĕç вĕт. Катя Соловьевăпа Лукерья Тараканова — балалайкăсемпе, Елена Лепехова — гитарăпа килчĕç полка. Алексă Романухин валли — гитара, Виктор Кураков валли баян тупăнчĕ. Гриша Легкоступов параппан хыçне тăчĕ. Хальхинче Павел Артамонов та оркестра баянпа хутшăнчĕ. Концертсем ăнăçлах иртрĕç.

Куртăмăр ĕнтĕ, эпир сăнакан йыш полкра хуçалăх взвочĕ пулса тăчĕ темелле. Малтан ăна Владимир взвочĕ текелетчĕç, унта зэксем пулнине асрах тытатчĕç. Сайра хутра «тылри йĕкехӳресем» тени те илтĕнкелерĕ. Каярахпа çакă манăçа тухрĕ, Пăшатан взвочĕ те чăваш взвочĕ теме пуçларĕç. Хуçалăх взводĕнчи ĕç-пуçа Исиодор Поганников, Григорий Легкоступов, Филипп Коновалов питĕ килĕштерчĕç. Вĕсем кунта вăрçă вĕçлениччченех кĕрмешме хатĕр. Виктор Кураковпа Алексă Романухин, Павел Артамоновпа Петĕр Данилов вара пачах урăхла чунлă. Вĕсене чун хавалĕ çĕр-шыв раскалне, халăх шăпине татса панă çĕре — фронта туртать. Хуçалăх ĕçĕсем ку салтаксене йăлăхтарса çитернĕ. Хăйсене фронта яманшăн тарăхса калаçма пуçларĕç. Çитменнине тата фронта каясшăн хыпăнакансем взводра вĕсем çеç те мар иккен. Малтанласа уйрăм салтаксем кăна хăйсене фронта яма ыйтатчĕç, унтан çак шухăша пĕтĕм взвод ырларĕ. Ун çинчен старшина комбата вăраха тăсмасăр пĕлтерчĕ. Комбат темиçе минут нимĕн те каламарĕ. Унтан шухăшпа тĕксĕмленнĕ пичĕ çуталса кайнă пек пулчĕ те ура çине тăчĕ.

— Питĕ лайăх, питĕ лайăх... Пирĕншĕн пуриншĕн те Тăван çĕр-шыв пĕрре кăна,— вăрахран шухăшлăн каласа хучĕ комбат.

13. Заказ № 2194.

## *МАЛТАНХИ ÇАПĂÇУСЕМ*

### ПИРВАЙХИ ИКЕРЧĔ ЧĂМАККАЛЛĂ

#### Тăван çĕр-шыв пĕрре кăна

Ловать юхан шыв хĕрринчи Великие Луки вăрçă умĕн Калинин облаçĕнче ÿссе пыракан типтерлĕ хуласенчен пĕриччĕ. Унта хĕрĕх пине яхăн çын пурăнатчĕ. Пăравуспа вакун юсакан завод чипер ĕçлетчĕ, перчетке фабрикин паха продукцине çывăхри нумай хулапа ялта пĕлсе тăратчĕç.

Великие Луки — коммуникацисен пысăк тĕвви. Ку хуларан шоссе çулĕсем вуннă, чугун çул линийĕсем тăваттă тĕрлĕ еннелле каяççĕ. Кунта çурçĕртен — Дно, Новгород, Ленинград хулисенчен, хĕвел тухăçĕнчен — Ржевпа Мускав хулисенчен, хĕвел анăçĕнчен — Балтика тăрăхĕнчен килекен çулсем пĕрлешеççĕ. Кунтанах магистральсем кăнтăр-хĕвел анăçнелле — Германи еннелле — тăсăлаççĕ. Эппин, Великие Луки стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна пĕлнĕрен ĕнтĕ нимĕç фашисчĕсен авиацийĕ вăрçăн малтанхи кунĕсенчех хула çине бомбăсем тăкма тытăнчĕ. Бомбăсенчен пирваях чугун çул узелĕ пысăк сиен курчĕ. Утă уйăхĕнче предприятисене, çавăн пекех халăхăн ытларах пайне тыла куçарчĕç.

Хĕрлĕ Çарăн утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче хулана тăшман аллине памалла пулса тухрĕ, тепĕр кун вара ăна каялла илме май килчĕ. Фронт линийĕ çаплах хула çумĕнче-ха. Ун çине артиллери тăтăшах вут тăкать, унта та кунта пушар çулăмĕ ялкăшать. Урамсенче пынă хаяр çапăçусем хыççăн çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çар хулана каллех тăшман аллине хăварать. Нумаях та вăхăт иртмест — гитлеровецсем ку хуларан совет çыннисене пурне те хăваласа кăлараççĕ, кунта хÿтлĕх йăви туса хураççĕ.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем 1941—1942 çулсенчи хĕллехи наступлени вăхăтĕнче хула çывăхнех пырса тухаççĕ, анчах ăна таварма хал çитерейменççĕ-ха. Çакна пула Великие Луки тепĕр çулталăка яхăнах çапăçусен тăрăхĕнчен тухай-

масть. Калинин фронтĕнчи 3-мĕш ударлă çар Кузьма Никитович Галицкий генерал ертсе пынипе хулана ирĕке кăлармалли операцие пуçлать, 1942 çулхи чӳк уйăхĕн вĕçĕнче хулари тăшмана пур енчен те хупăрласа илет. Уйăх çурра яхăн урамсенче пынă юнлă çапăçусем гитлеровецсен гарнизонне тĕп тума, хулана яланлăхах ирĕке кăларма май параççĕ. Фашистсем çак хулана хăйсен аллинче тытнă хушăра 7 пин мирлĕ çынна вĕлернĕ, 8 пин ытла çынна Германие ĕçлеме ăсатнă. Темиçе пин çемьене килсĕр-çуртсăр хăварнă.

Фашистсен мăйкăчĕнчен хăтарни хулана тăнăç пурнăç кӳреймен-ха. Фронт линийĕ кунтан 15—20 километртра кăна. Великие Луки çине тăшман çаплах артиллерирен персе тăрать, вĕçĕмсĕрех бомбăсем тăкать. Çакă хулана юсаса ура çине тăратма чăрмантармаллипех чăрмантарать.

Марш роти хула витĕр, тĕрĕссипе, хула ишĕлчĕкĕсем хушшипе, иртсе пырать. Кунта ванманни, çĕмрĕлменни, арканманни пĕр çурт та, пĕр хуралтă та çук. Çурт ăçта пулнине кăшкарĕн сĕмĕ тăрăх кăна тавçăрса илме пулать. Çакна пĕлме тата ваннă кăмакасемпе вĕсен мăрйисем пулăшаççĕ. Чиркӳсенчен те никĕссĕсем çеç тăрса юлнă. Çул ик айккипе ванчăк кирпĕч, тимĕр-тăмăр вĕçĕ-хĕррисĕр сапаланса выртать.

Хулара чугун çул станцийĕ, пăравус деповĕ, тăхăр чиркӳ, икĕ мăнастир, шкулсем, учрежденисемпе организацисен темиçе хутлă чул тата йывăç çурчĕсем пулнă. Вĕсенчен кирпĕчпе кĕл куписем кăна тăрса юлнă. Хулан авалхи крепоçĕ те шутсăрах вăйлă арканнă-тĕпреннĕ.

— Ара, ку хулана Сталинград пекех çĕмĕрнĕ-çке... Вăт мурсем... Ниепле ăнкараймастăп: ишĕлнĕ хуласене хăйсем юсамалла пуласси пирки шутламаççĕ-шим фашистсем?— ятлаçса илчĕ кирпĕчрен такăннă Иван Иванов.

— Тĕлĕнмелли çук: Великие Луки темиçе хут та алăран алла куçнă теççĕ...— яланхи пекех лăпкăн каларĕ пуçри шухăшĕсене Иван Данилов. Питĕ тӳлек кăмăллă çак çын. Нихçан та хыпăнса ӳкмест. Район центрĕнче перекет кассин пуçлăхĕнче ларнăскере Мăк сăрчĕ çинче штабра юлма хистерĕç: килĕшмерĕ — тăванĕпе пĕрле фронта килме кăмăл турĕ.

— Ай-уй, курăр-ха, тĕтĕм мăкăрланать...—те тĕлĕнчĕ, те хĕпĕртерĕ Алексă Романухин.

Чăнах та, путвалăн фанерăпа хупланă чӳречинчен тĕтĕм йăсăрланать. Унта тахăшĕ тимĕр кăмака хутнă, котелокпа çĕр улми пĕçерет.

— Ку тата мĕн тăвать?— илтĕнчĕ Легкоступовăн хĕрарăмăнни пек çинçе сасси.

Чăнах та, мĕн тăвать-ха çĕтĕк гимнастерка тăхăннă çак курпун çын? Вăл аллине мастерок тытнă та ваннă кирпĕч купинче юрăхлăраххисене суйлать, темле никĕс купалать. Малалла пыруçăн марш роти çакна курчĕ: кунта курпун çын пĕччен мар иккен, хулана тепĕр хут чун кĕртме тăрăшакансем татах та пур. Бригадăн-бригадăн ĕçлекенсем те курăнкалаççĕ: пĕрисем тăрăшсах ишĕлчĕксене тасатаççĕ, теприсем пикенсех стена купалаççĕ. Эппин, мĕн тери арканнă пулин те, хула çывăх вăхăтрах чĕрĕлсе тăрасси пирки пачах иккĕленмелле мар. Кунта фронт канонади пĕр чарăнми илтĕнсе тăрать — пурпĕр пурнăç вĕрçĕнĕ тымарсем ярать.

Марш роти Великие Луки — Новосокольники чугун çул каякан еннелле — хĕвел анăçнелле утрĕ. Ку çулпа пуйăссем иртсе çӳреме пăрахни чылай пулать ĕнтĕ. Вырăнăнвырăнăн рельсăсем пĕкĕ пек кукăрăлнă, шпалсене айккинелле сирпĕтнĕ. Кăшт кăнтăрарахри Остриань станцийĕ тĕлĕнчен иртрĕç. Ăна та çĕмĕрмеллипех çĕмĕрнĕ.

Малта çап-çара юлнă улăпла пысăк «така çамки» курăна пуçларĕ. Çывăхарсан курчĕç — «така çамки» мар, Птахино ялĕ çумĕнчи çӳллĕ тӳпем иккен вăл.

— Тăшман çакăнтан таврарине йăлтах курса тăратчĕ, пире пуç çĕклеме те памастчĕ,— ăнлантарчĕ марш ротине кĕтсе илме тухнă Громов капитан. Çын çине хăй ăшă кăмăлпа пăхать. Вăл тӳрĕ чунлă, вашават çын пулнине хăвăрт чухласа илетĕн. Сасартăк унăн сăнĕ тĕксĕмленчĕ. Капитанăн çивĕч хăлхине таçта аякра тăшман самолечĕ йăлăхтаруллă вăрăм туна евĕр нăйлани пырса кĕчĕ. Марш роти çулран хăвăрт пăрăнса çӳллĕ курăк ăшнелле кĕчĕ.

— Ложись!— илтĕнчĕ команда.

Кĕçех çывăхранах тăшманăн пысăк мар самолечĕ кĕрлесе иртрĕ.

— «Рама» теççĕ ăна. Фашистсен разведкăна çӳрекен самолечĕ вăл. Асăрханмасан вăл инкек те кӳме пултарать,— ăнлантарса пачĕ капитан кайран.

Громов малти линири полкра рота командирĕ иккен. Ун ротине уйăрса панă-мĕн Пожеданов взводне.

— Эппин, мана ăристансен взвочĕ лекрĕ...— кулянна пек пулчĕ Громов. Ун çине старшина кăмăлсăррăн пăхрĕ те шăртланараххăн çапла лаплаттарса хучĕ:

— Тĕрĕсрех, кăлăхах айăпланнисен взвочĕ...

— Ан кӳрен, старшина. Мĕнлереххине кайран курăпăр... Каярахпа пĕлĕпĕр...

Хăй каланă сăмахсен тӳрккеслĕхне çемçетесшĕн пулнăн, капитан аллине старшина хулĕ çине хучĕ:

— Ман лаши каялла чакма та пĕлет. Тен, чăнахах вырнаçусăр сăмах каларăм. Ҫам тĕрĕссине пурнăç хăй кăтартĕ...

Вырăна çитсен рота командирĕ Пожеданов старшинана взвод йышăнмалли позиципе паллаштарчĕ.

— Сирĕн пур енчен те оборонăна хăвăр тĕллĕн тытма тивет. «Круговая оборона» текенни çакă пулать те ĕнтĕ,— ăнлантарчĕ взвод умĕнчи задачăна рота командирĕ.— Юлашки кунсенче кунта оборонăна улттăн тытса тăчĕç. Улттăшĕ те гвардеецсем. Ку отделенин командирĕ — Феофанов кĕçĕн сержант. Унпа кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче паллашатăр. Ҫаçхи хурал хыççăн вăл халĕ хăйĕн салтакĕсемпе ырă тĕлĕксем курать. Ку отделение оборона тĕрекĕ тесе шутла.

Взвод хӳтĕлемелли позицисене те рота командирĕ хăех кăтартса çаврăнчĕ. Тĕрĕссипе каласан, «çавра оборона»— çурмаункă е ӳплентернĕ пĕкĕ евĕр тарăн траншея. Пĕкĕ мал енче — пĕр виç çĕр метрта — колхоз йĕтемĕ пысăкăш лапам, унăн леш енче — тепĕр виç çĕр метрта — гитлеровецсем. Хамăр енче, пĕкĕ хыçĕнче — чăнкă çыран. Йывăç çӳллĕш е чиркӳ çӳллĕш теме пулать ăна. Ҫырантан сиксен тӳрех путлăха лекетĕн. Шурлăхра лăпăлăх хăва кăррипех. Тĕллĕн-тĕллĕн хăва тĕммисенчен кăшт çӳллĕрех ӳснĕ хурăнсем курăнкалаççĕ. Ытти çĕрти пек, тӳпенелле кармашмашкăн вĕсене тымар яма юрăхлă тăпра çукки чăрмантарать ахăр.

Траншея тĕпĕнче вырăнăн-вырăнăн шыв кӳлленсе тăрать. Кунта çумăр шывĕ те, чавнă май тухни те пур.

— Сире хамăн резервран икĕ салтак хушса паратăп. Хирĕçлеместĕр-и? Ҫапла вара сирĕн виççĕмĕш взводăн йыш шăп та лăп вăтăра çитет. Ротăра чи вăйлă взвод сирĕн пулать. Тăван çĕр-шывăн çак кĕтесĕ камăн пуласси паянтан пĕтĕмпех сиртен килет. Ҫапăçăр! Яра парăр!

Ҫапитан сылтăм аллине карттус сăмси патне тытса вăрт çаврăнчĕ те, Пожеданов унăн çурăмне çеç курса юлчĕ. Ҫапла пуçланчĕ фронтри пĕрремĕш кун.

* * *

— Сирĕн взводра чăнахах пурте уркăсем-и?— ыйтрĕ рота командирĕ Василий Петрович Громов тепĕр кун.

— Унашкаллисем çукпа пĕрех...— пăркаларĕ пуçне старшина.

— Ку тата мĕн тăвать?— илтĕнчĕ Легкоступовăн хĕрарăмăнни пек çинçе сасси.

Чăнах та, мĕн тăвать-ха çĕтĕк гимнастерка тăхăннă çак курпун çын? Вăл аллине мастерок тытнă та ваннă кирпĕч купинче юрăхлăраххисене суйлать, темле никĕс купалать. Малалла пыруçăн марш роти çакна курчĕ: кунта курпун çын пĕччен мар иккен, хулана тепĕр хут чун кĕртме тăрăшакансем татах та пур. Бригадăн-бригадăн ĕçлекенсем те курăнкалаççĕ: пĕрисем тăрăшсах ишĕлчĕксене тасатаççĕ, теприсем пикенсех стена купалаççĕ. Эппин, мĕн тери арканнă пулин те, хула çывăх вăхăтрах чĕрĕлсе тăрасси пирки пачах иккĕленмелле мар. Кунта фронт канонади пĕр чарăнми илтĕнсе тăрать — пурпĕр пурнăç вĕрçĕнĕ тымарсем ярать.

Марш роти Великие Луки — Новосокольники чугун çул каякан еннелле — хĕвел анăçнелле утрĕ. Ку çулпа пуйăссем иртсе çӳреме пăрахни чылай пулать ĕнтĕ. Вырăнănвырăнăн рельсăсем пĕкĕ пек кукăрăлнă, шпалсене айккинелле сирпĕтнĕ. Кăшт кăнтăрарахри Остриань станцийĕ тĕлĕнчен иртрĕç. Ăна та çĕмĕрмеллипех çĕмĕрнĕ.

Малта çап-çара юлнă улăпла пысăк «така çамки» курăна пуçларĕ. Çывăхарсан курчĕç — «така çамки» мар, Птахино ялĕ çумĕнчи çӳллĕ тӳпем иккен вăл.

— Тăшман çакăнтан тавраринe йăлтах курса тăратчĕ, пире пуç çĕклеме те памастчĕ,— ăнлантарчĕ марш ротине кĕтсе илме тухнă Громов капитан. Çын çине хăй ăшă кăмăлпа пăхать. Вăл тӳрĕ чунлă, вашават çын пулнине хăвăрт чухласа илетĕн. Сасартăк унăн сăнĕ тĕксĕмленчĕ. Капитанăн çивĕч хăлхине таçта аякра тăшман самолечĕ йăлăхтарулла вăрăм туна евĕр нăйлани пырса кĕчĕ. Марш роти çулран хăвăрт пăрăнса çӳллĕ курăк ăшнелле кĕчĕ.

— Ложись!— илтĕнчĕ команда.

Кĕçех çывăхранах тăшманăн пысăк мар самолечĕ кĕрлесе иртрĕ.

— «Рама» теççĕ ăна. Фашистсен разведкăна çӳрекен самолечĕ вăл. Асăрханмасан вăл инкек те кӳме пултарать,— ăнлантарса пачĕ капитан кайран.

Громов малти линири полкра рота командирĕ иккен. Ун ротине уйăрса панă-мĕн Пожеданов взводне.

— Эппин, мана ăристансен взвочĕ лекрĕ...— куляннă пек пулчĕ Громов. Ун çине старшина кăмăлсăррăн пăхрĕ те шăртланараххăн çапла лаплаттарса хучĕ:

— Тĕрĕсрех, кăлăхах айăпланнисен взвочĕ...

— Ан кӳрен, старшина. Мĕнлереххине кайран курăпăр... Каярахпа пĕлĕпĕр...

Хӑй калана сӑмахсен тӳрккеслӗхне ҫемҫетесшӗн пулнӑн, капитан аллине старшина хулӗ ҫине хучӗ:

— Ман лаши каялла чакма та пӗлет. Тен, чӑнахах вырнаҫусӑр сӑмах каларӑм. Ҫам тӗрӗссине пурнӑҫ хӑй кӑтартӗ...

Вырӑна ҫитсен рота командирӗ Пожеданов старшинана взвод йышӑнмалли позиципе паллаштарчӗ.

— Сирӗн пур енчен те оборонӑна хӑвӑр тӗллӗн тытма тивет. «Круговая оборона» текенни ҫакӑ пулать те ӗнтӗ,— ӑнлантарчӗ взвод умӗнчи задачӑна рота командирӗ.— Юлашки кунсенче кунта оборонӑна улттӑн тытса тӑчӗҫ. Улттӑшӗ те гвардеецсем. Ку отделенин командирӗ — Феофанов кӗҫӗн сержант. Унпа кӑнтӑрлахи апат вӑхӑтӗнче паллашатӑр. Ҫаҫхи хурал хыҫҫӑн вӑл халӗ хӑйӗн салтакӗсемпе ырӑ тӗлӗксем курать. Ку отделение оборона тӗрекӗ тесе шутла.

Взвод хӳтӗлемелли позицисене те рота командирӗ хӑех кӑтартса ҫаврӑнчӗ. Тӗрӗссипе каласан, «ҫавра оборона» — ҫурмаункӑ е ӳплентернӗ пӗкӗ евӗр тарӑн траншея. Пӗкӗ мал енче — пӗр виҫ ҫӗр метрта — колхоз йӗтемӗ пысӑкӑш лапам, унӑн леш енче — тепӗр виҫ ҫӗр метрта — гитлеровецсем. Хамӑр енче, пӗкӗ хыҫӗнче — чӑнкӑ ҫыран. Йывӑҫ ҫӳллӗш е чиркӳ ҫӳллӗш теме пулать ӑна. Ҫырантан сиксен тӳрех путлӑха лекетӗн. Шурлӑхра лӑпӑлӑх хӑва кӑррипех. Тӗллӗн-тӗллӗн хӑва тӗммисенчен кӑшт ҫӳллӗрех ӳснӗ хурӑнсем курӑнкаласҫӗ. Ытти ҫӗрти пек, тӳпенелле кармашмашкӑн вӗсене тымар яма юрӑхлӑ тӑпра ҫукки чӑрмантарать ахӑр.

Траншея тӗпӗнче вырӑнӑн-вырӑнӑн шыв кӳлленсе тӑрать. Кунта ҫумӑр шывӗ те, чавнӑ май тухни те пур.

— Сире хамӑн резервран икӗ салтак хушса паратӑп. Хирӗҫлеместӗр-и? Ҫапла вара сирӗн виҫҫӗмӗш взводӑн йыш шӑп та лӑп вӑтӑра ҫитет. Ротӑра чи вӑйлӑ взвод сирӗн пулать. Тӑван ҫӗр-шывӑн ҫак кӗтесӗ камӑн пуласси паянтан пӗтӗмпех сиртен килет. Ҫапӑҫӑр! Яра парӑр!

Капитан сылтӑм аллине карттус сӑмси патне тытса вӑрт ҫаврӑнчӗ те, Пожеданов унӑн ҫурӑмне ҫеҫ курса юлчӗ. Ҫапла пуҫланчӗ фронтри пӗрремӗш кун.

* * *

— Сирӗн взводра чӑнахах пурте уркӑсем-и? — ыйтрӗ рота командирӗ Василий Петрович Громов тепӗр кун.

— Унашкаллисем ҫукпа пӗрех...— пӑркаларӗ пуҫне старшина.

— Еплерех ăнланма хушатăр?

— Ана фронтри пурнăç хăй ăнлантарĕ...

Капитан куç харшине çӳлелле сиктерсе илчĕ те урăх ыйтса тĕпчемерĕ. Тӳррипе каласан ку ыйтăва тĕп-тĕрĕс хуравлама Пожеданов хăй те ăс çитерейместь. Çур çул ытла ĕнтĕ старшина хăйĕн взводĕнчи уркăсемпе тата зексемпе пĕрле. Ку ятсене хăшне мĕн пирки ирĕксĕрлесех туянтарнине тĕплĕнех пĕлсе çитрĕ.

Сăмахран, Павел Артамонова, ранжирпа взводра чи малта тăраканнине, юлташĕсем тăрăхласа «Элекçĕ» ят панă, Макар Молчанова «Элекçĕне хӳтĕлекенĕ» теççĕ. Ĕçпуç пĕтĕмпех Павăл ывăлĕ Элекçей, ял Совет секретарĕ, сулăм укçи пирки райĕçтăвком председателĕпе тава кĕрсе кайнинчен пуçланчĕ. Граждансен пухăвĕ йышăннă тăрăх, ял Совечĕ ку укçапа кĕпер тума шутланă, райĕçтăвком вара темиçе ял Совет укçипе район центрĕнче коммуналлă мунча лартасшăн. Чипер сывлăхпа пурăннă çĕртенех Элекçей ним мар психиатри больницине çакланчĕ. Темиçе кунран вăл вилни çинчен яла хыпар çитрĕ. Павел Артамонов чун-чĕререн тарăхса каять, ывăлне вĕлернĕшĕн пысăк вырăнта лараканसене айăплать. Судра айăплисене тăрă шыв çине кăларма Макар Молчанов адвокат килĕшет. Анчах çиле хирĕç сурма хушман çав, сурчăкĕ хăв çине сирпĕнме пултарать. Чăнах та çаплах иккен. Артамоновпа унăн адвокачĕ кĕçех хăйсем тĕрмене лекеççĕ. Артамонов — пуçлăхсем çинчен элек сарнăшăн, Молчанов — элеклес тĕллевпе çăхав çырса панăшăн. Районта вĕсен хутне кĕрекен тупăнмарĕ. Тивĕçлисемех алă кăна сулчĕç: мана хама тивмеççĕ пулсан пуçлăхсем кирек мĕн хăтланччăр.

Çук, ниепле те ăнланса пĕтерейместь Пожеданов хăшпĕр çынсене уголовнăй кодексăн ку е тепĕр статйипе тивĕççĕр çĕртен айăпланине. Акă Табакова — сăтăрçă, Лилипутова — тухатмăш, Коновалова тахăшĕ ятсăр çыру панипех фураж вăрри туса хунă. Куракова вăн супăнь вăрри тесе хупса хунă. Воробьевпа Ястребова «пуçаналлă» пулнăшăнах кирпĕч шутлаттарни уйрăмах кулăшла. Ыттисем пирки те çавнах калама пулать.

Официаллă документсем тăрăх, Пожеданов взводĕнче тĕрмерен срокчен кăларнă уркăсемпе зексем. Çапли çапла, анчах пурин пирки те ун пек калаймăн. Вун саккăртан виççĕшĕ кăна — Поганников, Ястребов тата Шакуров — чăн-чăн ăристансем. Вĕсене çеç тĕрмене тĕрĕс хупнă теме пулать. Урлă-пирлĕ шухăшласан старшина йăнăшмасть пек туйăнать. Çапах хăйĕн пирказĕсене Ястребовпа Ша-

куров кирек мĕнле лару-тăрура та тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлассине çирĕппĕнех шанать, Поганников пирки вара темшĕн-çке иккĕленет.

Çапла, «ăристан» ят ыттисем çумне пĕртте çыпăçасшăн мар. Çакна качака таки те пушкаратех, анчах мĕншĕн апла пулса тухнине, сухалĕ самаях вăрăм пулин те, ăнлантарса параймĕ. Акă колхозра грузовик кустăрмине кам тата кам хушнипе пытарнине пачах тĕрĕслемен, уншăн колхоз председательне Табакова хăйне тĕрмене чикнĕ. Легкоступова те темиçе арăмпа пурăннăшăн, те милиционера хирĕç тăнăшăн, те икĕ статйипе те харăсах айăпланă — çакна вăл хăй те пĕлмест. Судйи пĕлет пулинех. Пӳрне хуçлатса шутласан нумайăшне кăлăхах кирпĕч шутлаттарнăн туйăнать. Приговорĕсене халăх сучĕсем йышăннă вĕт-ха. Халăхах лартнă-ши çав судьясене? Тен, Совет влаçĕ е парти лартнă?

Пожеданов çамкине картлантарсах шухăша путать. Анаткасри колхоз председателĕ Хаяркин дояркăна Верука тискеррĕн хĕненĕччĕ, аллине çапса хуçнăччĕ — фермăран çур литр уйăрттарнă сĕт илсе таврăннăшăн. Вак ачисене çитерме ĕнтĕ. Халăх судйи председателе айăпламалли ĕçе пăхса тухма йышăннăччĕ, хăçан пăхса тухассине те палăртнăччĕ. Ăна парти райкомĕн секретарĕ хăй патне чĕнсе илет, ĕçе пăхса тухмасăр хăварма хушать. «Çук, судьян хăйтĕллĕнлĕх прави пур. Вăл никама та пăхăнмасть», — килĕшмест судья. «Райкома та-и? Эс коммунист мар-им апла? Председатель коллективлă пурлăха хапсăнакансене хирĕç кĕрешет, эсĕ пур — ăна айăпласшăн. Коммунистăн парти политикине ăнланмаллах», — ăс парать судьяна райком секретарĕ. Çук, пăхса тухаймасть халăх судйи Хаяркина айăпламалли ĕçе. Верук аппа район центрĕнче хуçăк алăпа пайтах вăхăт çӳрерĕ — усси пулмарĕ. «Эппин, пирĕн çĕр-шывра тĕрĕслĕхе парти хăйне кирлĕ пек тăвать, — çĕçĕпе каснă пек ыратса кайрĕ Пожеданов чĕри. — Ман взводрисене айăплассине те халăх судйи мар, пĕрпĕр секретарь татса панă пулĕ-ха». Судья никама та пăхăнман çын — пултăрах. Анчах вăл коммунист-çке-ха. Эппин, ăна çăмăллăнах йĕвенлеме пулать. Çитменнине тата çынна судья пулма парти комитечĕ сĕннипе лартаççĕ. Эппин, чи аслă судья — парти. Партие хăйне вара никам та тĕрĕслеме хăяймасть.

* * *

Пожеданов хăпма пĕлмен тарăхтаруллă шухăшсене аранах сирсе ярать те Така майракин кăнтăрлахи посчĕсене тĕрĕслеме каять. Ку ята çĕнĕрен килнĕ взводри çивĕч чĕлхеллисем пачĕç. Ара, оборона системи майрака пек кукăр-макăр пулнăран ĕнтĕ.

Взводри хăйпе пĕрле килнĕ салтаксем пурте пушмакпа, обмоткăпа. Чăн ĕнтĕ, сăран пушмаксем — США ленд-лиз шучĕпе ярса панăскерсем, пăхма çав тери хитре, кĕрен тĕслĕ, анчах сысна тирĕнчен — тунăскерсемпе шывлă çĕре пуснă-пусман урана нӳрĕ çапать. Çавăнпа взвод командирĕ тăшманпа çапăçма пуçличчен малтан траншейăна типĕтме шутларĕ. Траншея тăршшĕпех шыв пухăнмалли шăтăксем алтса тухмалла-ши? Çапăçу вăхăтĕнче кĕптĕр-кептĕр чупмалла пулсан асăрхамасăр хăв та унта кĕрсе ӳкĕн. Вăл шăтăксене çынсем çӳрекен çул çинче мар, айккинерех, траншейăн тăм стенине шăтарса чавтарчĕ. Кăнтăрла тĕлнелле траншейăра шывлă вырăн юлмарĕ темелле. Хĕвел çути кĕмен шăтăксенче шыв тăм тĕслĕ курăнать. Типĕ çĕрте çӳреме те кăмăллă иккен. Çакна пуринчен малтан Феофанов кĕçĕн сержант асăрхарĕ:

— Эпир кунта иккĕмĕш уйăх çăрăлатпăр. Траншейăна çапла типĕтесси пуçа та пырса кĕмен.

Пожеданов вăтăр çынран саккăрăшне кăнтăрлахи хурала тăратать. Кăнтăрлаччен тăваттăн, кăнтăрларан вара тепĕр тăваттăшĕ тăраççĕ. Иккĕшĕ — ППШ пистолет-пулеметпа, тепĕр иккĕшĕ — станоклă пулеметпа, «Максимкăпа». Нишăсенче — лимонкăсем. Кăнтăрлахи хурал начальникĕ — Федор Феофанов кĕçĕн сержант. Ыттисене пурне те каçхи хурала ярать взвод командирĕ.

Сылтăм енчи лапамра тăрăсăр сарай, лупас хӳмисем ларнине асăрхарĕ вăл. Вăхăт тупса унта çитсе курчĕ. Ял çумĕнчи ветфельдшер пункчĕн арканчăкĕсем пулма кирлĕ. Çакна шăвăç листи çине çырнă вывеска, лаша кĕртсе тăратмалли станок çирĕплетеççĕ. Хăмисенчен — салтаксене канма хӳшĕ, пĕренисенчен малти линире дот тусан тем тери лайăх пулĕччĕ. Анчах йывăр пĕренесене кунтан епле йăтса тухăн-ха? Пĕр уçă вырăнтан гитлеровецсен окопĕсем янках курăнаççĕ: маскировка тĕллевĕпе тăм бруствер çине çерем катрамĕсем касса сарнине çăмăллăнах уйăрса илетĕн. Çав уçă вырăнтан иртнĕ чухне тăшман снайперĕ салтаксене çăмăллăнах лектерме пултарать.

Взвод командирĕ хăйĕн планĕсене Громов капитана каласа пачĕ. Лешĕ хуралтă юлашкисемпе усă курас шу-

хăша ырларĕ, уçă вырăнтан пĕренепе хăрамасăр иртмелле пултăр тесе малтан тарăнах мар траншея чавма хушрĕ. Қаçхи хуралта пулнисем кăнтăрлахи апатчен канаççĕ. Қанса вăй илнисене кӳлет ĕçе старшина. Малтанах пустуй ĕçлеттерет тесе ӳпкелекенсем те тупăнчĕç. Чăнкă çыранпа юнашар, лаштра юман хӳттинче, салтаксене канма хӳхĕм хӳшĕ туса лартсан, ун тăррине çерем касса витсен взводнăя ӳпкелесси тăнчах пĕтрĕ.

Дот тума та пĕрене чылаях йăтса хатĕрленĕччĕ ĕнтĕ, анчах ку ĕç кĕтмен çĕртен чарăнса ларчĕ. Взводнăйран пачах килмен сăлтавпа. Громов капитан должноçĕпе пĕр карт çӳлерех çĕкленчĕ: ăна батальон командирне лартрĕç, ун вырăнне ротăна таçти штабран сап-сарă мăйăхлă аслă лейтенанта ярса пачĕç. Унăн ятуллă кителĕ çине халиччен кирĕк-тусан ларман пулмалла, вĕр-çĕнĕ курăнать. Рота командирĕ çĕр пӳртĕнчен вăл ирпе тутлă одеколон шăрши сарса тухать. Ун хыçĕнчен хăй пекех сарă мăйăхлă ординарец пырать. Вăл аллине кăкăрĕ тĕлне тытса командира хисеплĕн пĕчĕкçĕ браунинг тыттарать. Аслă лейтенант вара вăрçă шавĕ лăпланнă пек пулнă май шурлăха вĕçсе килнĕ вĕçен кайăксене тĕлле-тĕлле перет.

Çакă чи малтан кĕçĕн сержанта Феофанова килĕшмерĕ.

— Вăн траншейăна каясчĕ те тăрăслаттарасчĕ гитлеровецсем еннелле. Вăл ав айăпсăр чунсене тĕллет.

Ротăн çĕнĕ командирĕ Пожеданова дот тума чарчĕ.

— Эпир пĕрмай оборонăра тăма пултараймастпăр. Часах наступление каятпăр,— ăнлантарчĕ вăл сăлтавне. Штабра ĕçленĕ офицер ăна-кăна чухлама тивĕçлĕ тесе хальхинче Пожеданов хирĕçлемерĕ.

Пожеданов взвочĕн пурнăçĕ унччензи йĕркепех пырать. Қаçхи хуралта тăнă взвод ирхи апат хыççăн çĕр пӳртпе хӳшше çывăрма каять. Хăшĕ-пĕри унти пăчă сывлăша кĕмест — плащ-накидкăпа пĕркенет те йывăç айне тĕршĕннĕ-тĕршĕнмен харлаттарма пуçлать.

Те хĕвеллĕ кун кăмăллăран, те урăх сăлтавпа паян салтаксем çывăрма васкамарĕç. Қашниех хăйне кирлĕ ĕç тупать. Петĕр Данилов ав килне çыру çырать. Павел Артамонов ППШ кĕпçине тасатать. Илья Лилипутов ялан-хиллех турра кĕл тăвать.

Взвод ирĕ лара-тăра пĕлмен Романухинпа асамçă Лилипутов пĕр-пĕрне йĕплесе илнинчен пуçланать:

— Эй, картлă çамка! Цыган урапи çинчен ӳксе юлнăскер! Ир тăрсан куçна уçма ан ман! Питне шывпа йĕпетме ан ӳркен!

— Эй, Илья пророк! Эй, пуканепе пĕр тăван! Айта

турра кĕл тăвар! Лилипутов та турăсăр пророк пулаймĕ, Лилипутов пулмасан — взводра турă та пулайрас çук!

Тылра чухне Лилипутов ирсерен çеç кĕл тăватчĕ, хăш турра — палăртса каламастчĕ. Фронта килнĕренпе ир те, каç та Таса Турă Амăшне кĕл тăвакан пулчĕ.

— Эй, мана пăхса усракан чăн Таса Турă Амăшĕ, хăвăн хăватлă таса кĕллÿпе мана, ниме юрăхсăр, йĕрĕнмелле чуруна, хуйха ÿкесрен, манăçа юласран, ăса çухатасран, ÿркенесрен хăтар, пур ирсĕр, усал, кирлĕ мар шухăшсене те манăн пăсăлнă чĕремрен, тĕттĕмленнĕ ăсăмран сирсе яр...

— Рядовой салтак Лилипутов, мĕншĕн пуç çапмасăр кĕл тăватăр? — кĕрхи шăна пек кĕтмен çĕртен пырса çапăнать ун çумне Романухин.— Çитменнине тата санăн ир те, каç та пĕр кĕлĕ. Турă саккунĕ тăрăх, ирхи кĕлĕ пĕр тĕрлĕ, каçхи кĕлĕ тепĕр тĕрлĕ пулмалла.

Лилипутов илтмĕше перет, кĕллине малалла тăсать:

— Эй, Турă Амăшĕ, мана кураймансене, мана хур тăвакансене, мана усал сунакансене пурне те çăл, ырăлăх кÿр, маншăн, çылăхлăскершĕн, ан пĕтер вĕсене...

Романухин кĕçех кĕл тăваканпа юнашарах пырса тăрать, сăхсăхать те тархаслама пуçлать.

— Эй, Çÿлти Патшамăр, сыхласам та хÿтĕлесем пире. Темле пулсан та вилĕм аллине ан парах. Амансан — Халăх сывлăх комиссариачĕ аллине пар. Пирĕн чуна кăларса ÿтĕмĕрсене Çĕр ĕç комиссариачĕ аллине пама ан васка. Ан манса кай: пирĕн пурăнас кунсем пĕтмен-ха, шрапнель пăттине те пĕтĕмпе çисе яман-ха...

Лилипутов Така măйраки çумĕнчи шурлăха кайса çÿрет, унта темле курăксем пуçтарать. Акă халь хупах евĕр çулçăсем татса килчĕ. Легкоступов тытсах пăхрĕ вĕсене: пиччĕн енĕ тип-тикĕс те сулхăн, тÿнтер енĕ кăпăшка та ăшă.

— Шапа хупаххи е ама çури хупаххи теççĕ ку çулçăсене. Сиплĕ курăк шутланать. Акă ÿслĕкрен сиплем сана унпа. Суймастăп, тупата.

— Нимле хупах та кирлĕ мар мана, Илья тусăм. Тавтапуç ырă кăмăлушăн. Ÿсĕрессе чикарккă туртнăран ÿсĕретĕп. Уншăн Лукерья Порфирьевна та ятлатчĕ.

— Эх, Гриша, эсĕ ку ÿсен-тăранăн чечекне курсанччĕ. Шăп та лăп ылтăн тĕслĕ. Çавăнпа ăна çурхи кулă ят панă та ĕнтĕ. Шел, çак чечек кĕске ĕмĕрлĕ — хăвăрт типет, анчах питĕ сиплĕ. Чечек чейĕпе пыр чирĕсенчен сыватаççĕ...

— Ну, даешь!.. Усал тухатмăш вĕрентнĕ-и сана е ырă

пирĕшти? Эп пулсан — астуса та çитерес çук! — тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ Легкоступов.

* * *

— Эсĕ чăваш Джамбулне пĕлетĕн-и? — ыйтрĕ Пожеданов апатланса ларнă чухне Кураковран.

— Курасса курман эпĕ ăна, пĕлессе пĕлетĕп. Кашкăр Микули пулма кирлĕ...

— Çавă. Акă кукка хаçат ярса панă. Кунта Кашкăр Микули хайланă сăвă та пур.

Кураков унăн «Тĕп пултăр фашист» сăввине малтан пуçласа вĕçне çитиех хăй ăшĕнче вуласа тухрĕ, унтан тепĕр хут сасăпа вулама тытăнчĕ:

Çап фашиста урараn —
Вăл малалла ан уттăр,
Хăйĕн юнлă урипе
Пирĕн çĕре ан пустăр.

— Ай-ай, пит вырăнлă каланă, — вулама чарăнсах хăй шухăшне палăртрĕ Кураков. Куплет хыççăн куплет вуларĕ вăл. Кашни куплечĕ фашиста çапать, чышать, тӳпелет, ăна тĕппипех пăчлантарассишĕн çапăçма чĕнет. Сăввăн юлашки куплечĕ çав шухăша уйрăмах витĕмлĕн калать:

Фашиста çунтар вутпа —
Кĕл пуличчен вăл çунтăр.
Çакă çутă тĕнчере
Тискер фашист тĕп пултăр.

— Питĕ хӳхĕм çырнă. Ытти чăвашсене те вулаттарха, — сĕнчĕ старшина.

Пожедановпа Кураков хушшинче апат вăхăтĕнче пуçланнă калаçу малалла тăсăлчĕ.

— Ача чухне вăрман урлă, хăвалăх урлă каçса Хырлана пулă тытма çӳреттĕмĕр. Вырăссем ăна Карлă теççĕ. Илтмен-и? Пĕррехинче юхан шывăн тепĕр çыранне тухрăм та тахçанхи кивĕ вите урайне курах кайрăм. Кам тума пултарнă-ши çав витене тесе тĕлĕннĕччĕ. Мĕн те пулин каламăр-ши çав вите пирки? — историк куçĕнчен чăрлаттарса пăхрĕ взвод командирĕ.

Тăруках хуравламарĕ Кураков. Хускатнă ыйтупа хăй мĕн-мĕн пĕлнине-илтнине аса илесшĕн пулчĕ ахăр.

— Сирĕн енче пулса курман эп, анчах Хырла ăçтараххине чухлатăп. Сĕвене юхса кĕрет, Сĕви вара — Атăла. Хырларан кăнтăрарах хăй вăхăтĕнче нухайсем пуçтахланнă. Чăвашсене те ырă кун кăтартман вĕсем. Арçынсене

те, хĕрарăмсене те чуралăха сутма хăвала-хăвала кайнă. Нухайсем хĕснипе те ĕнтĕ Хырла, Пăла, Кĕтне айлăмĕсенче пĕр вăхăтра халăх пурăнман. Ку вырăнсем тискер уй шутланнă...

Кураков каланине взвод командирĕ тимлесех итлет, вăл калама чарăнсанах малалла тăсма хистет. Командир çумне Даниловсем пырса ларчĕç. Калаçу мĕн çинчен пынине Алексă Романухинпа Сергей Шакуров та пĕлесшĕн пулчĕç. Курăсăн, пĕтĕм взвод пĕр çĕре пуçтарăнчĕ. Кураковăн вара малаллине вырăсла калама тиврĕ.

— Хусан ханлăхĕнче те хура халăхшăн пурнăç пылпа кулач пулман. Мăрсасем баскаксемпе алманчăсем хавалли тесе çын тирне ик-виç хут та сĕвме хатĕр пулнă. Вĕсен мăшкăлне тўсейменнипе чăвашсем кăнтăралла — Хырлапа Пăла тата Кĕтне тăрăхне тарнă, унта çĕнĕ ялсем никĕсленĕ. Ханпа унăн мăрсисенчен нехек куракан тутарсем те унталлах тара-тара килнĕ, чăвашсемпе тата ытти халăхсемпе пĕр яла пĕрлешнĕ. Ман шутпа, хутăш ялсем — Начар Упи, Палтиел пеккисем — çапла пулса кайнă...

— Ĕненмеллех-ши? — иккĕленчĕ Сергей Шакуров. — Ку ялсем каярахпа чăмăртанман-ши?

— Пулма та пултарать. Ак вăрçă хыççăн историксем ку ыйтăва уçăмлăх кĕртĕç.

— Вăрçă хыççăн тетĕн?... Вĕçĕ пулатех-ши ку вăрçăн? Кăкăр витĕр эрĕм шăтса тухсан-и? — каллех чĕрре кĕме хăтланчĕ Шакуров. Ăна ыттисем самантрах пăккин турĕç.

— Ан чăрмантар, Сергей. Сана кайран сăмах паратпăр, — лăпкăн каларĕ ăна взвод командирĕ те.

— Вырăс çарĕсем Хусан еннелле Чăваш тăрăхĕн çурçĕр енĕпе иртнĕ. Вĕсем хывнă çул çинчи чулсем Атăл леш енче, йăлăмра паянччен сыхланса юлнă.

— Тĕрĕсех пуль. Виçĕм çул эпĕ Атăл леш енче Кув шинкăра кансаччĕ. Вăрманти хăйăрлă çул çинче чул сарнă вырăнсем тĕл пултăмăр. «Камсен ĕçĕ-ши ку?» — ыйтрăмăр пĕр ăсчахран. «Хаяр Иван çарĕсем Хусана парăнтарма кайнă чухне хывнă ку çула», — терĕç пире, — хăй мĕн пĕлнине каларĕ отделени командирĕ Семен Кириллов.

Ун сăмахĕпе килĕшнине палăртса Кураков пуçне сулчĕ те сăмахне малалла тăсрĕ. Хырла таврашне вырăссем сайра пĕрре кăна килсе тухнă: килессе те нухайсене тăн кĕртме çеç килнĕ. Историксене çакă паллă: нухайсен утлă эшкерне хăваланă май Ростовцев вайпут Хырла хĕррине çитнĕ, хăйĕн учĕсене унăн таса шывĕпе шăварнă.

Нухайсене çавранса пахми тартнă хыççăн вырăс çарне урăх тăшманпа çĕнĕ çапăçусем кĕтнĕ. Унччен Хырла хĕрринче канса вăй илмелле, кая тăрса юлнă обоза çарпа пĕрлешме май памалла. Унсăр пуçне вайпута кунти тавралăх питĕ килĕшнĕ. Юхан шывĕ пулăпа пуян, вăрманĕ те сунара çӳремелĕх пур. Ратниксем вăхăта сая ямаççĕ: палаткăсемпе юнашарах вайпут валли сухăрлă хырсенчен пысăк мар пӳрт туса лартаççĕ, урайне юман сарса утсем валли тем вăрăмăш вите ăсталаççĕ. Теприсем провиант запасĕсене ӳстерме аш-пăш хатĕрлеççĕ, пулă тытса типĕтеççĕ.

Таврари ялсенчи халăх малтан вăрмана, çырма-çатрана тарса пытанать. Ку кăлăхах пулать: вырăссем никама та тивмеççĕ. Унран та ытларах çакă палăрать: Ростовцев çарĕнче чăвашсем те пур-мĕн. Кăрмăш таврашĕнчисем. Алманчă темле хырçă-марçă та тӳлеттернĕрен тарса кайнисем. Курни-пĕлни пулăшать-и, çынсем ялсене каялла таврăнаççĕ. Вайпут тутарсем валли хатĕрленĕ утă-улăма кăна çунтарса яма хушать.

Утлă разведка çакăн пек хыпарпа васкаса килет: Сĕве хĕрринчи улăхра тутарсен пысăк утлă çарĕ тăрать-мĕн. Çар пуçĕ те паллă: Карамыш мăрса.

Трубасем вырăссен çарне хăвăрт ура çине тăратаççĕ. Сотниксемпе канашласан вайпут çара виçĕ ушкăна уйăрать: пĕри тутарсене анатран, тепри кăнтăр енчен, виççĕмĕшĕ туран пĕр вăхăтра тапăнмалла та вĕçерĕнми кăшăла çаклатмалла, Карамыша хăйне тыткăна илмелле. Анчах малтан шутласа хунă пек пулаймасть çав. Карамыш мăрсан та пуçĕ тăмран мар иккен. Унăн разведчикĕсем Ростовцев çарне малараххах асăрханă-мĕн. Вырăссем ăçта тăни çинчен нухайсем те пырса систернĕ ăна. Канса самаях хал илнĕ вырăс çарĕн кăшăлне çакланасси Карамыша пачах илĕртмен иккен. Вăл пĕтĕм çарĕпе хăвăрт-хăвăрт чакса пырать. Вырăссен çарĕ тутарсене Хусан еннелле халь-халь таптасла хăвалать. Малтан калаçса татăлнă тăрăх кунта Ростовцевăн вырăссен тепĕр çарĕпе тĕл пулмаллаччĕ. Шел, Хусан çывăхĕнче тепĕр çар курăнмасть. Тутарсен çарĕ вара ку вăхăт тĕлне хушăннăçемĕн хушăнать, пысăкланнăçемĕн пысăкланать. Кăткă пек йышлăланнă тăшманпа Ростовцевăн утлă çарне хăй тĕллĕн çапăçма тивет. Ратниксем тем тери паттăр пулсан та, утлă çар Кăрмăш çулĕпе каялла чакать, çул çинче чарăна-чарăна тутарсене мĕн вăй çитнĕ таран хирĕç тăрать. Вырăс çарĕ иксĕлнĕçемĕн иксĕлет, Ростовцева хăйне амантаççĕ...

— Тăван çĕр-шывăн паттăрсем авал та пулнă çав,—

шухӑшлӑн каласа хучӗ Табаков.— Виктор Герасимович, ҫав Хырла тӑрӑхӗнчи витесем пирки сирӗн тата тем каламалли пур пек. Манӑҫа хӑвариччен каласа кӑтартмӑр-и?

— Ҫаламалли юлман та пек...— ӗнсине ал лаппипе шӑлкаларӗ Кураков.— Тӗрӗссипе, ку ыйтӑва историксем ятарласа тӗпчени курӑнсах каймасть. Тен, мӗн тӗпчени те ман куҫ тӗлне пулмасӑр юлнӑ... Халлӗхе мана ҫакӑ паллӑ...

Хаяр Иван 1550 ҫулта Хусана ҫити ирттернӗ похочӗ ӑнӑҫлӑх кӳреймен. Хан вырӑнне Едигер йышӑнсанах Хусан ханлӑхӗ Мускава пӑхӑнма пӑрахать. Хаяр Иван тепре похода тухма хатӗрленет. Ҫав вӑхӑтра ун патне Ҫасимовӑран тутарсен патши пулнӑ Шиг-Алей килет.

— Ман шутпа, похода кайма хӗл лариччен тӑхтамалла,— хӑюсӑррӑн калать вӑл хӑй шухӑшне вырӑс патшине,— мӗншӗн тесен Хусан ханлӑхне парӑнмалла мар тума ҫут ҫанталӑк хӑй тӑрӑшнӑ. Ҫунта вӑрмансем, кӳлӗсем, шурлӑхсем шутсӑр нумай. Ҫавӑнпа ҫапӑҫма хӗлле шӑл ҫеммирех...

— Тӗрӗс калатӑн,— хуравлать ӑна Иван Васильевич,— вӑрманӗ те, шывӗ те хӑйсем вӑйлӑ крепость вырӑнӗнче, анчах ҫӳлти турӑ хӗлле тумхахлӑ ҫула та тикӗслет, шурлӑха та типӗтет — ҫарсене иртсе кайма юрӑхлӑ тӑвать.

Иван ӗмпӳ Владимир Андреевич княҫпа, боярсемпе тата вайпутсемпе канашлать. Ҫапла калаҫса татӑлаҫҫӗ: патша хӑй Владимир тата Муром урлӑ ҫул тытать, вайпутсем вара кӑнтӑрарахра — Рязань — Мещера тӗлӗнчен пыраҫҫӗ, патша ҫарне нухайсем ӑнсӑртран тапӑнасран хӳтӗлеҫҫӗ. Икӗ ҫар Улатӑртан иртсен хирте пӗрлешмелле.

Ҫарсем полкӑн-полкӑн ҫӑра вӑрманпа, таса уйпа пынӑ. Вӗсем валли апат-ҫимӗҫ пур ҫӗрте те кирлӗ чухлех тупӑннӑ: вӑрманта сунара кайнӑ, юхан шывсемпе кӳлӗсенче пулӑ тытнӑ. Вӗсене Сӑр та, Хырла та, Сӗве те хӑйсенче мӗн пуррипе хӑналанӑ.

Пӗлетпӗр, Иван ӗмпӳ Хусана 1552 ҫулта ҫӗнсе илнӗ, анчах вӑрҫӑ вӑрҫасси ҫакӑнпах пӗтмен-ха. Хусан ханлӑхне тепӗр хут чӗртсе тӑратма хӑтланакансемпе, нухайсемпе, пӑхӑнма килӗшмен ытти халӑхсемпе, тӗрлӗ пӑлхавҫӑсемпе кӗрешесси тепӗр пилӗк ҫула яхӑн пынӑ. Андрей Курбскипе Семен Микулинский княҫсене, Петр Морозовпа Шереметев вайпутсене пӗрре кӑна мар похода тухма тивнӗ. Андрей Курбский пиччӗшӗ Роман Хусан крепоҫӗн хӳми ҫине чи малтан хӑпарса кайнӑ. Андрей Курбский вара Хырла шывне те тутанса пӑхнӑ теҫҫӗ...

Чӑвашсем ҫинчен вӑл ҫапла ҫырни паллӑ: «Сӑр юхан

шыв урлă каçсан ту çи çармăссене, чăвашсем тесе калаканнисене, куратăн, чĕлхи вĕсен хăйне майлă, патшана хапăл тунине палăртма пилĕк çĕршерĕн те пиншерĕн пухăнаççĕ: вĕсен çĕрĕ çинче Сĕве юхан шыв хĕрринче çĕнĕ хула лартнă-çке-ха».

Адрей Курбские çамрăклах вăрçăсене хутшăнма тивнĕ. Хусана çĕнсе илнĕ чухне вăл çирĕм тăваттăра кăна пулнă. Шел, Хаяр Иван боярсене чăл-пар тустарма тытăнсан унăн та Тăван çĕр-шывран Литвана тухса тарма тивнĕ...

Кураков ассăн сывласа илет те çамки çинчи пăрçа пĕрчи пек шултăра тар тумламĕсене ал тутрипе шăлса типĕтет.

— Çапла, ансат пулман Хусан ханне парăнтарма. Кунта вырăс патшалăхне чăвашсем те нумай пулăшнă...— вĕçлет хăй сăмахне Кураков рядовой.

Взвод командирĕн пĕтĕмлетĕвĕ унăннинчен чылай анлăрах пулчĕ:

— Историрен çакă курăнать: Хусан ханлăхĕ вырăс княжествисене темиçе ĕмĕр тăлласа тăнă. Çакна тума ăна Крым ханлăхĕ чĕвен тăрсах пулăшнă. Вĕсем хăйсен çарĕсемпе Мускава çитиех пуçтахланса пынă. Пусмăра хирĕç çĕкленнĕ мăкшăсемпе çармăссем, чăвашсемпе ытти халăхсем тăванла пулăшни Русь вăрă-хурахла тапăнакансене çĕнтерессине çăмăллатнă, хăвăртлатнă. Ман шутпа, халăхсен пĕрлĕхĕнчен вăйлăраххи, хăватлăраххи нимĕн те çук. Этемлĕх аталанăвĕнче çак вăй яланах çĕнтерӳ тунă.

Старшина пурне те пăхса çаврăнчĕ, ун хыççăн сăмахне малалла тăсрĕ:

— Акă хамăрăн взводах илер. Пирĕн çемьере кам кăна çук-ши: юриех тĕрлĕ халăх çыннисене пухнă тейĕн. Умри тăшман паллă: фашистла Германи. Ăна сателлитсем пулăшаççĕ. Тăван çĕр-шывăмăр вара пуриншĕн те пĕрре кăна. Унта пирĕн атте-анне, аппа-йăмăк, ачамăрсем пурăнаççĕ. Тăван çĕр-шыв никама пăхăнманлăхĕпе чыслăхне пурин те пĕрешкел кăмăлпа сыхламалла...

Ирхи апат хыççăн пĕчĕкçеççĕ юхан шыв — Хырла — пирки тапраннă пуплешӳ паянхи çивĕч ыйтупа çыхăннă политкалаçăва куçса кайрĕ.

Хăйĕн взводĕнчи кашни салтак кун-çулне, шухăш-кăмăлне, чун хавалне пĕлме тăрăшать командир. Ăна кашнин шăпи интереслентерет.

— Тĕрмене начар çын çеç лекмест. Унта чи лайăх çынсем те çакланаççĕ. Йăх-ях, вăр-хурах пирки каламастăп эпĕ. Ман сăмах ыттисем пирки, пĕр айăпсăр çĕртенех тĕр-

мене хупнисем пирки...— терĕ пĕррехинче вăл-ку ҫинчен калаҫса ларнă чухне отделени командирĕ Никифор Табаков.

Пĕр те пĕр шутласан, Никифор Андреевич калани тĕрĕсех пек туйăнать. Акă Исиодор Поганниковпа Митрофан Ястребов тата Сергей Шакуров мĕнлерех ҫынсем пулни каламасăрах паллă: виҫҫĕшĕ те уркăсем, уголовниксем ĕнтĕ, вĕсене шанса пĕтермеллиех ҫук. Вылянчăк ăслă Легкоступова ҫирĕп кăмăллă хĕрарăм та ҫăмăллăнах алла илет ав. Поганников йышшисене ҫавнашкал хăвăрт авайман. Вĕсем тĕлĕшпе асăрхануллă пулмалла. Унашкаллисене куҫпа пăхса хăратаймасан кутран тапса та хăратаймастăн. Лайăхрах пиҫĕхтерсен авма пулĕ-ши вĕсене е ҫук-ши?

«Шăпа пĕр аллипе вутне парсан тепĕр аллипе шыв курки тытса тăрать»,— тенĕччĕ пĕррехинче ашшĕ Миккуле. Ку чăнах та ҫаплах ахăр. Взводра вара синкерлĕ вуткăвара сӳнтермелли шыв курки сулăмлă та, сулмаклă та: Виктор Кураков, Павел Артамонов, Илья Лилипутов, Энвер Булатов, Степан Воробьев тата ыттисем те. Нимĕнле айăплă ĕҫ те туманнисем, решетке хыҫне нехекрен лекнисем. Мĕн тери ăслă вĕсем, мĕн тери пултаруллă!

Энвер Булатов вăн налог вăхăтра тӳлеймен, фининспекторпа тава кĕнĕ. Унăн та тĕрмене лартмалли айăп ҫук.

Хаҫатсем ҫырнă тăрăх, «ҫут хĕвелĕмĕр», «аттемĕр» Сталин халăх ырлăхĕшĕн тăрăшать имĕш, анчах мĕншĕн ҫулсерен выҫă лартать-ха ăна? «Кулак ачи» Георгий Кузнецов ҫакăн пирки пачах урăхла шутлатчĕ. Вăл Патăрьелне Миккульпе пĕрле ҫӳретчĕ. Миккулĕ — педагогика училищинче — учитель ăслайне, Георгий — РКШра (колхоз кадрĕсем хатĕрлекен шкулта) тимĕрҫĕ ĕҫне вĕренетчĕҫ. Педагогика училищин икĕ хутлă йывăҫ ҫурчĕ умĕнче В. И. Ленин тата И. В. Сталин палăкĕсем тăратчĕҫ.

— Миккуль, пĕлетĕн-и, Ленин мĕншĕн хăрах аллине ҫĕкленĕ? Йăлтах халăха паратăп тет вăл. Сталин мĕншĕн аллине мăнаҫлăн шинель хĕвне чикнĕ? Нимĕн те памастăп тет вăл.

Икĕ ҫулпуҫа Георгий ҫапла хакланине илтсен Миккуль ун ҫине сивлеккĕн пăхса илнĕччĕ, ăна акă епле асăрхаттарнăччĕ:

— Георгий, эсĕ илтмен-и, уй куҫлă, вăрман хăлхаллă тет...

Георгий хăй чĕррисем хушшинче ҫук ĕнтĕ. Тăван ялтан ҫырса пĕлтернĕ тăрăх, харсăр каччă Мускава хӳтĕлесе пуҫне хунă. Вăл тавҫăруллăн калани ку таранччен Ми-

ккуль асёнчен тухман-ха. Ĕҫченччĕ, ăсланччĕ. Тăпри ҫăмăл пултăр.

Пуҫри шухăшсен ҫăмхи Пожеданова каллех хăйĕн взводне илсе пырать. Иккĕленмелли ҫук, взводри салтаксенчен ытларахăшĕ — шанчăклă юлташсем, чăн-чăн совет ҫыннисем. Анчах лайăх йышрах йăх-ях та ҫук мар ҫав. Тепĕр тесен йăх-яхĕ те, вăрă-хурахĕ те Тăван ҫĕр-шыв кăкри ҫинче ӳснĕ. Тӳрĕ кăмăллисен те, кукăр алăллисен те Тăван ҫĕр-шыв пĕрре кăна. Эппин, вĕсем те аттесен ҫĕршывне сутмĕҫ. Ҫакна шанас килет Пожедановăн.

## Пулнă-и вăл е пулман та-ши?

Темиҫе кун взвод фронтри пек мар, Юманайри евĕр лăпкă пурăнчĕ. Батальон кухнине термоссемпе апат илме каякансене кăна тăшман снайперĕ пĕр вырăнта тулăксăр персе хăратать. Ҫавскер боец ҫурăмĕ хыҫĕнчи пĕр термоса шăтарса та пăхрĕ. Юрать-ха ку лерелле кайнă чухне пулчĕ, унсăрăн апат юхса сая каятчĕ.

Шакуров рядовой траншейăра ППШ кĕпҫине шомполпа тасатса ларнă. Пĕрре пистолет-пулеметне хăйне, тепре шомполне пуҫ тĕлне ҫӳле ҫĕклеме тивнĕ. Тăшман сăнавҫи ҫакна асăрханă иккен. Кĕпҫе тасатакана мелсĕр ĕҫрен хăтарма шутлать. Пуля Шакуров хăлхи ҫумĕнченех иртет, траншея стенине шăтарса кĕрсе тăм катăкĕсем сирпĕтет. Шакуровăн пуҫĕ янăраса каять, вăл хăвăрт ҫĕре тӳнет те кăшкăрса ярать:

— Амантăм! Пулăшăр!

Хăй патне ҫав самантрах чупса ҫитнĕ Романухин ҫине вăл урмăш куҫпа тилмĕрсе пăхать. Аллипе сулахай хăлхине шăлса илет. Ал тупанĕ ҫинче хĕп-хĕрлĕ юн курсан Шакуров пушшех сехĕрленсе ӳкет. Тепĕр тесен унашкал сехĕрленме кирлех те пулман иккен. Пуля ун хăлхи ҫунаттине кăна кăштах шăйăрнă. Шăйрăлнă вырăна йод сĕрсен пĕтĕм шăв-шав лăпланчĕ. Лăпланса ҫитсен Шакуров гитлеровецсене юнаса та илчĕ:

— Кăтартатăп-ха эп сире ун пек хăтланнăшăн!

Каҫ кӳлĕм гитлеровецсем сылтăм флангра тем чавкалашма пуҫларĕҫ. Вĕсем мĕн хăтланнине боецсем стереотрубасенчен хăпмасăр сăнаҫҫĕ. Рота командирĕ ҫĕр пӳртрен мăйăхне пĕтĕркелесе тухрĕ, бинокльне тăшман тем кĕрмешнĕ еннелле тĕллерĕ.

— Фриц ман пата чей ĕҫме килесшĕн пулас. Ҫавăнпа траншейăсене кунталла чавать,— ыйтăва хăвăрт татса пачĕ

рота командирĕ. Связной урлă комбат ăна кўршĕ — тепĕр батальон ĕнтĕ — оборонăри сыпăну вырăнĕнчен хăйĕн пĕр взводне урăх çĕре куçарни, çавна май флангра сыхлăха вăйлатма кирли çинчен асăрхаттарчĕ. Рота командирĕ комбата тăшман сылтăм флангра активлăх кăтартни çинчен çырса ячĕ, тăшман çав енчен мĕн те пулин хăтланасса кĕтрĕ. Феофанов кĕçĕн сержантăн отделенине Пожеданов сулахай фланга тăратнăччĕ. Рота командирĕ çавăншăн взводнăя хăтăрса тăкрĕ, Феофанов отделенине сылтăмалла куçарчĕ, ытти боецсене те хăй пĕлнĕ пек вырнаçтарчĕ.

...Вилĕм çинчен шухăш Лилипутов пуçне сайра пĕрре кăна пырса кĕрет. Мĕнех вара: тем тери вăрăм вĕренĕн те пуçĕпе вĕçĕ пулать. Çавăн пекех пурнăçăн та пуçламăшĕпе вĕçĕ — çуралупа вилĕм — пулмаллах ĕнтĕ. Çĕр çинче этем йăхĕнчен кам ĕмĕр-ĕмĕр пурăнакан пур? Никам та. Эппин, Лилипутов та ашшĕсен, аслашшĕсемпе кукашшĕсен çулĕпех пырĕ. «Утĕм тăпрапа пĕрлешĕ, чунăмра, ăс-хакăлăмра мĕн пурри тăвансен, çывăх çынсен асĕнче юлĕ, чунăм çўлти патшалăха кайĕ. Анчах вăрах асра тытĕç-ши çывăх çынсем? Чăн ĕнтĕ, малтанах кулянĕç те, куççуль те юхтарĕç. Қаярахпа вара пĕтĕмпех манăçа тухăп. Асăнма та пăрахĕç. Пăрахаççех. Мĕншĕнни те паллă. Ăшпиллĕн аса илмелли нимĕн те юлмасть-çке-ха. Пĕр ĕмĕте те путлĕн пурнăçа кĕртеймерĕм, пуçланă ĕçĕмсене пĕрне те вĕçне çитереймерĕм. Çĕнĕ çурт-йĕр çавăрма тытăннăччĕ — ултавçă-тухатмăш тесе тĕрмене хупрĕç. Акă халь турăран хăраман гитлеровецсемпе çапăçатăп, вĕсене çĕнтеричченех вилсе выртсан кам ырă сăмах калĕ. Ав Митрофан Ястребов пĕрмай тăрăхлать: «Илйи Илья эсĕ, анчах Илья пророк мар. Малтан пăхсан эсĕ ырă асамăç, хыçалтан пăхсан — каснă-лартнă тухатмăш». Вăхăтсăр вилни — Ястребов йышшисене хĕпĕртеттерме кăна. Эппин, çĕрме васкани пачах вырăнлă мар. Патша Туррăмăр Христос мана халех вилме ан патăрах, ĕмĕтĕмсене пурнăçа кĕртме пулăштăрах. «Пĕртен-пĕр хăватлă Туррăмăр, манăн мĕн пур шанчăкăм сан çинче кăна»,— мăкăртатрĕ салтак, хăй ăçтинс йăлтах манса кайса.

Илья Лилипутов пострa тăруçăн йывăр шухăшсен тĕпсĕрлĕхĕнче çăрăлнă вăхăтра Иисус Христос хăй те тĕлĕрсе кайнă ахăр. Унсăрăн Илья Лилипутов тархаслăвне илтетчех ĕнтĕ. Кўршĕри рота траншейисем енчен йăпшăнса кĕнĕ гитлеровецсенчен пĕри прикладпа ĕнселесен вăл кăшкăрса та ĕлкĕреймен, Христоса тархасланă тĕлтех тĕшĕрĕлсе ўкнĕ.

Çуллахи каç Энвер Булатовшăн та лăпках иртсе каятчĕ

пулĕ, анчах тул çутăлса килнĕ чухне постра тĕлĕрсе кайнипе-ши, савнă мăшăрĕн Эминен хитре сассине илтет. Илтессе илтет, хăйне курмасть. «Озын булса кисербез, кыска булса нишлербез?» — яланхи пекех шӳтлет Энвер. «Вăрăм пулсан — касăпăр, кĕске пулсан мĕн тăвăпăр?» — тет ĕнтĕ. Арăмĕ ăна хыçалтан саппунĕпе хуплать, çăварне кĕпи аркипе пăкăлать. Кăшкăраймасăрах вăранса каять Энвер. Вăранса каять те хăй фриц миххине çакланнине ăнкарса илет.

Фрицсем йăпшăнса пынине курсан Поганников, ун хыççăн Ястребовпа Коновалов посчĕсене пăрахса вĕçтере параççĕ траншея тăрăх. Такамсем таплаттарса чупнине илтсен Кураков пулемет кĕпçине тӳрех çав еннелле пăрать, гитлеровецсем курăнсан — тӳрех гашетка çине пусать. Тăшман разведчикĕсен ирĕксĕрех каялла çаврăнма тивет. Тепĕр тесен, вĕсем хăйсене кирлине тунă — «чĕлхе» ярса тытнă, халĕ ăна чĕрĕ халлĕн илсе çитересси кăна юлнă.

Рота командирĕ взводнăя çĕрĕпех сылтăм флангра пулма хушнă. Сулахайра станоклă пулемет тăкăлтатнине илтсен тăхтаса тăмасăр унталла чупрĕ.

— Каялла! — чарчĕ вăл тарса тухакансене. — Пĕр утăм юлмасăр ман хыçран!

Унăн командипе взвод гитлеровецсене хыçалтан пуç çĕклемелле мар пеме пуçларĕ. Рота миномечĕ — «шапа» текенни — каялла çул тытнă «хăнасем» çине темиçе мина кăларса ячĕ. Тăшман разведчикĕсем пĕччеиشерĕн темиçе метр хăвăрт-хăвăрт чупса каяççĕ те лап выртаççĕ. Лапамри тĕмсем тĕлне çитсен вĕсем пачах курăнми пулчĕç. Çав вăхăтра рота командирĕпе ординарец та хашкаса çитрĕç. Аслă лейтенант взводнăя тăрăнчĕ. Темиçе хутлă сăмахсем купалать, «тăшмансем», «ыйхă чăптисем» тесе харап тăвать. Пожеданов ун умне тӳп-тӳрĕ тăнă та нимĕн те калаймасть.

Ана пĕçерккĕ парасси мĕнпе пĕтетчĕ-ши, калама йывăр, çав вăхăтра тăшман артиллерийĕ çывăхри аслати сассипе кĕрлеме пуçларĕ те, взвод позицине снарядсем тӳнккеме тытăнчĕç. Рота командирĕпе ординарец çав самантрах тăнч çухалчĕç. Пожеданов постсенче виçĕ боец çеç хăварчĕ, ыттисемпе хăвăрт шурлăх енне чупса тухрĕ.

Инçех те мар тимĕр листине тимĕр листипе хăшканă евĕр сасă илтĕнчĕ. Эппин, тӳнккеве тăшманăнултă кĕпçеллĕ миномечĕ хутшăнчĕ. Пирĕн артиллери те парăмра юлмарĕ: хĕрĕх пиллĕклисен тата çитмĕл ултталлисен кĕрлевĕ çумне «Катюша» та хăйĕн сассине хушрĕ. Гитлеровецсем хăйсен разведчикĕсене каялла таврăнса çитме пу-

лăшас тĕллевпе пуçарнă артиллери дуэлĕ çур сехете пычĕ.

Канонада лăплансан çакă паллă пулчĕ: тӳпеттейне нихçан та хывман Энвер Булатов çухалнă. Кунта та пăхрĕç, унта та тĕрĕслерĕç — ниçта та тупаймарĕç.

— Пулнă-ши вăл пирĕн взводра е пулман та-ши?— шӳтлереххĕн каласа хучĕ Сергей Шакуров. Хальхинче ăна шăл йĕрме хăвăрт чарчĕç. Артиллери алхаснă вăхăта пострах хăварнă виçĕ боецран иккĕшне — Митрофан Ястребовпа Степан Воробьева — контузи пулнă. Вĕсене васкасах санбата ăсатма тиврĕ.

Тăшман разведки ăçтан кĕнине пăхма тул çутăлсан комбат хăй килчĕ.

— Акă пăхăр-ха, миçе йĕр кунта?— пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ вăл сывлăмпа шăрçаланакан курăк çине. Пожеданов та, Феофанов та миçе йĕрне тĕрĕс шутлама пултараймарĕç. Чее гитлеровецсем: пĕрин йĕрĕ çине тепри пуснă, мина çине тăрăнасран асăрханнă.

— Кунта тата мĕн? Фриц тем сĕтĕрсе пынă курăнать... Хм... Пăхăр-ха, пăхăр,— бинокльне хăвăрт куç тĕлне тытрĕ комбат,— мĕнле çĕнĕ тĕмескесем сиксе тухнă нейтралкăра? Тăхтăр-ха: пĕрре, иккĕ, леререхре тата тепре...

Ку тĕмескесем старшинана та тĕлĕнтерчĕç. Тăшман вилнисене уй варрине пăрахса хăваракан марччĕ. Пăшал, пулемет пĕр чарăнми çунтарса тăнăран пăрахса хăварман-ши?

— Кала-ха, Пожеданов, тӳррипе кала: Феофанов отделенине эсĕ мĕншĕн сылтăм фланга куçартăн? Эпĕ сана сулахай флангра сыхă пулма хушрăм вĕт...

— Рота командирĕ йăлтах урăхла тутарчĕ. Хăрушлăха сылтăм флангра кĕтме хушрĕ. Сире çакăн çинчен çийĕнчех пĕлтересшĕнччĕ, индукторнăй аппаратăн трубкине те ярса тытнăччĕ, рота командирĕ чарчĕ. «Ун çинчен комбат пĕлет»,— терĕ.

Тул çутăлас умĕнхи çак ĕçсем çинчен Пожедановпа Феофанов комбата тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕç.

— Старшина юлташ, мĕншĕн дот тума пăрахрăн? — куçран пăхса ыйтать комбат.

— Рота командирĕн çĕр пӳрчĕ пĕр накатлă кăна. Ăна çичĕ-сакăр накатлă тутарасшăн вăл,— Пожеданов вырăнне хуравларĕ кĕçĕн сержант.

Нейтралкăри тĕмескесене кайса тĕрĕслеме Павел Артамоновпа Алексă Романухин килĕшрĕç. Тăшман тӳпене ракета хыççăн ракета çакнăран вĕсем тĕмескесем патне сывăха чылай вăхăт шуса пыраймарĕç. Ик тĕмескине Алексă тĕрĕслерĕ: икĕ фриц кунта ĕмĕрлĕхех канлĕх тупнă.

Тепӗр тӗмеске патне Павел шуса пычӗ те — ҫӳҫӗ вирелле тӑрса кайрӗ: михӗ ӑшӗнчен пилӗк таран тухса Энвер Булатов куҫне чарса пӑха парать. Чӗрӗ! Тӑшман разведчикӗсем кӑкӑртан йывӑр аманнӑскере вилнӗ тесе пӑрахса хӑварнӑ ӗнтӗ. Шел, Энвер пилоткине те, ун айӗнчен тӑхӑннӑ тӳпеттейне те ҫухатнӑ. Юн нумай кайнипе вӑл йӑлтах вӑйсӑрланса ҫитнӗ, ҫӑварӗ типнипе чӗлхи те ҫаврӑнаймасть. Артамоновпа Романухин ӑна нейтралкӑран фриц миххипех сӗтӗрсе тухрӗҫ, санвзводра двуколка кӳлсе ӑна хӑвӑрт санбата ӑсатрӗҫ.

Пӗр-икӗ кун иртрӗ те, ротӑн ҫӗнӗ командирӗ ӑристансен взводне салатса яма, ҫак тӗллевпе отделенисене уйрӑммӑн-уйрӑммӑн ытти взводсене куҫарма шут тытрӗ. Ҫакна пӗлсен Пожедановпа Феофанов батальон штабне чупрӗҫ. Штаб начальникӗ Константин Петрович Воронков капитан старшинапа кӗҫӗн сержанта мӗн калас тенине пӗтӗмпе калама ирӗк пачӗ.

— Эсир мӗн каласа панине батальон штабӗнче тӗпӗ-йӗрӗпех пӗлеҫҫӗ,— ура ҫине тӑчӗ капитан.— Анчах калӑрха: аслӑ лейтенант вырӑнне лейтенант тивӗҫтермӗ-ши сире? Хирӗҫлеместӗр пулсан паянтан рота командирӗ Геннадий Петрович Воронков лейтенант пулать. Пытармастӑп: манӑн шӑллӑм вӑл.

Ротӑна ҫав кунах ҫӗнӗ командир пычӗ.

## Ӑсмассерен аш турамӗ кӗмест

Юлашки кунсенче тӑшман позицийӗсенче ӑнланмалла мар улшӑнусем курӑнкалама пуҫларӗҫ. Траншейӑсем хыҫӗнчи хурамасем хушшинче темле тупӑсен кӗпҫисем карӑнса тӑнине асӑрханӑ сӑнавҫӑсем. Тупӑ кӳлеписене симӗс туратсемпе витнӗ пулин те, вӗсем мӗн пулнине хӑнӑхнӑ куҫ пушкаратех. Кӑшт айккинерех тӳпенелле тинкерекен кӗпҫесем пур пек. Кусем леш хайхи минометсем пулма кирлӗ. Ку енӗпе гитлеровецсем пирӗн пек чухӑн мар, нумай пуянрах. Ҫавӑнпа мина хыҫҫӑн мина тӑкма май пур вӗсен. Ирлӗ-каҫлӑ тӗтрепе карӑнакан ката вӑрмана та халиччен асӑрхаман темле пысӑк кӳлепесем пырса лартнӑ. Вӗсене ула-чӑла брезентпа витнӗ. Нивушлӗ танксем?.. Чӑн ӗнтӗ, кунта тавралӑх путлӑхлӑ-шурлӑхлӑ пулнӑран ҫапӑҫӑва танксем кӗртме юрӑхлах та мар, ҫавӑнпа ку тӗшмӗртӳ питӗ иккӗлентерӳллӗ. Анчах турӑ ҫывӑрнӑ вӑхӑтра шуйттан тем хӑтланма та пултарать. Эппин, тӗрӗслесе пӑхас пулать. Кунсӑр пуҫне гитлеровецсем пирӗн пата хӑнана килсе кай-

рĕç пулсан, мĕншĕн-ха вĕсем патне кайса курас мар? Тен, вĕсен те шăллă турапа ĕнсе хыртарас килет.

Ķирек мĕн тесен те тăшман ку участокра пĕр-пĕр пысăк операци тума хатĕрленет. Тĕплĕнрех пĕлме нимĕн те мар, «чĕлхе» кирлĕ. Темшĕн-çке ку тĕллеве полк разведчикĕсем ăнăçлăн татса параймарĕç. Тĕлĕнмелли çук: нумай хутчен çуйхаштарнă курак темрен те хăрать. Гитлеровецсем те çавнашкалах. Питĕ сыхă тăраççĕ мурсем. Çĕрĕпе те куç хупмаççĕ тейĕн.

Ķун йĕркине тухса тăнă ыйтăва рота хăйĕн вăйĕпе татса пама пултараймĕ-ши? Батальон штабĕнче канашланă хыççăн рота командирĕ Воронков лейтенант взвод командирĕпе Пожедановпа калаçса пăхма шут тытрĕ. Чăн ĕнтĕ, старшина ăслă-тăнлă пулсан та, офицер мар, çапах унран пултаруллăраххине тăруках тупаймăн. Ķунсăр пуçне хăюллисем, харсăррисем шăпах ун командинче — кирпĕч шутланисен взводĕнче.

— Ķала тӳррипе, Николай Яковлевич, пĕр вунă кунлăха тăван килне кайса курас килмест-и?— аякран пуçларĕ рота командирĕ калаçăва старшинапа.— Ķунсăр пуçне батальон штабĕнчисем сирĕн взвода вĕр-çĕнĕ патефон, пĕрер четвĕрт тап-таса спирт парасшăн...

— Ķунашкал ырлăха мĕнпе тивĕçлĕ пултăмăр-ши?— тĕлĕннипе куçне чарса пăрахрĕ старшина. Унтан тем тĕшмĕртнĕн çапла хушса хучĕ:— Тĕрĕсех калаймарăм пулас — мĕнпе тивĕçлĕ пулăпăр-ши?

— Ай, тавçăруллă иккен эсир... Тĕшмĕртетĕр эппин. Ав полк разведки пире «чĕлхеллĕ» тăваймасть. Хăвăрах чухлăр, унсăрăн командовани сĕм суккăрпа пĕрех. Сирĕн взводра разведкăна хăйсен ирĕкĕпе каякансем тупăнмĕç-ши?

— Темле çав... Мана илес пулсан, халиччен разведкăна ура та ярса пусман... Ачасемпе паянах калаçса пăхатăп.

Пожеданов разведкăна каясси пирки чи малтан Кураковпа калаçрĕ:

— Виктор Герасимович, разведкăна кайма сĕнсен епле, килĕшетĕр-и?

Вăл пăрăç хыпнă евĕр йӳççĕн куланçи турĕ те Чапай сассипе вырăсла хуравларĕ:

— Нет, Петька. Языков не знаю.

— Çапли çаплах-ха, эпĕ те нимĕçле кăшт-кашт кăна перкелешетĕп. Çапах хам ирĕкпех кайса пăхассăм килет. Çитменнине тата «чĕлхе» питĕ кирлĕ... Тăшман мĕн хăтланассине пĕлмеллех пирĕн.

Рота командирĕ шаннă йăвара кайăк пурах иккен. Разведкăна кайма взводра çичĕ салтак, çав шутра Ķураков та,

çырăнчĕç. Вĕсем çумне икĕ минер хушса пачĕç. Çапла тăхăр çынран тăракан разведушкăн чăмăртанчĕ.

Ку ăнланмалла та ĕнтĕ. Салтаксене оборонăра тăрасси йăлăхтарни пирки каламăпăр та. Вĕсен тăшманпа куçа-куçăн тенĕ пек çапăçса пăхас килет. Кунсăр пуçне развед-кăна кайма килĕшнисен кашнийĕнех чун тĕпĕнчи тĕллев те пур. Акă Алексă Романухин тăван тапăрне шыраса тупасшăн тахçантанпах ăнтăлать. Даниловăн çемйипе курса калаçас килет. Легкоступова нарком паекĕсĕрех тăхăр вунултă градуслине лĕрккесси илĕртет. Кураковăн ĕмĕчĕсем татах та анлăрах: Етĕрнере ашшĕ-амăшĕпе курнăçасшăн, Юманайĕнчи Ритăшăн та çав тери тунсăхланă. Командовани пама пулнă патефона кăна ăмсанакан пулмарĕ. Малти линире музыка итлесех лараймăн. Кунта унсăрах шăв-шав ытлашшипех. Вăрçă турри, артиллери, сăмах илсен — хăть хăлхуна хупла.

Çуллахи каç ытла та кĕске çав, çерçи сăмси тăршшĕ кăна. Тул çутăлас умĕн, тавралăха ункăн-ункăн тĕтре карса илсен, пострисен куçĕсем хăйсем тĕллĕнех хупăнма пуçланă вăхăтра, разведчиксен ушкăнĕ фашистсен траншейи çывăхнех шуса пычĕ. Тупăннă икĕ минăна минерсем хăвăрт сиенсĕрлетрĕç, çав тĕлтех йĕплĕ пралук картине касса уçрĕç. Халĕ ĕнтĕ тăшман йăвине кĕме май пур. Траншейăри гитлеровецсен пуçĕсем çине пачах кĕтментуман çĕртен аçа-çиçĕмле камсем сикесси те паллă. Пралук картан шал енне малтан Кураков, унтан Пожеданов хăй шуса кĕчĕç. Пĕри касса уçнă шăтăкăн пĕр енне, тепри тепĕр енне пуç пĕксе выртрĕç. Малалли задача паллă: пралук картан шал енне тата виççĕн шуса каçсанах траншейăна харăссăн сикмелле, пĕрин çăварне пăкăласа аллисене çыхмалла та сĕтĕрсе тухмалла, ыттисене кăнтса хăвармалла.

Анчах ĕç-пуç пĕрре те малтан палăртнă пек пулмарĕ. Шарт! çурăлчĕ темскер пралук карта тул енче. Çавăн хыççăнах гитлеровецсем ракета хыççăн ракета яма тытăнчĕç. Пуç тĕлĕнчех ши те ши шăхăрчĕç çутă йĕр хăваракан пульăсем, урăхла каласан трасса тăваканнисем.

«Путланчĕ йăлтах пирĕн ĕмĕт. Пĕтрĕ нимĕçе тавăрасси... Вăл пирĕн салтака траншейăран сĕтĕрсе тухма пултарчĕ, эпир — çук...» Старшина пуçĕнче тарăхуллă шухăшсем вĕрекен хуранти пек явăнчĕç. Йĕплĕ пралук тул енче мина мĕн пирки çурăлнине вăл пĕлмест-ха. Сăлтавĕ кирек епле пулсан та, ĕç ăнăçманшăн чи малтан командир айăплă. Пултараймарĕ вăл пур енчен те виççе пăхма. Çитеймерĕ ăсĕ операцие кирлĕ пек йĕркелеме. Старшина пуçĕ

çурăлса тухасла ыратать. Курăк çинчи сывлăм сисĕнмеллех сивĕ, командир пуçĕ вара вутла çунать.

Кайран пĕлчĕ Пожеданов: пĕр минерĕ йывăç ещĕке вырнаçтарнă мина çине пырса тăрăннă иккен. Çав çурăлса кайнă-мĕн. Фронтăн ку участокĕнче гитлеровецсен унашкал минăсем çукчĕ-ха. Вĕсене хальтерех илсе килнĕ пулмалла. Çитменнине тата йывăç ещĕкри минăна миноискатель йĕппи сисмест. Çавăнпа минерсене айăплама сăлтав çук. Разведчиксем çĕр çумне пăталанă пекех йăпшăнса выртрĕç. Çĕр сулхăнĕ самаях сисĕнтерчĕ пулин те, ал-урисене хускатма та шикленчĕç. Тăшман кашни хусканăвах асăрхама пултарать. Пожеданов ури тăрăх пĕр сехремет кăткă чупса тарăхтарчĕ, ăна çапса лапчăтмасăр выртма чăтăмлăх çитерчĕ-çитерчех вăл.

Позици умĕнче мина мĕн пирки çурăлнине гитлеровецсем ăнланаймарĕç ахăр. Траншейăран тухса тĕрĕслекен пулмарĕ. Персен-персен йăлăхрĕç пулмалла. Шăв-шав майĕпенех лăпланчĕ. Ракетăсем яма та пăрахрĕç. Анчах пĕр шуйхатнă кашкăр йăвине пуç чикмелле-ши?

Снайпер тăшмана мушка тĕлне тăвать, минер минăсем лартать, артиллерист «вăрçă туррине» калаçтарать... Вăрçăра кашниех хăйĕн ĕçне тăвать. Пурте пĕрле тăшмана парăнтарассишĕн тăрăшаççĕ. Çакна вĕсем алла-аллăн тытăнса, пĕр-пĕринпе канашласа тăваççĕ. Разведчик тăшман йăвине уйрăм заданипе каять. Ансат мар пехотинеца хăй чавнă окопра та. Анчах флангсенче — туссем, тăшман малта кăна. Разведкăра вара пур енче те тăшман. Кунта разведчик хăех аслă командир та, салтак та. Йывăр самантра никамран та ăс ыйтаймăн. Акă халь тăшман сăмси айĕнчех выртакан старшина малалла мĕн тăвасси пирки рота командирĕпе канашласа илĕччĕ те — юнашар мар çав гварди лейтенанчĕ. Совет разведчикĕсем çывăхрине тĕшмĕртеççĕ-ши гитлеровецсем? Тен, вĕсем мина шартлатса çурăлни çинчен манса та кайнă? Çук çав, хăйсен чĕлхипе мăкăр-мăкăр пуплеççĕ. Эппин, сыхă тăраççĕ, чĕрĕлле пĕр-пĕр обер-ефрейторне те çаклатаймăн. Çапах килнĕ пек чух фрицсене ĕнселесе хăвармаллах. Мур патне хăрасси-шикленесси. Старшина сумкинчен икĕ граната кăларать, хуллен çĕклесе Куракова кăтартать. Ăнланчĕ салтак старшинана. Иккĕшĕ те харăсах тăчĕç, гитлеровецсем çине траншейăна икшер граната вăркăнтарчĕç те лешсем пуçĕсене çĕкличчен пралук карта витĕр самантрах леш енне тухрĕç.

Пересси чарăнсан командир хăйĕннисене хунарпа мăльт-мăльт симĕс çутă кăтартрĕ — эппин, «чĕлхесĕрех» каялла çул тытмалла. Çутăлас умĕнхи сулхăнпа ĕнтĕркенĕ

разведчиксем минер виллине плащ-накидкăпа чĕркесе каялла таврăнчĕç.

— Ну, юрĕ. Кашни кашăках аш турамĕ лекмест. Шел, киле таврăнса юратнă хĕр ытамне çакланаймастăр. Çитменнине тата спирт пĕр тумлам та лекмест...— хак пачĕ рота командирĕ ăнăçсăр разведкăна. Паллах, пăшăрханса та, ӳпкелесе те.

## Пĕри курманнине тепри курать

Тăван ялĕнче Çеруш Шакуровран чеереххи урăх çуках. Тен, ăслăраххи те вăлах. Çавскер пĕррехинче хĕлле хура ăйăрпа Хусантан килнелле çул тытнă. Ăна хыçлă çуна кӳлнĕ улма чăпар утпа милиционер чуптарса çитнĕ. Иртсе кайма юр тарăн. Çитменнине тата хыçри ут иртме тăрсан Çеруш ăйăра урнă пек хăвалама тытăнать. Милиционерăн иртсе каяс шухăша ирĕксĕрех пăрахма тивет. Хура ăйăр юртсан улма чăпар та юртать. Малти утăмпа пырсан кайрине те утма тивет. Ун пек чухне тăлăп пĕркеннĕ милиционер тĕлĕрсех каять.

«Эх, мĕнешкел çивĕч ут! Милици аллинче кăлăх нуша курать. Хăтарас ăна çак нушаран»,— шухăш тытать хай Çеруш. Милиционер тĕлĕрсе кайнă хушăра малтан чăпар ута чĕлпĕрĕпе хăйĕн çуни хыçĕнчен кăкарать, унтан урхалăхпа чĕн тилхепене, унтан сӳсмен пăявне кинжалпа касайса ярать. Хыçлă çуна хуçи уйваррине тăрса юлать, улма чăпар вара хура ăйăртан юлми малалла вирхĕнет. Ыйхи самантрах сирĕлнĕ милиционер хыçалтан перкелесе те пăхать, анчах улма чăпара лектересрен шикленнипе кĕçех пистолетне йĕннине чикет. Кайран милиционер ăста вăрра Çеруш Шакурова шыраса тупать-тупатех.

— Сирĕн ут ман кил картинчех. Тупсан илсе кайăн, тупаймасан — айăп ан ту,— шăл йĕрет ун умĕнче Çеруш.

Чăпар ут витере те, лупас айĕнче те çук. Ăна тырă кĕлетне те кĕртсе тăратман иккен. Милиционер утне тупаймасăрах каятчĕ пулĕ, тарăхса кăшкăрса ярать:

— Казбек! Аçта эс?

Хуçи сассине илтсен чăпар ут савăнăçлăн кĕçенсе ярать. Тĕлĕнсе кайнă милиционер куçĕ умĕнчех кĕлет маччи шăлтăрмасем пулăшнипе аялалла шуçма пуçлать. Унпа пĕрле чăпар ут анать, хуçине курсан — тепре кĕçенсе ярать.

Вăрлас ăсталăха Çеруша Чутей Шакурĕ хăй вĕрентнĕ теççĕ. Хушаматне ун ятĕнчен илнĕ пулать. Тавар пуйăсĕсене çаратнăшăн, Совет влаçне хирĕçле ĕçсем тунăшăн

Чутей Шакурне тахҫанах суд туса персе вӗлернӗ, Ҫеруш Шакуров вара халӗ те пурӑнать. Айӑпласа тӗрмене хупаҫҫӗ те, чип-чиперех ларса тухать. Қаллех арӑмне пиншер тенкӗ укҫа пӗрре Владивостокран, тепре Ригӑран ярать. Пӑхатӑн — арӑмӗ тӗрмене сухари йӑтма тытӑнать.

Хӑйсен ялӗнчи Дубов пӗр вӑхӑтра райхаҫат типографийӗнче печатникре ӗҫлерӗ. Типографи валли пичетлекен ҫӗнӗ станок — «американка» турттарса килчӗҫ. Дубов хӑй ӑна пайӑн-пайӑн уйӑрчӗ. Тӗп корпусӗ пысӑках та мар — алӑкран кӗмест. Ун тавра редактор ҫӑмарта тума аптӑранӑ чӑх пекех кускалать — нимӗн те шухӑшласа кӑлараймасть.

— Алӑкне сарлакарах тутарӑр, вара кӗрӗ,— шӳтлеҫҫӗ наборщицӑсем.

— Стенине сӳтес пулать, унсӑрӑн кӗртейместӗр!— сӗнеҫҫӗ литсотрудниксем.

Ҫав вӑхӑтра редактор умне Ҫеруш Шакуровпа унӑн уйрӑлми юлташӗ Володя Мышов пычӗҫ тӑчӗҫ. Ҫерушӗ тӗреклӗ те ҫӳллӗ, Володи пӗчӗккӗ те имшеркке. «Каснӑлартнӑ шалҫапа пӳрнеске»,— танлаштарчӗ иккӗшне Зейнаб бухгалтер.

— Хамӑр ял, мӗн нушаланатӑн? Пулӑшмалла мар-и?— ыйтрӗҫ вӗсем редактортан.

— Ҫак пичетлекен станока вырнаҫтарса лартаймастпӑр. Кӗмест алӑкран...

Ҫеруш станок тавра тимлӗн пӑхса ҫаврӑнчӗ, пӳрнипе унтан-кунтан тӗкӗнкелерӗ.

— Пӗр четвӗрт. Вӑн эсир мӗн чухлӗн! Пурпӗр кӗртейместӗр. Эпир Володьӑпа иксӗмӗрех кӗртсе парӑпӑр.

— Зейнаб, кассӑра укҫа пур-и?

Ку бухгалтер тавлашмасӑр хӗлле те юр памасть, теме пула халӗ турткаланса тӑмасӑрах килӗшрӗ:

— Пур-ҫке, пур.

— Ак кунта икӗ болта сӑрӑпа хупласа хунӑ. Вӗсене сӳтсе кӑларӑпӑр та, сирӗн станокӑр тата икӗ пая уйрӑлать. Болт ключӗ парӑр-ха,— хушрӗ Ҫеруш.

Тепӗр вунӑ минутран «американка» типографире хӑйне тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнчӗ. Унтанпа урӑх курман Ҫерушпа Володьӑна тӑван ялӗнчисем. Вӗсем каланӑ тӑрӑх, вӑрҫӑ пуҫлансан темиҫе уйӑхранах Ҫеруш колхоз правленине кӑкӑр тулли орденпа пырса кӗнӗ пулать.

— Кала тӳрех: камӑн орденӗсене пӗҫертрӗн? Халех района шӑнкӑравлатӑп,— тапӑннӑ ӑна Куҫма инвалид, молотилкӑпа тырӑ ҫапнӑ чухне хӑрах аллине кастарнӑскер.

— Паллах, санӑнне мар. Фронтра пултӑм, унта пачӗҫ,— ӑнлантарнӑ лешӗ.

— Тăруках çакăн чухлĕ орден-и? Суй та виçине пĕл,— çаплах лăпланман Куçма.— Халех çар комиссарĕ патне шăнкăравласа ыйтатпăр.

Çеруш телефонпа шăнкăравласса кĕтсе тăман: колхоз правленийĕнчен те, унтан ялтан та хăвăрт тухса шăвăннă.

Тепĕр уйăхран вăл Володьăпа пĕрле чугун çул станцийĕнчи культурăпа кану паркĕн директорĕ, хамăрьял Кочергин патне çĕрле пырса кĕрет. Сĕтел çине кăлпасси касса хурать, пĕр бутылка пилĕк çăлтăрлă коньяк кăларса лартать. Карланкине унпа чӳхесен Çеруш ун-кун пăхса илет те хваттер хуçине çапла сĕнет:

— Чухăн пурăнатăн иккен... Пуйма пулăшар мар-и? Кăмăлу пулсан пĕр-пĕр магазин кĕçĕрех сан патна куçса килет...

Кочергина ĕçлесе тупман пурлăх спичка пĕрчи чухлĕ те кирлĕ мар. Ухмахла сĕнӳшĕн вăл Çеруша та, Володьăна та вĕриленсе кайсах пăскăртать. Ытлашши вĕриленни килĕшмен-и, урăх сăлтавпа-и, лешсем кил хуçи вăраниччěнех тухса кайнă. Çав кун Кочергин килĕнчен патефон тата фотоаппарат йĕрсĕр çухалаççĕ.

Çерушĕ те, Володи те — ырă çынсем. Кочергина вĕсем тăван ял çынни пулнăшăнах чаплă коньякпа хăналанă. Юрататъ çавăн пек ырă чунсене Кочергин. Патефонпа фотоаппарат çухални нимех те мар. Вĕсене каçхи хăнасем кучченеç е парне вырăнне илсе кайма пултарнă. Хуçин парнелеме ăс çитмен пулсан хăнисен хăйсен тавçăрмалла.

Япаласенчен хăшĕ шурă, хăшĕ хура — тепĕр чухне ниепле те татса калаймастăн. Пурнăçра тĕрлĕрен пулса тухать-çке-ха. Хăш-пĕр çын ăс-тăнĕпе, çивĕчлĕхĕпе аптрамасть, кăмăл-сипет енĕпе вара унран лайăххине кĕтме шанчăк сахалрах. Пĕринпе разведкăна шанчăклăн каятăн, тепринпе иккĕленсе тăратăн.

Лайăх çын-и Сергей Шакуров е лайăхах та мар-и — ун пирки вулакансем хăйсем татса паччăр. Ман шутпа, вăл нихăш калăпа та шăнăçмасть. Ана лайăх тесе мухтама та çук, начар тесе хурлама та тăхтамалла пек.

* * *

Каçхи хуралтан таврăнсан Шакуров стереотруба умĕнчи Пожеданов патне хăюллăн пырса тăчĕ.

— Ыйтма юрать-и: мĕн сăнатăр, юлташ командир? Удрай кӳлли курăнмасть-и? Леререх Мăн Удрай юхан шыв хăйĕн çыранĕсене çăвать...

— Юхан шывне куç тăр кăнтăрла кăна тĕшмĕртет.

Кӳлли те уҫӑмлӑ курӑнмасть, ун тӗлӗнче халӗ тӗтре каркаланнӑ...— шухӑшлӑн хуравларӗ взвод командирӗ.— Эсир мӗн те пулин каласшӑн-им?

Шакуров пуҫне командир хӑлхи патнех ҫывӑхартрӗ те пӑшӑлтатма тытӑнчӗ:

— Кӳлӗ ку енче хӑва тӗммисем хыҫӗнче ҫӑл тапса тӑрать. Фашистсем ир те, каҫ та шыв ӑсма пӗрерӗн-иккӗшерӗн унта ҫӳреҫҫӗ. Ҫӑл шывӗ ӗҫме юратаканнисенчен пӗрне кунта сӗтӗрсе килмелле мар-ши?— сассине татах та шӑплантарчӗ Шакуров.

— Епле майпа?

— Фашистсен ку участокра фронт талккӑшпех мар. Хурал посчӗсем ҫӗрле кӑна унта-кунта тӑрataҫҫӗ. Ҫӑлне хӑйне куҫса ҫӳрекен патруль кӑна хуралласть. Теветкелленсе пӑхар мар-и?

Шакуров калани Пожеданова та кӑсӑклантарса ячӗ.

— Взводра разведкӑна кайма килӗшекенсем тупӑнӗҫ-ши?

Юлташсӑр ҫын туратсӑр йывӑҫ пек. Шакуров та кӑмӑлне килекен юлташ тупрӗ: ӑна Лилипутов килӗшет. Иккӗш пӗр взводра пулни ытла та лайӑх. Вӗсем Юманайра утӑ ҫулнӑ чухнех ҫывӑхланчӗҫ. Шанчӑклӑ юлташ, унпа разведкӑна кайма пулатех.

— Фронтӑн ку участокне эпир Лилипутовпа иксӗмӗр темиҫе кун сӑнатпӑр ӗнтӗ. Вӑл хирӗҫ пулас ҫук,— хуравларӗ Шакуров взводнӑйне.

— Тупата-и? Анчах ҫакна пӗлес пулать: пӗрре сехӗрлентернӗ курак тӗмрен те пӑрӑнать. Тӑшман та халь питӗ сыхӑ тӑрать. «Чӗлхе» тытас вырӑнне хӑвӑр ҫакланмӑр-и?

— Чун иллисен аллине ҫаклансан та чӗрӗлле ҫакланмастпӑр. Гранатӑсем ҫителӗклӗ илӗпӗр. Иртенпех ҫумӑр лӳшкерӗ. Эппин, каҫ тӗтреллӗ пулать. Значӑт, ҫанталӑк пирӗн майлӑ...

— Чӑнах та теветкелленсе пӑхма юрать пек,— килӗшрӗ рота командирӗ Пожеданов хӑйӗн салтакӗн сӗнӗвӗ ҫинчен каласа парсан.

Шакуровпа Лилипутов сумкисене гранатӑсем хучӗҫ, фашистсен йывӑҫ ещӗкри пӗр минине, хамӑр саперсем парнеленине, хӑйсемпе пӗрле илчӗҫ.

— Тур пулӑшсан медаллӗ пулӑпӑр, тур пулӑшмасан — Удрай хӗрринех выртса юлӑпӑр...— хӗвел тухӑҫнелле пӑхса сӑх сӑхрӗ Лилипутов.

— Этем иккӗ вилмест, пӗр вилӗмрен никам та хӑтӑлаймасть...— пуҫне ырӑ урхамахла ухса илчӗ Шакуров.

Çапла тухса кайрĕç çĕрлехи çула икĕ хăюçах.

Тĕтре хÿттипе хайхи хăвалăха чиперех çитсе вырнаçрĕç. Тавралăха тимлĕн сăнанă хыççăн фашистсем çÿрекен утма çул çине хăйсен кучченеçне — йывăç ещĕкри минăна майласа вырнаçтарчĕç.

Патруль килни-кайни пачах курăнмарĕ. Ахăртнех, гитлеровецсене çĕрле шыв кирлĕ мар: çăл куç патне никам та ура ярса пусмарĕ. Фашист та тирпейлĕхе юратать иккен. Тĕмескен тăмлă тăпри ăшне хурçă труба чиксе лартнă та, шыв ун витĕр юхса тăрать. Тултарма меллĕ пултăр тесе ура пусас вырăна икĕ кĕске хăма пăрахнă.

Çĕр хута разведчиксем иккĕшĕ те хытах ĕнтĕркерĕç. Ашăнмалла чикаркка мăкăрлантарасчĕ — хăйсене асăрхасран шикленеççĕ. Ир енне кăна вĕсен серепине шыв ăсма каякан мар, виçĕ çынлă патруль çакланчĕ. Кĕрĕслетсе çурăлнă мина иккĕшне урисене тăсса хумаллах амантрĕ, виççĕмĕшĕ пĕççинчен çăмăллăн кăна суранланнă. Ана та кăшкăрса шав тума памарĕç — çăварне çĕтĕк ластăкĕпе самантрах шанчăклăн пăкăларĕç. Унпа кĕрмешнĕ хушăра тул çутăлсах кайрĕ. Халĕ ĕнтĕ нейтраллă зона урлă Така мăйракине таврăнаймастăн. Çав вăхăтрах çухалнă гитлеровецсене шырама килессине те кĕтсех тăр.

Кÿлĕ тепĕр енче çăра хăмăш урхамах пуçĕ çÿллĕшех. Çавăнта сĕтĕрсе кайрĕç разведчиксем миххе чикнĕ «чĕлхене».

— Салтса пăх-ха, вилсе кайман-и? — хушрĕ Шакуров юлташне.

— Çук, чиперех сывлать. Мăкăртатса тем каласшăн. Çăварĕнчи пăкка кăларма ыйтать ахăр...

— Çăварне уçсан кăшкăрма тытăнĕ...

— Çук, кăшкăрмĕ. Тыткăна лекни хăйĕн пурнăçне çăлса хăварни пулать-çке... Çапăçура унта момент леш тĕнчене ăсанатăн...

Шакуров калани тĕрĕсех пулчĕ: гитлеровец кунĕпе хуп турттарса та пĕрре кăшкăрмарĕ. Михĕре, лапчăтнă хăмăш çинче, килĕнчи койка çинчи мар та, мĕнех тăвас тетĕн, чăткаларĕ.

Тĕттĕм пулсанах разведчиксем «чĕлхене» батальон штабне илсе çитерчĕç. Штаб начальникĕ Воронков капитан кулса ячĕ:

— Мĕн вăл аллине матьтисем çинчен пĕрре те илмест? Шыçнă-ши-мĕн?

— Э, çук! Момент калатăп: эпир шăлаварĕн тÿмисене кинжалпа касрăмăр. Йĕмĕ анса кайса чăлханса ÿкесрен сыхланать...

— Ну и пултаруллă эсир!— тепĕр хут ахăлтатсах кулчĕ капитан.

«Чĕлхе» каланинчен çакă паллă пулчĕ: фронтăн ку участокĕнче тăшман наступление хатĕрленни сисĕнмест. «Эппин, çарсен пĕр пайне кирлĕ çĕре кунтан куçарса кайма та пулать»,— шутларĕç пысăк штабрисем.

Шакурова урăххи тĕлĕнтерчĕ:

— Рота командирĕ те Воронков, штаб начальникĕ те Воронков... Мĕнле ăнланмалла?

— Пиччĕшĕпе шăллĕ вĕсем. Штабри — Константин Петрович, пирĕн ротăри — Геннадий Петрович... Пĕри — капитан, тепри — лейтенант...— ăнлантарчĕ пурне те пĕлсе тăракан Лилипутов.

Разведкăра Сергей Шакуров урине турат тăрăннă. Çакăн пирки вăл никама та шарламарĕ, суран хăех тӳрленессе шанчĕ. Малтан сурантан юн юхатчĕ, унтан пӳрленсе ларчĕ, ыратса асаплантарма пуçларĕ. Тӳсеймерĕ Шакуров, урине Лилипутова кăтартрĕ.

— Ай-вай, апла юрать-и? Мĕншĕн халиччен кăтартмастăн?— хăтăрса тăкрĕ ăна Лилипутов.

Разведчика сиплеме вăл сурăх çăвĕ санвзводра кăна тупрĕ. Çав çăвран, çур кашăк тăвартан тата вĕтетнĕ суханран маç туса хатĕрлерĕ. Çав маçăн пĕр пайне суран çине хурса меллĕн çыхрĕ.

— Çӳрех çапла!— пуç сулчĕ вăл Шакурова.

Разведчик темиçе сехетренех Лилипутов патне пычĕ.

— Салтмалла мар-и? Халичченхинчен те хытăрах сурать...— найкăшма тытăнчĕ хайхискер.

— Ак салттарăп сана чĕн пиçиххипе! Вăт ача-пăча! Сан суранунтан тасамарлăх тухать, çавăнпа ыратать...

Лилипутов çав маçпа Шакуров суранне виçĕ хутчен çыхрĕ. Тăваттăмĕш хут çыхма кирлĕ мар пулчĕ: суранĕ тӳрленчĕ, ури ыратма пăрахрĕ.

Дивизи хаçатĕнче «Пĕри курманнине тепри курать» ятпа взвод разведчикĕсем Шакуровпа Лилипутов çинчен корреспонденци çапăнса тухрĕ. «Рядовой М. Каримов» тесе алă пуснă. Хăйсен взводĕнчи Мишша ĕнтĕ. Пĕр те пĕр хăнăхсан йытта шăмă кăшлама пăрахтараймастăн çав. Каримов журналиста та хаçата çырма пăрахтарас шутпа тимĕр решетке хыçне лартнă — пурпĕр каллех çырма хăтланать. Район хаçачĕн редакцийĕнче яваплă секретарьте ĕçленĕ чухне вăл милици пуçлăхне тăрă шыв çине кăларать — темиçе хĕрарăмпа çыхланса пурăнни çинчен фельетон пичетлет. Тепĕр темиçе кунран ун хваттерне пырса ухтараççĕ те икĕ килограмм типографи шрифчĕ тупаççĕ.

Вуннăмĕш кегель. Усă курса юрăхсăра тухни. Гарт эппин. Вăрттăн типографи уçма хатĕрленнĕ тесе Каримова наччасрах Владимир тĕрмине ăсатаççĕ. Ара, коммунизм çулĕпе малалла кайнăçемĕн класс кĕрешĕвĕ вăйланать-çке-ха. Çакна май Каримов йышшисене ирĕкре çӳреме юраман.

* * *

Кириллов кĕçĕн сержант çынпа пит хавасах пуплемест. Тепĕр чухне кирлĕ сăмах калама та çăвар уçмасть. Вăл фронта иккĕмĕш хут киличчен запас полкра пулчĕ-ха ку. Талăклăх наряд разводне полк командирĕ яланхи пекех хăй пынăччĕ. Инструктаж хыççăн духовой оркестр «Славянкăпа сывпуллашни» марш каланă май çĕнĕ караул команди строй утăмĕпе полковник умĕнчен пĕрре те, иккĕ те иртет.

— Тепĕр хут! Тепĕр хут!— хушать кăмăлсăррăн полк командирĕ. Караул начальникĕ хыçĕнчи кĕçĕн командирсенчен пĕри строй утăмĕпе пыманни, урине те лайăххăн çĕклесе пусманни тарăхтарса янă иккен ăна.

— Унран мĕн кĕтмелли... Уксахскер ку кĕçĕн сержант. Сипленсе çитмесĕрех госпитальтен тухса килнĕ...— пĕлтерчĕ полковника развода батальонтан килнĕ офицер. Сăлтавĕ пирки Семен Кириллов хăй пурпĕр нимĕн те шарламарĕ. Полковник те çилленчĕ, те вăтанчĕ, алă сулчĕ те разводран пăрахса кайрĕ.

Кĕçĕн сержантăн суранланнă ури халĕ ун чухнехи пекех ыратмасть. Пушă вăхăт килсе тухсанах вăл умне хулăн тетрадь кăларса хурать, пусăрăнса ларсах унта кăранташпа тем кукалет. Те кун кĕнеки çырать, те сăвă-калав хайлать. Взводрисем икĕ хут разведкăна кайса килсен тепĕр кунах алăран алла кĕçĕн сержант çырнă сăвă çӳреме тытăнчĕ. Акă çав сăвă.

**Паттăр взвод юрри**

Сӳнейрĕ çăлтăр хыççăн çăлтăр,
Тавралăхра тĕтре кăна.
Тăшман ан систĕрех, ан куртăр —
Çул тытрĕ взвод разведкăна.

Кашни салтак чăнах та паттăр,
Пирĕн ертӳçĕ — Пăшатан.
Тăшманăн ĕмĕтне вăл таттăр,
Тĕп пултăр йăх çĕлен-калтан.

Мулкач пек шиклĕ чун пулмашкăн
Эпир пĕри те тивĕç мар.

Пĕтмешкĕн, тамăкра çунмашкăн
Тивет сана, усал тăшман.

Фашист йăви, сывлаймăн ыррăн,
Пиртен кĕтсех тăр тамаша.
Хастарлă взводăм пултăр сывă!
Телей çӳретĕр юнашар!

Каярахпа çакă паллă пулчĕ: Пожеданов взводĕнчи салтаксем пурте ку сăвва пăхмасăрах калама пĕлеççĕ иккен. Тар шăршине пĕрле шăршланă кĕçĕн командир çырнă-çекеха ăна!

## АТĂЛА АЛТĂР ШЫВ ТА ПУЛĂШАТЬ

### Пĕри улшăнать, тепри çаплипех юлать

Оборонăри салтак пурнăçĕ май мар лайăх. Построа тăнă чухне тем тĕрлĕ тутлă шухăшпа йăпанма пулать. Лилипутов ăсĕ-тăнĕ вара час-часах асаилӳсен тыткăнне çакланать. Хăйĕн çинчен аса илмелли нимех те çук, юлташĕсен ырă ĕçĕсем куç умне чун-чĕре хĕпĕртемелле туха-туха тăраççĕ. Ав Петр Даниловпа Гриша Легкоступов Юманайри тимĕрçĕ лаççинче колхозниксен çурлисене мĕн чухлĕ шăлларĕç! Колхозăн кивĕ тракторне хута янă хыççăн икĕ жнейкăна ырă сехет пек ĕçлемелле юсарĕç. Çак ĕçсемшĕн салтаксем те, командир та колхозран тӳлев ыйтман, правлени председателĕ хăй виçĕ пăт хура тул кĕрпи çырса пачĕ.

— Çапаканран тарма хушнă, параканран илме хушнă. Паянтан каçхи апата хура тул пăтти те пĕçер. Кам çулассипе нормăна тултарнă — çавна хура тул пăтти çитер, кам тултарайман — çавă ун шăршипе çырлахтăр,— приказ панăччĕ ун чухне взводнăй Лилипутова.

Пĕр кунхине вăрманти уçланкăра взвод командирне ялĕçтăвком председателĕ Филимонов шыраса тупрĕ. Ăна ялта куç хыçĕнче пурте «Пĕрех хут» теççĕ. Вăл пĕр-пĕр ыйтăва ĕçтăвкомра «пĕрех хут» сӳтсе явать, ял çыннисене ĕçтăвком çуртне «пĕрех хут» кĕрсе тухма чĕнет, сулăм укçине «пĕрех хут» тӳлеме хистет. Командирпа вăл вутă касса турттарма воскресник иртересси çинчен сăмах пуçарчĕ.

— Аптăрамалла ку пурнăçпа: вăрман хĕрринче пурăнатпăр, вутăсăр ăшталанатпăр. Анланăр, командир юлташ, хам пирки каламастăп. Салтак арăмĕсем, ваттисем пирки

сăмах пырать. Вĕсен те пурăнас килет. Такăнмасăр ӳкесшĕн мар, ватăлмасăр вилесшĕн мар. Пĕрех хут эсир пулăшăрччĕ пире.

— Ман енчен хирĕçлӳ çук,— ура çине тăчĕ командир.— Взводпа канашласа пăхас пулать.

— Ку ыйтупа мĕн канашламалли... Вăхăчĕ кăна тупăнтăр,— терĕ вашават Легкоступов.

Ку ĕç валли те утă çулма юрăхсăр кун тупăнчĕ-тупăнчех. Çумăр ӳккелесех тăнине пăхмасăр взвод ял çывăхĕнчи пĕр кварталта хĕрĕх кубометр ытла вутă касса хатĕрлерĕ. Чăн ĕнтĕ, ялĕçтăвком ку ĕçшĕн кĕрпе те, çĕр улми те памарĕ, взвод пурпĕр хăйĕн ĕçĕпе кăмăллă юлчĕ.

Тĕлĕнмелле çын çав Легкоступов. Йăрккарĕ те йăрккарĕ пĕр вăхăтра Лилипутов патне. Тем тесен те çăрарах çăпалашăн мар. Таçтан пĕр пулштух сăмакун та тупса килчĕ. Илья тутанса пăханçи кăна турĕ, Гриша хăй вара сăйланмаллипех сăйланчĕ. Киккирикне хĕретнĕскер çав çăмăлçах кĕрет каять Таисия Петровна выртакан чăлана. Кĕçех кĕрĕс-мерĕс персе анать чикĕсĕр хăюллă салтак çӳллĕ кравать çинчен.

— Фарисей эсĕ! Каснă-лартнă фарисей...— тарăхсах ятланă ăна Лилипутов çавăн хыççăн.— Хăвна эсĕ ырă кăмăллă пек кăтартатăн, чăннипе вара Турра хирĕç пыратăн, ясарланса çӳретĕн. Çавăншăн пăсăрлантарнă та санашкал çынсене пире çăлакан Иисус Христос.

Легкоступов çамки çине хăй мĕн тери хăюллă пулнине асăнмалăх кăвак мăкăль тăрса юлать. Çав мăкăль историне хăй никама та каласа памарĕ, Таисия Петровна та шарламасăрах ирттерчĕ пулас. Ку ар çыннăн унчченхи юратăвĕн историйĕсене вара пĕтĕм взвод пĕлет. Пытармасăр каласан, Владимир тĕрмине вăл икĕ хут çакланнă. Малтан ăна, пĕлетпĕр ĕнтĕ, темиçе арăмпа пурăннăшăн хупнă. Пĕрремĕш хут ларса тухсан пулăçсен эртелĕнче унченхи пекех тетел сĕтĕрме тытăннă. Пĕр кунхине унăн кӳрши Танĕле юхан шыв хĕррине икĕ çамрăк хĕре — Марьепе Тарьене — ертсе пынă, кимĕпе ярăнтарма ыйтнă. Юхан шыв тăрăх пĕрер сехет ярăнсан çыранăн тепĕр енне тухнă, тăваттăн пĕрле чиперех юрлакаласа çӳренĕ, унтан икĕ мăшăр ик еннелле уйрăлса кайнă.

Кимĕ патне чи малтан Гриша тата унпа пĕрле çӳренĕ хĕр таврăнаççĕ. Кимĕ хуçи асар-писер шăртланса кайнă Марьене ӳкĕнĕçлĕ сасăпа каçарма ӳкĕтленĕ.

— Таса хĕр хăйне пусмăрлама тăнăшăн каçармастех. Тӳрех прокурор патне каятăп. Каччă илме килĕшсен тепĕр сăмахчĕ хăть... Тĕрмере ларнă çынран ыррине ан кĕт çав...

Гришăна уйрăмах юлашки сăмахсем тарăхтарса янă. Вăл хĕре тапкă-çупкă çитеретчех, анчах лешĕ шыва вашт чăмнă та çиеле чылаях аякра сиксе тухнă, тепĕр çыраналла хăвăрт-хăвăрт ишсе кайнă

— Марье ăçта?— ыйтнă Танĕлепе Тарье.

— Суккăр-им? Ав тепĕр çырана ишсе тухрĕ. Кĕпи-йĕмĕ йĕпе, килне мĕнпе каять пуль?

Мĕншĕн ун пек пулса тухнине ăнланмасăр Танĕлепе Тарье пĕр-пĕрин çине ыйтуллăн пăхса илнĕ. Вĕсем Гришăпа Марье хушшинче мĕн пулса иртнине кайран судра пĕлнĕ. Унта Легкоступова иккĕмĕш хут тĕрмене хупмалла тунă.

Вăл усал ĕç тума пултарасса ĕненес те килмест. Мăшăр кăвак куçĕ кулса кăна тăрать. Сăн-пичĕ çутă та кăмăллă. Çынпа калаçнă чухне çăра куç харшине тĕлĕннĕ чухнехи пек тек-текех сиктеркелесе илет. Юманайра ăна фермăра сурăх пăхакан шатра питлĕ Лукерья патне хваттере кĕртнĕччĕ. Лукерья ăна хăймапа та тăварукпа сăйлама пуçланăччĕ ĕнтĕ, пăрça çăнăхĕнчен пĕлĕм те пĕçерсе панăччĕ, анчах Гришăна тем çитмен — тепĕр урамри Катерина патне куçать каять. Лукерья ăна фронтра вилнĕ упăшкин пустав шăлаварне тăхăнтарнăччĕ. Иçмасса, ăна та хывса хăварман. Мĕнешкел лайăх шăлавар! Хыçалти лармалли вырăна тата чĕркуççи тĕлне çемçе сăран пустарнă. Сăранĕ тĕссĕрленнĕ ĕнтĕ, çапах аптăрамасть. Тепĕр тесен, унашкал шăлавар ялта урăх никамăн та çук.

Тен, Легкоступова çие тăхăнмаллирен мĕн те пулин куçĕпе хĕм сапакан Катеринăран та çакланатчĕ, анчах пичĕ çинче пăрça çапнă Лукерья шыв юххине тепĕр май çавăрса ячĕ. Пĕр кунхине, салтаксем каçхи апат хыççăн хаçат вуланине итлесе ларнă чухне, Лукерья сулмаклă патакпа тӳрех командир умне пырса тăчĕ.

— Сан взводунта дисциплина пур-и е çук-и? Çуках пулсан сана мĕншĕн командира лартнă?— ыйтрĕ вăл хаяр сасăпа.

— Ăнланаймарăм-ха, Лукерья аппа. Мĕн пирки эсир?— ларнă çĕртен яшт сиксе тăчĕ командир.

— Григорий Легкоступов антихрист пирки калатăп. Пӳрт ум карти тайăлса кайнă, вăл пур — ман патăмран тухрĕ те шăвăнчĕ. Намăссăр, кĕççе пит. Мана ĕмĕр пĕрле пурăнăпăр тесе улталарĕ. Юлташ командир, кала эс ăна, кĕçĕрех ман пата таврăнтăр, картана та юсаса патăр. Унсăрăн ак эп ăна...

Лукерья патакĕпе хăмсаруллăн юнаса илчĕ. Салтаксем мĕн çинчен интересленсе вуланине те манса кайрĕç, пĕç

çапса ахăраççĕ. Чĕркуççи тĕлĕнчен хуçлатнă урисене икĕ аллипе ыталаса типĕ курăк çинче ларакан Легкоступов кăна тĕршĕннĕçемĕн тĕршĕнет. Лукерья аллинчи туратлă патак ача ваййи маррине пушкарать ахăр.

— Гриша, ан кутăнлаш, хам патах таврăн,— сассине тăруках улăштарчĕ çак хĕрарăм.

Лукерья аппана йăпаткаласа ăсатса ярсан командир политикăлла ĕç планне тăруках улăштарчĕ. Пулас фронтовиксен — Тăван çĕр-шыва кăкăрпа хӳтĕлес çынсен — хăйсене тылра мĕнле тытасси çинчен витĕмлĕ калаçу ирттерчĕ вăл.

— Ăнлантăр-и?— ыйтрĕ юлашкинчен.

— Ăнлантăмăр...— пуриншĕн те хуравларĕ Легкоступов.

— Мĕн ăнлантăн?

— Хама тута паракансен шутне иккĕрен ирттерместĕп. Хальхисемпех çырлахатăп. Унсăрăн каллех суда парĕç тата...

Ахăл-ахăл кулса ячĕç салтаксем. Кула-кулах хваттерсем тăрăх саланчĕç. Ыран каллех утă çулмалла вĕсен.

— Мур çанталăкĕ, ыран та уяр пулать ахăр... Витререн тăкнă пек ислетесчĕ пĕрре! Пĕрер кун каннă пулăттăмăр. Ик майраран пĕри мунча хутса кĕртетчех,—мăкăртатса пычĕ Гриша хăй тĕллĕн Лукерйăн урам вĕçĕнчи çурчĕ еннелле сĕнккенĕ май.

Тепĕр кун ирхи апат çинĕ чухне вăл кăлт тĕкет Исидора.

— Эсĕ илтмен-и, Хура тинĕсре радио урлă, çынсăрах çӳретекен катерсем пур тет. Мĕнле лайăх! Çынсăрах çулакан çавасем мĕншĕн ку таранччен те шухăшласа кăларман-ха? Эпĕ-и? Эпĕ çав çавана Лукерья çумĕнчен тăмасăр команда хыççăн команда парăттăм, курăка тĕпĕнченех яп-яка кастарăттăм...

Исидор илтмĕше перет. Ăна радиопа çӳретекен катер та, çынсăрах çулакан çава та пачах кăсăклантармаççĕ. Легкоступова хăйне те кăмăлламасть Исидор. Кашни юбка хыççăн сĕтĕрĕннĕшĕн мар, сăн-пичĕпе хитре пулнăшăн. Хăй вăл сикекен хĕсĕк куçлă, пичĕ юр хырмалли йывăç кĕреçе пек сарлака. Пит çăмартисем çине çуралнă чухнех мăкăнь вăррисем евĕр хура пăнчăсем тухса ларнă. Çапла, кăмăла килмелли сăнпа çуралайман вăл, çакăншăн ашшĕ-амăшне çеç мар, хитре сăнлă кашни çыннах айăпа хурать. Çав çын ăна тивĕç хитрелĕхе те туртса илнĕн туйăнать пулмалла. Ăнланмалла сăлтавсемпе Исидор илемлĕ çынна чăтма пултараймасть. Тепĕр тесен ун кăмăлне килекенни взводра никам та çук.

Кукăр алăллисен шутне Исидора кăлăхах кĕртеççĕ. Çын япалине ку таранччен вăл пӳрнепе те тĕкĕнмен. Колхоз пурлăхĕ пирки вара урăхларах шутлать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхри никамăн та мар. Унăн хуçи çук. Мĕн чухлĕ чăх-чĕп ку колхоз ферминче. Выльăх кăшманĕ уйне кайнă чухне Исидор юри чарăнса пăхса тăчĕ. Таисия Петровна хĕрĕсем Ленăпа Рита пăхаççĕ вĕсене.

— Виталий, фермăра миçе чăх, миçе автан пулнине Лена пĕлет-ши е Рита-ши? Ман шутпа, нихăшĕ те тĕплĕн шута илмен. Вăн çумăр ӳккелет, çĕр тĕттĕм пулать. Иксĕмĕрĕн кайса шутламалла мар-ши? Автан тукмакĕнчен лайăхрах çыртмалли тупаймастăн. Пĕр кăкшăм «ан шарли» пур ман,— пăшăлтатрĕ вăл Бражкин хăлхинчен каçхи тĕрĕслев хыççăн.

— Пымастăп. Ампă. Тек хăтланмастăп ун пек ĕçпе,— татăклăн хуравларĕ Бражкин.— Сана та чарăнма сĕнетĕп. Шутласа пăхсамччĕ: взводнăй пĕлсен мĕн калĕ?

Хайсенчен инçех те мар Кураков тăнине асăрхасан, иккĕшĕ ик еннелле уйрăлса кайрĕç. Исидор хăлăхсăр Виталие тепре те чĕнсе пăхрĕ, лешĕ пурпĕр килĕшмерĕ. Эрех тесен шыва сикме те, вута кĕме те хатĕрскере хальхинче «ан шарли» пачах илĕртмерĕ.

Чăх-чĕп ферминчи «операцие» унăн Ястребовпа пĕрле кайма тиврĕ.

— Чăх-чĕп çĕрле вуçех курмасть. Майне пăр та миххе хур, хăвăрт пăр та миххе чик,— вĕрентсе пычĕ ăна çул çинче Исидор.

Чăх-чĕп вити çывăхĕнчи мăянлăха йăпшăнса кĕрсе выртрĕç. Ферма хуралçи хăрах куç Уçăп вите алăкĕ умĕнче тăрать, чĕлĕмне паклаттарать те паклаттарать. Чĕлĕмĕнчине туртса пĕтерчĕ, лупасхыçтрест махоркине тепре тултарчĕ, каллех тĕтĕм мăкăрлантара пуçларĕ.

Айĕнчи йĕпе мăянран сулхăн çапнăран Исидор тепĕр аякĕ çинелле çаврăнса выртать, хуралçăна куç илми сăнать. Пуçĕнче пăшăрхантаракан шухăшсем вĕлтлетеççĕ. Виталин те сехри хăпнă. Каларăм — итлемерĕ. Те взводнăйран хăрать, те урăх сăлтав пур. Малтан ăна ним вырăнне те картмастчĕç. Çук, взводрисем Владимир хулинчех ун çине урăхла пăхма пуçларĕç ахăр. Командăран мĕншĕн ыттисенчен пысăкрах паек илес мар-ха? Вăл килĕшмерĕ. Тĕллевĕ паллă: хăйне хисеплеттерес килет явăлăн. Авторитет кирлĕ ăна. Ку апла пултăр. Юманайсем мĕншĕн хисепе хураççĕ-ши ăна? Çакна вара пачах ăнланма йывăр. Бригадир хĕрне вăрманта шыраса çӳренĕшĕн-ши? Эрех вăррисене суд тунăшăн-ши? Воскресника выльăх кăшманĕ

уйёнче ирттернёрен-ши? Унта вăл кăна мар, пĕтĕм взвод ĕçлерĕ. Тăватă салтак амăшне Фекла аппана вăрмантан вутă кÿрсе панăшăн-и? Командир хушнă çеç. Вуттине Коновалов ездовой турттарнă. Командира хисепе хумалли сăлтавсем пачах курмасть Исиодор. Çук япала курăнмасть çав ĕнтĕ.

Исиодорăн вĕçрен вĕçе сыпăнса пыракан шухăшĕсем хуралçă чĕлĕмрен кĕл шаккаса кăларма пуçласан татăлчĕç. Тасатнă чĕлĕмне Уçăп кĕсйине чикрĕ, пайтах вăхăт унталла-кунталла пăхса тăчĕ, тавраригсас-хурана тăнларĕ. Çаплах васкамасăр ферма çуртне кĕчĕ, кăштахран унта лампа çути сÿнчĕ. Уçăп кăштах канса илме шутларĕ пулас.

Вăхăт нумай иртрĕ-и, сахал-и, Исиодор мăянлăхран ÿпĕнсе тухрĕ. Ун хыçĕнчен Митрофан тĕршĕнсе хускалчĕ. Темиçе утăм çеç тума ĕлкĕрчĕç, вĕсем çине сасартăк ик енчен ик мĕлке сиксе ÿкрĕç. Аллисене хыçалалла пăрса лартма хăтланакана сарлака хул-çурăмлă Исиодор самантрах хăй айне тĕшĕрсе хучĕ, анчах сиссе те ĕлкĕреймерĕ — урисем сывлăшра вĕлтлетсе илчĕç те, каска евĕр кĕлетки пуç урлă çаврăнса такам айне лаш! кĕрсе ÿкрĕ. Ик чĕркуççи ун кăкăрне арман чулĕ пек хĕссе хучĕ. Халĕ Исиодора упа пек вăйлă пулни те пулăшаймарĕ. Унăн аллисене хыçалалла çавăрса çыхрĕç-çыхрĕçех.

— Халĕ акă тăр, отчет пама взводнăй патне кайăпăр!

Ку вăл Кураков пулнине вăрра тухнă Поганников сасăранах палласа илчĕ. Ястребов аллисене пăрса çыхаканĕ Легкоступов пулчĕ.

Вăрличченех çакланнă вăрăсем яла кĕреспе тăп чарăнчĕç.

— Çакăнтах персе вĕлерĕр, взводнăй патне илсе ан кайăр,— чĕркуçленсе ларчĕ Ястребов.

— Мĕн ухмахланатăн? Эпир вăрра кайман-çке,— хăтăрса тăкрĕ юлташне Поганников.— Фермăна епле хураллланине тĕрĕслеме тухсаччĕ.

— Çаплах тейĕпĕр. Анчах эсир ăçта, мĕн тума кайнине взводнăй хăй татса парĕ. Кайрăмăр,— чĕркуççипе кутĕнчен тĕкрĕ Исиодора сулмак чăмăрлă Легкоступов.

— Ярăр пире. Астăвăр: фронта пĕрле каймалла пулать,— хăмсарса илчĕ Поганников.

— Ярăр мана. Урăх нихçан та хамăн маррине тĕкĕнместĕп. Сăмаха çирĕплетме мачча каштине картатăп,— тархаслать Ястребов.

Кураковпа Легкоступов пĕр-пĕрин çине ыйтуллăн пăхса илеççĕ.

— Мачча каштине ан тĕкĕн,— чăтаймасăр кулса ярать Кураков.— Тупа ту, вара каçаратпăр та, яратпăр та.

— Эпĕ тепре вăрра каяс пулсан фронтра мана пĕрремĕш пуля аманттăр, иккĕмĕш пуля леш тĕнчене ăсаттăр. Эсир мана ырă тунине манас пулсан пĕрремĕш снаряд вĕлертĕр, иккĕмĕш снаряд варса хутăр.

— Вăт ку тупа!— тĕлĕнчĕ Легкоступов.— Каях хăвăн çулупа.

Тинĕс тĕввипе туртса çыхнă пиçиххине Легкоступов аранах салтса илсен Ястребов аллисене силлекелерĕ те хваттерĕ еннелле сулланчĕ.

— Мана та ярăр, малашне çыннăнне тĕкĕнмĕп!

— Колхозăннипе мĕн тăвăн вара?

Поганников шухăша кайнă пек пулчĕ, çав хушăра ун куçĕ умне взводнăй тухса тăчĕ. Çар трибуналне парас тейĕ вăл.

— Ну юрĕ, колхозăнне те тĕкĕнмĕп. Тупа тăватăп.

— Тупа туни сахал. Çĕр çырт, унсăрăн ĕненместпĕр,— хушрĕ çирĕппĕн Легкоступов.

Исиодорăн хушнине итлемеллех пулчĕ. Гришăна чарсах акă мĕн ыйтрĕ:

— Пĕлместĕн-и: Юманайра стрихнин тупăнмасть-ши? Эпĕ çав эмеле Витюк Бражкин чейĕ çине сапса парăттăм. Кĕçĕр иксĕмĕре вăл сутнă. Ун хыççăн Кураковпа Пожеданова та тирпейлĕттĕм...

Тискертен те тискер сăмахсем илтсен Легкоступов юпа пек хытса кайрĕ. Куçĕпе Исиодор çине çисе ярасла пăхрĕ. Унăн махорка тĕтĕмĕпе саралнă шăлĕсем витĕр çилĕллĕ сăмахсем сăрхăнса тухрĕç:

— Эпĕ санпа çын вырăнне хурса калаçас пулсан, фронтра мана пĕрремĕш пуля аманттăр, иккĕмĕш пуля леш тĕнчене ăсаттăр.

Ниепле те ăнланса пĕтерме çук çав Поганникова.

«Чĕмсĕр янавар» ятпа пĕрлех ăна взводра теприсем «Чĕмсĕр чĕрĕп» тенине илтме пулать. Салтаксемпе питех калаçманран, вĕсемпе питех хутшăнманран тата шăртне чĕрĕпле пĕрмай тăратнăран ĕнтĕ. Ун çӳçне май кăна шăлса тăмалла, унсăрăн хăвăрт вĕриленсе каять, вут çинчи çатмана сивĕ шыв янă пек чашкăрма тытăнать. Отделени командирĕ салтаксен хĕç-пăшалне тĕрĕсленĕ чухне ун автоматĕн кĕпçи хăрăмлă труба пекех тутăхма пуçланине асăрхарĕ, тăхтаса тăмасăр тасатма хушрĕ. Командир пăрăнсанах ăна ятлама пикенчĕ Поганников:

— Çӳрет ахалех ĕççĕр аптраса... Хăйĕн арăмĕнне кайса тĕрĕслесчĕ. Пĕрре уж лекĕ-ха çавах, ытла ан сиктĕр...

— Эсĕ мĕн, Исиодор тете, пĕрмай ужлататăн та ужлататăн, ужсем — хурăн пуçлă çĕленсем чĕрӳ тĕпне кĕрселарман пулĕ те?— тăрăхлама пăхрĕ ăна пĕррехинче сăмахшăн кивçене кайман Романухин.

— Хăв уж пит яка калаçатним?—çиçĕмле çиçтерчĕ куçне Поганников.— Лекетĕн-ха пĕрре...

Шӳтлĕ калаçу хăвăрт татăлчĕ, анчах Поганников çавăнтанпа Романухина ахалех хăлхине тăратнă чăхăмçă лаша пек шăмарса çӳрет. Иван Иванович çакна курса цыгана тăванла асăрхаттарчĕ:

— Алексă, ан çыхлан çав таса мар чĕрĕппе. Ун пек сыпран тем те кĕтме пулать...

Чăнах та, кирек кам мĕн те пулин калани килĕшмест тĕк — Поганников çиллине шăнараймасăр ăна çавăнтах çапса пăрахма хатĕр. Мĕншĕн унашкал-ши Исиодор? Тĕлĕнмелли çук: ашшĕ-амăшĕ çапла пăхса ӳстернĕ. Йышлă ача-пăчаллă çемьере пĕртен-пĕр ывăл пулнăран ăна ачашланă, çупăрланă, ун кăмăлне пур енĕпе те тивĕçтерме тăрăшнă. Тутлине ăна çитернĕ, пахине ăна панă. Ыттисенчен уйăрса пăхни пăснă та ĕнтĕ çамрăкăн кăмăл-сипетне. Ӳссе пынăçемĕн ача-пăча чухнехи курнăçлăх чăркăшлăхпа кутăнлăха куçнă.

Çитĕнсен вăл ашшĕ-амăшĕ, кӳршĕ-аршă каланине ним вырăнне те хуми пулать, хăй мĕн шутланă пек кăна пурăнма хăнăхать. Ăнсăртран мар ĕç вырăнĕсене пĕрмаях улăштарса тăрать. Пĕр çĕрте пĕрле ĕçлекен юлташĕсене кăмăлламасть, тепĕр çĕрте пуçлăхсемпе хирĕçет. Виççĕмĕш вырăнта пурне те хăйне пăхăнтарма хăтланать, çакна тума май килмест те — тарăхнипе каллех урăх вырăна тухса шăвăнать.

Юлашкинчен ĕçлемесĕрех пурăнмалли паха май тупать: кӳршĕ ялти ик ачаллă инке-арăм патне киле кĕрет, ун укçипе шыв арманĕ туянать, çăм тапакан машина хута ярать. Ашшĕне ĕçре пулăшаканни туса хурать, арманта кĕрмешме тарçă тытать. Хăй пулла çӳрет те кăмпа татать, эрех-сăра кӳпет те инке-арăмпа йăпанать. Çук çав, çăтмахри пек пурнăç вăраха пыраймасть. Часах кулак тесе унран шыв арманне те, çăм тапакан машинине те туртса илнĕ. Çавăн хыççăн мĕн пулса тухнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Юрать-ха тĕрмене хупса лартаççĕ — янтă пурнăç йăлăхтарсах çитернĕ ăна.

Çакна та каласа хăварар: инке-арăм патне киле кĕрсен Исиодор пурлăхĕпе пĕрле унăн хушаматне те йышăннăччĕ — Пряников пулса тăнăччĕ. Аристансене ку хушамат килĕшмерĕ — Дрянников теме пуçларĕç. Пуçлăхсем тата

темшĕн-çке ăна тĕрмерен Поганников хушаматпа кăларчĕç. Пурнăç кукăрĕсенче ячĕ кăна улшăнмасть унăн — çавçавах Исиодор. Кăмăл-сипечĕ те улшăнни курăнмасть: çавçавах çынсенчен ютшăнать, пĕччен пулма тăрăшать, чĕри тĕпĕнче тем усалли пытарса çӳрет.

Аристансен взводĕнче станоклă пулеметăн пĕрремĕш номерĕ пулма вăл хăй хапăл турĕ: «Максимкăн» щичĕ пульăсенчен шанчăклăрах хӳтĕленĕн туйăнчĕ ăна. Поганников пулеметчик пулма кăмăл туни взвод командирне темшĕн килĕшмерĕ, анчах хирĕçлеме шутламарĕ. Ун-кун пăхса илнĕ хыççăн Пожеданов хăйĕн приказне пĕлтерчĕ:

— Килĕшес.... Иккĕмĕш номер вырăнĕнче вара Иван Иванович пултăр.

Улшăннă-ши Поганников фронта килнĕренпе? Татса калама йывăр. Çакă кăна паллă: куçĕ татах та хĕсĕннĕ, хаярлăх хĕлхемĕ тĕлкĕшет те ялкăшать. Сăмахлас енĕпе тимĕр пăрçа пекех хытса кайнă.

Кăнтăрлахи апат илме батальон кухнине Поганникова Легкоступовпа пĕрле кайма тиврĕ.

— Эсĕ манран чылай çамрăк-ха — икĕ термосĕпе те аптрамăн, мана пĕчĕкреххи вăй çемми,— татса пачĕ Поганников кам мĕн йăтассине. Хирĕçлеме хăнăхман Легкоступов сулмаклă термоса брезент пиçиххипе ик хул урлă çурăм хыçне çакрĕ, тепĕрне аллине тытрĕ. Самаях йывăррине пула ăна аларан алла тек-текех куçарать, питне тапса тухнă тара çине-çинех шăлать. Поганников вĕçĕмсĕр чикарккă мăкăрлантарса пырать, хăйĕн пурăнас килни, ăна килте кĕтни çинчен палкать.

— Вилес пулсан та уж килте канлĕ вилесчĕ, вăрçă хирĕнче напрасно выртса юлас марччĕ...— тата тепĕр чикарккă чĕртсе ярать çавскер.

— Тăхта-ха,— чарчĕ вăл юлташне сукмакпа шĕшкĕлĕхе кĕрсен.— Гриша, турă пул, персе амант мана сулахай аларан... ĕмĕр-ĕмĕр манмăп...

Поганников çавăнтах чĕркуçленсе ларчĕ, юлташне куçран тилмĕрсе пăхрĕ.

Хăйĕнчен мĕн ыйтнине Легкоступов тăруках ăнланаймарĕ, ăнлансан — пушшех тарласа кайрĕ.

— Эс мĕн, ухмаха ертĕн-им? Пĕлместĕн-им самострелщăн мĕн пулать?

— Мĕн пулать... мĕн пулать... Киле таврăнмалла пулать. Пĕлсен те фронтран аякка ямĕç.

Легкоступов лачлаттарса сурчĕ те малалла утса кайрĕ. Унтан çаврăнса пăхмасăрах йĕрĕнчĕклĕн çапла патлаттарчĕ:

— Чăх-чĕп ферми патĕнче каçару ыйтнине мантăн-им? Хальхишĕн те каçару ыйтма тивет... Йĕксĕк иккен эсĕ...

Чăнахах иккен: улшăнаканни улшăнать, улшăнманни улшăнмасăрах юлать.

## Мăшăр чакак хыпарĕ

Взводра кĕлĕ ăстисем иккĕ: асамçă Лилипутов тата Романухин цыган. Кĕллисем иккĕшĕн икĕ тĕрлĕ, туррисем те расна: пĕрин таçта катара — тĕнче уçлăхĕнче, теприн унашкалах аякра мар — çӳлти пĕлĕт çинче кăна.

Мăк сăртĕнче те, Юманайра та Лилипутов çапларах кĕл тăватчĕ:

— Эй, ылтăн хĕвел, кĕмĕл уйăх, çутă çăлтăр! Тав сире пурсăра та пире тем тери пысăк ырлăхсем кӳнĕшĕн: çутатнăшăн та ăшăтнăшăн, кашни çыннах тарават пулнăшăн. Эсир пире тăрантаратăр, чир-чĕртен сыхлатăр, сывлăхпа вăй-хал паратăр. Тархаслатпăр сире: малашне те хăвăр ырлăхăртан ан хăварăр.

Ăнланмалла ĕнтĕ: турра мар кĕл тăвать ку этем, çакă çутă тĕнчере калама çук пысăк вăй-хăват пĕтĕçтерсе тăракан çут çанталăк улăпĕсене тархаслать, вĕсенчен пулăшу ыйтать. Фронта килнĕренпе унăн кĕлли вăрăмланчĕ, эпитетсем анлăланчĕç, тархаслас туртăмĕ ӳсрĕ.

— Эй, пĕтĕм тĕнчене шутласа шутланми, виççе виçĕнми ырлăх-пурлăх кӳрекен вĕрирен те вĕри хаклă хĕвелĕмĕр!— пуçлать вăл кашни ирех кĕл тума.— Эй, каç сĕмлĕхне, унпа пĕрле тунсăха сирекен çутă уйăхăмăр! Эй, пирĕн çине савса пăхакан ырă çăлтăрсем! Пулăшăр пире чĕнмесĕр килнĕ çичĕ юта хăвалама, ун пусмăрĕнчен хăтăлма! Мана та, ман юлташсене те вилĕмрен хӳтĕлĕр, çĕнтерĕве май пур таран çывхартăр!

Лилипутов епле кĕл тунине цыган та куçне чарсах итлет, унтан аллисене çӳлелле çĕклет те кăкăрне путишле каçăртса шӳтлереххĕн кĕл тума тытăнать:

— Эй, пĕлĕт çинчи туррăмăр, санран килет пĕтĕм ырлăхăмăр. Йывăрлăха пире ан хăвар, хăварсан та çухатмаллах ан хăвар. Çапăçу хирĕнче пире ан пăрах, пăрахсан та ытла çӳлтен ан пăрах. Аслă туррăмăр, мухтав сана! Эс пур чухне вилмĕпĕр, вилсен вара тепĕр хут чĕрĕлмĕпĕр.

Цыган хăйĕн кĕллине малалла тăсма та хатĕр, анчах Лилипутов ун еннелле СВТ хĕçĕпе хăмсарса килнине курать те хăвăрт айккинелле пăрăнать.

— Турра ан хурла — усал ерет! Турăран ан кул — инкеке лекетĕн!— кăшкăрса юлать ун хыçĕнчен Лилипутов.

Токаревăн хăех авăрланакан винтовкисемпе усă курмасть взвод. Затворне хăйăр пĕрчи çаклансанах хăйне хăй авăрланма кăна мар, пеме те пăрахать. Ун кĕпçи вĕçĕнчи хĕçĕ вара ниме юрăхсăр теме çук: вăл цыгана та хăратма пултарчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна полк разведчикĕсем те пилĕкрен çакса çӳреççĕ.

Қам кампа килĕштерет те, Иван Ивановичпа Виктор Герасимович пек туслисем взводра урăх çуках. Пушă вăхăтра пĕр-пĕринчен уйрăлма пачах пĕлмеççĕ. Иккĕшĕ калаçас сăмахăн вĕçĕ те, хĕрри те çук темелле. Виçĕм кун Египет пирамидисем пирки пупленĕ, ĕнер вара Иисус Христос пек турра тухма пултарнă çын чăн-чăнах пулнипулманнине сӳтсе явнă. Халĕ акă Иван Иванович пикенсех автомат тасатакан Виктор Герасимовичран Мишель Нострадамус пирки мĕн те пулин илтмен-и тесе тĕпчет. Ун çинчен хăйне ăна ниçта та вуласа пĕлме тĕл килмен.

— Т-с-с...— пӳрнипе юнаса пӳлет тусне Виктор Герасимович. Хăй те сассине шăплатать.— Вăрман хуралçи çывăхра чухне пуртта çурăм хыçне пытарма хушнă. Рота командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ хăлхине пырса ан кĕтĕр. Вăл комиссарпа пĕрех.

Виктор Герасимович ентешĕ çине пăхса илет. Лешĕ тимлĕн итленине курать те сăмахне малалла тăсать:

— Тĕрĕсрех каласан, унăн ячĕ Мишель де Нотр Дам. Вăл француз тухтăрĕ. Унăн кĕнекисене тăват çĕр çула яхăн ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчипе вулаççĕ. Унта малашне мĕн пуласси пирки пророкла каласа панă вăл. Пирĕн çĕр-шывра унăн кĕнекисене вулама чарнă. Аçтан та пулин тупса вулакансене хĕсĕрлемеллипех хĕсĕрлеççĕ.

— Мĕншĕн апла? Аслă çын сăмахĕ никамшăн та ытлашши пулмалла мар пек-çке...

— Çапли çапла та, унта аслă аттемĕр пирки аплах мар канлă вырăнсем те пур. Тĕслĕхрен, çакăн пек калани:

Юр ӳкекен варвăрла çĕр-шывăн
Виççĕмĕш çул пуçĕ мана хăратать.
Вĕлерет хăех тусĕсене вăл,
Тамăк кĕтет ăна ватлăхра.

— Тĕпчевçĕсем ăнлантарнă тăрăх, ку катренра сăмах Сталин çинчен пырать. Гитлерпа Сталин хушшинчи ăнланмалла мар туслăх пирки калани те пур Нострадамус кĕнекинче:

Çĕнтерет курайманлăх, мăн кăмăл,
Килĕшӳ тăваççĕ икĕ тиран.
Кĕçех тапранĕ çавра çил те тăвăл,
Улталу нихçан та ырă тумасть.

— Çак вăрçă мĕнпе пĕтесси пирки çырса хăварман-и француз пророкĕ?

— Çырнă-çке. Вăт итле:

Брабантпа Фландрие, Кантпа Бруджеса та
Пăхăнтарасшăн хайне ăнталать.
Хирĕçле хăват çапса хуçрĕ ăна та,
Кавказ сынни илчĕ нумай хулана.

— Кала пытармасăр, епле тупса вулама пултартăн француз тухтăрĕн хайлавĕсене?— ентешĕн куçĕнчен пăхать Иван Иванович.

— Нострадамус çырнă «Центурисене» полякла ирĕклĕн куçарни институтра алăран алла вăрттăн çӳретчĕ. Çавăн чухне вулама тĕл килнĕччĕ...

Кăсăкланса та тĕлĕнсе итлерĕ Иван Иванович юлташĕ мĕн каласа кăтартнине. Ăна Нострадамус чăннипех те пророкла çырса хăварнипе пĕрлех Виктор Герасимович хăш-пĕр катренсене асра тытма пултарни те тĕлĕнтерчĕ.

Çапла, взводра кашнийĕнех хăйне çывăх çын пур. Акă, Никифор Андреевич Табаков хăй пекех çĕр ĕç çыннипе Петр Петрович Даниловпа калаçса ларма юрататьть. Калаçăвĕ вĕсен хресчен шăпи пирки.

— Сирĕн, МТС тракторисчĕсен, ма пурăнас мар? Колхоз çитерет, тăрантарать, ĕçшĕн патшалăх хăй тӳлет. Колхозăн тырри пулать-и унта, пулмасть-и — сире пĕрех тӳлеççĕ. Стало быть, гарантиллĕ тӳлев... Вăт колхозникăн ăçта кайса кĕмелле?— таçта тӳпенелле пăхать ун пек чухне Табаков.

— Çаплах, ара,— килĕшет унпа Данилов,— колхозник хăйĕн пурлăхĕпе хăй хуçа мар. Ăна çавар уçма та памаççĕ: патшалăх колхоз пӳлминчен тырра шăпăрпа шăлсах илсе тухать...

— Ĕçлет, ĕçлет колхозник — усси çук. Çакă пистерчĕ те ĕнтĕ ăна çĕртен... Ав пахчасем енĕпе пурне те пĕр карта лартрăмăр: вăтăршар сотка хăвармалла турăмăр. Ытлашшине каса-каса илтĕмĕр. Çав касăксене кайран мăянпа вĕлтĕрен хупларĕç. Эс мĕнле шутлатăн: тĕрĕсех турăмăр-и çакна?

— Пиртен ыйтмаççĕ çав ăна, çӳлтен пӳрнепе тĕллеççĕ.

Табаков ассăн сывласа илет: хăй вăл тĕрлĕрен хушусемпе кăтартусене итлесех каймастчĕ, хуçа пуçĕпе шухăшласа ĕçлетчĕ. Хресчен хăйпе хăй хуçа мар пулсан ăçтан çăкăр çиме пултарĕ? Çук çав, район пуçлăхĕсем урăхла шутлатчĕç. Хăйсемпе пĕр урапа çинче пулманшăн Табакова тапкă-çупкă самаях лектеретчĕç. Хăйсене итлеменрен

ёнтĕ грузовик кустăрмисен камитĕнче те турпасран пĕрене туса хучĕç. Районта малта пынă колхоз председательне ним мар кирпĕч шутлама ăсатрĕç...

— Çапла, пирĕн пуçлăхсем шăнаран слон тума та пултараççĕ,— сасăпа каласа тăсать малалла хăй шухăшне Табаков. Сăмах мĕн çинчен пынине ăнланманнипе Данилов ун çине пăхса илет, анчах ыйтмасть, малалла итлет.— Мана тытса хуптаракансем лараççĕ халĕ те хăйсен вырăнĕсенчех. Бронь вĕсен... Иксĕмĕре вара броньăллисемшĕн те тертленме тивет...

Икĕ тус калаçăвне Пожеданов татрĕ:

— Мана Çӳлевĕç çăварĕ пăшăрхантарать... Кĕçĕр тимлĕн сăнас пулать: чĕнмен хăнасем иленмен-и унта?

Така майракинчен леререх, çĕр-çĕр аллă хăлаçра, лапамрах вырăн пур. Типпе юлнă кӳлĕ евĕрлĕскер. Колхозăн витнĕ йĕтемĕ пысăкăш кăна. Унта шĕшкĕ тĕммисем хунаса ӳснĕ. Лапам варринчи хурама, снаряд лексе хуçăлнăскер, темрен тĕлĕнсе çăварне тискеррĕн карнă пек курăнать. Çавăнпа-ши ку лапама салтаксем Çӳлевĕç çăварĕ ят панă.

Малти лини çывăхĕнче пĕр вĕçĕмсĕр канонада илтĕннĕрен-и, пĕрмай вут-çулăм хуçаланнăран-и, тискер чĕр чунсене те, вĕçен кайăксене те курма çук. Çĕлен-калта та тарса пытаннă, этем куçне сайра тĕл пулать. Виçĕм кун çав хуçăк хурама çине икĕ чакак таçтан пычĕç ларчĕç.

— Астăвăр, Çӳлевĕç çăварне ан лекĕр,— асăрхаттарчĕ вĕсене Кириллов кĕçĕн сержант.

— Мĕнле чĕрчун вăл çӳлевĕç? Ана хăш енчен утлаççĕ?— шăл йĕрсе илчĕ Легкоступов.

— Курман-и? Мĕнле чĕр чунне те пĕлместĕр-и? Вăн хурама çӳлевĕç пекех çăварне карнă...

— Вăл-ку нимех те мар, чакаксем япăх хыпар илсе килмен-ши?— пăшăрхананçи пулчĕ Шакуров.

Командир пăшăрханăвĕ Çӳлевĕç çăварĕпе гитлеровецсем кăсăкланнине асăрханинчен пуçланчĕ. Иртнĕ каç унта фашистсем йăраланнине курнă. Хĕвел ансанах взвод командирĕ Çӳлевĕç çăварне Романухинпа Лилипутова ячĕ.

— Çĕрĕпех унта пулăр. Çутăласпа таврăнатăр та мĕн курни-илтнине каласа паратăр,— тесе ăсатрĕ вăл çак икĕ салтака.

Каялла ир енне мар, çур çĕр иртсенех таврăнчĕç, иккĕн мар — тăваттăн: аллисене хыçалалла çавăрса çыхнă, çăварĕсене пăкăланă икĕ гитлеровеца хӳтерсе. «Чĕлхесем» каланинчен акă мĕн паллă пулчĕ: тăшман хăйĕн позицийĕсене анлăлатма, çавна май вырăнти пĕлтерĕшлĕ операци

ирттерме хатĕрленет иккен. Çакна пĕлсен рота командирĕ Пожеданова уçăмлă приказ пачĕ:

— Çӳлевĕç çăварĕ кĕçĕртен сан аллунта пулмалла. Ун тавра кĕлентĕр кăшăлĕ чавса çаврăн — кирек хăш енчен те оборона тытмалла пултăр.

— Хушнă пек тăвăпăр. Ганс пире кашни ир галет çиме хăнана чĕнет. Ăна хамăр пата вир пăтти çиме чĕнмешкĕн хушă çывăхланĕ апла...— хуравларĕ взвод командирĕ.

## Каç лăпкă иртрĕ

Взводри кашни салтакăн хăйĕн хуйхи-суйхи. Ав Сергей Шакуров тăван ялĕнчен Çăкалăхран пăшăрхантаракан çыру илнĕ. Мăшăрĕ Ксени картишĕнчи ĕни ӳксе вилни, икĕ ачи сĕтсĕр тăрса юлни çинчен хуйхăрса çырса янă: Сергей ку çырăва, ăна-кăна пушкармасăр мар, старшинана та вулаттарчĕ. «Шкул директорĕ пулнă Слесарев вăрçăра паттăрла пуç хуни çинчен яла синкерлĕ хут килнĕ. Унăн арăмĕ Ульха аппа, усал хыпар килсен чирлесе ӳкнĕскер, пĕртен-пĕр хĕрне Нинăна Анаткасран тăван ялĕнчи шкула куçарттарнă»,— хушса çырнă Ксени çыру вĕçне.

Пожеданов çакна вуларĕ те, унăн куç харшийĕ çӳлелле туртăнса çĕкленчĕ. Унтан вăл салтак çине, хыпар пĕлтернĕшĕн тав тунăн, ăшă куçпа пăхса илчĕ. Сергей чунĕ питĕ сисĕмлĕ: хăй çине ăшшăн пăхнине те, сиввĕн пăхнине те тӳрех сисет.

— Темле пурăнкалĕç ĕнтĕ. Хам таврăнмасăр та ĕне кураймасть пулĕ çемьем...— пĕр каплам йывăр сывлăш тухрĕ Сергей çăварĕнчен.

— Сан хуйху чăнах та пысăк, анчах эпир хуйха ӳкни тăшмана савăнтарĕ çеç,— шухăшлăн каларĕ старшина салтака.

Епле пулмалла-ши командирăн? Паллах, чи малтанах унăн хăй мĕн тумаллине ăнланмалла, çавăнпа пĕрлех хăйĕнчен мĕн кĕтнине те пĕлмелле. Вăрçăра генералăн та, кĕçĕн командирăн та, салтакăн та пĕрешкел тĕллев — тăшманран ăслăрах та паттăртарах пулса ăна çĕнтересси. Пытарар мар, тепĕр чухне Пожеданов пуçне те ыттисене тĕлĕнтерес шухăш пырса кĕрет: курччăр та ăмсанччăр — ах, мĕн тери тавçăруллă та ăслă тесе калаччăр. Кунашкал шухăша вăл хăвăрт сирсе ярать. «Санăн тивĕçӳ — салтак пултарулăхĕпе пуçарулăхне çул уçса парасси. Хăв çинчен

мар, ун çинчен шутламалла. Тăшманпа ăнăçлă кĕрешме чи малтан çакă пулăшĕ».

Этем ăс-хакăлĕ калама çук кăткăс. Ун чун-чĕрине тăруках пĕлсе çитерейместĕн. Командирăн хăйĕн салтакĕсене ал тупанĕ çинчи пек курса тăмалла. Паллă: взводри салтаксене пĕр карта лартма çук. Пĕрисене, пурнăçласси пирки пачах иккĕленмесĕр, темле приказ та шанса пама пулать, теприсем хăйсемех ăçта хĕрӳ, унта пуç чикеççĕ. Виктор Кураковпа Иван Иванов мĕне мĕнле тăвасси пирки пуç тавра иккĕ те, виççĕ те çаврăнса шухăшлаççĕ, унтан тин ĕçне пуçăнаççĕ. Алексă Романухинпа Гриша Легкоступов командир калана-каламан сиксе ӳкме хатĕр, ăçта ӳкессине пачах пăхса чăрманмаççĕ. Сергей Шакуров тем тери те теветкелленме пултарать. Исиодор Поганниковпа Митрофан Ястребов çăварĕсене пӳрне ан чик. Сиссе те юлаймăп — хăвăрт çыртса татма пултараççĕ. Мĕн те пулин тума хушсан иккĕшĕн пуçĕнче те пĕрешкел шухăш вĕлтлетет: «Мĕншĕн мана хушать? Взводра эпĕ кăна мар-çке».

«Çӳлевĕç çăварĕ» операцие Пожеданов тĕплĕн планларĕ. Вăй-халлисен траншея чавмалла, çăмăл шăм-шаклисен маскировка тума курăк çăлса йăтмалла, асăрханулли-сен позици умне минăсем хумалла. Романухинпа Шакуров лапамран малта иккĕш ик енче тăшман вăрттăн шăвăнса килсе тухасран сыхлаççĕ.

Тавралăха каç сĕмĕ çапсан виççĕмĕш взводăн виçĕ отделенийĕнчен иккĕшĕ Шапа пăтти енчи çĕр пӳрт умне пухăнчĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ Пожеданов салтаксем умĕнче нихçанхинчен те вăрăм сăмах каларĕ:

— Паянхи лару-тăру çапла хушать: пиртен кашниех хамăр патшалăхăн шанчăкла ывăлĕ пулмалла, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн мĕн пур вăйпа кĕрешмелле. Тăван çĕр-шыв умĕнчи хисеплĕ тивĕçе пурнăçламанни ывăлĕ ашшĕне маннă пекех пулĕччĕ...

Взвод умĕнчи тĕллеве старшина çапла ăнлантарчĕ: нейтраллă зонăри Çӳлевĕç çăварне кĕçĕртен пуçласа хамăрăн илмелле. Лаптăкĕпе вăл кĕштек пек кăна, пĕлтерĕшĕпе вара Чĕкеç тӳпемне чутах çитеймест. Çитменнине тата ăна кĕçĕр хамăр алла илмесен ыран-тепĕр кунах гитлеровецсем пире çывăхран юнамалли ăшă йăва пулса тăрать. Атăла алтăр шыв та пулăшать теççĕ. Çӳлевĕç çăварне çĕр-шыва тавăрса пани те çĕнтерĕве кăшт та пулин çывăхартĕ.

Пирвайхи каç салтаксем взвод командирĕ хушнă пекех турĕç: тăшман курасран Çӳлевĕç çăварĕ еннелле пластунла шурĕç. Ĕçлессе те шăв-шавсăр, асăрханса ĕçлерĕç.

Кӗлентӗр евӗр траншейăна самаях тарăн чаврӗҫ, чавса кăларнă тăма ҫийӗнчех курăкпа хупларӗҫ. Пулеметсем лартмалли икӗ лаптăк янтăларӗҫ, унта станоклă пулеметпа алă пулемечӗ вырнаҫтарчӗҫ.

Поганниковпа Иванов «Максимкăна» симӗс туратсемпе витме те ӗлкӗрнӗ. Ҫакна Пожеданов та ырларӗ.

— Пуҫ лайăх ӗҫлет сирӗн... Хăвăр умăрти йыт ҫырли тӗмӗсене касăр — сăнама та, пеме те ан кансӗрлеччӗр.

— Уж тиркешмесен те юратчӗ ăна... Чăркăштăрах ӗнтӗ,— йӗрӗнчӗклӗн шăл витӗр мăкăртатрӗ Поганников траншея тăрăх командир малалла утса кайсан. Мăкăртатсан-мăкăртатсан йыт ҫырли тӗмӗсене касма иккӗмӗш номере хушрӗ.

Ҫуллахи кӗске ҫӗр хăвăрт та лăпкăн иртрӗ. Приказ памасăр пеме хушман та, Ҫӳлевӗҫ ҫăварӗ енчен пӗр пуля та вӗҫсе тухмарӗ. Гитлеровецсем йӗр хăваракан пульăсемпе тӗлли-паллисӗр ҫӗрӗпех перкелешрӗҫ, ҫăлтăрлă тӳпене чӗлтӗрти ҫутăллă ракетăсем ҫакасшăн тапаҫланчӗҫ.

## Ҫӳҫ ҫамрăкла та кăвакарать

Мускаври институтра Кураков самбо меслечӗсене вӗренмелли кружока явăҫнăччӗ. Хӗҫ-пăшалсăр хӳтӗленме хăнăхасси ҫӗр-шыври ҫамрăксене вăтăрмӗш ҫулсенче кăсăклантарма пуҫларӗ. Чăваш каччи те ку юхăм айккине тăрса юлмарӗ. Спортпа вăл унччен те туслă пулнă-ха, ҫавăн хыҫҫăн ку туслăх ҫӗнӗ вăй илчӗ. Самбист пулса тăни Мускавра чухнех кирлӗ пулчӗ. Пӗрле вӗренекен юлташӗ Кирук «Рот-Фронт» кондитер комбинатӗнче ӗҫлекен пӗр хӗре иленнӗччӗ. Ку хӗрӗн тепӗр тус та пулнă иккен. Ҫавă икӗ юлташӗпе пӗрле студента хăлха чикки туянтарма шутлать. Самбист юнашар пулни ҫăлчӗ Кирука. Тапăнакансен самбо пăрăҫне хăйсен тутанмалла пулса тухрӗ.

Кураков ҫынна пулăшассинчен нихăҫан та пăрăнман. Пӗррехинче шыва путакан ачана Сăр юхан шывӗнчен туртса кăларнăччӗ. Искусственнăй майпа сывлаттарса чун кӗртнӗ хыҫҫăн ачана ҫăлакане таҫта кайса ҫухалчӗ, шыраса та тупаймарӗҫ, ятне те пӗлмесӗрех юлчӗҫ. Вăрманта тăнне ҫухатнă Маргарита Лепеховăна пулăшма та унăн ырă кăмăл тупăнчӗ. Вăл ачаранах ҫынна пулăшас хавалпа пурăнать. Тӗлӗнмелли те ҫук: ашшӗпе амăшӗ иккӗшӗ те медиксем, пӗрмаях кама та пулин пулăшаҫҫӗ-ҫке-ха. Ҫакна куллен хăй куҫӗпе курса ӳсрӗ Виктор.

Паян унăн Легкоступова пулăшмалла килсе тухрӗ. Ку

пăтăрмах çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа парар-ха. Ара, кăнтăрлахи апат хыççăн вĕсене иккĕшне полкăн боепитани складне кайма, унтан лимонкăсем илсе килме хушрĕç. «Е-1» гранатăсем ĕнтĕ. Чăрăш йĕкелĕнчен нумаях та пысăк мар, анчах тыткалама питĕ меллĕскерсем. Фронтăн кунти участокĕнче курăнсах каймастчĕç-ха вĕсем. Хальхаççăн турттарса килнĕ пулинех.

— Обоз кĕç-вĕç çитет. Унччен çав йывăççем хыçĕнче курăк çине выртса канăр-ха. Хамах чĕнетĕп,— пŭрнипе тĕллесе кăтартрĕ складри старшина çŭллех мар катăркассем еннелле.

Теплерен килсе тухнă пушă вăхăтпа салтак хăйне кирлĕ пек усă курма тăрăшать. Кураковпа Легкоступов ботинкисене хыврĕç, пуртенккисене типме çакрĕç. Мĕн тумаллине тунă май икĕ салтак сăмахпа перкелешсе илеççĕ.

— Тете, астăватăн-и, пĕлтĕр ку вăхăтра Юманайĕнче мекеçленсех утă çулаттăмăр...

— Эсир унта пĕр чиперкке тупнăччĕ. Çырать-и е манса кайнă-и?

— Çырмастчĕ... Халĕ çырать. Эвакогоспитальте медсестрара ĕçлет. Лукерья Порфирьевнăран хыпар килсех тăрать-и?

— Килкелет, шăллăм, килкелет-ха. Анчах мана кунта ун хыпарĕ кирлех те мар.

— Епле апла?— тĕлĕнет Кураков. Çав самантрах лăпкă хурав илтет:

— Вăрçăран чипер таврăнсан Лукерья вырăнне Людмила тупăнать...

Кураков Легкоступовран чылай çамрăкрах. Халĕ ку чăваш каччи рядовой мар ĕнтĕ, аслă сержант, отделени командирĕ. Легкоступов ăна пурпĕр шăллăм текелет, лешĕ вара тете тесе хисеплет.

Пĕр вăхăт калаçкаланă хыççăн иккĕшĕ те тĕлĕрмех пуçланăччĕ ĕнтĕ — хирĕçри çĕр пŭртрен çамрăк салтак тухрĕ те тин çеç тасатнă автоматне тĕрĕслес шутпа пеме пуçларĕ. Пульăсем катăркас турачĕсене силлентереççĕ, пуç тĕлĕнченех шăхăрса иртеççĕ.

— Эй, кам ухмахĕ аппаланать унта? Суккăр-им?— чăтаймасăр кăшкăрса ячĕ Легкоступов. Хай салтак йăпăртах çĕр пŭрте тарса кĕчĕ.

— Пулаççĕ çав тăм писменсем!— тарăхмасăр чăтаймарĕ Кураков та.

Кăштахран аслă сержантпа салтак каллех ыйха путрĕç. Вăранчĕç те çăварĕсене карсах пăрахрĕç: хĕвел анма пуçланă, каç пулса килет.

— Ай-турух, чăн-чăн ыйхă чăптисем эпир...—анаслакаласа сиксе тăчĕ Легкоступов.

— Пĕтĕмлетсе каласан, капла вăрçă пĕтичченех çывăрма пулать!—каçхине Çӳлевĕç çăварĕнче траншея чавнă чухне ал тупанĕ çине хăпарса тухнă хăмпăсене хыçса илчĕ Кураков.

— Обоз паçăрах килсе çитрĕ. Эсир вилнĕ пекех çывăраттăр та, вăратма хĕрхентĕм...—йăл кулчĕ боепитани складĕнчи старшина.

Ыйхă чăптисем пĕрер хутаç «лимонка» чыхсах тултарчĕç те йывăр пулнăран пĕкĕрĕлерехххĕн малти лини еннелле утрĕç. Тавралăх тĕттĕмленчĕ. Тӳпере çăлтăрсем куç хуппилле вылямa пуçларĕç. Утма çул шĕшкĕлĕх тата çӳллĕ курăк хушшипе пырать. Тем шиклентерӳллĕн чăштăр турĕ сылтăм енче. Иккĕшĕ те йывăр хутаççене вĕçертрĕç те çул çине лартрĕç.

— Тĕрĕслем-ха: мĕн унта?—пăшăлтатса илчĕ Кураков. Курăка сире-сире вăл ăнланмалла мар сасă илтĕннĕ еннелле утрĕ. Легкоступов та унран юлмарĕ.

Ялт! сиксе тăчĕç курăк ăшне лăпчăнса ларнă икĕ çын. Иккĕшĕ ик еннелле тарма пикенчĕç. Пĕри курăк ашса утма çул çине тухрĕ те чавтарчĕ малалла. Ун хыççăн Кураков халь-халь ярса тытасла вирхĕнсе пырать.

Легкоступов тепринпе çавăнтах курăк çине çыхланса ӳкрĕ. Ана хăй айне туса сулмаклă пушмакĕпе кăкăрĕ çине пусрĕ. Сап-сарă сăнлă гитлеровец лекрĕ ун айне. Анчах вăйпитти фашиста парăнтарасси Лукерья Порфирьевнăпа айланасси мар-мĕн. Лешĕ самантрах çиеле тухрĕ, карланкăран ярса илчĕ, тепĕр аллипе атă кунчинчен кинжал туртса кăларчĕ. Легкоступов ăна икĕ пĕçĕ хушшинчен пĕтĕм вăйĕпе сулмаклăн тапрĕ те, фашист антăхса кайрĕ, аллинчи кинжал айккинелле вăркăнчĕ. Çук çав, тытăçу çакăнпа вĕçленмерĕ-ха. Кăштахран сывлăш çавăрса гитлеровец совет салтакне каллех аяла тăвать. Пĕрре вăл çиелте, тепре — совет салтакĕ. Нихăшĕ те парăнасшăн мар. Иккĕшĕ те пĕр-пĕрне пăвaççĕ, кăпăк сирпĕтсе хăрăлтатаççĕ. Йăвалана-йăвалана, тапаçлана-тапаçлана пӳрт вырăнĕ пысăкăш лаптăкри курăка лапчăтса йĕтем пекех тикĕслерĕç.

Мĕнпе пĕтетчĕ-ши çак тытăçу — калама йывăр. Юратьха Кураков килсе çитрĕ те гитлеровец аллисене хыçалалла пăрса лартрĕ. Хăй хăвалакан гитлеровеца парăнтарасси ăна та ансат пулман. Чупса пынă çĕртенех лешĕ хăвăрт каялла çаврăннă та хăвалакана автомат приклачĕпе пуçĕнчен çапма хăтланнă — çук, май килмен. Кураков хăвăрт пĕшкĕннĕ те тăшмана кăкăр шăмминчен аяларах пуçпа

таклаттарнă. Ун аллисене хăй пиçиххийĕпех туртса çыхнă, тытăçса ÿкнисем тĕлне çитсен — урисене те тăлланă.

Халĕ ĕнтĕ аслă сержантпа рядовой салтак хăйсен йывăр рюкзакĕсене гитлеровецсен мăйĕсенчен çакрĕç, шăлаварĕсен тÿмисене каса-каса ывăтрĕç. Çав тăрпалтайсене вара шăлаварĕсем анса тăллантарасран алăпа тытса пыма тиврĕ. Çакна курсан батальон штабĕн начальникĕ ахăлтатсах кулса ячĕ.

— Сергей Шакуров пуçарăвĕпе усă куртăр эппин...

Каярахпа çакă паллă пулчĕ: ку гитлеровецсем полкăн боепитани складне сирпĕнтерсе ярас шутпа килнĕ пулнă.

...Пулать çав ăнăçсăр кун çапăçу хирĕнче те. Артдивизион Çÿлевĕç çăварĕ валли 45 миллиметрлă пĕр тупă, рота миномечĕсем иккĕ уйăрса пама пулнăччĕ. Çакă пурнăçланмасăр юлчĕ. Взвод командирĕ Пожеданов старшина складран çĕнĕ йышши гранатăсем илсе килессе те кĕтсе илеймерĕ. Хĕвел ансан Çÿлевĕç çăварне пĕрремĕш отделенипе пĕрле вăл хăй пластунла шуса кайрĕ. Иккĕмĕш отделени — командирĕ Кураков аслă сержант çукран-и, малтанхи каç чиперех иртнĕрен-и — асăрхануллă пулма шутламарĕ: хăшĕ-пĕри пĕшкĕнмесĕрех утса пычĕ, теприсем сасăпах калаçкалани те илтĕнчĕ. Виççĕмĕшсем, сыхлăх çинчен манса, чикаркка мăкăрлантарчĕç. Çавнашкал айванлăх хакла ларчĕ взвода.

Çÿлевĕç çăварне çитсенех взводăн икĕ отделенийĕ теункăллă оборона траншейисене тарăнлатма, бруствера сирсе пемелли çĕнĕ уçлăхсем хатĕрлеме пикенчĕç. Взвода хавхалантарас тата пулăшас шутпа ĕнтĕ рота командирĕпе батальон командирĕн заместителĕ тата палламан икĕ офицер килчĕç, ункăллă оборонăн пур кукăр-макăрĕсене те пăхса çаврăнчĕç, биноклĕсене тăшман позицийĕсем еннелле тĕллерĕç, стереотруба витĕр тимлĕн пăхрĕç.

Лапамри ĕçлĕ тĕркĕшÿ кĕтмен çĕртен татăлчĕ. Траншейăсем хушшинех мина ÿксе çурăлчĕ. Ытла та каварлă çав мина: малтан хăй вĕçсе килсе лаплатать, унтан тин вăл сывлăша касса тискеррĕн шăхăрни илтĕнет. Пĕр мина килсе ÿкнĕ хыççăн тепри вăрах кĕттермерĕ. Ун хыççăнах снарядсем улама тытăнчĕç. Тăшманăн пĕтĕм артиллерийĕ хăйĕн хаяр вутне Çÿлевĕç çăварĕ çине тăкнăн туйăнать. Пур йышши калибрлинчен те кĕрĕслеттереççĕ пулас. Пĕтĕм тавралăх чĕтренсе-чÿхенсе тăма пуçларĕ.

Минăсемпе снарядсем асар-писер ÿксе çурăлма пуçласан офицерсем пĕри юлми лапамран тухса шăвăнчĕç. Артиллери вутĕнчен ырри кĕтмелли çук. Çар уставĕ те снарядсемпе минăсем ÿкекен вырăнтан чупса кайса çăлăн-

ма хушать. Пожеданов пулеметсене пемелли лаптăксенчен траншея тĕпне антарма, салтаксене хăйсене çыхăну çулĕсемпе çурçĕр еннелле тухма, артиллери тапăнма чарăнсанах вырăна хăвăрт таврăнма приказ пачĕ. Алă пулемечĕсене иккĕшне те траншея тĕпне чиперех антарчĕç. Станоклă пулемет патĕнче Поганников тем мĕшĕлтетрĕ те мĕшĕлтетрĕ. Иккĕмĕш номерĕ ăçта?

Пожеданов патрон ещĕкĕ йăтнă Иван Иванович пуçне курма кăна ĕлкĕрчĕ — çав çеккунтрах таçта хăямата, тĕпсĕр авăра, путса анса кайрĕ. Çакăнпа ăс-тăнĕн таса ялкăшăвĕ тăнчах сӳнчĕ. Станоклă пулемета лутăркаса юрăхсăра кăларнă снаряд взвод командирне траншея ишĕлчĕкĕ айне турĕ.

— Ăçта взвод командирĕ?— кăшкăрсах ыйтрĕ иккĕмĕш номер пĕрремĕшĕнчен.

— Ахалех манран ыйтатăн... Пĕлместĕп... курман...— тĕрĕссине каламарĕ Поганников.— Çакăнтахчĕ вăл...

— Курман? Илтмен?— шанмасăртараххăн пăхса илчĕ пĕрремĕш номер çине Иван Иванович.— Кунта мĕн? Улăп урине салтнă-ши?

Тин кăна Çӳлевĕç çăварĕ çине гранатăсемпе килсе çитнĕ Кураковпа Легкоступов иккĕшĕ те харăсах кăшкăрса ыйтрĕç:

— Ăçта командир?

Поганников пуçне енчен енне пăркаларĕ кăна.

— Çак ишĕлчĕк айне лекрĕ пулинех...— пӳрнипе тăпра купи çине тĕллесе кăтартрĕ Иванов.

Виççĕшĕ те тăпрана сирме тытăнчĕç. Поганников çаплах вырăнтан хускалмарĕ-ха. Ик-виç минут чавсанах старшина пуçĕ курăнчĕ. Унăн ленчешкеленнĕ кĕлеткине тăпра ăшĕнчен асăрхануллăн туртса кăларчĕç. Кăкăрĕ йывăррăн туртăна-туртăна илет: эппин сывлать, анчах тăнне çухатнă.

Тахăш самантра Лилипутов чупса çитрĕ. Малтанах вăл Пожедановăн гимнастерки тӳмисене вĕçертрĕ, командир сумкипе бинокльне, мăйĕ урлă çакнăскерсене, айккинелле илсе хучĕ. Пĕчĕкçеççĕ кĕленчене ун сăмси патне илсе пырса тем шăршлаттарчĕ. Хăй илтĕни-илтĕнми сасăпа пĕрехмай мăкăртатать:

— Эй, çӳлти турăсем, пирĕштисем! Нимшĕн те ан айăплăр çак чуна! Пирĕн командирăн сирĕн умăрта пĕр çылăх та, пĕр парăм та çук! Вăл малашне те çылăха кĕмĕ, ӳлĕмрен те парăмра юлмĕ. Шанăр мана, ĕненĕр. Чăн калатăп, тупата. Ана халех вăй парăр, вăй парăр та ура çине тăратăр!

Турăсемпе пирĕштисем Лилипутов тилмĕрсе кĕл тунине илтрĕç темелле: вăранчĕ ахăр Пожеданов чунĕ — çурăмĕ тăрăх ăшă туйăм чупса иртрĕ. Юлташĕсем темиçе минут шăпах тăчĕç. Пожеданова майĕпен сăн кĕме пуçларĕ, шурса кайнă пичĕ çине хĕрлĕ лаптăксем тухрĕç. Анчах командир çаплах сăмах хушмарĕ-ха. Тăнран та, вăйран та кайнăскер çывăрнă пекех туйăнчĕ.

Куçне уçсан старшинана иккĕн ик хулĕнчен тытса ура çине тăратрĕç. Чи малтан вăл Кураковпа Легкоступова палласа илчĕ.

— Эппин илсе килтĕр? Отделени командирĕсене ман патăма!

— Гитлеровецсем пĕр ротăна яхăн кунталла килеççĕ...— систерчĕç командира сăнавçăсем.

— Хăвăрт гранатăсем валеçсе парăр! Эп хушмасăр пемелле мар!— приказ пачĕ Пожеданов отделени командирĕсене.

Гитлеровецсем икĕ ретпе пĕшкĕнмесĕрех хăюллăн утса çывхараççĕ. Автомачĕсене малалла кăнтарнă. Хăйсен чĕлхипе тем калаçкаласа та илеççĕ. Малалла талпăнса утма пĕр-пĕрне хавхалантараççĕ пулинех. Траншея патне çитме пĕр çĕр аллă метр юлсан кăкăрĕсем тĕлне тĕрентернĕ автоматсенчен асар-писер пеме пуçларĕç. Çӳлевĕç çăварĕ енчен пурпĕр пĕр пуля та вĕçсе тухмарĕ-ха. Тĕлли-паллисĕр вут тăкса гитлеровецсем васкасах тепĕр вăтăр метр малалла утрĕç. Кĕçех вĕсем чупсах траншейăсене вăркăнса кĕмелле пек. Взвод шăп çав вăхăтра командирăн уçăмлă сассине илтрĕ:

— Çунтар тăшмана вутпа!

Гитлеровецсен çулне икĕ енчен алă пулемечĕсем пӳлсе хучĕç, автоматсем те хăйсен витĕмлĕ сассине пачĕç. Çук, тăшман Çӳлевĕç çăварне вăркăнса кĕресси пулмарĕ, ăна ăçта май килнĕ, çавăнта лăпчăнса выртма тиврĕ. Нимĕç офицерĕ хăйĕн салтакĕсене темиçе хут та тăратма хăтланчĕ, анчах ĕç тухмарĕ. Хăйне пуля лекрĕ ахăр — касса янă йывăç пек тӳнчĕ те урăх йăшăлтатаймарĕ. Çакна курсан гитлеровецсем васкасах каялла чакрĕç. Вĕсем тĕпĕртетнĕ вырăна темиçе теçетке виле выртса юлчĕ.

Çӳлевĕç çăварне хăй илес шухăша пурпĕрех пăрахаймарĕ-ха тăшман. Лапама артиллери вучĕпе тепĕр хут сухаласа аркатрĕ. Така майраки енче çăлăнăç тупнă взвод çав вут тамалсанах каллех малтанхи позицийĕсене йышăнчĕ. Тăшманăн тепĕр роти йăтăнса килнине курса тăруçăн салтаксем окопсене ишĕлчĕкрен тасатрĕç, пемелли хушăксене йĕркене кӳчĕç, гранатăсене ал айне хучĕç.

Çӳлевĕç çăварне хӳтĕлес ĕçе рота е батальон командирĕ хутшăнчĕ пулмалла: фашистсен эшкерне пирĕн артдивизион минăсемпе хăналама пуçларĕ. Тăшман кĕтнĕ пекех каялла мар, малалла тапса сикрĕ. Āна пулеметсемпе автоматсен вучĕ те чараймарĕ.

Мĕн тумалла-ха ун пек чухне? Тăхтаса тăмасăр хирĕç сиксе тухмалла. Пĕтĕм взвод харăсах çĕклентĕр тесен санăн, командирăн, чи малтан тăмалла. Эппин, чи малтанхи пуля та санăнах пулать. Автомат кӳпчекĕ те малтан сана çакланать. Çак шухăшсем кăвакартаççĕ те çӳçе çамрăклах. Яваплă тивĕç шиклĕ шухăшсене хăвăрт сирсе ярать. Тепĕр тесен иккĕленсе тăни хăвна кăна мар, пĕтĕм взвода инкеке кĕртсе ӳкерме пултарать.

— Хатĕрлĕр гранатăсене! — илтет взвод командирăн çирĕп сассине. — Пурте ман хыççăн контратакăна!

Фашистсен ури айĕнче чи малтан командир пăрахнă граната çурăлса каять. Пуçланса каять кăкăра кăкăр хирĕç тăрасси, алла аллăн çапăçасси, кĕлетке çирĕплĕхне прикладпа тĕрĕслесси, çивĕч кинжалпа меллĕн усă курасси. Чăннипех хăюллă та паттăр Пожеданов взводĕнчи салтаксем, анчах тăшмана та тăмран туман. Çат та çат, шари та шари! Çапăçу хăçанччен пыратчĕ-ши, рота командирĕ пулăшма янă тепĕр взвод килсе çитрĕ те тӳрех çапăçăва хутшăнчĕ. Фашистсем тинех парăнса алă çĕклеме тытăнчĕç.

Ку çапăçу хыççăн Пожеданов хăйĕн хура çӳçĕнче эрешмен картин çипписем пуррине асăрхарĕ.

## ЧĔКЕÇ ТУПЕМĔ МĔН ТĔСЛĔ?

### Вăт комбат!

1943 çулхи çуллахи ăшă кунсем. Хĕвел тухăç фронтĕнче вара ку кунсем чăтмалла мар вĕри пулчĕç. Хаяр вăрçăн акăш-макăш пысăк кăвайтне реванш тăвас кăмăлпа татах та вăйлăраххăн ялкăштарса ячĕç гитлеровецсем. Тавăрас ĕмĕт варкăштарать асар-писер вут-çулăма. Кама тата мĕншĕн тавăрмалла? Паллă: Сталинград патĕнче хăй шар курнăшăн, аяк пĕрчисем самаях хуçăлнăшăн. Çакна тума тăшман эшкерĕ питĕ тĕплĕн хатĕрленчĕ. Çĕнĕ техника — «тигр» танксем, хăйсем тĕллĕн çӳрекен «фердинанд» тупăсем, самоходнăй оруди текеннисем, пысăк йăвари кăткăран та нумайрах пуçтарчĕ вăл.

Пирĕн командовани фашистла Германи генералитечĕн каварлăхĕпе чеелĕхне вăхăтра сисет, унăн çăткăн ĕмĕтне путлантарма пуçăнать. Халь-халь сиксе ларасла шăмарса тăракан çăткăн вăйсем çине совет артиллерийĕ хăй малтан çĕр çĕмĕрсе вут та çулăм тăкма тытăнать, тăшмана калама çук пысăк çухату кӳрет.

Çапла пуçланчĕç Курск пĕкки патĕнчи ахăр самана çапăçăвĕсем — икĕ хурçă вăй шăл шатăртаттарса хире-хирĕç тăнă хаяр тытăçусем. Прохоровка ялĕ патĕнче уйрăмах йывăр çапăçусем пулса иртрĕç.

Тăван çĕршыв шăпишĕн çав яваплă кунсенче Пожеданов старшина полевой госпитальте койка çинчен тăрайма-сăр выртрĕ. Пĕрмаях сулахай аяк çинче кăна йăшăлтатма тивнĕрен уншăн çутă кун та, тĕттĕм каç та тертлĕ-асаплă пулчĕç. Тӳсмелле мар ыратнăран аяк шăтса пĕтмерĕ-ши тесе хыпашламах пуçларĕ. Тĕрĕссипе каласан çамрăк ӳт-пĕвĕнче ыратман вырăн та çук.

Чĕкеç тӳпемĕ çинче çавăн пек йывăр аманмалла пулса тухрĕ Пожедановăн. Курск пĕкки патĕнчи çапăçусем умĕн пулчĕ çакă. Пĕр чарăнмасăр тенĕ пек виçĕ куна пычĕ кунта кĕрешӳ. Пĕлтерĕшĕпе шайлашăвĕ енчен илсен Чĕкеç тӳпемĕ çинчи çапăçу Курск пĕкки патĕнчи çапăçу çумĕнче тинĕсе алтăр шывпа танлаштарни кăна. Анчах, маларахах каларă-мăр, алтăр шыв та Атăла пулăшать. Тинĕсе уйрăм юхан шывсем тултараççĕ, хăйĕн юпписен тăрăшăвĕпе тулăхла-нать мăн юхан шыв. Аслă çĕнтерӳ те çавнашкалах пулать: уп патне пĕчĕк çĕнтерӳсем илсе пыраççĕ. Чĕкеç тӳпемĕ çинчи çĕнтерӳ çавăн пек çĕнтерӳсенчен пĕри пулать те ĕнтĕ.

Çакна та каласа хăвармалла: Владимир хулинче чă-мăртаннă, Мăк сăрчĕ çинче çирĕпленнĕ, оборонăри пĕчĕк тытăçусенче пиçĕхнĕ виççĕмĕш взводшăн, çав шутра унăн командирĕшĕн Пожедановшăн хăйĕншĕн те, юлашки ça-пăçу яваплă тĕрĕслев пулчĕ. Халĕ ĕнтĕ пач иккĕленмесĕр калатпăр: чыслăн тухрĕ взвод çав тĕрĕслев витĕр.

Чĕкеç тӳпемĕнчи çапăçу çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлме мана Пожеданов çырнă асаилӳсем пулăшрĕç. «Çырасса икĕ-виçĕ çын валли кăна çыратăп. Эхер вĕсем те чĕрĕ юлайман пулсан пĕр çын валли — чун-чĕрене тухми вырнаçнă Нина Слесарева валли пултăр». Çапла пуçланă вăл асаилĕвне.

Чĕкеç тӳпемĕнче унăн сылтăм лапаткине çурăлакан пуля çĕмĕрнĕ. Ай, пĕлесчĕ сирĕн шăмă ваисан епле ырат-нине, ăна епле тӳсмеллине! Пожеданов та кăшкăрма хатĕр пулнă, анчах хăй командир пулни чарса тăнă. Пуля лапат-кара çурăлнă чухне тахăш юн тымарĕ хĕстерĕннĕ те, юн

суранёнчен кăна мар, ҫавареччен те юхнă. Ҫăвара килсе капланакан тăварлă юна сурса пăрахас мар — сывлама ҫук. Юна сурса кăларас — унпа пĕрле чĕрĕ юлас хавал тухса кайнăн туйăннă. Санвзводра пĕлĕш фельдшер ăна ҫине-ҫинех темиҫе укол тунă. Ҫакă пулăшнă ахăр ҫăварĕнчен юн каяссине чарма. Ҫан-ҫурăмĕ шăнса пăрланнă пек пулнă, кĕҫех тăнне нумай вăхăта ҫухатнă. Сăлтавне пĕлеймĕн: юн нумай кайнипе вăйсăрланнăран-ши, ҫине-ҫинех укол тунăран-ши. Тен, ик сăлтавĕ пĕрле пулнăран.

Вăрҫă хирĕнчи госпитальте, полевой госпиталь текеннинче ĕнтĕ, ăна сылтăм енчен шинăларĕҫ. Ҫăвара миҫе кун пĕр тĕпренчĕк ҫăкăр яманнине, пĕр тумлам шыв сыпманнине Пожеданов хăй те лайăххăн пĕлмерĕ. Унсăр пуҫне, каларăмăр ĕнтĕ, ăна сулахай аяк ҫинче кăна выртма тивни асаплантарчĕ. Сылтăм лапатки аманнăран ку аяк ҫинче выртасси пирки шутламалли те ҫук, ҫурăм ҫине выртма суранпа шина май памаҫҫĕ, аллине чавса тĕлĕнчен хуҫлатса шинăпа хырăм тĕлне ҫыхса хунă. Эппин, ӳпне выртаймастăн. Ларасси-тăрасси пирки шутламалли те ҫук, вăйĕ ҫип татмалăх та юлман. «Пурăнасси тек пулмасть ĕнтĕ манран. Вилетĕпех. Унччен кăлăхах асапланни кăна...» Ҫакăн пек усал шухăш йăва ҫавăрчĕ ун пуҫĕнче.

Фронт линийĕ госпитальтен инҫех те мар пулмалла. Палата алăкне е кантăкне яри уҫсан канонада уҫăмлăнах илтĕнсе каять. Калинин фронтĕнчи ҫарсем ҫаплах оборонăра пулма кирлĕ — суранланнисем госпитале йышлăн килмеҫҫĕ.

Ирхи кӳлĕм тухтăр тĕрĕслесе пăхса ҫаврăннă хыҫҫăн палатăна госпиталь начальникĕ тата темле паллана пекрех ҫын кĕчĕҫ. Иккĕшĕ те шурă халатпа.

— Гвардеецсем, саламлатăп сире пурсăра та! — илтĕнчĕ ҫирĕп сасă.

Ак тамаша: Громов комбат вĕт ку. Вăл тӳрех Пожеданов патне пырса алă пачĕ, ăна тăрса ларма пулăшрĕ. Госпиталь начальникĕ аманнă ҫын ҫурăмĕ хыҫне тавҫăруллăн ҫытар хучĕ. Комбатпа Пожеданов хушшинчи калаҫăва палатăрисем пурте интересленсе итлерĕҫ.

— Кĕҫĕн лейтенант юлташ, сирĕн пата ятарласа килтĕм. Шыраса тупрăм-тупрăмах.

— Эсир маннă иккен, капитан юлташ, ман ҫар званийĕ — старшина...

— Ҫук, тăванăм, йăнăшатăн: эпĕ капитан мар ĕнтĕ — майор. Гварди майорĕ. Эсир те гварди старшини мар, саккунлă йĕркепех кĕҫĕн лейтенант. Гварди кĕҫĕн лейтенанчĕ. Акă ун ҫинчен ҫырнă приказ копийĕ. Чун-чĕререн салам-

латăп!— Пожеданов аллине чăмăртарĕ комбат.— Сывалсан каллех батальона таврăнасса шанатăп!

— Гварди кĕçĕн лейтенанчĕ, тепĕр ырă хыпар пĕлтерме ирĕк паратăр-и?— стройри пек ним сикми тӳрленсе тăчĕ майор.— СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе Николай Яковлевич Пожеданов кĕçĕн лейтенанта çапăçури хăюлăхпа паттăрлăхшăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденпа наградăланă. Сире çак ордена хаваслансах паратăп...

Хăйне çӳллĕрех звани панине пĕлсен Пожедановăн сӳрĕк пăхакан хăмăр куçĕнче йăлтăр çутă çиçсе илчĕ. Комбат ăна орден парсан шуранка питне юн тĕсĕ çапнă пекех пулчĕ. Майорпа кĕçĕн лейтенант тăванла калаçса ларчĕç. Куракова та Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă иккен, старшина званийĕ панă. Шакуровпа Лилипутов «Паттăрлăхшăн» медале тивĕçлĕ пулнă.

Госпиталь начальникне дежурнăй медсестра коридора чĕнсе кăларсан комбат шăлавар кĕсйинчен тулли пулштух кăларчĕ те хăвăрт утиял айне чикрĕ.

— Нарком паекĕ ку. Ордена палатăрисемпе пĕрле пӳрнескепе те пулин çуса илĕр, унсăрăн... тутăхма пултарать...

Палатăрисем пурте кулса ячĕç. Пожеданов сăнĕ те пĕр самантлăха вăйсăррăн çутăлса илчĕ.

— Епле пулин те сывалма тăрăш. Сывал та батальона таврăн. Гвардеецсем, сире те фронтра кĕтеççĕ!— çапла пулчĕ Громовăн каяс умĕнхи сăмахĕ.

— Вăт комбат! Чăнах та маттур сан комбату!— мухтарĕç ăна кайран палатăрисем.

Комбат килсе кайнă хыççăн Пожеданов чĕре сури тумалăх та пулин апат çиекен пулчĕ, çĕкленсе вырăн çине ларма пуçларĕ. Телейлисене, сывалма çирĕп шанчăк параканнисене вăрçă хирĕнчи госпитальтен аяккарахри хуласене ăсатаççĕ. Пожеданова вара ун пек телей час пӳрмерĕ. Çапах тепĕр уйăхран ăна та хирти госпиталь инçе çула ăсатрĕ. «Урал урлах каçса каймалла пулать сирĕн»,— систерчĕ ăна вăрттăнраххăн хăйне сипленĕ тухтăр. Çакна пĕлсенех унăн пуçĕнче хăюллă та татăклă шухăш çуралчĕ: кирек епле пулсан та Канаш станцийĕнче санитари поездĕнчен анса юлмалла, станцăран тăван ялне çитме май тупатех вара. Тăван амăшне курса савăнас, чунĕ савнă Нинăпа тĕл пулас ĕмĕтсемпе чăнласах йăпанма пуçланăччĕ ĕнтĕ вăл, санитари поезчĕ Мускав—Хусан çулĕпе мар, çурçĕртерехри юпăпа каясси паллă пулчĕ.

Фронтра аманнă çын шăпи Пожеданова Çурçĕр Казахстана илсе çитерчĕ. Çакăнти çар госпиталĕнче çырма тытăнчĕ те ĕнтĕ вăл хăйĕн татăк-кĕсĕк асаилĕвне. «Кам-кам

валли çырнине хам та лайăххăн пĕлсех çитерейместĕп,— пĕр пуçланă шухăша тăсрĕ вăл малалла.— Вĕсем тўпем çинче виççĕн кăна юлнăччĕ. Çитменнине тата, виççĕшĕ те аманнăччĕ. Çапах Илья Лилипутов вырăс, Энвер Булатов тутар тата Иван Иванов чăваш чĕрех тесе шутлатăп. Йывăр аманнă Кураковпа Шакурова маларахах санбата ăсатнăччĕ — вĕсен малалли шăпине пачах пĕлместĕп. Чĕрĕ юлнисем вулама пултарĕç, çемйисене, тăванне-тусне вулаттарĕç. Унсăр пуçне, виççĕмĕш взводри çынсене — çапăçу хирĕнче пуç хунисене те, чĕрĕ юлнисене те — пĕлекенсем, астăвакансем тупăнасса шанас килет. Тăшманпа акăш-макăш паттăрла çапăçрĕ пĕтĕм взвод, пĕтĕм йыш: тĕрмере ларнисем те, унта çакланма пўрменнисем те. Тĕлĕнмелли çук. Тăван çĕр-шыв пуриншĕн те пĕрре кăна».

Çапла пуçланă Пожеданов хăйĕн асаилĕвне. Çуррине яхăн сулахай аллипе кукăрткаланă. Тепĕр алли пўрнисем хăйне итлеме пуçласан сылтăммипе чĕрмеленĕ.

## Кĕр каять те... хăçан килет?

Чĕкеç тўпеме виççĕмĕш взводăн хальхи позицийĕнчен— Çўлевĕç çăварĕнчен — инçех те мар, ал тупанĕ çинчи пекех курăнать. Унăн кăнтăр енчи тăмлă-хăйăрлă хысакне тахçанах чĕкеçсем иленнĕ: алă чиксе ямаллах самай тарăн шăтăксем туса темиçе рет хăтлă йăвасем çаврăнă. Çыр чĕкеçĕсем, вырăсла береговушка теççĕ вĕсене. Чăнкă çыран-сенче йăва тунăран ĕнтĕ. Тăван Чăваш республикинче çакăн пек йăвасене Пожедановăн икĕ çĕрте курма тĕл килнĕ: Шăнкăртамăн малти вăрманĕ енчи чăнкă çыранĕнче тата çулла канма кайсан — Кувшинкăри пристаньтен анатарах. Пысăк ушкăнпа пурăннăран ку чĕкеçсем чăнкă çырансене ала пек шăтараççĕ. Çыр чĕкеçĕ хула чĕкеçĕнчен — воронокран — кăшт пĕчĕкрех, тĕсĕпе те уйрăмрах. Çурăмĕ сăрă, мăйĕ шурă, ун тавра сăрă тĕслех ансăр кăшăл. Кăмăла килекен йўплĕ хўресем халĕ курăнсах каймаççĕ, мĕншĕн тесен тўпеме фашистсем хăйсен шанчăклă йăви туса хунă та, чĕвĕл-чĕвĕлсем валли вырăн хĕсĕннĕ. Çыр чĕкеçĕсем Великие Луки еннеллех куçса кайнă, хăюллисен ушкăнĕ кăна Птахино сăрчĕн кăнтăр хысакне тăрса юлнă.

Гитлеровецсем Чĕкеç тўпемĕнче пулеметсем, тупăсемпе минометсем вырнаçтарнă, пирĕн çывăхри подразделенисене кăнтăрла пуç çĕклеме те ирĕк памаççĕ. Ана-кăна асăрхасанах пулеметпа çунтараççĕ, снарядсемпе минăсем тăкма пуçлаççĕ. Мĕн калăн, тўпемрен тавралăх çатма çинчи пекех

курӑнать. Ҫавӑнпа ротӑсенчен батальон штабне, боепитани складне тата кухньӑна ятарласа чавса тунӑ ҫулпа тата вӗтлӗх хӳттипе кӑна ҫӳреҫҫӗ. Ҫак ҫул ҫинчи пӗр лапамра грунт шывӗ ҫиелти сий патнех тухнӑран ҫӳремелли траншея чавман. Ку вырӑна тӑшман снайперӗ тӗллесех тӑрать. Вӑр-вар чупса иртме ӗлкӗртӗн пулсан — маттур! Пуҫ каҫӑртса улпутла утатӑн — иккӗленмелли ҫук, мушка тӗлне ҫакланатӑнах. Синкерлӗ тӳпем чӑннипех те чун илли ӗнтӗ.

Рота командирӗ Воронков лейтенант Чӗкеҫ тӳпемне виҫҫӗмӗш взвод вӑйӗпе тӑшманран туртса илме приказ парсан Пожеданов тӑруках нимӗн те калаймарӗ. Лайӑх пӗлет: пирӗннисем ӑна илме пӗрре ҫеҫ мар хӑтланса пӑхнӑ.

— Хатӗрленме тӑватӑ талӑк паратӑп. Пиллӗкмӗш талӑкра тӳпем пирӗн алӑра пулмалла. Операцие комбат «Кӗр каять те ҫур килет» ят пама хушрӗ. Птахинӑна илекенсемпе тӗл пулса пуплеме сӗнчӗ. Операци планне виҫӗ кунран пӗлтеретӗн,— татӑклӑн хушрӗ Воронков взвод командирне.

— Ӑнлантӑм,— аллине тӑнлав тӗлне тытрӗ Пожеданов.

— Ӑнланни сахал, приказа пурнӑҫа кӗртмелле.

* * *

Пожеданова иртнӗ тапхӑр — 1942 ҫулхи кӗр кунӗсем аса килеҫҫӗ. Фронтри ҫарсем умне уйрӑмах кӑнтӑрта йывӑрлӑх хыҫҫӑн йывӑрлӑх туха-туха тӑрать: тӑшман Сталинград патнех ҫитнӗ, Атӑл хӗрринелле туртӑнать. Ҫурҫӗр Кавказа та ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Тӳрех каламалла, совет ҫыннисем вӑл вӑхӑтра кӑнтӑрти фронт хыпарӗсене питӗ тимлӗн тӑнланӑ, чун-чӗрипе те, кӑмӑлӗ-туйӑмӗпе те юнлӑ ҫапӑҫусенче Сталинграда, Ҫурҫӗр Кавказа хӳтӗлекенсемпе пӗрле пулнӑ.

1942 ҫулхи ноябрӗн 19-мӗшӗнче, шӑпах Пожеданов старшина ӑристансен взвочӗпе ҫӗр пӳрт янтӑласа ҫитернӗ кун, акӑш-макӑш анлӑ фронтӑн кӑнтӑр енче — Атӑл хӗрринче — Хӗрлӗ Ҫар Тӑван ҫӗр-шыв аслӑ вӑрҫин пысӑк пӗлтерӗшлӗ операцине пуҫлать. Запас полкри хуҫалӑх взвочӗ Сталинграда хӳтӗлемешкӗн хӑйне фронта яма пӗр шухӑшлӑн хистесе ыйтать. Салтаксем ҫакна ҫийӗнчех тивӗҫтерессе кӗтнӗччӗ, анчах ӗҫ-пуҫ пачах урӑхла пулса тухрӗ. Полк командирӗ хуҫалӑх взвочӗ умне пӗчӗк мар ҫӗнӗ задача кӑларса тӑратрӗ: полк йышӗ ҫывӑх вӑхӑтрах ӳсмелле, ҫавна май тӑхтаса тӑмасӑр ҫӗр пӳртсем виҫӗ рота вырнаҫмалӑх ҫӗнӗрен туса хатӗрлемелле. Ку вара акӑ мӗне пӗлтернӗ: Пожеданов взвочӗн тата темиҫе уйӑха тылрах

юлмалла. Пĕр май юхнă юхан шыв тепĕр май юхма пуçланипе пĕрех пулчĕ çакă. Анчах приказ урлă сиксе каçаймастăн — взводăн ăна пурнăçламалла пулчĕ.

Атăл хĕрринче кĕркунне пуçланнă операци пирĕн çарсем 1943 çулхи февральте Сталинград патĕнче пысăк çĕнтерӳ тунипе вĕçленчĕ — кунта нимĕç фашисчĕсен 300 пинлĕ çар ушкăнĕ пĕтĕмпех тĕп пулчĕ. Çак ырă хыпара та Пожедановăн хуçалăх взвочĕ Мăк сăрчĕ çинчех пĕлнĕччĕ. Салтаксем ун чухне хăйсем çаплах «тылри йĕкехӳресем» пулнипе тарăхнăччĕ.

Тарăхнăччĕ те, савăннăччĕ те. Ара, епле савăнмăн-ха!.. Вăрçă тапраннăранпа пирĕннисем унашкал пысăк çĕнтерӳ тăвайманччĕ-ха. Вăл Тăван çĕр-шыв аслă вăрçинче те, иккĕмĕш тĕнче вăрçине пĕтĕмĕшле илсен те, татăклă улшăну тума май пачĕ. Çавăн хыççăн стратеги тĕлĕшĕнчи пуçарулăх совет çĕр-шывĕн аслă командованийĕ аллине куçрĕ.

Великие Луки хулине çавăрса илнĕ хыççăнхи тапхăрта, çуркунне те, çулла та, Калинин фронтĕнчи 3-мĕш ударлă çар хăй маларах йышăннă позицисенчех тапăртатрĕ. «Хальхи вăхăтра пирĕн тĕп тĕллев — малашнехи наступлени валли позицисене лайăхлатасси»,—ăнлантарчĕ командирсене штабри пĕр канашлура 3-мĕш ударлă çар командующийĕ Кузьма Никитович Галицкий генерал.

Хушнине пурнăçламаллах. Боецсем окопсемпе траншейăсене тарăнлатаççĕ, çĕннисене чаваççĕ, çĕр пӳртсемпе дотсем тăваççĕ. Çав вăхăтрах уйрăм вырăнсенче хирехирĕçле вăйсем хушшинче хаяр тытăçусем те пула-пула иртеççĕ. Çар штабĕсен сводкисенче вырăнти пĕлтерĕшлĕ çапăçусем теççĕ вĕсене. Тĕслĕхрен, çĕртме уйăхĕ вĕçĕнче 46-мĕш гварди стрелковăй дивизи чаçĕсем Птахино ялĕ çумĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ тӳпеме хăйсен аллине çавăрса илеççĕ.

Пожеданов лайăхах астăвать-ха: Совинформбюро пĕлтерĕвĕнче ун çинчен кĕскен кăна асăннăччĕ. Халĕ вăл çав тӳпеме çĕнсе илекенсене шыраса тупрĕ-тупрех. Птахинăна парăнтаракансем 141-мĕш стрелковăй полк гвардеецĕсем пулнă иккен. Вĕсене полкăн пултаруллă та хăюллă командирĕ П. С. Романенко подполковник çапла ăс панă:

— Сĕм-тĕттĕм каç кĕтмен çĕртен тапăнăр. Унсăрăн ĕç ăнасса кĕтмелли çук.

Штурмлакан отряд Ширяев аслă лейтенант ертсе пынипе полковник сĕннĕ пек тунă — сасартăк тапăннă та çухалса кайнă тăшманран Птахинăна хăвăрт тасатнă.

— Ку тӳпеме туртса илесси мар, ăна хамăр алăра

сыхласа хăварасси чикĕсĕр йывăр пулчĕ. Уншăн шăпах çур уйăх, çĕртмен 23-мĕшĕнче тытăнса утă уйăхĕн 7-мĕшĕччен çапăçма тиврĕ. Сирĕн те çапла пулса ан тухтăр...— асăрхаттарчĕ Ширяев отрядĕнче пулнă салтак.

— Чĕкеç тӳпемĕ çине тапаланиччен адресăра лайăх çырса хăварăр. Сирĕн пата çыру кăвакарчăн почти урлă ямалла ан пултăрччĕ,— кулараххăн каларĕ тепри.

Ку сăмахсем мĕне пĕлтернине икĕ чăваш — Пожедановпа Кириллов — тĕшмĕртеймерĕç, мĕн пирки шахвăртнине ыйтма лайăх маррăн туйăнчĕ. Ширяев отрядĕнчен чĕрĕ те аманмасăр юлнă паттăрсем патне взвод командирĕ малтан Федор Феофановпа пĕрле кайма шутланăччĕ, рота командирĕ килĕшмен пирки ку шухăша улăштарма тиврĕ — Птахино опытне вĕсем Семен Кирилловпа пĕрле тĕпчерĕç.

— Феофанов отделенине ан тĕкĕн. Вăл Çӳлевĕç çаварĕнчех юлтăр. Комбат ăна анлă наступление çул уçса пымалли ушкăна кĕртнĕ те, паян-ыран репетицисем пуçланмалла,— каларĕ çирĕппĕн Геннадий Петрович Воронков лейтенант.

Фронта килнĕренпе Пожеданов ротăн виçĕ командирĕ аллине лексе курчĕ ĕнтĕ. Леш «штаб куккукĕн» ятне мар, хушаматне те пĕлсе юлаймарĕ, Громовпа Воронкова вара хисеплемеллипех хисеплет, мĕншĕн тесен иккĕшĕ те ытларах ыранхи кун çинчен шутлаççĕ, малашнехине курма тăрăшаççĕ.

Взвод командирĕн хуйхи-суйхи пĕчĕкрех, шухăш çуначĕсем те кĕскерех. Фронта килсенех Така мăйракишĕн хыпса çунатчĕ, унтан Çӳлевĕç çăварне пăкăламалла пулчĕ. Халĕ акă Чĕкеç тӳпемĕ ун пуçне çавăрать.

Чăн ĕнтĕ, Чĕкеç тӳпемĕ Птахинăпа танлаштарсан пĕрене çумĕнчи патак кăна. Çапах ун пĕлтерĕшĕ сисĕнмеллипех сисĕнет: тăшман тӳпемрен икĕ-виçĕ километртине курса тăрать, çавăн чухлех хăй хыçĕнчине хуплать.

* * *

Птахино паттăрĕсем патĕнчен таврăнакан Пожедановпа Кириллов çĕр пӳрт çумĕнчи боецсем умĕнче Иван Иванович Иванов — «кубланă Иван» е «Иван в кубе»— тăнине аякранах палласа илчĕç. Пуçĕсене пурте ун еннелле пăрнă. Тахăшĕ тем каланине тăнлать вăл, хутран-ситрен кăна хăйĕн шухăшне каласа хурать. Пуплекенĕ — тепĕр салтак, итлекенĕсем пурпĕр Иванов çине пăхаççĕ. Кирек ăçта та тимлĕх тĕнĕлне вăл ярса илет. Юлташĕсем унран яланах тем çĕнни, ырри кĕтеççĕ, мĕн илтнипе, пĕлнипе çырлахма-

ççĕ — ăна пĕлӳ хутаççине сарлакарах салтма хистеççĕ. Тепĕр тесен, çав хутаç унăн чăнах та иксĕлми.

— Куç ывăтăр-ха Чĕкеç тӳпемĕ çине. Пăхма вăл емешĕл. Курăкĕ кăкăр таран. Унта та кунта шĕшкĕ тĕммисем туй арăмĕсем пек саркаланса лараççĕ, çамрăк хурăнĕсем вун саккăрти хĕрупраç пек яштака. Анчах çав йывăçсем айĕнче мĕн пур — самолетпа вĕçсе хăпармасăр никак пĕлме çук. Вăн пирĕн Лилипутов çӳлтен пăхса курасшăн: купăстана пуçĕнчен пăхма пуçлать, ăна кучанĕпе тымарĕ кирлех те мар. Легкоступовăн манерĕ пачах урăхла: малтан чиперккен урине сăнать, куçĕпе пилĕкĕ таран пăхса хăпарать, унран çӳлерех тапаçланмасть. Ури тăпăл-тăпăл пулсан пичĕ шатри темех мар...

Пĕлекенсем Юманайри тăн-тăн Лукерйăна аса илеççĕ те ахăлтатсах кулса яраççĕ.

— Çук, тăванăмсем, кăсăккисенчен хăшĕ-пĕри çӳлтен кăна курăнать. Наска тăрринчисем те çавăн пекех...

Иван Иванович Перури Наска тӳрем сăрт тăрринчи асамлă линисем, фигурăсем, ӳкерчĕксем çинчен каласа тĕлĕнтерет иккен. Юлташĕсем куç мăчлаттармасăр итлеççĕ. Чăнах та, кам ӳкернĕ-ши çавсене? Мĕнле тĕллевпе?

— Никак татса калаймăн. Çич çĕр тăваткал километр пысăкăш класс доски çинче такам геометри урокĕ ирттернĕ тейĕн. Кунтах кит, упăте, çавсемпе пĕрлех кондор, колибри тата ытти вĕçен кайăксем ӳкернĕ. Скафандр тăхăннă астронавт ĕмĕлки те уçăмлăн курăнать. Асчахсем шутланă тăрăх, ку ӳкерчĕксене пирĕн эрăри VI—X ĕмĕрсенчех тунă.

— Наска тĕлĕнтермĕшĕ ял хуçалăх календарĕ пулманши? Жрецсем çав календарьпе усă курма тӳрем сăрт çине вăрттăн майпа вĕçсе хăпарман-ши? Тен, Наска ӳкерчĕкĕсем урăх планета астронавчĕсен ĕçĕ...— хутшăнать калаçăва аслă сержант Виктор Кураков.

— Пĕлместĕп, пĕлместĕп,— пуçне пăркалать Иван Иванович.— Чĕкеç тӳпемĕ çинче мĕн пуррине хăпарса пĕлме май пур. Ун пирки вара пачах иккĕленместĕп. Мана урăххи иккĕлентерет. Чăвашсем çапла юрлаççĕ: «Ĕнтĕ чĕкеç вĕçет, чĕкеç вĕçет — юхăм шывăн çулне пӳлеймест». Ку йĕркесем çумне çапла хушар мар-и: «Ĕнтĕ салтакваскать, салтак васкать — Чĕкеç сăртне çаплах илеймест».

— Чĕкеçсем çинчен чăвашсем мĕн каланине эпĕ те илтсеттĕм,— хутшăнчĕ калаçăва тинрех килсе çитнĕ Кириллов кĕçĕн сержант.— «Ай, чĕвĕл те чĕвĕл хура чĕкеç, кĕр каять те çур килет»,— тесе юрлаççĕ. А вăт Чĕкеç тӳпемĕ пиртен кĕр кайнă пултăр тейĕпĕр, анчах каялла хăçан килĕ-ши?

## Кĕçĕтмен çĕртен хыçни

Фронтăн малти линийĕнче боец гражданкăра кам пулнине, ăçтан килнине, мирлĕ ĕçре мĕнпе палăрнине шута илсех каймаççĕ. Кунта пурте пĕр пек тумпа. Умри тĕллев те пĕрешкел: тăшманпа паттăррăн çапăçмалла. Çакăнта хăюлăхпа паттăрлăх тата ăсталăх кăтартсан — хушаматупа ятна та пĕлеççĕ, пысăк хисепе хураççĕ, тивĕçлĕ наградăсем параççĕ. Иван Иванов вара ку калăпа шăнăçмасть. Кам пулнине тата ăçтан килнине пĕличченех, çапăçура палăриччене вăл хăйсенчен çӳлерехре тăнине, ăслăраххине юлташĕсем пурте тенĕ пекех йышăнаççĕ, асли вырăнне хурса ун сăмахне итлеме те хатĕр.

Унпа взвод командирĕ те час-часах канашлать.

Қаçхи апат, концентратран пĕçернĕ вир пăтти, çинĕ хыççăн икĕ педагог — старшинапа Иванов боец — улах вырăнта, Шапа пăтти енчи йывăç айĕнче, пайтахчен калаçса ларчĕç.

— Чĕкеç йăвисем еннелле эпĕ те тĕмсĕлсех пăхатăп-ха, анчах унта тӳпем хысакĕ ытла та чăнкă...

Қомандир çапла каланине илтсен боец ун еннелле пуçне вăрт пăрчĕ:

— Мĕн эсир, Чĕкеç тӳпемне чăн-чăн хуçине тавăрса пама шутлатăр-им?

— Мĕнле калас? Хамăрăн-çке-ха вăл... Хăçан та пулин ăна илмеллех. Никам та мар, пирĕнех тăрăшмалла,— татăклăн хуравлассинчен пăрăнчĕ командир. Боец пурпĕрех çакна тавçăртрĕ: Чĕкеç тӳпемĕшĕн тытăçу сăмса умнех çитсе тăнă.

— Чĕкеç йăвисем енче хăмла çырли хӳхĕм садри пекех теççĕ. Пĕр каçхине Лилипутовпа Легкоступов унтан пĕрер котелок шултра çырла татса килнĕ. Мана та çитерчĕç...

— Вăт шăпăрлансем... Мина çине пырса тăрăнасран та, тăшман асăрхасран та хăраман-и?

— Тăшман пире чĕкеç йăвисем енчен никак та кĕтмест, çавăнпа минăсем лартса та чăрманмасть. Мина уйĕ пире хирĕç енче. Тупăсемпе пулеметсем тӳпемĕн виçĕ енче те пур. Тапаçлансах хӳтĕленме пултарать.

— Эппин, кĕтмен енчен тапăнас пулать,— вĕçлерĕ калаçăва командир.

Çавăн хыççăнах вăл Лилипутовпа Легкоступова чĕнсе калаçрĕ, Иван Иванович сăмахĕсем тĕрĕссине пĕлесшĕн пулчĕ. Паллă ĕнтĕ, ун пек çынна шанмасăр тăма ниепле сăлтав та çук. Анчах Пожеданов кирек мĕне те тĕрĕслеме

хăнăхнă. Ку йăла унăн ачаранах пырать. Мулла Вирккин ывăлне Лявккана кĕçĕннисене кӳрентерме чарнă чухне ăна хытах тĕртсе янăччĕ, лешĕ лаплатсах ӳкнĕччĕ, çавăншăн ăна Виркка аппа «кăкшăм пуç» тенĕччĕ. Пӳртне чупса кĕрсен пĕчĕк Миккуль темиçе минут тĕкĕр умĕнче тăчĕ, пуçĕ мĕн енĕпе кăкшăм пек пулнине тĕрĕслерĕ.

Пĕррехинче ăна хăйĕнчен пилĕк çул аслă Эччук хĕнерĕ, çавăнпа картишне ашшĕ патне макăрса кĕчĕ.

— Вăт нарут, авланма вăхăт çитнĕ, вăл çаплах ачалла хăтланать!.. Ме сана патак, хыçалтан йăпшăнса пыр та яра пар ăна çурăмран...

Патакне илессе илчĕ Миккуль, анчах ашшĕ куçĕнчен çаплах ыйтуллăн пăхса тăчĕ. Патак каялла çаврăнса тивессрен шикленнĕрен ахăр.

— Çук, хальхинче вăл сана пӳрнепе те тĕкĕнмест,— ăнланчĕ ашшĕ Миккуль мĕн каласшăн пулнине.

Вăл картишĕнчен Миккуль хыçĕнченех тухрĕ те хапха умне тăчĕ. Ывăлĕ тулăксăр Эччука патакпах çапмастчĕ те пулĕ, ашшĕ калани тĕрĕсси-тĕрĕс маррине пĕлме шут тытрĕ. Хăйне çурăмран çатлаттарсан Эччук çапакана хăваласа чупма та тытăннăччĕ, анчах хапха умĕнче ашшĕ тăнине асăрхасан вăрт çаврăнчĕ те килнелле уттарчĕ.

— Çĕрле чĕкеç йăвисем патне çăмăллăнах шуса çитме пулать. Лапамри шĕшкĕ йывăççисем тĕлĕнчен иртсен кăшт сулахаярах пăрăнмалла. Сылтăмра — путлăх... тата унта кӳкĕрт шăрши сăмсана çурать...—хыпарларĕ Шакуров.

Взвод командирĕ çав каçах Лилипутовпа Шакурова разведкăна ячĕ. Чĕкеç йăвисем енче тăшман посчĕсем пуррипе çуккине нумайччен сăнаса выртнă вĕсем: хăмла çырли тĕмĕсем хушшинче, ăна-кăна асăрхаман, виçĕ енче нумай накатлă виçĕ блиндаж пуррине çеç палăртнă. Кăвак шуçăмпа иккĕшĕ те чиперех каялла таврăннă, тепрер котелок çырла татма та манман.

Каçхи хурал кăнтăрлахипе ылмашăнсан «Кĕр каять те çур килет» операцие епле ирттересси çинчен старшина рота командирне каласа пачĕ.

— Килĕшетĕп, сирĕн план лайăх,— ырларĕ Воронков лейтенант. Хăй çавăн хыççăнах ыйту хыççăн ыйту пачĕ:

— Миçе вĕрен хатĕрлерĕр? Иккĕ? Вĕренсен çирĕплĕхне тĕрĕслерĕр-и? Мĕнрен яврăр?

— «ПТФ-19» пулăшрĕ... Связистсем пăрахăçланине туплашкипех тупрăмăр.

— Телефон кабелĕнчен эппин. Вĕрен тăрăх хĕç-пăшалпа хăпарма пурте пултарĕç-и? Урлă-урлă çыхăр та пурне те юравлă пусма хатĕрлĕр.

Взвод командирӗ йӑнӑшрах хуравлакан шкул ачи пек хӗрелсе кайрӗ, шанчӑклӑ пусма хатӗрлеме пулчӗ.

— Тӳпем ҫине малтан хӑпараканни аяларахри стенара чӗкеҫ йӑвисем евӗрлӗ шӑтӑксем мӗнпе тӑвать? Сапер кӗреҫисемпе-и? Унта тӑпра хӑйӑрлӑ-ҫке... Токаревӑн самозаряднӑй винтовкисене курнӑ-и эсир? СВТ тетпӗр-и-ха? Ҫавӑн кинжалӗ юрамӗ-ши? Постсем, блиндажсем ҫине пурте пӗр харӑс мӗнле сигналпа тапӑнаҫҫӗ? Ахӑ, хӗрлӗ ракета ҫӗкленсен... Ку лайӑх тейӗпӗр. «ДП-1» мӗншӗн иккӗ кӑна илетӗр?

— Дегтяревӑн алӑ пулемечӗсене-и?

— Ҫавсене ҫав. Йӗри-тавра оборона тытма тӑваттӑ кирлӗ пулать-ҫке. Ӑнлантӑм: сире тата иккӗ тупса памалла пулать.

Рота командирӗ операци планне, тӗпрен илсен, ҫирӗплетрӗ, ҫавӑнпа пӗрлех паха канашсем пачӗ, тытӑҫу репетицине ҫине-ҫинех ирттерме сӗнчӗ. Ҫапла вара ҫапӑҫу ӑмӗнхи экзамен чиперех иртрӗ темелле.

«Кӗр каять те ҫур килет» операци ӑнӑҫлӑхӗ взвод тӳпем ҫине тӑшмана систермесӗр пырса тухнинчен килнине пурте лайӑх пӗлсе тӑчӗҫ. Ҫавӑнпа Чӗкеҫ тӳпемӗ патне пӗтӗм взвод пӗрле мар, тӑваттшарӑн-тӑваттшарӑн пластунла шурӗҫ. Чӗкеҫ йӑвисем патне чи малтан ҫулне пӗлекен Лилипутов шуса ҫитрӗ. Шикленме шутламасть те. Чӗкеҫ тӳпемӗ ку енче пач суккӑр. Тӗлӗнмелли те ҫук: чӑнкӑ стена ҫумне кам ухмахӗ ҫамкипе ҫапӑнса ҫӳретӗр тесе шутлаҫҫӗ ӗнтӗ. Иван кӗҫӗтмен ҫӗртен хыҫма пултарасси гитлеровецсен асӗнче те ҫук.

Лилипутовпа Шакуров «чӗлхе» тытма Удрай кӳлли хӗррине кайнӑ чухне те ҫакӑнтан чиперех шуса иртнӗччӗ. Халӗ Лилипутов аллинче телефон кабелӗнчен янтӑланӑ пусма, ҫурӑмӗ хыҫӗнче автомат. Хӑйӗнчен виҫӗ хут вӑрӑм кашта сӗтӗрсе килнӗ тӑсмак Артамонов кукша пуҫне хӑмла ҫырлин лутра тӗммисем хушшине чикрӗ. Коноваловпа Молчанов чӗкеҫ йӑвисенчен кӑшт айккинерех танксене пемелли пӑшалпа меллӗ позици йышӑнчӗҫ. Кӗҫех Воробьевпа Бородов та алӑ пулемечӗпе лапамри чулсем хыҫӗнче меллӗ вырӑн тупрӗҫ.

Пӗтӗм взвод чӗкеҫ йӑвисем ҫывӑхнех пуҫтарӑнсан Артамонов хайхи вӑрӑм каштине чӑнкӑ стена ҫумне асӑрханукллӑн тӑратрӗ. Легкоступов аллисене унӑн икӗ хулӗ ҫине хучӗ, тренировка тунӑ чухнехи пек хуҫланса яшт ҫӗкленчӗ те урисемпе хулпуҫҫийӗсем ҫине сыхлануллӑн пусрӗ, ҫӳлте хӑвӑрт тӳрленсе тӑчӗ.

Пӗчӗк пӳллӗ йӑрӑ Лилипутов пилӗкӗнчен вӗрен ҫыхрӗ.

Çав вĕренпе унăн пусмана çӳле туртса хăпартмалла. Тăснă алăсем тата хулсем тăрăх вăл пирамида тăррине — Легкоступов ĕнси çине хăпарса тăчĕ. Пĕр вăхăт ним хускалмасăр йĕри-таврари сас-чĕве тăнларĕ, куçне вылятса унталла-кунталла пăхкаларĕ. Халлĕхе шиклентерекенни нимĕн те сисĕнмерĕ. Хăрах аллипе каштаран тытнăскер тепĕр аллинчи СВТ кинжалĕпе ура вырнаçмалăх шăтăксем тума тытăнчĕ. Пусма пур çĕрте ку шăтăксем кирлех те мар пек, анчах вĕсене асли хăй тума хушнă. Сых ятне ĕнтĕ. Артамонов икĕ аллипе те каштана çирĕп тытса тăрать, унсăрăн пирамида тăрринчисем тӳнме те пултарĕç.

Чĕкеç йăвисем тĕлне çитме çур аршăн пек юлсан пĕр вĕçен кайăкĕ шăтăкран чĕриклетсе тухрĕ те, Артамонов пуçĕ çине хăйăр сапăнчĕ. Чĕкеç айккинелле вĕçсе каймарĕ, такамран васкавлă пулăшу ыйтнăн йĕрмĕшсе шăтăкĕ тĕлĕнчех вĕçсе тăчĕ. Унччен те пулмарĕ, тăм стенана таçтан кăяматран трассировка пуллисем килсе тăрăнчĕç — аманнă чĕкеç аялалла Иванов ури патне лаплатса ӳкрĕ. «Тинех пĕтрĕм иккен!» — вĕлтлетсе иртрĕ шухăш Лилипутов пуçĕнче. Сасăпа ним те каламарĕ. Кашта тăрăх шуса анма та васкамарĕ.

Чылаях аякра, сулахай флангра, икĕ ракета чăрласа çĕкленчĕç те, тавралăх каллех шăпланчĕ. «Курмаççĕ, сасчĕв еннелле сых ятне кăна печĕç ахăр», — шутларĕ хăй ăшĕнче Лилипутов. Вăл çӳлтен усăнса тăракан тымарсенчен аллипе ярса тытрĕ, урине чĕкеç йăвинелле чикрĕ — шалта чĕпсем шиплетнине илтрĕ те урине хăвăрт каялла туртса кăларчĕ. Мĕскĕнсене ухмахла таптаса амантас мар! Лилипутов чĕкеç йăвисемпе усă курас шухăша тăнчах пăрахăçларĕ, юнашар çĕнĕ шăтăксем чавма пикенчĕ. Çав хушăра аялта Иванов чĕкеçе çĕртен аллине илчĕ — вăт шеремет, сывлать-ха! Салтак хăйĕн кăкăрĕнчен тухакан ăшă сывлăшпа ун çине вĕркелерĕ, ун-кун пăхкаларĕ те тапкаланакан вĕçен кайăка асăрхануллăн хĕвне ячĕ.

Тепĕр çур сехетрен Чекеç тӳпемне пусма тăрăх хăпарнă салтаксем виçĕ блиндаж, тупăпа миномет тата пулеметсем патне шуса çитрĕç, сигнал кĕтсе гранатăсем хатĕрлерĕç. Хаяр çапăçу вăраха тăсăлмарĕ. Тӳпем çинчи ыйхăллă гитлеровецсене пĕри юлми пĕтерсе тăкрĕ чăваш ачин Пожедановăн пĕр шухăшлă взвочĕ. Тӳпеме тытса илесси пит йывăрах та пулмарĕ, ăна хамăр алăрах сыхласа хăварасси вара асапран та асап пулса тăчĕ. Вăйпитти çын йывăр миххе те çĕклет-çĕклетех, анчах ăна вăрах йăтса тăма кашниех пултараймасть. Çавнашкал пулса тухрĕ Чĕкеç тӳпемĕнче те.

## Кирек мĕнĕн те вĕçĕ пулатех

Постри салтаксем каç та, ир те тавралăха тимлĕн сăнаççĕ. Ирхи тĕтре сирĕлсен стереотруба витĕр Новосокольники хули курăнать. Тĕрĕссипе хула вырăнĕ темелле. Ăна фашистсем тĕпренех аркатнă. Унта-кунта çуртсен кăшкарĕсем кăна тăрса юлнă. Шыв уçлакан башньăн тăрăсăр кӳлепи инçех те мар пек — унта тăшман сăнавçисем куçлаççĕ.

Фашистсенчен тем те кĕтме пулать, анчах çакă паллă: вĕсем çывăрмалла чухне çывăраççĕ, апат вăхăтĕнче апатланаççĕ. Кунсăр пуçне çапăçăва выçăлла кĕмеççĕ. Ирхи апат хыççăн вара виççĕмĕш взвода хĕвел тухăç енчен те, хĕвел анăçĕнчен те çине-çинех атакăлама тытăнчĕç. Çук, ĕç тухмарĕ вĕсен. Артиллери вучĕ те пулăшаймарĕ. Тăшман туса янтăланă çичĕ-сакăр сарăмлă блиндажсем совет салтакĕсене те снарядсенчен шанчăклă хӳтĕлеççĕ. Çывăхри хуторта çурт-йĕре кăррипех сӳтсе пĕренисене гитлеровецсем йăтнă та йăтнă çакăнта. Акă вĕсен тăрăшăвĕ виççĕмĕш взвода та усса килчĕ.

Мĕн лайăх, çав лайăхах ĕнтĕ, анчах япăххи те лайăххинчен юлсах каясшăн мар. Тӳпеме хӳтĕлекенсене тăшман çирĕп кăшăла илчĕ: унталла та ямасть, кунталла та кăлармасть. Взвод хĕç-пăшал енĕпе аптрамасть — фашистсенчен те чылаях юлнă, çимелли енĕпе вара шăлсене çӳлĕк çине пуçтарса хурасси кăна. Пĕрер талăклăх НЗ (тĕкĕнми запас) парса янă пулин хуть. Курăк туни татса çинипе малалла нумай каяймăн.

Рота тăшман кăшăлне татасшăн тăрăшни ăнăçлăх кӳмерĕ. Алăка тултан уçма май килмесен шалтан тĕртсе пăхмалла. Взвод командирĕ рота вăйĕсем патне çĕмĕрсе тухма Кураков аслă сержант отделенине приказ пачĕ, хăй те пĕрлех пыма пулчĕ. Ун приказĕпех тăшман çине тапăнмалли çула Исидор Погапниковпа Тихон Бородов çĕрле минăсенчен тасатрĕç. Вĕсем задание икĕ сехет хушшинче пурнăçламаллаччĕ, çула уçни çинчен кĕсье хунарĕпе çутатса пĕлтермеллеччĕ, хăйсен отделенине унтах кĕтсе илмеллеччĕ. Анчах ĕç-пуç малтан палăртнă пек пулса тухаймарĕ. Отделени икĕ хантар хунарĕ çутине ниепле те кĕтсе илеймерĕ. Тул çутăласпа тин пĕччен таврăнчĕ заданирен Поганников.

— Çула минăсенчен тасатрăмăр... Бородов ăнсăрт пуля лекнипе вилсе юлчĕ...— пĕлтерчĕ çавскер.

— Шел... Тăпри çăмăл пултăр... Анчах ĕç вĕçленни çинчен мĕншĕн хунарпа çутатса систермерĕр?

Поганников мăк-мак тукаларĕ те нимĕн те калаймарĕ. Ара, вăл кĕсье хунарне таçта ӳкерсе çухатнă. Çитменнине тата пĕр вырăнта пуçне çĕр çумне пĕкнĕ те сехет ытла тĕлĕк курсах çывăрнă.

— Вăт ме сана!.. Вăт нарут!..— ирĕксĕрех çиллессĕн каласа ячĕ аннĕ сăмахĕсене взвод командирĕ.— Мĕншĕнне-мĕнне кайран тĕрĕслĕпĕр, халĕ операцие пуçлар. Каримов юлташ, Миша, илтетĕн-и, эсĕ ку операцире Поганниковпа юнашар пыр...

Ку отделенири Алексă Романухин — хăйне евĕр салтак. Яланваскать, пĕрмай хыпаланать, пур çĕре те çитсе ĕлкĕресшĕн. Кама пулăшу кирлĕ, вăл унта чи малтан çитет. «Максимкăн» йывăр лафетне йăтмалла-и — Алексă яланах хатĕр. Хăрушлăхран хăрамасăр теветкеллĕ ĕç тумалла— чи малтан вăл килĕшет. Ăçта васкать-ши, мĕншĕн хыпаланать-ши?

Вăл мĕн пур вăйĕпе тăшман окопĕсем еннелле тапаланчĕ, пуçĕнчи шухăшĕсем вара таçта хăяматра пăтранса çӳрерĕç. Пĕрре куçĕ умне ула-чăла чатăрлă тăван тапăр тухса тăрать, каçхи кăвайт умĕнчи савăк юрăсем аса килеççĕ, тепреăна Юманайăн кăтра çӳçлĕ хĕрĕ илĕртет. «Эпĕ вăрçă хыççăнхи кирек епле пурнăçпа та килĕшетĕп,— тухма пĕлмест Романухин пуçĕнчен ыттисене çĕнтерекен шухăш.— Чĕрĕ кăна юласчĕ. Уксах-чăлах пулса тăни нимех те мар. Тулĕк хама хам ĕçлесе тăрантма пултарам. Теплерен леш тĕнчене ăсанас марччĕ. Цыгана урăх халăх хĕрне качча илме юрамасть, анчах Галя Торговцева пек чиперккепе тапăр ирĕк памасан та мăшăрланмаллах пуль. Авланам та пурăнам пĕр куляпмасăр Юманайрах-и е Чулхулара... Вăрçă кăна хăвăртрах чарăнтăр. Çăкăрсăрах пурăнма пулать. Çĕр улмипе те аптрамĕ».

Çакăнпа пĕрлех Алексă вилĕмрен те хăрамасть. Вăл халĕ те малта, отделени тата взвод командирĕсемпе юнашарах. Пĕрерĕн-пĕрерĕн пластунла шуса отделенин тайлăмри хуçăк çирĕк ик енче пухăнмалла. Взвод командирĕ команда парсан ик енчен икĕ пулемет пеме пуçламалла, çав вут хӳттипе пурте харăссăн тăшман çине вирхĕнмелле.

Кăтартнă вырăна пурте тенĕ пекех пуçтарăнса çитрĕç ĕнтĕ. Поганниковпа Каримов кăна хыçалта тем мĕшĕлтетеççĕ. «Кур ĕнтĕ, мана сыхлама ятарласа çын уйăрчĕ пулать. Çапăçу хыççăн мĕн тăвасшăн-ха вăл мана? Анчах тăхта: пĕри те пĕри çапăçура чĕрĕ юлмасса та пултаратьçке...» Исиодор пуçĕнче усал шухăшсем хура çĕленле явăнаççĕ. «Мĕншĕн çав териех кураймасть-ха мана взвод командирĕ? Эрех вăрланă тесе, паллах, вăл хушнипе суд

турĕç мана... Чăх-чĕп фермине Кураковпа Легкоступов ман хыççăн унăн приказĕпе йĕрлесе пынă... Чĕкеç тӳпемĕнче минер туса хучĕ. Хăрушăрах ĕç шырасан та тупаймăн. Минер пĕрре кăна йăнăшать. Йăнăшать те капут пулать...»

Унăн тарăхăвĕ кăкăрне шăнăçми тулса пычĕ. «Операци хыççăн мĕн тăвасшăн-ха вăл манпа? Шăлне хăйрасах тăрать пуль-ха! Чăваш йĕксĕкĕ!»

Поганников автомат затворне уçса хупрĕ те хыçалалла пăхса выртакан Пожеданова тĕллерĕ. Перетчĕ те пулĕ — теме сиссе Каримов чăрмантарчĕ: кăлт тĕкрĕ сылтăм аллинчен. Поганниковăн тилĕрнĕ вăкăрăнни пек хĕп-хĕрлĕ куçĕсем темле хаяррăн ялкăшса илчĕç. Кăштахран Каримов пластунла малалла шума тапраннăччĕ кăна, Поганников автоматне каллех взвод командирĕ çине тĕллерĕ. Çакна командирпа юнашар выртакан Романухин курса ĕлкĕрчĕ, çав самантрах ăна кĕлеткипе вăр-вар хупласа та хучĕ. Поганников пускăч çекĕлĕ çине пӳрнипе пусас сулăма чарма пултараймарĕ—ăçтиçук аллинчи автомат вилĕм кӳмелле тăрăлтатса илчĕ те, пульăсем Романухин — вашават кăмăллă паттăр цыган — ӳтне тирĕнчĕç. Мĕн пулса иртнине çынсем лайăххăн ăнкарма та ĕлкĕреймерĕç — Каримов автомачĕпе хыçалалла çаврăнса печĕ: ирсĕр Поганникова çĕр çумне пашалу пек çыпăçтарса хучĕ.

Çапла отделенире самантрах икĕ çын чакрĕ: пĕри командира çăлма паттăрла вилчĕ, тепри — кĕççе пит — хăй мĕн шыранă, çавна тупрĕ. Шел, инкек хыççăн синкек те килсе çитрĕ. Поганников тапратнă пăтăрмаха пула унччен ăна-кăна асăрхаман тăшман хăлхине чанках тăратрĕ, хăйшĕн хăрушлăх сăмси умĕнчех пытарăннине чухласа илчĕ те ку вырăна тупăсенчен пеме тапратрĕ. Паллă: артиллери вучĕ айĕнчех выртсан пĕтĕм отделени инкеке лекет. Малалла е каялла тапса сикмелле, артиллери вутĕнчен çапла хăтăлмалла.

— Малалла талпăнар мар-и?— канашланă пек кăна каларĕ Пожеданов отделени командирне. Аслă сержант Кураков ăна приказ пекех ăнланчĕ.

— Гранатăсене хатĕрлĕр! Пурте малалла!— илтрĕç салтаксем отделени командирĕн хăюллă сассине.

Юратмасть тăшман куçа-куçăн, алла-аллăн, кăкăра хирĕç кăкăр тăрса çапăçма, хальхинче вара ăна апла çапăçассинчен пăрăнма май килмерĕ. Кураковăн окоп çывăхĕнче виçĕ гитлеровецпа харăсах çапăçмалла пулчĕ. Ăна виççĕн те ураран ӳкерейменрĕç: самбо пулăшрĕ. Хыçалтан сиксе ларса мăйран пăвма шутланине аслă сержант пуç

урлă окопалла ыватрĕ, иккĕмĕшне çиçĕмле хăвăрт çĕкленнĕ урипе çăварĕнчен тапрĕ, виççĕмĕшне кăкăр шăмминчен аяларах автомат приклачĕпе начлаттарчĕ.

Взвод командирĕ тăшман офицерĕн аллине хыçалалла пăрса лартнă та çыхасшăн тăрмашать. Ăна пулăшма ыткăнасшăнччĕ Кураков — окопран пăрахнă граната ванчăкĕсем унăн хырăмне темиçе тĕлтен тирĕнчĕç.

Темиçе кун каялла санбатран сипленсе таврăннă Воробьевпа Ястребов тата Булатов фашистсен окопĕсем çине граната хыççăн граната вăркăнтараççĕ.

«Азраил аллине лекиччен, ĕмĕрлĕхе куç хупиччен тепре çеç курнăçасчĕ катынпа Эминепе, сандукач пек кызымпа...» — çиçсе илет Булатов пуçĕнче çап-çутă шухăш. Паттăр тутар гитлеровецсен окопне тепĕр граната вăркăнтарсан çак шухăш та хăвăрт çухалать. Пĕтĕм ăс-тăн тăшманпа юлашки юн тумламĕччен çапăçас тĕллеве пăхăнать, малалла та малалла талпăнма чĕнет.

— Темшĕн-çке ман ал тупанĕ кĕçтет... Çут тĕнчерен уйрăлмалла пулать-и унта е çук-и, вăй çитнĕ таран чышкăлам-ха Гитлер эшкерне. Уйăх та хĕвел, пулăшăр мана!

Çапла каласа персе ӳкерет тăсланкă фашиста Лилипутов.

Çапăçу кĕçех тăшман окопĕсене куçрĕ, анчах çĕнтерӳллĕ пулаймарĕ. Пур енчен те хытă хĕснĕрен отделени хамăрăннисем патне çул уçаймарĕ. Умĕнчи задачăна пурнăçлаймасăрах ăна каялла чакма тиврĕ.

Кaç кӳлĕм çапăçура пуç хунисене чысласа пытарчĕç... Взвод Алексă Романухинăн паттăрлăхне уйрăмах пысăка хучĕ, ăна ĕмĕрлĕх вырăн тӳпем çинчи чул катрамĕпе юнашар пачĕç.

— Тăпру çăмăл пултăр, тăванăм...— терĕç вăрçăри юлташĕсем пуç тайса. Тăпра çине таçтан тупнă чечексем хучĕç. Патронсене перекетлеме тивнĕрен салют парасси кăна пулмарĕ. Ытти чухне хăйне яланах патвар тытакан Пожеданов вил тăпри умĕнче тăванне çухатнă пекех пуçне сĕнксе тăчĕ. Пичĕ çинелле йăрăлтатса юхакан куççуле çынсенчен пытармасăр шăлса илчĕ те тӳпемĕн хĕвел анăç енчи позицисене тĕрĕслеме кайрĕ.

* * *

Чĕкеç тӳпемĕшĕн çапăçу виççĕмĕш кун, авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче, уйрăмах хĕрӳллĕ те хаяр пулчĕ. Хĕвел анăç енчен тӳпем сĕвекленсе, пысăках мар лапам пулса тăрать. Эппин, тӳпеме ку енчен танкпа пырса кĕме май пур.

Ҫакӑнпа усӑ курма шутларӗ те ӗнтӗ тӑшман. Ир-ирех Удрай кӳлли хыҫӗнчен пилӗк танк кӗрлесе килни курӑнса кайрӗ. Вӗсене чи малтан хӑйӗн сӑнав пунктӗнчен Громов капитан асӑрхарӗ. Юлнӑ-ши-ха тӳпем ҫинче ҫав йывӑр хурҫӑ кӳлепесене ҫӑварлӑхлама пултаракан вӑй? Халлӗхе пур иккен. Бронебойщиксен — Павел Артамоновпа Филипп Коноваловӑн аллисем темле йывӑр вӑхӑтра та чӗтремеҫҫӗмӗн. Капитан лайӑххӑнах курчӗ: вӗсем питӗ тӗл персе тӑшманӑн икӗ танкне лектерчӗҫ-лектерчӗҫех, хускалайми чарса лартрӗҫ.

Фашистсен виҫӗ танкӗ каялла ҫаврӑнчӗ те хӑрушӑ мар вырӑнта чарӑнчӗ. Хӑйсен ҫулне пӳлекенсем ӑҫтине халӗ пӗлеҫҫӗ танксен ӑшӗнчисем. Тупӑсемпе пулеметсенчен асар-писер вут тӑкма тытӑнчӗҫ тӳпем ҫинелле. Вутпа металл ахӑр саманан ҫавра ҫилне кӑларчӗҫ. Снарядсем тӗнче тӑнчах пӗтесле ӳхӗрчӗҫ. Ҫакнашкал урӑм-сурӑм тӑвӑлра нимӗнле чун та чӗрӗ юлмасса шанчӗҫ фашистсем.

Пӗр снаряд ҫывӑхрах ӳксе ҫурӑлсан, айккинерех вырткан Молчанов пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ те тӗлӗнсех кайрӗ: Артамонов кӑкӑрӗнчен юн палкать, шиксӗр бронебойщикран, Коноваловран, лутӑрканнӑ-хуҫкаланнӑ чӗмсӗр кӗлетке кӑна тӑрса юлнӑ. «Котелок пӗчӗк-пӗчӗк — ҫапах икӗ ҫынна пӗрре, ПТР вӑрӑм-вӑрӑм, йывӑр-йывӑр — пурпӗр пӗр ҫынна кӑна»,— шӳтлекелетчӗ Филипп хутран-ситрен. Молчанова вӑл Владимир хулинчен инҫех мар пӗр колхозра правлени айӑрӗсене пӑхни, хӑйне фураж вӑрлать тесе пӗр айӑпсӑрах тӗрмене тытса хупни ҫинчен кала-кала паратчӗ. «Ура айӗнчен амак-тытамак сиксе тухас пулсан киле ҫырса пӗлтерме ан ӳркен. Адрес гимнастерка кӗсйинче...» — аса илтернӗччӗ паян ирхине те сӑпайлӑ тата ырӑ кӑмӑллӑ Филипп. Вилессе чунӗ сиснӗ пулӗ ҫав.

Юлташӗн кил адресӗ пуррипе ҫуккине тӗрӗслесе пӑхма май килмерӗ Молчанова. Тӑшман танкӗсем гусеницисене чӑнкӑртаттарса тепӗр хут кунталла тапранчӗҫ. Пӗр пӑркаланмасӑр ытла та хӑюллӑн килеҫҫӗ хӑяматсем — хӑйсене хирӗҫ тӑма пултараканни юлман тесе шутлаҫҫӗ ахӑр. Анчах вӗсем йӑнӑшнӑ иккен. Молчанов виҫӗ танкран пӗрне икӗ хут персенех чарчӗ. Вӑрӑм кӗпҫеллӗ пӑшалне иккӗмӗш танк ҫине тӗллерӗ, пускӑч ҫекӗлӗ ҫине пусса та ӗлкӗрчӗ — ҫав самантра пуля ун тӑнлавӗнчен лекрӗ те пуҫӗ сарлака кӑкӑрӗ ҫинелле лӑнках усӑнчӗ. Иккӗмӗш танкра тем кӗрӗслетсе ҫурӑлнине, ҫавӑн хыҫҫӑнах вӑл та тапранайми чарӑннине куҫӗ сӳниччен курса ӗлкӗреймерӗ мӑнтарӑн Молчанов.

Виççĕмĕш танк траншея патне çитесси темиçе метр çеç юлчĕ ĕнтĕ. Унта тăракансене те, траншейăна хăйне те вăл халь-халь пашалу пек лапчăтса хурать. Сасартăк танка хирĕç пуçне бинтпа çавăрса çыхнă салтак çĕкленчĕ. Аллинче гранатăсен çыххи. Кам ку? Кам-ши? Кĕтмен-туман Виталий Бражкин! Пĕтĕм пĕвĕпе! Кĕрнеклĕ кĕлеткипе! Çамки çинчи куçлăхĕпе! Окопран сиксе тухса тӳп-тӳрĕ тӳрленсе тăчĕ те лап! выртрĕ гусеницăсен айне. Окоп патнех çитнĕскер, танк тăпах чарăнчĕ.

Пăшатан Миккулĕ взводĕнчи паттăрсем хăйсем вилессе вилчĕç, анчах тăшман танкĕсене малалла кайма памарĕç, тытса чарчĕç-чарчĕçех. Окопра отделени командирĕ Кириллов тăр пĕчченех тăрса юлчĕ. Вăл Бражкина, хăй шансах пĕтермен Виталие, халĕ тăван ывăлне юратнă пекех чуп тунă пулĕччĕ. Çук çав, ун кĕлеткинчен куçа курăнакан пĕр лăстăк та юлман. Паттăр чунĕ кăна ун сăнĕпе пĕрле Кириллов куçĕ умĕнче çап-çуттăн  çуталса тăрать. Чĕрĕ юлнă пулсан Виталий, тӳлек сăнлă Витька, хăй паттăр пулнăшăн флягăран мĕн чул та пулин тултарса пама ыйтатчех. Паллă: паянхи паттăрлăхшăн ăна нарком паекĕ ик-виçĕ хут ӳстерсе пама пулатчĕ. Спиртне комбат тупатчех, анчах Витькăна халĕ ĕнтĕ пĕр тумлам та кирлĕ мар.

Çак шухăшсемпе Кириллов чарăнса ларнă танксенчен гитлеровецсем тухасса кĕтрĕ, пӳрнине алă пулемечĕн пускăчĕ çинчех тытрĕ, лешсем темшĕн-çке пуç кăтартмарĕç. Унччен те пулмарĕ, сӳ турĕ отделени командирĕн тулли кĕлетки: танксем хыçĕпе пытанараххăн киле парать гитлеровецсен эшкерĕ! Вăт тăм пуç, уй тăмани! Танксем пехотăсăр çӳремеççĕ вĕсен. Çавна паçăрах тавçăрмалла пулнă ĕнтĕ. Эшкере хирĕç пĕччен мĕнех тăвайăн?! Пулăшу ыйтса хĕрлĕ ракета ярас шутпа окопри нишăна — тăм стена ăшне тунă путăка — алă чикрĕ. Хыпашларĕ, хыпашларĕ — кăлăхах. Ракетница тупăнмарĕ.

Шырама та вăхăт çук. Гитлеровецсем çитесси нумаях та юлмарĕ. Хирĕç перекен пулманран пĕшкĕнмесĕрех утаççĕ. Пĕр-пĕринпе сăмах ылмаштарса, кулкаласа та илеççĕ. «Чĕрĕ рус Иван юлман пулмалла кунта...» — теççĕ ахăр. Вĕсем пачах кĕтмен çĕртен алă пулемечĕ тăрăлтатма тытăнчĕ. Тăшман çине тăхлан çумăрĕ Кириллов çутарать. Гитлеровецсене курăк çинчи симĕс пыйтă пекех йăпшăнса выртма тиврĕ. Кĕçĕн сержант пушаннă диска теприне ылмаштарнă хушăра гитлеровецсем каллех сиксе тăчĕç, малалла чупма пикеннĕччĕ кăна — пулемет вут-çулăмĕ вĕсен çулне татах пӳлсе лартрĕ.

Çав вăхăтра Кирилловăн сулахай хулне тем пĕçертсе

илчĕ — танк кӳлепи хыçĕнчен ăна тăшман офицерĕ пистолетран тĕллесе пенĕ иккен. Вăт хăямат! Çавскере асăрхасанах темиçе пуля, ывăçпа сапнă пăрçа пек, танк кӳлепине çапăнса чанклатрĕç — тăшманăн тăсланкă офицерĕ касса янă йывăç пекех тĕшĕрĕлсе ӳкрĕ.

— Çав кирлĕ сана, хăямата! — хĕпĕртенĕрен сасăпах каласа ячĕ ку сăмахсене Кириллов.

Ун куçĕ умĕнче тăшман виллисен шучĕ хушăнсах пырать. Пулемета вăл юлашки диск лартрĕ. Унăн кĕпçи алăпа перĕнмелле мар хĕрсе кайнă. Диск лартнă чухне тар тумламĕсем ӳкрĕç те, кĕпçе вĕри çатма евĕр чăшлатса илчĕ. Гимнастерки витĕр сулахай хулĕ тĕлĕнчен юн тапса тухрĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн куçĕ хурала-хурала килет. «Русс, сдавайсь!» — илтет вăл çине-çинех. «Епле апла? Вилсен те парăнмастăп!» — çирĕпленет кĕçĕн сержант пуçĕнче пархатарлă шухăш. Чĕрĕ юлнă фашистсем каллех малалла тапаланма пуçларĕç — вĕсене хыçалтан тачка кĕлеткеллĕ тепĕр офицер хӳтерет.

Ах, инкек! Çав вăхăтра тăшман пули ăна кăкăрĕнчен амантрĕ. Кĕçĕн сержант тăруках ним курми пулчĕ, алли пемелли пускăча çухатрĕ, кĕлетки окоп стени çумнелле сулăнса кайрĕ.

— Тинех савăнаççĕ ĕнтĕ... хăяматсем...

Çапла пулчĕç Тăван çĕр-шывăн шанчăклă ывăлĕн юлашки сăмахĕсем.

— Çук! Савăнаймĕç!..

Ку вăл аманнипе пĕр алли усăнса аннă Иван Данилов сасси пулчĕ. Вăл Кириллов хыçне паçăрах çитсе тăнă иккен. Йывăр аманнă Петр Данилов та юнашар окопа йăраланса çитнĕ. Аллинче пистолет-пулемет, мăйĕнчен юн юхнине пăхмасăр гранатăсем янтăлать. Пуç çĕкленĕ фашистсем çине вăл тăванĕнчен маларах пеме пуçларĕ. Иван Данилов меллĕ самант тупăнсанах Семен Кириллов кĕçĕн сержанта питĕнчен чуп турĕ те асăрхануллăн окоп тĕпне вырттарчĕ. Çапăçу каллех хĕрсе кайрĕ. Дисксем пушанса çитсен гранатăсем хута кайрĕç. Икĕ тăван хăйсем сыхлакан позицисене çаплах тăшмана памарĕç. Юн нумай çухатнăран йăлтах халтан кайрĕç — пур пĕр пĕр утăм та каялла чакмарĕç.

Сасартăк гитлеровецсем тăнчах курăнми пулчĕç. Аçта мура кайса кĕчĕç вĕсем? Икĕ паттăра парăнтараймасăр каялла чакрĕç-ши? Даниловсем тĕлĕнессе тĕлĕнчĕç, анчах чăн-чăн сăлтавне тавçăрса илеймерĕç-ха. Ку вырăна тепĕр минутранах снаряд хыççăн снаряд, мина хыççăн мина ӳкме тытăнчĕ. Унтан та кунтан тăпра сирпĕнет, йĕри-тавра çу-

лăм явăнать. Гитлеровецсем хăйсен артиллерийĕнчен пулăшу ыйтнă ĕнтĕ.

Чĕкеç тӳпемĕн хĕвеланăç енче хаяр çавра çил ахальтен мар тапраннине, унтисене пулăшу кирлине пĕлтерекен пулмасăрах ăнланчĕ взвод командирĕ. Вăл хăех чĕкеç йăвисен хысакĕ патне чупрĕ, унти виçĕ салтака тăшман артиллерийĕ пеме чарăнсанах хĕвел анăçĕнчи траншейăна йышăнса хӳтĕлеме приказ пачĕ.

— Ай, атьсемри, тур çырлахах, никам та çук-çке кунта...— тĕлĕннипе пĕççине шарт çапрĕ Илья Лилипутов.

Траншея тĕпĕнче Даниловсем — Иванпа Петĕр — пĕр-пĕрне ыталаса выртаççĕ. Иккĕшĕн айне юн юхса кĕвĕлсе ларнă.

Кунта паçăртарах кăна мĕн пулса иртни Табакова пĕрре пăхсах паллă пулчĕ. Икĕ чăваш — çывăх тăвансем — чăнахах та паттăрла çапăçнă иккен. Вĕсен чĕрĕ чухнехи пекех тăп-тăп тутисем халь-халь çапла каласа ярассăн туйăнать: «Тăван çĕрĕмĕр-шывăмăр, эпир санăн шанчăклă ывăлусем. Эсĕ пиртен мĕн кĕтнĕ, эпир çавна турăмăр». Икĕ пăхаттир аллисене чыслăн пĕр-пĕрин хулĕ çине хунă. Табаков пăхрĕ-пăхрĕ те, мăшăр куçĕ çине куççуль тумламĕсем пăчăртанса тухрĕç.

— Пĕтĕмлетсе калас тăк, тăшманпа юнашар тăрса çапăçнă, юн юхтарса ыталашса вилнĕ...— пилоткине хывса пуç тайрĕ вĕсене Табаков. Хытса кайнăн пăхса тăчĕ-тăчĕ те шинельне хывса витрĕ икĕ пăхаттире Легкоступов. Халь ĕнтĕ апла туни вĕсене кирлĕ маррине пĕлменрен мар, чун-чĕререн хисеплесе, паттăрлăха пысăка хурса. Позици умĕнче виле çумĕнче виле выртать-çке-ха.

Сасартăк тăшман виллисем йăшăл-йăшăл тунăн туйăнчĕç Лилипутова. Çӳçĕ шăрт пек тăрса кайрĕ, çамки çине сивĕ тар тапса тухрĕ. Асамçă та хăрама пĕлет иккен. Тинкерсе пăхсан тĕшмĕртрĕ-тĕшмĕртрех. «Турра шĕкĕр, вилнисем чĕрĕлмеççĕ-ха,— сăхсăхса илчĕ Илья.— Чĕррисем йăраланса килеççĕ...»

— Взвод, итле ман командăна,— янăраса кайрĕ унăн çамрăкланнă сасси.— Кураков отделенийĕ сулахай фланга йышăнтăр! Кириллов отделенийĕ хăй вырăнĕнчех оборона тыттăр! Ман отделени ăçта йывăр, унта пырса пулăшать. Ман командăсăр пеме пуçламалла мар...

Çук, кĕтменччĕ юлташĕсем Ильяран кунашкал хăюлăх. Виçĕ салтакран взвод, виçĕ отделени туса хуни, вилнисемпе аманнисене чĕрĕ пек кăтартни фашистсене улталама, вĕсен пуçтахлăхне пусарма кирлĕ ахăр. Хăй алă пулемечĕ хыçне тăчĕ, юсавлине тĕрĕслесе çĕнĕ диск вырнаçтарчĕ.

Табаковпа Легкоступов та пистолет-пулемечĕсене тăшман çинелле тĕлленĕ, гранатăсем те хатĕрлесе хунă. Кĕçех фашистсен эшкерĕпе виçĕ совет салтакĕ хушшинче пурнăçпа вилĕм ыйтăвне татса памалли хаяр çапăçу тапранчĕ.

Çапла, «кĕр каять те çур килет» операци Пожеданов взвочĕ Чĕкеç тӳпемне сасартăк тытса илнипе вĕçленмерĕ. Кĕске тытăçу вăраха пыракан пысăк çапăçусем патне илсе пычĕ. Малтан виççĕмĕш взвод хăй тĕллĕн çапăçрĕ, унтан ку çапăçăва ротăн мĕн пур вăйне хутшăнтармалла пулчĕ, мĕншĕн тесен гитлеровецсем Чĕкеç тӳпемне йĕри-тавра çавăрса илчĕç, хупăрлава лекнĕ харсăрсене пĕри юлми пĕтерме е тыткăна илме ĕмĕтленчĕç. Тӳпем çине çурçĕр енчен шурлăхлă-путлăхлă вырăнсем, тутăх тĕслĕ шыв кӳлленчĕкĕсем ямаççĕ, кăнтăр енче тӳпем хысакĕ тăруках парăнтармалла мар чăнкă. Çавна май юн тăкмалли йывăр çапăçусем тӳпемĕн хĕвел тухăçпа хĕвел анăç енче пычĕç.

Гитлеровецсем Чĕкеç тӳпемĕ пĕлтерĕшне лайăх пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа ăна хăйсен аллине каялла тавăрасшăн пур майпа та тапаçланаççĕ. Артиллери вучĕпе усă кураççĕ, авиацие ĕçе кӳлеççĕ, çапăçăва танксене кĕртеççĕ, анчах вĕсене нимĕн те тивĕçлĕ пулăшу параймасть-ха. Чĕкеç тӳпемĕ çинче çаплах совет салтакĕсем хуçа.

Аçта ӳкессине пĕлнĕ пулсан тӳшек сарма пулатчĕ. Çакна Пожеданов та, унран аслăрах командирсем те пĕлеймен çав, пĕлеймен. Çавна пула тӳпем çинчи салтаксем ăна тытса илнĕренпех çăвара пĕр хĕлхем те яман-ха. Çитменнине тата унта миçен чĕррĕн-сыввăн юлнă-ши?

— Иккĕленмелли çук, тӳпеме хӳтĕлекенсен шучĕ хухсах пырать... Çакă та паллă: ăна тăшман аллине тепĕр хут памалла мар...— пурин умĕнче те каларĕ рота командирĕ Геннадий Петрович Воронков лейтенант. Кĕрешĕвĕн иккĕмĕш кунĕнче хупăрлава татмалли операцие вăл хăй ертсе пычĕ, анчах çакна тума рота вăйĕсем çителĕксĕр иккен. Кунта тăшман йышĕ пысăк, вăл тем тери вăйлă хĕç-пăшалланнă. Виççĕмĕш кун çапăçăва батальон вăйĕсене хутшăнтармалла пулса тухрĕ.

Взводри боецсем тăшман танкĕсемпе кĕрешнĕ вăхăтра тӳпемĕн хĕвел тухăç енче те хĕрӳ çапăçу пычĕ. Чĕкеç тӳпемне хамăр алăрах сыхласа хăварма, Пожедановăн йышĕ сайралнă взводне хупăрлавран хăтарма часах батальон вăйĕсем те хутшăнчĕç.

Виççĕмĕш взвод командирне Пожеданов старшинана комбат пысăка хурса хаклать. Хăй ротăра чухнех кăмăллассачĕ çав харсăр чăваша, халĕ пушшех хисеплекен пулса кайрĕ. Виççĕмĕш взвод ăристансен команди пулнине ротă-

ра та, батальонта та манса кайнӑ темелле. Тӗрӗссипе каласан старшина Чӗкеҫ тӳпемне тӑшманран ӑспа та чеелӗхпе, хӑюлӑхпа та хастарлӑхпа тытса илчӗ, пурлӑҫуклӑ вӑйпа ӑна виҫҫӗмӗш кун ӗнтӗ хӑйӗн аллинче тытса тӑрать. Маттур! Маттур ҫеҫ мар, паттӑр!

Операцие Василий Петрович Громов капитан хӑй ертсе пычӗ. Вӑл тӑрӑшнипе ӗнтӗ Чӗкеҫ тӳпемӗшӗн татӑклӑ ҫапӑҫу пуҫлас умӗн артдивизион тӑшман позицийӗсене пӗр сехете яхӑн снарядсемпе тӑрмаларӗ те сухаларӗ, ватрӗ те ҫӗмӗрчӗ.

Ҫакна курса Пожеданов чӗрӗ юлнӑ пӗтӗм йышне пӗр чӑмӑра пухрӗ, артиллери хатӗрленӗвӗ вӗҫленсенех тӑшман ҫине тапӑнчӗ, ӑна окопсенчен гранатӑсемпе ӑшталантарса хӑвалама тытӑнчӗ. Сылтӑм хулне амантиччен взвод командирӗ хӑех темиҫе гитлеровеца тирпейлерӗ. Аманнӑ хыҫҫӑн та хӑй пекех аманнӑ салтаксемпе пӗрле тӑшман окопӗсен тепӗр енне тухрӗ, гитлеровецсене персе те чиксе, урра кӑшкӑрса, чӗп-чӗр юн пулса ураран ӳкиччченех хамӑрӑннисене хирӗҫ чупрӗ.

Батальон командирӗн ударлӑ отряд умӗнче каланӑ сӑмахӗ вӑрӑм пулмарӗ:

— Акӑ мӗн, юлташсем,— терӗ вӑл,— ют ҫӗр-шыва пуҫтахланса таптаҫҫӗ ирсӗр аттисемпе гитлеровецсем. Эпир вӗсене атте-анне ҫӗрӗ ҫинче иртӗхме паратпӑр... Хӑюллӑрах пулӑр, тӑвансем, паттӑртарах пулӑр!

Капитан команда-мӗн памарӗ, окопран ҫӑмӑллӑн сиксе тухрӗ те салтаксене лӑпкӑн хӑй хыҫҫӑн пыма чӗнчӗ:

— Айтӑр, тусӑмӑрсем!

Штурмлакан отряда атакӑна вӑл ҫапла ҫӗклерӗ. Ҫав отрядри боецсем тӳпем ҫине вӑркӑнса кӗнӗ ҫӗре унта чӗрри-аманманни виҫҫӗн ҫеҫ юлнӑччӗ: Илья Лилипутов вырӑс (асамҫӑран пуля хӑй пӑрӑнать!), Энвер Булатов тутар (унӑн ҫӗнтерӳпе таврӑнса Эминепе кӑштах пурӑнас килет!) тата Иван Иванов чӑваш (ачасене шкулта татах вӗрентес ӗмӗтлӗ). Капитан виҫҫӗшне те ҫӗнтерӳ ячӗпе алӑ парса саламларӗ, ыталаса хӑй ҫумне чӑмӑртарӗ. Йывӑр аманнӑ хыҫҫӑн тӑнне ҫухатса ҫапӑҫу хирне выртса юлнӑ Пожеданова кӗҫех шыраса тупрӗҫ. Громов капитан тӑна кӗнӗ старшинана питӗнчен темиҫе хут чуп турӗ, ҫӗнтерӳпе саламларӗ, ӑшӑ сӑмахсем каларӗ. Взвод командирне, Кураков аслӑ сержантпа Шакуров рядовоя васкасах санвзвода наҫилккасемпе йӑтса кайрӗҫ.

Хӑйне наҫилкка ҫине вырттарсан Пожеданов Чӗкеҫ тӳпемӗ ҫине пӗр вӑхӑт тинкерсе пӑхрӗ, ку тӳпем мӗн тери улшӑнниччен тӗлӗнчӗ. Малтан вӑл ем-ешӗлччӗ, унтан сна-

рядсемпе минӑсем тӑпран ҫиелти сийне кукаленӗрен хуп-хура курӑнакан пулчӗ. Қатаран перекен артиллерипе бом-бардировщиксем тӳпеме татах та тарӑнрах чаврӗҫ, унталла та кунталла тӑм сирпӗтрӗҫ. Халӗ вара тӳпем хӑмӑр тӗслӗ.

— Қаҫарӑр, взвода тӗрӗс-тӗкел сыхласа хӑвараймарӑм... Чӗрӗ-сывӑ юлсан, хӑвӑр хирӗҫлемесен, каллех сирӗн ба-тальона таврӑнатӑп, юлташ капитан,— вӑйсӑррӑн аллине сӗлтрӗ Пожеданов.

Чӗкеҫ тӳпемӗ ҫинче ҫӗнтерӳллӗ атакӑсене кайнӑ пӑха-ттирсем — тӗрлӗ халӑх ывӑлӗсем. Ыталашса пуҫ хунӑ Даниловсем, вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнӗ Қириллов, йывӑр аманнӑ Пожедановпа Қураков, стройра юлнӑ Иванов — чӑвашсем, вилӗм кӳрекен Азраилтан хӑраман Булатов — тутар, ко-мандира ҫӑласшӑн хӑйӗн пурнӑҫне те хӗрхенмен Роману-хин — цыган, ыттисем — пурте вырӑссем... Пурнӑҫпа вилӗм хушшинче паттӑр пулма вӗсене пӗр тӗллев хавхалантарчӗ: тӑван ҫӗре тӑшмантан тасатасси. Тӗрлӗ халӑх ҫыннисем пурте пӗрле, тӑванла юнашар тӑрса, пӗрешкел шухӑш-кӑ-мӑлпа ҫапӑҫнӑ кунта, ҫавӑнпа ҫӗнтернӗ те. Тӑван ҫӗр-шывӑмӑр пирӗн пурин те пӗрре кӑна.

Чӗкеҫ тӳпемӗ ҫирӗппӗн совет салтакӗсен аллине куҫрӗ. Вӑрҫӑ пӗтесси ҫаплах курӑнмарӗ-ха. Қалинин фронтӗнче вырӑнти ҫапӑҫусем унччен пекех малалла тӑсӑлчӗҫ. Ан-чах салтаксем те, командирсем те пӗлсе тӑчӗҫ: анлӑ наступ-ление куҫасси инҫе мар. Вӗсем пурте шанса тӑчӗҫ: кирек мӗнӗн те вӗҫӗ пулатех. Тӑшмана парӑнтарсан вӑрҫӑ та чарӑнӗ.

## ПУРНӐҪ ҪУЛӖ САКӐЛТАЛЛА

### Чун савни пӗрре кӑна

Юманайне фронтран чун-чӗрене ҫӳҫентерекен хӑрушӑ хыпарсем килсех тӑчӗҫ: хулана аркатнӑ, яла ҫунтарса янӑ, вӗлернӗ, амантнӑ... Ашшӗ хыпарсӑр ҫухални ҫинчен хут килнӗренпе почтальонкӑна курмассерен Маргарита чунӗ сӳлетсе илет — паттӑррӑн пуҫ хуни ҫинчен пӗлтерекен хута чӗтрекен аллипе паян кама парать-ши?

Виктортан ҫыру кун сиктерсе килсе тӑнӑ вӑхӑтра хӗр чӗри сехӗрленсех тапмастчӗ. Тем пулчӗ-ҫке ун каччине юлашки вӑхӑтра — сиплӗх кӳрекен виҫкӗтеслӗхсем унран килми пулчӗҫ. Хӗвеллӗ ҫутӑ кунсем те ӑмӑр ҫанталӑк пе-кех тӗксӗмленнӗн туйӑнма пуҫларӗҫ Маргаритӑна. Вӑхӑт-

вăхăтăн чунĕ тăвăлса килет. Ялта хăйпе пĕр çулалли каччăсем çук мар, анчах темшĕн-çке Виктор ун асĕнчен тухмасть. Маттурри нумай та, чăн маттурри пĕрре кăна çав. Кăмăла каяканни нумай та, юратни пĕрре çеç пулать. Тусĕнчен Рита çыру тем тери кĕтрĕ — кĕтсе илеймерĕ. Çыру мар пулсан, вăл чĕрри çинчен, пурри çинчен хыпар кăна килтĕрччĕ — килмерĕ. Çыру яманшăн ăна тарăхмаллипех тарăхрĕ.

Тепĕр чухне хĕр чĕрине иккĕленӳ ăманĕ кăшлама тытăнать. «Эп кирлĕ мар пулĕ çав ăна. Манчĕ ахăр хăйшĕн çунакан хĕре. Пуçĕнчен ĕмĕрлĕхех кăларса пăрахрĕ-ши?» Çапах кунашкал килпетсĕр шухăшсене чĕринче йăва çавăрма памасть хĕр. Хăйне хăй алла илет те иккĕленĕве татăклăн сирсе ярать. Иккĕленӳ сирĕлесси сирĕлет, хĕр чунчĕринчен тунсăхниепле те хăпасшăн мар. Çавна пула Маргарита пĕрмаях кичем çӳрет. Почтальонкăна курсан ăна хирĕç васкаса чупать. Унран хаçат илсен тата тем кĕтнĕн тилмĕрсе пăхса тăрать. Пĕлмест çав Маргарита: амăшĕ фронтран килекен виçкĕтеслĕхсене кăтартнă адреспа хĕрне тӳреммĕн пама почтальонкăна чарнă. Шăл йĕрсе çырнă çырусем хĕре лăпкăн ĕçлеме чăрмантараççĕ имĕш. Çитменнине тата, кашни çырăва хурав пама сахал мар тăрмашмалла. Çавăнпа Таисия Петровна çав çырусене упрама шанчăклă вырăн тупнă: чăланти тĕкĕр хыçне чикейсе хурать. Çавăн пек тума ăна ак мĕнле шухăшсем хистерĕç: «Касам та татам вĕсен çыхăнăвне. Пĕр каснă турпас каялла çыпăçмĕ. Тем тесен те кашкăр вăрманаллах пăхать. Тĕрмере ларнă çынран та ыррине кĕтмелли çук. Çитменнине, хĕртен сакăр çул аслă. Ай, ман хĕре ма кирлĕ вăл? Рита çамрăк-ха, урăххине те тупĕ...»

Амăшĕн шухăш кустăрми хăш-пĕр чухне урăх йĕр çине те куçса кайма пăхать, анчах туххăмрах каялла таврăнать. «Чăн ĕнтĕ, Виктор — ăслă-пуçлă çын, тульккăш çынни тĕрмере ларнă пулсан ун ăсĕпе мĕн тăвас? Хĕр чухнехи тус — вăхăт ирттерме, упăшка — ĕмĕр пĕрле пурăнма. Виктор çын ĕретлĕ кĕрӳ пулаймĕ. Тĕрĕсех чартăм пуль çак шанчăксăр çынпа çыру çӳретме».

Хĕрĕ фронтран çырусем тӳсĕмсĕррĕн кĕтнине, хыпар çукки ăна хытах кулянтарнине амăшĕ асăрхарĕ-ха. Асăрхасса асăрхарĕ, анчах хĕр чĕрине лăплантарма васкамарĕ.

Бригадăра ĕç мăй таран Таисия Петровнăн. Çур аки çывхарнă май ăна та тумалла, кăна та хатĕрлемелле. Шкул ачисем çамрăк вăкăрсене кӳлсе çӳреме хăнăхтараççĕ. Хĕрсем вăрлăх сортласа тасатаççĕ. Тимĕрçĕ лаççи валли ĕнер

МТСран хĕç тимĕр турттарса килчĕç, паян чугун çул станцине çĕр кăмрăкĕ тиесе килме лав ямалла. Кирек мĕн тума пуçăнсан та ĕç алли çитменрен чупса хăшкăлма тивет. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхшăн тăрăшса çӳренĕ чухне бригадир пуçĕнчен килти хуйхă-суйхă вăхăтлăха тухса ӳкет, каçпа килте чухне вара пăшăрхантаракан шухăшсем ăна каллех хăйсен тыткăнне илеççĕ.

Амăшĕн пуçĕнче акă мĕнле асăрханулла шухăш сирĕлсе кайми тĕтре карать: кирек мĕн тесен те, ман Ритăпа çав тăрăсăр ăсчах — çӳпçипе хупăлчи мар. Тĕлсĕр-йĕрсĕр çын ăсĕпе катăк мар пултăр, ун енне пурпĕрех чун туртмасть. Çитменнине тата, вырăс та мар — чăваш. Çапла, ахах пĕрчипе çĕр кăмрăк катăкне пĕр арчана хумаççĕ, хурăн çырлипе кĕтмел те пĕр лапамри çырла пуласса кĕтмелли çук. Хĕр чĕрине кăлăхах çунтарни кăна. Амăшне нехекрен шухăшлаттарни те вырăнсăр. «Тульккăш çакна ăнкарма айван Ритăн ăсĕ кĕскерех çав! Лайăххăн пĕлмен çынна хытă юратма пуçланă».

Хĕр шухăшĕ вара Виктор пиркиех. Пĕрехмай унран çыру кĕтет — ниепле те кĕтсе илеймест. Хыпар çукки ăна тем тери кулянтарать. Сĕтел хушшине ларсан — апат анмасть, макăрас — куççуль тухмасть. Рита çине-çинех ӳсĕрме тытăнчĕ, сăнĕ шурса кайрĕ. Хурав яманнине пула Виктора çыру çырма та пăрахрĕ. Кăрлач уйăхĕ вĕçĕнче хĕр районти спартакиадăна хутшăнса кофта вĕççĕнех йĕлтĕрпе ăмăртса чупнăччĕ. Çавăн хыççăн ӳслĕкĕ пушшех вăйланчĕ.

## Каçарăр чăрмантарса çӳренĕшĕн...

Сивĕ хĕлĕн хуйхăллă-суйхăллă кунĕсем иртсе пĕтми вăраха тăсăлчĕç. Çуркунне енне кайсан, пуш уйăхĕ пуçламăшĕнче, хĕвел тунсăхлăн йăлтăртатнă кун, урамран Лепеховсен çурчĕ еннелле çурăмĕ хыçне пысăк мар кутамкка çакнă палламан хĕрарăм пăрăнчĕ, пӳртне кĕчĕ те сывлăх сунчĕ. Таисия Петровна та, унăн виçĕ хĕрĕ те килтеччĕ. Килнĕ çынна Света алăк патнерехххĕн пукан лартса пачĕ, Лена тĕпелелле иртме сĕнчĕ.

— Каçарăр, тархасшăн, чăрмантарса çӳренĕшĕн. Эпĕ Етĕрне хулинчен,— именчĕк сасăпа евитлерĕ çуран утса ĕшеннĕ хĕрарăм.

Хула ятне илтсен Рита, чăх-чĕп пăхса усрасси çинчен кĕнеке вуласа лараканскер, пуçне кăлт çĕклерĕ. Çурăмĕ çинелле усăннă икĕ хулăн çивĕт харăсах хускалса илчĕ.

— Хула больницинче кăштăртататăп. Фельдшерица. Упăшкам та тухтăр манăн. Карачăм ятлăскер.

Ку сăмахсем Ритăна ура çине ялт тăратрĕç. «Кам-ха ку? Темле пĕлсе тăракан сăн. Çӳçĕ кăтра мар, анчах çамки çинчи çӳç пĕрчисем пĕтĕрĕнчĕк. Янахĕ шĕвĕрккерех... Упăшки Карачăм... Герасим ĕнтĕ... Виктор Герасимович Кураков... Ара, ку Витюк амăшĕ-çке!» — тинех тавçăрса илчĕ хĕр.

— Каçарăр та, эсир Роза Михайловна пулатăр вĕт? — катаран килнĕ хĕрарăм умне хăвăрт пырса тăчĕ хĕр, пĕр иккĕленмесĕр алă тăсса пачĕ.— Ку тарана çити мĕнле килме пĕлтĕр? Мама, мама, теп, паллашсамччĕ, ку вăл Кураков салтак амăшĕ, етĕрнесем...

Таисия Петровнăн та куçĕ чарăлсах кайрĕ, анчах вăл пурпĕр вырăнтан хускалмарĕ. Тăван хĕрĕн пуçне минĕретнĕ каччăн амăшĕ — çичĕ ют хĕрарăм кĕтмен çĕртен килсе кĕни пĕртте хĕпĕртеттермерĕ ăна. «Мĕн шыраса килнĕ-ши ĕнтĕ? Таçти хăямата париччен хĕрĕме ĕмĕр тăрăшшĕпех килте лартам»,— тĕвĕленчĕ пуçĕнче шухăш.

Лена — Таисия Петровнăн аслă хĕрĕ — хăйне пачах урăхла тытрĕ. Инçетрен килнĕ хăнана епле йышăнасси пирки вăл пачах иккĕленмерĕ, тӳрех ун патнелле утрĕ.

— Ай-уй, хывăнăр, хывăнăр, саланăр, тĕпелелле иртĕр! — тарават пулчĕ вăл хăнана, ăна кутамккине салтма, кĕрĕкне хывма пулăшрĕ. Рита та ун çумĕнче вĕткеленчĕ.

Хĕрĕсем иккĕшĕ те çывăх тăвана кĕтсе илнĕ пек ăшталанни Таисия Петровнăна та чун кĕртрĕ темелле. Вăл та тăрса хăнана алă пачĕ. Хăнан алли самаях сиввине, кĕлетки шăнса ĕнтĕркенине туйсан кил хуçин ютшăну иксĕлчĕ.

— Эй, тупата... Тăнсăр юлтăм пулмалла эп... Чуссăнккипе урăр та шăнчĕ пулĕ... Лена, хăвăрт ăшă çăматă илсе пар хăнана! Рита, халех сăмавар чĕртсе яр!

Чей ĕçме ларас умĕн хăна сĕтел çине таçтан-таçтан хĕссе-пĕссе пуçтарнă кучченеçсем кăларса хучĕ: пысăк мар шăрттан (упăшки йăмăкĕн парни), паранкă пӳремечĕ (Роза Михайловна хăй пĕçернĕ), типĕтнĕ пулă (Карачăм Сăр хĕррине пулла çӳрекелет). Кутамккаранах пысăк мар кĕленче савăтпа çăка пылĕ тухса ларчĕ сĕтел çине. Таисия Петровна вара пур пек çăкăр-тăварпа пĕрле пĕр пулштух чĕкĕнтĕр сăмакунĕ те кăларчĕ.

— Пирĕн, чăвашсен, хушаматăмăр чăвашлах: эпир Кураковсем, вырăсларах каласан — Грачовсем...— сăнавлăн пăхса илчĕ Рита çине Роза Михайловна.— Эсир тулĕк ан тĕлĕнĕр эпĕ таçтан хăяматран сирĕн пата хăйса килниччен. Ывăл кăмăлне хăварас мар тесе килтĕм...

Амӑшӗ те, хӗрӗсем те куҫӗсене хӑна ҫине тӗлленӗ. Рита тӳсеймерӗ, хӑйне мӗн асаплантарнине тӳрех персе ячӗ:

— Халь ӑҫта вара Виктор?

Роза Михайловна куҫ харшийӗ темшӗн-ҫке кӑлт туртӑнса илчӗ.

— Вӑл ӑҫтине эсир манран лайӑхрах пӗлетӗр пуль тесеччӗ. Аҫта пултӑр, паллах, фронтра. Е ҫав апӑрша ывӑлӑм пӗлӗшӗсем патне ҫыру ҫырма та ӳркенет-ши?

— Юманайне унран ҫыру килменни нумай пулать ӗнтӗ,— ассӑн сывласа илчӗ Рита.— Инкек сиксе тухман-и тесе хуйхӑраттӑмччӗ ӗнтӗ...

— Тӗлӗнмелле...— пуҫне пӑркаларӗ Роза Михайловна, унтан хӗр амӑшӗ ҫине хӑй сисмесле хӑвӑрт пӑхса илчӗ.— Тепӗр тесен пурнӑҫра тем те пулма пултарать. Пирӗн ҫемьене те ав тухатмӑш тытрӗ. Тухатмӑшӗ-мӗнӗ... Лайӑххӑн пӗлместӗп те, ӑнлантарса пама пулать.

Сӗтел хушшинчи калаҫу Сӑр шывӗ хӗрринчи Етӗрне ҫине куҫрӗ. Кунти Таланцевсен ҫу заводӗнче Виктор аслашшӗн ашшӗ Микула ӗҫленӗ иккен.

«Мӗн ҫӑвар карса тӑратӑн? Курак кӗрсе каять ак»,— хӑтӑрса тӑкнӑ ӑна хуҫа пӗррехинче. Ҫавӑнтанпа «курак» сӑмах ун ҫумне куршанак пекех ҫыпӑҫнӑ, хӑйне те Курак Микули теме пуҫланӑ. Кураков хушамат ҫакӑнтан тухнӑ иккен. Хӑш-пӗр чӑвашӑн пат чӗлхи пахча урлах пулать. Кураковсене ун пек каласа кӳрентерме кирлӗ мар, анчах вӗсем те йӑнӑш сӑмах персе яни пулкаланӑ. Вӑн Кураков Карачӑм тухтӑр кӳршӗри тӑлӑх арӑмӑн Сӑпанин качакине «Сталин ӗни» тесе мухтанӑ та — ӑна, уксахскере, ҫав кунах тӗрмене тытса хупнӑ. Ывӑлӗ Виктор Мускаври пӗр институтра аспирантурӑра вӗреннӗ, истори наукисен кандидачӗ пулма ӗмӗтленнӗ. Ҫук, ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртеймен. Ӑна та пӗр айӑпсӑрах хупса лартнӑ...

— Вӑт мӗнле иккен!— шалтах тӗлӗнчӗ хӑна каласа панинчен Таисия Петровна. Унтан хӑвӑрт ура ҫине сиксе тӑчӗ:— Ах! Ах! Ҫӑмарта хӑпартни ҫунса каять вӗт! Ма каламастӑр?

Амӑшне пӑшӑрхантарнӑ ҫатмана Рита хӑна умне «виҫ ура» ҫине майлаштарса лартрӗ. Ырӑ шӑршӑ ҫатмаран пӗтӗм пӳрте сарӑлчӗ. Сӗтел хушшинче нихӑшӗ те пӗр вӑхӑт сӑмах шарламарӗ. Пайтахран кӑна Таисия Петровна хӑна еннелле пуҫне пӑрчӗ:

— Сталин каланине хаҫатра вуланӑччӗ: ашшӗшӗн ывӑлӗ явaплӑ мар тенӗччӗ. Капла еплерех пулса тухнӑ-ха? Пирӗн, ялти халӑхӑн, хӑшне ӗненес?

Ӑна хуравлакан пулмарӗ. Рита юриех тенӗ пек тути-

сене тăп-тăп чăмăртаса тытрĕ. Лена аршăн çăтса янăн тӳрленсе ларчĕ. Хăна аллисене хуçлатса тытрĕ те таçта маччаналла пăхрĕ.

— Çук, упăшкам та, ывăлăм та чурăс ăс-пуçлă тесе шутламастăп. Ытти йĕркеллĕ каччăсем пекех, Виктор çапçутă ĕмĕтсемпе пурăнатчĕ. Чипер сынсем çинченех влаçрисем урăхла шутлаççĕ-мĕн. Çуйкăн туртăмсене хĕмлентереççĕ имĕш, халăха хирĕçле ĕçсем тăваççĕ...

— **Уй, епле çăлăнса тухнă-ши** вĕсем?— хăнана пӳлсех тӳсĕмсĕррĕн ыйтрĕ Лена. Амăшĕ ăна туххăмрах вырăна лартрĕ:

— Шăп пул. Çын сăмахне ан пӳл. Ваттисен калаçăвне ан хутшăн.

Тĕрĕссипе каласан, Таисия Петровна хĕрĕпе мар, урăххипе кăмăлсăр. Сăнĕнчен пĕлме çук: ăна те лайăх çынсемех йăнăш çулпа кайни пăшăрхантарать, те влаçрисем çынсене нехекренех тыта-тыта хупнишĕн кулянать вăл. Роза Михайловна çакна ăнланаймасăр пурин çине те ыйтуллăн пăхса илчĕ. Калаçу малалла тăсăлчĕ.

— Упăшкампа ывăлăм пирки мĕн тери кулянмарăмши? Хам çине хам чутах алă хураттăм. Кӳршĕ-аршă та манран пăрăнма пуçларĕ. Халăх тăшманĕсемпе вирлĕн кĕрешсе Сталин тĕрĕс туни пирки иккĕленмĕпĕр. Анчах Карачăмпа Виктора айăплани саççим вырăнсăррине майĕпен-майĕпенех пушкара пуçларăм. Тарăм уксах пултăр, тарăм лакăш-лакăш туса çӳретĕр, пурпĕр миçе çĕр çынна юп кӳчĕ: сиплерĕ, ура çине тăратрĕ! Пур çав ăслă çынсем пирĕн хушăра. «Ара, эсĕ йăлтах сăнран кайнă-çке! Капла вĕçне тухма та инçе мар. Кай-ха Мускава, хамăрăн старостăна Калинина каласа пар хăв хуйхуна тĕпĕ-йĕрĕпе,— канаш пачĕ **мана пĕр ватă** пĕлĕш. Вăл граждан вăрçи вăхăтĕнче хĕрлĕ командир пулнă, Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçнĕ.— **Михаил Ивановича** сăмах май ман çинчен те каласа кăтарт. Фронтра пуç хунă хĕрлĕ армеецсен арăмĕсене пулăшасси пирки райĕçтăвком председателĕпе тавлашса кайрăмăр та, мана хама та пенси пама чарчĕ. Каласа пар çакăн çинчен те Михаил Ивановича. Ун патне Мускава кайса килĕттĕм — сывлăхăм хавшаса çитрĕ, аякри çула тухаймастăп ĕнтĕ»,— пĕри-пĕри илтесрен хăранă пек сасăпа пăшăлтатрĕ граждан вăрçин хисеплĕ паттăрĕ. Михаил Ивановича парнелеме пĕр сăн ӳкерчĕк парса ячĕ.

М. И. Калинин 1919 çулхи çу уйăхĕнче Улатăра икĕ хутчен килсе кайни çинчен шкулта вĕреннĕ чухнех илтнĕччĕ Роза Михайловна. Ун чухне çамрăк Совет çĕр-шывне хĕвел тухăç енчен Колчак çарĕсем синкерлĕ хура пĕлĕтсем пек

тапӑннӑ. М. И. Калинин ертсе пынипе «Октябрьти революци» агитаци пуйӑсӗ Хӗвел тухӑҫ фрончӗн тылӗ тӑрӑх ҫӳренӗ. Ҫу уйӑхӗн пӗрремӗшӗнче Улатӑра ҫичӗ пин ҫын ытла пухӑннӑ. Унта хулари рабочисемпе пӗрле уесри хресченсем те йышлӑ пулнӑ. Митинга пухӑннӑ халӑх умӗнче М. И. Калинин хӗрӳллӗ сӑмах каланӑ, тӗнчери империализма тата шалти контрреволюцие хирӗҫ юлашки юн тумламӗччен кӗрешме чӗннӗ. Ун сӑмахне А. И. Крылов та питӗ тимлӗн итленӗ, чӗри патне йышӑннӑ. Улатӑр вокзалӗн хӑма перронӗ ҫинче Михаил Иванович сарлака пиҫиххирен пистолет ҫакнӑ Крыловпа та тӗл пулса калаҫнӑ, хавхалантармалли сӑмахсем каланӑ. Хӗвел тухӑҫ фронтӗнче паттӑррӑн ҫапӑҫса амансан ӑна М. И. Калинин хӑй тӗп хулара орден панӑ, аманнӑ командира Етӗрнере кам тата епле сипленине тӗплӗн ыйтса пӗлнӗ.

...Роза Михайловнӑна Мускавра Пӗтӗм Союзри староста ҫуртне шыраса тупма йывӑрах пулмарӗ, унта кӗресси вара чӗр тамӑках иккен. Алӑк патӗнче тӑраканни ӑҫтан, мӗн пирки килнине ыйтать. Упӑшкине «халӑх тӑшманӗ» тесе айӑплани ҫинчен пӗлсен пӗрехмай ҫаплалла хуравларӗ: «Калинин Мускавра ҫук», «Калинин йышӑнмасть», «Калинин ӗҫпе Кремле кайнӑ...» Темиҫе хут та ҫитрӗ ӗнтӗ Роза Михайловна ку ҫурта, шала ҫаплах кӗреймерӗ. Пӗр кунхине алӑк патӗнче урӑххи тӑратчӗ. Ун умӗнче Роза Михайловна кӑштах чееленчӗ, хӑй кунта мӗншӗн килнин сӑлтавне урӑхлатса каларӗ: хӗрлӗ командир пулнӑ Крылов ыйтӑвӗпе Етӗрнерен килтӗм терӗ. Чеелӗх усӑ кӳчӗ-кӳчех: вестибюльте граждансене йышӑнакан арҫын умне пырса тӑма май килсе тухрӗ. Ку ҫын — староста ҫумӗ иккен. Хӑй шап-шурӑ кӗпепе, сӑрӑ костюмпа, ҫавӑн тӗслех галстукпа. Ватӑ пулин те тарават калаҫать. Ҫак ҫынна тӑвана шаннӑ пекех шанса, йӑлт «акса тӑкса» пачӗ Роза Михайловна: малтанах пулӑшусӑр тӑрса юлнӑ хӗрлӗ командир ҫинчен, унтан хӑюланса — инкеке лекнӗ упӑшкипе ывӑлӗ пирки те. Етӗрне хӗрарӑмӗн сӑмахне итленӗ май хайхи арҫын ҫырма пӑрахрӗ, пичӗ ҫинчи ӑшӑ кулӑ та пачах ҫухалчӗ. М. И. Калинин хӗрлӗ командирсемпе пӗрле Улатӑр перронӗнче ӳкерттернӗ сӑн ӳкерчӗке хӗвӗнчен кӑларчӗ Роза Михайловна, вӗсем хушшинче Крылов хӑшӗ пулнине кӑтартрӗ.

Чылайччен кӑсӑкланса пӑхса ларчӗ староста ҫумӗ сӑн ӳкерчӗк ҫине. Аркадий Илларионович Крыловпа юнашар хӑй тӑрать-ҫке-ха: тӗссӗрленнӗ гимнастеркӑпа. Ҫӑкӑрӗ ҫинче икӗ пысӑк кӗсье. Хул урлӑ портупея. Калинин хӑй гражданла хура пальтопа, кӗске сӑмсаллӑ карттуспа.

Етĕрнерен илсе килнĕ сăн ӳкерчĕк çинче староста çумĕ те пулнине тĕшмĕртеймерĕ Роза Михайловна.

Староста çумĕ çав сăн ӳкерчĕке илсе шалти пĕр пӳлĕме кĕчĕ те çур сехетрен тин каялла тухрĕ, сăн ӳкерчĕке каялла пачĕ.

— Куракова гражданка, ниçта та ан кайăр, çакăнтах тăрăр,— хушрĕ вăл çирĕп сасăпа.

Вăхăт нумай иртрĕ-и, сахал-и, Роза Михайловна хăй патнелле яка тумланнă сухаллă арçын çывхарнине, ун хыçĕнчен тепĕр виçĕ çын утнине асăрхарĕ. Тинкеререх пăхрĕ те чутах кăшкăрса яратчĕ: ара, ку, малти, Калинин хăй вĕт! Каснă-лартнă портрет çинчи пек.

— Михаил Иванович, салам сире Крыловран та, пирĕн çемьерен те!— сăпайлăн тӳрленсе тăчĕ Роза Михайловна.

— Палларăр эппин... Волков хирург епле туять унта хăйне?

— Константин Васильевич-и? Утмăл уллта кайрĕ ĕнтĕ. Çаплах операци хыççăн операци тăвать...

М. И. Калинин хăй хыçĕнчи çынсем еннелле çаврăнчĕ:

— Ку — синьора — Етĕрне сиплевçи. Ун çемйинче пурте историе юратакансем: упăшки те, ывăлĕ те. Мускав профессорĕ Шевкуненко кафедринче пулман-и эсир? Унта акă мĕнле плакат çакăнса тăрать: «Кафедра вăл — кăвайт. Ун çине мĕн чухлĕ ытларах тар тăкатăн, ăслăлăх çулăмĕ çавăн чухлĕ вăйлăрах çунать». Ку сăмахсене провинцири хулара вăтăр çул вăй хуракан Волков каланă. Çавăн пек тухтăрсем тăрăшнипе ĕнтĕ ял халăхĕ юмăçсене мар, медицинăна ĕненме пуçларĕ. Пĕлетĕр-и, хăй вăхăтĕнче вăл вырăссен аслă писательне Лев Николаевич Толстоя та сипленĕ.

Пĕтĕм Союзри староста пĕчĕк хулари тухтăрпа кăсăкланни Роза Михайловнăна, хăй каларăш, саççим тĕлĕнтермерĕ. К. В. Волков хирург Етĕрне лечебницинче темиçе пин операци тунă. Ун патне сипленме таçтан-таçтан та пыраççĕ. Ăна пĕтĕм Раççей пĕлет. 1923 çултах Ĕç Геройĕ ят илнĕ.

Роза Михайловнăна пĕр вак-тĕвек тĕлĕнтерчĕ: Михаил Иванович тарăм Пĕтĕм Союз старости пултăр, таçти хăяматри ик чăваш историшĕн чунĕсене пама хатĕррине ăçтан пĕлме пултарнă-ха вăл? Сасартăк ун пуçĕнче çиçĕмле шухăш вĕлтлетсе илчĕ: пивушлĕ ман çемье инкеке лекни çинчен Мускава К. В. Волков çырса пĕлтернĕ?

— Пур лайăх çынсем, пур... Крылова та, Волкова та манран салам калăр,— пуçне сĕлтрĕ Михаил Иванович. Вăл темиçе утăм утса кайнăччĕ ĕнтĕ, хăйпе пĕрле пыра-

Кӗске ҫырура салтак акӑ мӗн ҫырнӑ:

«Хаклӑ аттепе анне!

Пурсӑра та хӗрӳллӗ салам яратӑп, сывлӑх сунатӑп. Хаваспах пӗлтеретӗп: сывлӑхлӑ ҫӳретӗп, алӑра ҫаплах пистолет-пулемет.

Иксӗре те пуҫ ҫапсах тархаслатӑп. Горький облаҫӗнчи Юманай ялӗнче манӑн пӗлӗшсем — колхоз бригадирӗ Таисия Петровна Лепехова тата унӑн хӗрӗсем Ленӑпа Рита тата Света пур. Вӗсем ҫыру ҫырма пӑрахрӗҫ. Тем тесен те чирленӗ. Эсир тухтӑрсем-ҫке. Инҫе пулсан та кайса килеймӗр-ши?

Сире пурсӑра та асрах тытакан Виктор».

Ҫырӑва вуласа тухсанах Рита ура ҫине сиксе тӑчӗ, аллисене ҫӗклесех кӑшкӑрса ячӗ:

— Унӑн чунӗ ҫавӑн пеккине эп тахҫанах пӗлнӗ!

Ҫавӑнтах нӑшик-нӑшик турӗ те шалти пӳлӗме кӗрсе кайрӗ. Куҫҫуль шапарса тӑраниччен макӑрма ӗнтӗ.

Пурнӑҫра ӑна-кӑна сахал мар курнӑ икӗ хӗрарӑм, чӑвашпа вырӑс, каҫпа тахҫанчченех калаҫса ларчӗҫ. Пурнӑҫ ҫулӗ сакӑлталлӑ пулни иккӗшне те тарӑхтарчӗ. Иккӗшӗ те хаяр вӑрҫӑ пуҫарнӑ выҫӑ кашкӑра — Гитлера, ӑна ҫуратса ӳстернӗ тӑрлавсӑр хӗрарӑма ылханчӗҫ. Тем ҫинчен те пуплерӗҫ, анчах Викторпа Ритӑн малашнехи шӑпи, хӑталлӑтӑхлачӑллӑ пуласси пирки пӗр сӑмах та шарламарӗҫ. Тӗтрери пек курӑнакан таҫти аякри телей ӑнсӑртран персе янӑ сӑмахпах саланса кайма пултарӗ. Ваттисенчен ӑслӑраххи ҫук: туман тиха пилӗкне авма хушман вӗсем. Тепӗр тесен пурне те паллӑ: вӑрҫӑра ҫын пурнӑҫӗ иккӗллӗ: те таврӑнать, те унтах выртса юлать.

Таисия Петровна Етӗрне ҫинчен тӗплӗнрех пӗлесшӗн пулчӗ. Ҫак ватӑ хула Сӑр юхан шывӑн ик енне вырнаҫнӑ иккен. Ҫыран хӗрринчи вырӑнсем курса тӑранмалла мар хитре. Хула урамӗсене йывӑҫсем илем кӳреҫҫӗ. Хулан сумлӑ ҫынни Николай Иванович Ашмарин профессор ҫинчен Таисия Петровна та илтнӗ-мӗн.

— Чӑваш чӗлхин вӑл хатӗрленӗ словарӗ пи-и-тӗ пысӑк теҫҫӗ.

— Виҫӗм ҫул, вӑрҫӑ пуҫлансан, унӑн вун улттӑмӗш кӑларӑмӗ тухрӗ пулас. Унтанпа тухни-кӑларни курӑнмасть. Вӑрҫӑ чарӑнсан пичетлесе пӗтерӗҫ-и...— ҫине-ҫинех ассӑн сывларӗ Роза Михайловна.

Ирхине вӑл шурӑ халат тӑхӑнчӗ, тӗрлӗ эмел шӑрши саракан пысӑк мар ещӗкне уҫса хучӗ, аллине стетоскоп тытрӗ.

— Атьăр халĕ больницăна каймалла выляр. Мана эмелçĕ вырăнне лартма килĕшсен эсир сывлăх тĕрĕслеттерекеннисем пулăр.

Эмелçĕ патне пымалли черете пурте пĕр шухăшлă акă мĕнле палăртрĕç: кам çулпа аслăрах, çав маларах пырать. Çапла вара Таисия Петровна пĕрремĕш пациентка пулчĕ.

— Çитменнине тата, вăл çулĕпе кăна мар, ĕç вырăнĕпе те пиртен çӳллĕрех сыпăкра: эпир ахаль колхозницăсем кăна, аннемĕр — бригадир,— шап-шурă шăлĕсене кăтартрĕ Лена.

— Мĕн ыратать?— лешĕ ним те каламанран ыйтрĕ эмелçĕ пациенткăран.

— Сывлăхăм тимĕр пекех çирĕп. Хутран-ситрен кăна чĕре чиксе каfive — Лепехов пирки шухăшласан...

Çук çав, саççим апла мар. Бригадира хăйĕн сывлăхĕшĕн тăрăшма вăхăт тивĕçместь ахăр. Хастар хĕрарăмăн аллисем çинче те, урисем тăрăх та ревматизм йĕрĕсем палăраççĕ. Пĕр сыпăçсан ку чиртен хăтăлма ай-ай йывăр. Çине тăрса сипленмесен пурнăç вĕçне тухма та инçе мар. Таисия Петровна хăй чир пуçланнине кӳршĕ ялтан триер турттарса килнĕ чухне шăннипе ăнлантарать, часах иртессе шанать. Фельдшерица хăйĕн ещĕкĕнчен пĕр флакон кăткă йӳçекĕ кăларчĕ, ал-урине каçсерен унпа сĕрме хушрĕ.

— Ăшăрах тумланса çӳрĕр, аллăра-урăра тек-тек ан шăнтăр!— хистерĕ вăл хăйĕн сывлăхне упрасшăн тăрăшман хĕрарăма.

Эмелçĕ умне амăшĕ хыççăнах Лена пырса тăчĕ:

— Фермăна каймалла: кая юлатăп...

Хĕр сывлăхĕ таса çăл куç пек тапса тăрать иккен. Сывлăхлă пулнăшăн мухтаса хăна Ленăна пĕр пĕчĕкçĕ флакон духи парнелерĕ. Хĕпĕртенĕ хĕр пӳртрен хăвăрт тухса вирхĕнчĕ, анчах тепĕр минутранах каялла чупса кĕчĕ, сĕтел сунтăхĕнчен тĕрĕллĕ ал тутри кăларчĕ.

— Роза Михайловна, акă сире пирĕн яла асăнмалăх пĕчĕкçĕ кучченеç. Ритăпа иксĕмĕр тĕрлесеччĕ. Тав сире пирĕн пата килнĕшĕн. Юманай çулне ӳлĕмрен те ан манăр! Вăтанмасăрах ыйтам-ха: мана Виктор адресне памăр-ши? Манăн ăна çыру ярас килет...

Роза Михайловна хĕр ыйтăвне хапăл тусах тивĕçтерчĕ. Питĕнчен чап! чуп турĕ ăна Лена, пуç тайса алă сĕлтрĕ те васкасах тухса чупрĕ. Хăнапа кил хуçи куçĕсем ăшă кулăпа йăлтăртатаççĕ. Ăнланаççĕ ĕнтĕ: Лена хăйшĕн мар, йăмăкĕшĕн тăрăшать.

Рита та хăй ăшĕнче кулса илмесĕр тӳсеймерĕ. Чăннипех те ăслă ун аппăшĕ, анчах ал тутри тĕрлеме хăй хутшăнни пирки кăлăхах суять. Йĕппе пĕрре те тирсе курманçке. Пĕтĕмпех Рита тĕрленĕ. Ну, юрĕ-çке. Вăл каланиех тĕрĕс пултăр.

Рита сывлăхне хăна пилĕк таран хывăнтарсах тимлĕн тĕрĕслерĕ. Хĕре ӳслĕк хăçантанпа аптăратнине тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлчĕ. Çав вăхăтра амăшĕ фельдшерицăна чăрмантарас мар тесе ним шарламасăр тăчĕ. Çапах икĕ хĕрарăм пĕр-пĕрин çине пăха-пăха илеççĕ. «Ман хĕр ачан темшĕнçке пичĕ хĕреле-хĕреле каять, хăйăлтатарах сывлать...»— тесе калама хатĕр Таисия Петровна сасăпах, анчах хăнана чăрмантарма хăяймасть. «Температури норма шайĕнче мар. Ӳпкинче темле тăвăрлану пур пек...»— пăшăрханса палăртать хăй ăшĕнче фельдшерица. Çак пăшăрханăва хĕр амăшĕ асăрханине курать те лăплантармалли сăмахсем калать:

— Хĕр ача сывлăхĕ пушар чанĕ çапмаллах мар, анчах сипленмелли пур çав, пур...

Хăна хĕре ӳслĕк хăçантанпа аптăратнине тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлчĕ. Стетоскопне васкамасăр, тирпейлĕн пуçтарсан ун çывăхнех пырса тăчĕ Таисия Петровна, куçран тĕллесе ыйтуллăн пăхрĕ, диагноз каласса чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Хĕр амăшĕ хăйĕнчен мĕн кĕтнине Роза Михайловна лайăх ăнланать, пурпĕр татăклă сăмах калама васкамасть. Таисия Петровнăпа Рита çине вăл хăй пулăшу ыйтнă пек пăхать, амăшĕпе хĕрĕ вара унран пулăшу кĕтеççĕ.

— Сыв мар çынна ăнăçлă сиплесси, пĕлетĕр-и, чи малтанах унăн чирне тĕрĕс палăртнинчен килет. Ритăн хăрамаллиех çук: бронхит та мар унăн, ӳпке туберкулезĕ теме те симптомсем çук,— пациенткăпа хăйĕнпе канашланăн каларĕ Роза Михайловна. Унтан хĕртен çапла ыйтрĕ:— Таçта тулăксăр шăнман-и эсир?

Хĕрĕ вырăнне амăшĕ хуравларĕ:

— Латти çук вăл хĕр пĕрчин... Шывĕ ăшăннă-ăшăнман кӳлĕре чампăлтатма тытăнать. Çимĕкчен çиччĕ шыва кĕмелле тет. Пĕр кĕрсен шывран тухма пĕлмест тата хăй. Ӳчĕ кăвакарса кайичченех ишсе çӳрет. Вутăш, пулнă-пĕтнĕ вутăш. Вăл йĕлтĕрпе кофта вĕççĕнех епле чупнине курсанччĕ эсир...

— Спорт ăмăртăвĕсене хутшăнать-и? Вăт мĕнле иккен. Парнесем те çĕнсе илнĕ эппин...

— Веçех ашшĕ айăплă. Ашшĕ чармарĕ,— хĕрĕн сывлăхĕшĕн явап тытассине хăй çинчен пĕтĕмпех сирсе ячĕ

Таисия Петровна. Çав вăхăтрах сассинче хĕрне ятланипе пĕрлех унпа мухтанасшăн пулни те сисĕнчĕ.

— Рита пек маттур хĕрсем сахал. Кăлăхах ятлас мар спортсменкăна,— хĕр хутне кĕчĕ Роза Михайловна.— Иккĕленмелли çук, диагноз уçăмлă: чипер хĕрĕн ӳпки шыçма пуçланă. Çапла, ăна пневмони ура хурать. Чирлесси вара шăнса пăсăлнинчен теме пулать.

Халĕ, диагноз палăрса çитсен, фельдшерица хĕр енне вăртах çаврăнса тăчĕ.

— Акă мĕн, Маргарита Матвеевна, çине тăрсах сипленес пулать сирĕн, качча кайиччен чиртен тĕсĕ те ан юлтăр...

Роза Михайловна çине хĕр тĕлĕнсе пăхрĕ: халиччен ăна никам та ашшĕ ячĕпе чĕнменччĕ-ха. Мĕне пĕлтерет ку: хисепленине-и е унăн сывлăхĕ чăнах та пăшăрхантармаллах япăххине?

— Ритăçăм, пăшăрханма кирлĕ мар,— хĕр шухăшне пĕлнĕ пекех каларĕ Роза Михайловна.— Ун пек чухне пыл усăллă, пыл сиплĕ. Таисия Петровна, пулăшсамăрччĕ эмел хатĕрлеме...

Икĕ хĕрарăм тап-таса кастрюле пĕр литр шыв, 50 грамм пыл, çур килограмм пуçлă сухан, 40 грамм сахăр ячĕç те вăйсăр вут çинче çур сехет пек вĕретрĕç. Сивĕннĕ хутăша кĕленче савăта тултарчĕç, лайăх хупса хучĕç. Çак эмеле кунне 4—5 кашăк ĕçме сĕнчĕ Роза Михайловна апăрша спортсменкăна.

— Пăшăрханма кирлĕ мар,— паçăрхи сăмахах тепĕр хут каларĕ Роза Михайловна.—Акă тата сире сульфидин тата женьшень сĕткенĕ. Халлĕхе вĕсенчен имлĕрех эмел çукрах темелле. Пирĕн алла сайра çакланаççĕ. Ут утланса кăнтăр кунĕнчех хунарпа шырама тиврĕ. Суханпа ыхрана чĕрĕлле тутанма та ан манăр, вĕсене те эмел выраннех хурăр.

Роза Михайловна хĕре эмелсемпе епле сипленмеллине тĕплĕн ăнлантарчĕ. Этем ӳт-пĕвне, тарăм çамрăк пулсан та, чир-чĕртен тасалма, паха эмелсĕр пуçне ырă апат, сĕт-çу, пахча çимĕç, кĕтмел кирлине те аса илтерчĕ фельдшерица сывлăхсăррин амăшне, матрӳшкепе пĕтнĕк чейĕ ĕçтерме сĕнчĕ. Суханпа ыхра, кĕтмел сиен кӳрекен бактерисене ĕрчеме чараççĕ иккен. Матрӳшке эфир çăвĕпе, С витаминпа пуян. Унпа вĕретнĕ чей нерв системине лăплантарать, аппетита ӳстерет, сывламалли органсене ӳсĕрттерсе тасатать. Пĕтнĕкĕ те питĕ имлĕ.

Роза Михайловна хыпалансах тумланма тытăнчĕ. Хăна кайма пуçтараннине курса Таисия Петровна хыпăнсах

ӳкрӗ. Ритӑна хӑвӑртрах лаша кӳлсе килме хушрӗ, анчах хӑна хӑйне лашапа леҫессине татӑклӑн хирӗҫлерӗ.

Амӑшӗпе хӗрӗ васкасах кучченеҫсем хатӗрлерӗҫ.

— Ку Герасим Иванович валли типӗтнӗ пулӑ... Ҫуткӳль пулли. Хутаҫӗнче — вир вӑрлӑхӗ. Украинӑран Шполянски районтан илсе килсеччӗ. «Долинское» сорт. Сарлака ретсемпе аксан питӗ тухӑҫлӑ пулать. Пахчӑрта акса сӑнӑрха,— сӗнчӗ тем тери ӑшӑ кӑмӑлпа Таисия Петровна.

Икӗ хӗрарӑм урампа шӑкӑлтатса калаҫса пынӑ чухне Галя продавщица шӑпах ял лавккине уҫса тӑратчӗ. Арҫын ҫӗлӗкӗпе ҫӳрекен бригадира (упӑшкинчен юлнипе ӗнтӗ!) вӑл аякранах палларӗ.

— Таисия Петровна, минутлӑха чарӑнӑр-ха. Ялпоран тӑвар турттарса килме пӗр вӑкӑр кирлӗччӗ те...

Бригадир лавккара конюх ячӗпе хут ҫырса пачӗ те хӑй ҫумӗнчи хӗрарӑм еннелле пуҫ сӗлтрӗ:

— Паллашӑр: етӗрнесем, Виктор Кураков амӑшӗ...

— Кам? Лешӗн-и, утӑ ҫулма килнин-и? «Сӑр хумӗсем» вальс калаканнин-и?

Тӗлӗннипе пӗҫҫине шарт ҫапрӗ Галя, аякри ҫула мӗн ҫӑмӑлпа килнине хӑйсах ыйтса пӗлчӗ.

— Виктор халӗ те фронтра-и? Унран ҫырусем килеҫҫӗ-и?— кӑсӑклансах тӗпчерӗ Галя.— Юлташӗсем пирки мӗн ҫырать? Алексӑ Романухина аса илмест-и?

— Ах, ах,— терӗ вӑл, Романухин взводра хисеплӗ боец пулнине пӗлсен.— Аякри хӑнана тем те виҫсе пама хатӗр, таварӑм ҫук. Акӑ кӑштах канфет пур, кучченеҫлӗх хуть ҫавна парсам ярам-ха...

Ывӑлне катари вырӑс ялӗнче ҫапла хисепе хунӑшӑн савӑнмаллипех савӑнчӗ чӑваш хӗрарӑмӗн чӗри, кучченеҫрен пӑрӑнмарӗ, пуҫ тайса йышӑнчӗ. Икӗ хӗрарӑм ҫуна ҫулӗпе вӑрманалла утнине чылайччен пӑхса ӑсатрӗ Галя. Ҫак пысӑк мар юманлӑх витӗр Виктор та пӗрре ҫеҫ мар тухнӑ. Кунтах ӑна Ритӑпа тӗл пулма тивнӗ.

Икӗ хӗрарӑм пуплесе пынӑ май вӑрман урлӑ каҫнине сисмерӗҫ те.

— Ну, ҫитӗ сире ӑсаттарса... Пурпӗр хулана ҫити илсе каймастӑп,— чарӑнса тӑчӗ Роза Михайловна, унтан кулараххӑн ҫапла хушса хучӗ:— Хамӑр килти баяна, тарӑм кивӗ пултӑр, упрасах усрӑп, тен, кин баян калама пӗлекенни пулӗ.

Хӑна мӗн пирки вӑлтса каланине Таисия Петровна тӳрех тавҫӑрса илнӗрен унӑн хуравӗ те ҫавӑн евӗрлех пулчӗ:

— Эпир те баяна упрасшӑн-ха. Ӑнсӑртран хуҫи таврӑн-

мĕ-и е баян калакан кĕрӳ тупăнмĕ-и. Ырă тĕлĕкне те курсаттăм. Тулькκăш чăна тухтăрччĕ.

Ку таранччен пĕрне-пĕри пĕлмен те курман икĕ хĕрарăм тăванла ыталашса та чуп туса уйрăлчĕç, уйрăлса кайсан та çаврăна-çаврăна пăхса пĕр-пĕрне алă сĕлтрĕç.

Роза Михайловна Юманайне килсе кайнă хыççăн темиçе кунранах фронтовик виçкĕтеслĕхĕсем хĕр сĕтелĕ çине пырса выртрĕç. Тăруках сакăр çыру! Мĕншĕн пĕр тăрук килнĕ-ши? Хĕр ун пирки шутласа пуçне ватмарĕ, амăшĕ ун пирки нимĕн те шарламарĕ. Хĕр çырусене пĕрин хыççăн тепĕрне хăвăрт-хăвăрт вуларĕ, вуланă май пичĕ хĕрелсе кайрĕ. Мĕн тери пысăк савăнăç: Виктор хĕре халичченхи пекех асра тытать иккен, хăйĕнчен кăна мар, фронтри юлташĕсенчен те хĕрӳллĕ салам ярать. Юманайран çыру пыма пăрахни çеç кулянтарать иккен ăна. Чăнах-çке: каччă манчĕ пулĕ тесе Рита та ăна юлашки вăхăтра çыру тавраш яман.

— Пĕлетĕн-и,— чупса пычĕ хĕр хăйне тимлĕн сăнаса ларакан амăшĕ патне.— Тăмсай эпĕ, тăмсай... Çав вăхăтрах квадратланă, кубланă тăмпай!... Епле хăйнă эпĕ Виктор пирки иккĕленме!

## Тĕлĕнтермĕш кăвак куç

Фронтран çырусем унччен пекех час-час килме пуçларĕç. Рита пуçне пĕксе çӳреме пăрахрĕ, ӳсĕресси майĕпен-майĕпенех иртсе пычĕ; кăштах сăн та кĕчĕ ăна. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче, хĕвел ăшăтса пăхма пуçланипе пĕрле, вăл хăйĕнче спорт вăйĕсене хутшăннă чухнехи пекех вăй-хал тапса тăнине туйма пуçларĕ.

Пĕр хĕвеллĕ ырă кун Ритăпа Лида, малтанах калаçса татăлнăскерсем, районти çар комиссариатне çул тытрĕç. Лидия Галкина — блокадăри Ленинград хĕрĕ. Вăл Юманайне амăшĕпе пĕрле вăрçă пуçланнă çулхине килчĕ, иккĕшĕ те тӳрех ĕне ферминче ĕçлеме тытăнчĕç. Авăн уйăхĕнче Лида шкула пычĕ, парта хушшине Ритăпа юнашар ларчĕ.

Хĕрсем çар комиссариатĕнче вăтанса тăмарĕç, хăйсене тӳрех Калинин фронтне яма ыйтрĕç. Мĕншĕн унта? Паллă: Викторăн почта ещĕкĕ çавăнта тесе шутлаççĕ. Тантăшĕн чĕрине тыткăнланă Виктора лайăхах астăвать-ха Лида, ун сăн ӳкерчĕкне Ритăпа пĕрле тыта-тыта пăхать.

Ватă майор хĕрсем ăçта ĕçленине ыйтса пĕлчĕ, аттестачĕсем çине, унтан хăйсем çине кăмăллăн пăхса илчĕ те аллисене ик еннелле сарчĕ хучĕ:

— Хă... Эсир иксĕр те колхоз ферминче вăй хуратăр иккен. Явaплă ĕç тăватăр. Çук, пулăшма пултараймастăп...

Майор çапах тантăшсен хушамачĕсене, хăш ялтан пулнине çырса юлчĕ, тепĕр эрнеренех иккĕшне те хăй патне чĕнтерчĕ.

— Мĕнле, хĕрсем, фронта каяс шухăша пăрахман-и эсир? Паллах, малти лини малтиех. Анчах ырă чĕреллĕ хастар хĕрсем пире урăх çĕрте те кирлĕ. Медсестрасен курсне кайма килĕшмĕр-ши?— сĕнчĕ вăл.

Тантăшсем пĕр-пĕрин çине ыйтуллăн пăхса илчĕç те харăсах çапла ыйтрĕç:

— Медсестрасем фронтра кирлĕ-и?

— Кирлĕ, кирлĕ... Тем тери кирлĕ,— аллине сĕтел çинелле ик-виçĕ хут сулчĕ çар комиссарĕ.

Медсестра пулма хĕрсем Горький хулинче кĕске сроклă курсра вĕренчĕç. Кунта вĕсене çар тумĕ тăхăнтарчĕç. Симĕс кительпе юбка, çăлтăрлă пилотка вĕсен йăрăс кĕлеткисене татах та ятуллăрах кăтартаççĕ. Вĕренӳ программине чиперех пурнăçласан иккĕшĕ те медицина службин кĕçĕн лейтенанчĕсем пулса тăчĕç.

* * *

...Пурнăç çулĕ çинче Таисия Петровна тем тĕрлĕ çынна та тĕл пулнă. Тĕнчере тĕрлĕ кĕнчеле тенĕ пек, хăй ертсе пыракан бригадăрах апли те пур, капли те çук мар. Чунчĕрипе, кăмăлĕпе-хавалĕпе лайăх-и вăл е начар-и, çакна çынпа пĕрре курса калаçсанах тĕп-тĕрĕс калама пултарать ăна-кăна сахал мар курнă ăслă хĕрарăм. Çапах Виктор Кураков пирки вара йăнăшрĕ: вăл мĕнлерех çын пулнине тăруках тĕшмĕртеймерĕ. Нимĕн çинчен те тĕплĕн шухăшлама пĕлмен çăмăлçах пек туйăнчĕ вăл Юманайне килсенех. Каçсерен баян нăйăклаттарать. Вĕлтĕрти «Сăр хумĕсемпе» ялти яш-кĕрĕме саççим йăлăхтарса çитерчĕ. Тем çинчен те калаçать, тем те каласа кăтартать — те пĕлсе, те пĕлмесĕрех. Тăван хĕрĕ Рита çав ăшăх чунлă çынпа йăл-йăл кулса калаçни те амăшĕн кăмăлне килместчĕ. Çапах нимĕн те шарламастчĕ, хĕр туйăмĕ Çуткӳль хĕрринчи ирхи тĕтре пекех хăвăрт сирĕлсе каясса шанатчĕ.

Чăннипе вара хĕрĕн таса туйăмĕ мар, амăшĕн иккĕленĕвĕ иксĕлнĕçемĕн иксĕлсе пычĕ. Çакă хĕрпе каччă Çуткӳль пирки калаçнине итленичен пуçланчĕ ахăр. Ун чухне Таисия Петровна паварта Лилипутова савăт-сапа

çуса тирпейлеме пулăшатчĕ. Викторпа Рита кӳлĕ хĕринче уçăлса çӳренĕ пулмалла та, унтан таврăнса калинкке умне чарăнса тăнăччĕ.

— Тĕлĕнетĕп: ял çумĕнчех тип-тикĕс вырăнта çавнашкал хӳхĕм кӳлĕ епле пулса кайнă-ши? Пирĕн асаттесен аслашшĕсем ятарласа чавса тунă теме пулать...

— Апла тесен чавса кăларнă тăприне ăçта хунă-ши?— хирĕçлерĕ хĕре Кураков.— Çитменнине тата, техникăсăр, кĕреçе вĕççĕнех çавнашкал тарăн чавма пултарасси те иккĕлентерет.

— Ку лаптăкра çĕр пичĕ хăй путса аннă эппин,— тепĕр гипотеза тупрĕ хĕр. Унашкал шутлани те чăнлăхпа килĕшсе тăманнине Виктор витĕмлĕн ĕнентерчĕ:

— Ку таврара ту-сăрт тавраш'ĕ çук. Çавăнпа ту йăтăнса анасси те, сăрт ишĕлсе тĕпренесси те пулма пултараймanах. Çĕр пичĕ пĕр тĕлте мăкăрăлни, тепĕр тĕлте путни асăрханмасть. Кӳлĕ пулса кайнин сăлтавĕ, ахăртнех, урăх.

— Урăх сăлтав мĕн пулма пултарĕ-ши?— пуçланă калаçăвăн вĕçнех тухасшăн пулчĕ хĕр.

— Пĕлместĕп çав, пĕлместĕп, çутă ахахăм, кăвак кăвакарчăнăм. Геологие ятарласа вĕренменни пĕтерет. Кунта теплерен метеорит ӳкмен-ши? Вăл лапчăтнă вырăнта пулса кайман-ши кӳлĕ?

«Лăпăртатаççĕ кирлĕ мара. Çынсем фронтра юн тăкаççĕ, вĕсем пур — саççим савăшмалла выляççĕ, тата кӳлĕ епле пулса кайни такама кирлĕ пуль»,— тĕвĕленчĕ шухăш Таисия Петровна пуçĕнче. Ирпе тăрсан Ритăпа Виктор калаçăвĕ каллех аса килчĕ. Халĕ вара каччăпа хĕр калаçни тем тери ăслă пек туйăнчĕ. Тутисем çинче амăшĕн сĕчĕ те лайăххăн типсе çитеймен-ха, çапах ăслăлăха пушкарасшăн. Ирхи куç витĕртерех курать çав. Пуçне çак шухăш пырса кĕчĕ те, хăйĕнчен хăй кулса илчĕ Таисия Петровна.

Тепĕр тесен Таисия Петровна сăлтавне хăй те лайăххăн пĕлмест, анчах Юманайне Роза Михайловна килсе кайнăранпа унăн ывăлне Виктора пач урăхла хаклама пуçларĕ, тăван хĕрĕ ăна вăйлă юратнинчен те тĕлĕнме пăрахрĕ. Халĕ ĕнтĕ Юманайри пурнăçра Матви çеç мар, Рита кăна мар, Виктор та кирлĕ пек туйăнма пуçларĕ. Çав тери курас килет вĕсене. Вĕсемпе юнашар, килĕштерсе те савăнса пурăнасчĕ Таисия Петровнăн.

Шухăшласан пуç çаврăнать, йывăр хуйхă арман чулĕ евĕр пусарса хурать. Юрать-ха чун йăпатмăшсем Светланăпа Лена пур — амăшне вĕсем лăплантараççĕ. Пĕччен чухне Таисия Петровна турра кĕл тума тытăнать.

— Эй, чи аслă атте турă, таса хĕр Мария, пурне те

хĕрхенекен Иисус Христос! Манăн тĕпренчĕкĕмсем — айван хĕрĕмсем тĕлĕшпе ырă кăмăллă пулсамăрччĕ. Чăваш каччишĕн Викторшăн та хăвăрăн ырлăхăра ан хĕрхенĕрччĕ. Суккăр пуля иккĕшĕнчен те пăрăнтăр, тăшман аллинчи хĕç тĕлне ан пулччăр. Шеллĕр икĕ айван çамрăка, киле тĕрĕс-тĕкел таврăнма пулăшăр. Упăшкам вăрçа кайса пуç хучĕ. Хĕрĕм те таврăнаймасан чĕрем вутсăр çунĕ, чунăм хурланса макăрĕ. Упрăр хĕрĕме, упрăр!

Пӳртри сывлăш пăчăран Таисия Петровна кантăка яри уçса ярать, уйăх яланхиллех кĕмĕл çутă сапнине, çăлтăрсем мĕлтлетнине курать. Вĕсем çине те тĕмсĕлсе пăхать хĕрхенӳ шыракан хĕрарăм.

— Эй, çутă уйăх, эй, çăлтăрсем! — çӳлелле çĕклет аллине вăл. — Çемçе кăмăллă пулсамăрччĕ: ик çамрăкăн тăкăс çулне çутатса тăрсамăрччĕ. Вĕсене чĕрĕ пуçăн таврăнма пулăшсамăрччĕ.

Пĕрре çеç мар çапла тилмĕрсе кĕл тăвать ĕнтĕ Таисия Петровна. Турăран, çут çанталăкăн асамлă вăйĕсенчен вăл пулăшу тепĕр чухне кĕтет, тепĕр чухне кĕтмест те, кĕл тăвасса вара пурпĕр кĕл тăвать, мĕншĕн тесен кĕл туни ăна мĕн тесен те çăмăллăх кӳнĕ пек. Çитменнине тăван хĕрне урăхла мĕнпе пулăштăр-ха вăл чĕри çуннă вăхăтра...

* * *

Иваново хули. Вокзал хыçĕнчи улттăмĕш урам. Вырăсла — Шестая Завокзальная. 50-мĕш вăтам шкул çурчĕ хĕвеле хиреç пăхса ларать. Халĕ çак пысăк çуртра 2591-мĕш эвакогоспиталь. Çакăнта ĕçлеççĕ те ĕнтĕ эпир пĕлекен икĕ хĕр.

Пир-авăр промышленноçĕ валли художниксем хатĕрлекен институт шефла туслăх каçĕ ирттерчĕ. Эвакогоспитальте ĕçлекенсемпе тата сывалаканнисен взводĕнчи салтаксемпе пĕрле унта кĕçĕн лейтенантсем Маргарита Лепеховăпа Лидия Галкина та пулчĕç.

— Хитре ку институт хĕрĕсем: сарă сăнлă та сарă çӳçлĕ. Юнашар тăратсан пирĕн çине пăхакан та пулас çук, тупата...— шӳтлекелерĕ таврăннă чухне Лида.

Рита ним те шарламарĕ. Унăн пуçĕнче урăх шухăшсем. Кăн-кăвак тӳпере илĕртмелле куç хĕсекен çăлтăрсене те асăрхамасть вăл. Лида пурпĕр ун çумнех çулăхать:

— Рита, чĕмсĕре тухрăн-им? Кала-ха, сана тусу тӳпери хăш çăлтăрпа таплаштарать?

— Эс мĕн, ман Виктора çил хăван тесе шутламастăн пулĕ те? Пĕлетĕн-и, унашкал пуш сăмах çаптарма çурал-

ман вăл! — шăртне тăратрĕ Рита шӳт сăмаха йывăра илсе.

— Ķăлăхах тутуна ан тăс-ха. Ĕнер мĕн курнине каласа парасшăн эп сана. Ĕçрен тухсан эпир, виçĕ медсестра, вăрмана, леш ишĕлнĕ шыв арманĕ патне, уçăлса çӳреме кайрăмăр...

Арман пĕви хĕррине пĕр взвод салтак пырса чарăнчĕ. Çап-çамрăк офицер салтаксене ик шеренгăна тăратрĕ те çур сехете яхăн çапăçу вăхăтĕнче шыв урлă епле каçмаллине ăнлантарчĕ. Унтан шыв тарăнăшне виçсе тăмарĕ, тӳрех команда пачĕ: «Малалла! Хăвăрт пĕве леш енне каçмалла!» Мĕн тăвăн, салтакăн итлесех пулать. Шинель скаткисемпех, противогазсемпех шыва сикеççĕ те леш енне ишсе те каçаççĕ. Взводра ишме пĕлменнисем те пур иккен. Вĕсене офицер пĕрин хыççăн тепĕрне шывалла тĕртет. Ку енче çыран хĕрринчех тарăн-мĕн. Ик салтак шыва лакăрт-лакăрт çăтса каялла тапăлтатса тухма тытăнаççĕ. Вĕсене офицер каллех шалалла тĕрте-тĕрте ярать. Лешсем пăкăл-пăкăл туса шыв тĕпне анса каяççĕ. Темиçе çеккунтран пуçĕсене пăкăлт кăтартаççĕ те çыраналла тапăлтатаççĕ. Пĕве çывăхĕнчех госпитальте сывалакансем çӳретчĕç. Вĕсем хушшинчен пĕри, пуçне бинтпа çыхни, путакан салтаксем патне чупса пычĕ те çырана тухма пулăшрĕ. Унччен те пулмарĕ, офицера хăйне йăтăрласа илчĕ те планшечĕмĕнĕпех чампăрт! тутарчĕ шыва...

Лида мĕн каласа пани тантăшне тинех кăсăклантарса ячĕ.

— Çав хăюлли мĕнле званиллĕ вара? Еплерехскер?

— Çӳллĕскер те патварскер. Пĕлетĕн, госпиталь халачĕ çинче погон тавраш çук. Юлташĕсем аслă сержант тесе чĕнчĕç пулас...

— Ķирек мĕн кала, çав аслă сержант — ман Виктор, — тăруках вĕриленсе кайрĕ Рита. — Ик алла кастарам — вăл çеç çавăн пек теветкелленме пултарать...

Эппин, ун тусĕ çапăçура аманнă та савнă хĕрĕнчен вăрттăн вăл ĕçлекен госпитальтех сипленет. Виктор Герасимович Кураков аслă сержант хăш палатăрине тĕп журнал тăрăх шырама та хатĕрччĕ ĕнтĕ Рита, унран ĕнер илнĕ çырăва тепĕр хут вуласа тухрĕ те лăпланчĕ. Фронтра аманнă çын аякри тылра вырнаçнă госпитале 3—4 кун хушшинче çитме пултараймастех. Çитменнине тата, теветкел хастарсем Викторсăр пуçне те пурах.

Мĕншĕн юрататьши хĕр Виктора? Теветкел пулнăшăнши? Çавăншăн ахăр. Мĕн тесен те теветкел çын пиçмен пашалу мар. Мулкач чĕреллисем хăрушлăх умĕнче чĕт-

рене ереççĕ, сехĕрленсе сăнран ӳкеççĕ. Теприсем, асăрхануллисем, хăрушлăх умĕнчен каялла чакаççĕ, йывăрлăхран айккинелле пăрăнаççĕ. Виктор йышши çынсене чун-чĕри урăхла тума хистет: «Мĕн пулать те мĕн килет, тытăнса пăхмаллах». Харсăрри тытăнса пăхать те чăнласах ĕç кăларать. Хăравçă хăмсарса тăнă хушăра харсăрри кашкăра çапать ӳкерет. Рита шучĕпе, пурнăçра çавăн пек çынсем кирлех. Эппин, теветкеллисем юратăва тивĕçли пирки иккĕленме пачах та кирлĕ мар.

Кулленхи ĕç-пуç тăрмашуллă пулнăран Иваново хулинчи эвакогоспитальте кун хыççăн кун питĕ хăвăрт иртет. Тимлĕ сестрасăр госпитале сиплев çурчĕ теейменĕн. Вăл пĕрин суранне салтса çыхать, тепĕрне эмел парать, виççĕмĕшне ăшă сăмахпа йăпатать. Çавăнпа кунта хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа тăвакан сестра тем тери кирлĕ.

Медицина службин кĕçĕн лейтенанчĕсем Маргарита Лепеховăпа Лидия Галкина эвакогоспиталь коллективĕнче хисепе тивĕçлисен шутне кĕнĕччĕ ĕнтĕ, ятарлă приказ килчĕ: темиçе тухтăрпа медсестрана фронт çывăхнерехри хулана тăхтаса тăмасăрах куçармалла. Çав приказ тăрăх Лепеховăпа Галкинан Селигер кӳлĕ хĕрринчи Осташков хулине куçса каймалла пулчĕ. Чăн ĕнтĕ, вĕсене эвакогоспиталех ячĕç, анчах кунта ĕç йĕрки урăхларах иккен. Тĕпрен илсен санитари эшелонĕсем Ивановăна, шалти тылри хулана, фронт çывăхĕнчи госпитальсенче медицина пулăшăвĕ илнĕ хыççăн вăрах сипленмеллисене турттарса пыраççĕ. Тухтăрсемпе сестрасене ытларах палатăсенче ĕçлеме тивет. Осташкова вара йывăр аманнисене тӳрех санбатсенчен илсе килеççĕ те, кăткăс операцисене кунта тăваççĕ. Çавна май çĕнĕрен килнĕ сестрасене операци пӳлĕмĕсенче ĕçлеме хатĕрлес шутпа хирти госпитале практикăна ячĕç. Кунта вĕсене анестезин тĕрлĕ ăслайĕпе усă курма, шăмми сиенленнĕ ал-урана гипс хурса çыхма, сурана шинăлама, тĕрĕсрех — хуп хурса кăшăллама хăнăхтарчĕç.

Госпиталь библиотекинче хĕрсене темле майпа сыхланса юлнă кĕнеке — «Город Осташков Тверской губернии и его уезд» ятлăскерне — сĕнчĕç. Ана вуласан хĕрсем çакна пĕлчĕç: кунти Нил пушă кĕтесне, Нилова пустынь текеннине, Христос тĕнне ĕненекенсем турра пуç çапма вăрçăччен пинĕн-пинĕн килсе çӳренĕ иккен. Пĕр кунхине икĕ медсестран авалхи Осташков хулине курса çӳреме май килчĕ. Ик çĕр çула яхăн ĕçлекен сăран завочĕ çывăхĕнчен иртрĕç. Ку хула сăранĕн чапĕ пĕтĕм çĕр-шыва сарăлнă. Мускав метрополитенĕн малтанхи вагонĕсенчи лармалли пукан-

сене çакăнти сăрапа сăрнă. Завода шала кĕрсе курас кăмăл çуралмарĕ хĕрсен — тир тунă чухнехи йывăр шăршă сăмсана çурать.

Нил пушă кĕтесĕнче чиркӳсен, часавайсен тата мăнастир çурчĕсен архитектура ансамблĕ унччен катаранах капăррăн курăнса ларнă. Хĕрес çĕкленин чиркĕвĕ (церковь Воздвиженья Креста) роза чечекĕ тĕсĕпе куçа илĕртнĕ. Акăш-макăш пысăк соборăн хăмăр кăвак кӳлепи тата чан çакмалли кĕмĕл тĕслĕ çӳллĕ тăрри ансамбле çав тери хитрелетнĕ. Ытти çивиттисем сенкер тĕспе ăмсантарнă. Халĕ ку тĕссем шупкалнă, ансамбль хăйĕн ĕлĕкхи йăлттамлăхне çухатнипе пĕрлех ишĕлме, ванма пуçланă. Чиркӳсенчи турăшсене çирĕммĕш çулсенчех Селигер кӳллине кайса пенĕ.

Хĕрсем Нил пушă кĕтесне кĕрсе кураймарĕç — ют çынсене унта кĕрсе çӳреме чарнă. Пĕр хĕрарăм хăлхаран каланă тăрăх, мăнастир çурчĕсенче куçарса килнĕ поляксене усрана пулать.

Хулана курса çӳренĕ чухне те, общежитие таврăнсан та Викторăн çап-çутă сăнĕ хĕр куçĕ умĕнчен пĕртте çухалмарĕ. Пĕрмай ун çинчен пуçне ватсах шухăшларĕ. Ак тамаша: кĕтмен-туман çĕртен пӳлĕме Виктор — чăн-чăн аслă сержант Кураков — сулмаклăн утса кĕчĕ, хĕре тем тери тунсăхлани, çавна май унпа курнăçма килни çинчен пĕлтерчĕ. Рита унпа чăнласах калаçрĕ. Йĕкĕт калаçнă чухне яланхилле: «Ку пачах та гипотеза мар, хирĕçлеме май çук чăнлăх» тесе те хуша-хуша хучĕ. Акă халĕ Лида ăна кăлăхах ку сана тĕлĕкре курăннă тесе ĕнентересшĕн. Тусĕпе мĕн калаçнине Рита тĕпĕ-йĕрĕпе астăвать. Унăн кашни сăмахĕ хĕр хăлхинче янках илтĕнсе тăрать. Коридортан сулмаклă ура сасси илтĕнсенех хĕр çак кунсенче яшт сиксе тăрать, çамки çине сивĕ тар тапса тухать.

Каччи курнăçма ятарласа килнине аса илсен хĕр тарăн шухăша путать. Нивушлĕ тĕлĕкре куртăм Виктора? Чăнах та килмен-ши вăл? Нивушлĕ çавă тĕлĕк çеç пулчĕ-ши? Айванланнă ăсăмпа çуккине пур пек куртăм-ши? Иккĕленме пуçласан хĕршĕн пурнăç ытла та кичемленсе каять. Ун пек чухне вăл васкасах Лида патне чупать. Тантăшĕсĕр пачах пурăнаймасть. Чĕри тĕпĕнчи вăрттăнлăхĕсене ăна шанса пĕлтерет, иккĕленĕвĕсене унпа пĕрле сӳтсе явать. Шел пулин те Виктор Осташкова килсе кайнине, кунтан хăвăрт фронта каялла кайнине темшĕн-çке Лида пачах ĕненмест.

Лида — лара-тăра пĕлмен канăçсăр хĕр. Унăн тап-таса чакăр мăшăр куçĕ çиçсе-йăлтăраса тăрать. Тути мăкăнь

çеçки тĕслĕ. Ленинградри блокадăра чухне малти шăлĕ каталнă та, хĕрĕн кулнă чухне çăварне ал тутрипе хуплама тивет. Лида тантăшĕн вĕри аллине çупăрлать те çупăрлать, çине-çинех тем пăшăлтатса калать. Мĕн калани уçăмлăн илтĕнмест, Рита пурпĕр ыйтмасть, тути çине пăхнипех ăнланать:

— Виктор çинчен ялан ан шухăшла! Пĕрмай уншăн пуçна ан ват!

...Юлашки кунсенче госпиталь палатисем шăкăрин тулчĕç. Лепеховăна çĕр-шыв вăрçăра пысăк çухатусем тӳсни тарăхтарать. «Мĕн мур тума кирлĕ çак вăрçă?— сасăпах каласа ярать вăл пуçри шухăшне.— Кама мĕн кӳрет вăл? Çап-çамрăк яшсем виле-виле çĕре кĕреççĕ. Витюк та хальччен пĕлмен-курман хирте ĕмĕрлĕхех выртса юлма пултарать. Мĕн пирки ӳпкев юлать-ши фронтра пуç хуракан каччăсен? Акă вĕсем ĕмĕрлĕхех çухалаççĕ те, ашшĕ йăхне тăсма пĕр пепке те юлмасть... Нивушлĕ çакăн çинчен шутлаççĕ-ши? Вилĕм мана та хăратать. Нивушлĕ манăн та пĕр ача çуратса курмасăрах юлашки сывлăшăм тухса кайĕ? Çĕр çинче йĕр хăварасчĕ-çке. Эппин, пĕр ача та пулин çуратмаллах. Хĕр ача çуралсан та аптрамĕччĕ. Ашшĕ Витюк пултăрччĕ...»

Кунашкал шухăшсене Маргарита тантăшне Лидăна та каламан-ха. Хирти госпитале практикăна кайсан кĕме пуçларĕç вĕсем хĕр пуçне. Пĕлеймен Маргарита: ун пек шухăшсем Лидăна та ют пулман. Вăн ĕнер тăшманăн разведка самолечĕ — «фанера»— килсе çаврăнса кайрĕ те, хура свастикăллă бомбардировщиксем санитари палли — хĕрлĕ хĕрес — уçăмлăн курăннине пăхмасăрах бомбăсем тăкса хăварчĕç. Инçете перекен тупăсен снарячĕсем киле-киле ӳкни те пулкалать.

Кĕçĕн лейтенантсем ик эрнерен хирти госпитальтен Осташковри эвакогоспитале каялла таврăнчĕç. Вăрçă пирки малти лини çывăхĕнче çуралнă кулянтаруллă шухăшсем хĕрсене иккĕшне те канлĕхре хăвармарĕç.

Суранланнисене хирти госпитальтен тылри хуласене санитари пуйăсĕсемпе эвакуацилеççĕ, васкавлă кăткăс операцисем тумаллисене ятарлă самолетсемпе илсе çитереççĕ. Акă Селигер кӳлли хĕррине «У-2» пысăк мар самолет анса ларчĕ. Фюзеляж ик енне вырттӑрса килнĕ йывăр суранлă икĕ çынна санитарсем наçилккасем çине хучĕç те автомобильпе хăвăрт госпитале ăсатрĕç. Пĕрин, хулăн саслă полковникăн, пĕçĕ шăммине пуля тирĕнсе ларнă та, хирургсене пульăпа пĕрле шăмă ванчăкĕсене тупса кăлармa, урине гипслама тиврĕ.

Яштака çамрăк аслă сержанта мина ванчăкěсем хырăмěнчен амантнă. Ана операци сěтелě çинче вăрах тытма тиврě: мина ванчăкěсем хăйсемпе пěрле ӳте шинельпе гимнастерка чěрпěлтěкěсене сěтěрсе кěнě те, вěсене чылайччен шырарěç, тупсан — пинцетпа турта-турта кăларчěç. Наркоз вăйě те йăлтах пěтсе çитрě ěнтě — аслă сержант çаплах операци сěтелě çинче. Скальпель чуна кăлармалла асаплантарса çаплах чěрě ӳте касать, пинцет мина ванчăкě е çип пěрчи тупса туртать. Аслă сержантăн пичě те, çамки те вěри мунчари пек тарланă, тем тери ыратнăран кăшкăрса яманни кăна.

Операцие çулланнă хěрарăм — аслă хирург, медицина службин майорě хăй тăвать. Наркоз вăйě пěтнине вăл курмасть мар, анчах ют япаласенчен тасатса çитермен суран мěн патне илсе пынине те лайăх пěлет. Пěр вěçěмсěр темиçе операци тума тивнěрен вăл та ывăнса çитнě. Хăйне пăхăнаканнисем умěнче çакна палăртмасть.

— Дело на мази. Кипкелěр...— тинех алă сулса хушрě вăл сестрасене. Ку ěнтě операци вěçленнине, малалла сестрасем тăрăшмаллине пěлтерчě. Хăй юнланнă перчеткине хывса аллине çурě те «Казбек» пирус туртма юнашар пӳлěме кайрě. Сестрасем аслă сержантăн хырăмě çинчи чăмăр кěрес шăтăка темле мазь хучěç, сурана анлă та вăрăм бинтпа хěреслетсе çыхрěç.

Аслă сержанта полковник ыйтнипе (пěр дивизирен çеç мар, пěр полкран иккен) унпа пěрле пěр палатăра вырнаçтарчěç. Темиçе кунран иккěшě те, уйрăмах аслă сержант, хăйсене çăмăлланнă пек туйма пуçларěç. Апат та çикелекен пулчěç.

— Сире госпиталь койки çинче нумай йăваланма тивет-ха. Но дело на мази. Тепрер уйăхран ăсатăпăр Ивановăна е Кокчетава...—тет вěсене хěрарăм майор ирхи тěрěслеве пырсан.

Аслă хирург малашнехине ырă сунса пěлтерни полковник тěлěшпе кăна чăна тухрě: температури йěркеллех, апат анать, вырăн çине чиперех тăрса ларакан пулчě, хăçан та пулин ури çине тăрассине ěмěтленме пуçларě.

Аслă сержант та операци хыççăн йăл илнěччě. Иккěмěш эрнене кайсан сывлăхěн виçе тараси тепěр енне туртса илме пуçларě: температури хăпарнăçемěн хăпарса пычě, суранран йывăр шăршăллă пӳр юхма тытăнчě те, ăна çыхнă бинта кун сиктерсе ылмаштарма тивет. Рентген ун хырăмěнчен ют япаласене кăларса пěтерейменнине палăртрě. Каччăн вăйě-халě шалтах чакрě, унтан та ытларах чун хавалě хавшарě.

— Юлташ гварди аслă сержанчĕ, операци сĕтелĕ сире тепре кĕтет,— малашне мĕн тумаллине пĕлтерчĕ аслă хирург рентген ӳкерчĕкне тишкерсен.

— Мана текех... нимле операци те кирлĕ мар ĕнтĕ...— пуçне çĕклемесĕр, никам çине пăхмасăр, кушăрханă вĕри тутипе вăйсăррăн пăшăлтатрĕ аслă сержант.

Медицина службин майорĕ хăйĕнпе хирĕçлемесĕр калаçнине, аманнисем ăна куçран тилмĕрсе пăхнине хăнăхнă. Аслă сержантăн чăрсăр хуравĕ ăна тĕлĕнтерсех ячĕ.

— Ну, ну, леш тĕнчене каясшăн апла...

Урăх ним те каламарĕ аслă хирург. Вăрт çаврăнчĕ те алăк патнелле утрĕ. Унпа пĕрле çӳрекенсем те хăйсен пуçлăхĕнчен пĕр утăм та юлмарĕç.

Юнтарнипе мар, кутăнлашнипе мар килĕшмерĕ аслă сержант тепре операци тутарма. Иккĕмĕш операцирен чĕрĕ юлас шанчăк çухалчĕ унăн. Епле вăраха тăсăлнăччĕ пĕрремĕш операци! Чĕрĕ ӳте каснине туйсах выртнăччĕ ун чухне те. Халĕ ĕнтĕ çавнашкал асапа чăтма пултараймĕ. Вăйĕ-халĕ йăлтах пĕтсе çитрĕ, куç-пуçĕ тĕтреллĕ кăтартать, нишлĕ кĕлеткере тӳсĕмлĕх тупăнасса кĕтмелли çук. Анланать аслă сержант: операци тусан та, тумасан та вилĕм куç умĕнчех.

— Хăпăр ман çумран! Урăх кастармастăп!— тарăхсах каларĕ вăл тепĕр кун тухтăр-ординатора.

— Ну, ну, питех тăрăшма тăван ывăл мар-ха. Вилесех тетĕр пулсан — сирĕн ирĕк...— мирлĕн пăрăнса кайрĕ аслă сержантран аслă хирург та.

Температура ӳссе кайнăран аслă сержант çав кун аташма пуçларĕ. Операци пирки шухăшлама та пăрахрĕ: скальпельпе каснине чăтса уссăр асапланни кăна. Аслă хирург черетлĕ обходра каллех операци пирки сăмах тапратсан аслă сержант пуçне тӳрех стена еннелле пăрчĕ.

— Мĕн калаçса тăмалли айванпа... хатĕрлĕр ăна ыран операци тума...—татăклăн алă сулчĕ аслă хирург, палатăран кăмăлсăррăн тухса кайрĕ.

Тепĕр кун икĕ санитар палатăна наçилккапа кĕрсе тăчĕç. Аçта унта! Аслă сержант вĕсене хăй яхăнне те ямарĕ.

Кĕçĕн командирпа тухтăрсем хушшинчи тавлашăва полковник ку таранччен пачах хутшăнманччĕ. Паян вăл та аслă сержант майлă пулчĕ:

— Паян ан чăрмантарăр ăна. Хăçан операци тумаллине кайран хăех калать.

Санитарсен нимсĕрех тухса каймалла пулчĕ. Темиçе минутран алăкран тухтăр-ординатор пуçĕ курăнчĕ. Пол-

ковник ал лаппипе сывлăша каснине курсан вăл алăка тул енчен хупрĕ.

Кĕçĕн лейтенантсем Лепеховăпа Галкина практикăран таврăнчĕç те операци пӳлĕмĕнче ĕçлеме тытăнчĕç. Ирпе пилĕк минутлăха пуçтарăнсан аслă хирург, лешĕ, «дело на мази» текенни, Лепеховăна шартах сиктерчĕ:

— Мана пĕр аслă сержант тăнран кăларать. Пĕрремĕш палатăри чăваш чĕппи...

— Чăваш?— ялт сиксе тăчĕ Лепехова.

— Мĕнлерехскер?— пĕлесшĕн пулчĕ Галкина.

Хуравласса, ирĕк парасса иккĕшĕ те кĕтсе тăмарĕç, коридор вĕçнелле çил пек вĕçтерчĕç.

Аслă сержант кăтăш пулнă та тĕлĕк курса выртать. Вăл Юманай ялĕ çумĕнчи Çуткӳль хĕрринче хăй юратнă хĕре кĕтет. Вăрах кĕттерекен марччĕ, паян апла мар: килмест те килмест. Пăрахса кайма та хатĕрччĕ — ял енчен шурă шупăрлă ик пике килни курăнса кайрĕ. Тинкеререх пăхрĕ те çав тери тĕлĕнчĕ каччă: кусем пикесем мар, шурă акăшсем иккен.

Палатăна ыйтмасăрах вăркăнса кĕнĕ ик сестрана полковник пӳрнипе юнаса хăвăрт асăрхаттарчĕ:

— Шăп... Çывăртăр.

Сестрасем самантлăха тăп чарăнчĕç. Унтан юнанине пăхмасăр çамрăк çын койки патне пырса тăчĕç. Ун çамки çинче çырă çӳç пĕтĕрĕнет, янахĕ çинче сылтăм енче пысăк мар шĕпĕн...

— Кураков вĕт!— палласа илчĕ Галкина унччен ăна сăн ӳкерчĕк çинче курнипех.

— Ай турух, чăнах та Виктор...— пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе илчĕ Лепехова.

Хĕр сассине илтсен каччăн хăмăр куçĕ чарăлсах кайрĕ. Тĕлĕк-и ку е чăн-и? Хăй куçне хăй ĕненмерĕ. Таçтан килсе тухнă тĕлĕрĕве сирсе ярас тĕллевпе куçне аллипе тăрмаларĕ. Çук, сирĕлмерĕ куçĕ умĕнчи чуна çывăх сăн. Хĕрĕн вĕри алли каччă питĕнчен ачашшăн сĕртĕнчĕ.

— Викторăм, ман Витюк...— илтрĕ каччă хĕр сассине.

— Чăнах та эсĕ-и ку, ахах пĕрчи?— шала кайнă сасăпа ыйтрĕ каччă. Пичĕпе хĕр алли çумне каллех сĕртĕнесшĕнччĕ — тăнне çухатрĕ.

— Кĕçĕн лейтенантсем, эсир паллатăр-им аслă сержанта?

Тăруках нимĕн те калаймарĕç хĕрсем, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Паллатăп: чăваш каччи вăл,— хуравларĕ Галкина сассине пусарарах.

— Паллатăп çĕç мар, çывăх çын тесе шутлатăп,— полковник умĕнче имеңсе тăма шутламарĕ Лепехова.

— Эппин, мĕншĕн ун патне паянччене кĕрсе пăхмастăр? Чунлă-и эсир е чунсăр-и?— хăтăрса тăкрĕ полковник сестрасене.— Çынни ав пиллĕкмĕш кун ĕнтĕ çăварне пĕр хĕлхем те ямасть. Моторĕ начар мар пулĕ-ха унăн, çамрăк организмăн. Бензинĕ вара пĕтсе пырать. Çавăнпа мотор чăх-чăх тăвать, карт-карт турта-турта илет. Никам ăшă сăмах калакан çук мĕскĕне...

Хĕрсем вăрах калаçса тăмарĕç: хыпăнса килнĕ — хăпăл-хапăл тухса кайрĕç. Çур сехет иртрĕ-и, иртмерĕ-и, палатăна каллех иккĕшĕ те кĕрсе тăчĕç. Рита хăех Виктора чей кашăкĕпе темле эмел ĕçтерчĕ, çав кашăкпах шуç савăтран çăратнă сĕт хыптарчĕ.

— Ку эмеле мана Роза Михайловна Юманайне пырса панăччĕ. Çапла мана чир-чĕртен тасалма пулăшрĕ. Аннӳ эмелĕ сана та вăй илме пулăштăрах!— турра тархасласа кĕл тунă пекех пăшăлтатрĕ Рита, унтан çапла хушса хучĕ:— Имлĕ курăк женьшень сĕткенĕ вăл...

Икĕ медсестра пĕрремĕш палатăна ир те, каç та кĕрех тăчĕç. Çакăншăн пуринчен малтан полковник хĕпĕртерĕ. Температури чакмарĕ пулин те, аслă сержант текех тăнне çухатмарĕ.

— Сывалсан иксĕмĕртен кирек хăшне качча ил,— пурин умĕнче те шантарчĕ Галкина. Çакна илтсен каччă пичĕ çинче йăл кулă палăранçи пулчĕ. Чăнах та, Виктор çывăх вăхăтрах леш тĕнчене ăсанĕ те асапланассинчен хăтăлĕ тейĕпĕр. Рита кампа тăрса юлĕ? Амăшĕ Таисия Петровна мĕн калĕ? Каччă çамки çине тăрукках вĕри тар тапса тухрĕ.

Сăнаса та тинкерсе пăхать Виктор хĕр çине. Унăн тĕлĕнтермĕш кăвак куçĕ хăй çине пăхма илĕртет. Ытармалла мар хитре çутă сăнĕ ирхи ачаш шуçăмла ялкăшать.

— Рита, кала аслă хирурга: кастăр, ваклатăр вăл мана наркоз памасăрах,— кĕтмен-туман çĕртен евитлерĕ каччă хĕре.— Эпĕ операцие хатĕр.

— Эсĕ ăслă-тăнлине тахçанах пĕлсе тăратăп. Операци пӳлĕмне Лидăпа иксĕмĕр илсе кайăпăр. Унта хирурга пулăшаканĕсем те хамăрах пулăпăр,— пытармарĕ хăй çакна кĕтнине Рита.— Анчах мĕншĕн наркозсăр?

Пичĕ йĕтĕн пирĕ пек шурса кайнă каччă хĕре куçран пăхса илчĕ те ăна-кăна шарламарĕ. Пĕрремĕш операци ытла та вăраха тăсăлнине, ун чухне хăйĕн ӳтне епле туранине аслă сержант йăлтах туйса тăнине Рита ăçтан пĕлтĕр-ха. Тӳсейĕ-ши Виктăран хавшанă организмĕ опера-

цие? Тĕрĕссипе, унăн шăммипе тирĕ кăна тăрса юлнă-çке.

Çук, апла мар иккен. Халĕ ĕнтĕ унăн чун хавалне вĕр çĕнĕрен çуралнă тĕллевсем — пурăнас килни, Рита пек, Лида пек маттур хĕрсемпе пĕр сывлăшпа сывлас паха ĕмĕт, хăйне пăхăнакансене хисепе хума пĕлекен Громов пек, Пожеданов пек командирсен приказĕпе тăшмана хирĕç татах та çапăçăва кĕрес ырă шухăш — сиплĕ вăй кӳчĕç. Мĕн калăн, çак вăй çĕнтерчĕ-çĕнтерчех. Операци ăнăçлă иртнĕ хыççăн хăмăр куç кунсерен çуталнăçемĕн çуталса пычĕ. Каччă майĕпен-майĕпенех койка çине тăрса ларакан пулчĕ, коридора тухса çӳреме пуçларĕ. Ирхи апат хыççăн полковника костыль илсе парать, ăна та хăйпе пĕрле коридора çавăтса тухать.

Çак кунсенче Рита та хаваслăрах çӳреме пуçларĕ. Юманайĕнчи тăван амăшне, Етĕрнери Роза Михайловнăна çырусем час-часах çырчĕ. Виктора операци пĕрре те, иккĕ те туни пирки пĕр сăмах та çырмарĕ. Операци хыççăнхи сипленӳ йĕркеллех пыни çинчен вара тĕплĕн çыра-çыра ячĕ, аслă сержант сывлăхĕ генерала тухмаллах çирĕпленессе шантарчĕ, янкăс сасăллă баянсене упрама хистерĕ.

Баян тенĕрен Селигер енчи беседкăна кăштăртатса тухса ларнă Виктор аллине хĕрлĕ кĕтесри баян епле лекнине Рита асăрхаймарĕ. Тантăшне кĕтмен парне пултăр тесе Лида — ырă чун-чĕреллĕ вырăс хĕрĕ — тăрăшрĕ çавăншăн. Госпиталĕн иккĕмĕш хутĕнчен чупса анакан Рита сасартăк тăпах чарăнчĕ. Мĕн ку? Анлă Раççейĕн аслă юхан шывĕ Атăл пуçланнă тĕлте, чаплă кӳлĕ хĕрринче чăваш кĕвви янăрать иккен. «Сăр хумĕсем». Чаплă, мăнаçлă вальс! Ăна чăваш каччи, чун савнă Витюк çырнă. Паллах, ăна халь калаканĕ те çавă ĕнтĕ. «Ыталам та чуп тăвам ăна!» — шут тытрĕ хĕр. Госпитальтен вăл вĕçен кайăкла вĕçесле чупса тухрĕ. Ытараймми лайăх кĕвĕ илтĕнекен еннелле Юманай пики чупса каяс çула хĕвел телей суннă евĕр, ылтăн-кĕмĕл пайăркисемпе тараватлăн, савăккăн çутатрĕ.

## Вăхăтсăр сывпуллашу

Эвакогоспитальте йывăр суранланнисемпе ураран аманнисене пĕрремĕш хутри палатăсене вырнаçтараççĕ. Кураков аслă сержант сипленекенни çĕр вун иккĕмĕш номерлĕ. Чăннипе вара аялти хутра палатăсем пурĕ те вун иккĕ кăна. Çĕр вун иккĕмĕшĕ коридор вĕçĕнче, чи хĕрринче. Уяр кун хĕвел ку палатăна ир кĕрет те каççăр тух-

масть. Хĕвел çутатнă чухне пурнăç палатăра та ытла кичемех мар.

Госпиталь койки çинчи чи лайăх йăпану — асаилÿсем, асаилÿсем... Юманайра тĕвĕленнĕ юрату, Мăк сăрчĕ çинче фронта хăвартрах тухса кайма ăнтăлни, Така майракине хÿтĕлени, Çÿлевĕç çăварне йышăнни.

Чĕкеç тÿпеменчи çапăçусем... Çĕрле вара сехре хăпартакан хăрушă тĕлĕксенчен хăтăлма çук. Пÿлĕнсе кăшкăрашса вăранса кайни те пулкалать. Юрать-ха полковник ăна-кăна лайăх ăнланнăран нимĕн те шарламасть. Хăйне ăна ури çинчи суран пÿртен ниепле те тасалса çитеймени, ун тавра экзема пĕтменни, шăмă сурни пайтах вăхăт тарăхтарчĕç. Çак сăлтавсем чăрмантарчĕç те ăна костыльтен маларах уйрăлма. Халиччен малти линире оборонăра тăракан хăйсен полкне таврăнас вăхăт çитсен вăл ачалла хĕпĕртерĕ, тухтăрсемпе сестрасене тăрăшса сипленĕшĕн тав сăмахĕсем каларĕ, алă тытса ăшшăн сывпуллашрĕ.

— Сире часах хамăр полкра курасса шанатăп,— ыталарĕ полковник Кураков аслă сержанта. Унтан куçне хĕсрĕ те темле вăрттăнлăх пĕлтернĕ пек шăппăн çапла каларĕ:— Хĕрÿ вара сан чăнах та ахах пĕрчи...

Полковник сывалса фронта тухса кайсан аслă сержантăн палатăри пурнăçĕ кичемленнĕ пек пулчĕ. Юрать-ха ун патне Ритăпа Лида килсех тăчĕç. Сăмах май каласан Лепеховăпа Галкина эвакогоспитальте пысăк хисепре: чупса çÿресе ĕçленĕшĕн, суранланнă фронтовиксемшĕн чун-чĕрепе тăрăшнăшăн.

Виктора эвакогоспитальте курнă кунран пуçласа Маргарита кунта килес-каяс маршрутне улăштарчĕ. Ирпе тÿрех çÿлти хутри хăйне çирĕплетсе панă палатăсене чупатчĕ, халĕ вара шурă халатне тăхăнсан чи малтан пĕрремĕш хутри çĕр вун иккĕмĕш палатăна кĕрет, Виктора мĕнпе те пулин пулăшма тăрăшать. Кăнтăрла пушă вăхăт тупăнсанах кунта чупса килет. Каçпа та общежитие çĕр вун иккĕмĕшне кĕрсе тухмасăр каймасть. Тем пирки те калаçççĕ каччăпа хĕр, темле ыйтăва та тĕплĕн шĕкĕлчеççĕ — туйăмĕсем пирки вара нимĕн те шарламаççĕ, «юрату» сăмаха пĕрре те аса илмеççĕ. Пĕтĕм калаçу суранне сиплекен боецпа медсестра хушшинчи пек пулса пырать. Анланмалла ĕнтĕ: чун-чĕре ыйтăвĕсемпе пуплеме вăхăчĕ юравлă мар.

Хăйшĕн тăванла тăрăшакан тупăнсан Виктора госпитальти пурнăçĕ текех унчченхи пек йăлăхтараллă туйăнмарĕ. Халĕ апат та çикелет, питне яланхи сăн кĕме пуçларĕ.

Виктор мĕнсĕр-мĕнсĕр пурăнма та пултарать, кĕнекесĕр — çук. Утса çӳремелĕх вăй пухсанах çуртăн иккĕмĕш хутĕнче библиотека шыраса тупрĕ. Клеопатра Димитриевна тесе чĕнеççĕ иккен библиотекаре. Хĕрĕх урлă каçнă тулли кĕлеткеллĕ хĕрарăм. Çирĕм икĕ çул каяллах медицина техникумĕнчен вĕренсе тухнă та фельдшерица пулса тăнă. Çар званийĕ те пур — лейтенант. Госпитальте штатпа библиотекарь çук. Профком хушнă ăна кунта ĕçлекенсенчен кĕнекесем пуçтарса пĕчĕк те пулин библиотека йĕркелеме. Мĕн ыйтмалли пур — паллах, тӳлевсĕр. Ĕç укçи ăна аманнисене сипленĕшĕн параççĕ. Патша саманинче кăларнă «Домострой» кĕнеке библиотекăна епле лекнипе кăсăкланмарĕ Виктор — кĕнекине вара кăсăклансах вуларĕ. Унтан вăл Василий Григорьевич Ян романĕсемпе повеçĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне «çăтрĕ». Историка мĕн кăна кăсăклантарма пултарать, çавна ыйтрĕ вăл библиотекарьтен. Виктор сывалса пынăçемĕн унпа Клеопатра Димитриевна хушшинчи калаçусем вăрахарах тăсăлакан пулчĕç. Этемлĕх историйĕ фельдшерицăна та самаях кăсăклантарать иккен.

— Темшĕн эп сире хамăн ывăл пекех шутлакан пултăм. Летчик вăл ман. Бомбăсемпе аякка вĕçекен эскадрильйăра,— йăл кулам пек турĕ пĕррехинче Клеопатра Димитриевна.

— Çырать-и?

— Тавтапуç турра: сайра хутра та пулин çыркалать-ха. Сирĕн пирки тухтăрсем калаçнине илтрĕм. Госпитале йĕпечăх пек килчĕ, халĕ ăмăрткайăк тĕкĕпе витĕнме пуçларĕ теççĕ.

Виктор хăй ăшĕнче кăмăллăн кулса илчĕ, сасăпа нимĕн те каламарĕ, Клеопатра Димитриевна аллине çепĕççĕн тытса чăмăртама кăна хăйрĕ.

Тепĕр кун çак ырă хĕрарăм Виктор валли «Вырăс патшалăхĕ историйĕн» пĕрремĕш томне тупса килчĕ. Паллă: Николай Михайлович Карамзин çырнине.

Çавăн хыççăн умлă-хыçлах тата темиçе том тупăнчĕ.

— Виктор Герасимович, сипленекенсем валли Карамзин çинчен лекци туса пама килĕшместĕр-ши?— сĕнчĕ ăна библиотекарь ашшĕ ячĕпе каласах.

— Иккĕленме кирлĕ мар: эпĕ хавасланса килĕшетĕп...

«Н. М. Карамзин — вырăс патшалăхĕн историкĕ» темăпа лекци пуласси, ăна эвакогоспитальте сывалакан Кураков аслă сержант вуласси çинчен коридорта стена çумне çакнă пĕлтерӳрен пĕлчĕ Маргарита Лепехова медсестра. Виктор Юманайĕнче Египетри пирамидăсем çинчен вуланă

лекци ăна çеç мар, пĕтĕм яла килĕшнĕччĕ те, унăн ку лекцийĕнчен те юлма шутламарĕ: тухтăртан ыйтсах иккĕмĕш хутри библиотека пӳлĕмне кайрĕ. Унта хăйсем тĕллĕн утан-çӳрен сывалакансемпе пĕрле эвакогоспитальте ĕçлекенсем те чылаййăн пуçтарăннă иккен.

Каччă Ритăна курчĕ те ăна çынсем асăрхамалла мар пуçне сĕлтсе саламларĕ. Курать хĕр: халĕ ĕнтĕ Витюк пачах иккĕмĕш хут операци тăвичченхи пек мар, сăнĕ-пичĕ те саççим урăхланнă. «Чисти картинка вĕт, чăтма манир çук чиперленчĕ»,— тетчĕ ĕнтĕ Алексă Романухин унашкаллине курсан. Тăпри çăмăл пултăрах пурнăçне командиршăн панăскерĕн.

— Христофор Колумб Америкăна уçнă пек, Карамзин Раççейĕн иртнĕ кун-çулне уçса пачĕ...

Çапла пуçларĕ хăйĕн лекцине Виктор. Унăн кашни сăмахне тимлĕн тăнларĕ Рита, Тепĕр тесен парта хушшинчи хĕр ача та учитель каланине çавăн пек куç илмесĕр итлемест ахăр.

Виктор каланă тăрăх, çынсем авалтанах этемлĕх историйĕ циклсем тăрăх, ярăмăн-ярăмăн аталаннине ĕненнĕ. Карамзин та çаплах шутланă иккен. Эппин, хальхи ĕмĕрти иртнĕ ĕмĕрти пек, çитес ĕмĕрти хальхи ĕмĕрти евĕрлĕ пулса тухать. Иртнĕ ĕмĕр атрибучĕсем хальхи ĕмĕре ятарлă декорацисем пулса кĕреççĕ, çĕнни вара çавсен çутинче аталанать. Иртни — паянхишĕн вĕрентӳллĕ тĕслĕх. Çавăнла та ĕнтĕ Карамзин чаплă историк çеç мар, ун чухнехи кунсен публицисчĕ те.

Историк пултарулăхне тĕрлĕ енчен уçса кăтартрĕ лектор, хăй мĕн каланине уçăмлă тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ. Çĕннине нумай пĕлчĕ Маргарита ку лекцирен. Ыйту хыççăн ыйту пани те лектор çынсен пĕлес кăмăлне тивĕçтерни çинчен каларĕ. Анчах кунти пĕр çынна — хура мăйăхлă капитана — лекци пачах килĕшмен-мĕн.

— Эпĕ çакна ăнланмастăп,— siksе тăчĕ вăл ура çине,— хальхи йывăр вăхăтра, пĕтĕм халăх Гитлера хирĕç тăнă чухне, мĕн тума кирлĕ пулчĕ-ши фронтовиксене Карамзин çинчен лекци вулама? Мĕн тĕллевпе кунта ун ячĕпе мухтав юрри юрларăр?

Капитан тăрлавсăрлăхĕнчен Кураков пачах та тĕлĕнмерĕ, ăна лăпкăн çапла хуравларĕ:

— Раççей историне çыракансем унсăр пуçне те пулнă. Анчах Карамзин ку ĕçе пуринчен те лайăхрах тунă. Пушкин çавна паттăрла ĕç тесе хакланă. «Борис Годунов» трагедине çырнă чухне Карамзин тунă ĕçлĕхсемпе усă курнă.

— Эсир вӗҫтӳ ҫине тӳрремӗн хуравласран темшӗн пӑрӑнатӑр-ха. «Демократилле майсем пӗчӗк патшалӑхсене тытса пыма юравлӑ, вӑтам патшалӑхсемшӗн — аристократла тытӑм, пысӑккисемшӗн вара — монархи кирлӗ»,— тесе ҫырнӑ Карамзин. Эппин, вӑл трона хӳтӗленӗ, ӑна ҫирӗплетме тӑрӑшнӑ. Ҫавӑншӑн ӗнтӗ Пӗрремӗш Александр ӑна 60 пин укҫа тыттарнӑ, орденпа — Анна орденӗн пӗрремӗш степенӗпе наградӑланӑ. Эпир, совет ҫыннисем, унашкаллипе пачах килӗшместпӗр. Ҫавӑнпа сирӗн тӑмсайла лекци вырӑнсӑр тесе шутлатпӑр.

Кӗрхи палан пек хӗрелсе кайнӑ Клеопатра Димитриевна Виктор Герасимович ҫине пӑшӑрханулла пӑхса илчӗ. Ҫав тӑмсай офицерпа хирӗҫленме кирлӗ мар тесшӗн пулчӗ вӑл.

— Тӗрӗс калатӑр, капитан юлташ,— килӗшрӗ тавлашакапа лектор.— Карамзин чӑнах та патша тытӑмне хӳтӗленӗ. Анчах ӑна Раҫҫей историне ҫырнӑшӑн орден панӑ, 60 пин тенкӗ укҫа вара ҫав историе пичетлесе кӑларма уйӑрнӑ. Николай Михайлович халӑха ҫутта кӑларасшӑн, ун пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн тӑрӑшнӑ. Ҫынсем пӗр-пӗрне хисепе хурас енӗпе илес тӗк, сирӗн те, капитан юлташ, вӗренмелли ҫук мар.

Чӗлхинчен кам туртрӗ-ши Куракова ҫак сӑмахсене персе яма! Нивушлӗ Клеопатра Димитриевна систернине ӑнланмарӗ? Мӑйӑхлӑ капитан, аманиччен рота командирӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ пулнӑскер, тилӗрсех кайрӗ темелле.

— Епле хӑятӑр ман пирки унашкал калама? Хӑвӑр сержант кӑна пулас-ха. Карамзина та, унӑн вӗрентӗвне те декабристсем ырламан, дворянсен революционерӗсем, разночинецсем хирӗҫ тӑнӑ. Эпӗ сирӗн лекци усӑллӑ мар, сиенлӗ тесе шутлатӑп. «Смерш» мӗн иккенне пӗлетӗр-и? Халех унта систерӗпӗр...

Капитан урӑх калаҫса тӑмарӗ, тӳрех эвакогоспиталь начальникӗ патне кайрӗ.

— Хӑрушӑ этем!— пӑшӑлтатса юлчӗ лекци итлеме пынисенчен пӗри.

Хайне мӗн тери пысӑк хӑрушлӑх кӗтнине Кураков лайӑхах тӗшмӗртрӗ, анчах унран епле хӑтӑлмаллине шутласа тупаймарӗ-ха. Кӗтмен ҫӗртен ҫӗрле ун патне палатӑна Клеопатра Димитриевна тумтир тӗрки йӑтса кӗчӗ, ҫула каймалли документсем пачӗ.

— Госпиталь начальникӗ — ман упӑшка. Вӑл сире сывалнисен командине мар, тӳрех фронта, хӑвӑр чаҫе тухса кайма хушать. Кӗҫӗрех. Унсӑрӑн ыран «Смерш» аллине

çакланатăр. Пуйăс çине сире Лепехова медсестра лартса ярĕ. Сире, фронтовиксене, турă та сыхласа çитерес çук, хăвăр сыхланаллă пулăр!

Клеопатра Димитриевна тăван ывăлĕ пек пулса тăнă Виктор çумне кăкăрĕпе тĕршĕнчĕ, питĕнчен ик енчен чуп турĕ те хăвăрт тухса кайрĕ.

Кураковăн суранĕ туртăнсах çитейменччĕ-ха, сипленмеллеччĕ тепрер уйăх, анчах ăна эвакогоспитальпе вăхăтсăр сывпуллашма тиврĕ. Чи йывăрри Ритăпа сывпуллашасси пулчĕ. Уйăн тĕтреллĕн пăхакан мăшăр куçĕнчен шăпăр-шăпăр куççулĕ юхни каччă чĕрине тем тери ыраттарчĕ. Хĕр чĕрине лăплантармалли сăмах тем чул шырасан та тупăнмарĕ.

— Кĕт, чĕкеçĕм. Кĕтекенсем телейлĕ...— тесе хăварчĕ вăл хĕре вагон картлашки çинчен.

— Таврăн, тăванăм!— пулчĕ хĕрĕн ăсату сăмахĕ.

«Çĕрĕç халăх комиссариачĕ тыткăнне мар, Сывлăх халăх комиссариачĕ аллине çаклан эппин»,— тесе кăшкăрсах каласшăнччĕ Рита, анчах именӳ чарнăран пĕр сăмах та шарламарĕ. Хытса кайнă сăнпа пуйăс пач курăнми пуличченех аллине сулса тăчĕ. Пуйăсĕ вара хашкаса сывланă май шап-шурă пăс кăлара-кăлара хĕвел анăçнелле, фронт еннелле, васкарĕ. Виктор Кураков шухăшĕпе пĕр взводри, пĕр ротăри юлташĕсем хушшинче ĕнтĕ. Чĕрĕ-сывă юлнисем унтах-ши? Аманнисенчен хăшĕ-хăшĕ сипленсе таврăнчĕ-ши? Хăйĕн пĕр чăрмавсăр перекен пистолет-пулемечĕ çухалман-ши? Кирлĕ пулать. Вăрçă малалла пырать-çке-ха. Хăйне старшина званийĕ панине Виктор фронтри чаçе çитсен тин пĕлчĕ.

## ОФИЦЕРСЕМ ЯЛА ТАВРĂНСАН

### «Тĕрĕслĕхшĕн çунакан анаткассем»

«Кашни çыннăн тӳпере хăйĕн çăлтăрĕ пур. Этем çуралнă чухне çутăлса каять те вилнĕ чухне сӳнет»,— тетчĕ Миккуле амăшĕ. Госпитальте тăватă уйăх выртнă хушăра çав çăлтăра чӳрече витĕр кăлăхах шырарĕ çамрăк офицер — тупаймарĕ, çапах суранĕ майĕпен-майĕпенех ӳт илнĕ май хăйĕн çăлтăрĕ халлĕхе тӳперех çуннине çирĕпрех те çирĕпрех ĕненчĕ.

— Маттурланатăн! Анчах фронта халех каяймăн-ха. Шкулта ачасене вĕрентме пултарасси пирки пĕртте иккĕленместпĕр,— çурăмĕнчен лăпкарĕ ăна киле ăсатнă чухне госпиталь начальникĕ. Вăл мухтасса мухтарĕ, анчах офицерăн калак шăмми ваннăран сылтăм алли çĕкленеймест. Суран пĕрре чиперех ӳт илет, тепре епресе каять.

Темиçе кунран Миккуль тăван Чăваш республикине, çуралса ӳснĕ кил-çурта килсе çитрĕ. Нарăс уйăхĕнчи хĕвеле çурхи сăн çапнă пек, анчах хĕл хаяр кăмăлне çемçетеймен-ха. Николай Яковлевич валли шкулта учитель вырăнĕ тупăнмарĕ, военрукра ĕçлеме хăй килĕшмерĕ. Иван Полиектовпа пĕрле бригада уйне фермăран тислĕк турттарма тытăнчĕ. Темиçе кунран ăна бригадир пулма çирĕплетрĕç.

Самана сакки чăнах та сарлака иккен. Сарлакине сарлака, анчах халĕ ун çине ахлатмасăр лараймăн. Самана улшăнса йывăрланнă май кашни çемьенех хуйхă-суйхă килсе каплапакан пулчĕ. Пурнăç пур енчен те хĕсĕкленни куçкĕретех. Сахвит аппан упăшки, Яков Миронович, Мускава хӳтĕленĕ чухне йывăр аманчĕ. Госпитальте сипленнĕ хыççăн Сталинградри тамăка çакланчĕ. Салтак виçкĕтеслĕхĕсем килсех тăраççĕ-ха, анчах ăçтан çырать — паллă мар. Хирти почта номерĕ çакăн çинчен нимĕн те каламасть. «Маншăн пăшăрханма кирлĕ мар. Эпĕ ват çерçи, ывăлсем вăт шип-шип сăмсаллă. Кирлĕ мар çĕртенех пуçĕсене вута чикме хатĕр. Çавсен шăпи хытă кулянтарать

мана. Пӳлӗхçӗ хӗрхенсе сыхласан кăна ӗнтӗ. Ăна шанар та пачах кулянар мар»,— лăплантармалла çырать упăшки.

Ывăлӗ Люнькка фронтра епле çапăçни çинчен Яков Миронович хаçатра вуласа пӗлнӗ те ăна амăшне ярса панă. Вуланă хыççăн упрама хушнă. Çак ывăлӗ — артиллерист, ашшӗ пекех, тупă расчечӗн командирӗ. Хăйӗн туппипе тăшманăн виçӗ танкне чарса лартнă, тăван çӗре малалла таптаса кӗме паман.

Миккуль таврăнсан ку хаçата амăшӗ ăна та вулаттарчӗ. Амăшӗн чунӗ вăталăх ывăлӗ пирки те лăпкă мар. Темшӗн-çке йывăр ӗçе çулăхрӗ: колхоз бригадирне йытă урипе чупма тивет. Тепле ӗлкӗрет мӗскӗн.

Чăн ӗнтӗ, госпитальтен килсенех Миккуль бригадирта кăна кӗрмешетчӗ. Кӗçех ăна районти çар комиссариатне чӗнтерчӗç, тӗрӗслӗхшӗн çунакан анаткассем алă пуснă çăхава вуласа пачӗç. «Кӗрнеклӗ каччă Миккуль Пожеданов ял тăрăх çил хăваласа çӳрет. Хамăр куртăмăр: суранӗ ан тӳрлентӗр тесе йăмăкне бритвăпа кастарать. Алли-ури тӗрӗс-тӗкелех, çапах ăна фронта ямаççӗ. Çар комиссариатӗнче ашшӗ-амăшӗн пӗлӗшӗсем лараççӗ ахăр. Çакна курса тăруçăн пӗтӗм ял тарăхать».

Çав çăхава итленӗ май Миккуль малтан хӗрелсе кайрӗ, унтан питне шурă пир тӗсӗ çапрӗ. «Мӗнех вара, фронта тепӗр хут кайма эпӗ хатӗр, анчах суран хупăнаймарӗ-ха...»— тесе хуравлама хатӗрленнӗччӗ вăл, çар комиссарӗ ун сăмахне пӳлчӗ:

— Ку çăхав çăва патне... Анаткас шкулӗнче çар ӗçне вӗрентекен кирлӗ, Николай Яковлевич. Эсир килӗшмӗр-ши?

Çапла Миккуль военрук пулса тăчӗ. Бригадир ӗçӗнчен те хăтармарӗç. Пӗр ыйту канăç памасть ăна: камсем-ха вӗсем — «тӗрӗслӗхшӗн çунакан анаткассем»? Ашшӗ çинчен çырнă çăхавсене те çаплах алă пусни ун хăлхине кӗнӗччӗ хăй вăхăтӗнче. Пӗррехинче, колхоз правленине кайнă чухне, çат! çапрӗ Миккуль чышкипе тăнлавӗнчен. Хаяркин! Никандр Хаяркин! Çав курчӗ Миккулӗн çурăм çинчи суранӗ тавра йăмăкӗ Зоя тем хырнине. «Сан сурану тасалса çитмен-ха, анчах пирӗн риваноль маçӗ те, бинт та çук, килте пирпе е пӳспе çыхăр»,— терӗç Миккуле район больницинче. Вăл хăй те чухлать: тасалса çитеймен çав суранӗ, çăвăнпа юхать те пӳр. Кун каçа юхни суран тавра хытса ларать, ырă мар шăршă сарать. Çав хытса ларнă пӳре тасатать те ӗнтӗ Зоя каççерен бритвăпа.

Шăп Зоя бритвăпа кӗрмешнӗ чухне пырса кӗнӗччӗ Пожедановсем патне Никандр Хаяркин. Типшӗмленсе тăс-

макланнӑ пичӗ ҫӑра сухалпа витӗннӗ, куҫӗ тӗксӗмленнӗ. Ӳсӗр пуҫпа Тимӗрлере шӑнса выртнӑранпах кӑххӑм-кӑххӑм ӳсӗрет, кӑкӑрӗ хӑйӑлтатать. Счетоводран кӑларнӑранпа ниҫта та ӗҫлемест. Салтака илмеҫҫӗ — сывлӑхӗ япӑх.

— Таврӑнтӑн-им, Миккуль Пӑшатанович? Ятарласа курма килтӗм. Тӗп Пӑшатанран хыпар пур-и? Пуҫна ан пӑркала: аҫу пирки ыйтатӑп...— йӗплесе те пӑрӑҫласа тӗпчерӗ ун чухне Никандр. Ҫакна асӑрхаманҫи пулчӗ Миккуль, анчах чӗнмен хӑна ҫине хӗрхенсе те йӗрӗнсе пӑхрӗ. Киномеханик тата счетовод чухнехи якалӑхпа капӑрлӑхран ун ҫи-пуҫӗнче нимӗн те юлман. Йӑпӑх-япӑх шалпар фуфайки вӗҫен кайӑка хӑратмалли мукка ҫинчи пек усӑнса тӑрать, уринче — кӗлли ҫӗтӗлнӗ чӑлхана кӑтартакан кивӗ калуш.

Миккуль хӑнаран хӑй епле пурӑнни ҫинчен ыйтса пӗлчӗ. Килӗнче тӑваттӑн иккен: икӗ ачине асламӑшӗ пӑхать. Нина Агафоновна упӑшкинчен уйрӑлнӑ. Ара, тиечук килӗнчи ырлӑхра ҫитӗннӗ чиперккен ӗҫлейми пулнӑ чирлӗ упӑшкапа пурӑнасси килмен ӗнтӗ.

— Санпа пурӑнни ҫамрӑк ӗмӗре сая яни кӑна!— татӑклӑн пӗлтернӗ хӑй шухӑшне тути хӗп-хӗрлӗ писевлӗ хӗрарӑм.

Халӗ вӑл хӑй ӗҫлекен вулав ҫуртӗнчех пӗр пӗчӗк пӳлӗмре хӗсӗнкелесе пурӑнать-мӗн. Тетӗҫе таврӑнма хӑтланса пӑхнӑ — тӑван килтисем каялла йышӑнма килӗшмен. Малтан вӑл ачисене хӑйпе пӗрле илсе кайнӑччӗ, темиҫе эрнерен иккӗшне те каялла ҫавӑтса килчӗ.

— Алимент тӳлеместӗн. Эппин, хӑв пӑх!— приказ парса хӑварнӑ ачасен амӑшӗ упӑшки пулнӑ арҫынна.

Сантӑр Хаяркин патне тӑруках пырса перӗнеймӗн — вӑл ялти колхоз председателӗ. Хаяр куҫпа пӑхса илнипех ҫынна чӗтрене ертет. «Элексантӑр Изосимчӑ» тесе йӑпӑлтатсан кӑна хут ҫинелле пӗкнӗ пуҫне вӑраххӑн ҫӗклет. Ваҫҫук Лявӑҫкине, унтан Кузьма Павӑлне фронта ӑсатсан суйланӑ Сантӑра председатель пулма, ҫийӗнчех броня панӑ. Пӗр те пӗр шухӑшласан ӗҫ алли ҫитмен вӑхӑтра яла арҫын таврӑннине ырламалла пек, анчах Миккуль Пожеданов килсе ҫитнишӗн вӑл пачах хӗпӗртемерӗ. Аманнӑ салтак таврӑнсан кашнинех пӗрер пӑт тырӑ параканччӗ, Миккуле вара шӑл шурри ҫеҫ кӑтартрӗ.

— Шкула кайса ыйтӑр, эсир унта ӗҫленӗччӗ вӗт...— хӑвӑрт татса пачӗ вӑл Тӑван ҫӗр-шыва хӳтӗленӗ ҫын ыйтӑвне.

— Эпĕ сирĕн ачăра та вĕрентнĕччĕ мар-и...— хăюсăррăн хирĕçлеме пăхрĕ Миккуль.

— Эпĕ ăнланмаллах калаймарăм-и элле? Тырă шкулăн та пур-тăр...

Пожеданова чирленĕ Ульяна вырăнне бригадира лартма та правлени членĕсем хистенипе кăна килĕшрĕ. Çĕнĕ бригадирпа ĕç пирки калаçнă чухне тӳреммĕн пăхаймасть хăй, куçне айккинелле тартать. «Тĕрĕслĕхшĕн çунакан анаткассем» урăх никам та мар, Хаяркинсемех — çак шухăш текех иккĕлентермерĕ Пожеданова.

Пĕр ирхине шкул директорĕ военрука коридора тухса кĕтсе илчĕ.

— Николай Яковлевич, эсир радио тăнлатăр-и?— ыйтрĕ вăл каччăран.— Паян хамăр патшалăхăн çĕнĕ гимнне пĕрремĕш хут итлерĕм.

— Эпĕ те итлерĕм,— хуравларĕ военрук.— Пит хӳхĕм янăрать.

Ку калаçу 1944 çулхи пуш уйăхĕнче пулса иртрĕ. Совет Союзĕн Гимнне Сергей Михалковпа Эль-Регистан сăмахĕсем тăрăх А. В. Александров композитор кĕвĕлени çинчен хаçатсем маларах пĕлтернĕччĕ. Ана каярахпа, правительство кăтартнă кун, юрлама пуçларĕç.

...Военрук амăшĕн София Александровнăн килтех ĕç мăй таран. Пăру картине тасатмалла, картишне шăлса тирпейлемелле, чăх-чĕпне апат памалла... Сылтăм аллине усарах çӳрекен Миккуль ниçта ĕлкĕреймест. Килте чухне Зоя пулăшкалать — паян вăл колхозăнне вăрлăхлăх тырă тасатать. Кил картинчи ĕçпе ĕшеничченех хăшкăлсан Сахвит аппа пӳрте кĕрет, аллине турахуп тытать, çип арланă май тăсăмлă юрă пуçарса ярать.

**Чăт, чăт, чунăм, чăт, чунăм!**

Ма кайрăм-ши вăрмана
Çулçă типнĕ вăхăтра?
Ма çуралса ӳсрĕм-ши
Çак телейсĕр вăхăтра?

Улăх тăрăх эп утрăм
Ухлĕм курăк шыраса.
Ухлĕм курăк шăтман пуль,
Шăтнă пуль те типнĕ пуль.

Тĕнче тăрăх çӳрерĕм
Хам телее шыраса.
Маншăн телей пулман пуль,
Пулнă пуль те пĕтнĕ пуль.

Кукăр-макăр юхан шыв,
Ҫыранта хура ҫырла.
Ҫырлине йăлт хурт ҫинĕ,
Ман телее йыт ҫинĕ.

Улăх тăрăх эп утрăм
Ирхи сывлăм пуҫтарса.
Ирхи сывлăм ыр тумасть,
Калушăма йĕпетет.

Урам тăрăх эп утрăм
Вăрçă пирки шутласа.
Вăрçă ҫынна ыр тумасть,
Хĕрлĕ сăна шуратать.

Уй варринче ҫут кӳлĕ,
Хĕвелпелен типес ҫук.
Манăн куҫри куҫҫулĕ
Шур тутăрпа типес ҫук.

Вĕç, вĕç, куккук, вĕç, куккук,
Вăрман хĕрне ҫитиччен.
Чăт, чăт, чупăм, чăт, чупăм,
Ĕмĕр вĕçне ҫитиччен.

Ытла та хурлăхлă Сахвит аппан пĕччен ларнă чухнехи юрри. Хăй турахуппа ҫип арлать, куҫĕнчен куҫҫуль тумлать.

— Хăҫан таврăнĕ-ши Якку? Унсăр ҫурт-йĕр пушансах юлчĕ. Ларсан та канăç ҫук, тăрсан та чун лăпланмасть...— ҫине-ҫинех ассăн сывлать вăл.

Пурнăç вĕçне ҫитнĕнех туйăнать хуйхă-суйхă сахал мар курнă ҫак хĕрарăма. Пӳлмере шăлса илмелĕх тырă юлман, кункăрара пашалу пĕçермелĕх ҫăнăх ҫук. Пахчана ҫĕр улми лартнă хыççăн тĕп сакай та пушанса юлчĕ. Колхоз пĕр пĕрчĕк те памасть. Мĕнпе пурăнмалла? Сахвит аппа турахупне кăмака ҫинелле перет те Шăнкăртам хĕррине апат пĕҫермелĕх тин тапса тухнă вĕлтĕрен татма каять.

## Райĕçтăвком президиумĕпе мобилизаци пайĕ

Анаткас — Хырлапа Шăнкăртам тăрăхĕнчи нумай-нумай ялсенчен пĕри, анчах ыттисенчен ячĕпе ҫеç мар, акăшмакăш илемлĕ вырăнта вырнаҫнипе уйрăлса тăрать. Ҫурхи кунсем ҫитнĕ май симĕс тум пĕркенме пуçланă вăрман вĕçен кайăксен савăк юррисемпе янăрать. Ула-чăла тăвайккисенче пĕчĕк утравсем пек ешĕл лаптăксем курăнкалаççĕ. Уйсем тырă калчисен кавирĕпе витĕнеççĕ. Пӳлери

улăхсем тĕрлĕ тĕслĕ чечексемпе капăрланаççĕ. Таврари çĕнелекен çут çанталăк хăйĕн ĕлккенлĕхĕпе чуна илĕртнĕ чухне вăрçă нушине вăхăтлăха та пулин пуçран кăларса пăрахатăн, пурнăç хуйхи-суйхине маннă пек пулатăн.

Николай Яковлевич занятисем хыççăн килнелле утать. Паян вăл тирта пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл перессипе хăнăхтарусем ирттерчĕ: ку енĕпе ачасем хушшинче пысăк шанчăк параканнисем пур. Çавăнпа военрук кăмăлĕ лайăх. Ана хирĕç ял Совет ĕçтăвкомĕ енчен пĕр лав килет. Ун çинче тăвата хĕр, пĕр старик. Вĕсем хушшинче Илья Кузьмичăн кĕçĕн хĕрĕ Альтук та пур.

— Иван Полиевтович, ăçта турттарса каятăн ку чиперккесене? Пĕр-пĕр султан гаремне ăсатмастăн-и?

— Гарем тетĕн-ха... Кусем таркăнсем. Торф кăларнă çĕртен тарса килнĕ те, халĕ каялла ăсатаççĕ. Ивановăна çитиех.

Альтук ик эрне каялла кăна выçăхса та пыйтланса тарса таврăннăччĕ, хăй унччен вĕреннĕ çĕре — Упири вăтам шкулăн тăххăрмĕш класне çӳреме пуçланăччĕ. Ăçта унта вĕренме! Торф кăларнă çĕрте ĕçлекен кирлĕ. Анчах çитмĕл урлă каçнă старикпе карчăка камăн пăхмалла? Аслă хĕрĕ Лисук фронтра, кĕçĕннине те каллех илсе каяççĕ. Çемьере урăх никам та çук. Ăçталла пăхать ял Совет ĕçтăвкомĕ? Мĕншĕн нимĕн те курмасть райĕçтăвкомĕн мобилизаци пайĕ?

Николай Яковлевич лав çинчи Альтук куçĕпе тĕл пулчĕ те, хĕр лĕр-р йĕрсе ячĕ.

— Альтук Ильина, кутамккуна ил те анса юл. Сана торф кăларма тĕрĕс мар илсе каяççĕ. Ыттисем вара хушнă çĕре кайăр, урăх тарса ан килĕр.

— Тĕрĕс те пулĕ,— ырланă пек пулчĕ военрук каланине Иван Полиевтович.

— Пожеданов военрук хăйĕн хурăнташĕн хĕрне лав çинчен антарса хăварчĕ. Эпир те торф кăларма каймастпăр!— виçĕ хĕр харăсах евитлеççĕ райĕçтăвкомăн мобилизаци пайĕнче.

Пай пуçлăхĕ çак хыпара райĕçтăвком председательне Сергеева ятарлă хут çырсах пĕлтерет, дезорганизатор тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хистет. Кĕçех Анаткас ял Совет ĕçтăвкомне васкавлă телефонограмма персе çитет: Пожеданов военрукăн ыран райĕçтăвком президиумне килмелле, хурăнташĕн хĕрне Ильинана хăйĕнчен хăвармалла мар.

Илья Кузьмич çакăн çинчен пĕлсен Миккуле тӳрех çапла каларĕ:

— Тӳре-шарапа тавлашни ҫиле хирӗҫ сурнипе пӗрех. Сурчӑкӗ пурпӗр хӑв ҫине сирпӗнет... Альтук кайтӑрах. Хӑҫан та пулин таврӑнӗ. Эпир, стариксем, епле те пулин пуранкалапӑр. Пирӗн автансӑр яла каймалли кана юлнӑ ӗнтӗ...

Николай Яковлевич ял Совет ӗҫтӑвкомӗнче Илья Кузьмич Кузьмин ҫемйинче кам-кам пурри, вӗсем хӑҫан ҫурални тата хальхи вӑхӑтра ӑҫта пулни ҫинчен пичет пустарса справка илчӗ. Унтан кӳршӗ ялти вӑтам шкула ҫитрӗ.

— Темшӗн-ҫке хӗр ачасене чипер вӗреннӗ ҫӗртенех тыта-тыта каяҫҫӗ...— иккӗленчӗ вӑтам шкул директорӗ Игнатьев, чылаях вата ҫын. Тӑххӑрмӗш класс журналӗ тӑрӑх тӗрӗслесе Авдотья Ильина шкулта хӑш уйӑхсенче вӗренни ҫинчен пичет пуссах справка хатӗрлесе пачӗ.

Пожеданов колхозӑн пӗр ҫамрӑк тихине кӳлме хӑнӑхтарнӑччӗ. Вӑл Альтука ик кустӑрмаллӑ ҫӑмӑл урапа ҫине хӑйпе юнашар лартрӗ те ҫурхи ҫӑрӑлчӑк ҫулпа район центрне тухса вӗҫтерчӗ. Альтука колхоз хваттерӗнче хӑварса чи малтан прокуратурӑна кӗчӗ Пожеданов. Ял Совет ӗҫтӑвкомӗ ҫырса панӑ справкӑна кӑтартрӗ.

— Ку сирӗн справка ниме те пӗлтермест. Стариксене пӑхма уйрӑм ҫын кирлӗ тесе нихӑш саккунра та каламан,— ик аллине ик еннелле сарчӗ прокурор.

— Эппин, ҫак справкӑна вуласа пӑхӑр тата...

— А вӑт ку питӗ вырӑнлӑ справка! Вӗреннӗ ҫӗртен ӗҫ повинноҫне илсе кайма юрамасть! Анна Васильевна, тивӗҫлӗ хут хатӗрлӗр-ха: Авдотья Ильинана ӗҫ повинноҫӗнчен хӑтарччӑр...— хушрӗ прокурор хӑйӗн заместительне.

Мобилизаци пайӗнче Пожеданова тӳрех кӑшкӑрса ятлама тытӑнчӗҫ.

— Фронтра пулнисен те тылра йӗркелӗхе пӑсма юрамасть. Сирешкелсене тытмалла та тӗрмене хупмалла, айта-ха Зиновий Сергеевич патне...— Пожеданова сӑмах калама та памарӗ пай пуҫлӑхӗ.

Райӗҫтӑвком председательне Зиновий Сергеевич Сергеева лайӑх пӗлет Пожеданов. Вӑрҫӑччен ҫут ӗҫ пайӗнче ӗҫлетчӗ. Халӗ вӑл самаях ырханланнӑ, ун ҫийӗнчи гимнастерка ытла та шалпар пек курӑнать. Райӗҫтӑвкомра мӑйӗ ҫине тӑхӑнтарнӑ хӑмӑт ҫӑмӑлах мар ахӑр.

Пожедановпа пай пуҫлӑхӗ райӗҫтӑвком президиумне (тӗрӗсрехххӗн, председатель кабинетне) кӗнӗ чухне Сергеев такампа телефонпа калаҫатчӗ. Телефон трубкине шатлаттарса хурсан хӑй патне килнӗ ҫынсене иртсе ларма сӗнсе чӑрманмарӗ, тӳрех Пожеданова пӑскӑртма тытӑнчӗ:

— Ну, мӗнле, Ильинана хӑвпа пӗрле лартса килтӗн-и?

Е ăна паянах Ивановăна кăларса яр, е ху тĕрмене кĕрсе лар! Дезорганизатор!

Хирĕçлесе тем каласшăнччĕ Пожеданов, ăçта унта! Сергеев каллех çаварĕнчен сурчăк сирпĕтме пуçларĕ, халех прокуратурăна, милицие шăнкăравлассипе хăратрĕ. Председатель сĕнессе текех кĕтсе тăмарĕ Пожеданов, кабинет хуçи çывăхнех лырса ларчĕ.

— Пĕтрĕ-и сирĕн каласа? Акă мĕн, председатель юлташ, эсир милицие шăнкăравличчен хăвăра çак кабинетран кăларам та сирпĕтем. Ак çак аллăмсемпе. Пуçлăх кабинетне йышăниччен çынсемпе ыррăн калаçма вĕренес пулать. Ку пĕрре. Иккĕмĕшĕ: эпир фронтра юн тăкнă вăхăтра эсир кунта саккунсене йăлтах манса кайнă. Çитмĕлтен иртнĕ старикпе карчăкăн пĕр хĕрне фронта ăсатнă, тепĕрне вĕренме пăрахтарса торф кăларма янă. Акă вулăр...

Пожеданов председателе прокуратура панă справкăна тыттарчĕ. Лешĕ урса кайнă вăкăрла пăхса справка йĕркисем тăрăх куçĕпе чупса тухрĕ. Мобилизаци пайĕн пуçлăхĕ кабинетран тахăш вăхăтра тухса шăваннă. Çиллес фронтовикпа иккĕш кăна тăрса юлнине курса Сергеев сĕтел ещĕкĕнчен хăйĕн умне револьвер кăларса хучĕ. Унтан васкамасăр телефонпа такама шăнкăравларĕ.

— Прокурор-и? Акă ман патăмра Анаткасран Пожеданов ларать. Эсир мĕн унта шали-вали хăтланатăр: ун аллине справкăсем паратăр?

— Саккунлă йĕркепе, Зиновий Сергеевич. Вăл пирĕн пата ял Совет ĕçтăвкомĕнчен тата вăтам шкултан справкăсем илсе килсе тăратрĕ. Мобилизаци пайĕ кирлĕ йĕрпе пырайманни курăнать. Фронтовиксем ăна дериваци теççĕ пулас...— илтĕнчĕ телефон трубкинче.

Сергеев пĕрре хĕрелсе, тепре кăвакарса кайрĕ. Револьверне сĕтел ещĕкне хăй вырăннех хучĕ. Кресло çине пусăрăнараххăн ларчĕ те пĕчĕкленсе юлнăнах туйăнчĕ. Тахăш вăхăтра тахăш кнопки çине пуснă вăл — тăпăл-тăпăл тумланнă хĕрарăм, секретарĕ пулĕ ĕнтĕ, турилккепе икĕ стакан чей йăтса килчĕ, пĕрне — председатель умне, тепĕрне Пожеданов умне лартрĕ.

— Матрӳшке чейĕ... Ĕçĕр — хĕрсе кайнисене те лăплантарать...

Çапла каларĕ те каялла тухрĕ секретарь. Пожеданов стакана айккинелле куçарса лартрĕ, председателе куçран тĕллесе пăхрĕ.

— Акă мĕн, Николай Яковлевич,— сассине йăвашлатрĕ председатель.— Аçуна та паллатăп, хăвна та пĕлетĕп. Ильина шкулта вĕрентĕрех эппин. Мобилизаци пайне

ертсе пыма ҫӗнӗ пуҫлӑх кирлӗ. Килӗшетӗн-и — шутласа пӑх...

Ҫӑмӑл урапа ҫине Альтука хӑйпе юнашар лартса Пожеданов Анаткаса чиперех таврӑнчӗ.

Темиҫе кунран «Ҫӑлтӑр» колхоз правленийӗн ларӑвӗнче Сантӑр Хаяркин фронтра аманнӑ кӗҫӗн лейтенанта Миккуль Пожеданова бригадиртан ним мар кӑларчӗ.

— Районӑвком президиумӗ кӑтартӑвӗпе...— ӑнлантарчӗ председатель правлени членӗсене. Ҫӳлтисем хушнине хирӗҫлеме хӑякан тупӑнмарӗ. Бригадирта каллех фронтри офицер мӑшӑрӗ Ульяна аппа ӗҫлеме пуҫларӗ.

## Кӑтӑрнӑ пуху

Кӗҫӗн лейтенант Николай Яковлевич Пожеданов, военрук пулса ӗҫлекенскер, хул хушшине «Начальная военная подготовка» кӗнеке хӗстерсе ир-ирех шкулалла утрӗ. Ачасене ҫар ӗҫне вӑл ҫавӑн тӑрӑх вӗрентет. Ҫурхи кун ҫурма ӑслӑ тесе ахаль каламан ҫав. Ҫурҫӗр енчен вичкӗн ҫил вӗрме пуҫларӗ те, ешерме пуҫланӑ курӑк ҫине нӳрлӗ юр йӑтӑнса анчӗ. Пулкалать ҫав ун пекки те. Пиҫиххие туртса ҫыхнине пӑхмасӑр шинель витӗр ҫил ачисем пӗр чӑрмавсӑр кӗрсе каяҫҫӗ.

Строй йӗркине вӗрентмелли уроксене паян ӑҫта ирттермелле-ши? Физкультура залӗ ҫукран занятисене ӑшӑрах кунсенче шкул картишӗнче ирттерекенччӗ. Вӑрҫа пула йӑпӑх-япӑх тумланнӑ ачасене паянхи ҫанталӑкра унта илсе тухаймӑн. Эппин, директорпа Ипатий Ларионович Ларионовпа калаҫса татӑлмалла: паян строй йӗркине шкул коридорӗнче вӗренме ирӗк патӑр.

Ҫак шухӑшсемпе утса пыракан Пожеданов укӑлча хапхинчен хулӗ урлӑ симӗс рюкзак ҫакнӑ шинеллӗ ҫын кӗнине курах кайрӗ. Кам ку? Хӑйне хӑй ӗненмесӗр Пожеданов куҫне алсишпа сӑтӑркаласа илчӗ. Ара, Кузьма Павӑлӗ вӗт. Ҫавӑ — Павел Кузьмич Кузьмин. Вӑл Хусанта госпитальте сипленни ҫинчен илтнӗччӗ-ха Пожеданов, унтан ҫапла хӑвӑрт таврӑнасса кӗтмен.

Ашшӗн ҫывӑх юлташне хирӗҫ чупа пачӗ Николай Яковлевич. Тӳрех тӑванла ыталашрӗҫ, пӗр-пӗрин сывлӑхӗ пирки ыйтса пӗлчӗҫ.

— Мухтанмалли ҫук: ӳпкемре металл ванчӑкӗсем кӑчӑртатаҫҫӗ. Те пурӑнса пулӗ ӗнтӗ...— йывӑррӑн сывлать Павел Кузьмич. Миккуль ҫаплах ун ҫине куҫ илмесӗр пӑхать, хӑйне хирӗҫ лашапа пыма хушманшӑн ӳпкелет.

— Қаҫпа пирӗн пата ҫит. Аннепе иксӗмӗр те кӗтетпӗр...

— Ҫук ӗнтӗ,— хирӗҫлет Павел Кузьмич.— Таврӑннӑ офицера курма хӑвӑр пырӑр...

Ял хуҫалӑх артелӗн правленийӗ колхозниксен пухӑвӗнче ҫурхи ӗҫсем ҫинчен отчет туса памалла. Миккуль Пожеданов ҫакна асра тытса Иван Полиевтова курсанах хӑюллӑ сӑмах персе ячӗ:

— Эпӗ сирӗнпе Павел Кузьмич пирки пуплесе пӑхасшӑнччӗ. Шӑпах тӗл пултӑр. Вӑл колхоз председателӗнче лайӑх ӗҫлерӗ. Қаллех ӑна суйламалла мар-ши теҫҫӗ...

— Хаяркин хаярлӑхӗ чӑнах та йӑлӑхтарсах ҫитерчӗ ӗнтӗ. Апли апла та, пухӑвӗ отчет итлемелли ҫеҫ вӗт-ха...

— Колхозниксем хӑйсем хуҫа: яланхилле пухуран суйлав пухӑвӗ тӑвасси вӗсен ирӗкӗ.

Ҫакнашкал калаҫни юлашки кунсенче ялта час-часах илтӗнчӗ. Пухура Сантӑр Хаяркин отчечӗ вӑраха пымарӗ, колхозниксем паракан ыйтусем ҫине вара вӑрах хуравламалла пулчӗ.

— Вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми мӗншӗн ҫӗрнӗ? Уншӑн кам яваплӑ?

— Фермӑсенчи выльӑхсем мӗн пирки хӗҫ пек тӑрса юлнӑ?

— Пытармасӑрах калӑр-ха, район пуҫлӑхӗсем валли хӗл каҫа миҫе сурӑх ӑсатрӑр?

— Правленире колхозниксене мӗншӗн-ха харлатакан йытӑ пек кӗтсе илеҫҫӗ?

— Колхозниксем выҫӑ лараҫҫӗ, Хаяркин ӗҫкӗ хыҫҫӑн ӗҫкӗ пуҫтарать. Унӑн ӗҫмелли-ҫимелли ӑҫтан тупӑнать-ши?

— Хаяркина председательтен кӑларас, ун вырӑнне Кузьмина лартас!— илтӗнчӗ унтан та кунтан.

Ытти чухне вашават кӑмӑллӑ Иван Полиевтов уйрӑмах хӗрсе калаҫрӗ. Ҫак старик — чӑннипех ӗҫ паттӑрӗ. Ҫӗмелкапан таврашне ун пек ӑста тӑвакан ялта урӑх ҫук темелле. Қанаша ҫӳреме чул сарса ҫул тӑваҫҫӗ — Иван Полиевтов, ҫамрӑксемпе юнашар тӑрса, юхан шыв хӗрринче чул кӑларать. Вӑл вӑрҫӑн малтанхи ҫулӗнче 440, иккӗмӗшӗнче 624 ӗҫкунӗ тунӑ.

— Тенкӗ пӗрер пусӑн пухӑнать, кӗрепенккесӗр пӑт пулмасть. Пирӗн колхозра вара ҫакна шута илмеҫҫӗ. Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх пурлӑхне унталла та кунталла салатма тытӑнчӗҫ. Фронтрисен ҫемйисене пачах пулӑшмаҫҫӗ. Ывӑлӑм Ваҫук вӑрҫӑ пуҫланнӑранпах фронтра. Ун арӑмне Марьене — ӗҫчен кинӗме — вутӑ турттарса килме те лаша памасть Хаяркин...

Ҫак сӑмахсене Иван Полиевтов трибуна патне тухма-

сăр, хăй ларнă вырăнтанах, чун-чĕрипе тарăхса каларĕ. Ватă колхозник сăмахне пӳлекен пулмарĕ. Колхозри йĕркесĕрлĕхсем çинчен хирĕçлеме çук фактсемпе Миккуль Пожеданов калама тытăнсан хыçалти ретре Никандр Хаяркин сиксе тăчĕ.

— Мĕн итлетпĕр Пăшатан шĕшлине! Вăл колхозник мар, шкул учителĕ...

— Ан чăрмантар!— терĕç ăна кӳршисем, аллинчен тытсах хăй вырăнне лартрĕç.

— Пурте пĕлетпĕр: хăй вăхăтĕнче пĕрлешӳллĕ хуçалăх рульне эпир пурте хисеплекен Павел Кузьмич Кузьмин чипер тытса пычĕ. Ман шутпа, ку руле каллех ун аллине памалла. Аманнă хыççăн сывлăхĕ хавшакрах ĕнтĕ, йывăр чухне ăна хамăр пулăшăпăр.

Çапла вĕçлерĕ сăмахне Миккуль Пожеданов. Пухура ларакансем пурте шăпăл-шăпăл алă çупса ячĕç. Апла пулин те Никандр Хаяркин — ни йĕтĕн, ни кантăр — тепре сиксе тăчĕ. Сурчăк сирпĕтсех кăшкăрма пикенчĕ:

— Ашшĕ тусне хӳтĕлет вăл! Ăна пуçлăха лартасшăн!

Кăххăм-кăххăм ӳсĕрекенскере пиншакĕн çаннинчен туртса каллех хăй вырăнне лартрĕç.

Трибуна патне васкамасăр Василий Полиевтов тухрĕ, хыçне мар, умне тăчĕ. Вăл Иванпа пĕр тăван. Утмăл виççе пуснă ĕнтĕ, пурпĕр çулталăкра 310 ĕçкунĕ тунă. Пухура чи кĕске сăмах калаканни вăл пулчĕ.

— Сантăра эпир хуçалăха ертсе пыма суйланă-ши е хусах маткасем хыççăн чупма-ши? Мĕншĕн-ха вăл хăйĕн инкĕшĕ пулнă Дьяконова патĕнчен туха пĕлмест?

Лăхăл-лăхăл кулни илтĕнчĕ. Çамрăксем урисемпе тăпăртаттарчĕç. Ун хыççăнах пурте тенĕ пек алă çупрĕç. Хăй çитмĕл саккăртине пăхмасăр çамрăксемпе пĕрле хатĕрлев пунктне тырă, çĕр улми турттаракан Филипп Тимофеев та, авăн çапнă чухне молотилка умне машинист пулса тăнă 67 çулхи Иван Кузьмин та пулă пуçĕнчен çĕрме пуçлани çинчен каларĕç, çавăнпа ку пуçа татса пăрахма сĕнчĕç.

Пуху хĕрсе кайнине курса парти райкомĕн инструкторĕ Маслов — виçĕ «М»— икĕ хут сăмах тухса каларĕ, пуху паян отчет итленипех çырлахмаллине аса илтерчĕ. Çук, кăтăрса кайнă халăха ӳкĕте кĕртме пулать-и вара! Инструктор сĕннипе пуху председателĕ махорка туртма тăхтав тăвасси çинчен пĕлтерчĕ. Çав хушăра Маслов парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе телефон тăрăх калаçса илчĕ, Анаткасра çĕнĕ председатель суйласшăннине пĕлтерчĕ.

— Ни в коем случае! Сана пулăшма халех ҫын яратăп!— пулчĕ хурав. Тепĕр ҫур сехетрен Анаткаса шап-шур кăпăка ӳкнĕ рысакпа районти милици пуҫлăхĕ Тимофеев тата райхаҫат редакцийĕн яваплă секретарĕ Тимошкин килсе ҫитрĕҫ, пухура курăнмалли вырăна вырнаҫса ларчĕҫ. Колхозниксене вĕсем килни те хăратаймарĕ. Хаяркина председательтен кăларса ҫапрĕҫ-ҫапрĕҫех.

— Вырăнтан тухнă ятпа пĕр четвĕрт «аншарли» лартатăп. Айтăр пурте ман патăма!— чĕнчĕ Хаяркин районтан килнисене. Лешсем килĕшмерĕҫ.

— Сире ăсатма лав кирлĕ пулать-и? Манран мĕнле пулăшу кирлĕ?— пырса тăчĕ вĕсем патнех ҫĕнĕ председатель Павел Кузьмич.

— Тавтапуҫ. Пире Тимофеев юлташ лартса кайма пулчĕ,— хуравларĕҫ Масловпа Тимошкин. «Ҫын ĕҫлĕхлĕ пулни пирвайхи сăмахсенченех паллă»,— тĕвĕленчĕ шухăш хаҫатҫă пуҫĕнче. «Хаяркина председательтен кăларма чарайманшăн пĕҫерккĕ лекетех мана. Районта сӳс-кантăр пухакан ҫĕнĕ организаци тăваççĕ. Хаяркина ҫавăн пуҫлăхне лартма сĕнес мар-ши?»— ватрĕ пуҫне инструктор.

## «Йывăр чухне пулăшма пултăн-иҫ»

«Ҫăлтăр» колхозăн ҫĕнĕ председателĕ Кузьмин Русак кассинчи Пожедановсем патне пачах кĕтмен ҫĕртен пырса кĕчĕ.

— Атя лаша витине кайса курар,— сĕнчĕ вăл Миккуле сăмах вакласа тăмасăр. Мĕншĕнне-мĕнне каччă тавҫăрса илеймерĕ-ха.

Лаша витине хирĕҫ — тырă кĕлечĕсем. Иртнĕ каҫ такам хăямачĕ пĕр кĕлетĕн улăм ҫивиттине сирнĕ те сысна какайне тушкипех вăрласа кайнă.

— Ку мĕн ҫипчен калать? Ун пирки шухăшламастăп та витнă. Хурал тăрассине вăйлатмалла пирĕн. Паянтан кĕлетсем патне каҫхи хурала тухатăн, кăнтăрла вĕсене Илья Кузьмич хураллать...

— Тулли мар вăтам шкулта восприкра ĕҫлекелетĕп те...— текелерĕ Миккуль.

— Хăв пухура мĕнле каларăн-ха? Йывăр чухне пулăшăпăр темерĕн-и? Эсĕ вăй ҫитнĕ таран ĕҫлесшĕн мар витнă. Шкулта кăнтăрла вĕрентеççĕ, ҫĕрле санăн кĕлетсемпе витесене хуралламалла пулать.

Килĕшмех тиврĕ Миккуле. Мĕнех тăвăн-ха: колхозра ĕҫ вăйĕ ҫитмест. Каҫ пулсан Миккуль колхозăн вити-кĕ-

лечӗ патневаскать, ӗнтӗркичченех хуралта тӑрать. Ирпеле конюхсен пӳртӗнчех тӗлӗрсе илет те шкула ҫул тытать.

Илья Кузьмич Кузьмин пӗрехмай лаша вити картишӗнче кӗрмешет. Ут таврашне юсать, сӳсмен-йӗнерчӗк янтӑлать, вӗрен-пӑяв явать. Унӑн пӗр хӗрӗ, Лисук ятли, Хӗрлӗ Ҫарта; кӗҫӗн хӗрне Альтука Иваново облаҫӗнче пӗр вӑхӑт торф кӑларма тиврӗ.

Ялта арҫынна салтака ӑсатман ҫемье тупаймастӑн. Сӗтел хушшинче ашшӗ вырӑнӗ те, теприсен ывӑлӗсен вырӑнӗсем те пушӑ. Вӑрҫӑ вӑрҫах ҫав, ҫухатусӑр пулмасть. Юнпа шӑварӑнакан вӑрҫӑ хирӗнче пӗри те тепри выртса юлни ҫинчен хурлӑхлӑ хыпарсем килех тӑраҫҫӗ. Пурпӗр аллине усмасть Анаткас.

Колхоз председателӗ Пожеданова урам варринче тӗл пулчӗ.

— Эс хаҫат вулатӑн-и ҫак? Ытти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсем фронт валли тырӑ, выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем нумайрах та нумайрах туса пама тӑрӑшаҫҫӗ, пархатарлӑ ӗҫсем ҫинчен рапортлаҫҫӗ. Эпир колхоз производствинче вӑкӑрсемпе ӗҫлессине те лайӑххӑн йӗркелесе яраймастпӑр. Мӗн шутлатӑн эсӗ ҫакӑн пирки, кӗлет хуралҫи? Витнӑ, нимӗн те шутламастӑн. Санӑн та вӑкӑр хӳри пӑрма пуҫламалла мар-ши?— пӗр кулмасӑр ыйтрӗ Павел Кузьмич.

Хулӗ ыратнӑран «вӑкӑр хӳри пӑрма» килӗшмерӗ Николай Яковлевич. Вӑкӑрсемпе ӗҫлекен ятарлӑ звено йӗркелеме, пӗр хастар ҫамрӑка звеньевоя уйӑрма сӗнни вара председатель кӑмӑлне килчӗ. Часах колхозра вӑкӑрсемпе ӗҫлекен уйрӑм звено турӗҫ. Кӑштахран ҫавӑн пек звеносем кашни бригадӑрах йӗркеленчӗҫ. Вӑхӑт ҫитсен ку звеносем уйран кӗлте турттарчӗҫ, хатӗрлев пунктне тырӑпа ҫӗр улми леҫрӗҫ.

Вӑйпитти арҫынсем фронта тухса кайсан колхоз производствинчи пӗтӗм йывӑрлӑх хӗрарӑмсем ҫине тиенчӗ. Акӑ Ҫинук Максимова хӗрупраҫ конюхра чиперех ӗҫлет. Ним те калаймӑн, лашасене арҫынран кая мар пӑхать. Брабансон ӑйӑртан, ял-йыш каларӑш, Барбансонран кӑна чунӗ шикленет. Ана хӑпӑл-хапӑл апат пӑрахса парать те тепӗр пӳлмӗк еннелле пӑрӑнать. Кӗсресене пӗтӗлентерес умӗн ӑйӑра урӑхларах апат пама, ҫӑмарта ӗҫтерме хушрӗҫ, кӳлсе ҫӳреме чарчӗҫ. Брабансон ют ҫынна хӑй патне ярасшӑнах мар, ҫавӑнпа ӑна витерен илсе тухса ҫӳретекен ҫук. Миккуль ҫакӑн ҫинчен Иван тетӗшпе калаҫса пӑхма шутларӗ.

— Эпӗ санран маларах ҫӑкӑр ҫинӗ. Кирлех пулсан— хӑв ҫавӑтса тух,— хуравларӗ лешӗ.

— Эп витерен çаватса тухам, эс ирекре çӳрет. Çапах сан аллусем иккĕшĕ те тĕрĕс-тĕкел,— сĕнчĕ хайхине Миккуль.

Айăр витерен лăпкă тухрĕ, анчах картишĕнче вара тӳрех ик уран тăчĕ. Мăн хапаллă та çӳллĕскер пуçĕпе пĕлĕте перĕнессĕнех туйăнчĕ. Çав вăхăтра лаша вити картишне Павел Кузьмич пырса кĕчĕ.

— Асту, Иван, асту, чĕлпĕрне ан вĕçерт! Ан вĕçерт! Барбансон картишĕнче мĕн пуррине йăлт çĕмĕрсе пĕтерет, хăй те аманса пĕтет.

Иван тетен сехри хăпнă: чĕвен тăнă Брабансон малти урисемпе кĕç-вĕç ун çине пусас пек. Вăл çапла сехĕрленнĕ вăхăтра ялти çамрăк — Куçка Витти — чупса çитрĕ.

— Парăр мана Барбансона,— туртсах илчĕ вăл чĕлпĕре Иван тете аллинчен.

Чарайми ăйăр, хăй паллана сасса илтсен, тăват ура çине чиперех тăчĕ. Витя ăйăра вăрăм çилхинчен ярса тытрĕ, самантрах ун çине утланса ларчĕ. Яра пачĕ вăл урхамахпа уй еннелле. Çак каччă пĕлтĕр ăйăра çăвĕпех пĕвере шыва кĕртнĕ, çунă, тасатнă. Унпа йĕтемрен кĕлете тырă турттарнă, ытти ĕçсем тунă. Çавăн чухне туслашнă та ĕнтĕ иккĕшĕ. Халĕ вара туслăха малалла тăсма шутларĕ Витя: кашни кунах ăйăра витерен кăларса çӳретме пуçларĕ.

## КАЛЛЕХ ФРОНТА!

### Тăваттăн пĕр кашкăра тытайман

Çуркунне юхан шыв хĕрринчи лапам симĕсленчĕ те, халĕ Иван тетепе Çинук аппа ут кĕтĕвне каç пулсанах унта кăлараççĕ. Утсем ешĕл курăка тем тери тунсăхласа çиеççĕ, анчах инкекĕ те юнашарах: кашкăрсем киле-киле тапăнаççĕ. Ирпе урамра ик хĕр ача пăшăрханса калаçса тăраççĕ:

— Кашкăрсем икĕ тихана çурса кайнă кĕçĕр.

— Ан калаç!

— Тихисен виллисене хам куçпа хам куртăм.

Пĕлмен Миккуль: кашкăрсем иртĕхнĕшĕн вăл айăпла иккен. Ун куçне Павел Кузьмич уçрĕ. Айван мар-и: шкулта военрукра ĕçленĕрен хăйĕн аллинче пĕчĕк калибрлă винтовка пур, анчах унпа кашкăрсене хăратасси Миккуль пуçне пачах пырса кĕмен. Айăпларан ĕнтĕ каччăн председатель умне тăма тиврĕ.

— Санăн задача — тар шăрши кăларасси,— терĕ Павел Кузьмич.— Аллунта пăшал пур çинчех кашкăр тихашкăна çурсан тăкакне хăв саплăн. Асту, кашкăрăн нухрат çук, вăл юн кӳпнĕшĕн укçа сана тӳлеттерĕпĕр.

Çак калаçу хыççăн Миккуль чин енĕпе татах та пысăкланчĕ: кăнтăрла — шкулта военрук, çĕрле вара — кĕлетвите хуралçи, çавăнпа пĕрлех ут кĕтӳçи те. Миккуле çĕнĕ должность пани кашкăрсене питех кулянтармарĕ çав: ут кĕтĕвĕнче мар пулсан урăх çĕрте пайталанаççĕ. Ик-виç кунранах Павел Кузьмич ут кĕтӳçине Миккуле колхоз правленине ятарласа чĕнтерчĕ те ай ятларĕ, ну пăскăртрĕ:

— Çук, офицер пулман эсĕ. Чăн-чăн салтак та пулайман. Икĕ хут аманни ниме те пĕлтермест-ха. Хăв пурăнакан ял таврашĕнчи кашкăрсене те хăлăха кĕртейместĕн. Вăт вĕсене чарсанччĕ... Вара эсĕ фронтовик пулнине ĕненме те пулĕччĕ. Кама та пулин урăххине хушмалла витнă...

Миккулĕн председателе хирĕçлеме мехел çук. Павел Кузьмич, пĕтĕм ял пĕлет, Илья Кузьмичпа пĕр тăван: шăллĕпе тетĕшĕ. Миккуль асламăшĕпе Илья Кузьмич пĕр ратнеренех. Илья Кузьмичпа хурăнташлă пулсан эппин Миккуль председательпе Павел Кузьмичпа та хурăнташлă. Хурăнташа хурăнташ епле хирĕçлеме пултарĕ.

— Каллех инкек сиксе тухрĕ-им?— хăюсăррăн ыйтрĕ хурăнташран Миккуль.

— Инкек тетĕн-и? Эсĕ, витнă, хăв пĕр инкек. Кашкăр ут кĕтĕвĕнчен сивĕнчĕ, анчах каçхине ав ял вĕçĕнчисен хурĕсене пĕрне хăварми пăвса тухнă. Е такашкă йăтса каять, е пăрушкă юнне ĕçет. Эпĕ сана акă мĕн калам. Выçă кашкăр пек пуçна каçăртса çӳриччен юлташусене чĕн те Пӳле енчи варсене ухтарса тух. Кашкăрне хӳринчен тытайăр-и, тытаймăр-и, пăшалăрсене çине-çинех кĕрĕслеттерĕр, тар шăрши кашкăр сăмсине витĕр кастăр. Выльăх мурĕсем унти варсенчен туха-туха тарччăр.

Сунара çӳресех курман пулин те, председатель мĕн каланине Миккуль тимлĕн итлерĕ.

— Пĕчĕк калибрлине илме ан ман,— шурă шăлĕсене кăтартрĕ Павел Кузьмич «сунарçă» кайма тăрсан.

Миккульпе пĕрле кашкăр тытма Брабансон тусĕ Куçка Витти, шкултан ватă учитель Александр Дмитриевич Дудкин, колхоз правленийĕ номенклатуринче пулнисенчен Александр Изосимович Хаяркин пычĕç. Çуртне хупса Сантăр район центрне пурăнмаллипех куçса кайнăччĕ, анчах ик-виç эрнеренех каялла таврăнчĕ. Сӳс-кантăр кантурне йĕркелеймен вăл, çавăнпа уп вырăнне урăххине лартнă. Ертсе пыма хăнăхнă çынна Павел Кузьмич колхоз шта-

тĕнче тивĕçлĕ должность тупса параймарĕ-ха. Правлени членĕсем пĕр шухăшлă марри пĕтерет. Пĕрисем ăна фуражира лартасшăнччĕ, теприсем татăклăн хирĕçлерĕç. «Сантăр-кантăр аллине нимле пурлăх та шанса памастпăр»,— терĕç. Çакăн пирки Александр Изосимович штатри должноçе çакланаймарĕ-ха.

Уксахласа çӳрекен Варсонофий Каширин счетовод вăрçăччен утар хуралçи аллинче пулнă ик кĕпçеллĕ пăшал тупса пачĕ сунарçăсене. Ку пăшала Пожеданов хăй илсе Витьăна пĕчĕк калибрлине парасшăнччĕ, çамрăккине ниепле те ӳкĕте кĕртеймерĕ. «Анаткасра ӳснĕ Лапшу Çтаппанĕ»,— тет хăй çинчен Витя. Дудкинпа Хаяркинăн хăйсен тутăхнă пăшалсем пур, çавăнпа чĕннĕ те вĕсене сунара.

Пӳлери пĕр тарăн вар патне çитсен сунарçăсем икшерĕн уйрăлса кайрĕç. Пĕр кашкăр вар тĕпĕнчи хăвалăхран тухсан Витя пăшал çекĕлне çине-çинех чанклаттарчĕ, ик кĕпçинчен пĕри те пемерĕ. Пожеданов кашкăра виç-тăват хутчен тĕллесе печĕ, тукмак хӳре пурпĕрех малалла лăпăстатрĕ, кĕçех куçран та çухалчĕ. Вăл чупса иртнĕ тĕлте кайран юн тумламĕсем кăна асăрхарĕç.

Дудкинпа Хаяркин вар тăрăх тăварах вăрах çӳрерĕç, кашкăр тĕсне те кураймарĕç. Хаяркинĕ, самăр та кӳпшекскер, вар çумĕнчи лапамра выртса канма шутлать, Дудкинĕ, çӳллĕ те типшĕм кĕлеткеллĕскер, çур çухрăмри тĕмсем патнелле çул тытать. Тĕлĕрсе кайнă Хаяркин теплерен куçне уçать те хытать каять: ун еннелле икĕ пы-ы-сăк кашкăр утса пыра парать. Кашкăрсем çынна курса хăраса тарасран сыхланса-и, урăх сăлтавпа-и, хайхи Сантăр-кантăр пăшалне пăрахса хăварса, кăшкăра-кăшкăра синкерлĕ вырăнтан урăх çĕрелле ĕрĕхтерет.

Кăшкăрашнă тĕле Пожеданов хăвăрт чупса çитрĕ, ура айне пулнă пăшала ярса тытрĕ, кашкăрсем çинелле тĕллерĕ. Тĕллесссе тĕллерĕ — анчах пемерĕ. Ара, кусем Хурайккапа Сăркка вĕт. Ашшĕне пĕрре мар тĕл пулнисем. Пĕри пысăкрах, тепри пĕчĕкрех. Сăркки — ами, Хурайкки — аçи. Сунарçă пăшал кĕпсине çĕрелле пĕкнине курнăран-и, иккĕшĕ те тăпах чарăнчĕç. Йăлтăртатакан куçсемпе сунарçă еннелле тĕлĕннĕ пек пăхаççĕ. Миккуле курса, сăнĕ тăрăх теплерен унăн ашшĕне Яков Мироновича аса илмеççĕ-ши çав усăк хӳресем?

Темшĕн-çке Миккуль ку кашкăрсенчен пĕртте хăрамарĕ.

— Туссем, текех ку ял çывăхĕнче ан çӳрĕр, пире сиен ан кӳрĕр!— сасăпах каларĕ Миккуль. Ик кашкăрĕ те ăн-

ланас пекех хăлхисене тăратрĕç. Хаяркин пăшалĕпе Пожеданов çўлелле кĕрĕслеттерчĕ. Кашкăрсем каллех тĕлĕннĕн вырăнтах тĕпĕртетнĕ пек пулчĕç. Пожеданов çине шанмасăртараххăн тепре пăхса илчĕç. Малтан вырăнтан Сăркка тапранчĕ, ун хыççăн вара Хурайкка та юлмарĕ.

Сунартан пуш алăпа таврăнсан председатель Миккультен кула-кулах тĕпчерĕ:

— Эс кашкăра тĕллесех петĕн-и? Лектерейрĕн-и вара? Ну-и ну, ну-и ну... Витнă, пĕчĕк калибрлипех кашкăра ўкерейместĕн пулĕ çав.

— Александр Дмитриевич каларĕ те, иккĕлентĕмĕр: Хурайккапа Сăрккана чăнласах куртăр-и вара?— ĕненмесĕртереххĕн ыйтрĕ кăштахран Павел Кузьмич. Анăçусăр сунарçă çирĕплетсе каланине илтсен председатель каллех яланхилле тăрăхлама тытăнчĕ:

— Хаяркин кашкăр умĕнче йăвашланнă теççĕ. Тĕрĕсех-и?— Унтан кула-кулах çапла хушса хучĕ:— Юлташусене ан кала та, çăкăр мурĕсем çеç эсир. Тăваттăн пĕр кашкăр тытайман...

Шкулта вара Александр Дмитриевичран урăххи çинчен тĕпченĕ:

— Кашкăрĕ сăрăччĕ-и, хураччĕ-и? Хўреллĕччĕ-и, хўресĕрччĕ-и? Сиртен хăшĕ хăшне сехĕрлентернĕ: кашкăрĕ сунарçăна-и е сунарçă кашкăра?

Тăрăхлаканĕ тăрăхлатăрах, ку вăл хăямата. Пўлери тарăн варсенче шуйхатса çўренĕренпе кашкăрсем каскăнланни, ялтан выльăх-чĕрлĕх сĕтĕрни çав тапхăрта урăх пулмарĕ. Хурайккапа Сăркка та ку таврара урăх курăнмарĕç.

## Каччăран—арçын...

Хĕрлĕ Çар тăшмана хĕвел анăçнелле сывлăш çавăрса илме памасăр хăвалать. Хамăр çĕр-шыва фашистла вăрăхурахран тасатса пĕтересси нумай юлмарĕ ĕнтĕ. Мĕн пур совет халăхĕпе пĕрле анаткассем те хăйсем умне уçăмлă тĕллев лартнă: пĕтĕмпех — çĕнтерў валли, йăлтах — тăшмана çапса аркатма! Пурте питĕ лайăх пĕлсе тăраççĕ: çĕнтерĕве фронтра çеç мар, тылра та туптамалла. Çавăнпа ĕнтĕ колхоз членĕсем Тăван çĕр-шыв аслă вăрçи кунĕсенче нихçан пулман хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Кашни колхозник ĕçе вăхăтра тухма, ăна пысăк пахалăхпа тухăçлă тума тăрăшать.

Пĕр сăмахпа каласан, çĕнтерĕве çывхартассишĕн пĕ-

тĕм халăх ватти-вĕтти таранах ырми-канми вăй хурать. Фронтовиксем тата тылри заводсенче çĕнтерӳ туптакансем умĕнчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр тесе мĕн кирлине пурне те тума тăрăшать пысăках мар чăваш ялĕ. Патшалăха тырă парасси — поставка шучĕпе-и, МТС ĕçĕшĕн тӳлемелли натуроплата йĕркипе-и, Хĕрлĕ Çар фондне-и — пĕрремĕш тивĕç шутланать. Тухăçлă тыр-пулшăн халăха хĕлĕнçăвĕн тар юхтарма тивет, çавăнпа пучахне мар, пĕрчине те сая ямаççĕ.

Ялти колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çăматă йăвалаттараççĕ, çĕлĕк çĕлеттереççĕ, кĕрĕклĕх тир пухаççĕ. Хĕрупраç салтак алли-урине шăнтасшăн мар: каççерен чăлха, алсиш çыхать. Бригадăсенче çĕр улми, купăстапа кишĕр типĕтсе ăсатассине йĕркеленĕ.

Ырă ĕçĕн ури пурах çав. Шкул ачисем те фронтрисене пулăшма тăрăшаççĕ: «Чăваш пионерĕ» танк тума укçа пухаççĕ. Ку ĕçе шкулта пуçарса яраканĕ Александра Елизаровна Гусева пулчĕ. Унăн упăшки фронтра танкист пулса çапăçнă, вăрçăн пирвайхи çулĕнчех орден илме тивĕçлĕ пулнă. Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă пĕр çапăçура вăл паттăрла пуç хунă. Усал хыпар килсен Александра Елизаровна малтанхи вăхăтра куçне уçайми макăрчĕ, пĕрмай макăрнăран хĕп-хĕрлĕ куçпа çӳрерĕ.

Те куççуль хутаççи пушанса юлнă, те чĕри хуйхăпа касăлма чарăннă, юлашки вăхăтра унăн куç айĕ йĕпенме пăрахрĕ. «Чăваш пионерĕ» танк тума укçа пуçтармалли ведомость çине тăлăха юлнă салтак арăмĕ чи малтан хăйĕн хушаматне çырчĕ те «50 тенкĕ» тесе палăртрĕ. Унтан ăшă хĕмсем сапакан чакăр куçне Николай Яковлевич çине тĕллерĕ. Ку куçăн магнитла туртăмĕнчен Миккуль яланах пăрăнма тăрăшнă, паян вара ку туртăмран вĕçерĕнеймерĕ: ведомость çине хăйĕн хушаматне çырса алă пусрĕ те 50 тенкĕ укçа кăларса хучĕ. Çынсем сисмесле чап! чуп туса илчĕ учительница каччăна питĕнчен.

«Чăваш пионерĕ» танк тума ытти учительсем те укçа пачĕç. Çакăн хыççăн ведомость классем тăрăх кайрĕ.

Александра Елизаровна военрукпа тĕл пулмассерен хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе каять, унпа вăрах калаçса тăма кăмăллать. Хăйсем патне хăнана та чĕннĕччĕ, Николай Яковлевич чăрмантарса çӳреме шутламарĕ.

Ялта пикенсех çĕр улми лартнă вăхăтра шкул директорĕпе военрук хушшинче ĕçлĕ калаçу пулса иртрĕ.

— Калăр-ха, тархасшăн, эсир шкул çынни-и е колхозăн-и? Ман шутпа, шкулăн та, колхозăн та.

— Малаллине ан калăр, Ипатий Ларионович. Шкул пахчинче çĕр улми лартма лаша харри тата суха пуç кирлĕ тесшĕн эсир. Çапла-и? Павел Кузьмичпа тăхтаса тăмасăр калаçатăп, анчах суха пуçне кам тытĕ? Манăн сылтăмми хевтесĕр-ха çав...

Ипатий Ларионович ун-кун пăхса илчĕ.

— Шăпа пĕр аллипе вутне парсан, тепĕр аллипе шыв курки тытса тăрать теççĕ. Тăват уралли кăна тупăнтăр. Сухапуç тытма акă Александра Елизаровнăна хушăпăр...— те чăнласах, те шӳтлесе каларĕ директор.— Куçĕ ун вутла вылять. Ачасене вăл куçпа пăхсах итлеттерет. Учительсене те час-часах çапла калать: «Куçпа пăхса итлеттерейменсен кутран тапса хăратаймастăн».

Пожеданов хăй панă сăмаха çийĕнчех пурнăçларĕ. Тепĕр сехетрен суха пуç туртисем хушшине ула кĕсре кӳлĕнчĕ. Сулахай аллине çăмăлрах пултăр тесе суха пуçăн сылтăм енчи тыткăчне пиçиххипе кăшăлласа çыхрĕ те кăшăлне хулĕ çине тăхăнтарчĕ. Александра Елизаровна лашана йĕвенĕнчен тытса çавăтса çӳрерĕ. Мĕнех калăн, йăрансем çип çапнă пекех тӳрĕ çыранчĕç. Çавна май ачасем те, учительсем те хавасланса ĕçлерĕç. Суха пуç тытаканпа лаша çавăтаканăн ĕçĕ директора та килĕшрĕ ахăр.

— Килĕшет мана эсир иксĕр пĕрле ĕçлени!— ăшă куçпа пăхса мухтать иккĕшне те Ипатий Ларионович. Александра Елизаровна военрука кăмăлланине те пĕлет вăл.

Çĕр улми лартса пĕтерсен кунта вăй хунă ачасене те, учительсене те шкул директорĕ тав сăмахĕ каларĕ. Пожеданов суха пуçне тимĕрĕпе çӳлелле çавăрса кӳлчĕ, кайма тапранчĕ.

— Тăхтăр-ха, Николай Яковлевич, сиртен татах пулăшу кирлĕ,— чарчĕ ăна Ларионов.— Вăн çĕр улми вăрлăхĕ чылай юлчĕ, тархасшăн, кĕçĕр ăна хураллăр-ха.

Вăрлăхран юлнă çĕр улми техничкăсен пӳлĕмĕнче урайĕнче сапаланса выртать. Николай Яковлевич çав пӳлĕмрех диван çинче çĕр каçма шутларĕ. Çывăрса кайма ĕлкĕрейменччĕ, алăкран Александра Елизаровна кĕрсе тăчĕ. Сĕтел çине сумкинчен тулли кăкшăм, вĕтĕ-вĕтĕ кукăльсем кăларса хучĕ.

— Ан ятлăр, Ипатий Ларионович хăй ячĕ, суха пуç тытакана сăйлама хушрĕ,— пĕлтерчĕ çепĕç сасăпа хăй кунта мĕншĕн килнине. Тăпăл-тăпăл шăм-шаклăскер хул урлă уртнă шултăра чечеклĕ тутăрне пукан хыçĕ çине çакрĕ. Кăкшăмри шĕвеке ик стакан çине тултарсан пĕрне хăвăрт янклаттарчĕ, Николай Яковлевича та çапла тума хистерĕ.

Малтан вӗсен калаҫӑвӗ ҫыпӑҫсах пымарӗ. Тепрер стакан аншарли ӗҫсен Александра Елизаровна каччӑпа юнашар ларчӗ, кӑкӑрӗпе ун ҫумне ҫыпӑҫрӗ.

— Упӑшкам Смоленск вӑрманӗнче ҫӗре кӗнӗ. Кӗвӗҫекен никам та ҫук,— темшӗн пӑшӑлтатса каларӗ вӑл. Хӑйӗн чӑп-чӑмӑркка кӗлетки вутла ҫунать, кӑпӑш тути арҫын пичӗ патнех ҫывхарчӗ.

Пӗлетпӗр ӗнтӗ, Миккуль педучилищӗре Шурӑпа пӗр класра вӗреннӗччӗ. Хитре хӗр ҫамрӑкла качча кайрӗ те вӑрҫа пула ача ҫуратса курмасӑрах мӑшӑрсӑр тӑрса юлчӗ. Хӗр чухнехи илӗртӳлӗх унра халӗ те иксӗлми. Ӳсӗрӗлме пуҫланӑ Миккулӗн тути шӗл-кӑвар хӗрарӑм тутипе тутлӑн пӗрлешрӗ, вӑтанупа имен̆ӳ тыткӑнӗнчен хӑтӑлнӑ алӑсем пӗр-пӗрне ыталаса илчӗҫ. Арҫынпа хӗрарӑм хушшинче малалла мӗн пулнине куракан пулмарӗ. Эппин, ҫакӑ иккӗшӗн вӑрттӑнлӑхӗ пулса юлчӗ.

Тепрер сехетрен Шура диван ҫинчен тӑрса ҫи-пуҫне тирпейлерӗ, ҫӳҫне тураса якатрӗ.

— Ан ятла мана! Хурласа ан тӑк! Мӗн ачаран юратса пурӑнтӑм сана. Ҫакна асӑрхама шутламарӑн. Каккуй унта ман ҫине ҫаврӑнса пӑхма! Шӑна мӑйлӑ Нина тыткӑнларӗ сана. Кӗрепле пӳрнеллӗ Розӑпа юнашар баян калама юрататтӑн. Кӗҫӗр тавӑртӑм сана ҫӗр процентчӗпех! Хӗртен арӑм туни мӗн вӑл! Эпӗ акӑ сана каччӑран арҫын турӑм! Чие ҫырли пек хӗп-хӗрлӗ питлӗ ҫамрӑк хӗрарӑм ахӑлтатсах кулса ячӗ.

— Сухалама пултаратӑн, анчах майне-шывне пӗлсех каймастӑн...— кулнӑ май шурӑ шӑлӗсене кӑтартрӗ Шура, каччӑран арҫын пулса тӑнӑ ҫынна тепре чуп турӗ те алӑкран тухах кайрӗ.

— Эх, хӑямат! Нина пӗлсен мӗн калӗ?— ҫамкине ҫатлаттарса илчӗ Миккуль хӑйне астарнӑ хӗрарӑм тухса кайсан.

## Кулянтаруллӑ ҫыру

Лисук почтальонка Пожедановсем патне кӗмесӗр сайра иртет. Ҫемье пуҫӗнчен Яков Мироновичран, ывӑлӗсенчен Люньккӑпа Мирунран ҫырусем килсех тӑраҫҫӗ. Хӑйсем адресӗсене час-часах улӑштараҫҫӗ: пӗр вӑхӑт фронтран, тепӗртакран — госпитальтен яраҫҫӗ ҫырӑвӗсене. Ҫавӑнтан лайӑх: киле хыпар пӗлтерсех тӑраҫҫӗ. Николай Яковлевича хӑйӗн взводӗнчи чӗрӗ юлнӑ салтаксенчен ҫыру тӑтӑшах килет. Владимир хули ҫывӑхӗнчи тӑван ялне таврӑннӑ

Григорий Кудряшов çырăвне Миккуль амăшне те вуласа пачĕ.

«Гангрена пуласран хăрах алла хул таранах татма тиврĕ. Тăван яла Марьене тата Мускава Людмилăна ўстеререх çырса ятăм: алла-урана та татни çинчен хыпарларăм. Юманайран хурав кĕтсе илеймерĕм. Мана илме госпитале хама тĕрмене лартнă Марье килчĕ. Унпа килĕштерсе пурăнатпăр. Пулăçсен эртелĕнче хам вырăнах йышăнчĕç. Протез алăпа аптăрамастăп, пăхаттир пекех мар та, çавах ĕçлекелетĕп».

Май пулсан хăнана килсем. Ылтăн чунлă Марьепе паллаштарăп».

— Çапла эпир, хĕрарăмсем. Арçын ал-ураллă — кăчăк туртатпăр, уксах-чăлах пулса тăтăн — яхăна та ямастпăр,— аллине лăш сулчĕ Миккуль амăшĕ. Людмилăна ятласшăн пулчĕ ахăр. Унтан çапла хушса хучĕ:— Пĕрле пурăннă чухне хаклама пĕлместпĕр, çухатсан — ĕнсене хыçатпăр...

Пуç кăларса серепеленнĕ сĕлĕ ани çинчен икĕ ушкăн хур хăваласа килчĕ уй хуралçи, сарайне хупса алăкне çăрапах питĕрсе илчĕ. Шыраса кăштах хăшкăлччăр-ха хуçисем. Унтан куç курĕ мĕн тумаллине. Кăнтăрлахи апата килне таврăнсан адресне тармакласа çырнă çыру тыттарчĕ ăна йăмăкĕ Зоя.

— Çăкалăхран! Анчах Нинăран мар!— путăкланчĕ пит çăмартийĕ унăн.

«Эсир ялта пурăннине хаçат урлă пĕлтĕм. Эпĕ çут тĕнчерен уйрăлса каяс патнех çитсе перĕнтĕм. Тархасшăн, сывпуллашма килсе кайăр. Сергей Шакуров».

Çапла, тĕрĕсех. Колхоз счетовочĕ Варсонофий Каширин ялти учительсем каникул вăхăтĕнче колхоз производствинче хастарлă ĕçлени çинчен «Чăваш коммуни» хаçатра корреспонденци çырса кăларнăччĕ. Унта Пожеданов кĕçĕн лейтенанта та асăннăччĕ. Амăшне çак çырăва вуласа пачĕ те кучченеçе пўремеч пĕçерме хушрĕ Миккуль. Анчах мĕнпе каймалла инçетри яла? Лаша кўлес — колхоз производстви туртăм вăйĕ çитменнипе уксахлать. Аншĕн велосипед пурччĕ — ăна вăл Амăрткайăк хакне тўлеме сутса ячĕ.

— Зоя, итле-ха, Печчан велосипед пурччĕ. Упăшки транспортне Шура чиперех упрать-ши?

— Пăлтăрĕнче çакăнса тăнине курсаччĕ,— хуравларĕ йăмăкĕ.

— Эппин, кайса ыйт-ха, Çăкалăха кайса килме памĕ-ши?

— Хӑв ма каймастӑн вара? Иксӗр килӗштерни пирки чакак хӳри ҫинчен сас-хура ман хӑлхана та кӗнӗччӗ...

Миккуль ыйтуллӑн пӑхса илчӗ йӑмӑкӗ ҫине, пӑхса илчӗ те нимӗн те шарламарӗ.

— Нина Слесаревӑна кайса курасшӑн пуль-ха. Памастӑп! — татӑклӑн хуравларӗ Шура именерех тӑракан Зойӑна. — Ан та ыйт, памастӑпах...

Зоя кӗвӗҫ чуна Ҫӑкалӑхран килнӗ ҫырӑва вулаттарчӗ, тетӗшӗн взводӗнче Сергей Шакуров паттӑр салтак пулни, ӑна медальпе наградӑлани ҫинчен каласа кӑтартрӗ.

Шура кӑмӑлӗ тӑруках ҫемҫелчӗ. «Юрататӑп сан тетӳне! Чун-чӗререн юрататӑп!» — тесе кӑшкӑрса ярасшӑнччӗ вӑл Зоя умӗнче, хӑйне хӑй тытса чарма пултарчӗ, пичӗ ҫине кӑна пӑт-пӑт хӗрлӗ тапса тухрӗ.

— Кайса килтӗрех эппин! Ҫула тухиччен камерисене тӗплӗн тӗрӗслетӗр: ӑнсӑртран шӑтман-и?

Зоя вӗр-ҫӗнӗ пек курӑнакан велосипеда картишӗнчен ҫавӑтса тухсан Шура чӳречине яри уҫса темле хивре сасӑпа ҫапла хушрӗ:

— Нинӑна манран та салам калатӑр! Лайӑх каччӑна туртса илнӗшӗн каҫару ҫуккине те манса ан кайтӑр!

Велосипечӗ юсавлах иккен. Миккуль подшипниксене солидолпа сӗрчӗ, багажник ҫине тулли пештӗр вырнаҫтарчӗ те ҫула тухрӗ.

Кантур пек пысӑк пӳртӗнче Сергей Шакуров вырӑнпах выртать.

Чӗкеҫ тӳпемӗнчи йывӑр контузи хыҫҫӑн ӑна госпитальти тухтӑрсем те ура ҫине тӑратайман. Мӑшӑрӗ — чӗвӗлти чӗлхеллӗ япшар Ксени — пӗрмаях упӑшки кравачӗ ҫумӗнче. Сергейӑн пичӗ тӑсмакланнӑ, янахӗ шӗвӗрленнӗ.

Сасартӑк вӑл пӳртре хӑйӗн командирӗн сассине илтрӗ:

> Сӳнейрӗ ҫӑлтӑр хыҫҫӑн ҫӑлтӑр,
> Тавралӑхра тӗтре кӑна...

Йӑлтӑр турӗ Сергейӑн куҫӗ. «Паттӑр взвод юрри» асне килчӗ те, вӑйсӑр сасӑпа унӑн малалли йӗркисене каларӗ:

> Тӑшман ан систӗрех, ан куртӑр —
> Ҫул тытрӗ взвод разведкӑна.

— Кӗтсе илессе сунманччӗ. Килесси пирки те иккӗленеттӗмччӗ, — сӳрӗккӗн, сӑмахсене тӑсараххӑн калаҫса алӑ пачӗ хӑйӗн командирне Сергей. Ксени пулӑшнипе хӑй вырӑнӗ ҫине тӑрса ларчӗ.

Хӑнапа Ксени кравать патне сӗтел куҫарса лартрӗҫ.

Пештěртен пулштух кăларса виçě черккене сăмакун тултарчě Пожеданов, пÿремеч касса хучě. Ксени те хыпăнса ÿкрě: кăмака умěнчи пÿлěмрен çыртмалли-çимелли кăларса лартрě. Сергейăн черкке тытнă алли тăр-тăр чěтрерě.

— Вăл-ку хăямата, тěл пулнă ятпа!— черккене тěппипех пушатрě Пожеданов.

— Ěçем-ши, ěçем те мар-ши,— иккěленчě Сергей.

— Эс вăрçăри пек теветкел мар иккен халь!— тěлěннě пек пулчě Пожеданов.

— Ěçет, хăех ěçет...— чеереххěн пăхса илчě упăшки çине Ксени.

Черкке ÿпěнтерсен Сергей чěлхи уçăлнă пек пулчě.

— Тěрмене йăпăх-япăх çын кăна çакланмасть, унта пултаруллисем валли те кирпěч хывнă. Ак халь маншăн пěр тěрме те йěмест. Ура çине тăрайманни унта мěн тума кирлě?

— Упи-супи ан калаç-ха. Командиру сан çинчен хăвăнтан та нумайрах пěлет пулě-ха. Эсě ăна колхоз председателě улма йăранěсем хушшине кăпкалатма лаша паманни çинчен кала. Суха пуçě лупас айěнче хамăрăнах хăлтăраса выртать...

Калаçу каллех фронтри çине куçрě, Така мăйракине, Çÿлевěç çăварне аса илчěç, кама мěнле шăпа килсе тухнине ыйта-ыйта пěлчěç.

— «Чěлхе» тупас енěпе пит пултартăн эсě. Паянччenех тěлěнетěп: çав нимěç ефрейторěн шăлавар тÿмисене касса татма епле ăс çитертěн?

Сергей ывăнса çитрě пулмалла, пуçне минтер çине хучě те самантрах тěлěрсе кайрě. Пожеданов ыран ирпе тепре килме пулчě, Слесаревсен килě ăçтараххине Ксенирен ыйтса пěлчě те урам тăрăх велосипедпа анаталла ярăнтарчě.

Пěр-пěрне çав тери тунсăхласа çитнě икě савнă чупăн тахçантанпа кěтнě тěлпулăвне çырса кăтартма пěр кушел сăмах та çитес сук. Нина улшăннă та, улшăнман та темелле. Сенкер куçě тарăнланнă, анчах Патăрьелěнчи педучилищěре вěреннě чухнехи пекех йăлтăркка. Пÿлеви çăл куçě пекех тап-таса. Пăхасса вара питě шухăшлăн пăхать. Кěлетки çирěпленнě, хул-çурăмě тěрекленнě. Кофтине тăкăтăкă мăшăр кăкăр тапса тăрать. Çырă çÿçě çурăмě хыçне кăпăш çивěт пулса выртнă. Мěншěн ку хěр ытармалла мар хитре курăнать? Мěншěн тесен ăна пайăркан-пайăркан яваласа çыхнă çивěчě илемлетет. Шап-шурă шăлěсене кăтартса йăвашшăн йăл кулнă чухне Нина юмахри пике пекех пулса тăрать.

Нинăн амăшĕ Ульха аппа та хăнана питĕ тарават пулчĕ. Тăван хĕрĕн чĕрине кам çунтарнине пĕлетчĕ-ха вăл, анчах хăйне халиччен те курманччĕ. Сăмавар лартнă сĕтел хушшинчи каçхи калаçу вăраха пычĕ. Ульха аппа Миккультен кил-йыш хыпарĕсене ыйтса пĕлчĕ, Нинăна хăйне фронтри ĕç-пуç ытларах кăсăклантарчĕ. Каччăна хăйĕн вырăнĕ çине вырттарчĕ, хăех утиялпа витрĕ те ун çумне вырнаçса ларчĕ.

— Мĕнле унта, кала-ха тӳррипе, фронтра та чипер санинструкторсем пур-и? Чĕрӳне хăшĕ тыткăнларĕ?

— Пур çав, пур каччă чĕрине тыткăна çаклатаканни. Вăл та пулин çут тĕнчере пĕрре кăна...

Миккуль хĕре ыталарĕ те хăй çумне хытă-хытă чăмăртарĕ. Хĕр хăех ăна пĕрре те, иккĕ те тутинчен чуп турĕ, тăрса утиялне майласарах витрĕ те тепĕр пӳлĕмри кравать ăшне амăшĕпе юнашар кĕрсе выртрĕ.

Миккульпе Нина ир-ирех çăкалăхри «Шуçăм» колхоз правленине пырса кĕчĕç.

— Мĕн çăмăлпа?— кăмăлсăррăн пăхса илчĕ çамрăксем çине правлени председателĕ Степанов. Ăна паян тахăшĕ çиллентерме ĕлкĕрнĕ те пулас: хĕремесленнĕ сăн-пичĕ ытла та хаяр курăнать.

Пожеданов хăйĕн взводĕнче паттăр салтак Шакуров пулни, халь ăна еплерех пулăшу кирли çинчен сăмах тапратрĕ.

— Бригадир патне кайăр. Вăл сире, тен, вăкăр хӳри тыттарĕ...— пӳлчĕ килнĕ çынна председатель.

— Юлташ Степанов,— сассине çирĕплетрĕ тархаслама килнĕ çын,— вăрçа пула эпĕ вăкăр кӳлме хăнăхаймарăм. Каçарăр та, мана лаша харри кирлĕ... Хам валли мар, вилес пек выртакан салтак валли ыйтатăп...

— Салтаку-масару... Шакуров колхоз ĕçне нихçан та йĕркеллĕ хутшăнман... Ксенийĕ ĕçлекелетчĕ, упăшки контузи пулса таврăннăранпа унран пĕр шит те хăпмасть...

— Фронтовик фронтовика пулăшасшăн мар апла?

— Çитет! Шапаш! Çук ман лаша! Çук! Ăнланатăр-и?— тарăхса кайрĕ Степанов.— Сирĕн çар званийĕ еплеччĕ-ха? Кĕçĕн лейтенант терĕр-и? Эпĕ — гварди аслă лейтенанчĕ. Эппин итле: смирно! Шагом марш кунтан!

Пожеданов питĕнче пĕр шăнăр та хускалмарĕ.

— Эппин, алла катмаксем тытăпăр, кĕреçесемпех хусăклăпăр. А эсир ларăрах кунта пуç каçăртса...

Пожеданов колхоз правленийĕ алăкне хăй хыçĕнчен шанлаттарса хупрĕ.

— Сире тата мĕн кирлĕ?— тинех асăрхарĕ председа-

тель алăк патĕнче хăюсăррăн тăракан çамрăк учительницăна.— Сирĕн те улма йăранĕсем кăпкалатмалла-и? Çук, пĕр лаша та çук. Вăкăр кӳлĕр.

Хайхискер тăчĕ те лакăштатса ют ял çынни хыççăн тухрĕ.

— Тăхтăр-ха, кĕçĕн лейтенант, эсир хăвăра Пожеданов терĕр-и? Мускава тăшмантан хӳтĕленĕ чухне ман батарейăра тупă расчечĕн командирĕ Пожеданов пурччĕ. Вăл сирĕн хурăнташ мар пулĕ те?

— Мускава, юлташ аслă лейтенант, эсир çеç мар, эпĕ те, ман атте те хӳтĕленĕ... Халь акă пире хӳтĕлекен çук. Унта фашистсемпе мĕн тумаллине эпĕ лайăх пĕлнĕ, тылри бюрократсемпе мĕн тумаллине вара ниепле те тĕшмĕртейместĕп...

— Аçăр пулма кирлĕ. Ячĕ Якку Мирунчă пек астăватăп. Паттăр пулнăшăн эпĕ ăна хамăн алла çыхмалли сехете парнеленĕччĕ. Хыпарĕ пур-и?

Фронтовиксен чун-чĕрисем вĕри хуран пек чашкăрма пăрахрĕç, иккĕшĕ те лăпкăн калаçма пуçларĕç. Икĕ арçын пуплеснине Нина ним шарламасăр çывăхрах итлесе тăчĕ.

— Вăн пушар вышкине куратăр-и? Унта сых ятне çӳрен лаша тăрать. Ăна правлени ĕçĕпе хам кӳлкелесе çӳретĕп. Эппин, паян сирĕн пултăр. Только малтан Шакуровăнне мар, Нина Лаврентьевна пахчине кăпкалатăр...

Председателе Миккуль чун-чĕререн тав турĕ, Нина ăна хăна пур чухне калаçса лармашкăн хăйсем патне кĕрсе тухма сĕнчĕ.

Командирăн чĕри хăйĕн салтакĕ патнех туртăнать. Черетлĕх енĕпе вăл председатель кăтартăвне пăхăнмарĕ: малтан Шакуров пахчинчи улма йăранĕсене кăпкалатрĕ. Пожеданов, çĕр улми лартнă чухнехи пекех, суха пуçăн сылтăм тыткăчне чĕн пиçиххипе çыхса хулĕ урлă çакрĕ. Çӳрен лашана Нина çавăтса çӳрерĕ. Вăл çӳхе кĕпепе, çара уран. Каччăна ку хĕр тăван йăмăкĕ пекех хаклă. Анаткасра çĕр улми лартнă чухне бригадăн хăла лашине Шура çавăтса çӳрени, ун хыççăн каçпа мĕн пулса тухни Миккуль куçĕ умне аса илме йывăр ӳкерчĕк пек йăраланса тухрĕ. Мĕн тума апла хăтланнă-ши? Сăваплă пирĕшти пек таса Нина умĕнче мĕншĕн çавнашкал çылăха кĕмелле пулчĕши?

Чуна ыраттаракан курăмсене лупас хыçĕнче Сергей сасси илтĕнни сирсе ячĕ. Миккуль çӳрене йăран хушшинчех чарса тăратрĕ. Сергейăн хулĕ хушшинче госпитальтенех илсе килнĕ костыль, çурăмĕ хыçĕнче йăлтăр кулăллă Ксени.

— Юлташ командир, разрешите доложить, эсир кунта мĕн тунине тухса курас килчĕ...

— Паттăр гвардеец, шантарсах калатăп: сывалатăн!— хуравларĕ ăна командир.

— Сывалать! Сывалать!— килĕшрĕ ку сăмах Ксение те.

— Сывалатех! Сывалатех!— ĕнентерчĕ янкăс сассипе чиперук Нина.

Сергейăн пичĕ хĕп-хĕпĕртĕк, куçĕ çунать, анчах вăйĕ-халĕ çук, пуçĕ çаврăнать. Кăштах пăхса тăрсан ăна пӳрте илсе кĕрсе хăй вырăнне выртарма тиврĕ. Кĕçех Ксенипе икĕ ачи суха пуç хыçĕнчен йăрансене юсама тытăнчĕç: витĕнсе юлнă улма çеçкисене тăпра ăшĕнчен кăларчĕç, кирлĕ çĕрте йăрана тăпрапа хуплаштарчĕç.

Сергей пахчинчи çĕр улмине кăпкалатса пĕтерсен çӳрене апат пачĕç, шăварчĕç, унтан каллех суха пуç туртисем хушшине кӳлчĕç. Халĕ ĕнтĕ суха пуç çав ĕçех Слесаревсен пахчинче тăвать. Хĕр амăшĕ Ульха аппа çурса тухнă йăрансем хушшинче тăрмашать, хушăран килĕштерсе ĕçлекен икĕ çамрăк еннелле пăха-пăха илет. «Эх, ман кĕрӳ çаках пулсанччĕ!»— туха пĕлмест ун пуçĕнчен йăлăхтарми шухăш.

Каç кӳлĕм, ĕç пĕтернĕ çĕре, Слесаревсем патне колхоз председателĕ Степанов хăй килчĕ. Пуш алăпа мар, куччеиеçпе — сĕтел çине çур литр лавкка эрехĕ кăларса лартрĕ. Лаврентий Васильевич шкул директорĕнче ĕçленĕ чухне Степанов ку çуртра час-часах пулнă. Тăлăх арăм Ульхапа унăн хĕрĕ патне халĕ килсе çӳрекен çук темелле.

— Ну, çитĕ, шапаш, Николай Яковлевич. Ытла хытă ан ятлăр тавçăрусăр председателе. Пурнăçĕ май мар тăкăсланса кайрĕ. Çавăнпа апла-капла пулса тухать. Пĕлсе тăрăр: айăпа кĕмен чура çук теççĕ, хĕрхенме пĕлмен пуçлăх та пулмасть,— кулкаланçи турĕ председатель, хăй ыратакан урине тек-текех пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарчĕ.

Ульха аппа чĕтрекен аллипе черккесене тултарчĕ.

— Лаврентий Васильевич умĕнче пултăр. Эпир ăна аса илер, вăл пире аса ан илтĕр...

Ваттисен йăлипе Илья Александрович темиçе тумлам эрех пушă стакана тумлатрĕ, ун хыççăн ыттисем те çаплах турĕç.

Фронтовиксем нумайччен калаçса ларчĕç. Ашшĕ пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрĕ Миккуль. Якку Пожеданов сержанта полк штабĕ орденпа наградăлама тата званине ӳстерме документсем тăратнă-мĕн, анчах çакă мĕнпе пĕтнине аслă лейтенант хăй уларан аманнăран пĕлмест-ха.

Колхоз председателӗ Степанов Миккуль малтан шутлана пек чунӗ хытнӑ ҫын мар иккен. Ульха Слесарева йӑмӑкне Юльӑна ачисене выҫӑ лартас мар тесе авӑн ҫапнӑ чух пӗр кӗсье тулӑ тултарса таврӑннӑшӑн унчченхи председатель кирпӗч шутлама янӑччӗ. Ку ӑна тӗрмерен таврӑнсанах тырӑ парса пулӑшрӗ, ӗне ферминче ӗҫ шанса пачӗ.

Миккуль ашшӗ пекех, Илья Александрович таврари ҫут ҫанталӑка чунтан юратни курӑнать.

— Шутлатӑп-шутлатӑп та, чун ыратма пуҫлать. Нивушлӗ эпир ҫӗр пичӗ ҫине ӗҫесшӗн те ҫиесшӗн кӑна килнӗ? Ялӑмӑр Ҫӑкалӑх ятлӑ. Анчах ун ҫумӗнчи ҫӑка катинчен мӗн юлчӗ? Тункатасем те путек милӗклӗх тӗмсем. Халӗ ӗнтӗ катара куккук авӑтнине илтеймӗн, шаланкӑ ярӑнмасть унта, карӑш сасси те илтӗнми пулчӗ. Вӑрҫӑ тесе каҫарма ҫук айӑплӑ ӗҫсем тума юрать-ши вара? Ҫук, война не все спишет...— янахне ал лаппипе тӗревлерӗ Илья Александрович.

— Темшӗн-ҫке паянхи ҫинчен кӑна шутлатпӑр...— килӗшрӗ ун шухӑшӗпе Николай Яковлевич.

...Тӗрӗссипе каласан, Ҫӑкалӑхра Нинӑпа пӗрле ирттернӗ икӗ телейлӗ кун ҫӑтмах пекех туйӑнчӗҫ Миккуле. Фронтри тусӗпе Шакуровпа, колхоз председателӗпе Степановпа, Ульха аппапа тата унӑн хӗрӗпе Нинӑпа Анаткас каччи тӑванла пуплерӗ, вӗсенчен ыталашса уйрӑлчӗ.

— Эпӗ сана кӗтетӗп... хама йӗп вӗҫӗ чухлӗ те варламасӑр... пӗр пӗрчӗк ҫылӑха кӗмесӗр...— шантарчӗ каччӑна Нина. Хӗр куҫҫулӗ каччӑ кӑкӑрӗ ҫине ҫутӑ чӗр кӗмӗл пек шӑпӑр-шӑпӑр тумларӗ.— Ан ятла, Коля, ҫав хур амин мӑйне тепӗр май пӑрса лартаймарӑм, тӗкне татма та шутламарӑм. Тен, телей унсӑрах тупӑнӗ...—терӗ хӗр пуҫне чикереххӗн,именсе те вӑтанса.

## Епле килме пӗлтӗн?

Пӗр ӳстермесӗрех ҫапла калама пулать: ытармалла мар лайӑх ҫынсем пурӑнаҫҫӗ Анаткасра. Вӗсен чи паха енӗ — ӗҫри паттӑрлӑх. Павел Кузьмич Кузьмин уйрӑмах ӑшӑ сӑмаха тивӗҫлӗ. Ыр ҫын хыҫҫӑн ыр ят юлать теҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче колхоза юхӑнма паманшӑн ун ҫинчен нумайччен ырӑпа асӑнӗҫ. Ҫӳллӗскер, хӑмӑртарах вӑрӑм пальтопа ҫӳрекенскер кун каҫа хире те, йӗтем ҫине те, фермӑна та ҫитме ӗлкӗрет. Халӑх ӑҫта ӗҫлет, ӑна ҫавӑнта куратӑн.

Кузьмин — тылри паттӑрсен пӗр пысӑк батальонӗн чӑн-

чăн командирĕ. МТСра — политпай начальникĕ, колхозра — уй-хир бригадин бригадирĕ тата правлени председателĕ пулса ĕçленĕрен вăл ял хуçалăхĕн вăрттăнлăхĕсене лайăххăнах пĕлсе çитрĕ, çынсемпе ĕçлеме те хăнăхрĕ. Хăйне кирек хăçан та лăпкă тытать, сасă хăпартмасăрах хăйне итлеттерме пĕлет, мĕн пултарнă таран тăрăшма ӳкĕтлет. Миккуль хăйне Хаяркин бригадиртан кăларнă хыççăн шкулта военрукра ĕçленипех çырлахасшăн пулнă ахăр. Павел Кузьмич вара ăна пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçĕсене ытларах та ытларах хутшăнтарса пычĕ.

Фронтра паттăрсем çĕнтерӳшĕн юн юхтарса çапăçаççĕ, тылра вара Кузьмин пек харсăрсем фронтрисене мĕн кирлине парса тăрассишĕн тар кăларса кĕрешеççĕ. Çак ĕçре кирек мĕнле чăрмав кӳни те ăна чунтан тарăхтарать. Тахăшĕн выльăхĕ калчана çăрса çӳрет-и, пиçсе çитнĕ тулла хурсем ана çинче шĕкĕлчеççĕ-и, шăтăк михĕрен тырă тăкăнса пырать-и — çакнашкаллине пачах чăтма пултараймасть вăл. Пӳле çырми ку енне цыгансен тапăрĕ чарăнчĕ, лашисем сĕлĕ ани çинче кĕçенме пуçларĕç. Нумаях та пулмасть уй хуралçи туса хунăран Миккуль чĕнмен хăнасене урăх вырăна куçса кайма çине тăрсах хистерĕ, вĕсем хăнк та тумарĕç. Павел Кузьмич пырса çитрĕ те суда пама тесе сĕлĕ анине таптаса ватни çинчен акт çырма тытăнчĕ. Ак хайхи, ял çыннисем тепĕр çур сехетрен тапăр ураписем чĕриклетнине кăна илтсе юлчĕç.

Колхоз правленийĕнче пысăках мар карттă çакăнса тăрать. Хĕрлĕ Çар ăçталла наступлени туса пынине, хăш хуласене ирĕке кăларнине Павел Кузьмич Совинформбюро сводкисем тăрăх çав карттă çинче паллă тăвать. Хĕрлĕ Çарăн кашни çĕнтерĕвĕ ăна чунтан савăнтарать.

Анаткасра пĕрремĕш бригадăна малтанхи вăхăтра Сухви Капитонова ертсе пыратчĕ. Ял-йыш ăна питĕ хисеплетчĕ. Сухвие çара илсен ун вырăнне бригадира Миккуль Пожеданова лартрĕç. Ăна ку ĕçрен пăрмалли май тупăнсан Хаяркин бригада тилхепине Ульяна Кузнецовăна пачĕ. Унăн упăшки фронтраччĕ. Юлашки вăхăтра тем пирки унран çыру та килми пулнă-мĕн. Хĕрарăм пурпĕр хуйха парăнмарĕ. Ульяна бригади пур кăтартусемпе те малта пычĕ. Тырă вырма тухаспа вара салтак арăмĕ сасартăк чирлерĕ.

Колхоз председателĕ Миккуле правление чĕнтерчĕ.

— Пĕлетĕн-и, Николай Яккăльчă, çăкăр хырăм хыççăн çӳремест, хырăм çăкăр хыçĕнчен хăвалать. Эсĕ пур — пĕрехмай хырăм хыççăн çăкăр чупасса кĕтетĕн. Мĕн пултарнă таран тăрăшмастăн витнă. Çитет сана плявайра пуç ка-

çăртса çӳреме. Вăн Ульяна Кузнецова чирленĕ. Вăхăтлăха бригадир пул.

Еплерех ӳстереççĕ! Вите-кĕлет хуралçи, ут кĕтӳçи, кашкăр сунарçи, уй хуралçи, вăхăтлăх бригадир — акă Миккуль чинĕсем. Ăна, педагога, аманса таврăннă офицера, çав должноçсемпе ĕçлеме вăрçă вăхăчĕ хăй хушнă. Тепĕр тесен кĕçĕн лейтенант колхозра «пысăкран пысăка» тухасси вăраха пымарĕ. Хальхинче бригадирта виçĕ-тăватă кун кăна çӳрейрĕ.

Председательпе иккĕш ыраш уйне тухрĕç.

— Эс мĕнле, çут çанталăка сăнатăн-и, Николай Яккăльчă? Кăçал çуркунне Пăлхавăшни кунĕ çумăр çурĕ. «Эппин, ыраш ăнса пулать»,— терĕç çав кун ваттисем. Тĕрĕсех каланă иккен. Вăн пучахсем епле сулмаклă!

Пĕкĕ çӳллĕш ыраш хушшинчи çул тăрăх председательпе бригадир малалла утаççĕ.

— Эс ма нимĕн те чĕнместĕн? Пăлхавăшни мĕнне те пĕлместĕн-им?— Миккуль çумне тĕрлĕ ыйтупа çулăхать те çулăхать Павел Кузьмич.— Вырăсла «благая весть» тенине пĕлтерет. Сăваплă хĕр Мария, çылăха кĕрсе курмансkep ĕнтĕ, хĕр пуçăн Иисус Христоса çуратасси çинчен ырă хыпар пĕлтернĕ çав кун Гавриил архангел. Эпĕ сана турра ĕнентерес тесе мар, ырă хыпар иксĕмĕре те халь-халь килме пултарасси çинчен систерсе калатăп...

«Эсир мĕнле ырă хыпар пирки пуплетĕр?»— ыйтасшăнччĕ Николай Яковлевич, Павел Кузьмич сăмахне хăй малалла тăсрĕ.

— Ырă хыпар — вырма тухасси çинчен...

— Кăçал тырă уйрăмах тухăçлă пулассăн туйăнать. Вăрçă пуçланнăранпа ял-йыш кунашкаллине курманччĕ-ха. Пучахĕ çăрттан пек вăрăм — пĕрчи-тĕшши миçине тăруках шутласа та пĕтереймĕн, туни хăмăш пек çăра — çĕлен шуса иртеймĕ.

— Лайăххи лайăх, анчах вырма ешĕлрех çав...— хаш сывларĕ вăхăтлăх бригадир. Тĕрĕссипе, сывлăшĕ çав самантра йывăррăн тухнин сăлтавĕ урăххинче пулчĕ: аманнă алли хулĕ таран çĕкленет ĕнтĕ, çапах çурăлакан пуля чĕрпĕлтернĕ калак шăмми хушăран ай-ай чике-чике илет.

Пĕлтĕр тырă япăхрах пулнă, çапах колхоз район умĕнче куçран ӳкме шутламан: патшалăха кӳршĕсен шайĕнчен чылай ытларах панă. Çавăн пирки ял çыннисене пурнăçа вĕçрен вĕçе сыпăнтарма йывăртарах килчĕ. Вырма хальхаль тухас чухне çакă уçăмлăнах палăрчĕ. Кĕлетре пӳлмисене иртнĕ уйăхсенчех шăлса тасатни çĕнĕ тырă вырма тухассине васкатма хистет.

— Упи енчи тӳпеме ҫитсе курар-ха,— сӗнет председатель.— Унта еплерех-ши?

Малалла талпӑнса пыраканскерсем пӗр тӗлте тӑп чарӑнчӗҫ.

— Ха, сарала пуҫланӑ вӗт, амутке!— йӑл ҫутӑлчӗ Павел Кузьмич пичӗ. Хӑмӑла асӑрхануллӑн сире-сире шалалла кӗрсе пӑхрӗҫ: тӳпемре, хӗвел питтинче, ыраш ӑвӑс пек пулса ҫитнӗ.

Ҫав кунах пӗрремӗш бригада ҫурлапа ыраш вырма тытӑнчӗ. Хӗрсене хӑмӑла кӗреҫепе хырса йӗтем тума хушрӗ Миккуль. Икӗ арҫын ача икӗ пичкепе шыв турттараҫҫӗ, йӗтеме шыв сапса хытараҫҫӗ. Часах авӑн ҫапма тытӑнчӗҫ. Михӗсене тултарнӑ ылтӑн пек тырра виҫӗ лав ҫине тиеттерчӗ.

— Иккӗшне Канаша леҫтеретӗп, виҫҫӗмӗшне — армана...— евитлерӗ председателе ҫӗнӗ бригадир.

— Епле апла? Малтанхи тырӑ пӗтӗмпех патшалӑха каймалла. Сан шутупа, ман тӗрмене кайса лармалла-и? Тӑрри шӑтӑк пуль сан... Тепӗр тесен кирек мӗн ту. Тулӗк эп курман та, илтмен те...

Павел Кузьмич хӑвӑрт таҫта кайса ҫухалчӗ. «Выҫӑ бригада епле тырӑ выртӑр-ха? Халех ҫӑкӑр пӗҫермелле, столовӑй йӗркелемелле. Э, мӗн пулать-килет, пӗр лавне, Брабансон ӑйӑра кӳлнине, армана яратӑп. Мана пурпӗр фронтсӑр пуҫне ниҫта та ӑсатаймӗҫ». Виҫҫӗмӗш хут пулин, виҫҫӗмӗш хут кайӑпӑр...»— теветкел шухӑш тытрӗ бригадир.

— Ҫавӑнта кам мӗн авӑртать?— пӳрнипе ҫил арманӗ ҫине тӗллесе ыйтрӗ тепӗр кун председатель йӗтем ҫинче.

— Курман, илтмен, пӗлместӗп,— куҫне хӗссе хучӗ бригадир.— Куҫка Витти Брабасонпа хӑй тӗллӗн турттарса кайнӑ пулинех...

Тӳсеймерӗ Миккуль, ахӑлтатсах кулса ячӗ. Ҫав вӑхӑтра ял Совет ӗҫтӑвкомӗнчен исполнитель килсе ҫитрӗ, районти ҫар комиссариачӗ Кузьминпа Пожеданова ыран комиссие чӗнни ҫинчен пӗлтерчӗ.

«Акӑ председатель асӑннӑ ырӑ хыпар вӑрах кӗттермерӗ, хӑвӑрт ҫитрӗ...»— кулса илчӗ хӑй ӑшӗнче ниҫта ӗлкӗрейменнипе хыпкаланса ҫӳрекен бригадир. Ним каламалли те ҫук, опыт ҫукки пӗтерет.

Тепӗр кун комиссие Павел Кузьмичпа Николай Яковлевич пӗрле кайрӗҫ. Ҫул тӑршшӗпех калаҫу фронтри хыпарсем пирки пычӗ. Анлӑ информаци параканӗ — Павел Кузьмич.

— Илтнӗ-и, Виҫҫӗмӗш Белоруссии фрончӗн ҫарӗсем Вильнюс хулине ирӗке кӑларнӑ. Виҫӗ кун ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн

Гродно хулине туртса илнĕ. Витнă, унта хаяр çапăçусем пынă, нимĕçсен темиçе дивизине аркатса тăкнă теççĕ...

Совет Союзĕн Геройĕ, гварди сержанчĕ Семен Алексеевич Андреев çинчен Пожеданова энтепесем каласа парсаччĕ. Андреев çав ялта çуралса ӳснĕ иккен. Ун çинчен Пожеданов мĕн каланине Павел Кузьмич тимлĕн итлерĕ. Хăй вара Аслă Таяпа ачи Петр Васильевич Пугачев фронтра паттăрлăх кăтартни, ăна, çирĕм çулхискере, тăшман салтакĕсем чĕрĕллех вут çинче çунтарса яни çинчен пăшăрханса каласа кăтартрĕ. Ку паттăр çинчен хаçатсем каярахпа, хура кĕркунне çитсен тин, çырса кăларчĕç. Павел Кузьмич та ун çинчен пĕлĕшĕсенчен кăна илтнĕ иккен. Çапла, паттăрсем çинчен сăмах ялтан яла çӳрет, пĕтĕм районĕпе, республикипе сарăлать.

Павел Кузьмич урапа çинче Миккуль çумнерех куçса ларчĕ, куçĕпе таçти аякрине курасла тинкерчĕ.

— Çумăр ан тухтăр. Вырассине те, çапассине те хăвăрт малалла тăсасчĕ, патшалăха çĕнĕ тырă лав хыççăн лав ăсатасчĕ,— пĕлтерчĕ председатель хăй мĕн шутланине. Унăн шухăшĕсем тыр-пул пухса кĕртесси çинчен, фронта пур майпа та пулăшасси çинчен. Район центрне çитеспе Миккультен ыйтса тĕпчеме тытăнчĕ:— Хулу самай-и? Сурану сурать витнă?

Тухтăрсем умне Павел Кузьмич Миккультен маларах пырса тăчĕ. Çав тери хытанка иккен вăл.

— Юлташ майор,— чĕнчĕ пĕр тухтăрĕ районти çар комиссарне,— стетоскопсăрах итлесе пăхăр-ха ун кăкăрне...

— Ӳпки çĕр çулхи пăравус пекех хашăл-хашăл тăвать,— кĕçех пĕлтерчĕ хăйне мĕн илтĕннине комиссар. Питĕ хавшак-мĕн Павел Кузьмич сывлăхĕ, çакăншăн ӳпкелешнине унран пурпĕр пĕрре те илтмен Миккуль.

Комиссар ăна военрукра чипер ĕçленĕшĕн тав турĕ. Кĕçĕн лейтенант аллине çӳлелле-аялалла хăй турткаласа пăхрĕ.

— Смотри, хул шайнех çĕкленет! Командăсем пама кансĕрлемест,— каларĕ хăй шухăшне комиссар.

Пожеданов фронта кайма юравлине пĕлтерчĕ комисси. Тепĕр кун çемье Миккуле виççĕмĕш хут фронта ăсатма хатĕрленет: çул çине парса яма нимĕн те çуккишĕн кулянать амăшĕ.

Мĕн каламалли, миçе çул хушши выçça-тутта сахал мар тӳсет халăх. Сахвит аппа кăвас чĕресне тытманни виç-тăвата эрне ĕнтĕ. Эппин, кăмака хыçĕнчи çăкăр кĕреçине те тытакан çук. Пĕлет Миккуль: вĕсен кăмакине сакăр çăкăр кĕрет. Çӳлĕк тĕлĕнчи вăрăм сак çине те çавăн чухлех

вырнаҫать. Анчах кӑмака та, ун умӗнчи сак та хӑйсен тӗп тӗллевне пурнӑҫлама пӑрахнӑ. Ҫавна пула ӗнтӗ ҫемье Миккуле мӗнпе ӑсатасси пирки кулянса ларать. Пӗрле канашламашкӑн кӳршӗсем те килнӗ. Пурте тискер фашистсене ылханаҫҫӗ.

— Пирӗн пурнӑҫа кам пӗтерет — хура ҫӗлен Гитлер пӗтерет.

— Чун иллиех ҫав Гитлер. Ҫитмӗл те ҫичӗ тӗрлӗ синкер-сехмет илсе килчӗ.

— Ан та кала... Унӑн ятне асӑнсан чӗререн ҫӗҫӗпе каснӑ пек. Уяр аҫа ҫапасчӗ ҫав ҫын ҫиен кашкӑра.

— Вун икӗ фашист ӑсӗ пӗр качака ӑсӗ чухлӗ анчах теҫҫӗ. Ӑсран тайӑлнӑран иртӗхеҫҫӗ те ӗнтӗ вӗсем.

Миккуль пуҫ усса ларнине кура кӳршӗ-аршӑ ӑна хӗрхенеиҫи пулать.

— Вӑрҫа тухса каясси пасар кулачӗ ҫиесси мар ҫав,— ассӑн сывласа илет кӳршӗ хӗрӗ Хӗветура. Ҫапли ҫаплах ӗнтӗ. Илья Кузьмич вара шухӑша тепӗр май ҫавӑрать:

— Салтак нушине куриччен пит начар ҫын йытти пулас пулать тенӗ ӗлӗк-авал. Халӗ урӑхла самана: хирӗҫ тӑмасассӑн тӑшмана, ҫавскер вӗлерет сана, чура тӑвать унтан мана.

Миккуль пуҫӗнче шухӑш ҫаплах пурнӑҫ тыткӑчи ҫинчен. Колхозра мӗнле кӑна ӗҫлемерӗ — пурпӗр вӑл ҫук та ку ҫитмест. Шкул пахчине ҫӗр улми лартсан Ларионов директор ӑна юлнӑ вӑрлӑха илсе кайма хушрӗ. Хӑяймарӗ, вӑрҫӑра вилнисен мӑшӑрӗсене парса яма сӗнчӗ. Колхозран ыйтса илме юрамасть: председатель хӑйӗн хурӑнташӗсене ырӑ тума тӑрӑшать тейӗ ял-йыш. Ҫитменнине, колхозӑн та пӳлмисем пушӑ.

Салтака мӗнпе ӑсатасси пирки пуҫ ватакансене пӳртре хӑварса Миккуль садпа сывпуллашма тухрӗ. Пожедановсен пысӑк мар сачӗ ҫуртӑн хӗвел тухӑҫ енче — ҫимӗҫ йывӑҫҫисене хӗвел ҫути кирлӗ. Кунта тӑватӑ ватӑ улмуҫҫи, пилеш, хурлӑханпа хӑмла ҫырли тӗмӗсем пур. Пӗтӗмпех ашшӗне амӑшӗ лартса ӳстернисем. Лупас енче хуппи сӗвӗнме пуҫланӑ мӑн хурӑн ҫулҫисемпе шӗлтӗртетет. Миккуль ӑна касса йӑвантарма та шутланӑччӗ — ашшӗ чарчӗ. «Ӑна аслаҫу лартнӑ»,— терӗ.

Сад вӗҫӗнчи мунча ҫумӗнче тӑпӑл-тӑпӑл ҫӗмӗрт. Унпа юнашарах ҫуллен тулӑх ҫимӗҫ кӳрекен палан. Ӑна Миккуль вӑрмантан кӑларса килсе лартнӑччӗ. Лартнӑ чухне пӗр вулӑллӑ ҫеҫчӗ, халӗ темиҫе вулӑллӑ чиперкке пулса тӑнӑ. Унӑн катрашка вуллине ыталаса Миккуль пӗр вӑхӑт тӳпенелле пӑхса тӑчӗ. «Эп вилсессӗн мӗн юлать — асӑнмалӑх

çак палан юлать»,— таçтан килсе тухнă шухăшпа пуçне усрě каччă. Садра урăх йывăç лартса ÿстерме тěл килмерě ăна. Қарта çумěпе икě-виçě хурăн лартса ÿстересшěнччě — каллех ашшě чарчě. «Вăт нарут! Анланмастăн-и? Хурăнусем ÿссен çимěç йывăççисене хупăрлаççě»,— ăс вěрентнěччě вăл ывăлне. Миккуль тěсенě вырăна ашшě икě çамрăк улмуççи туянса килсе лартрě.

— Мускав грушовкисем. Улми маларах ěлкěрет, тути те тутлă,— чаплаттарса илнěччě тутине ăна-кăна лайăх пушкаракан ашшě. Вăл ку улмуççисен çÿллěшне кашни çулах виçетчě, мěн чухлě ÿснине блокночě çине çырса хуратчě. Қăçал грушовкăсем пěрремěш хут чечеке ларчěç. Улмисем чăмăртаннă ěнтě. Анчах лартаканě çисе курайěши вěсене?

Иккěшěн те вуллисем ытти улмуççисенни пек мар, мěнлерех калас, çутă хăмăр тěслěрех. Тăхта-ха, ку тата мěн? Пěри пěр вулăллă, тепри иккěллě. Апла юрать-и вара? Ашшě улмуççие пěр вулăллă кăна ÿстерме вěрентнине аса илчě Миккуль, унсăрăн çимěç тулăх пулнă çул хуçăлма та пултарать. Ун пек чух пěтěм йывăç нехек курать. «Атте килтех пулсан йěкěреш вулăллă ÿстерместчех, хушăмлине маларахах касайса илетчě. Қая юлсан каю шăтать. Эппин, халех касмалла». Амăшěнчен ал пăчки ăçтине ыйтма çăвар та уçнăччě, ку ěçе çу варринче тума юраманнине аса илчě те каллех хăй ларгнă палан патне кайрě. Ана тепре çупăрласа хăварчě.

Садран тухнă çěрте пилешпе юнашарах вăрăм тенкел. Унăн хулăн хăми хуралнă, çěрěшме пуçланă. Николай Яковлевич кунта пěррехинче Нина Лаврентьевнăпа аллааллăн тытăнса ларсаччě. Çавна аса илсе каччă темиçе минута чарăнса тăчě. Унтан пěтěм сада куçпа пăхса çаврăнчě, симěс тусěсемпе пуриппе те сывпуллашрě.

Пÿртре çаплах кÿршě-аршă пуплесе ларать, çаплах салтака ăсатма ним çуккишěн кулянать. Кěтмен çěртен пÿрте правлени технички кěрсе тăчě.

— Пирěн килес! — янках илтěнчě унăн уçă сасси. Пичě хěр чухнехи пек хěрелсе кайнă. Хăй хěп-хěпěртěк. Аллинче карçинкка. Техничка алăкран кěнě-кěменех пěтěм пÿрте çав тери ырă шăршă сарăлчě, пурин сăмсине те кăтăкласа илчě. Сěнессе кěтмесěрех техничка тÿрех тěпеле иртрě, карçинкка çинчен çиттине сирчě те сěтел çине çавра çăкăр кăларса хучě.

Кил-йыш та, кÿршě-аршă та сěтел çывăхне пырса тăчěç. Қашнинех сап-сарă питлě çăкăр çине куç илми пăхать. Сахвит аппа куçěнчен мерчен пек таса тумламсем йăр та йăр

юха-юха анаççĕ. Техничка çеç хăйне çиреп тытать. Фронта каякана ăсату сăмахĕ калама пуçлать:

— Пирĕн колхоз правленийĕ... «Звезда» ... «Çăлтăр» мана сирĕн пата ятарласа ячĕ. Çĕнĕ тырăран пĕçернĕ малтанхи çăкăр вăрçа виççĕмĕш хут каякан салтака... офицера пултăр терĕç. Плявайра çӳренĕшĕн те кашкăрсене хӳтернĕшĕн...— Унтан, правленирисем вĕрентсе янине каласа пĕтерсен, хайхискер куçне мăч-мăч тутарчĕ те хуллен кăна хушса хучĕ:— Муш, чиперех çаврăнса килĕн-ха...

Қаç кӳлĕм Пожедановсем патне колхоз председателĕ Павел Кузьмич хăй килсе кĕчĕ. Вăл та пуш алăпа мар — тахçанхи пушăт пештĕрпе.

— Така пусрăм та, инкӳ пĕчĕкçĕ шăрттан туса хатĕрлерĕ... Эс, Николай Якăлчă, тем ан шутла: ку сана фронтра паттăр çапăçнăшăн... тата... тата... хăш чухне мана итлеменшĕн... армана ĕç тупса панăшăн...

Председатель типшĕм кĕлеткипе Миккуль çумне тĕршĕнчĕ, тăванла чуп турĕ, аллине темиçе хут та чăмăртарĕ. Сахвит аппана уйрăмах ăшă-ăшă сăмахсем каларĕ.

— Упăшкунтан, Якку Мирончăран, ĕнер кĕске çыру илтĕм. Вăл халь виççĕмĕш Белоруссине фронтĕнче витнă... Йĕтем çинче тăпачăсем тӳнлеттернĕ вăхăтра çыратăп тенĕ...

Николай Яковлевича фронта ăсатма пачах кĕтмен çĕртен велосипедпа Нина Лаврентьевна килсе çитрĕ. Çакăншăн качча тем тери савăнчĕ. Вăл пысăк мар çыхăпа тӳрех Сахвит аппа патне пычĕ.

— Коля валли çул çине чăх ашĕ. Тулĕк ман пирки тем ан шутлăрах!

Сахвит аппа çине пуç çĕклесе пăхма темшĕн-çке хăяймарĕ хĕр. Хăйĕн пит çăмартийĕ самантрах путăкланчĕ.

— Епле килме пĕлтĕн? Ывăнтăн пуль, ăшу та хыпрĕ пуль. Тыт-ха пĕр стакан ăшă сăра!

Сахвит аппа хĕр çине куç илмесĕр тĕсесе пăхать — ăна та килĕшет пулмалла çак çинçе пилĕклĕ яштака хĕр. Вăл Нина Лаврентьевнăна кĕрекепе ывăлĕпе юнашар лартрĕ. «Иккĕшĕ питĕ лайăх мăшăр пулмалла та... телейĕсем çук»,—тĕвĕленчĕ шухăш Сахвит аппа пуçĕнче.

— Епле килме пĕлтĕн?— тĕпчерĕ качча хĕртен.

Нина Лаврентьевна сĕтел çине телеграмма кăларса хучĕ. «Пожеданова ăсатма килĕр. Қаллех фронта каять. Тайма пуçпа Шура»,— çырнă унта.

— Вуларăм та тĕлĕнтĕм! Александра Елизаровна пирки ман пуçа темле шухăш та пырса кĕретчĕ. Унăн чунĕ таса иккен...— ăшă куçпа пăхса илчĕ Нина Лаврентьевна тусĕ çине.

Николай Яковлевич куланҫи турĕ, ним те таварса каламарĕ.

Фронта каякана чугун ҫул станцине леҫме Брабансон ăйăра хапха умне кӳлсе тăратсан — те таврăнмалла каять, те таврăнмалла мар — шкул директорĕ Ипатий Ларионович Ларионов тата Александра Елизаровна Гусева учительница килчĕҫ.

— Сире, Николай Яковлевич шăллăм, тăван шкул вăраха ямасăр каялла таврăнасса кĕтет,— евитлерĕ ăна Ипатий Ларионович каччă аллине хыттăн чăмăртанă май.

— Ну и мемме эс! Ман пата пĕрре кĕрсе тухмарăн! Урăххи патне кăшт-кашт кĕрсе тухнăшăнах Нину кукăрăлса лармастчех. Ҫапах хăв каччăран епле майпа арҫын пулса тăнине манса ан кай! Чуп тăвăттăм — пăхса тăракансем нумай...— пăшăлтатрĕ чипер хĕрарăм алă тытса уйрăлнă чухне.

Лав тапранаспа вăл Миккуль чĕркуҫҫийĕ ҫине чăпар сумкăпа ҫул кучченеҫĕ хучĕ. «Хăй пекех вĕри вĕтĕ-вĕтĕ кукăльсем ĕнтĕ»,— тавҫăрса илчĕ каян ҫын. Тавҫăрса илчĕ те тав туса пуҫне сĕлтрĕ.

Ваттисен йăлипе хальхинче те каялла ҫаврăнса пăхмарĕ Николай Яковлевич. Тăван яла тĕрĕс-тĕкел таврăнма ĕмĕтленчĕ.

*Пĕрремĕш кӗнеке вĕҫĕ.*

1985—1992 ҫҫ.

## ТУПМАЛЛИ

Пĕрремĕш пайĕ
**Кăвакарчăн пурнăçĕ тӳлек-ши?**
Пăшатан тавраш . . . . . . 3
Пилеш пиçсен . . . . . . . 24
Чун чул мар . . . . . . . 53
Тĕп хулана хӳтĕлени . . . . . . 104

Иккĕмĕш пайĕ
**«Тылри йĕкехӳресем...»**
«Çиййĕпĕр те çывăрăпăр...» . . . . . 127
Сирĕн ялта хĕр пур-и? . . . . . 141
Пурнăç малалла пырать . . . . . 155
Вăт сана хĕр пĕрчи . . . . . . 179

Виççĕмĕш пайĕ
**Малтанхи çапăçусем**
Пирвайхи икерчĕ чăмаккаллă . . . . 194
Атăла алтăр шыв та пулăшать . . . . 224
Чĕкеç тӳпемĕ мĕн тĕслĕ? . . . . . 245
Пурнăç çулĕ сакăлталлă . . . . . 268

Тăваттăмĕш пайĕ
**Тылра та фронтри пекех**
Офицерсем яла таврăнсан . . . . . 301
Каллех фронта . . . . . . . 314

**ТЕНЮШЕВ**
**Иван Яковлевич**

**ВĔСЕМ ВИÇÇĔН ÇЕÇ ЮЛЧĔÇ**

**ИХ ОСТАВАЛОСЬ ТОЛЬКО ТРОЕ**

Роман

На чувашском языке

Редактор В. П. Тимаков. Художник И. В. Алексеев. Художественный редактор Г. А. Игнатьев. Технический редактор Л. Н. Кондрашкина. Корректор Р. К. Куприянова.
ИБ 2691. Сдано в набор 22.02.94. Подписано к печати 8.08.94. Формат 84×108¹/₃₂. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 17,64. Усл. кр.-отт. 18,06. Учетно-изд. л. 19,72. Тираж 3000 экз. Заказ № 2194. Изд. № 72. Цена «С» 29. Чувашское книжное издательство. 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Министерства информации и печати Чувашской Республики. 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

1900-

ЧАВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ